

Дм. Фурманов

# ЧАПАЕВ

Чувашгосиздат · 1951





Дм. Фурманов

# ЧАПАЕВ

ПОВЕСТЬ

Чӑваш АССР Государство Издательстви
Шупашкар — 1951

## I. РАБОЧИСЕН ОТРЯЧĔ

Вокзалта халăх шутсăр нумай, иртсе çÿреме çук тăвăр; пурте пĕр-пĕрне хĕсеççĕ. Перрон тăрăх сăнчăр пек карталанса тăнă красноармеецсем кĕрлесе хĕвĕшекен халăха вагонсем патне ытлашши иртме памасăр аран чарса тăраççĕ. Фрунзе рабочисенчен пухнă отряд паян, çурçĕр тĕлĕнче, Колчака хирĕç вăрçма тухса каймалла. Кунта Иваново-Вознесенскри пур фабрикăсемпе заводсенчен те рабочисем хăйсен юлташĕсене, пиччĕшĕсене, ашшĕсене, ывăлĕсене ăсатма пухăннă... Çак çĕнĕ «салтаксем» малтанлăха хăйсене салтак пек тыткалама пĕлейменнипе кăштах кулăшлан туйăнаççĕ: чылайăшĕ салтак шинельне пирвайхи хут тăхăннă; шинель вĕсем çинче çыпăçусăр ларать, йĕри-тавра мăкăрăлса, кăвас чĕрес ăшĕнче йÿçсе хăпаракан чуста пек, çĕкленсе тăрать. Анчах вăл нимех те мар — çамрăксене вăл маттур пулма чармасть! Пăх-ха, ку, ав, пилĕкне чĕн пиçиххипе епле пăвса туртса çыхнă та «черкке пек» пулса тăнă; аран-аран сывлать, шеремет, хăй çапах та çĕнĕ аттипе, кĕлисене паттăррăн шатлаттарса утать; е акă тепри — килĕшÿсĕр çакса янă хĕç авăрĕ çине аллине ватă салтак пек хунă та, çумĕнчи юлташĕпе темĕн çинчен мăнаçлăн тавлашать; виççĕмĕшĕ, ав, сулахай айккине — револьвер, сылтăм айккине — бутылка йышши икĕ бомба çакса янă; тăлпăвне йĕри-тавра патрон ленттисемпе çĕленпе явкаланă пек явкаласа пĕтернĕ те, хăй тусĕсемпе тăванĕсем умĕнче, çакăн пек хăрушшăн тумланнипе мухтанма хăтланса, площадка тăрăх пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçнелле чарăна пĕлми кускаласа çÿрет.

Ĕçпе пиçĕхсе хуралнă паттăр рабочи халăх вĕсем çине савăнăçлă, уçă кăмăлпа чунтан юратса пăхса, мăнкăмăллăн калаçать:

— Вĕренĕç-ха, ачам, вĕренĕç... Фронта çитсен, унта хурапа шурра часах уйăрса илĕç...

— А мĕн тетĕн — фронтра унта катаччи ярăнни мар...

Çав вăхăтрах пурте йăшăлтатса илсе кулса ярăççĕ, мăйĕсене малалла тăсаççĕ.

— Терентие пăх-ха авă, Терентие,—тесе кăшкăрать пĕри:—паллаймăн та! Заваркăра ĕçленĕ чухне краççын хăйăвĕ пек лапăрккаччĕ, а халĕ—пыр та пăх ăна...

— Эккей, епле янкăс çўрет, мĕн каласси пур... Хĕçĕ ав — генералăнни пек, епле сĕтĕрĕнсе пырать.

— Теренти, — култармалла кăшкăрса чĕнчĕ ăна тахăшĕ,—хĕçне кĕсйўне чик — казаксем туртса илĕç!

Çывăхарах тăраканнисем пурте ахăлтатса кулса ячĕç.

— Анну купăста тўме тытса илĕ...

— Такăнса ўкĕн, Теренти, хуçса пăрахăн...

— Асту, пўрнўне ан кас... Пиçсе çитеймен генерал!

— А-ха-ха-ха-ха... Ха... ха... ха... ха...

Терентий Бочкин,—пĕр çирĕм сакăр çулхи, кăшт чĕкеç шатри пуснă хĕрлĕрех сăнлă каччă,—çапла шўт туса кулакансем енне ырă, ачаш кăмăллă куçĕсемпе çаврăнса пăхрĕ; кăшт вăтанчĕ те вăл, ытлашши туртăнса аннă хĕçне васкавлăн çавăрса тытрĕ...

— Асту... парăп сана,—тесе юнанă пек турĕ вăл такшине, халăх çинелле пăхса, хăйĕнчен çав тери çивĕччĕн мăшкăласа кулнине хирĕç нимĕн калама пĕлмесĕр.

— Мĕн паратăн, Теренти, мĕн? —тесе ахăрма чарăнмаççĕ çивĕч чĕлхеллисем.—Ме-ха акă хĕвелçаврăнăш кышлакала, мĕскĕн салтак. Шинельне сана пăру çинчен хывса паман-и?.. А-ха-ха-ха... Охо-хо...

Теренти, йăл кулкаласа, вагонсем еннелле утрĕ те ытти красноармеецсем хушшине кĕрех кайса çухалчĕ.

Çапла кашнинчех, куç умне пĕр-пĕр тирпейсĕртерех салтак тĕл пулсанах, унран мăшкăласа кулма тытăнаççĕ, темĕн те пĕр каласа виртлесе пĕтереççĕ... Кун хыççăн каллех ĕçлĕ сăмахсем тапранса каяççĕ. Кăмăлсемпе шухăшсем çапла пит хăвăрт улшăнса тăраççĕ,—сынсем савăнăçлăн та хумхануллăн чĕтресе темĕнскере кĕтсе тăнă пек туйăнать. Халăх хушшинче тĕрлĕ тĕслĕ калаçни илтĕнет:

— Кирлĕ пулсан — шуйттана та тамăкран тăпăлтарса кăларатпăр,—тет пĕри.—Тек мăкăртататчĕç—урана тăхăнмалли çук, шинельсем çук, мĕнпе пемеллине пĕлместĕп,

тетчӗҫ. Акӑ, пӑх та кур халӗ...—Калаҫаканни вара, сӑмах красноармеецсем ҫинчен пынине пӗлтерсе, пӳрнисемпе вагонсем еннелле тӗллесе кӑтартать те:

— Пин ытла та тумлантартӑмӑр пулас,—тесе хурать.

— Миҫе тетӗн?—ыйтать тепри.

— Пинтен кая мар пулас, тетӗп,—тет малтанхи;— а лере татах пухӑнаҫҫӗ-ха, вӗсене валли те мӗн кирлине йӑлтах тупса ҫитернӗ. Кирлӗ пулсан, тем те тупӑн, ачам, хыҫкаланса тӑма вӑхӑт ҫук унта,—авӑ, епле вӑхӑт килсе тухрӗ...

— Вӑхӑчӗ шухӑшлаттарать ӗнтӗ — мӗн калас,—тесе ҫирӗплетет хӑрӑлтатакан мӑн сасӑ.

— Епле ан шухӑшлаттартӑр: Колчакӗ ав пӗрехмай малалла пырать. Урал таврашӗнче те ӗҫсем ӑнӑҫлах мар курӑнать...

— Эх-хе-хе,—йывӑррӑн сывласа илчӗ пӗр лутра кӑна старик, ҫӳхе тумланнӑскер, шӑнса кӳтнипе, кӑмпа пек пӗрӗнсе кӗнӗскер.

— Ҫапла ҫав... Пирӗн ӗҫсем темӗнле пырӗҫ ӗнтӗ, пӗтӗмпех япӑхланса ҫитрӗ вӗт,—тесе кичеммӗн ӳпкелешсе илчӗ пӗр салхуллӑ ҫинҫе сасӑ.

Вӑл ӳпкелешсе калаҫнине ҫийӗнчех тӑнлӑ та хаяр сӑмахсемпе пӳлсе лартрӗҫ:

— А кам пӗлме пултартӑр вӗсене: ӗҫсем вӗсем хӑйсем тӗллӗн пымаҫҫӗ, вӗсене ертсе, ҫавӑтса пымалла. Пирвайхи ӗҫ — пин маттур салтак — хатӗр те ӗнтӗ!.. Ку вӑл, ачам, ӗҫ тесен ӗҫ — пысӑк ӗҫ, ҫав тери пысӑк!.. Хаҫатсенче авӑ: ҫарта рабочисем сахал, вӗсем унта ытларах пулмалла, тесе ҫырни илтӗнет. Рабочи ҫын вӑл— тепринчен темиҫе хут тулӑклӑ... Тӗслӗхшӗн инҫех те каймӑпӑр, Павлушкӑнах илер акӑ, Лопаре: вӑл чул пек ҫирӗп ҫын... Пуҫӗ те ӗҫлет унӑн — ниҫта та ҫухалас ҫук!

— Мӗн калаҫмалли пур, паллах...

— Арҫынсем анчах мар,—пӑх-ха авӑ Марфушка Кожаная ҫине, вӑл та селедка-арӑм мар. Тепӗр арҫына та вӑл хул хушшине персе чикет.

Пир тӗртекен работница Марфа, ҫывӑхран иртсе пыраканскер, хӑй ҫинчен калаҫнине илтсен, вӑрт ҫаврӑнса пӑхрӗ те, калаҫакансем патне пырса тӑчӗ. Сарлака хулпуҫҫиллӗскер, сарлака та кӑштах шатра питлӗскер, чарса пӑхакан кӑвак куҫлӑскер,—вӑл чӑннипе вӑтӑр пилӗк ҫул тултарнӑ пулин те, сӑнӗнчен пӑхсан чы-

лай çамрăк куранать. Çине вăл çĕнĕ салтак тумтирĕ: шăлавар, сăран атă, гимнастерка тăхăннă, çӳçĕсене касса янă, çĕлĕкне ĕнси çинех антарса лартнă.

— Эсĕ мĕн ман ята асăнатăн?—тесе ыйтать вăл çитнĕ-çитмен.

— Асăнни-мĕнĕ... Эсĕ каснă-лартнă салтак пулса тăнă тетĕп-çке!

— А мĕн тăвăн? Салтак пекех-и, çук-и: кирлĕ.

— Паллах ĕнтĕ, кирлĕ.

Унтан вăл кăшт чарăнса тăчĕ те:

— Ну, а л е р е — епле-ха?—тесе ыйтрĕ Марфăран.

— Ăçта — л е р е?

— Хăвăн килти ĕçӳсем?

— Ĕçсем вĕсем...—аллисене сарса пăрахрĕ Марфуша.—Ачасене приютсене вырнаçтарса пĕтертĕм; тата ăçта хурăн вĕсене?

— Ăçта хурăн çав...—тесе ун хутне кĕчĕ унпа калаçакан çын. Унтан вăл, йывăррăн сывласа илсе, кăкăрĕнчен тухакан сассипе: —Ну, сыхласа усрăпăр, усрăпăр, Марфуша, эсĕ ан хыпса çун,—терĕ ăна чунтан хĕрхенсе:—Лăпкă чĕрепе кай, ан пăшăрхан... Пирĕн ĕнтĕ кунта пĕтĕм ĕç те сирĕншĕн тăрăшса ĕçлесси анчах юлчĕ... Килĕ, тен, акă вăхăт — эпир те вара ун чухне... э?

— Çапла çав...—пуçне сĕлтрĕ Марфа,—чăнах та çапла пулатех пулĕ çав... пĕр отряд янипех лăпланма пулать-и вара?.. Пурĕпĕрех çапла пулать ĕнтĕ вăл.

— Çамрăксем аптăраса каймаççĕ куранать,—пуçне сулса кăтартрĕ калаçакан çын вагонсем еннелле.

— Вĕсене мĕн?—тесе тавăрчĕ Марфа.—Часрах тухса кайса пултăр, кĕтсе йăлăхрăмăр, теççĕ вĕсем. Каяс та каяс, мĕн кĕпĕртетсе тăрас?—пĕр çак анчах илтĕнет... Э-эй, Андреев![1]—тесе ыйтрĕ Марфа иртсе пыракансенчен пĕринчен.—Тухса каясси çинчен мĕн калаçаççĕ?

Андреев вăл — Питĕртен Ивановăна нумаях пулмасть килнĕ слесарь,—шурăхнă сăн-питлĕ, кăвак куçлă, яштака çивĕч пӳлĕ çирĕм виçĕ çулхи каччă; пуçне коммунарка, çине сăтăрăнса пĕтнĕ сăрă шинель тăхăннă,—çак вăл Андреев! Марфăсем умне вăл, доклад тума тухнă пек, çирĕп утăмсемпе пусса пырса тăчĕ; çитсессĕнех, атти кĕлисемпе шак тутарчĕ, аллисене «под козырĕк» тытрĕ те,

[1] 22-мĕш дивизи комиссарĕ. Граждан вăрçинче вилнĕ. **(Ред).**

хăйĕн илемлĕ куçĕсемпе Марфа çине пĕр кулмасăр пăхса:

— Честь имею доложить, ваше превосходительство: поезд хĕрĕх минутран каять!—тесе рапортласа хучĕ.

Марфа ăна çаннинчен туртрĕ:

— Асатма пуçтарăннă халăхпа сывпуллашса уйрăлатпăр-и, çук-и? Ачасем кĕтеççĕ вĕт; халăха сывпуллашса сăмах каламалла мар-и?.. Клычков ăçта? Ăçта хăямата кайса çухалчĕ тата вăл?—тесе ыйтрĕ.

Андреев каллех «под козырёк» тытрĕ те, çав хумханусăр çирĕп сасăпах:

— Хырăмне чейпе чӳхет-ха вăл, ваше превосходительство!—тесе татса хучĕ.

Марфа ăна аллинчен тĕкрĕ те:

— Пăрах, усал, ухмаха ертĕн-и мĕн? Пăх-халĕ эсĕ ăна,—хăйне валли епле генерал тупнă вăл!—терĕ.

Андреев вара çавăнтах улшăнса, ĕлĕкхин пек пулса тăчĕ те, Марфăна таса, янравлă, «хăйĕн» сассипе:

— Марфочка,—терĕ.

— Мĕн?

— Марфочка, а ху эсĕ... хм!

Андреев тутисене пĕрсе, куçĕсене чарса пăрахса, сăн-пичĕпе тем калас пек пулчĕ.

— Мĕн вара?—терĕ Марфа.

— Эсĕ ху тухса калас теместĕн-и?—тесе ыйтрĕ унран Андреев.

Анчах Марфа нимĕн те чĕнмерĕ; чĕрне вĕççĕн тăчĕ те, халăх урлă пăхса:

— Авă хайхисем килеççĕ курăнать,—терĕ.

Таврара тăракансем те чĕввĕн тăрса, мăйĕсене Марфа пăхакан еннелле тăсса пăхрĕç. Унта, çынсен тăвăр ушкăнĕ хушшипе, виççĕн утса килни курăнчĕ. Уççăнах Лопарь палăрса пырать — хура вăрăм çӳçлĕскер, йăлтăртатакан куçлăскер, çӳлĕскер, ырханскер. Вăл, хăйĕн ури çине хăех пусса пынă пек, темле пăркаланса утать.

Унпа юнашар Елена Куницына — пир тĕртекен работница, çирĕм икĕ çулхи хĕр — пырать; çынсем ăна митингсенче час-часах ăнланмалла каланă ăслă сăмахĕсемшĕн, уçă шухăшĕсемшĕн, илемлĕ, çирĕп сассишĕн çав тери хытă юратаççĕ. Вăл пуçне коммунарка тăхăнман-ха — тутăр çыхса янă; салтак шинелĕпе те мар, январьти шартлама сивĕре вăл хура çӳхе пальтопа çеç!

Унăн шурăхнă сăн-пичĕ çинче ăшĕнчи лăпкă савăнăçĕ палăрса тăрать.

Еленăпа юнашар — Федор Клычков[1]. Ку — пир тĕртекен мар, нимĕнле рабочи те мар вăл; нумаях пулмасть Мускавран таврăннăскер, вăл кунтан тухса каяймарĕ; кунти пурнăçа хăнăхса çитрĕ, уроксем тăрăх чупатчĕ; кайăк пек, мĕн ĕçлесе тупнă — унпа тăранса пурăнатчĕ. Унччен вăл студент пулнă. Революци вăхăтĕнче вăл хăй лайăх организатор иккенне часах чухласа илчĕ; пухусенче, хăш-пĕр чухне вырăнлах мар пулин те, çынсене яланах çулăмлă, вĕри сăмахĕсемпе хавхалантарса калаçатчĕ. Рабочисем Клычкова лайăх пĕлеççĕ, юратаççĕ, ăна хăйсен çынни тесе шутлаççĕ.

Перрон çинчи халăх Куницынăна, Клычкова, Лопаре курсан, вырăнтан хускалса, хыттăн пăшăлтата пуçларĕ:

— Калаçма тытăнаççĕ курăнать.

— Часах акă тапранса каяççĕ.

— Ара, сывпуллашса уйрăласчĕ часрах, çывăрма та вăхăт ĕнтĕ.

— Чуптăватпăр та акă — ĕçĕ те пĕтрĕ.

— Илтетĕн-и, звонок!

— Пĕрремĕш-и ку?

— Пĕрремĕш.

— Вуниккĕре тапранса каяççĕ пулмалла...

— Куратăн-и, шăпах çурçĕрте тухса кайма тăрăшаççĕ епле!

Çупа вараланса пĕтнĕ кĕске пальтосем, çăмĕ çаралнипе кукшаланса кайнă çухавиллĕ, чавсисем тĕлĕнче сăтăрăнса пĕтнĕ кĕске çанăллă кивĕ кĕрĕксем; хура драпран, сукнаран, сăрантан çĕлетнĕ кĕске тужуркăсем. Питех те хăйне тĕслĕ халăх!

Вокзал пысăках мар, халăх сахал шăнăçать. Кам тавçăруллăрах, вăл картаран çакăнса çĕкленнĕ, чӳрече янаххи çине улăхса тăнă; нумайăшĕ вокзал çумĕнчи хуралт çине хăпарса кайнă та, пуçĕсене хĕрринелле усса, куçĕсемпе халăх çине шăтарас пек пăхса выртаççĕ; теприсем, виç-тăват кукăр пулса, алăк хăлăпĕсенчен тытсаууртăннă. Хăшĕ-пĕри, карниз хĕррисенчен çакланса, вагон тăррисене, пусмасем çине улăхса тăнă, вагона кĕмелли вырăна хĕсĕнсе пĕтсе, çӳремелли çулсене картласа

[1] Дмитрий Фурманов. **(Ред.)**

лартнă... Пит тăвăр, çынсем пĕр-пĕрне хĕсеççĕ. Қашниех малалла иртесшĕн, сăмах каламалли вырăн çывăхнерех, ещĕк патнерех тăрасшăн. Çухăрашкалаççĕ, ахлатаççĕ, ятлаçаççĕ, вăрçкалаççĕ.

Акă ещĕк çине Клычков хăпарса тăрать, — шинелĕ унăн кивĕ, лутăрканса пĕтнĕ, леш вăрçăранах юлнăскер. Перчеткесĕр аллисем шăнаççĕ — вăл вĕсене пĕрехмай е кăсйисене, е хĕвне чиксе, хĕрелсе кайнăскерсене вĕркелесе ăшăтать. Федорăн сăн-пичĕ паян ытти чухнехинчен те шурăрах: юлашки икĕ каç вăл пачах та тенĕ пек çывăрман, кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçленĕ, ĕшеннĕ. Сасси, яланах çав тери таса та уçăскер, — паян кăшт тытăнкăллăрах тухать, таçтан çĕр айĕнчен илтĕннĕ пек янăраса илтĕнет.

Клычкова сăмах чи малтан калама пачĕç — унăн пир тĕртекен рабочисемпе отряд ячĕпе сывпуллашса уйрăлмалла. Сивĕ. Халăх шăнса кӳтнĕ. Сăмахсем кĕске пулмалла!

Федор йĕри-тавра çаврăнса пăхрĕ те, хура тĕслĕн курăнакан халăх йышĕн вĕçĕ-хĕррине тупаймарĕ,—хыçалтисем таçта аякра, газ хунарĕсемпе çутăлса тăракан площадь хыçнеллех пытанса çухалнă. Ăна, çак хăйĕн умĕнче пĕр-пĕринпе таччăн сыпăçса, инçетри тĕттĕмре пытанса тăракан пинсем хыçĕнче çĕнĕ пинсем тăнă пек туйăнса каять; вĕсем хыçĕнче тата çĕннисем, çапла пĕр вĕçĕмсĕрех халăх нумай пинĕн-пинĕн тăнă пек туйăнать. Юлашки минутра вăл çак хуп-хуран курăнса тăракан халăха çав тери хытă юратнине, унпа уйрăлса кайма ăна çав тери йывăррине — чĕрине ыраттарсах хытă туйса илчĕ.

«Тепĕр хут курнăçма тӳрĕ килĕ-ши? Таврăнăп-ши?.. Таврăнайăпăр-ши пурте хăçан та пулин хамăрăн тăван çĕрсене?.. Килсе калаçайăп-ши хăçан та пулин çакăнта, юлашки çулсенче çав тери час-часах калаçнă пек?..»

Уйрăлса кайнă чухнехи хуйхă пуснипе хăйĕн кĕске сăмахне тĕплĕн шухăшласа çитерейменсĕр, Клычков темĕнле уйрăммăнах хыттăн, халиччен нихçан та кăшкăрман пек:

— Рабочи юлташсем!—тесе чĕнсе кăшкăрчĕ.—Эпир пĕрле пуласси темиçе минут çеç юлчĕ: юлашки звонoксем пулаççĕ те акă — эпир уйрăлса каятпăр. Отрядри хĕрлĕ салтаксен ячĕпе эпĕ сире: сывă пулăр! тетĕп. Ан

манăр пире, хăвăрăн ачăрсене, астăвăр эпир ăçта тата мĕн тума тухса кайнине, хăвăр та пирĕн хыççăн пĕрре чĕнсенех тухса пыма хатĕр тăрăр. Пирĕнпе çыхăну тытма ан пăрахăр, хыпарçăсем ярса тăрăр, хăвăрăн укçăрсенчен мĕн яма пултарнине ярса, боецсене пулăшăр. Фронтра выçă, юлташсем, кунтинчен йывăр унта. Çакна ан манăр! Тата пирĕнтен нумайăшĕ хăйсен килĕсене выçăллă-тутăллă çемйисене, ачи-пăчисене пăрахса хăвăрнине те ан манăр,— ан пăрахăр вĕсене. Йывăр пулать пире окопсенче ларма, походсемпе çапăçусенче хурлăх курма... Анчах пирĕн çемьесем,— никам та пулăшманран, пурте пăрахнăран, пурте маннăран,— вилсе пĕтесси патне çитни çинчен хыпар илсен,— пире çак хурлăха чăтма çĕр хут йывăртарах пулĕ... Тата тепĕр сăмах калам сире уйрăлса каяс умĕн: ĕçлĕр! тăрăшарах ĕçлĕр! Сирĕн, пир тĕртекен рабочисем, çакна лайăх пĕлмелле: эсир Ивановăра мĕн чухлĕ ытла пир-авăр тĕртсе кăларăр, çавăн чухлĕ ăшăрах та савăнăçлăрах пулĕ çынсене Уралăн сивĕ тăвĕсем çинче те, Оренбургăн юрлă çеçенхирĕсенче те,—сирĕн пурлăх ăçта çитнĕ унта, пур çĕрте те. Ĕçлĕр те, çакна çирĕп астуса тăрăр: çĕнтерӳ пирĕн штыкран анчах килмест, вăл сирĕн хастар ĕçĕртен те килет. Курнăçайăпăр-ши пĕр-пĕринпе тата хăçан та пулин? Курнăçăпăр тесе ĕненĕпĕр. Анчах тепĕр хут курнăçма май килмесен те — хуйхăрас мар: революци уйрăм çухатусем тăвассинчен хăрамасть. Сывă пулăр, хаклă юлташсем, отрядри хĕрлĕ салтаксен ячĕпе — сывă пулăр!..

Юрлă çеçенхирте хаяр çил-тăман вĕçтерсе уласа янă пек, халăх пĕтĕм чун-хавалĕпе кĕрлесе:

— Сывă пулăр, ачамăрсем! Телейлĕ пулăр... Манмăпăр! — тесе тавăрчĕ.

Кĕрлеме чарăнсан, пурне те салхуллă шăплăх пусса илчĕ. Пĕр самант хушши çапла тăчĕ, вара халăх хушшинче сасартăк пăшăлтатнă сасă илтĕне пуçларĕ:

— Елена... Елена тухрĕ... Куницына...

Ещĕк çине Елена Куницына улăхса тăчĕ. Еленăн тĕлĕнмелле илемлĕ хăмăр куçĕсем пит çăран, хуп-хуран курăнаççĕ. Аллипе вăл питне, тăнлавне сисмелле мар хăвăрт шăлса илчĕ те, çӳçĕ пайăркисене тутăр айне пытарчĕ; тутăрне вара, икĕ аллипе сăтăрса, пуçĕ çумнех çыпçăнтарса лартрĕ.

— Юлташсем!—терӗ вӑл, хӑйне хӑй калана пек, хуллен.

Елена сӑмахне хытса кайсах итлеме тӑрӑшакан пӗтӗм халӑх пуçне ун еннелле тӑсса сулӑнчӗ.

— Эпӗ сире, юлташсем, уйрӑлса каяс умӗн çакна каласшӑн: эпир фронт пулатпӑр, эсир, сӑмахран, тыл пулатӑр; анчах эпир пӗри тепринсӗр ниепле те тытӑнса тӑма пултарас çук. Пулӑшу, пӗрне-пӗри пулӑшса тӑрасси — акӑ вӑл хальхи тӗп задача. Эпир хамӑр хыçра пурте лӑпкӑ та лайӑх пулнине пӗлсе тӑрсан — пире нимӗн те йывӑр пулас çук, юлташсем. Анчах сирӗн кунта кӗсел пуçланса кайсан, мӗнле вӑрçӑ пултӑр-ха вара вӑл? Эпир, рабочисем, çак икӗ çул хушши кӑлӑхах асапланмарӑмӑр, е асапланни кӑлӑхах, вырӑнсӑрах пулчӗ-и? Çук юлташсем, çаксем пурте ӗçшӗн кирлӗ пулчӗç. Акӑ, сӑмахран, эпир те, хӗрарӑмсем, каятпӑр: отрядра эпир çирӗм улттӑн. Пирӗн çӗршыв мӗнле вӑхӑтра пурӑннине эпир те ӑнланса çитрӗмӗр. Апла-тӑк каяс пулать, пӗтӗм юмах-сӑмах çакӑ пултӑр! Хӗрарӑмсем — амӑшӗсем, арӑмӗсем, хӗрӗсем, аппӑш-йӑмӑкӗсем, çураçнӑ хӗрӗсем, тусӗ-савнисем,— вӗсем пурте ман урлӑ сире юлашки салам калаççӗ. Сывӑ пулӑр, юлташсем, çирӗп чӗреллӗ пулӑр, эпир те сирӗн пекех вӑйлӑ пулма сӑмах паратпӑр!..

Ана хирӗç пин кӑкӑртан капланса тухакан савӑнӑç хӗрсе çӗкленчӗ, çулӑмлӑн тупа тунисем, ӑслӑ, хаваслӑ шухӑшсемшӗн тавтуса калана сӑмахсем илтӗнчӗç:

— Эх, Еленка, министр çех пулмалла санӑн!

— Ну, хӗр те — машина пек ӗçлет!

Ещӗк çине кӗске сарӑ тумтирлӗ, çупа вараланса пӗтнӗ кепкӑллӑ, çӑматӑ тӑхӑннӑ ватӑ ткач, халӑх хушшинчен тухса, улӑхса тӑчӗ. Старикӗн типсе кайнӑ пичӗ хура тарӑн йӗрсемпе пӗркеленсе ларнӑ, тутисем уçӑмсӑр сӑмахсем каласа пӑшӑлтатаççӗ. Нӳрелнӗрен йӑлтӑртатса тӑракан куçӗсемпе çуталса тӑракан сӑн-пичӗ çинче вӗçӗмсӗр савӑнӑç вӑйлӑ хум пек вылянса çӗкленет...

— Ара, ответлӗпӗр эпир... ответлӗпӗр,—тесе, вӑл пӗр самантлӑха нимӗн калама аптӑранӑ пек пӳлӗнсе тӑчӗ те, вара сасартӑк кепкине хывса, шап-шурӑ шуралса кайнӑ пуçне уçса кӑтартрӗ.— Пуçтартӑмӑр эпир сире — мӗн валлине лайӑх пӗлсе! Тем те курмалла пулӗ-ха сирӗн, пурне те тӳсмелле пулӗ; тен, пачах та каялла таврӑнаймӑр. Анчах эпир, сирӗн аçӑрсем,— йывӑр пулин те,— сире

тӳрех калатпӑр: кайӑр! Кайма кирлӗ-тӗк—каясах пулать. Нимӗн палкаса тӑмалли те ҫук унта. Хамӑрӑн ӗҫре намӑс курас марччӗ, ҫапла вӑл, ӗҫ тени! Чи начар, чи йывӑр кунсенче вара пире те аса илӗр, ҫӑмӑлтарах пулӗ сире. Эпир те сире сӑмах паратпӑр: ачӑрсене пӑрахмӑпӑр, арӑмӑрсене манмӑпӑр, мӗнле те пулин пулӑшу парӑпӑр-парӑпӑрах! Паллах, паратпӑр — ҫавӑнпа вӑрҫӑ та вӑл. Унсӑрӑн юрать-и вара...

Старик аллисене: «Пурпӗрех урӑх ҫул ҫук вӗт», тенӗ пек, тирпейлӗн сарчӗ те, салхуллӑн пӑшӑлтатса илчӗ. Унтан вӑл пӗр самантлӑха чарӑнса, шухӑшӗсем пуҫтарӑнасса кӗтсе тӑчӗ; анчах кӗтсе илеймесӗр аллипе сулчӗ те, кепкине сайра ҫӳҫлӗ шурӑ пуҫӗ ҫине хӑвӑрт пусса лартрӗ; вара,— пӗтӗмпех анса кайма хатӗрскер,— илтӗнмелле ҫинҫе сасӑпа:

— Сывӑ пулӑр, ачамӑрсем!.. Тен, яланлӑхах...— тесе кӑшкӑрчӗ.

Ватӑ сасӑ куҫҫульпе пӳлӗнсе татӑлчӗ; куҫҫуль айӗн чӗтресе каланӑ сӑмах пӗтӗм халӑх чӗрине вӗри вутпа касса ҫурчӗ.

— Тен, тепле... тем те пулать вӑл... Вӑрҫӑра мӗн пулмасть?.. Вӑрҫӑ вӑл — ҫапла...

Йӗпе куҫӗсенчен хура пӗрӗнчӗксем тӑрӑх ҫӑра куҫҫулӗ шӑпӑртатса анчӗ. Куҫҫульне вӑл пичӗ тӑрӑх кӗске тумтирӗн таса мар ҫаннипе сӑтӑркаласа ячӗ. Халӑх хушшинче нумайӑшӗ макӑра пуҫларӗҫ. Теприсем ещӗк ҫинчен анакан ватӑ рабочие хирӗҫ:

— Тӗрӗс, асатте! Тӗрӗс! Чӑн калатӑн, ватӑ!—тесе кӑшкӑрчӗҫ.

Старик анса утрӗ. Ещӗк пушанса юлчӗ. Иккӗмӗш звонок сасси ҫинҫен те уҫҫӑн янраса кайрӗ. Клычков юлашки хут ещӗк ҫине сиксе хӑпарчӗ те:

— Ну, сывӑ пулӑр! Тепӗр хут сывӑ пулӑр, юлташсем!— тесе кӑшкӑрчӗ.— Пӗр-пӗринпе тепӗр хут курнӑҫмалла пултӑр тесе, тепӗр хут телейлӗн тӗл пулмалла пултӑр тесе: урра!

— Ур-ра... ур-ра... ур-ра!!!— тесе тавӑрчӗ халӑх.

Вара кӑшт лӑпланса анах:

— Отряд, вырӑнсене!— тесе панӑ команда илтӗнчӗ.

Ҫӗлӗксем, картузсем, коммунаркӑсемваскавлӑн вӗлкӗшме тытӑнчӗҫ, сывпуллашса чуптунӑ сасӑсем илтӗнчӗҫ.

Ҫул ҫине ырӑ сунса каланӑ сӑмахсем, ӑслӑ канаш

парса, салхуллăн ыйтса, лăпланма ӳкĕтлесе каланă сасă-сем теменле васкаса, чӳхенсе тăракан шав ăшĕнче чы-лайччен янраса тăчĕç.

Салхуланнă красноармеец амăшĕ, пуçне ывăлĕн хул-пуççийĕ çине хурса, чĕтресе макăрать. Унăн шурса кай-нă питне пĕтĕмпех куççулĕ йĕпетсе пĕтернĕ. Амăшĕ пĕрре ахлатсах, ĕсĕклесех йĕрет, тепĕр чухне вăл, шухăша кайнă пек пулса, кăмăлĕпе çирĕпленсе, хытса çитнĕн туйăнать.

Отряд вагонсене кĕрсе вырнаçрĕ. Халăх вагонсем çывăхнерех пырса тăчĕ, анчах вагон чӳречисенчен уйрăм çын сăн-питне уйăрса илме çук.

Виççĕмĕш звонок янраса кайрĕ...

Шăхличĕсем шăпчăк пек шăхăрта пуçларĕç, гудоксем тăмана пек ухлатса илчĕç, паровоз йывăррăн хашлатса ячĕ те, тĕтĕм кăларса сывлама тытăнчĕ; вагон ураписем шăннă рельссем çинче хаяррăн çухăрса çатăртатрĕç; вагонсем шăтăрт-шатăрт! туса вырăнтан тапранчĕç те, кĕмсĕртĕк-кĕмсĕртĕк! туса малалла шăва пуçларĕç.

Вагонсем ăшĕнчен красноармеецсем сывпуллашса кăшкăраççĕ, вĕсем хыççăн хура халăх кăшкăрашса чу-пать. Кăштах тăрсан вагонсем тĕттĕме кĕрсе пытанчĕç; вара таçта аякра теменскер ухлата-ухлата кĕмсĕртетсе, чанкăртатса пыни анчах илтĕнсе тăчĕ; юлашкинчен вăл сасă та сĕм-тĕттĕм çĕрелле инçетрен инçе кайса çухалчĕ...

Январь уйăхĕнчи çурçĕр сиввинче ткачсем пуçĕсене салхуллăн усса, куççулĕ юхтарса, хуйхăллăн калаçса саланчĕç вара станцăран килĕсене.

* * *

Самарăна çитсе таçти аякри «вунпиллĕкмĕш» путьсем çинче чарăнсассăнах, тутăхнă рельс куписемпе çĕмрĕк вагон кĕлеткисем йăваланса выртнă çĕре пырса тăрсас-сăнах, красноармеецсем вагонсенчен чугун çул полотни çине сирпĕнсе тухрĕç, ушкăнăн-ушкăнăн пухăнса тăчĕç, командирсене малашне мĕн пулассине часрах пĕлме васкатса:

— Ăçта, хăçан, мĕнле ĕçе? Малалла халех илсе каяç-çĕ-и е пĕр-ик кун хуларах тытса тăраççĕ?—тесе шавла пуçларĕç.

Çаксене пурне те Фрунзе урлă анчах пĕлме май пур. Фрунзе ун чухне 4-мĕш арми командующийĕччĕ ĕнтĕ.

Вăл Иваново-Вознесенскран хăйĕн отрядĕнчен кăшт малараx тухса кайнăччĕ; халĕ вăл — Уральскра; кунта вара, реввоенсоветра, вăл Федор валли çыру парса хăварнă. Çак çыру тăрăх вăл Лопаре, Клычкова, Терентий Бочкина тата Андреева халех хăй патне Уральска тухса пыма хушнă, отряда хăйсем хыççăн кăларса пыма хушса хăварнă. Çырăвĕнче вăл хăйĕн землякĕсене ăшă кăмăлпа саламланă, кĕскен таврари лару-тăрупа паллаштарнă, пуриншĕн те епле пысăк та йывăр ĕç пулассине кăтартса панă. Фрунзе çырăвне Клычков отряд çыннисене вуласа кăтартрĕ. Пурте хăйсен юратнă командирĕн вăй-хала çĕклекен сăмахĕсене хавасланса итлерĕç. Такăшĕ ăна саламласа телеграмма яма сĕнчĕ.

— Ярас... ярас телеграмма!— тесе пурте хапăл турĕç.

— Чĕререн тав тăвас ăна!—тесе кăшкăрчĕ тата такăшĕ.

— Тав тăвасси мар-ха унта,—пÿлчĕç ăна ытти сасăсем:—килсе çитрĕмĕр, ĕçе тухма хатĕр! тес; ăçта мĕнле пулăшу кирлĕ — унта кайма хатĕр! тесе калас. Акă епле!— терĕç кусем.

— Тĕрĕс! Çаплах: ĕçе паянах хатĕр тесех калас! Пурте пĕр çын пекех хатĕр, урăхла каласан, пур енчен те чи лайăх хатĕрленсе çитнĕ, тес пулать!

— Атьăр, ачасем, çырăр телеграмма! Фрунзе сывă пултăр, урра!

— Урра!.. Урра!.. Урра!..

Çĕлĕксем, кепкăсем, шлёмсем пуç çийĕн вĕçрĕç,— вĕсем, шуйăхтарса хăратнă чанасем пек, таçта çитиех аяккалла сирпĕнсе кайрĕç.

Сывăх тус пек ăшă сăмахсемпе çырнă çырăва вуланă хыççăн Федор пушшех вĕриленсе кайрĕ; çырăва пуç тăррине çĕкле-çĕкле сулласа, вăл савăннипе, пĕчĕк ача пек хĕрсе:

— Юлташсем! Юлташсем, акă вăл пĕчĕк çыру!—тесе кăшкăрса калаçма тытăнчĕ.— Ăна ç а р к о м а н д у ю щ и й ĕ çырнă, анчах хăвăрах туятăр вĕт эсир — ăна пирĕнпе тан çын, пур енчен те пĕтĕмпех пĕр тан çын çырнине? Çак юлташ пек ăшă кăмăлпа çырнă çыру тăрăх, вăл хăйне питĕ просто тыткаланинчен сисместĕр-и мĕн эсир пирĕн ахаль красноармеецран çар командующийĕ патне çитме чăрмнипех те пĕр утăм çеç иккенне? Тата тĕрĕсрех каласан — пĕр утăм та çук, юлташсем: иккĕшĕ те пĕр-

пĕринпе пĕрлешсе тăраççĕ. Çак иккĕшĕ вăл — пĕр çын: çулпуçĕ те, рядовой красноармеец та! Акă ăçта вăл пирĕн çарăн вăй-хăвачĕ,— пирĕн çар ăшĕнчи пĕрлĕхре, пĕтĕçӳлĕхре, килĕшӳлĕхре,— çакăнта ĕнтĕ вăл пирĕн вăй-хăватăмăр... Çапла ĕнтĕ — пирĕн хамăр çаршăн! Хамăр çĕнтерӳсемшĕн!

Красноармеецсем татах ним чарусăр хавасланса кайса, çĕлĕкĕсене çӳлелле ывăта-ывăта, темĕнччен «урра» кăшкăрчĕç.

* * *

Малалла вара ĕçсем, шурă мулкачсем сиккелесе чупнă пекех, васкавлăн пула-пула иртме тытăнчĕç. Отряд хăвăрт пуçтарăнма приказ илчĕ. Командира штаба чĕнсе илсе, отрядпа пĕрле тухса кайма хатĕрленсе тăма хушрĕç.

Реввоенсоветран назначени панă тăвата çынна тепĕр хут:

— Уральска халех тухса кайăр!— тесе астутарчĕç.

Вĕсем хыпаланса ӳкрĕç. Васкама пуçларĕç. Отрядри çынсемпе те кирлĕ пек сывпуллашса уйрăлма ĕлкĕреймерĕç. Пурĕпĕрех Уральскра час тĕл пулса курнăçăпăр, тесе шухăшларĕç вĕсем.

Реввоенсовет çурчĕ умĕнчен икĕ тройка тапранса кайрĕ: малтанхи çунара Федорпа Андреев ларать, хыçринче — Лопарьпе Терентий Бочкин.

Лашасем тапса сикрĕç, ямшăксем ши-ик! шăхăрни илтĕнчĕ, çеçенхир пушши çĕлен пек явăнса шăхăрса илчĕ те, çăмăл тройкăсем вĕçтерсе тăракан тăман ăшнелле вĕçен кайăк пек çиçсе кĕрсе çухалчĕç.

---

## II. ÇЕÇЕНХИР

Ирпеле, тул çутăлас умĕн сивĕ çеçенхирте.

Лавçăсем çăмлă тăлăп тăхăнса, лапсăркка çухависене тăратса, лайăх чĕркенсе ларнă. Çавăнпа çуна çинче тĕлĕрсе ларса пыракансем ямшăксен пуçне курайман çĕ те.

— Лопарь, шăнтăн-и?—тесе, кăштах ун еннелле çаврăнса ыйтрĕ шăнса кайнă Бочкин.

— Пăталать, ачам... Витĕрех пăталать!..—тесе салхуллăн хăйăлтатса тавăрчĕ ăна хирĕç Лопарь.— Яла час çитетпĕр-и, çук-и?

— Қам пĕлет ăна? Лавçăран ыйтас пулать... Эй, тусăм!—тесе тĕртрĕ вăл хулăн ямшăка çурăмĕнчен.— Ял час пулать-и?

— Шăнса кӳтрĕр-и мĕн?

— Сивĕ, кум. Ял час пулать-и, тетĕп?

— Тепĕр çичĕ çухрăм пулать-и; тен... вуниккĕшĕпех те пуçтарăнĕ!— текелесе, шӳт туса илчĕ ямшăк, пуçне каялла çавăрмасăр.

— Ара, чăннипе миçе пулать?

— Çавăн чухлех!— савăнăçлăн шăлне йĕрсе тавăрчĕ ямшăк.

— Ялĕ мĕн ятлă тесеттĕн-ха эсĕ?

— Ивантеевка пулать...

— Ивантеевкăран вара Пугачева инçе-и?

— Мĕн чухлĕ юлать-ха, атьсемĕр, унтан?

Мужик куçĕсене чалăштарса шухăша кайрĕ, шăнса кӳтнĕ пӳрнине сăмси шăтăкне темĕн тарăнăш чиксе ячĕ. Пĕр самант вăл шарламасăр тăчĕ. Унтан:

— Нимĕн чухлĕ те юлмасть, тес пулать: Таволожкăна çитме вунсаккăр та, Таволожкăран тепĕр çирĕм иккĕ,—шăпах кăнтăрлахи апата çитетпĕр!—тесе пĕлтерчĕ.

— Эсĕ ху ăçтисем — Николаевкăсем-и?— тĕпчесе ыйтать Бочкин.

— Унтисем çав, ăçтан пулас-ха тата?

Мужик калань сăмахсенче темĕнле кӳреннĕ пек пулни сисĕнчĕ. Мĕн пустуй лапăртатас: Николаевкăран ларса тухнă-тăк, паллах, хам та çавăнтисем, тенĕ пек пулчĕ вăл.

— Мĕншĕн-ха, мучи? Тен, Ивантеевкăсем эсĕ,— тесе хирĕçлеме тăчĕ Бочкин.

— Çапла пулмасăр — Ивантеевкăсем...

Мучи тутисемпе темле кулăшла чаплаттарса илчĕ те, тилхеписене кирлĕ мар çĕртенех васкаса турткала пуçларĕ.

Мужиксен кунта çакнашкал йăла пур: калăпăр, мĕнле те пулин Карп Иваныч пĕр-пĕр сынна Ивантеевкăран Николаевкăна лартса килет, тейĕпĕр; çав вăхăтрах Николаевкăри Иван Карпыча тепĕр çынна Ивантеевкăна илсе кайма наряд панă пултăр. Вăл вара ку çынна хăй илсе каймасть, ытлашши çул туса тăмасть; хăй илсе каймалли çынна Карпа парать те, лешĕ ывăнса çитнĕ лашисемпе темĕнчченех аран-аран лĕпĕстеттеркелесе пырать. Лешĕ вара кайран теприне, Карп мучине,— ырăшăн ырăпа тавăрать. Мучисемшĕн çапла хăтланни питĕ меллĕ, лайăх; анчах ларса каякансемшĕн — тамăк: пĕр çирĕм çухрăм хушши çула тăват-пилĕк сехете тăсаççĕ. Кунта нимĕнле мандат та пулăшмасть вара. Хăть мандат çинче:

— Хăвăртран та хăвăрт... Нимĕнле черетсĕр... Пит васкавлă ĕç!..—тесе çырнă пултăр, пурĕпĕр вăл та нимĕне те тăмасть.

Çак хăрушă сăмахсене Карп Иванычсем хăлхана та чикмеççĕ; вĕсем кулкаласа, пăрланса ларнă мăклă сухалĕсем çинчи пăрсене ерипен тата-тата илнĕ хушăра, хумханакан çынна кăмăллăн çапла каласа лăплантарма тăрăшаççĕ:

— Эккей епле васкама юрататăн. Эсĕ чăтма пĕл — вилме ăна ĕлкĕрĕн, ырă çыннăм!— текелеççĕ.

Теренти ямшăксен çакнашкал йăла пурри çинчен илткеленĕ те, халь ăна аса илсе, мучи тутисемпе мĕншĕн çав тери тутлăн та чеен чаплаттарса илнине лайăх ăнланчĕ.

— Пĕлетĕп, тусăм, пирĕн йышшисене эсир çул майĕн турттарса çӳретĕр...

— Çапла çав,— кăштах хавхаланчĕ ямшăк.—Паллах, çул майĕн, апла çапах та кăшт çăмăлтарах...

— Ну, вăл камшăн епле вĕт...

— Камшăн мар çав, пуриншĕн те çăмăл,—терĕ вăл, Теренти иккĕленнине сирсе ярас шутпа.

— Сирĕншĕн, паллах, çăмăлтарах. Кам ун çинчен калаçать,— килĕшрĕ Бочкин.— Пире ак вара унашкал йĕркесем чăн-чăн инкек çеç: ĕшеннĕ лашасемпе хытах илсе каяймăн, кунĕпех мĕшĕлтетсе пыратпăр акă...

— Манăн лашасем ĕшеннĕ тетĕр-и?—тесе, сасартăк кăмăлсăрланчĕ ямшăк; унтан çавăнтах вăр-вар çаврăнса ларчĕ те, тилхеписене сатурăн çĕклесе, лашисене шик! шăхăрса хăваларĕ; юр çеç çавра çилле çаврăнса вĕçсе, пит çине ларса тулчĕ.

— Эй ну, маттурсем!— терĕ вăл хĕрсе кайса.— Э-хе-е-е... Инçех те юлмарĕ ĕнтĕ... Нн-но... ăмăрт-кайăкăмсем!

Мужике паллаймăн та: лашисене çапла юрлă çеçенхир тăрăх, ăмăртса чуптарнă пек, вĕçтере пачĕ. Кÿреннĕ кăмăлне кăштах пусарсан вара, вăл хĕрсе кайнă лашисене тытса чарчĕ те, çÿлĕ çухавипе хупланă пуçне каялла çавăрса, хуллен:

— Акă сире ĕшеннĕ!— тесе хучĕ.

— Шеп те, тусăм, пултаратăн,—тесе савăнчĕç ларса пыракансем.

— То-тă, шеп çав,— тесе килĕшрĕ мучи;—ăна пултаратпăр-çке те, хăш чухне чăн та ывăнаççĕ çав,— тесе хушса хучĕ;—анчах ывăннин унăн хăйĕн сăлтавĕ пур— нумай çÿреме тивет: хăвăн ĕçне те ту, нарядсем тăрăх та çÿре,— лаша мар, шуйттан хăй те ывăнĕ...

— Нарядсем нумай-им вара сирĕн?— тесе ыйтрĕ Лопарь.

— Аçтан сахал пулччăр ĕнтĕ вĕсем,— чĕррĕн тавăрса хучĕ мужик,— халăх кунта каллĕ-маллĕ вĕçĕмсĕр сулланса çÿрет. Аçта сĕтĕрĕнеççĕ кăна, çавăнтан тĕлĕнетĕп: пĕрмай куçаççĕ, пĕрмай куçаççĕ, лашасем çеç парса çитер вĕсене! Кама вăхăтра ан пар, тăхăнтартса яма та пăхать тата!

— Тăхăнтартса ямах-и вара?—тесе иккĕленчĕ Лопарь.

— А мĕн тата, е кама та пулин жалоба парас тетĕн-им?

— Суйма пит ăста эсир, мужиксем,— терĕ вăл ямшăка, шўт тумасăр, хыттăн.

— Ну, ху лайăхрах суй,— тесе кăшт çиленчĕ те мучи, ларчăк çинче йывăррăн çаврăнса ларчĕ.

— Ак тата!— тесе тарăхма пуçларĕ Лопарь.— Шутласа кăларать те акă çын хăйне валли пĕр-пĕр истори, ĕненет вара ăна... Ĕненет те ĕненет, мĕн тăвăн ăна?

— Çапла... истори...— тесе мăкăртата пуçларĕ ямшăк, калаçăва çапла сасартăк ырă мар еннелле пăрса янипе тарăхса.

— Сана хăвна хăçан та пулин хĕненĕ-и вара?—ыйтрĕ Лопарь.

— Е хĕнемен тетĕн-и мĕн?.. Пĕри акă çапла, сан пекскер, хĕçĕпе туртса çапрĕ-тĕк. Юрать тăлăп хулăм пулчĕ, унсăрăн пыршах тивертетчĕ...

— Мĕн вăл, ўсĕрччĕ-и мĕн?

— Ўсĕр пулнă курăнать çав...

— Ну, ўсĕртен ыйтмалли те çук,— тесе хучĕ Лопарь, ăнсăртран каланă пек.

— Ара, ыйтмастăп та вĕт эпĕ...

Теренти кунти советсем мĕнле ĕçлени çинчен ыйтса пĕлесшĕн пулчĕ: çирĕп-и вĕсем, ăнăçлă ĕçлеççĕ-и? Вăл ямшăкăн юптарса каланă сăмахне пўлчĕ те, урăх ыйтусем пама тытăнчĕ.

Анчах кунта та вăл тўрĕ калаçманнине, темĕнрен хăранă пек, сăмахне чипер çыхăнтарайманнине, е сăмахне каласа пĕтерменнине çеç курчĕ; тўрĕ ответсем вырăнне Теренти:

— Ан тив хăтланччăр... Пурнăçра тем те пулать... Халь мĕн ĕç пур-ха ĕнтĕ пирĕншĕн...—тенĕ сăмах татăкĕсене çеç илткелерĕ.

— Ара, сăмахна нимĕн ăнланма та çук вĕт, уççăнтарах кала,—тесе, чăтайманнипе тарăхса кайрĕ Лопарь.

— Ытла та чухлаймастăн эсĕ, ачам. Лайăхрах шухăшласа пăх-ха — тен тавçăрса та илĕн.

Лопарь калаçăва чарса лартасран шикленсе, Теренти ăна:

— Çук, тăхта-ха эсĕ, тăхта,—тесе чарчĕ, унтан каллех мужике:

— Сирĕн кунта совет лайăх-и е аплах мар-и, тесе ыйтатăп эпĕ. Ĕçе кирлĕ пек тăвать-и, тетĕп?

— Мĕншĕн тăвас мар-ха унăн, паллах...— тесе таврчĕ мужик.— Нарядсене çеç акă Горшков тĕрĕс мар...

— Тĕрĕс мар-им?— тесе, Лопарь чĕрĕ сăмах çине, кушак аш çине сикнĕ пек, сиксе ларчĕ.

— Çапла çав, мĕн-ха тата: хуньăшне кашнинчех сиктерсе хăварма тăрăшать, пирĕн пеккине вара нимĕнле черетсĕрех пĕрехмай хăвалать.

— А санăн жалоба памаллаччĕ,— терĕ Теренти.— Совета кай та, тĕрĕссине кăтартса каласа пар: унăн путсĕрĕн хӳрине унта часах пăрса лартĕç.

— Пăрĕç унта, кĕтсех тăр,—терĕ те мужик шанман сасăпа, лашана купарчи тăрăх тилхепипе шартлаттарчĕ.— Епле пăрасса пăхсах тăр: ăна пула ху кирлĕ мар çĕре лексе ларăн...

— Ну, мĕн пустуя павратăн çак?— тесе çĕнĕрен çилленсе кайрĕ Лопарь.

— Павратăн мар çав, чăннипе çапла яланах,— терĕ те ямшăк хуçăлнă сасăпа, унăн пуçĕ вилнĕ кайăкăнни пек аяккалла усăнса анчĕ.

— Ун пек ĕçсем чăннипех пулнă-и?—тесе, следователь пекех, хыттăн та тӳррĕн тĕпчесе ыйтрĕ Теренти.

— Пулмасăр, пулнă çав...

— Ну, мĕн-ха вара?

— Ну, нимех те мар вара,—тесе, пăркаласа илчĕ мужик пăрланса ларнă тутисене.— Пулнă та, пулман та. «Пурăннă та, вăхăчĕ çитиччен вилсе выртнă — усси те çавă çеç»...

— Мĕншĕн шарламасăр ирттерсе ятăр вара?— чĕрре кĕрсе ыйтрĕ Лопарь.

— Шарламан çав, шăпрах пултăр тенĕ,— тесе, пĕр тарăхмасăр, чеен ăнлантарса пачĕ мужик.— Шарламасан, вăл хăех иртсе каять.

— Шӳт туни шӳт туниех те-ха вăл, эсĕ çапах та...— хăтăрса пăрахрĕ Лопарь; анчах çавăнтах, хăйĕн йăнăшне сиссе, ырă кăмăллăн:— Ара, лавпа çӳрени, тен, убыткă та мар пулĕ-ха сана, мучи?— тесе хушрĕ.—Советсенче авă пур çĕрте те хутсем çакăнса тăраççĕ:

«Çӳренĕшĕн — тӳле, мĕн илнĕ япалашăн — каллех пуриншĕн те тӳле». Вуланă пуль? Ху курнă-и ăна?

— Курнă-çке... çакăнса тăтăрах.

Лопарь тарăхса сурчĕ те, питне пасарнă çухавипе лайăхрах витсе, шăпăрт пулса ларчĕ,— вăл хулара рабочи-

семпе пĕтĕмпех урăхла: уççăн, шухăша пытармасăр калаçма хăнăхнă, а кун пек калаçма пĕлмерĕ.

Тӳрĕ сăмахран пăрăнса, уçăмсăр, чеен тавăрса каланă ответсем ăна чăнласах çилентерсе ячĕç.

Мĕн Ивантеевкăна çитиччен вара вăл урăх пĕр сăмах та шарламарĕ; чăтăмлă Терентий Бочкин çеç калаçма юратакан чее мужикĕн ултавлă, тĕтреллĕ каласа тултарнă сăмах купинче — асăрхамасăр персе янă шухăш татăкĕсемпе уйрăм пĕчĕк фактсене, хаклă йышши чулсене пухнă пек, темĕнччен пухса пычĕ.

* * *

Федорпа Андреев хăйсен лавçипе пĕтĕмпех урăхла калаçса пычĕç.

— Эсĕ, Гриша, унăн отрядĕнче ху пулнă-и?— тесе ыйтрĕ Федор çамрăк ямшăкран.

— Урана та унпа çӳренĕ чухнех амантрăм,— тесе пӳрнипе ларчăк айнелле тĕртсе кăтартрĕ Гриша.— Çеçен хирсем тăрăх çăвĕпех пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне çити хăвалаcа çӳрерĕмĕр: вĕсем пире хăвалаççĕ, эпир вĕсене улталама хăтланатпăр... Ч е х тени вăл ухмах, анчах к а з а к а улталаймăн: хăй кунта ӳссе çитĕннĕ — мĕн кĕтмелли пур унтан?

Гриша, тăлăп çухине хыçалалла ярса, ларчăк çинче хăяккăн ларса пычĕ; çавăнпа Федор унăн хĕвелпе пиçнĕ хĕрлĕ сăн-питне: хăюллă, уçă кăмăллă, ăшă сăнне—пит уççăн курса пычĕ. Гриша кăмăлне унăн çӳлти тути уйрăмах лайăх палăртса тăрать: хумханса калаçнă чухне вăл çӳлти тутине аялтипе хыттăн çыпăçтарса лартать. Сăмси сарлака та лапчăк, çăра чакăр куç, пĕркеленчĕклĕ усăк çамка,— ну, сăн-пичĕ ытти çынсенни пекех: уйрăмах палăрса тăраканĕ нимех те çук! Çав вăхăтрах ун ăш-чикĕнче пĕтĕм чун-чĕрине палăртса тăракан калама çук пысăк, чăн-чăн в ă й-х а л пурри сисĕнет. Гриша мĕн пурĕ те çирĕм икĕ çулта кăна-ха, анчах сăнĕнчен пăхсан эсир ăна вăтăр пилĕк çул та памалла: тарçăра пурăннă чухнехи йывăр пурнăç тата çапăçура сулахай урине татса кайнă пысăк асап ун сăн-пичĕ çине нихçан пĕтмелле мар йĕрсем хăварнă.

— Ну, мĕнле-ха, вăл çамрăк-и?— тесе интересленчĕ Федор, унччен пуçланă калаçăва малалла тăсса.

— Çамрăк-ха: вăтăра та çитмен пулас...

— Кунтисем-и вăл, казак-и?

— Мĕн казакĕ... Пугачевран инçех мар кунта Вязовка ятлă ял пур — вăл çавăнта пурăннă пулас. Теприсем тата Балаковăра пурăннă, теççĕ; кунта кайран çеç килнĕ пулать. Вĕçне-хĕрне кам тупса çитерĕ ăна!

— Хăй мĕнлескер-ха вăл?—сăхлăн ыйтса пĕлме тăрăшрĕ Федор; хăйĕн хумханса кайнă пичĕ тăрăх ăна çак калаçу питех те интереслентерни, вăл кашни сăмаха илтмесĕр юласран хăрани палăрчĕ.

— Мĕн калас-ха ĕнтĕ? Пĕр сăмахпа каласан—паттăр вăл!— тесе, хăйпе хăй калаçнă пек шухăшласа каларĕ Гриша.— Ларса пыратăн, калăпăр, лав çинче; ачасем вара вăл килнине катаранах кураççĕ те: «Чапаев килет, Чапаев килет...»— тесе çухăрма пикенеççĕ. Çапла кун каçиччен ăна пĕр вунă хут та куратăн пуль, çапах та татах курас килет: çавнашкал çын ĕнтĕ вăл! Шуса анатăн та вара лав çинчен, темĕнскерле тĕлĕнмелле япала çине пăхнă пек пăхатăн. А вăл утнă май уссине унталла-кунталла сăтăрса тӳрлеткелесе пырать,— юрататчĕ вăл уссине, ялан туракаласа якататчĕ... «Ларатăн пулать» — тет хăй. «Ларатăп, Чапаев юлташ», тетĕп. «Ну, лар эппин»,— тет те иртсе каять. Урăх унран нимĕнле сăмах та кирлĕ мар; анчах вăл пĕр сăмах каласанах, сана темĕнле çĕнĕ савăнăç кĕрсе тулнă пек туйăнса каять. Вăт епле вăл: ч ă н-ч ă н çын теме те пырать!

— Ну, паттăр та... Чăнахах паттăр мĕн?— тĕплĕрех пĕлме тăрăшса тĕпчет Федор.

— Мĕн калаçмалли пур ĕнтĕ ун çинчен!— мухтанса пуçне сулчĕ Гриша.— Илер акă, сăмахран, вăл Иващенкăвăри завода çитме епле васканине! Вăл унти рабочисене епле пулин те хăвăртрах çитсе çăлса хăварасшăн пулчĕ! Çук, çăлма май килмерĕ, вăхăтра çитсе ĕлкĕреймерĕ.

— Ĕлкĕреймерĕ иккен?— хыпса ӳкрĕ Андреев.

— Ĕлкĕреймерĕ çав,—тепĕр хут вăрăммăн сывласа каларĕ Гриша.— Ĕлкĕрессе те кăшт çеç ĕлкĕреймерĕ... Çакăн пирки вара рабочисен юнĕ мĕн чухлĕ юхнине пĕлесчĕ сирĕн—э-эх!..

Гриша аллипе сулчĕ те йывăр шухăшлă пуçне çĕрелле усрĕ. Хуйха кайнипе пурте пĕр минутлăха шарламасăр ларчĕç. Унтан Гриша пушшех хуллен:

— Тĕрлĕрен калаçаççĕ, анчах вĕлерсе пĕтернисем сахалтан та икĕ пинрен кая пулас çук,— терĕ.— Вĕсене

завод корпусĕсем хушшинче пĕтĕм картиш тулли ĕретĕн-ĕретĕн хурса тухнăччĕ,— хĕрарăмсем те унта, ачи-пăчи те, ну, ват карчăксем те хăш-пĕрисем,— пĕр сăмахпа каласан — никама та хĕрхенсе тăман.

Вăл илтĕнмеллех шăлĕсемпе кăчăртаттарса илчĕ те пушаннă тилхепесене туртрĕ.

— Эсĕ хăвах куртăн-и?— тĕпчесе ыйтрĕ Федор.

— Епле курас мар... Қалама та кирлĕ мар пек те... Мĕн курмалла пулчĕ-ха унта? Юн та аш çеç — пылчăклă çĕрпе хутăш... Нимĕн тиркемесĕр, черетренех касса-тураса тухнă, подлецсем...

— Ну, а вăл, Чапаев хăй мĕн турĕ?

— Мĕн тăвасси юлнăччĕ-ха унăн? Тарăхса, вăл вĕçĕмсĕр çилĕпе тулчĕ, куçĕсем çуталса кайрĕç, хăй ĕрĕхсе кайнă лаша пек чĕтресе ÿкрĕ. Хĕçĕпе чула мĕнпур вăйпа сулăнса çапрĕ те:

— Çак юншăн—нумай юн юхĕ! Ĕмĕрне те манас çук кăна, хамăрăнне илетпĕрех!—терĕ.

Вара лав çинчисем каллех пĕр вăхăт калаçмасăр пычĕç. Унтан Клычков калаçма ÿркенмен Гришăран малалла ыйтса тĕпчерĕ:

— Унăн, Гриша, халăхĕ, боецĕсем — мĕнлескерсемччĕ, ăçтисемччĕ вĕсем?

— Кунтисемехчĕ ара, кам унпа кайтăр-ха тата? Пирĕн пеккисем кайнă, тарçăсем, тата хăшĕ чухăнтарах— çавсем... Бурлаксем те пурччĕ, вĕсем пирĕнтен те малтантарах пынă пулнă...

— Мĕн ара сирĕн, полкчĕ-и унта, мĕн пулнă?

— Полк та пулнă, Пугачевра тăнă чухне; кайран вара ытларах отряд тесе чĕнетчĕç; вăл хăй те, Чапаев, полк тесе чĕнме юратсах каймасчĕ: отряд та отряд, тетчĕ; отряд вăл ытларах ĕçе юрăхлă, тетчĕ.

— Н-да... Отряд... Ну, аманнисене, вилнисене отрядран сирĕн кам, ăçта ăсатса тăнă?

— Ăсатнă ĕнтĕ, ăçта килнĕ унта,— шухăша кайса, тăсса каларĕ Гриша.—Тĕрлĕ çĕре янă; хăшне пухса кайма ĕлкĕреймен-тĕк, вĕсене казаксем чике-чике вĕлерсе пĕтеретчĕç; паллах, чĕрĕ хăварман вĕсене. Пухса кайма ĕлкĕрнисене — ялсем тăрăх салатса вырнаçтаратчĕç: кунта пирĕн пур çĕрте те хамăр халăх. Çакăнта та акă, Таволожкăна хăварнă. Ăçта ăсатман пуль ĕнтĕ—пур çĕре те янă...

— А мĕнле эмеллесе сыватнă вĕсене?

— Эмеллесси те çакăнтах пулнă; анчах эмелсем нимĕнлисем те çукчĕ курăнать; асанне карчăксем мĕн шухăш тытнă, çавăнпа пулăшнă... Хăшĕ те пĕри хулана лекме пултарайнă пулсан, вăл-ха апла-капла; анчах кунта, ялсенче,— эх-хе-хе, эмелле-эмелле — леш тĕнченех ăсататчĕç!.. Аçтан-ха ĕнтĕ вăл, тĕттĕм карчăк, ура суранне тӳрлетме пултартăр, пĕтĕм уринчен те пĕр сулланса тăракан шăнăрĕсемпе хăнкăрма пек шăкăртатакан ванчăк шăммисем анчах тăрса юлнă пулсан? Карчăк епле унта çын тухтăрĕ пулма пултартăр?

— Ун пеккисем те пулнă-и вара?—тесе, чĕтрекен сассипе ыйтрĕ Федор.

— Пулмасăр ара: çавăнпа вăрçă та ĕнтĕ вăл!

— Ку акă тĕрĕс!— кĕтмен çĕртен сăмах хушрĕ Андреев, çул тăршшĕпех пĕр шарламасăр, тăлăп ăшне пуçĕпех чăрканса, такама е темĕн пирки çиленнĕ пек пулса ларса пыраканскер,— тĕрĕс калатăн!— терĕ те вăл хыттăн тепĕр хут, Гришăна тăлăп витĕр юлташла çапса илчĕ.

— Паллах ĕнтĕ,— терĕ лешĕ, аллипе савăнăçлăн сулса.— Пурте пулнă!

— Гриша,— терĕ ăна Федор, пӳлсе,— Гриша, тăранасса та ялсем тăрăхах тăранса пурăнаттăр-и?

— Ялсем тăрăхах,—терĕ яш-кĕрĕм мăнаçланса, унпа çав тери интересленнине кура, питех те савăннипе пулас.— Хамăрпа эпир сахал илсе çӳренĕ,—ăçта турттарса çӳретĕн-ха ăна пурне те, ăçта чиксе пĕтеретĕн? Кунта пурте ялсем тăрăх: вĕсем килеççĕ — вĕсем илеççĕ, эпир пыратпăр — эпир те илетпĕр. Яла ăна апла та, капла та, ăçталла ан пăрăн, пурĕпĕр хĕн пулнă!

— Тĕрĕс, йывăр пулнă çав,— ассăн сывласа илчĕ Клычков та.

— Пурне те йывăр пулнă... Пире çăмăлччĕ-и мĕн? — терĕ Гриша, хăйне тĕрĕс мар ăнланасран хăранă пек, Клычков шухăшне çийĕнчех малалла тăсса.

— Паллах, çăмăл мар,— тесе, васкасах ун майлă пулчĕ Федор.

— Çапла çав, çапла,—лăпланчĕ Гриша.—Тĕрлĕрен ĕç пулнă! Мĕн пулман пуль! Тепĕр чухне çăкăр, тейĕпĕр акă, е лашасем валли сĕлĕ парасшăн мар пулаççĕ, е хамăр лашасем ĕшенсе çитсен, лашасене улăштарасшăн мар пулаççĕ, а пире кирлĕ... Кирлĕ-тĕк, пар ăна — калаçу

кёске. Эсӗ талӑкӗ-талӑкӗпе ҫимен, тата тин походран таврӑннӑ, тейӗпӗр, анчах сана пӗр татӑк ҫӑкӑр та памаҫҫӗ. Пуринчен малтан эсӗ сӑмахпа калатӑн: пар, пурте выҫӑ, тетӗн. А вӑл сана чышкӑ кӑтартать. Мӗн ара, унпа кулкаласа калаҫмалла-и вара? Ну, тытса хупатӑн унта хӑшне; хырӑмӗ хуламраххине — хӑлха чиккинчен те янлаттарса яратӑн. Аҫта унпа ытлашши сӑмах вакласа тӑратӑн...

— Хӗненӗ апла?— сывлама чарӑнсах ыйтрӗ Клычков.

— Хӗненӗ!— тесе, уҫҫӑн та ҫирӗп ответ пачӗ Гриша.—Пурте хӗненӗ, ҫавӑнпа вӑрҫӑ та ӗнтӗ вӑл!

— Маттур, Гришуха,—тесе, каллех савӑнӑҫлӑн сӑмах хушрӗ Андреев.

Андреев вӑл ҫакнашкал таса, нимӗнпе те пытарман, кӑшт хытӑрах каланӑ чӑн сӑмаха чӗререн юратать.

— А мана хӗнемен-и мӗн?— терӗ Гриша каялла ҫаврӑнса пӑхса.—Мана та хӗненӗ... Пӗрре Чапаев хӑех сӑптӑрса ячӗ. Мӗн тӑвас тейӗн, кирлӗ пулсан?

— Епле, Чапаев? Мӗншӗн?— хыпӑнса ӳкрӗ Федор, ҫак тӗлӗнмелле ята (миҫемӗш хут-ши ӗнтӗ!) ҫӗнӗрен асӑннине илтсен.

— Эпӗ ун чухне хуралта тӑраттӑм,— тесе кала пуҫларӗ Гриша,—ҫав Пугачев хули ҫывӑхӗнче, унтан инҫе те мар, темӗнле станци пур... ятне маннӑ ӗнтӗ халь. Тӑратӑп, тӑратӑп ӗнтӗ хуралта, юлашкинчен, йӑлӑхтарса ҫитерчӗ... Мӗнле-ха ку хуралта тӑрасси, ҫав тери кӑмӑла кайман ӗҫ, тетӗп. Пӗр сӑмахпа каласан, йӑлтах кичемлӗх пусарса ҫитерчӗ. Вокзал ҫывӑхӗнчех хурӑнсем лараҫҫӗ, хурӑнсем ҫинче, пӑхатӑп та, чанасем — шучӗ ҫук; чанк-чанк-чанк! туса, пӗлӗт пек явӑнаҫҫӗ... Эк-кей, епле кӑшкӑрашаҫҫӗ! тетӗп. Кӗрслеттерсе ярӑп та акӑ, ун чухне ытлах чанклатса лараймӑр! тетӗп. Малтан кулса ҫеҫ ҫапла шухӑшларӑм; кайран чӑнахах та: кам курӗ кунта, тӗрлӗ сӑлтавпа перекенсем сахал-и?—тесе шутларӑм. Тӗллерӗм те чанасем ларнӑ тӗле: пах, пах, пах!.. тутарса ятӑм. Хам сисмен те: хӗрсе кайнипе патронсене пиллӗкӗшне те кӑларса янӑ. Вӗлернӗ чанасем, астӑватӑп, ҫӳлтен ҫуначӗсемпе туратсенчен ҫаклана-ҫаклана пере-пере анчӗҫ, ыттисем пурте ҫӳле пӗлӗт пекех вӗҫсе ҫӗкленчӗҫ... Ҫӗкленсе кайрӗҫ те, ҫӗр ҫӗмӗрсе шавлама тытӑнчӗҫ... Кам пӗлнӗ вӑл, хайхи Чапаев, комендант патӗнче ларнине? Пӳртрен тухрӗ, хӑй пӗлӗтрен те хурарах.

«Эсӗ петӗн-и?» тет.

«Ҫук, пемен,— тетӗп.— Эпӗ мар!»

«Кам ара хӑратрӗ-ха чанасене?» тесе ыйтать.

«Хӑйсемех вӗҫсе ҫӗкленчӗҫ курӑнать!» тетӗп.

«Ну, кӑтарт-ха винтовкуна!» терӗ те, туртрӗ илчӗ винтовкӑна алӑран. А винтовка пуш-пушах.

«Мӗн ӗнтӗ—тет.—Патронсем ӑҫтан тупӑн-ха?—тет.— Казаксене мӗнпе перӗн, тунката? Чана саншӑн казакран та хӑрушӑрах-им?» терӗ те, прикладпа аякран яра пачӗ!

Хам нимӗн шарламасӑр тӑратӑп — мӗн тавӑрса калӑн ӑна? А манӑн урӑхла тумалла пулнӑ,—аса илтӗм те, вара, каярах пулчӗ; вӑл винтовкӑна ярса тытас тенӗ чухне, манӑн ӑна памалла пулман: «Ан ҫывхар, персе пӑрахатӑп: хуралта винтовкӑна тытса пӑхма юрамасть!» темелле пулнӑ. Вӑл унталла-кунталла кускаланӑ пулӗччӗ, а ман пурӗпӗр памалла марччӗ, ҫитменнине хырӑмӗнчен штыкпа чикме тӑнӑ пек туса хӑратмаллаччӗ: юрататчӗ вӑл ун пек хӑтланнине, йӑлтах каҫаратчӗ...

— Юрататчӗ-им апла?— куҫне хӗссе ыйтрӗ пурне те пӗлме ҫунакан Федор.

— Епле юрататчӗ ӑшшӗ: эсӗ ӑна мӗн чухлӗ хытӑрах тӗлӗнтеретӗн, унӑн кӑмӑлӗ ҫавӑн чухлӗ ытларах ҫавӑнатчӗ. Ҫирӗп ҫынна вӑл кирек хӑҫан та, вӑл ӑна хӑйне кирек мӗн тусан та, хисеплетчӗ: «Харсӑр чӗреллӗ пулсан вара — маттур эсӗ», тетчӗ... Анчах пурне те ӑҫтан каласа пӗтерен? Акӑ ӗнтӗ Вантеевкӑна та ҫитрӗмӗр,— тесе савӑнса кайрӗ Гриша.

Вара вӑл ямшӑкла малалла ҫаврӑнса ларчӗ те, лашасене тилхепесемпе шартлаттарса ҫапрӗ, тутипе тутлӑ япала ӗмнӗ чухнехи пек чаплаттарса илчӗ, шӑхӑрса ячӗ, унтан мӗн яла ҫитиччен вара канӑҫлӑ пычӗ.

Тепре ҫеҫ каялла ҫаврӑнса:

— Совет патне илсе пырас-и?— тесе ыйтрӗ.

— Совет патне ҫав, Гриша.

— Кирлӗ пулсан, Парфёныч патне те илсе кайма пултаратӑп, вӑл вара Чапаев ҫинчен темӗн те каласа кӑтартма пултарать...

— Кам ара вӑл, Парфеныч тенӗскер?

— Пирӗн боец пулнӑскер, отряда вӑл манран маларах пынӑччӗ. Аллине унӑнне йӑлтах татса кайрӗ те, вӑл вара ҫавӑнпа килне таврӑнчӗ.

— Кунти ҫын-и вӑл?

— Кунтиех. Анчах хуçалăхсăр халь, казаксем пĕтĕмпех çаратса кайрĕç: пӳртне çĕмĕрсе пĕтерчĕç, кĕлечĕсене çунтарса ячĕç, мужике çарамасах тăратса хăварчĕç. Ана-кăна тӳрлеткелерĕ те, начар çав.

— Иртсе кайнă чухне кăтартса хăвар; тен, кирлĕ пулĕ,— тесе астутарчĕ Федор.

— Юрĕ, кăтартăп,— терĕ Гриша.

Ивантеевкăна çитсе кĕчĕç. Ивантеевка вăл—шавах çӳренипе яп-яка тикĕсленнĕ сарлака урамлă пысăк ял. Пĕчĕк яла хĕллехи юр упа йĕннине хупланă пек хупласа хурать,—шăлса, питĕрсе лартать. Пысăк ял вара хĕлле—пушшех илемленсе, капăрланса ларать. Гриша тилхепесене туртăнтарарах тытрĕ те, янкăсланмалăх лашасене вĕтĕ юртăпа чуптарчĕ. Пĕр пĕчĕк пӳрт тĕлĕнчен пӳрнипе тĕллесе кăтартса иртрĕ,—ку Парфеныч пӳрчĕ-мĕн. Теприн еннелле тĕллесе кăтартрĕ те, вăрт çаврăнса ларса, янах айĕнчен пӳрнипе чиртсе, кăшт кулса илчĕ; кун пек тунине: çак пӳртре самогонка юхтараççĕ, тесе ăнланмалла пулчĕ пулмалла. Совет патне вĕçтерсе çитсе чарăнчĕç; вăл ытти ялсенчи пекех — тĕп площадьре, ĕлĕкхи правлени çуртĕнче вырнаçнă. Çунасенчен йăраланкаласа тухрĕç, çывăрса кайнă урисем çине асăрханарах тăрса пусрĕç; юрпа, паспа шуралса ларнă тăлăпĕсене хывса пăрахрĕç, хăйсен корзинкисемпе çыххисене (питех те мĕскĕн пурлăх: пĕтĕмпе те çуршар пăт çеç!) аллисемпе хул хушшине хĕстерсе тытрĕç те, пусма картлашкисем тăрăх улăхса, совет çуртне кĕрсе кайрĕç.

Совет çурчĕ ытти совет çурчĕсем пекех: анлă, таса мар, çынна илĕртмен, кичем ăшчиклĕ çурт. Халĕ ир-ха, хулара халĕ учрежденисенче никама та тупаймастăн; анчах кунта пăх-ха, халăх мĕн чухлĕ килсе тулнă! Мĕн тума çав тери ир килсе тулнă-ши вĕсем кунта? Хăшĕ-пĕри çулланса пĕтнĕ тĕттĕм-сăрă стена çумне тĕршĕнсе тăнă та, чикарккă çавăрса махорка туртать, унсăрăн та йӳçĕхсе кайнă тӳсме çук йывăр сывлăша пушшех шăршлантарать; теприсем чӳрече янаххисем тăрăх хĕсĕнкелесе лараççĕ, пăрланса ларнă кантăксем çине чĕрнисемпе тĕрлĕрен паллă çырса тултараççĕ; тултан кĕрекенсем аллисене пĕр-пĕринпе сăтăркаласа ăшăнаççĕ; пурте пĕр-пĕринпе сӳрĕккĕн, ĕç çукран тенĕ пек кичем сăмахсемпе перкелешсе илеççĕ... Нумайăшĕ,— тен, пурте — ĕççĕрех килсе кĕпĕрленсе тăни курăнать: ниçта кайма çук, нимĕн тума

çук,— çавăнпа пухăнса килнĕ те.

Кĕрекенсене курсан, пурте вĕсем еннелле çаврăнса пăхрĕç, сивĕ çинчен тĕрлĕрен калаçкаласа илчĕç; çул çӳрекенсем ывăнни çинчен, килекенсем ăçталла тата мĕн ĕçпе кайни çинчен, çул йывăрри çинчен сăмах хушрĕç: урпапа сĕлĕ çитменни çинчен тата паян пурпĕрех тăман тухасси çинчен, çавăнпа «ниепле майпа та» малалла кайма пулас çукки çинчен шавлакаларĕç.

— Сывă-и, юлташсем!— терĕ Лопарь, темĕн пирки тулта ытларах тытăнса тăнăскер, халь чи кая юлса кĕрекенскер.

— Сывă-ха, сывă,— мăкăртатса илчĕ темиçе сасă.

— Председателе курасчĕ...

— Акă кунта кĕрĕр,— тесе, аяккинчи пӳлĕм енне тĕллесе кăтартрĕç.

Лопарь мĕн çул тăршшĕпех çак çул çӳревçĕсен представителĕ вырăнĕнче пулчĕ: вăл кампа калаçмаллипе калаçать, лашасем ыйта-ыйта илет, ăçта чарăнса çырткалама май пуррине ыйтса пĕлет тата ыттине те тем те пĕр тăвать.

Андреев тăлăпне хывмарĕ, чӳрече янаххи çинче ларакан мужике нимĕн чĕнмесĕр кăшт аяккалла тĕртсе сиктерчĕ те, чĕлĕм туртса ячĕ, пĕр чĕнмесĕрех лешне те туртма пачĕ. Теренти халăх хушшине кĕрсе тăма та ĕлкĕрнĕ,— çынсемпе калаçать; вăл ялта мĕн чухлĕ халăх пурăннине, тĕрлĕ ĕçсем мĕнле пынине, совет мĕнле ĕçленине, халăх совет влаçĕпе килĕшни-килĕшменнине ыйта-ыйта пĕлет,— сăмахпа каласан, вăл пӳрте кĕнĕ-кĕменех пурин çинчен те ыйтса тĕпчеме тытăнчĕ.

Федор Гриша каласа кăтартнă ĕçсем çинчен тарăн шухăша кайса ларать. Ун умĕнче Чапаевăн — çак çеçенхир атаманĕн юмахри пек сăнĕ пĕр уйрăлмасăр, ăна хумхантарса, савăнтарса тăрать.

«Вăл, паллах, халăх паттăрĕ, — тесе шухăшласа ларчĕ вăл хăй ăшĕнче,— ирĕке юратнă Емельян Пугачёвсен, Стенька Разинсен, Ермак Тимофеевичсен йышне кĕрекен паттăр вăл... Лешсем хăйсен вăхăтĕнче пурăнса хăйсен ĕçне тунă, кăна вара урăх вăхăтра пурăнма пӳрнĕ—ĕçĕсене те вăл урăххисене тăвать. Гриша каланă тăрăх, Чапаев характерĕн тĕп уйрăмлăхĕ вăл—харсăрлăхпа маттурлăх. Ас-тăнлă революционертан ытла вăл — шăпах

паттăр. Унăн ăшĕнче канăçсăрлăх вĕçĕмсĕр çулăмланса тăрать, çĕнĕрен çĕнĕ ĕç туса курасшăн антăхни унăн ытла та хăватлă курăнать. Анчах хресчен пăлхаварçисем хушшинче вăл мĕн тери уйрăммăнах хăйне евĕр çын, епле уйрăммăнах çутă, характерлă, уççăн палăракан сăн пулса тăрать-ха!»

Федор мужиксенчен Парфёныч патне ăçтан каймаллине ыйтса пĕлчĕ; кайран вара, Лопарь совет председателĕпе калаçнă хыççăн ыттисене чей ĕçме ертсе кайнă чухне, Федор вĕсемпе пĕрле каймарĕ; хăй ăçта кайма шут тытнине пĕлтерчĕ те, кăтартса янă çулпа уйрăлса утрĕ.

Тепĕр сехет çурăран Ивантеевкăран тухса кайрĕç. Федор пĕр чĕнмесĕр, тĕксĕммĕн ларса пычĕ. Вăл Парфёныча килĕнче тĕл пулайман: лешĕ ĕнер çеç Пугачева тухса кайнă мĕн. Андреев ăна, пĕр-ик ыйту парса, калаçăва хутшăнтарма тăрăшрĕ, анчах нимĕн те тухманнине кура, урăх нимĕн те чĕнмерĕ.

Терентипе Лопарь ларса пычĕç-пычĕç те, юрă юрлама шут тытрĕç.

Иккĕшĕ вĕсем питех те тĕлĕнмелле юрларĕç: Лопарĕ юрлас вырăнне хăйăлтатса çеç пычĕ, Терентийĕ пит тискеррĕн çухăрса, шăхличĕ пек шăхăрса юрларĕ. Юрă вырăнне темĕнскерле питех те хăрушă, пăтрашуллă, тискеррĕн илтĕнекен япала пулса тăчĕ.

Питех те йăлăхтарса çитерсен, Андреев малта пыракан çуна çинчен вĕсене унашкал улама чарăнма хушса кăшкăрчĕ. Вĕсем килĕшрĕç пулмалла, юрлама пăрахрĕç. Вара тăваттăшĕ те Таволожкăна çитиччен тĕлĕрсе пычĕç. Унта çитсен, кăшт та кĕтсе тăмарĕç, лашасем туптарса Пугачёва тухса кайрĕç.

Пугачевран Уральска çитесси пĕрре ярса пусмалăх анчах; çапах та Уральска вĕсем виççĕмĕш кунне тин çитрĕç.

## III. УРАЛЬСК

Уральска ҫитсен станцӑран телефонпа шӑнкӑртаттарчӗҫ. Комендант патӗнчен икӗ ҫара ҫуна килчӗ те, вӗсем хӑйсен япалисене ҫуна ҫине тиесе, Тӗп гостиницӑна хваттере кӗме кайрӗҫ. Гостиницӑра калама ҫук сивӗ, номерсенче нӳрӗ, таса мар, ҫара; ниҫта ларма та, выртма та ҫук; ӑҫта мӗн хумаллине те пӗлместӗн. Ҫапах та, сӑнаса пӑхкаларӗҫ те, йӳнеҫкелерӗҫ, аран майлашкаласа пӗр номер йышӑнчӗҫ; ҫапла вара тӑваттӑшӗ те пӗр пӳлӗме шӑнӑҫса вырнаҫрӗҫ: туссен пӗр-пӗринчен уйрӑлас килмерӗ. Сивве шӑнса килнӗ хыҫҫӑн умлӑ-хыҫлӑнах икӗ сӑмавар чей ӗҫсе ярсан, пушӑ вӑхӑта ӑҫта хумаллине пӗлмесӗр, хула тӑрӑх ҫӳреме тухса утрӗҫ. Паҫӑр станцӑна ҫитсенех вӗсем, Фрунзе паян ирех позици ҫывӑхнерех—унта халь пуҫланнӑ наступление ертсе пыма—тухса кайни ҫинчен ыйтса пӗлнӗччӗ. Вӑл вӑхӑтра ҫывӑх позицисем Уральскран пӗтӗмпе те ҫирӗм ҫухрӑмра анчахчӗ; ҫавӑнпа та тӑшмана май килнӗ таран аяккарах хӑваласа яма васкамаллаччӗ. Сӑмах майӗпе каласан, ҫак пирвайхи ҫапӑҫусем пирӗншӗн ӑнӑҫлах пулмарӗҫ: казаксене ун чухне мар, кайрантарах тин,—пӗр харӑс темиҫе енчен наступлени пуҫласа ямалли сарлакарах та тӗплӗрех план туса ҫитерсен тин,—хӑваласа яма май килчӗ; ҫак наступлени Уральск енчен анчах мар, тата Александров-Гай енчен те Сломихино станици еннелле, ун урлӑ вара Уральск—Лбищенск—Гурьев хушшинчи мӑн ҫула пӳлес тӗллевпе пымалла пулчӗ; ҫак мӑн ҫул тӑрӑх вара казаксене ҫурҫӗр енчен килекен хӗрлӗ ҫар чаҫӗсем хӑваламалла пулнӑ.

Анчах ун ҫинчен кайран-ха, кайран; пур ӗҫӗн те хӑйӗн вӑхӑчӗ пур; Уральскран Гурьева илсе пыракан тертлӗ ҫул ҫинчен малалла тата темиҫе хут та каласмалла пулӗ-ха.

* * *

Çывăхри каçсенчен пĕринче, пирĕн туссем кăнтăрлахи апат çинĕ хыççăн тăваттăшĕ те пĕрле килте ларнă вăхăтра, телеграмма илсе пырса пачĕç: Лопарьпе Бочкинăн тепĕр кун ирхине бригадăна тухса каймалла!

Уйрăлса каяс вăхăт çитрĕ!

Пурин те пуçĕнче сывпуллашса уйрăлас умĕнхи хăйне расна шухăшсем пăтрана пуçларĕç, пурин чĕринче те халиччен кĕтмен сисĕм-туйăмсем сике-сике тухрĕç. Иккĕшĕн тепĕр ирхине тухса каймалла пулнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук пек, юлаканнисен те, тен, вĕсем хыççăнах тухса каймалла пулать. Вĕсем çакна çеç кĕтсе тăнă та-çке-ха! Анчах çапах та, вĕсем тăваттăшĕ те темскерле уйрăммăнах урăх шухăш-кăмăллă пулса ларчĕç. Лопарьпе Терентие сасартăк калама çук вăйлăн çапăçас килнĕ хастарлăх килсе кĕчĕ, ку таранччен вĕсем яланах вăрçăра çапăçса ирттернĕ тейĕн... Андреев ытти чухнехинчен те тĕксĕмрех пулса кайрĕ. Федор пĕр шарламасăр шухăша кайса, тухса каякан юлташĕсен пăлхануллă та савăнăçлă сăмахĕсене кăшт кулкаласа итлесе ларчĕ.

Ирхине Терентипе Лопарь çуна çине тухса ларчĕç, чуптуса сывпуллашса уйрăлчĕç те,—юратнă туссем çула тухса кайрĕç. Часах тепĕр телеграмма та персе çитрĕ: телеграммăра—Андреевăн вырăнтах юлмалла, çакăнти дивизирех комиссар пулса ĕçлемелле, тенĕ; Федор Клычковăн Александров-Гая каймалла, унта халь çеç организациленекен ушкăнра политикăллă ĕçе йĕркелесе ямалла, вăл ушкăнăн пуçлăхĕ Чапаев пулмалла, тенĕ.

Телеграммăна вуласа тухрĕ те Федор—хытсах кайрĕ, çийĕнчех ниепле те ĕненмерĕ. Иккĕмĕш хут, виççĕмĕш хут та вуласа пăхрĕ,—нимĕнле иккĕленӳ те пулма пултараймасть:

Ч а п а е в...

Сасартăк тăнлавран темĕнле вăй килсе çапрĕ, юн тапхăрăн-тапхăрăн вĕресе илчĕ; хумханнипе вăл сасартăках сăмах та калама пултараймарĕ.

«Çакнашкал паттăрпа... Чапаевпа çумма-çуммăн тăрса... Епле ытла та тĕлĕнмелле килсе тухрĕ-ха ку!.. Ытла та ĕненмелле мар-çке ку: халь анчах эпĕ Чапаев çинчен темĕнскерле юмахри çын çинчен шухăшланă пек шухăшлаттăм, халĕ тата труках унпа пĕрле, унпа юна-

шарах, халь Андреевпа сывăх пуръннă пекех, просто пуранса ĕçлемелле пулать... Тен, пĕр-пĕринпе çывхарăшсах кайăпăр, юлташсем пулса тăрăпăр?.. Эх, епле тĕлĕнмелле килсе тухрĕ те-çке ĕç!»

Çакăнтан пуçласа Федор пуçĕнче пĕр шухăш çеç капланса тăчĕ, пĕр ĕмĕт-кăмăл çеç хĕрсе тăчĕ—часрах, часрах Чапаева курасчĕ, тени. Кирек мĕн çинчен калаçас-тăвас пулсан та, сăмаха вăл яланах Чапаев çине куçара пуçларĕ. Телеграмма тăрăх, Чапаев халь Александров-Гая çитеймен пек, вăл унта халь çеç кайма тухнă пек курăнать, анчах — пурпĕрех, пурпĕрех... Александров-Гая халех васкаса тухмалла! Федор вара тепĕр куна та кĕтсе тăмарĕ, тепĕр виçĕ сехетренех тухса кайма хатĕрленсе çитрĕ. Андреевпа пит çывăх туссем пек, пĕтĕм чĕререн сывпуллашса уйрăлчĕç. Федор тухса кайрĕ, Андреев Уральскра пĕчченех тăрса юлчĕ.

* * *

Çынсем каласа кăтартнă тăрăх, Федорăн Алгая (Александров-Гая кĕскен çапла калатчĕç), поезд çине ларсан, тепĕр кун тенĕ пекех хăвăрт çитмелле пекчĕ. Анчах кайран ăна, ку çул çинче виçĕ тĕлте: Ершовра, Урбахра, Хĕрлĕ Куттăра пĕр поезд çинчен тепĕр поезд çине куçса лармалли курăнчĕ. Виçĕ хут пересадка тăвасси—шӳт мар! 1919 çулсенче чугун çулсем тăрăх çӳресе курнă çын çул çинче çапла виçĕ пересадка тăвасси калама çук хурлăхлă, асаплă пулнине лайăх пĕлет. Вăтамран илсе шутласа пăхнă хыççăн, Федор Александров-Гая эрне çурăран тин çитме май пуррине курчĕ. Çавăнпа вăл Дергачра поезд çинчен анса, малалла лашапа кайма шут тытрĕ; Александров-Гая çитме кунтан çĕр аллă çухрăм.

Каллех çеçенхир, анлă тӳремлĕхсем, кăвак горизонтсем, вĕçĕ-хĕррисĕр юр хирĕсем... Хăш-пĕр тĕлте юр ирĕлнĕ вырăнсем те тĕл пулаççĕ ĕнтĕ, çаралса юлнă тĕмескесем хуралса выртаççĕ. Çил вăйлах мар чухне—кăнтăрла хĕвел пăхать, ăшă; апла пулсан, часах акă çуркунне те килсе çитмелле. Çеçенхирсем тăрăх кунта ялсем питĕ сайра: пĕр-пĕринчен çирĕм пилĕк—вăтăр çухрăмра лараççĕ; вĕсем кашнийĕ хăйне уйрăм, тутă, тулăх пурнăçпа пурăнаççĕ; кунта хĕрсене те ытти ялсене качча сахал параççĕ,—хăйсеннипех йӳнеçкелесе пыраççĕ, пурте пурне те ытлашшипех çитет. Кашни ял—пĕчĕк республи-

ка тейӗн: хӑйне никама та пӑхӑнман пек тытать, никамран та нимӗнле пулӑшу та кӗтмест, вак буржуаллӑ самостийность енне вӑйлӑн сулӑнать. Ҫак Урал ҫеҫенхирӗсенче, Алгая каякан ҫул ҫинче тӗл пулакан пысӑк ялсем: Осинов-Гай, Орлов-Гай, Курилово тата ыттисем те граждан вӑрҫи историйӗнче питех те пысӑк вырӑн йышӑнса юлчӗҫ. Ҫак ялсем Хӗрлӗ Ҫара уйрӑм добровольцсем анчах мар, тулли хӗрлӗ полксем те пуха-пуха панӑ. Чӑн та, ҫак ялсенченех тӗрлӗрен кулак таврашӗсем шуррисем патне те сахалах кайман; анчах ним иккӗленмелли те ҫук: ытларах вӑй ҫапах та кирек хӑҫан та хӗрлисем енче пулнӑ. Ҫавнашкал, 1918 ҫулта Куриловӑна казаксем пырса кӗрсе, вырӑнти кулаксем кӑтартса панӑ тӑрӑх, совет работникӗсене вӗлере-вӗлере пӗтерме тытӑнсан, ялти мӗнпур ӗҫ халӑхӗ ҫӗкленнӗччӗ те, кам мӗн лекнӗ унпа хӗҫпӑшалланса, казаксене йӑлтах ҫӗмӗрсе тӑкнӑччӗ, юлашкисене ялтан хӑваласа янӑччӗ; ун чухнех вара вӗсем хӑйсен ялӗнчи ҫынсенчен уйрӑм полк тума йышӑннӑччӗ: ӑна вара Куриловски полк тесе ят панӑччӗ. Вырӑнти ытти полксене те: Домашкински, Пугачевски, Стенька Разинӑн, Новоузенски, Краснокутски полксене ҫакӑн пек лару-тӑру вӑхӑтӗнчех тунӑччӗ. Вӗсене малтан хӑйсен тӑван ялӗсене сыхласа, хӳтӗлесе тӑма пухнӑ пулнӑ; салтакӗсемпе командирӗсем (комиссарсем вӗсенче малтан пулман) ҫав ялсенчи ҫынсемехчӗ. Пӗрлӗхлӗх вӗсенче, паллах, ытти полксенчипе танлаштарайми ҫирӗпчӗ: кунта ҫынсем пӗр-пӗрне темиҫе теҫеткешер ҫул хушши пӗлсе тӑратчӗҫ, нумайӑшӗ пӗр-пӗринпе тахҫанхи ҫывӑх юлташсемехчӗ, нумайӑшӗ тӑвансемех те пулнӑ,—Куриловскри полкра, ҫавнашкал, пӗр ҫын хӑйӗн пилӗк ывӑлӗпе пӗрле служить тӑватчӗ. Анчах, калӑпӑр, урӑхла япаласем те тӗл пулкалатчӗҫ: тахҫанхи ҫывӑх туссем кӗтмен ҫӗртен пӗр-пӗринчен уйрӑлса кайни те пулкалатчӗ,—пӗри шуррисемпе тарса каять, тепри тӑван полка красноармеец пулса кӗрсе юлать; тепӗр чухне унтан та ытла тӗлӗнтерекен ӗҫсем пулкалатчӗҫ: пӗр ҫемьери ҫынсемех—пӗрисем шуррисем еннелле, теприсем хӗрлисем еннелле уйрӑлса каятчӗҫ.

Ҫак вырӑнти полксем, хӑйсен тӑван ялӗсене сыхлама тунӑскерсем, кайран пурте часах, ӗҫсем малалла аталанса пынӑ май, тӑван вырӑнӗсене тӗрӗс-тӗкӗл хӑварса, таҫти инҫетри Урал ҫеҫенхирӗсене, унтан вара Колчака

хирĕç, Колчак патĕнчен — çĕнĕрен çеçенхирсене, çеçенхирсенчен—Польша панĕсен фронтне тухса кайса çӳрерĕç.

Чапа тухнă ытти паттăр полксем хушшинче мусульман полкĕ хăйне тивĕçлĕ вырăн йышăнса тăратчĕ; вăл полкра пурĕ вунтăвата наци çынни шутланатчĕ, пуринчен ытла—киргизсемччĕ, киргизсене ку таранччен пуян харампыр казаксем пĕр хĕрхенмесĕрех пусмăрласа пурăннă, çавăнпа вĕсем казаксене тӳсме çук юратмастчĕç. Çак добороволецсен полкĕсем чăннипех те паттăрла ĕçсем тăватчĕç: снарядсемсĕр, патронсемсĕр, питех те начар хĕçпăшалланнăскерсем, çарамасскерсем, çара уранскерсем—вĕсем çапăçусенче çирĕп тăратчĕç, пĕтĕм хастарлăхпа хаяррăн вăрçатчĕç; совет влаçне хирĕç çĕкленнĕ Урал казакĕсене вĕсем темиçе хут та ăнăçлăн çапаçапа çĕмĕрчĕç. Çапăçас тĕлĕшпе вĕсем яланах паха вырăнта тăратчĕç; анчах политика тĕлĕшĕнчен вĕсем часах пиçĕхсе çитеймерĕç: халь пулса пыракан класс кĕрешĕвĕн сăлтавĕсемпе масштабне çийĕнчех тĕплĕн ăнланса илеймерĕç; дисциплина начарри, «ирĕке» хăйсене евĕр ăнланни, командирсене суйласа лартассишĕн чылайччен кĕрешни, центртан килекен директивăсемпе задачăсене уçăмлăн та тĕплĕн ăнланманни,—çак сăлтавсем пурте çак добороволецсен маттур полкĕсене, пĕтĕмпех хресченсемпе тулнăскерсене, Центрти Российăри полксенчен тата темĕнччен уйрăмрах вырăнта тăратрĕç.

Александров-Гай ытти «гайсенчен»—Орлов-Гайран, Осинов-Гайран тата çеçенхирти пĕр-пĕрин тĕслĕ ытти нумай ялсенчен те пит сахал тĕлĕшрен çеç уйрăм тăратчĕ: вăл питех те сапаланчăк сарăлса ларнă ялччĕ; ял варринче пылчăк, хĕррисенче—ашса тухма çук лапраччĕ. Вăл вăхăтсенче Александров-Гай, ытти ялсемпе танлаштарсан, питех те чĕрĕ пурнăçпа пурăнакан ялччĕ: кунта бригада штабĕ, политика пайĕ, тĕрлĕрен командăсем, тĕрлĕрен чаçсем тăратчĕç. Шильная Балка еннелле, БайТурган еннелле, Порт-Артур еннелле, Уральск еннелле—пур еннелле те пĕр вĕçĕмсĕр халăх çӳретчĕ; е çар чаçĕсемпе е ертсе пыракан центрсемпе пĕрмаях çыхăну тытатчĕç; яланах лавсем çӳретчĕç, çĕнĕ çынсем каятчĕç те килетчĕç; пĕр вырăнта лара-тăра пĕлмен кавалеристсем таçта-таçта та васкатчĕç; хресчен лавĕсем çине тиенсе е мăнкăмăллă тĕвесем çине ларса тем пысăкăш çар кара-

ванĕсем куçа-куçа каятчĕç; темĕнле япала та тиенĕ, турттарса кайнă, турттарса килнĕ, пушатнă; пур çĕрте те пурнăç вĕресе çех тăратчĕ; Александров-Гайра унччен те, кайран та пурнăç унашкал хытă нихçан та вĕресе тăман пуль...

...Март пуçламăшĕнче пирĕн позицисем Порт-Артур таврашĕнчеччĕ. Порт-Артур вăл—Сломихино станицине каякан çул çинче, Алгайран темиçе вунă çухрăмра ларакан, пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкнă пĕчĕк ялччĕ; çак станица урлă Уральск—Лбищенск—Сахарная—Гурьев хушшинчи мăн çул çине тухма пулатчĕ. Хăйĕн тĕп вăйĕпе Уральск хулинче пуçтарăнса тăнă çар, çак çитес çывăх вăхăтрах сарлака наступлени пуçласа ярса, пĕрлештернĕ вăйсемпе малтан казаксене Уральскран мĕн май килнĕ таран аяккарах хăваласа яма, кайран вара казаксен çарне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкма шутланăччĕ. Александров-Гай енчен малтан Сломихино станицине пырса çапмаллаччĕ, кайран вара наступление сарса, Чижино шурлăхĕсем урлă каçса, Уральскпа Гурьев хушшинчи мăн çул çине тухмаллаччĕ. Çапла тунипе Хĕрлĕ Çар чаçĕсен Уральск енчен хăваланипе чакса килекен казак полкĕсен çулне пӳлсе лартмаллаччĕ. Часах наступлени пуçарса ямалли кун та çывхарса çитрĕ. Алгайри бригада çак наступление васкаса хатĕрлене пуçларĕ.

## IV. ЧАПАЕВ

Ырантан тепӗр кунне наступлени пуçласа ямалла. Анчах Чапаев мӗншӗн ку таранччен те килмест-ха? Федор çар штабӗнчен ыйтса пӗлме тăрăшрӗ, анчах ответ килмерӗ. Ыран Казачья Таловкăна, Порт-Артур еннелле, юлашки чаçсем тухса каймалла: наступлени тапраниччен вӗсен çапăçу пуçламалли вырăнсене çитсе тăмалла.

Штабра юлашки лару туса ирттерме палăртнă,—тӗплӗн туса хатӗрленӗ наступлени планне сўтсе явса йышăнмалла. Наступлени пӗр вăхăтрах виçӗ тӗлтен пуçланса каймалла; наступлени планне—сасартăк пырса çапасси çине шанса мар, пуринчен ытла чаçсен йӗркелӗхӗпе пирӗн техника вăйлăрах пулассине, уйрăмах пулеметсем йышлăрах пулассине асра тытса тунă. Федор, ун чухне вăрçă ыйтăвӗсене начартарах пӗлекенскер, çар советӗнче мӗн калаçнине пурне те тӗплӗн итлесе ларчӗ, анчах хăй калаçупа тавлашăва хутшăнмарӗ; çар «спецӗсем» çине çех, пӗрин хыççăн теприн çине пăха-пăха, çапла шухăшласа ларчӗ:

«Ку вара—чăнахах та сутăнчăк-шим? Çапла хавасланса ӗçлени те—чăн та ултав çеç-ши, пирӗн пеккисене улталама хăтланни çеç-ши? Ыран вара, пурте хатӗр пулса çитсенех, чăнахах вӗсем туссенчен тăшмансем пулса тăрӗç-ши?» тесе шухăшларӗ.

Бригада командирӗ пулнă полковник пит-куçне вăл уйрăмах тинкерсе, сывлама чарăнсах:

«Чăнах-ши?» тенӗ шухăшпа сăнаса пăхса ларчӗ.

Анчах бригада командирӗн сăн-пичӗ—çынна шиклентермен, çынна тўрех хăй енне çавăрса ӗнентерекен сăнпит.

«Эсӗ, комиссар, çапах та, сыхă тăр!»—тесе шухăшларӗ Федор.

Çар совечĕн ларăвĕ пĕтрĕ. Пурте штабран тухса кайса саланчĕç.

Çак кун тăршшĕпе çак çĕр хушшинче пĕр транспорт хыççăн тепри, караван хыççăн караван Казачья Таловка еннелле туха-туха кайрĕç. Александров-Гай пушанса юлать. Ыран юлашкисем тухса каймалла: вăл вара никам хӳттисĕр тăлăха тăрса юлать.

* * *

Тепĕр кун ирех, пилĕк-улт сехетре, Федор алăкне такăшĕ хыттăн пырса шаккарĕ. Федор алăка уçрĕ те— пӳрте палламан çын кĕрсе тăчĕ.

— Сывă-и? Эпĕ—Чапаев!—терĕ вăл.

Федора такам килсе çапнă пекех туйăнса кайрĕ, пĕр самантрах ыйăх таçта кайса çухалчĕ. Федор килнĕ çынна сăнĕнчен хăвăрт пăхса илчĕ, аллине темĕнскерле васкаса тăсса пачĕ, хăй хумханмасăр лăпкăн курăнма тăрăшрĕ:

— Клычков. Нумай пулать-и килни?—тесе ыйтрĕ вăл.

— Халь çеç станцăран... Манăн маттурсем те унтахха... Эп вĕсем патне лашасем ятăм.

Федор ăна пур енчен те шăтарас пек хăвăрт пăхапăха, сăнаса çаврăнчĕ: унăн ăна хăвăртрах пĕтĕмĕшпех курса, пĕтĕмпех ăнланса илес килчĕ. Тĕттĕм каçсенче, фронтра, ывăна пĕлми ухтаравçă-прожектор çавнашкал пур япалана та хăвăртрах курасшăн хыпаланса шырать, кашни çурăка пырса тăрăнса пăхма васкать, тĕттĕме пур кĕтесрен те хăваласа кăларса, çĕрĕн вăтанчăк çарамасне уçса курма тăрăшать.

«Ахаль çын пекех,—типшĕмрех, вăтам пӳллĕ, вăйĕ те пысăках мар курăнать, хĕрарăм алли пекех çинçе алăллăскер,—тесе çырма тытăнчĕ Федор каçхине хăйĕн дневникне Чапаев çинчен,—сайра çырă çӳçĕсем пайăркан-пайăркан çамки çумне çыпçăнса ларнă; çӳхе кĕске сăмса, тӳп-тӳрĕ çӳхе куçхарши, çӳп-çӳхе тутасем, йăлтăртатса тăракан шап-шурă таса шăлĕсем, яп-яка хырнă янах, фельдфебелĕнни пек çăра усси. Куçĕсем... симĕс тĕслĕпе пĕрех çутă-кăвак, чĕрĕ, ăслă, вылянмасăр пăхакан куçсем. Пичĕ шап-шурă, таса, шатрасăр, пĕр пĕркеленчĕксĕр. Симĕс френч тăхăннă, кăвак шăлавар, уринче пăлан тирĕнчен çĕленĕ атă. Хĕрлĕ кăшăллă çĕлĕкне аллинче тытса тăрать, хулпуççийĕсем урлă чĕн пиçиххисем,

айккинче револьвер. Ҫӗмӗл хӗҫне пӗрмеллӗ симӗс тумтирӗпе пӗрле арча ҫине пӑрахнӑ...»—тесе ҫыра-ҫыра хучӗ.

Ҫул ҫинчен килнӗ хыҫҫӑн, паллах ӗнтӗ, чей ӗҫмелле-ччӗ, анчах вӑл чей ӗҫесшӗн пулмарӗ, ура ҫинче тӑрсах калаҫрӗ; вестовойне бригада командирӗ патне штаба пыма чӗнме ячӗ, кайран часах унта Чапаев хӑй те пыма пулчӗ. Ҫӑшт тӑрсассӑнах Чапаевпа килнӗ маттур йӗкӗтсем те шавласа ҫитсе кӗчӗҫ: япалисене пур кӗтессене те пӑраха-пӑраха тултарчӗҫ; сӗтелсем ҫине, пукансем ҫине, чӳрече янаххисем ҫине ҫӗлӗкӗсене, алсисене, пиҫиххисене хыва-хыва пӑрахрӗҫ, револьверӗсене кӑларса хучӗҫ, теприсем шурӑ шӑвӑҫ бутылка евӗрлӗ бомбисене вӗҫертсе илсе, ҫавӑнтах, ҫӗлӗксемпе алсасем хушшинех ним сыхланмасӑр, тирпейсӗр чиксе хучӗҫ. Ҫилпе, хӗвелпе пиҫсе хуралнӑ, хӑюллӑ, нимӗнрен хӑраман сӑн-питсем; хытӑ ҫӑра ҫӳҫсем; ӑнсӑртран перкелесе янӑ, анчах питех те вӑйлӑ, ӗненмелле сӑмахсем. Теприсем ытла та тӗлӗнмелле, пӗрмаях ятлаҫнӑ пек хыттӑн калаҫаҫҫӗ: пӗр-пӗринчен тем ҫинчен сӑмаха пит татса, хыттӑн ыйтаҫҫӗ, ҫакнашкалах тарӑхса хыттӑн хирӗҫ тавӑрса калаҫҫӗ; япаласене кутӑн-пуҫӑн тытса ывӑтаҫҫӗ... Шавлӑн калаҫнипе, тавлашнипе пӗтӗм пӳрт кӗрлеме тытӑнчӗ; килсе кӗнӗ ҫынсем пур пӳлӗмсемпе кӗтессене те часах «ҫавӑрса илчӗҫ».

Тепӗр икӗ минутран Федор пӗр хӑни унӑн пуҫтарман вырӑнӗ ҫине, урисене стена тӑрӑх ҫӳлелле тӑсса, сарӑлса выртнине курчӗ; чӗлӗм туртса ярса, вӑл чӗлӗм кӗлне аяккалла—епле те пулин Клычковӑн койка ҫывӑхӗнче тӑракан чемоданӗ ҫине ӳкерме тӑрӑшса, силлесе выртрӗ. Тепри тӗрексӗр «туалетнӑй» сӗтел ҫине таянчӗ те, лешӗ лӑчӑрт туса, пӗр аяккинелле пӑрӑнса ларчӗ. Такӑшӗ револьвер авӑрӗпе тивертсе кантӑка ватса кӑларчӗ, такӑшӗ вараланчӑк, шӑршлӑ тӑлӑпӗпе сӗтел ҫинчи ҫӑкӑра хупласа хунӑ та, кайран, ҫиме тытӑнсан, ҫӑкӑртан тӳсме ҫук шӑршӑ кӗрекен пулчӗ. Ҫак ҫынсемпе пӗрле пӳлӗмсене темӗнскерле вӑйлӑ, хытӑ, шавлӑ калаҫу килсе кӗчӗ. Вӑл пӗр минутлӑха та чарӑнмарӗ, анчах ӳссе те пымарӗ,—малтанхи пекех пӗр вӑйпа, пӗр ҫемӗпе кӗрлесе тӑчӗ: ку вӑл—ҫеҫенхирти вӑйлӑ, таса ҫынсен куллен-кунхи ҫирӗп чӗлхи. Ҫам кунта вӗсен начальникӗ, кам пӑхӑнаканӗ—ниепле те уйӑрса илме ҫук! Пӗр-пӗрне вӗсем пурте пӗр пек чӗнеҫҫӗ, хӑйсене-хӑйсем пуринпе те пӗр пек тыткалаҫҫӗ, чӗлхи-ҫӑварӗ—хӑйсен евӗрлӗ ҫеҫенхир сатурлӑхӗ-

пе пуйнă çирĕп, вăйлă чĕлхе. Пурте пĕр çемье! Анчах нихăшĕ те пĕр-пĕринпе çывăх тăни, пĕр-пĕриншĕн тăрăшни курăнмасть. Çав вăхăтрах вĕсем пĕр-пĕринпе уйăрăлми çирĕп çыхăнса, пĕрлешсе тăнине уççăнах курса сисетĕр эсир; анчах пĕрлешессе вĕсем урăх йышши тĕвĕпе çыхăнса пĕрлешнĕ: вĕсене вăрçăри хăрушлăхсемпе тулнă пурнăç, пĕр çĕртен тепĕр çĕре куçса çӳреттерекен пурнăç явса пĕрлештернĕ; вĕсене паттăрлăх, харсăрлăх, йывăрлăхсемпе асапсенчен хăраманни, пĕр-пĕриншĕн вилес пекех тăма хатĕрри пĕр-пĕринпе пĕрлештерсе çыхăнтарнă; çапăçусенче, стройра вĕсем пĕр-пĕринпе çумма-çуммăн юнашар тăрса кĕрешсе ирттернĕ илемлĕ пурнăç чăмăртаса пĕрлештернĕ.

Чапаев вĕсенчен уйрăмрах çын. Вăл чылай культурлăланса çитме ĕлкĕрнĕ, çав тери примитивлă çын мар вăл; тыткаласса та хăйне хăй ыттисем пек тыткаламасть: çеçенхир учĕ пек, вăл хăйне хăй йĕвенпе çирĕп тытать. Ыттисем те хăйсене хăйсем унпа кăштах урăхла тыткалаççĕ,—астăватăр-и, хăш чухне авă кантăк тăрăх шăна епле çӳренине? Хăюллăнах уткаласа пырать-пырать те, вăл хăйĕн пекех ытти шăнасене тĕл пулсан, вĕсем урăх сике-сике каçать, е йăраланса шуса каçать, е иккĕн тĕлме-тĕл пулсан, иккĕшĕ те труках икĕ еннелле вĕçсе каяççĕ; анчах кĕтмен çĕртен сăвăслан тĕлне пырса тухсан вара, вăл хăранипе—вăшт!—туса, вĕçет каять. Чапаевецсем те çавнашкалах: пĕр-пĕринпе хутшăннă чухне, хăйсене хăйсем пĕтĕмпех ирĕккĕн тытаççĕ вĕсем, пуça мĕн пырса кĕнĕ, ăна персе яма пултараççĕ, пĕр-пĕрне çĕлĕкпе, кашăкпа ыватса пеме, атăпа тăхăнтартса яма пултараççĕ, стаканти вĕри шывпа сапма пултараççĕ. Анчах хирĕç Чапаев тĕл пулсанах—унпа çакăн пек ирĕккĕн хăтланасси çук вара вĕсен. Хăранипе мар, вăл вĕсемпе пĕр тан маррипе те мар, вĕсем ăна питех те хисепленипе. «Вăл, хамăрăн пулсан та, темĕскерле пĕтĕмпех урăх йышши çын,—тенĕ пек,—çавăнпа ăна пуринпе те танлаштарни килĕшмест», тесе шутланă пек.

Çакă вăл кашни секундрах сисĕнет; хăйсене хăйсем Чапаев умĕнче епле ирĕккĕн тытсассăн та, епле шавласан та, епле темĕн те пĕр каласа ятлаççан та, унпа пырса хутшăнсассăнах—картина çав самантрах йăлтах улшăнса каять. Çав тери юратаççĕ, çав тери хисеплеççĕ вĕсем хăйсен командирне!

— Петька, комендант патне вĕçтер!—тесе команда пачĕ Чапаев.

Петька çавăнтах халăхран уйрăлса, пĕр шарламасăр тухса чупрĕ. Петька вăл—лутрарах, ырханрах, хурарах ача, Чапаев çумĕнче «уйрăм хушнă ĕçсене туса тăракан çын» вырăнĕнче шутланать.

— Эпĕ икĕ сехетрен тухса каятăп, лашасем хатĕр пулччăр! Юланутлисене малтан кăларса яратăп; пире Потаповпа иксĕмĕре валли çуна пултăр—хăвăртрах! Эсĕ, Потапов, манпа пыратăн!—терĕ те Чапаев, сарă сăнлă курпунтарах качча тепĕр приказ парса, пуçне сĕлтрĕ. Қаччи—пĕр вăтăр пилĕк çула çитнĕ çын. Вăл юлташĕсем çине ырă чакăр куçĕсемпе куларах пăхса тăратчĕ, сасси калаçнă чухне ула курак кранклатнă пек хăйăлтатса тухатчĕ. Вăл темĕн пекех шултăра ӳт-пӳлĕ çын пулин те, хăйне çынсемпе темле, именекен хĕр пек, çемçен тыткалатчĕ.

Потапов юлташĕсене темĕнле кулăшла япала çинчен каласа кăтартатчĕ курăнать, анчах Чапаев сăмахне илтсенех, хĕрсе шӳт тăваканскер, сасартăк чарăнчĕ, чакăр куçĕнчи куллине çуртана сӳнтернĕ пек труках сӳнтерсе лартрĕ. Вара Чапаева куçĕнчен тӳрех пăхса илчĕ те, куçĕпех:

«Илтетĕп!» — тесе тавăрса каларĕ.

Чапаев вара тепĕр команда пачĕ:

— Урăх — никам та кирлĕ мар! Акă комиссар пырать тата, юланутлисене виçĕ çын парăр. Ыттисем пирĕн хыççăн Таловкăна пырăр. Лашасене кирлĕ мар çĕрте ытлашши ан хăвалăр. Қаç енне вырăна çитмелле! — терĕ. Унтан:

— Итле-ха... — терĕ те Чапаев, йĕри-тавра пăхса илчĕ, анчах хăй шыранă çынна тупаймарĕ. — Э-э, ĕçпе ятăм-çке ăна... Ну, апла пулсан эсĕ, Қочнев, штаба кайса пăхса кил-ха. Пурте пухăннă пулсан, пĕлтер.

Қочнев тухса кайрĕ. Федора вăл физкультурник пек туйăнчĕ, — çав тери вăр-вар, çăмăл шăнăрлă çын. Ун çинче çанăллă кĕске фуфайка, ĕнси çине пĕчĕк çеç çĕлĕк лартса янă, урине пушмак тăхăннă, чĕркуççи таран обмотка чĕркенĕ. Сăнĕнчен пăхсан, вăл вăтăртан каярах пулас, анчах çамки пĕтĕмпех пĕркеленсе пĕтнĕ. Қуçĕсем чее, çутă-чакăр, сăмси сарлака та нӳрĕк, вăл ăна пĕрмаях нăшлаттарса туртать те, темле чеен айккинелле

пăра-пăра илет. Шăлĕсем шурă, кашкăрăнни пек тĕреклĕ; кулнă чухне вăл вĕсене, такама татăкăн-татăкăн çурса тăкас пек, тискеррĕн йĕрсе пăрахать.

Кунтах Чеков ятлăскер те ларать. Вăл ют çын куçне хăйĕн темĕн сарлакăш хĕрлĕ куçхаршийĕсемпе, çăра хĕрлĕ уссийĕпе, крокодилăнни пек пысăк çăварĕпе, монголла янах шăммипе тӳрех тăрăнать; аялти тути, юн ĕçсе кӳпĕннĕ сĕлĕх пек, усăнса аннă; чугун пек тĕреклĕ тăваткăл янахĕ малалла тухса тăрать; унтан çӳлерехре вара, чугун ăшĕнчи кăмпа пек, шавах тарлакан кăпка сăмса. Хĕрлĕ куçхаршисем айĕнче — кăмрăк пек хура куçĕсем. Питех те сарлака та çӳлĕ—Чековăн кăкăрĕ, пит сулăмлă, кĕреçе пек пысăк—аллисем. Чеков хĕрĕх çултан кăштах иртнĕ пулас.

Тата тепĕр йĕкĕт чейниксемпе кĕрмешет, çăкăр касать, çынсене пĕр вĕçĕмсĕр култарать, хăй те шавах ахăлтатса кулать, пурне те сăмахпа тĕртсе илет, пурне те хирĕç каласа тавăрма ĕлкĕрет; ку вара—Илья Тĕткин,—хисепе тухнă красногвардеец, профессийĕпе маляр пулнăскер; вăл пĕрмаях янрама, юрлама, вылямa, иртĕхме юратакан ырă кăмăллă çын; çавăнпа ăна пурте юратаççĕ; çулĕсемпе вăл Петькăран кăшт аслăрах: çирĕм ултă-çирĕм çичĕ çулта.

Юнашар Вихорь тăрать; вăл Тĕткин çăкăр касса парасса пĕр шарламасăр, чăтăмлăн кĕтет; вăл—харсăр кавалерист, юланутлă разведчиксен хĕрӳллĕ командирĕ; сулахай аллинче унăн кача пӳрни çук. Ку вара юлташĕсемшĕн—кулса мăшкăламалли сăлтав.

— Вихорь, эсĕ ăна, усала, кача пӳрнӳпе тĕрт!—тесе кулать пĕри.

— Кача пӳрнӳне кăтарт-ха, чĕлĕм турттаратăп,—тет тепри.

Анчах Вихоре тарăхтарма хĕн: вăл мĕн ачаранах, яланах çапла, çапăçура та çапла. Пĕр шарламасăр та питĕ нумай ĕç тума пултаракан çын!

Пуринчен те ытларах тĕрткелешекенни, пуринчен те хытăрах шавласа ятлаçаканни—Шмарин; чирлĕ пирки вăл яланах шăнать, çавăнпа кĕрĕкпе çăматă тăхăннă; вăл Потаповăнни пек хăрăлтатакан сасăллă, хура куçлă, хура çӳçлĕ, хурарах сăнлă çын; вăл пуринчен те аслăрах: аллă çула çитсе пырать.

Аверька та—ямшăк ача—кунтах: вăл пушши çине

таянса, чей ёçме тата çиме епле хатӗрленине тинкерсе сӑнаса тӑрать. Аверькӑн пичӗ хӗп-хӗрлӗ, сӑмси—сухан пуçӗ пек, куçӗсем, сивӗрен кӗнипе, алчӑраса кайнӑ, тутисем çилпе кушӑхса, çуркаланса пӗтнӗ; мӑйне вӑл тутӑрпа чӑрканӑ, çывӑрасса та çаплах çывӑрать.

Вестовойсенчен чи юратаканни—Лекçей, Чапаевӑн тахçантанпах паллакан çынӗ; вӑл пур япалана та пӗлекен, пур ёçе те тума пултаракан, пур çӗре те çитме ӗлкӗрекен ача. Мӗн те пулин тупса килмелле пулсан, Лекçее ыраççӗ,—вӑл пурне те тупать, мӗн кирлине пӗтӗмпех хатӗрлесе илсе килет. Апат çимелле пулать-и унта, е урапа пӑти е йӗнер валли чӗн татӑкӗ кирлӗ пулать-и, эмел таврашӗ тупмалла пулать-и,—Лекçейрен пуçне никама та ямаççӗ: пур тӗлӗшрен те чи çивӗч çын.

Халӑхӗ те ытла та тӗлӗнмелле халӑх пуçтарӑннӑ-çке! Қашниех хӑйне уйрӑм сӑн, уйрӑм тип: лар та çыр ун çинчен çеçенхир поэми! Қашнийӗнех хӑйӗн характер. Икӗ çынран пӗр пеккине пӗрне те тупаймӑн: каччӑ çумӗнче каччӑ—чул хушшинчи чул пек. Пурне те пӗрлештерсен вара—питех те çирӗп çыхса çавӑрнӑ маттур йӑва пек. Пӗр çемье! Çитменне—мӗн тери çирӗп çемье тата!

Кочнев таврӑнчӗ те:

— Бригада командирӗ штабра, кайма юрать,—терӗ.

Çӑмӑллӑн шавласа пуçтарӑна пуçларӗç, пурте Чапаев еннелле, унран темӗнскер кӗтнӗ пек, çаврӑнса пӑхрӗç.

— Қаятпӑр!

Чапаев Потапов еннелле пуçне сӗлтрӗ, Шмаринпа Вихорь еннелле пӳрнипе тӗллесе кӑтартрӗ. Шпорӑсемпе чӑнкӑртаттарма тытӑнчӗç, таканлӑ атӑ кӗлисемпе йывӑррӑн кӗмсӗртеттерсе пускаларӗç те тухса çухалчӗç. Федор та пӗрле тухса утрӗ. Федора пӗрехмай: Чапаев унпа ытла та сахал калаçнӑ пек, ун çинчен вӑл сахал шухӑшланӑ пек, ӑна хӑйӗн ушкӑнӗнчи çынсемпе, хӑйӗн «свитипе» çеç танлаштарнӑ пек туйӑнчӗ. Çапла ӗненсех каймасӑр шухӑшланӑ пирки вӑл кӑшт çеç темле лайӑх мар шиклене пуçларӗ те, Чапаев çинчен çапла каласа кӑтартнине астуса илчӗ: 1918 çулта, çапӑçу вӑхӑтӗнче, тӑшмансем ӑна хӑйӗн çарӗсемпе пӗрле йӗри-таврах хупӑрласа илнӗ чухне, пӗр комиссар хӑраса ӳкнӗ пулать те, Чапаев ӑна лав çинчех нухайкапа хӗртсе илнӗ пулать... Аса илчӗ те,—ӑна пушшех лайӑх мар туйӑнса кайрӗ. Аванах пӗлет-ха вӑл, çынсем çак сӑмаха пустуйранах

шухăшласа кăларма пултарнине, ăна юри пысăклатса, хитрелетсе калама пултарнине, анчах мĕншĕн ĕненес те мар-ха: ун чухне вăхăчĕ те хальхи пек мар, урăх пулнă, Чапаев хăй те урăх çын пулнă, комиссарĕ те тĕрлĕрен пулма пултарнă! Федор хыçалтан утса пычĕ, анчах çак хыçалта пыниех те ĕнтĕ ăна лайăх мар пек туйăнчĕ.

Чапаев бригада командирĕпе пит хăвăрт, ун çине пăхмасăр, алă тытса илчĕ; лешĕ вара илемлĕн хуçланса шпорисемпе чăнкăртаттарса илчĕ те, каçăрălса тăрса, рапорт панă пекех каласма тытăнчĕ. Чапаев çинчен вăл тем те пĕр калаçнине илтнĕ пулнă, анчах пуринчен ытла—усал енчен, хулиган пекрех хăтланкалани çинчен каласа кăтартнине; чи лайăххине вăл—Чапаев чудак çын пек пулнине пĕлнĕ; Чапаев пысăк ĕçсем тунине—илтмен, Чапаевăн паттăрлăхĕ çинчен çӳрекен çеçенхир хыпарĕсене—ĕненмен.

Пур алăксенчен те курасшăн çунакансем кĕпĕрленсе пăхса тăчĕç. Пĕр-пĕр купец çуртĕнче çакнашкал, пĕр-пĕр чаплă хăна килес-тăвас пулсан, «килтисем» çурăксенчен çапла хĕсĕнсе пăхса тăраççĕ. Чапаев çинчен çӳрекен тĕрлĕ хăрушă хыпарсене пĕр бригада командирĕ анчах мар илтнĕ, курăнать. Штаб çуртĕнче паян нихçанхинчен ытла таса. Пурте харпăр хăй вырăнĕнче лараççĕ, пурте кирлĕ çĕрте тăраççĕ. Хатĕрленнĕ, намăс курас мар тенĕ, курăнать; тен, хăранă та пуль: хĕрӳ вĕт Чапаев, кам пĕлет, мĕнле пăхĕ?.. Бригада командирĕн кабинетне кĕрсен, лешĕ сĕтел çине ыранхи наступленин пит хитре йĕрлесе тунă планне сарса хучĕ. Чапаев ăна аллине тытрĕ, илемлĕ йĕрлесе ӳкернĕ чертеж çине ним шарламасăр пăхса илчĕ те, каллех сĕтел çине хучĕ. Пукана хăй патнерех шутарчĕ. Ларчĕ. Унпа пĕрле килнисенчен те хăш-пĕрисем ларчĕç.

— Циркуль!—терĕ.

Ăна тутăхса пĕтнĕ начар çеç циркуль тыттарчĕç. Циркуле сарчĕ те, унтан-кунтан турткаласа пăхрĕ,—кăмăлне каймарĕ:

— Вихорь, пыр, Аверька патĕнчен, сумкăран хамăнне илсе кил!—терĕ.

Икĕ минутран Вихорь циркуль илсе таврăнчĕ, Чапаев вара унпа чертеж тăрăх виçсе шутла пуçларĕ. Малтан чертеж тăрăх анчах виçсе ларчĕ, кайран вара кĕсйинчен картă туртса кăларчĕ те ун тăрăх сăхкалама тытăнчĕ.

Çапла ĕçлесе ларнă хушăра вĕçĕмсĕр — пĕр тĕлтен тепĕр тĕле миçе çухрăмми çинчен, çул йывăрри çинчен, шыв пурри çинчен, обозсем çинчен, ирхи çурма-тĕттĕмлĕх çинчен, çеçенхирти çил-тăмансем çинчен ыйт-каласа пĕлчĕ...

Ун тавра ларакансем ним шарламарĕç. Бригада командирĕ анчах сайра-хутра вăл каланă сăмах çумне сăмах хушса хуркаларĕ е ыйтнине хирĕç ответ парса тăчĕ. Картă çинчи çинçе йĕрсем тăрăх Чапаев куçĕ умне юрлă лапамсем, çунтарса янă ялсем, çĕрлехи тĕттĕмре колоннăсемпе тата цепьсемпе иртекен çарсем, вăрçă хатĕрĕ турттарса пыракан обозсем туха-туха тăчĕç, хăлхинче ирхи сивĕ çил шăхăрса вĕрсе илчĕ, куçĕ умĕнчен тĕрлĕ тĕмескесем, çăлсем, шăнса ларнă пĕчĕк шывсем, ишĕлсе пĕтнĕ кĕперсем, хăрса ларнă вĕтлĕхсем вĕлтлете-вĕлтлете иртрĕç.

Чапаев наступлени туса пырать!

Виçе-виçе шутласа пĕтернĕ хыççăн вăл бригада командирне ăçта мĕнле йăнăш пуррине кăтартса пачĕ: е пĕр кун хушшинче кайма палăртнă çул ытлашши вăрăм, терĕ; е канма палăртнă вырăна ăнăçлă суйласа илеймен, е çарсене ытла ир тухма, е кая юлса çитме палăртнă, терĕ. Хăйĕн пур шухăшĕсене те вăл çав виçкелесе шутланă чухне тăва-тăва хăварнă паллăсемпе çирĕплетсе пычĕ. Бригада командирĕ ун сăмахĕпе ытла килĕшесшĕнех пулмарĕ, хăш-пĕр чухне вăл каланинчен хăй ăшĕнче кулса та илкелерĕ. Анчах çапах та килĕшрĕ, паллăсем туса, малтан çырнине, малтан йĕрлесе ӳкернине улăштарса пычĕ... Хăш-пĕр ыйтусем тăрăх Чапаев, пулăшу ыйтнă пек пулса, пĕрре Вихорь еннелле, тепре Потапов еннелле, е Шмарин еннелле çаврăна-çаврăна:

— А эсĕ мĕн калăн? Эсĕ мĕнле шутлатăн? Тĕрĕс калатăп-и, çук-и?—тесе пычĕ.

Йĕкĕтсем ун умĕнче ытлашши калаçса тăма вĕренмен, çитменне хушса каламалли те вĕсен нимĕнех те пулмарĕ —Чапаев кашни вак-тĕвек ĕçе те çав тери тĕплĕн астуса кăтарта-кăтарта паратчĕ. Çавăн пирки Чапаев çинчен, халăх сăмахне кăштах урăхлатса, «пĕр ăс-пуç аван та, икĕ ăс пушшех лайăх», тес вырăнне: «Чапаева нихçан та ан кансĕрле. Уншăн пулсан: пĕр ăс-пуç аван та, икĕ ăс вара начар», тетчĕç.

Çак çĕнĕлетнĕ халăх сăмахне уншăн çеç шутласа

кăларнă пулнă. Çитменне, пит пĕлсе кăларнă, мĕншĕн тесен вăл малтан темиçе хут çавнашкал канаш панинеитленине пула, кайран хăйне хăех ылханса, тем пекех ӳкĕнсе ятлаçнă пулнă. Унăн йĕкĕчĕсем тата пĕр «канашлăва» ниепле те манма пултараймам; çав канашлура вĕсем хĕрсе кайнипе темĕн те пĕр каласа тултарнă пулнă. Чапаев вĕсене темĕнченех лайăх итлесе ларнă, хăш-пĕр сăмахĕсемпе килĕшнĕ пек те пулнă.

— Тĕрĕс, çапла... Ага... Аван... Вăт-вăт-вăт... Пит те аван,—текелесе пынă.

Қалаçаканнисем чăнахах та, вăл вĕсемпе килĕшсе, вĕсен сăмахне ырласа ларать, тесе шутланă. Анчах калаçса пĕтерсенех:

— Ну, юрать,—тенĕ лешĕ,—халĕ ĕнтĕ акă мĕн тумалла: эсир павраса ларни çине пурин çине те сурмалла та, йăлтах манмалла. Сирĕн сăмахăр ниме юрăхсăр. Халь ĕнтĕ ман приказа итлĕр!

Пуçланă вара хайхи...

Пуçланă та, ĕçе пĕтĕмпех тепĕр майлă çавăрса лартнă, çав темĕнчен канашласа ларса шутласа хунинчен сăнĕ те юлман.

Çав канашлура вĕсем виççĕшĕ те пулнă, астуса юлнă ăна, çавăнпа халĕ ĕнтĕ вĕсем ĕçе сахал хутшăнаççĕ, ытларах шарламасăр ирттереççĕ, хăçан тата ăçта мĕн калама юранине, мĕн юраманнине пит лайăх пĕлеççĕ. «Тепĕр чухне ăна, тен, канаш та пама кирлĕ пулĕ те, анчах—пĕр сăмахпах тем тери инкек туса хума пулать!» тесе шухăшла пуçланă вĕсем.

Çавăнпа халĕ шăпăртах ларчĕç вĕсем. Федор та пĕрмаях шарламасăр тăчĕ, вăл çар ыйтăвĕсене питех тĕплĕн пĕлеймест-ха, хăш-пĕр ыйтусене аран ăнланать е пĕртте чухлаймасть; кайран тин вара, темиçе уйăх иртсен тин вăл фронтри вăрçă ăслăлăхĕпе ытти ĕçсене лайăх вĕренсе çитрĕ; а халĕ çак «гражданла шĕлепкерен» чăннипех мĕн ыйтмалли пултăр.

Аллисене çурăм хыçне тытса, вăл сĕтел çывăхĕнчех, картăпа чертеж çине тарăн шухăша кайса пăхса тăчĕ; пĕрре вăл куçхаршийĕсене пĕркелентерсе илчĕ, тепре ĕç çинчен калаçнине кансĕрлесрен шикленнĕ пек, пуçне аяккалла пăрса ӳсĕркелесе илчĕ. Сăн-пичĕ унăн лăпкă. Аякран пăхсан, ун çинчен — вăл та кунта ыттисемпе пĕр танах калаçма пултаракан çын, тесе шут-

лама пулать. Федор тахçанах-ха, Чапаевпа тĕл пуличчене, хăйне унпа асăрханарах, питĕ пĕлсе тыткаламалла пулать, тесе шутласа хурсаччĕ: малтанлăха, хăй çар ĕçĕсене пĕлменнине кăтартас мар тесе, çар ыйтăвĕсем çинчен унпа сахалтарах калаçма шутларĕ; ытларах политика ыйтăвĕсем çинчен калаçмалла, терĕ,—кунта вара Федор, паллах, унран нумай вăйлă; ăна пур япала çинчен те, вăл шутра хăйĕн малашнехи шухăшĕсемпе ĕмĕчĕсем çинчен те ним пытармасăр тӳррĕн калаçтарма тăрăшмалла, терĕ; пуринчен ытларах унпала наука çинчен, халиччен мĕн чухлĕ вĕренни çинчен, малалла вĕренесси çинчен калаçмалла, тесе шутларĕ,—кун пирки вара Чапаев калаçнинчен ытларах итлесе ларĕ, терĕ. Кайран... кайран вара Федорăн хăй харсăр çапăçма пултарнине кăтартмалла,—çакна мĕнле пулсассăн та, çитменне мĕн килнĕ таран хăвăртрах тумалла, мĕншĕн тесен унсăрăн Чапаев куçĕ умĕнче, тен, пĕтĕм красноармеецсем умĕнче те нимĕне те тăман çын пулса юлма пулать: кунта вара ниепле политика та, нимĕнле наука та, урăх тĕлĕшрен тем тери лайăх пулни те пулăшас çук!—тесе шухăшларĕ.

Çак пĕчĕкшерĕн тĕпчесе пĕлес ĕçе туса ирттерсен, Чапаева çывăх пĕлсе, ăнланса çитсен, вара унпа çывăхрах пулма та юрать, а халĕ унччен,—хăвна ху унпа асăрханарах тыткалас пулать! Çитменнине тата хăйне пулăшма тăрăшнине вăл «паттăр чапĕ» çумне çыпçăнма шутлани вырăнне хума ан пултартăр! (Унăн ячĕ пур çĕрте те янранине, унпа питĕ нумай çын туслашма тăрăшма пултарнине—вăл, паллах, лайăх пĕлнĕ.) Кайран тин вара, Чапаева «ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен çĕнтерсе илсен тин», вăл Федор сăмахне хăй ирĕкĕпе итлекен пулса, тен унран та мĕне те пулин вĕренме тытăнсан тин вара—унпа пур енчен те туслашса çывăх пулма юрать. Анчах хăвна ху мăнкăмăллăн тыткаласси нимĕн чухлĕ те пулмалла мар: унпа пĕрле халех юлташла, чĕререн хутшăнса ĕçлеме тытăнмалла; вăл Федор çинчен—шурă алăллă интеллигент тесе яхăнне те шутлама ан пултартăр, мĕншĕн тесен фронтра шурă алăллă интеллигентсене нихçан та юратман та, юратмаççĕ те, вĕсем çине шанмасăр, йĕрĕнсе пăхаççĕ.

Çапла шухăшласа хатĕрленни Клычковшăн вырăнсăр пулмарĕ; вăл ăна хăйне малашне пĕрле ĕçлеме пӳрнĕ ушкăн хушшине чи тĕрĕс, чи çывăх çулпа кĕме, çак ĕç-

шĕн вара çак ушкăнпа пур тĕлĕшрен те уйрăлми пĕрлешсе, сыпăнса кайма пулăшрĕ. Вăл çак «пĕрлешсе сыпăнас» чикĕ ăçта пулассине халĕ пĕлме пултарайман-ха, анчах Чапаевпа «чапаевецсем» вĕсем,—çак мĕнпур çурма партизанла массăпа вĕсен ĕçĕсем,—ăнланма питĕ йывăр япала иккенне, ун патне куçа хупса пыма юраманнине вăл питĕ лайăх пĕлсе тăчĕ. Лайăх енĕсемпе пĕрлех кунта киревсĕр енĕсем те пуррине, вĕсемпе асăрханарах пулмаллине, пурнăçра вĕсем хăйсене епле палăртнине пĕрмаях тимлĕн сăнаса тăмаллине лайăх пĕлчĕ.

Мĕнле çын-ха вăл Чапаев? Чапаев çинчен мĕн шухăшланăччĕ-ха Клычков, мĕншĕн вăл шăпах унпа хăйне евĕрлĕ урăхла, питĕ ăслă çыхăну тытма шут тусаччĕ? Кирлĕ-ши чăн та çапла тума?

Федор, хăй тылра ĕçленĕ чухнех, граждан вăрçин вăл е тепĕр фронтĕнче çиçсе тăнă «халăх паттăрĕсем» çинчен нумай хут илтнĕ те, вуланă та. Çывăхрах пырса пăхсан, вăл çак паттăрсем пуринчен ытларах хулари рабочисем хушшинчен мар, хресченсем хушшинчен тухнине сăнаса курнă. Рабочи-паттăрсем яланах урăх йышши. Пит пысăк рабочи центрта ӳссе çитĕннĕскер, пир тĕртекен рабочисен сарлака та йĕркеллĕ, лайăх организациленнĕ кĕрешĕвне курма хăнăхнăскер,—вăл Чапаев йышши халăх паттăрĕсен çурма-анархистла, партизанла ĕçĕсем çине яланах кăштах сивĕ куçпа пăхнă. Çак ăна вĕсен паттăрла ĕçĕсене тарăн тĕпчесе сăнама, вĕсен ĕçĕсене кура хавасланса савăнма кансĕрлемен. Анчах яланах вăл вĕсем çине кăшт шикленерех пăхнă. Халĕ те çаплах:

«Чапаев—паттăр,—тесе шутласа ларчĕ Федор хăй ăшĕнче.—Вăл хăйĕн паттăрлăхĕпе хресчен халăхĕнче нумай вăхăт хушши пухăнса пынă чарусăрлăха, стихийлăха, протест тăвакан хаярлăха палăртса тăрать. Анчах стихия... ăçта илсе çитерме пултарать вăл! Çакăн пек ĕçсем те пулкаланă вĕт пирĕн (сахал пулнă-и мĕн вĕсем?): çав Чапаев йышши чаплă командирах акă тепĕр чухне—тытать те, персе пăрахать хăйĕн комиссарне! Çитменнине тата пĕр-пĕр киревсĕр, павраçăвар е хăравçă çынна мар, чи лайăх, чи паттăр революционерах! Е тата, пăхатăн та, хăйĕн «стихийлă» отрячĕпе шуррисем енне куçса ӳкет...

Рабочисем вара—вĕсем йăлтах урăх: вĕсем, кĕрешĕве мĕнпур ăс-тăнпа çĕкленсе тухнăскерсем, н и х ç а н т а,

нимӗнле л а р у - т ă р у р а т а—пăрахса каяс çук. Паллах, рабочисем хушшинче те ӗнерхи хресченсем пур, сахалтарах ăс-тăнлисем те пур, «ытлашши» ăс-тăнлисем те, шурă алăсем пулса кайнисем, пур... Анчах унта—унта кам мӗнлине тӳрех куратăн.

Кунта вара, Чапаевăн партизанла чăрсăрлăхӗнче—ой, шикленмелли кунта ытла та нумай-çке!»

Стихийлă партизанлăх çине çапла шанмасăр пăхнă пирки çуралса тухнă та ӗнтӗ Федорăн çак çӗнӗ çынсемпе питех те асăрханса, ăслăн ӗçлеме тăрăшас кăмăлӗ,—пӗтӗм ӗçе çак çынсем ăшӗнче хăйне пăтраштарса, çухатса ярас çулпа мар, вӗсене хăйсене идея тӗлӗшпе хăй хыççăн ертсе пырас çулпа туса пыма тăрăшасси. Пуçласса пуçӗнчен, çулпуçӗнчен—Чапаевран тытăнас пулать. Çавăнпа ӗнтӗ Федор пуринчен малтан Чапаев тӗлӗшпе пӗтӗм вăй-халне хурса ӗçлеме тытăнчӗ...

Петька—пӗрре вӗреннӗрен Исаева пурте çак ятпа чӗнетчӗç—хăйӗн вӗçен кайăкăнни пек пӗчӗк пуçне алăкран кăштах кăтартрӗ те, кача пӳрнипе Потапова чӗнсе илсе, ăна хут татăкӗ тыттарчӗ. Хут çине:

«Лашасем пурте хатӗр. Васлей Иванча кала»,—тесе çырнă пулнă.

Петька хăш-пӗр вăхăтсенче çынсем патне пырса кӗме юраманнине лайăх пӗлетчӗ,—ун пек чухне вăл яланах çакнашкал хут татăкӗсемпе усă куратчӗ. Петька çырăвӗ тӗлех çитрӗ. Ку вăхăт тӗлне ӗнтӗ каламаллине пурне те каласа пӗтернӗччӗ, асăрхаттарса тухнăччӗ, ӗç хучӗсене алă пусса хунăччӗ: приказ халех полксем тăрăх каймалла. Бригада ӗçӗсене пӗр алăран тепӗр алла илес ӗç нумаях вăхăт йышăнмарӗ.

— Эпӗ командовать тума килнӗ,—терӗ Чапаев,—хутсемпе аппаланса ларма мар. Хутсемпе аппаланма писарьсем пур.

— Василий Иваныч,—терӗ ăна Потапов пăшăлтатса,—ӗçсене туса пӗтертӗн курăнать. Пурте хатӗр, тухса кайма та юрать.

— Хатӗр-и? Каятпăр!—терӗ те Чапаев, пукан çинчен васкаса çӗкленчӗ.

Пурте сирӗлсе тăчӗç; вăл, кунта кӗнӗ чухнехи пекех, малтан тухрӗ.

Урама, крыльца умне, Чапаев килни çинчен илтнӗ красноармеецсем пухăнса тăнă; вӗсенчен нумайăшӗ унпа

пĕрле 1918 çултах çапăçнă, нумайăшĕ ăна курнă, паллаҥă, илтессе вара ун çинчен пурте илтнĕ. Малалла кармашса пăхакан майсем, хаваслăхпа çунса тăракан савăнăçлă куçсем, хĕпĕртесе кулнипе хăлха таранах сарăлса кайнă çăварсем.

— Чапаев сывă пултăр!—кăшкăрса ячĕ малта тăракансенчен пĕри, Чапаев пусма картлашкисем çинчен анса çитсенех...

— Ур-ра-а-а!.. Ур-ра-а!..

Пур енчен те красноармеецсем чупса пухăнчĕç, ял çыннисем пуçтарăнчĕç, халăх йышĕ ӳснĕçем ӳссе пырать.

— Юлташсем!—терĕ вĕсем çине пăхса Чапаев.

Пурте сасартăк шăп пулса тăчĕç.

— Манăн халĕ калаçса тăма вăхăт çук—позицие тухса каятăп. Ыран вара унта тĕл пулăпăр, мĕншĕн тесен эпир казаксем валли лайăх кучченеç хатĕрлерĕмĕр, ыран хăналантарас тетпĕр... Кайран калаçăпăр, а халĕ—сывă пулăр!

Çĕнĕрен «ур-ра» кăшкăрнă сасă янраса кайрĕ. Чапаев çуна ăшне кĕрсе ларчĕ, ун хыçне Потапов та вырнаçса ларчĕ. Виçĕ юланутлă çын унтах кĕтсе тăраççĕ. Федор валли çивĕч хура ăйăр çавăтса пырса тăратрĕç.

— Кайрăмăр!—тесе кăшкăрчĕ Чапаев.

Утсем тапса сикрĕç, халăх сирĕлсе тăчĕ, хытăрах кăшкăра пуçларĕ. Çапла вĕсем Алгай вĕçне тухиччене хйĕркерен тăрса тухнă халăх хушшипе иртсе пычĕç.

Çеçенхирти юрлă тӳремлĕх йĕри-тавраx пĕр тĕслĕ те кичем. Çак иртнĕ ăшă кунсенче юр ирĕлнипе тĕмескесем хуралса, кукшаланса кайнăччĕ, анчах халь вĕсене те юр шăлса лартнă; пĕтĕм çеçенхире юр шăлса кайнă, сивĕпе кăчăртаттарса хытарса лартнă. Утсем çăмăллăн, хавас юртаççĕ. Чапаевпа Потапов пĕр-пĕринпе çурăмпа çурăммăн,—ятлаçса кайнă кусем тейĕн,—ларса пыраççĕ; вĕсем пулас ĕçсем çинчен шухăшлаççĕ, ыранхи куна хатĕрленеççĕ. Çуна хыçĕнчен, виç-тăватă утăм юлса, юланутлисем пыраççĕ; унтан ытла çывăхармаççĕ те вĕсем, каярах та юлмаççĕ, çуна çумне тăлласа хунă пек шав пĕр хушăра пыраççĕ. Федор айккипе пырать. Тепĕр чухне вăл ыттисенчен çухрăм таранах кая юлать те, кайран утне пĕтĕм вăйпа юрттарса вĕçтерсе çитет! Аван та-çке

çeçенхир тăрăх юланутпа сиктерсе пыма, лаши те çăмăлскер те, юртса чупма юрататъ!

«Ыранхи кун,—тесе шухăшлать вăл, лаша юрттипе пынă май,—ыран чăн-чăнах вăрçă пурнăçĕ пуçланса каять... Çаврăнса кусса каять ĕнтĕ вăл—нумайлăха-ши? Ун кун-çулне кам пĕлме пултартăр? Кам кăтартса пама пултартăр çĕнтерÿ хăçан пулас куна? Хăçан килсе çитĕши вăл, пирĕн çĕнтерÿ? Кун хыççăн кун, кун хыççăн кун походсенче, çапăçусенче, тĕрлĕрен хăрушлăх кăтартса тĕрлĕрен хумхантарса тĕпĕртеттерсе иртĕç... Çăлăнса юлăпăр-ши эпир, мамăк пĕрчисем? Кам хăйĕн тăван килне таврăнĕ, кам кунтах, хура лапамсенче, юрлă çеçенхир тÿремĕсенчех выртса юлĕ!»

Пуçа ĕлĕкхи пурнăç çинчен аса илнĕ картинăсем киле-киле кĕчĕç, паллана сынсен юратнă сăнĕсем туха-туха тăчĕç... Вăл хăйне хăй вилнĕ пек шухăшласа курчĕ: акă выртать вăл юр çинче аяккалла сарса пăрахнă аллисемпе, суранланса юнланнă пуçĕпе. Хăйне хăй тем пекех хĕрхенесси килсе кайрĕ. Ĕлĕк чухне хăйне çапла хĕрхенсе шеллени ăна нумайлăхах салхулантарса янă пулĕччĕ, анчах халĕ—ÿт-пĕвĕпе çÿçенсе илчĕ те, хăваласа ячĕ вăл ăна; малалла лăпкăнах пычĕ.

Çапла пĕр икĕ сехет çурă яхăн иртрĕ. Чапая[1] пĕр хусканмасăр ларса пыни йăлăхтарчĕ курăнать,—вăл лашисене тăратрĕ те, çунана хăй вырăнне пĕр юланутпа пыракана ларса, хăй малалла лаша çине утланса кайрĕ. Федор патне юрттарса çитрĕ.

— Малашне пĕрле пулатпăр апла, комиссар юлташ?—терĕ.

— Пĕрле,—терĕ Федор; хăй çавăнтах Чапаев йĕнер çинче калама çук çирĕппĕн, шăратса сыпăçтарнă пек, ларса пынине асăрхарĕ. Унтан хăй çине çаврăнса пăхрĕ те, хăйне хăй темĕнле сыхса хунă пек туйăнса кайрĕ.

«Кăшт хытăрах силленсенех персе анатăн вĕт,—тенĕ шухăш пырса кĕчĕ ун пуçне.—Чапаева пăх-ха авă, вăл ниепле те ÿкес çук».

— Эсир вăрçă ĕçне хутшăнни чылай пулать-и?—тесе ыйтрĕ Чапаев.

Федора, Чапаев кулса ыйтнă пек, сассинче темле мăшкăласа кулни илтĕнчĕ пек туйăнчĕ. «Фронта эпĕ халь

---

[1] Сывăх сынсем Чапаева час-часах «Чапай» тесе чĕннĕ.

анчах килнине пĕлет те, çавăнпа шӳт туса кулать»,—тесе шутласа илчĕ вăл.

— Халь çеç пуçлатăп акă,—тавăрса каларĕ вăл.

— Унччен тылсенче çӳренĕ-им вара?—тепĕр хут ыйтрĕ Чапаев.

Каллех мăшкăласа, йĕпле тăрăнакан ыйту.

Пĕлес пулать, «тылри çын» вăл Чапаев пек боецсемшĕн—чи йĕрĕнчĕк, нимĕне тăман çын пулнă. Кун çинчен Федор малтан та пĕлнĕ; юлашки эрнесенче, красноармеецсемпе, командирсемпе çӳренĕ чухне темĕн чухлех калаçса курнă хыççăн вара, çакна вăл пушшех те уççăн сăнаса курчĕ.

— Тылсенче, тетĕр-и? Эпир Иваново-Вознесенскра ĕçленĕ...—тесе, Чапаев мăшкăлне юри нимĕне те хуман пек каласа хучĕ Федор.

— Мускав леш енчеччĕ-и-ха вăл?

— Мускав хыçĕнче çав, пĕр виççĕр çухрăмра.

— Ну, мĕн-ха унта, ĕçсем мĕнле пыраççĕ?

Федор, сăмах урăх ыйтусем çине куçнăшăн савăнса, Чапая часрах юлашки ыйту çинчен, Иваново-Вознесенскри пир тĕртекен рабочисем епле йывăр, выçă пурнăçпа пурăнни çинчен ăнлантарса пачĕ. Мĕншĕн пир тĕртекен рабочисене аса илчĕ-ха вăл? Урăх никам та çук-и мĕн вара унта? Анчах Клычковăн йăли яланах çаплаччĕ: Иваново-Вознесенск çинчен калаçнă чухне вăл яланах нумай пинлĕ рабочисен çарне анчах асра тытатчĕ, хăй çак çарпа çывăх пулнипе савăнатчĕ,—çавăнпа вĕсен пурнăçĕ çинчен калаçнă чухне вăл хăйне хăй мăнкăмăллăн та тыткалама хăтланатчĕ.

— Начар пурăнаççĕ иккен,—тесе, нимĕн кулмасăр килĕшрĕ унпа Чапаев.—А çавă пĕтĕмпех выçлăх пирки ĕнтĕ вăл. Выçлăх пулман пулсан, ĕçсем те пĕтĕмпех урăхла пынă пулĕччĕç... Епле кӳпеççĕ тата хăйсем, пĕрре те шутламаççĕ пулас...

— Кам кӳпет?—тесе ыйтрĕ Федор, ăнланса илеймесĕр.

— Казаксем... Вĕсемшĕн пурте нимĕн те мар.

— Пур казаксем те апла мар-çке ĕнтĕ...

— Пурте çав!—кăшкăрса пăрахрĕ Чапаев.—Эсир пĕлместĕр-ха, эпĕ вара лайăх пĕлетĕп: пурте! Мĕн унта пустуй... д-да!

Чапаев, тарăхса кайса, йěнер çинче хыттăн çавăнкаласа илчě.

— Çук, пурте пулма пултараймасть,—тесе, хирěçлесе калама чарăнмарě Федор.—Хăшě те пулин пирěн майлисем пурах ěнтě вěсем хушшинче. Тăхтăр-ха акă,—тесе, савăнăçлăн хумханса аса илчě вăл:—хамăрăнах акă, бригадăра, юланутлă разведкăра пурте казаксем анчах вěт?

— Бригадăра-и?—тесе, кăштах шухăша кайрě Чапаев.

— Бригадăра çав, бригадăра!

— Вěсем хуларисем пулас... Кунтисем пулас çук,— килěшесшěн пулмарě Чапаев.

— Хуларисем-и, çук-и, эпě ăна пěлместěп ěнтě, анчах факт куç умěнчех... Урăхла пулма та пултараймасть, Чапаев юлташ, казаксем п у р т е ниепле те пире хирěç пулма пултараймаççě, мěншěн тесен ěçě вăл хăй çавăн йышши.

— Мěншěн апла? Ак пурăнса курăр-ха пирěнпе, ун чухне вара...

— Çук, хăть те мěн чухлě пурăнсан та, эпě ăна пурпěрех ěненес çук!

Федор сасси çирěп те хаяр илтěнчě.

— Уйрăм çынсем çинчен мěн калаçмалли пур,—майěпен парăна пуçларě Чапаев.—Паллах ěнтě, пирěн майлисем те тěл пулаççě те, анчах сахал...

— Çук, уйрăм çынсем мар... Кăлăхах апла калатăр... Авă Туркестанран мěн çыраççě акă: казак полкěсем унта пěтěм облаçěпех совет влаçě туса лартнă... Украинăра тата, Дон çинче... Сахал-и ун пеккисем?

— Шанăр-ха, шанăр, вěсем кăтартěç-ха акă...

— Мěн шанмалли пур унта, эпě шанмастăп,—тесе, хăй шухăшне Чапая тěплěнрех ăнлантарса пачě Клычков,—сирěн шухăшăрта та чăнни нумай. Вăл тěрěс ěнтě; казаксем вěсем—хура çăхансем, тěрěс. Кам ăна хирěç-ха? Патша влаçě çавăн пирки тăрăшнă та ěнтě вěсемшěн. Анчах эсир çамрăк казаксем çине пăхăр-ха акă,—вěсем пачах та ваттисем евěрлě мар. Çамрăккисем хушшинчен пуринчен ытла килеççě те ěнтě пирěн пата. Шурă сухаллă казака, паллах, совет влаçěпе килěшме йывăртарах. Мěнле пулсан та, халě йывăр, вăл совет влаçне ăнланса илеймен чухне йывăр... Пирěн çинчен тем те пěр шухăшлаççě, тем те пěр калаçаççě вěт; çитменне пурне те

ёненеççĕ: чиркӳсенчен ёне вити туса хураççĕ, теççĕ; арăмсем пирĕн пурин те пĕрле пулаççĕ, теççĕ; пурăнма пурне те пĕр çĕре хăваласа кĕртеççĕ, ĕçсе-çиессе—пĕр сĕтел хушшине лартса çитереççĕ, теççĕ... Аçтан килĕшме пултартăр-ха ĕнтĕ казак,—вăл ĕмĕртенпех, ăруран ăрăва—чиркĕве те, хăйĕн тулăх, пуян хуçалăхне те, ют çын ĕçне те, çеçенхирти ирĕклĕ пурнăçа та юратса, вĕсемпе хăнăхса пурăннă пулсан?

— Иксплататорсем,—терĕ Чапаев, сăмаха калама йывăррипе, чĕлхине аран çавăркаласа.

— Çапла çав,—тесе, кулса ярасран кăштах тытăнса юлчĕ Федор.—Пĕтĕм ĕçĕн сăлтавĕ эксплоатацире пулса тăрать те ĕнтĕ. Пуян казаксем кунти хресченсене е киргизсене анчах эксплоатацилемеççĕ вĕт, вĕсем хăйсен тăванĕсене казаксене эксплоатацилессинчен те йĕрĕнсех тăмаççĕ. Пĕр-пĕринчен уйрăлса хирĕçесси çакăнтан пуçланса каять те ĕнтĕ вăл. Пĕр ваттисем анчах, хăйсем те тарăхаççĕ пулин те, килĕшеççĕ çакăнпа; турă хăй çапла туса янă, теççĕ; çамрăксем вара урăхларах: вĕсем ĕç çине простăрах, хăюллăнтарах пăхаççĕ; çавăнпа пирĕн пата çамрăксем йышлăрах çыпçăнаççĕ те ĕнтĕ... Стариксене вара—çавăраймăн, вĕсене хĕç-пăшалпа çеç витерме пулать.

— Хĕç-пăшалпа ăна хĕç-пăшалпа та-ха,—тесе пуçне сулласа илчĕ Чапаев,—анчах вăрçма йывăр-çке; унсăрăн пулсан мĕн вăл...

Чапай ку сăмахсене мĕн пирки каланине Федор ăнлансах илеймерĕ, анчах çакна вăл вырăнсăрах каламаннине, ку сăмахсемпе вăл темле раснах урăх шухăшне каласа пама шутланине лайăх сисрĕ. Çавăнпа вăл хăй çакна хирĕç нимĕн те каламарĕ, лешĕ хăйĕн шухăшне хăех мĕнле ăнлантарса, тарăнлатса парассине кĕтсе тăчĕ.

— Центрсем пирĕн, акă мĕн...—тесе, темĕнле тĕллипаллисĕр персе ячĕ Чапаев тепĕр илĕртекен, тĕттĕм сăмахне.

— Мĕнле центрсем?

— А вăт, лартса тултарнă унта тĕрлĕ ăçти-çука,—тесе, хăй ăшĕнче çеç мăкăртатнă пек, анчах Федора йăлт уççăнах илтĕнмелле каласа хучĕ Чапаев...—Вăл ĕлĕк мана шартлама сивĕре талăкĕ-талăкĕпе пăшал тыттарса тăратнă, халĕ вара пăх та кур... Акă сире çемçе пукан,

господин генерал, ларăр та командовать тăвăр хăвăра кирлĕ пек: патронсене, сăмахран, парас тесен паратăр, парас темесен, апла та пултаратăр,—ан тив патаксемпе çапăçчăр, тенĕ пек...

Ку ĕнтĕ Чапаев хăйне чи ыраттарса тăракан ыйту çинчен—штабсем çинчен, генералсем çинчен, приказсем тата вĕсене пурнăçа кĕртменшĕн наказани пани çинчен калаçма тытăннине пĕлтерет,—çак ыйту вăл, çав вăхăтсенче, пĕр Чапаева анчах мар, чапаевецсене те анчах мар, нумайăшне тарăхтарса, чĕрине ыраттарнă...

— Генералсемсĕр ĕç кăлараймăн,—тесе лăплантарма тăрăшрĕ ăна Клычков,—генералсемсĕр мĕнле вăрçă пултăр-ха вăл?

— Вĕсемсĕрех лайăх пултаратпăр,—терĕ те Чапаев, чĕлпĕре хыттăн пăчăртаса тытрĕ.

— Çук, пултараймастпăр, Чапаев юлташ... Пĕр харсăрлăхпа çеç пысăк ĕç тăваяс çук—ĕçе пĕлни кирлĕ, анчах пĕлӳсем ăçта-ха пирĕн? Генералсемсĕр пуçне кам парĕ-ха пире çав пĕлӳсене? Вĕсем çак ĕçе ятарласа вĕреннĕ, пире те вĕсемех вĕрентмелле... Çитĕ акă вăхăт—пирĕн хамăрăн та вĕрентекенсем пулĕç, анчах халĕ çукха вĕт вĕсем. Çук-и е пур-и? Çапла çав! Çук пулсан вара, ыттисенчен вĕренес пулать!

— Вĕренес пулать тетĕн-и? Да-да! А мĕне вĕрентĕçха вĕсем пире? Мĕне?—тесе, вĕриленсех хирĕçлерĕ Чапаев.—Эсир вĕсем пире мĕн тумаллине каласа парĕç тетĕр-им? Калĕç, кĕтсех тăр! Эпĕ хам та вĕсем патĕнче академире пулса курнă, икĕ уйăх хушши çапкаланса çӳрерĕм; кайран суртăм та, каллех кунта тухса килтĕм. Пирĕн йышшисен нимĕн тума та çук унта... Пĕри авă, Печкин профессор, çав тери якаскер, экзамента манран: «Рейн ятлă шыва пĕлетĕн-и?»—тесе ыйтрĕ.

Эпĕ вара пĕтĕм Германи вăрçине вăрçса ирттернĕ пулать те, мĕнле пĕлес мар-ха ман ăна? Анчах хам ăшăмра: мĕне кура ответ парса тăрам-ха эпĕ ăна?—тесе шухăшласа илтĕм те:

«Çук, пĕлместĕп,—тесе хутăм.—А эсĕ ху Солянка ятлă шыва пĕлетĕн-и?»—тетĕп.

Вăл куçĕсене чарса пăрахрĕ те,—кĕтмен вăл ун пек ыйтасса:

«Çук, пĕлместĕп,—тет,—мĕн-ха вара?»

«Апла пулсан, манран та ыйтмалли çук,—тетĕп.—Эпĕ Солянка шывĕ çинче аманнă та, ун урлă пилĕк хут каллĕ-маллĕ каçса çӳренĕ... Мĕне кирлĕ мана санăн Рейну? Солянка шывĕ çинче вара манăн кашни тĕмескенех пĕлес пулать, мĕншĕн тесен эпир унта казаксене хирĕç çапăçатпăр!» тетĕп.

Федор кулса ячĕ. Чапаев çине тĕлĕнсе пăхрĕ те:

«Епле ытла та ачалла шухăшсем-çке ку халăх паттăрĕн, Чапаевăн!—тесе шухăшларĕ.—Кашнинех хăйĕнне панă курăнать: кама наука, ăслăлăх; хăшĕ ăна та алла илеймест. Икĕ уйăх хушши пулнă акă вăл академире, анчах çапах та ыррине нимĕн те курман унта, нимĕн те ăнланман. Çынни те ăслă вĕт, анчах пиçсех çитеймен пулмалла... чĕрĕрех курăнать... нумай вăхăт хушши типмелле».

— Академире сахал пулнă çав эсир. Икĕ уйăх хушшинче мĕн кирлине пурне те вĕренсе çитереймĕн. Йывăр вăл,—терĕ Федор.

— Унта пачах пулмасан та юрамалла,—тесе аллипе сулчĕ Чапаев.—Мана нимĕн вĕрентмелли те çук, эпĕ хам та пĕтĕмпех пĕлетĕп.

— Çук, епле вĕренмелле мар-ха апла. Яланах мĕне те пулин вĕренмелли пурах,—хирĕçлерĕ Федор.

— Пурри пур та, анчах унта мар,—пушшех хĕрсе кайрĕ Чапай.—Вĕренме кирлине пĕлетĕп эпĕ... вĕренетĕп те... Акă мĕн калам-ха сире... Хушаматăр мĕнлеччĕ-ха сирĕн?

— Клычков.

— ...Калам-ха сире, Клычков юлташ; эпĕ пачах хут пĕлменпе пĕрех. Çыркалама вĕренни те тăватă çул анчах-ха, а эпĕ халĕ вăтăр пилĕк çулта вĕт, эпĕ мĕнпур пурнăçа тĕттĕмре пурăнса ирттернĕ, тес пулать. Ну, мĕн калаçмалли пур унта—тепĕр чухне калаçăпăр... Авă Таловка та курăнать пулас...

Чапаев лашине шпорĕсемпе тивертсе илчĕ. Федор та çавăн пекех турĕ. Потапова хăваласа çитрĕç. Вара тепĕр вунă минутран Казачья Таловкăна çитсе кĕчĕç.

## V. СЛОМИХИНĂРИ ÇАПĂÇУ

Казачья Таловка вăл—тĕппипех çунтарса янă пĕчĕк ял; унта пурĕ те виçĕ тĕксĕм пĕчĕк тăм пӳрт анчах тăрса юлнă; тĕрлĕ тĕлте тата çуннă кăмакасем çӳлелле элес-мелес кармашса лараççĕ. Чапаевсем килсе кĕнĕ пӳрте похода тухасса кĕтсе пуçтарăннă красноармеецсем кĕрсе тулнă; вĕсенчен хăшĕ саксем çине ларнă, теприсем урайне тăсăла-тăсăла выртнă.

Вĕсене никам та тĕкĕнсе чăрмантармарĕ, ниçта та хă-валаса кăлармарĕç: мĕнле выртнă вĕсем, çаплипех вырт-рĕç. Саксем çинче ларакансем, кăшт хĕсĕнкелесе, кил-нисем валли вырăн пушатса пачĕç; хăш-пĕрисене, ытла та харлаттарса çывăрнипе калаçма кансĕрлекенсене, хăй-семех вăратрĕç.

Каç пулса килни палăра пуçларĕ, пӳртре тĕттĕмленсе çитрĕ. Красноармеецсем таçтан чиркӳ çурти татăкĕ туп-са килсе, ăна йĕпе чей чашки çине çыпăçтаркаласа ларт-рĕç; хăйсем сĕтел тавра кĕпĕрленсе тăчĕç те, картă турт-са кăларса, ирхи наступлени планне тĕплĕнтерех сӳтсе явма тытăнчĕç. Чапаев сак варрине вырнаçса ларнă. Икĕ аллине те вăл сĕтел çине сарса хунă: пĕр аллинче—цир-куль, тепринче—çивĕч шĕвĕртсе хатĕрленĕ карандаш. Полксен, батальонсен, ротăсен командирĕсем тата ахаль красноармеецсем те ун тавра пухăнса, хăшĕсем сĕтел çине чавсаланса, хăшĕсем пĕшкĕнсе, хăшĕсем сĕтел урлă кармашса, Чапаев хăйĕн пĕчĕк шурă циркульне картă тăрăх тăрналла хуçкаланчăк утăмсемпе уттарса çӳренине пăхса тăчĕç. Федорпа Потапов сак çине юнашар вырнаç-са ларчĕç. Тĕрĕссипе каласан, кунта нимĕнле канашлу та пулмарĕ,—Чапаев пухăннă çынсене наступлени пла-нĕпе паллаштарса, ун çинчен каласа кăтартса, асăрхат-тарса хăварасшăн анчах пулчĕ.

Пурте пĕр шарламасăр итлерĕç, хăш-пĕрисем унăн асăрхаттарса калана уйрăм канашĕсене хăйсене валли çыра-çыра пычĕç. Çак шăплăхра Чапаевăн влаçлă сасси тата çывăракан салтаксем харлаттарса, шăхăрса кăларнă сасăсем анчах илтĕнсе тăчĕç. Пĕри, кĕтесре çывăраканскер, шăхличĕ пекех савăнăçлă шăхăрттара пуçларĕ, унăн кŷрши вара ăна пылчăклă аттипе сăмси тăрăх майĕпен сăтăрса илчĕ. Лешĕ сиксе тăчĕ те, ыйхине уçайман пирки нимĕн те ăнланаймасăр, йĕри-тавра тăн-тан пăхкаласа илчĕ.

— Хуллентерех эсĕ, кăшман,—тесе юнарĕç ăна юлташĕсем.

— Кама хуллентерех?—тесе ыйтрĕ вăл, вăранайман куçĕсене аллипе кулăшла сăтăркаласа.

Качча çурăмĕнчен кŷплеттерсе илсен тин тăна кĕртсе çитерчĕç; вăл тăчĕ те, куçĕсене сăтăркаласа уçсан, кунта Чапаев ларнине курчĕ; вара хăй те чĕрне вĕççĕн тăрсах, унăн сăмахĕсене,—тен, мĕн каланине ăнланмасăрах,—вĕçне çитичченех тинкерсе итлесе тăчĕ.

Часах Александров-Гайран ытти чапаевецсем те персе çитрĕç. Пŷртре, вĕсем те кĕпĕрленсе кĕрсен, пушшех те ниçта пăркаланма çук тăвăр пулса тăчĕ.

Чапаев малалла вĕрентсе кала пуçларĕ:

— ... пурте пĕр харăс тытăнмасан—ĕç тухас çук кунта: епле пулин те пĕр харăс тапăнса çапмалла! Пĕрре пырса çапсан вара—вăл унтан ниçта та чакма пултараймасть.. Кунтан пурне те халех, тепĕр икĕ сехетренех, кăларса ямалла. Ăнлантăр-и? Шуçăм киличчен Порт-Артур патне çитес пулать. Йăлтах тĕттĕмле, тул çутălма тытăниччен тăвас пулать,—ăнлантăр-и?

Пурте унпа килĕшсе, пуçĕсене тая-тая илчĕç те, хуллен:

— Ăнлантăмăр... Паллах, тĕттĕмле... Тĕттĕмле вăл пуринчен те лайăх,—терĕç.

— Приказ сирĕн алăрта,—терĕ малалла Чапаев,—унта ăçта чарăнмаллине, хăçан похода тапранмаллине йăлтах сехет тăрăх кăтартса панă. Ĕç ăнăçлă пуласса ĕненес пулать, ачасем, ку пуринчен ытла кирлĕ... Çĕнтерессе ĕненмесен вара, луччă ан та тытăн... Эпĕ приказра сехетсемпе вырăнсене çеç кăтартса панă, анчах пĕр унпа çех çĕнтерес çук,—ытти пĕтĕм ĕçе хăвăрăн туса çитерес пулать... Чи кирли вăл—ĕçе асăрханса тăвасси:

наступление тухса кайнине никам та пӗлмелле мар, никам та... Пӗлсен—пӗтӗм ӗҫ пӗтет... Ҫул ҫинче казака е киргиза тӗл пулсан, мужик пулсан та ҫавах,—тытса чарас пулать, малалла ямалла мар: кайран вӗҫне-хӗрне тупӑпӑр унта.

— Ун пеккисем тӗл пулаҫҫӗ ҫав,—терӗ такӑшӗ кӗтесрен.

— Тӗл пулаҫҫӗ-тӗк, тыт,— терӗ Чапаев савӑнӑҫлӑн.— Эсӗ унран, казакран, пур тӗлте те сыхланса ҫӳре. Пӗлетӗн вӗт вӑл мӗнлескерне: тӑшман вӑл сӗтел айӗнчен те сиксе тухма пултарать... Кунта вӑл килте, пур ҫулсене те, пур ҫырма-ҫатрана та лайӑх пӗлет... Ҫакна та ҫирӗп астуса тӑрӑр. Ытлашши пакӑлтатса та ан тӑр унпа, казакпа. Пакӑлтатса тӑрсан, вӑл хӑй сан шӑнӑрна тытса тӑсать...

— Тӗрӗс... Ҫапла ҫав... Казак вӑл яланах ҫурӑм хыҫӗнче...

Ӗҫ ҫинчен калаҫасси пӗтрӗ.

Пурне те пултаракан Петька ҫӑкӑр кӑларса хучӗ, котелокпа шыв вӗретсе хатӗрлерӗ, сахӑр тупса килчӗ—ӗмсе пӗтернӗ пек вараланчӑк ултӑ катӑк. Пурте савӑнӑҫлӑн кӗрлеме тытӑнчӗҫ. Пӳртре калама ҫук вӑйлӑ шав ҫӗкленчӗ. Ку таранччен никам вӑратайми пек хытӑ ҫывӑрнӑ красноармеецсем тӗлӗне-тӗлӗне вӑранса кайрӗҫ: хӑшӗ кӑшкӑрашнӑ сасӑран, хӑшӗ урапа пыра-пыра тапнӑран, е пичӗсене атӑсемпе, винтовкӑсемпе, шинельсемпе—мӗнпе пырса лекнӗ, унпа—сӑтӑра-сӑтӑра илнӗрен. Кашниех хӑйӗн чашки-тиркине шыраса тупса хыпалана пуҫларӗ. Тепӗр пилӗк минутран сӗтеле пӳртваррине сиктерсе лартрӗҫ, ун йӗри-тавра вутӑ пуленкисем лартса, хӑмасем хурса хӗсӗнкелесе ларса тухрӗҫ, хӑшӗсем йӗнерсем ҫине е урайнех чӗркуҫленкелесе ларчӗҫ. Сарӑ ҫурта тӗксӗмӗн ҫеҫ ҫутатса ҫунать, ҫавӑнпа пӳртре ҫынсен сӑн-пичӗ вырӑнне хура мӗлкесем анчах курӑнкалаҫҫӗ.

Федор ҫак тӗлӗнмелле ҫӗнӗ ҫынсем хушшинче халиччен нихҫан пулман шухӑш-кӑмӑлпа тулса ларчӗ. Ҫынсем ӑна нихӑшӗ те пӗрре те асӑрхаман пек туйӑнчӗ. Кама мӗне кирлӗ-ха ӑна асӑрхама? Ну, вӑл комиссар, тейӗпӗр—анчах мӗн-ха вара питех унпа?! Халӗ вӑл вӑрҫӑ ӗҫӗпе нимӗнле усӑллӑ кӑтарту та пама пултараймасть; политикӑпа аппаланма халӗ вӑхӑт ҫук кунта—ӑҫтан асӑрхама пултарччӑр-ха вара ӑна? «Вӑхӑт ҫитӗ-ха, пӗр-

лешсе те кайăпăр, халлĕхе курăнмасăр тăрсан та юрать», тесе шухăшласа илчĕ вăл хăй ăшĕнче.

Çак вăрçăра пĕрле пулса туслашнă юлташсен çывăх çемйинче ăна хăйне хăй пĕччен пулнă пек те туйăнса кайрĕ. Вĕсенчен кунта кашниех,—акă, сăмахран, чана чĕппи пек хура Петька та пулин,—пуриншĕн те унран, Клычковран çывăхрах, тăванрах, ăнланмалларах пулнă пирки кăмăлсăрланчĕ те вăл кăштах... Пăх-ха авă епле хисеплеççĕ вĕсем хăйсен Чапайне! Вăл хăть те кирек кампа та пулин калаçма тытăнсанах—лешĕ пĕтĕмпех ăнран каять, унпа калаçнине телей вырăнне хурать. Кăштах мухтаса илсен вара—мухтанă çын ăна нихçан та манмасть. Чапаевпа пĕр сĕтел хушшинче ларасси, ăна алă парса тытасси вăл—кашнинех мăнкăмăллантарса савăнтарать: кайран вара вĕсем ун çинчен çынсене вĕçĕмсĕрех кала-кала кăтартма тытăнаççĕ,—тĕплĕ, йĕркеллĕ калаççĕ, чăн пулни çумне тĕлĕнмелле юмахсем хушса савăнаççĕ.

Çапла шухăшсемпе Федор пӳртрен тухрĕ те хирелле кайма тăчĕ, анчах çавăнтах пӳртре юрласа янине илтрĕ. Вăл каялла таврăнса, çĕнĕрен сĕтел патне хĕсĕнкелесе кĕрсе тăчĕ. Итлеме тытăнчĕ.

Юрра Чапаев хăй пуçларĕ. Сасси Чапаевăн тимĕр пек чĕтренсе янăрать, малтанлăха вăл хитре мар пек те туйăнать. Анчах кайран, итлесе тăнăçемĕн, хăй юратнă юррисене пĕтĕм чĕререн хавасланса юрланипе вăл кашни итлекене хăй майлă çавăрать. Юратнă юррисем унăн нумаях мар, пурĕ те тăватă е пилĕк юрă çеç. Вĕсене ун юлташĕсем пурте юлашки сăмахĕ таранах лайăх пĕлеççĕ, вĕсем ăна час-часах юрлаççĕ курăнать! Чапаев вăл каллама çук çинçе сасăпа юрлама пултарать, ун пек чухне шавах унăн сасси татăласран шикленетĕн. Анчах Чапаев нихçан та, пĕрре те юрра татса пăсмастчĕ; хăш-пĕр чухне сассине уйрăмах çӳле илсе юрланă хыççăн анчах вара вăл, сасăсăр тăрса юлса, пĕр виç-тăватă кун хура пĕлĕт пек тĕксĕммĕн çӳретчĕ: юрламан чухне Чапаев яланах тĕксĕмленетчĕ, юрламасăр вăл пĕр кун та пурăнаймастчĕ. Уншăн пулсан, хăрушă ĕç те, походра çӳресе ĕшенни те, çапăçу хыççăн чĕтрени те е ĕç хыççăн ывăх килни те, çакă пурте нимĕн те марччĕ,—вăл пĕр вунă минут та пулин тупса юрлатчĕ-юрлатчех. Çакăн пек юрă юратакан çынна урăх шырасан та тупас çук: юрă уншăн çăкăр

пекех, шыв пекех кирлĕ япалаччĕ. Юлташĕсем те унăн, туслашса хăнăхнă пирки, Чапаевран пĕрре те кая юлмастчĕç.

> Ты, моряк, красив собою,
> Полюби меня душою—
> Тебе от роду двадцать лет.
> Что ты скажешь мне в ответ?

Юрă мĕн вĕçне çитиех çапла ним йĕркесĕрччĕ, пушăччĕ, содержанисĕрччĕ. Ăна Чапаев пуринчен ытла хушса юрламалли сăмахĕсемшĕн юрататчĕ, вăл сăмахсем çак партизанла, канăççăр, куçса çӳремелли пурнăçпа çав тери килĕшӳллĕ сыхăнса тăратчĕç:

> По морям, по волнам,
> Нынче здесь, а завтра там!
> Эх, по морям-морям-морям,
> Нынче здесь, а завтра там!

Çак сăмахсене пĕтĕм хорпа харăс çĕмĕрттерсе юрлани пĕтĕм çеçенхир тăрăх çумăр пĕлĕтĕнчен кĕмсĕртетсе илтĕнекен хаяр аслати пек кĕрлесе тăратчĕ. Унтан Стенька Разин çинчен, Чуркин атаман çинчен юрлама юрататчĕç; унтан тата:

> Нӳрĕ тĕрмен решетки хыçĕнче
> Ирĕкре тăрантарнă ăмăрткайăк ларать...

тесе юрлатчĕç.

Халĕ çапла çурçĕрчченех юрласа, савнăçлăн шӳт туса, калаçкаласа ларчĕç. Унтан кам ăçта май тупнă, çавăнта хĕсĕнкелесе, выртса çывăрса кайрĕç.

Наступлени планĕ тăрăх, Сломихино станици патне кăшт çеç тул çутăла пуçланă çĕре пырса çитмелле. Виçĕ енчен виçĕ полкпа наступлени туса пымалла. Кунта, Таловкăра тăракан полк, шăп варрипе пырса, станицăна умĕнчен атакăламалла; юлашки икĕ полкĕ станицăна флангсенчен, çурма-ункă пек çавăрса илмелле.

Таловкăри полкăн лавсем çине ларса, часах, тепĕр сехет-сехет çурăранах тухса каймалла. Анчах халĕ пурте лăпкă-ха, çапăçу час пуçланасси нимĕн тăрăх та паллă мар.

Федорăн çывăрасси килмерĕ. Вăл хăй те, пуçне сивĕ йĕнер çине хурса, урайнех выртса çывăрма хăтланса пăхрĕ,—анчах çук, пурĕпĕр ниепле те çывăрса каяймарĕ! Те йĕнер çинче çывăрма хăнăхманран, те малтанхи

çапăçу умĕн кăкăрта пĕр лăпланма пĕлмесĕр кĕрлесе тăракан çил-тăвăл кансĕрленĕ пирки.

Вĕсене мĕн! Вĕсем—пур тĕлтен те аманса пĕтнĕскерсем, темиçе хут контузи пулнăскерсем, ӳт-пĕвне пульăсем шăтарса пĕтернĕскерсем—çапăçусенче темиçе вуншар хут та пулса курнă та,—вĕсене мĕн! Вĕсемшĕн кунта нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Çапăçу умĕнхи каçсене курман-и мĕн вĕсем! Вĕсем унашкал каçсене сахал мар харлаттарса çывăрсах ирттернĕ, вăл каçсем вĕсемшĕн ытти лăпкă каçсенчен ним тĕлĕшрен те уйрăм мар. Анчах вĕсен те кашниннех кунта, пурнăçĕнче хăçан та пулин хăйĕн «пирвайхи çапăçу каçĕ» пулнă! Ун чухне вара вăл та, Федор пекех, мĕн пуласси́не кĕтсе пăтраннă пуль, йывăр шухăшсем пуснипе хумханнă пуль.

Çывăрас килмерĕ. Çывăрасси килмерĕ анчах мар-ха, чĕрине тата темĕскерле, халиччен пулман йывăрлăх чул пек пусса тăчĕ. Йĕри-тавра çаврăнса пăхрĕ те вăл,—сунакан сарă çурта татăкĕн тĕксĕм çути витĕр пур çĕрте те пĕр тĕлли-паллисĕр сапаланса, кукăрălса, çыхлашса пĕтсе çывăракан красноармеецсене курчĕ.

«Çапăçу хирĕнче те вилесем çакнашкалах йĕркесĕр сапаланса, тĕрлĕрен май хуçланса пĕтсе—е купи-купипе, е пĕчченшерĕн, е, пулеметпа çулса тăкнисем, йĕрки-йĕркипе йăваланса выртаççĕ пуль», тесе шухăшларĕ вăл.

Çурма тĕттĕмре çынсен сăн-пичĕ те вилнĕ çын пичĕ пек шурса кайнăн курăнать, харлаттарса çывăрнă сасă вилес умĕн йынăшса выртнине аса илтерет.

Федор, хăй çывăрса каяяс çуккине сиссе, пӳртрен урама тăрса тухрĕ. Сивĕ каçхи таса сывлăш çине тухсан, лайăхрах пулмĕ-ши? терĕ. Қаçĕ вара—питĕ лăпкă, сĕм тĕттĕм,—çеçенхир касĕ. Пĕлĕт тӳпинче симĕс çăлтăрсем мĕлтлетсе çуталаççĕ. Пит çемçе те ирĕк çил вĕрет, унашкал çил çеçенхирте анчах пулать.

Çунтарса янă ялăн ишĕлчĕкĕсем хушшинче, уçă пĕлĕт айĕнче, полк вырнаçса выртнă. Хăш-пĕр тĕлте, кăвайт хурса çунтаракан вут умĕнче, пĕчченшерĕн пĕшкĕнсе ларакан красноармеецсен кĕлеткисене уйăрса илме пулать: вĕсем—е дежурнăйсем, е Федор пекех ыйăхсăр аптăраса, вĕçĕмсĕр вăхăта мĕнле ирттерессине пĕлмесĕр асапланса хур куракансем. Вĕсем вута йĕпе турпассемпе çеçенхиртен пухса килнĕ курăк тунисене,—çеçенхирте вутă тупма çук,—кахаллăн пăрахкаласа лараççĕ; вут

сӳнсе ларсан, каçхи сĕм-тĕттĕмре суккăр пек юлас мар тесе, вĕсем кăвара майĕпен пăтраткалаççĕ. Çунакан кăвайт тавра виççĕн-тăваттăн пухăнса ларнă тĕлте котелоксемпе аппаланаççĕ,—чей вĕретеççĕ е апат пĕçереççĕ; çав вăхăтрах хăйсем тата тĕрлĕ халлап ярса йăпанаççĕ; вĕсем кулса ахăрашни таçтан аякранах илтĕнет,—çапла хăйсене май кĕскетеççĕ вĕсем çапăçăва тухса каяс умĕнхи салху вăхăта.

Çĕрĕ вара чăннипех сĕм-тĕттĕм. Хаяр, строгăй çĕр. Ана йĕри-таврах тĕрлĕрен хăрушлăх сырса илнĕ, вăл темиçе миллион тĕслĕ сасăпа пăшăлтатса калаçать,—çак сасăсем çеçенхир шăплăхне пушшех те хытă уйăрса палăртаççĕ.

Çеçенхирте, ишĕлсе аннă çуртсем хыçĕнче, куçа хăрушшăн курăнан усал-тĕсел пек, тем пысăкăш çăмлă тĕвесем ерипен çаврăнкаласа тăраççĕ. Тĕттĕм витĕр темĕнле тĕлĕнмелле мĕлкесем хăвăрттăн чăма-чăма иртеççĕ. Кăвайт çуннă тĕлте чĕтренсе тăракан çутă çул çине сĕм-тĕттĕмрен сасартăк этем кĕлеткисем сике-сике тухаççĕ те, çавăнтах тĕттĕм каç тĕпсĕрлĕхне кĕрсе кайса çухалаççĕ. Пур çĕрте те темĕнле ăнланмалла мар тарăн шухăш палăрса тăрать, уççăнах темле пысăк ĕç пуласса кĕтсе тăнăн туйăнать: пурте çапăçу пуçланасса кĕтеççĕ!

Кайрантарахпа Федорăн çакнашкал çапăçу умĕнхи каçсене нумай курса ирттермелле пулчĕ,—вĕсем, çак каçсем, пурте пĕр-пĕрин тĕслĕ, пурте тарăн шухăшлă, аслă шăплăхлă. Çакнашкал каçсенче, çывăракан красноармеецсен пуçĕсем урлă пускаласа цепьсем тăрăх иртсе çӳренĕ чухне, пуç мими тарăн шухăшсемпе тулса ларать: хамăрăн кĕрешӳ çинчен, этем асапĕ çинчен, çак граждан вăрçи хирĕсенче çĕнĕ пурнăçшăн кӳнĕ парнесем пулса выртса юлакан ятсăр паттăрсем çинчен шухăшсем ытамласа илеççĕ.

«Акă вĕсем, походсенче ĕшенсе çӳренĕ маттурсем выртаççĕ. Ыран акă, кăшт шуçăм çути килсенех, вĕсем çапăçăва колоннăсемпе те, цепьсемпе те пырса кĕрсе каяççĕ, пĕрре выртаççĕ вĕсем, тепре сике-сике тăрса малалла чупаççĕ, е татах çĕнĕрен çĕнĕ хут хăйсен пĕчĕк кĕреçипе е шăнса кайнă пӳрнисемпе васкаса чавнă шăтăксене пуçĕсене чиксе выртаççĕ... Вĕсенчен нумайăшĕ çухалаççĕ, ĕмĕрлĕхех çухалса пĕтеççĕ: вĕсем пушă хирте пĕр

сассăр, пĕр хускалмасăр ĕмĕрлĕхех выртса юлаççĕ... Кашниех вĕсем, хир варрине çăхансене сăхма выртса юлнăскерсенчен кашниех,—çав тери пĕчĕкскер, çав тери пĕчченскер, фронта хăй çинчен пĕр систермесĕр килсе кĕнĕскер, çапăçакансен ĕретĕнчен те çавнашкалах пĕр йĕр хăвармасăр тухса каяканскер,—кашниех вĕсем хăйĕн мĕн пуррине пĕтĕмпех, нимĕн юлмичченех, хăйĕн пĕтĕм пурнăçне пĕр шарламасăр, парappан çапса ахăрашмасăр параççĕ; ăна никам та пĕлмест, никам та чапа кăларaймасть—вăл, вут пĕрĕхсе тăракан хăрушă хурçă тискер кайăк ăшĕнчи питĕ пĕчĕк винтик пек, никам асăрхамасăрах тухса ӳксе юлать...»

Федор пĕр кăтра çӳçлĕ маттур каччă вут кутĕнче пĕшкĕнсе, сӳнме тытăннă кăвар çинче пĕçерекен паранкине çавăркаласа тăнине курчĕ... Хутран-ситрен вăл штыкне кĕл ăшне чиксе ярса, паранка штык вĕçĕпе тирсе туртса кăларать те, пӳрнисемпе хыпашласа пăхать, тутисем патне асăрханарах илсе пырать,—тӳрех вутран кăларнăскерне! Унтан çыртса илнине çавăнтах сурса кăларать те, штык вĕçĕнчи паранка тепĕр хут кĕл ăшне пăрахать; çапла айкашса тăнипе вăл ытти япала çинчен пĕтĕмпех манса кайнă. Тен, унăн та пуçĕнче халь темĕн чухлĕ манайми шухăшсем, хăвăрт улшăнса тăракан асаилӳсем пăтранса тăраççĕ пуль... Мĕн çинчен çапла тарăн шухăшлать-ши вăл, сӳнме тытăннă кăвайт çине тинкерсе пăхса тăрса? Паллах, хăйсен ялĕ çинчен, иртнĕ ĕçĕ çинчен, фронта пула кая юлнă пурнăçĕ çинчен,—эх, епле пысăк савăнăçпа тавăрĕччĕ-ши вăл хăйĕн иртнĕ пурнăçне каялла! Темĕн çинчен те шухăшласа тухать çав ĕнтĕ вăл çак каçра... Ирхине вара ăна акă, тен, çак вырăнах илсе таврăнĕç—татса пăрахнă уралласкере, пуля тивсе шăтарнă кăкăрлăскере, çурăлса кайнă пуç шăммиллĕскере... Вăл вара хăрушшăн хăрăлтатса, шăлĕсене çырта-çырта—хăйĕн арканса кайнă ӳт-пӳне майĕпен, кăлăхах тӳрлетсе выртма хăтланĕ, хытса ларнă юн чăмаккисем йĕри-таврах сыпăçса ларнă пирки вăл хăрушă та тискеррĕн курăнĕ. Çак такăшĕ ăшă кăмăлпа юратакан, хура çĕлĕк пек кăтра çӳçне касса пăрахĕç, çаврака пысăк пуçне хырса ярĕç, унтан вара юнланса пĕтнĕ ыратакан ӳтне хурçă çĕçĕсемпе, йĕпсемпе чакалама тытăнĕç... Ы-ых!..

Кӳрши авӑ унӑн, хӗрлӗ сухаллӑ мужик, ҫамрӑк мар ӗнтӗ, хӗрӗх ҫула та ҫитнӗ пуль. Вӑл та шухӑшсӑр лармасть. Вӗсем нимӗн те, пӗр сӑмах та калаҫмаҫҫӗ пӗрпӗринпе: иккӗшӗ те кашни хӑйӗн шухӑшӗ ӑшне путнӑ, кашниннех халӗ хӑйӗн уйрӑм пурнӑҫӗ,—пуринпе те ҫыхӑнса тӑраканскер, анчах пуринӗннинчен те пачах уйрӑмскер,—ҫав тери хӑвӑрт тапса вӗресе тӑрать... Қалаҫас шухӑш мар вӗсен—калаҫасси вырӑнсӑр кунта. Вӑл, хӗрлӗ сухаллӑ мужик, шӑнса хытса кайнӑ пек, пӗр пӑркаланмасӑр ларать: аллисене хырӑмӗ ҫине хӗреслесе хунӑ, шӑнса кайнӑ урисене хӑй айне хурса ларнӑ, куҫӗсемпе кӑвайт ҫине пӗр сиктермесӗр, шӑтарас пек пӑхса, шухӑшласа ларать. Ыран вӑл та, тен, ҫавнашкалах юрлӑ ҫеҫенхирте, ыттисем хушшинче пӗр хускалмасӑр выртса юлӗ, ытти вилесем хушшинче таса ҫемҫе юр ҫинче хура муклашка пек курӑнса выртӗ... Пӗртен-пӗр ҫӗртен анчах, тӑнлав тӗлӗнчен, шурӑ юр ҫине хӗрлӗ юн юхса анӗ... урӑх ун тавра нимӗнле йӗр те пулмӗ.

Ҫак типшӗм аллисем ун чухне хырӑмӗ ҫинче хӗресленсе выртмӗҫ,—вӗсене вӑл, вӗри чирпе асапланнӑ чухнехи пек, йӗри-тавра хӑлаҫласа пӑрахӗ; аякран пӑхсан вара вӑл—мужике курӑнми пӑтасемпе юр ҫумне пӑталаса хунӑ пек курӑнӗ... Тӑхлан пек сивӗ куҫӗсем, хальхи пекех, пӗр сиктермесӗр пӑхса выртӗҫ.

Вилсе выртнӑ ҫыннӑн сивӗ виле куҫӗсем.

Федор ӗлӗкхи вӑрҫӑран, хӑй аманнӑ салтаксене пухса ҫӳресе, эмеллесе сыватма тӑрӑшнӑ чухнехинченех юлнӑ ҫак картинӑсене чӑн пурнӑҫри пекех чӗррӗн аса илсе курчӗ.

— Кам унта?—тесе кӑшкӑрчӗ часовой.

— Хамӑрӑн, юлташ...

— Пропуск?..

— Затвор...

Часовой йывӑр винтовкине пӗр аллинчен тепӗр аллине илсе тытрӗ те, шӑнса кайнипе хулпуҫҫийӗсене сиктеркелесе, тӗттӗме кӗрсе ҫухалчӗ.

Федор пӳрте таврӑнчӗ. Унта паҫӑрхи пекех пӗр вӗҫӗмсӗр харлаттарса, шӑхӑрса ҫывӑрни илтӗнет. Ҫывраkansем хушшинче пӗр ирӗкрех вырӑн шыраса тупрӗ те вӑл, хӗсӗнкелесе кӗрсе, майлашӑнса, хуҫланса выртрӗ... Выртрӗ те—ҫывӑрса та кайрӗ.

* * *

Ирхине тĕттĕмлех лашасене йĕнерлесе Таловкăран Порт-Артур еннелле тухса чуптарчĕç. (Сăмах майĕн: çак пĕчĕк, халь тĕппипех çунтарса янă яла мĕншĕн «Порт-Артур» тесе каланă-ши?) Ăшăнса çыврăнă хыççăн пурте чĕтрене ерчĕç; çывăрса тăранайманнипе пурте тискеррĕн анасласа пыраççĕ. Шуçăм килес умĕн çеçенхирте питех те сивĕ: шинельпе кĕпе витĕр ӳт-тире вăл пăр пек сивĕ те çивĕч аптăри евĕр тире-тире илет.

Салтаксем пĕр калаçмасăрах пыраççĕ. Порт-Артура çитеспе, тĕттĕм пĕлĕт çинче пирвайхи шрапнельсем çиçĕм пек çиççе çурăлма тытăнсан тин, Чапаев Федор еннелле çаврăнчĕ те:

— Тапранчĕ,—терĕ.

— Çапла...

Вара каллех шăпланчĕç те, яла çитичченех пĕр сăмах та шарламарĕç. Утсене шпорăсемпе хистесе, хăвăртрах юрттара пуçларĕç. Çапăçу умĕн чĕре, эсĕ хăравçă е хăюллă иккенне пăхмасăрах, ялан хыттăн тапса хумханма тапратать, халĕ те вăл çапла, темле уйрăмах расна, ăнланмалла мар сисĕмпе хумханма тытăнчĕ; çапăçура хăйне лăпкă тытакан çын çук; çапăçура, вут айĕнче хăйсене питех те лăпкă тытакан çынсем пур тесе калани вăл—пустуй паврани анчах,—этем йăхĕнче унашкал тункатасем çук. Лăпкă курăнма хăнăхса çитме пулать, хăна ху чипер тытма пулать; хăна ху чарса, çапăçури хăрушлăхсене кура, сасартăк хыпса ӳкмесĕр юлма пулать,—ку вăл урăх ыйту. Анчах çапăçура е пĕр-ик минут çапăçу умĕн лăпкă çынсем—çук, пулмаççĕ, пулма та пултараймаççĕ.

Чапаевăн та, çапăçусенче нумай пулса пиçĕхсе çитнĕ çыннăн, Федорăн та, çапăçура çĕнĕ çыннăн,—иккĕшĕн те чĕрисем халĕ çав тĕлĕнмелле сисĕмпе хумханса тăчĕç. Хăрани мар вăл, вилĕмрен шикленни те мар,—ку вăл—пĕтĕм шухăш-кăмăл, çав тери çинçе хĕлĕх пек, туртăнса, тĕлĕнмелле янраса тăни, тăн-пуç чи çивĕччĕн ĕçлени, çитменне ху тата таçта шутсăрах васкани, ăнланмалла мар хăвăрт васкани. Ăçта çав териех васкамалла-ха, уйрăмах хытă васкамалла,—çакна ăнланмастăн эсĕ ху, анчах аллу-уруна шавах хăвăрт вылятса илни, кĕскен те хăвăрт татса калаçни, тинкерсе хăвăрт пăха-пăха илни,—

çаксем пурте эсĕ вăл самантра стихийлă, мĕншĕнне ху та ăнланмасăр васкаса ӳкни çинчен пĕлтереççĕ. Федор Чапаевран темĕн çинчен ыйтасшăнччĕ, унăн шухăш-кăмăлĕ епле пулни çинчен ыйтса пĕлесшĕнччĕ; анчах вăл Чапаевăн çиленчĕклĕрех пăхакан сăн-питне курчĕ те—нимĕн те шарламарĕ.

Порт-Артур патне çитрĕç; кунта обозсем пухăнса тăнă; çунтарса янă ял вырăнĕнче обозпа килнĕ хресченсем ушкăнăн-ушкăнăн пухăнса ларнă; котелоксенчен чей тултарса вĕсем, выçнипе, çав тери тутлăн ирхи апат çиеççĕ. Чапаев ут çинчен siксе анса, кизякран купаласа тунă çӳлĕ стена çине хăпарса тăчĕ те, шрапнельсем çурăлса тăракан еннелле биноклыпе пăха пуçларĕ. Ирхи тĕттĕм сирĕлсе кайрĕ, тул çутăлса çитрĕ. Кунта тăват-пилĕк минут тăчĕç те, каллех лашасем çине утланса, малалла вĕçтерчĕç. Часах вĕсем хăйсене хирĕç пĕр хресчен лавпа тем турттарса килнине курчĕç; лавне çиелтен çĕтĕлсе пĕтнĕ кивĕ сăхманпа витнĕ.

— Мĕн турттарса килетĕн, юлташ?—тесе ыйтрĕ Федор.

— Пĕр салтака амантнă-çке акă,—терĕ лавçă.

Федор лав çине тинкеререх пăхрĕ те, сăхман айĕнче çын кĕлетки выртнине курчĕ; вара вăл лашине çавăрса, лавпа юнашар уттарчĕ. Чапаев чарăнса тăмасăр малалла юрттарса кайрĕ.

— Йывăр амантнă-и?

— Йывăр çав, йывăр... Пуçне те, урине те амантнă...

— Суранĕсене çыхнă-и?

— Çыхмасăр, йĕри-таврах çыхнă.

Çак вăхăтра аманнă çын йынăшса ячĕ; сăхманне майĕпен сирсе, бинтпа çыхса янă юнланса пĕтнĕ пуçне уçса кăтартрĕ те, куçĕсене уçса, Федор çине пăтранчăк куçĕсемпе:

«Çапла çав, тăванăм,—тенĕ пек йывăррăн пăхса илчĕ.—Çур сехет каярах эпĕ те санашкалах сывă çынччĕ... А халĕ—пăх ĕнтĕ... Хама пӳрнĕ ĕçе турăм эпĕ, халь ĕнтĕ уйрăлатăп сиртен... Амантса пĕтерчĕç... Ыттисем туса пĕтерччĕр — черет вĕсенче... Эпĕ тӳрĕ кăмăлпа пытăм... вĕçне çитичченех тӳрĕ чĕрепе. Ху куратăн: турттарса пыраççĕ...»

Çакнашкал шухăш татăкĕсем вĕлтлетсе иртрĕç Федор пуçĕнче. Ку вăл — пирвайхи суранланнă çын; çакă ч и

малтанхи çухату пулнă пирки Федора калама çук йывăр пулчĕ... Урăх çухату та пулĕ акă — мĕн тăвăн? Теприсем çине пăхма ытлашшипех йывăр пулмĕ — çапăçу унсăрăн пулмасть ĕнтĕ вăл. Анчах ку пирвайхи — эх, епле йывăр та-çке эсĕ, пирвайхи çухату!

Çак шухăшсем пекех урăххисем те вĕлтлете-вĕлтлете иртрĕç Федор пуçĕнче — шухăшсем мар, картинăсем, ĕнерхи сăнсем, нумаях пулмасть Таловкăра, çунакан кăвайт умĕнче курнăскерсем... тен, ку та акă, лешĕн пекех, ĕнер çеç, ĕнер те мар, кĕçĕрхи кас çеç — ăçта та пулин кăвайт çинче çурма çĕрĕк паранкă пĕçернĕ пуль, ăна штыкпа тирсе илсе, вĕрискере, кăмрăкланса кайнăскере, тутанса пăхнă пуль?

Федор Чапаева хăваласа çитес тесе лашине хытăрах чуптарчĕ, анчах лешĕ çултан пăрăнса кайнă курăнать. Тепĕр хут вара вĕсем цепьре тин тĕл пулчĕç.

Малалла та, фронт еннелле, каялла та, позици енчен,—лавсем шăваççĕ: пĕрисем çине снарядсем, патронсем тиенĕ, пушшисем — аманнисене тиеме каяççĕ; теприсем, вĕсене хирĕç килекеннисем, пĕртен-пĕр хăрушă япала çеç турттарса килеççĕ: юнланса пĕтнĕ çын кĕлеткисене.

— Инçетре-и пирĕннисем?—ыйтрĕ Федор.

— Инçетрех мар, ав çавăнта, пĕр пилĕк çухрăмра çеç пулас...

Узень шывĕ леш енче, сылтăмра, киргиз ялĕсем лараççĕ,— казаксене кунтан тупă-пăшал вут-хĕмĕпе хăваласа янă. Çырма урлă леш енче икĕ хуралçă красноармеец каллĕ-маллĕ уткаласа çӳрени курăнать. Вĕсем лапамсене анса, чул куписем хысçне пыра-пыра тĕрĕслесе пăхаççĕ: ăçта та пулин аманнă юлташ йăваланса выртмасть-ши? тесе шыраса çӳреççĕ... Шав çывăхран çывăх, вăйлăран вăйлă илтĕнет тупăсем кĕрĕслеттерсе пенĕ сасă, çывăхран та çывăх ӳксе çурăлаççĕ снарядсем... Акă малта красноармеецсен цепĕсем те хуп-хуран курăна пуçларĕç. Мĕн пилĕк çухрăмĕ кунта? Икĕ çухрăм та пулас çук. Тупă вут-хĕмĕпе витнĕ çул пит вăрăм пек туйăннă пулас мужике!

Федор иккĕмĕш цепь сапаланса выртнă тĕле çитсен, Чапаева курчĕ. Унпа пĕрле полк командирĕ пырать, вĕсем темĕн çинчен лăпкăн калаçаççĕ.

— Ятăм та — таврăнмарĕ,— терĕ полк командирĕ, хăйне унччен панă ыйтăва хирĕç ответлесе.

— Татах ярас пулать!—тесе касса татнă пек каларĕ Чапаев.

— Тата та янăччĕ те — пурпĕрех...

Татах та ярас пулать!—çине тăрсах яма хушрĕ Чапаев.

Полк командирĕ пĕр минут пек нимĕн те чĕнмерĕ. Чапаевăн чĕри çилĕпе тулса пычĕ. Куç хупаххисем хускалчĕç те куçĕсем тискеррĕн, чăтлăхра сыхланса тăракан тискер кайăкăнни пек, çиçсе илчĕç.

— Лерен килчĕç-и?— сасартăк ыйтрĕ Чапаев.

— Унтан та çук.

— Хăçантанпа?

— Сехет ытла ĕнтĕ.

Чапаев куçхаршине хыттăн пĕрсе илчĕ, анчах нимĕн те чĕнмерĕ те калаçми пулчĕ. Федор сăмах çыхăну çинчен пынине ăнланса илчĕ. Пĕр полкпа çыхăну пит лайăхчĕ, тепринпе — нимĕнле çыхăну та çук. Қайран тин вара, красноармеецсем хăйсен командирĕ пирки, вăл ĕлĕкхи офицер пулнă пирки, иккĕленме тытăнни паллă пулчĕ. Офицер вĕсене юриех пĕтерме илсе каять, тесе шутланă пулнă вĕсем. Çавăнпа вĕсем, ун хыççăн каясшăн пулмасăр, нумайччен туртăнса тăнă, пĕрмай йăсласа, ĕçе тĕрĕслесе пĕлме тăрăшса, чи кирлĕ вăхăта ирттерсе янă пулнă.

Федор Чапаевпа юнашар утрĕ, лашисене чĕлпĕрпе çавăтса пычĕç. Çакăнтах, асăрхаман çĕртен, Потапов килсе тухрĕ, унран инçех те мар — Илья Теткин, Теткинпа юнашар—Чеков. Вĕсем хăш вăхăтра кунта килсе çитнине Федор пĕлмесĕрех юлчĕ. Таловкăран Чапаевпа пĕрле тухнă чухне вăл çак йĕкĕтсем — те пӳртрех юлнине, те юрласа чарăннă хыççăн сĕм-çĕрлех тухса вĕçтернине асăрхаймасăрах юлнă пулнă.

Малти цепьсем выртнă тĕле çитме çур çухрăма яхăн юлчĕ. Халех çавăнта кайма шут тытрĕç. Анчах сасартăк сивĕ çил килсе çапрĕ те,—çеçенхирте час-часах пулкалать ун пекки,—çăра йĕпе юр çума пуçларĕ, питкуçа хупласа илчĕ, ниепле те малалла кайма памарĕ. Наступлени тума чарăнчĕç. Анчах çил-тăман нумайлăха пымарĕ; тепĕр çур сехетрен цепьсем каллех малалла

шума тытăнчĕç. Клычковпа Чапаев флангсем еннелле уйрăлса кайрĕç,—халь ĕнтĕ вĕсем малти цепе тухрĕç. Сылтăмра Овчинников хуторĕ курăнса кайрĕ.

— Кунта казаксем пытанса ларнă пулмалла,— терĕ Чапаев, çырма урлă кăтартса.— Çапăçу хутор çывăхĕнче пулас пек туйăнать,— терĕ.

Ку хутĕнче Чапаев йăнăшрĕ: таракан казаксем хуторта чарăнса тăма шутламан та; вĕсем хăратмалăх çеç кăшт перкелерĕç те, хирĕç тăмасăрах тарчĕç.

Сломихино станицине çитесси те инçе юлмарĕ, пĕр-ик çухрăм анчах. Кунта тап-такăр та сарлака тӳремлĕх, станицăран ку еннелле тупăсемпе пеме аван та, çăмăл та. Анчах казаксем шăп лараççĕ... Мĕншĕн шарламаççĕ-ха вĕсем? Çак тискер шăплăх кирек мĕнле пенинчен те хăрушăрах. Чееленсе хăтланмаççĕ-ши вĕсем, капкăна лектерсе тытма хатĕрленмеççĕ-ши? Узень шывĕн леш енче анчах вăйлă перкелеççĕ, кунта вара, кунта — шăпах.

Федор цепь умĕнче чĕлĕм турткаласа пырать; кун пек тунинчен вăл хăйĕн маттурлăхĕпе янкăсланни палăрать.

«Акă, пăхăр-ха, епле харсăр эпĕ; юланутпах малти цепь умĕнче пыратăп, пуля килсе лекесрен те хăрамастăп», тенĕ пек туйăнать.

Ку ĕнтĕ вăл ачалла мухтаннă пек пулчĕ, анчах çав минутсенче, тен, çакă та кирлĕ пулнă. Кун пек тунипе пĕр енчен, комиссарăн авторитечĕ çĕкленет, тепĕр енчен, çак харсăрлăх красноармеецсене те хавхалантарать; цепь умĕнче юланутлă çын пынă чухне цепьри çынсен хăюлăхĕпе харсăрлăхĕ ӳссе çĕкленет; çакна цепьре пулса курнă кашни çын лайăх пĕлет. Анчах çак харсăрлăх çапăçу умĕн анчах пулма пултарать; пеме пуçласан вара, перебежка тума тытăнсан, ун чухне вара ытла нумаях янкăсланса çӳреймĕн.

Чапаев пĕр çĕртен тепĕр çĕре вĕçтерсе çех çӳрерĕ: полксем хушшинче лайăх çыхăну пултăр тесе, снарядсем çителĕклĕ кӳрсе тăччăр тесе, обозсем çинчен пĕлме тăрăшрĕ.

Федор цепĕн пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне тухса, сылтăм фланга таврăнчĕ те, лаши çинчен анса, ăна хăй хыççăн çавăтса пырса, цепь тăрăх утрĕ. Тупăсем станицăна хытăрах пеме тытăнчĕç. Станица, малтанхи пекех, пĕр шар-

ламасăр ларать. Вăл шарламан вăхăтра Федор лăпкăн, кăшт шӳт тукаласа пычĕ, вăл кунашкал ĕҫсене куркаланă пек курăнма тăрăшрĕ; ку енчен вăл хăйне хăй тар тĕтĕмĕ ăшĕнче пиҫĕхсе ҫитнĕ ватă салтак пекех тыткаласшăн пулчĕ. Анчах ку унăн, чăннипе, ҫапăҫăва пирвайхи хут ҫеҫ кĕни вĕт-ха; ҫавăнпа ҫак «гражданла шĕлепкерен» уйрăмах мĕн ыйтмалли пур-ха ĕнтĕ. Ун вырăнне эсир ҫак ватă салтакран тепĕр пилĕк минутран мĕн пулнине пăхса курăр-ха акă!

Ял ҫывăхне пĕр виҫҫĕр чалăш таран перебежка туса ҫитме май пана хыҫҫăн, казаксем сасартăк тупăсемпе кĕрĕслеттерме пуҫларĕҫ. Тупăсем хыҫҫăн ял хĕрринчи армансем ҫинчен пулеметсем шатăртаттарма тытăнчĕҫ. Федор сасартăках ним тума пĕлмесĕр хыпса ӳкрĕ, анчах вăл ăна никама та палăртмарĕ; ун ăшĕнче сасартăк тем пăтранса кайнă пек пулчĕ, вĕри ăшчиккине темĕнле сивĕ тумламсемпе сапнă пек туйăнса, шăнтса ҫӳҫентерчĕ. Малтан вăл пĕр вăхăт хальчченхи пекех утса пычĕ; унтан кăштах ҫынсенчен уйрăлчĕ, кăшт каярах юлчĕ, хыҫалтан утрĕ, вара лаша хыҫне пытанчĕ.

Цепь пĕрре ҫĕр ҫумне тĕршĕнсе выртать, унтан сиксе тăрса, пĕр сăтăрăм малалла чупать те, юр ăшĕнче васкавăрлăн пĕчĕк шăтăксем чавса, вилнĕ ҫын пек пуҫĕсене ҫав шăтăка пырса чиксе, ҫĕнĕрен юр ăшне путса выртать. Ҫапла, лаши хыҫне пытанкаласа, Федор та пĕр-ик хут чупса иртрĕ, унтан вара — лаши ҫине утланса ларчĕ те, вĕҫтере пачĕ... Ăҫталла? Ҫакна вăл хăй те чипер пĕлмерĕ, анчах ҫапăҫуран аяккалла каясшăн пулмарĕ,— пĕр ҫакăнтан ҫеҫ, ҫ а к в ы р ă н т а н ҫеҫ мĕнле те пулин урăх вырăна, ăҫта та пулин, пульăсем чĕрене, тен, кунти пекех ҫурса шăхăрса ыраттарман вырăна, хăрушлăх кунти пекех ытлашши ҫывăх мар вырăна куҫасшăн пулчĕ. Вăл цепь тăрăх сиккипе чуптарчĕ; анчах халĕ ĕнтĕ цепь умĕнчен мар, хыҫĕнчен пычĕ; темĕншĕн чи инҫетри сулахай флангалла вĕҫтерчĕ. Сăн-пичĕ унăн ҫак самантра ĕҫленĕ чухнехи евĕр темĕн ҫинчен хытă шухăшланă пек пулчĕ; ăна ҫак вăхăтра тĕл пулас пулсан, эсир ку ача хăранипе тапса сикнĕ, тесе шухăшлас та ҫук. Эсир, вăл темĕнскерле питĕ те питĕ паха пĕлтерӳ илсе пырать тесе, е хăрушă вырăна питех те кирлĕ ĕҫпе васкать тесе, шутланă пулăттăр.

Ҫул ҫинче ăна Потапов тĕл пулчĕ. Ку сылтăм флан-

галла вĕçтерет. Мĕншĕн? Тен, вăл та унта, Федор сулахай флангалла вĕçтернĕ пиркиех, пырать пулĕ? Анчах, кам пĕлтĕр ăна,— çапăçура те ĕçпе васкать çын, те хăранипе ăс-тăнне çухатса, ним тĕлли-паллисĕр аташса, çăлăнăç шыраса çӳрет вăл, çапăçнă вăхăтра ăна ниепле те уйăрса илме çук. Хирĕç пулчĕç те, лашисене кăшт тытса чарчĕç вĕсем, пĕр-пĕринчен ыйткаласа пĕлме васкарĕç:

— Патронсем пур-и? Снарядсем çитеççĕ-ши? Чапаев ăçта, мĕнле тупмалла-ши ăна?

Ыйтусене чăн шухăшĕсене пытарас тесе анчах пар-каласа илчĕç.

Вĕсем пĕр вырăнта тапăртаттаркаласа тăнине станицăран асăрхарĕç курăнать; çак икĕ юланутлă çын рядовой çынсем мар, мĕнле те пулин аслă пуçлăхсем пулĕ, тесе шутласа илчĕç курăнать. Вара васкасах вĕсене тĕллесе пеме пуçларĕç, йĕри-таврах снарядсемпе хупăрласа илме тытăнчĕç,—снарядсем шав çывăхран та çывăхрах ӳкме тапратрĕç...

Пĕри пĕр çирĕм пилĕк чалăшра çурăлса кайрĕ-и, тен; тепри—вунпилĕк чалăшра, виççĕмĕшшĕ унран та çывăхарах. Станицăран вĕсене тĕллесе пени уççăнах паллă пулчĕ. Снарядсем йĕри-таврах ункăласа ӳкеççĕ. Вут-хĕм çавăрса илнĕ вырăн тăвăрланнăçем тăвăрланса пырать.

— Кунтан тапса сикес пулать!—васкавлăн пăшăлтатрĕ Потапов илтĕнмелле сасăпа.

Çывăхрах тепĕр снаряд çурăлса кайрĕ.

Потапова хирĕç Федор нимĕн те чĕнмерĕ, утне сасартăк шпорăпа тивертрĕ те, цепьсенчен пăрăнса, хыçалалла вĕçтерчĕ...

Потапов ун хыççăнах пăрăнчĕ, анчах вăл çавăнтах, кăшт юлчĕ те, таврăнса, сылтăм фланг еннелле чуптарса кайса çухалчĕ. Федор пĕр тĕмеске тĕлне вĕçтерсе çитрĕ; тĕмеске хыçĕнче пĕр вунă лавçă выртнине курчĕ. Вара вăл та, вĕсемпе пĕрле выртса, хăй икĕ минут каярах Потаповпа пĕрле çаврăнкаласа тăнă вырăнта снарядсем епле шартлата-шартлата çурăлнине пăха пуçларĕ. Лашине вăл çывăхри лав çумне кăкарчĕ. Çапла вăл тăшман енчен снарядсем шăхăрса, уласа килнине чылайччен итлесе выртрĕ; снаряд хăй патне уласа çывхарнине асăрхасанах, Федор пăрланса кайнă юр тĕмески çумне лăпчăна-лăпчăна выртрĕ; унтан, кăшт шикленерех, çывăхра çĕнĕ

снаряд улани илтӗнмест-ши тесе, пуҫне вӑраххӑн ҫӗкле-ҫӗкле пӑхрӗ. Нумай выртрӗ-и вӑл кунта, ҫук-и?—ӑна никам та пӗлмест. Тата кӑшт тӑрсассӑнах, шӑпах ҫакӑнта вӗлерсе пӑрахма пултарнӑ та ӗнтӗ ӑна ӑнсӑртран килсе ҫурӑлнӑ снаряд, юр ҫинче хӑйпе пӗрле выртнӑ виҫӗ хресчене пӗтӗмпех амантса хӑварнӑ пек. Анчах Федор кӑшт ҫеҫ маларах унччен выртнӑ ҫӗртен сиксе тӑчӗ те, йӗнер ҫине сиксе ларса, вӑхӑтлӑха: ӑҫта каяс-ши ӗнтӗ?—шухӑша кайрӗ вӑл. Сулахай флангран ӑна ҫӑлма тенӗ пекех пӗр ҫамрӑк красноармеец ҫӑмӑллӑн тӗпӗртеттерсе ҫитрӗ те, тӑвӑнса ларнӑ сассипеваскавлӑн, никам еннелле пӑхмасӑрах:

— Ӑҫта пулеметсем? Пулеметсем ӑҫта кунта?—тесе ахӑрашса илчӗ.

— Мӗнле пулеметсем?

— Пире пулеметсем кирлӗ—сулахай флангран казаксем лавӑпа атакӑна килеҫҫӗ...

Федор малтан тӳрех: ку та хӑйӗн йышшиех хӑравҫӑ салтак мар-и? тесе шутласа илчӗ; анчах кавалерист кӑтартнӑ еннелле ҫаврӑнса пӑхрӗ те, унтан инҫех те мар хуп-хура масса йӑтӑнса килнине курах кайрӗ... Унӑн ҫӳҫӗсем вирелле тӑчӗҫ.

— Обозран халех ярӑп!— тесе кӑшкӑрчӗ те вӑл, лашине ҫаптарса илсе, обоз еннелле вӗҫтерчӗ.

Ҫитрӗ те унта, нимӗн калама пӗлмесӗр, аптӑраса тӑчӗ. Обозниксем ун ҫине куҫайӗн чеен кулкаласа пӑхса илчӗҫ,— ку маттур мӗншӗн килнине тӳрех сисрӗҫ курӑнать. Тен, Федора ҫак ахалех, пустуйранах ҫапла туйӑнчӗ пулӗ; тен, мужиксен ун ҫинчен шухӑшлама вӑхӑчӗ те пулман пулӗ; тен, вӗсем ҫак ухлатса тӑракан снарядсем айӗнче чӗтресе тӑмалли вӑрӑм, хӑрушӑ сехетсем хӑвӑртрах иртсе кайччӑр тесе кулкаласа, шӳт тукаласа тӑнӑ пулӗ. Кӗтсе тӑр акӑ кунта, приказ пуличчен вырӑнтан та ан тапран; ҫав вӑхӑтрах йӗри-тавра снарядсем ухлатса тӑраҫҫӗ, хӑйсен парнисене шыраса вӗҫеҫҫӗ, вӗсем обоза та килсе аркатма пултараҫҫӗ. Обозра хӑравҫӑсем анчах ӗҫлеҫҫӗ тесе, кӑлӑхах кулса калаҫаҫҫӗ. Эсӗ унта ху ӗҫлесе пӑх-ха, вара обоз вӑл мӗнле хӑравҫӑсен йӑви пулнине лайӑх курӑн! Салтака цепьре аван,—унта кашнийӗнех винтовка пур, унта ҫынсем ҫӗршерӗн-ҫӗршерӗн пӗр харӑс пыраҫҫӗ, ҫак ҫӗршер ҫын умӗнче унта хӑйсен пулемечӗ-

сем пур, пулеметсене пулăшма унта тупăсем ухлатса переççĕ. Цепьре мĕн?! Унта кам çумне пырса тĕршĕнмелли, кам çумне пырса çыпăçмалли пур; унта, цепьре, йĕритаврах пулăшу. Çав вăхăтрах эсĕ обоз енне çаврăнса пăх-ха: икçĕр лав унта, икçĕр мужик, çитменнине икçĕрĕшĕн те пĕрле... вунпĕр винтовка! Винтовки вунпĕр, патронĕсем вара унтан та сахал. Запасра пĕр пулемет тăрать, анчах ăна та пулин тӳрлетмелле. Çитменнине тата икçĕр сынтан çĕр аллă çынĕ лайăххăн пеме те пĕлмеççĕ. Пеме пĕлекеннисем вара—чăлах та вăйсăр этемсем; тепри винтовкине те хулпуççи çумне тытма пултараймасть, мĕн тума пултарни те унăн—лашана тилхепесемпе турткалама пĕлни çеç. Акă сана обоз! Казак тесен вара обозсене питĕ юрататать: мĕншĕн вĕсене пушă алăпах тытса илес мар-ха? Пĕр çĕр казак килсе тапăнсанах—кам сыхлаканĕ пур, кам çине тĕренмелле, пулăшу ăçтан кĕтмелле? Тĕпĕртеттерсе çӳреççĕ вара казаксем лавсем хушшипе, обозниксен пуçĕсене витĕрех тата-тата тухаççĕ. Вунпĕр винтовка пур, вĕсем те шарламаççĕ — казаксем вĕсене йăпăр-япăрах алăран персе ӳкереççĕ. Акă сана обоз, акă сана хăравçăсен йăви: обозрисем шавах калама çук пысăк хăрушлăхра, ун пек хăрушлăх цепьре те пулмасть!

Çапла ĕнтĕ, обозра хăравçăсем çеç лараççĕ, хăравçăсемшĕн пур çĕрте те хăрушă, тесе обозрисене вырăнсăрах кӳрентереççĕ: обозри хăрушлăх боецсене цепьре чĕтретекен хăрушлăхран темиçе хут пысăк.

Вăрă çинче çĕлĕкĕ çуннă; цепьрен пăрăнса кайнипе çĕкленнĕ намăс Клычкова пĕтĕмпех асаплантарса пĕтерчĕ, вăл мужиксемпе кулкаласа калаçма та пултараймарĕ, анчах ниçта уйрăлса кайма та пĕлмерĕ — ăçта каяс халĕ? Çапла, çылăхлă çын пек, пĕр сехет çурă хушши çапкаланса çӳрерĕ вара вăл лавсем хушшинче: чикарккине тиверткелеме ыйтрĕ, выльăх апачĕ çинчен, урапа маçĕ çинчен, çăкăр пурри-çукки çинчен, консервăсем çинчен, хăш ялтисем—инçетрисем-и, çывăхрисем-и текелесе, ыйткаласа пĕлсе çӳрерĕ. Анчах çапла калаçу та унăн пĕрре те ăнмарĕ. Сăмахĕсем пушă та айван,— никама та кирлĕ мар сăмахсем пулса тухрĕç. Лавçăсем унпа калаçассинчен йĕрĕннĕ пек, унран тарăхмалла юри пăрăнапăрăна кайнă пек туйăнчĕ. Темле сăхакан хурт-кăпшанкă евĕр пит вăраххăн, аран-аран шăва-шăва иртрĕç минутсем; вĕсем Федор чĕрине, хăранипе намăс ĕç тунăшăн

тавăрнă пек, пĕтĕмпех таткаласа, çĕткелесе, суранлатса пĕтерчĕç.

Тупăсем ухлатса пени таврари ытти пĕтĕм сасса хуплаcа тăрать. Тăвăр унка хăваласа кĕртнĕ темĕн пысăкăш тискер кайăк вилес пек уласа, енчен-енне кускаласа çӳренĕ евĕр, уй-хир тăрăх вĕçĕмсĕр шав кĕрлесе тăчĕ. Çапла тупăсем пенипе харсăрланнă цепьсем ахлатса, шăхăрса, уласа тăракан шав ăшĕнче малалла савăнăçлăн куçса пычĕç.

Чапаев — хĕрлĕ кăшăллă хура çĕлĕкпе, çил çинче шуйттан çуначĕсем пек вĕçсе пыракан хура буркăпа — хирĕн пĕр хĕрринчен тепĕр хĕррине кайăк пек вĕçсе çӳрерĕ,— вăл ырханскер, казак йĕнерĕ çине çирĕп ларнăскер, е унта е тепĕр тĕлте сасартăк сике-сике тухса, каллех пит хăвăрт таçта кайса çухалнине пурте лайăх курчĕç. Çапла вĕçсе çӳренĕ хушăрах вăл кама мĕн кирлине пĕлтерсе, приказсем парса, ыйтмаллине ыйтса пĕлсе çӳрерĕ. Командирĕсем те, Чапаева çав тери лайăх пĕлекенскерсем, кирлĕ хыпарсене пит кĕске, пит васкавлăн — пĕр ытлашши сăмахсăр, ытлашши пĕр минут чарăнса тăмасăр — пĕлтерсе пычĕç.

— Пур пулемет та ĕçлет-и?—ыйтать Чапаев сиккипе пынă çĕртенех.

— Пурте ĕçлеççĕ,— тавăрса カларĕç ăна такамсем цепьрен.

— Снарядсем — миçе лав юлнă?

— Ултта...

— Командир ăçта?

— Сулахай флангра...

Вăл вара сулахай флангалла вĕçтерет.

Цепьсем тытса чарма çук малалла ыткăнса пычĕç. Çав самантрах цепьсем тăрăх казаксен пулемечĕсем пеме пуçлаççĕ. Цепьсем вара çĕр çине ӳксе, пуçĕсемпе юр ăшне чаваланса кĕрсе, çĕнĕ команда пуласса кĕтсе, вилнĕ пек хускалмасăр выртаççĕ.

Цепьсем хыçĕнче Чапаев кĕскен те хăвăрт приказсем парса, хăвăрт тавăрса каланă ответсене итлесе, кайăк пек вĕçсе çӳрет.

Акă вăл утне карт туртса çавăрчĕ те, батарея командирĕ патнелле тапса сикрĕ:

— Армансене перĕр!

— Армансем çинчен пур пулеметсене те персе антарăр!
— Станицăна эпĕ каламасăр ан тивĕр!—терĕ хытă сасăпа.

Вара каллех утне çавăрса цепьсем патнелле вĕçтерчĕ. Тупăсем çирĕпрех, хаяртарах, çине-çине пеме пуçларĕç. Станица чупса çывхаракан цепьсене, нервлăн васкаса, тытса чарма тăрăшрĕ. Çак вăхăтрах армансем çывăхĕнче снарядсем çурăла-çурăла сирпĕнчĕç: пур пулеметсене те пĕр харăс персе антарчĕç. Икĕ енĕ те хытăран хытă вут кăларса переççĕ. Анчах красноармеецсем станица патне минутсерен çывхарса пыраççĕ, снарядсем ытларан ытла тĕл ӳксе çурăлаççĕ; вилĕм çав тери çывăх пирки, тăшман çывхарнăçем çывхарса пынă пирки, ăна çĕмĕрсе тăкса станицăна унăн хулпуççийĕсем çинче çĕмĕрсе кĕмелле тесе шутланипе — пĕтĕм çан-çурăм çӳçенсе тăрать...

Пĕтĕмпех хĕрсе кайнă, çунса тăракан куçлă Чапаев цепĕн пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçнелле вĕçсе çех çӳрет. Пĕрре пулеметсем патне, тепре снарядсем патне е полк командирĕ патне вĕçĕмсĕр вестовой ярса тăрать, е каллех хăй вĕçтерсе иртет; унăн ырхан кĕлетки епле пур çĕрте те вĕлкĕшсе çӳренине пур красноармеец та курса тăрать. Акă ун патне кавалерист вĕçтерсе çитрĕ те, Чапаева хăвăрт-хăвăрт темскер каларĕ.

— Ăçта? Сулахай флангра-и?—ыйтрĕ Чапаев.
— Сулахаййинче...
— Нумайăн-и?
— Пит нумайăн...
— Пулеметсем вырăнта-и?
— Пурте вырăнта... Пулăшу илме ятăмăр...

Вăл вара çавăнтах сулахай флангалла, хăрушлăх сасартăк ӳссе çывхарнă çĕрелле тапса сикрĕ. Казаксем лавăпа хуп-хура хум пек явăнса килеççĕ... Акă сиккипе килекен учĕсем çывăхранах курăнакан пулчĕç... Чапай батальон командирĕ патне вĕçтерсе çитрĕ те:

— Вырăнтан та ан тапранăр! Пурте цепе выртăр!.. Залппа перĕр!— терĕ.
— Так точно...

Вăл çавăнтах вара çĕр çумне çыпăçса выртнă красноармеецсен ĕречĕ тăрăх юрттарса вĕçтерчĕ.

— Ан хăрăр, ан хăрăр, ачамсем! Ан çĕкленĕр... Çывхарма парăр та — команда парсанах пере пуçлăр... Вырăнтах выртăр... Команда тăрăх перĕр!!!— терĕ.

Çак юлашки, хăрушă самантсенче çирĕп сăмах çав тери кирлĕ боецсене! Вĕсем лăпкăн кĕтсе выртаççĕ... Чапаев хăйсемпе иккенне кураççĕ, унăн сăмахне хăйсем илтеççĕ. Инкек пулас çуккине вĕсем çирĕп ĕненеççĕ...

Казаксен лави пуля тивмелле тĕпĕртеттерсе çитсенех—залп кĕрслетсе кайрĕ, ун хыççăн тепри... пулемет нервлăн шатăртаттарма тытăнчĕ...

Тра-та-та... Тра-та-та... Тра-та-та...—пĕр чарăнмасăр выляса юрлаççĕ пулеметсем.

Ах...ххх! Ах...ххх! Ах...ххх!—тутарса пĕрлешеççĕ вĕсен сассипе пĕр харăс кĕрслетсе каякан залпсем...

Казаксен лави пăтранса кайрĕ, арканма пуçларĕ, самантлăха чарăнса тăчĕ.

Ахх! Ахх!..—туха-туха каяççĕ типĕ залпсем. Пĕр самант çеç иртрĕ—казаксем хускалми пулчĕç... Тепĕр самантранах—лашисене каялла çавăрчĕç... Казаксем каялла тапса сикрĕç, вĕсем хыççăн пулеметсемпе залпсем вĕçĕмсĕрех:

Тра-та-та... Аххх!.. Тра-та-та... Аххх!.. Аххх!—кĕрлесе тăраççĕ.

Казаксен атаки путланса ларчĕ. Красноармеецсем шурă пуçĕсене çĕр çумĕнчен çĕклесе пăхкала пуçларĕç. Хăш-пĕрисем хăраса иртнерне хыççăн кулкаласа пăхаççĕ... Цепьсем станица çумнех пырса çитрĕç... Боецсем пушшех те хăвăрт, çине-çине чупа-чупа иртеççĕ... Казак пулемечĕсен вучĕ цепь тăрăх шăхăра-шăхăра иртет. Цепь сиксе тăрсанах—казаксем залппа пеме пуçлаççĕ, кун çумне пулеметсем шатăртаттарса пенĕ сасă хутшăнать... Акă ĕнтĕ боцсем малтанхи армансем хыçнелле чупса иртрĕç; хăшĕсем тĕмескесем хыçне, теприсем хўме çумне çитсе, кĕпĕрлене-кĕпĕрлене тăрса пытанчĕç; пурте станицăна шаларан шала сăрхăнса кĕреççĕ...

Кĕтмен çĕртенех вара сасартăк:

— Юлташсем! Урра!.. Урра!!!—янраса кайрĕ.

Цепь туртăнса илчĕ, чĕтренсе ўкрĕ; винтовкисене штыкĕсемпе малалла туса тытнă боецсем, пĕр харăс çăмăллăн тăрса чупса, юлашки атакăна кĕрсе кайрĕç...

Казак пулемечĕсем урăх пени илтĕнмест ĕнтĕ: пулеметчиксене вырăнтах каса-каса пăрахнă. Станица тăрăх красноармеецсем вăйлă хум пек шавласа сарăлаççĕ. Таçта аякра-аякра кая юлнă юланутсем вĕлтлетсе иртеççĕ...

Хĕрлĕ Çар Сломихино станицине пырса кĕчĕ...

Мĕскĕнĕн, вăтанкаласа тухрĕ Федор Кълычков хăйĕн намăс хӳттинчен. Вăл каллех цепьсем еннелле уттарчĕ. Унта мĕн пулнине пĕлмерĕ вăл, анчах пăшал сасси шăпланнăçемĕн шăпланса пыни, халь вара пĕтĕмпех чарăнса ларни ăна лайăх илтĕнчĕ.

«Пирĕннисем станицăна кĕчĕç курăнать,— тесе шухăшларĕ вăл.— А, тен, урăхла та пулма пултарать, пирĕннисене пур енчен те çавăрса илнĕ пулĕ те, çапăçнăçапăçнă та, парăннă пуль. Тен, казаксем халĕ хăйсен юнлă çĕнтерӳне савăнăçлăн уявлаççĕ пуль. Тепĕр вунă минутран вара кунта та, обозсене тытса илме те сиккипе килсе çитĕç. Обозпа пĕрле вара ăна та, комиссара, тыткăна илĕç». Эх, намăс! Тӳсме çук намăс! Хăй çапла пирвайхи çапăçура кушак пек хăраса ӳкнинчен, вăл хăех хăй умне кăларса лартнă задачăсемпе ĕмĕтсене пурнăçа кĕртейменнинчен, харсăр пулма унăн сывлăш çитейменнинчен вăл çав тери намăсланса вăтанчĕ. Унăн цепьсенчен аякра пулнă чухнехи, çапăçуран, снарядсемпе пульăсенчен аякра тăнă чухнехи харсăрлăхĕ, сатурлăхĕ, паттăрлăхĕ тин çеç ăçта кайса кĕнĕччĕ-ши?

Хăй пысăк айăпа кĕнине ăнланса курнипе пĕтĕмпех пӳлĕнсе, вăл хăй икĕ сехет каярах намăса пĕлмесĕр пăрахса тарнă вырăн еннелле майĕпен юрттарса пычĕ. Хăй нумаях пулмасть обозри лавçăсемпе пĕрле пытанса выртнă тĕмеске тĕлне те çитрĕ,—унта вăл хăйĕнчен çывăхах снаряд ӳкнипе пулса юлнă калама çук пысăк шăтăка тата ун таврашĕнчи юр юнпа хĕрелсе выртнине курчĕ. Мĕнле юн ку? Қамăн-ши вăл? Ун чухне вăл кунта снаряд ӳксе, хăй нумаях пулмасть пĕрле калаçса выртнă виçĕ çынна вĕлерсе пăрахнине пĕлместчĕ-ха.

Тĕмеске хыçĕнче тӳп-тӳрĕ лапам,—çакăнтан иртсе пынă ĕнтĕ пирĕн цепьсем. Анчах ăçта-ха вĕсем халь? Станицăра-ши? Тен, Узень шывĕн леш енче пулĕ? Тен, казаксем вĕсене çавăнта хăваласа янă пуль? Пĕтĕм станица урлах хăваласа каçнă-ши вара?

Çапла вăл хăйĕн шухăшĕн вĕçне-йĕрне тупаймасăр çĕтсе çӳрерĕ.

Çак вăхăтра ун патне пĕр юланутлă çын юрттарса çитрĕ. Ку та «пулеметсем шыранă» курăнать. Темĕскер çинчен тĕлли-паллисĕр пакăлтатнинченех паллă ĕнтĕ вăл. Федор ăна питĕнчен пăхрĕ те, вĕсем иккĕшĕ те пĕр чирпех чирленине ăнланса илчĕ.

— Пирĕннисем ăҫта?— тесе, юри ҫăмăлланса ыйтрĕ лешĕ, сывăхах юрттарса ҫитсен.

— Хам та шыратăп акă,—йĕрĕнчĕклĕн тавăрса каларĕ те Федор, пушшех вăтанчĕ.

Пĕрне-пĕри вĕсем ҫĕр тĕпне анса каясса ҫитиех намăсланса ăнланчĕҫ.

— Тен, вĕсем станицăна та ҫитсе кĕнĕ ĕнтĕ?—тесе, юри анаслакаласа, нимĕн те пулман пек хăтланкаласа ыйтрĕ палламан ҫын.

— Пулĕ те,—килĕшрĕ Федор.

— Ну, мĕн апла — кайăпăр-и вара?—ыйтрĕ лешĕ.

— Ăҫта?

— Станицăна ара.

— Унта казаксем пулсан вара?

— Ҫук пуль... Пирĕннисем кĕнĕ курăнать... Анчах— пĕлме ҫук...

— Ҫапла ҫав... пырса лексен — каҫарас ҫук!

Ҫакнашкал ыйтусене вĕсем пĕрне-пĕри темиҫе хут паркаласа пăхрĕҫ; станицăна ҫитиччен малтан кам унта ларнине никама систермесĕр, асăрханса тĕпчесе пĕлме кирлине астутаркаласа, калаҫса пычĕҫ.

Ҫапла калаҫкаланă май вĕсем майĕпен шав малалла юрттарса пычĕҫ,—хăйсен станицăна ҫитесси ҫур ҫухрăм ҫеҫ юлнине, армансем ҫинчен вĕсене тахҫанах курма пултарнине, халĕ вĕсем пурпĕрех ниҫта та кайса кĕме пултарас ҫуккине, ҫитменнине каялла тарас тесен те вĕсене армансем ҫинчен пурпĕрех пулеметсемпе персе ӳкерессине асăрхаман та вĕсем!

Ҫапла мĕн пулассине пĕлмесĕр чĕтресе пычĕҫ вĕсем, чĕтре-чĕтрех малалла юрттарчĕҫ.

Ял хĕрринчи пӳртсенчен инҫех те мар вĕсем пĕр вунă ҫулхи пĕчĕк ача тăнине курчĕҫ.

— Ачам, эй, ача! Хĕрлĕ Ҫар кĕчĕ-и кунта, ҫук-и?— тесе ыйтрĕҫ вĕсем ачаран.

— Кĕчĕ, кĕчĕ!—савăнăҫлăн янраса илчĕ ача.—Эсир ăҫтан килетĕр-ха тата?

— Чупах, чуп, ачам, выляса ҫӳрех! Вăрҫă ĕҫĕсем ҫинчен пĕлтерме юрамасть,—терĕ Федор ачана, ашшĕ пек ӳкĕтлесе.

Унпа юнашар пыраканĕ, хăрушлăх ҫукки ҫинчен илтсенех, ҫав самантрах таҫта кайса ҫухалчĕ. Клычков хĕрлĕ полксем йышăнса илнĕ станицăна лăпланса, анчах

малтанхи пекех вӑтанса пырса кӗчӗ. Хӑйне хӑй вӑл: ҫапӑҫӑва малтанхи хут кӗрекенсем пурте ман пекех пулас, тесе йӑпаткаласа илчӗ. Ҫайран—иккӗмӗш, виҫҫӗмӗш ҫапӑҫусенче вӑл ун пек пулмӗ, ун чухне вӑл хӑйӗн хастарлӑхне кӑтартӗ-ха, тесе пычӗ.

Федор чӑнахах та йӑнӑшмарӗ: тепӗр ҫултан, пӗр питех те чаплӑ ҫапӑҫури паха ӗҫсемшӗн, ӑна Хӗрлӗ Ялав орденӗ парса наградӑларӗҫ. Пирвайхи ҫапӑҫу уншӑн каяама ҫук йывӑр, асаплӑ, паха урок пулса тӑчӗ. Сломихино станици патӗнчи ҫапӑҫура пулнӑ пекки унӑн кайран пӗтӗм граждан вӑрҫи тӑршшӗнче те пулмарӗ. Анчах курасса унӑн кайран Сломихинӑри ҫапӑҫуран темиҫе хут та кӑткӑсрах, йывӑртарах ӗҫсене те курса пӑхмалла пулчӗ... Ҫак ҫапӑҫусенче вӑл хӑйне мӗн кирлине ҫӗнтерсе илчӗ: харсӑрлӑхне, тулашӗнчен пӑхсан лӑпкӑ пулассине, хӑйне хӑй ҫирӗп тытассине, хуть те хӑш ӗҫе те хӑвӑрт курса, хӑвӑрт ӑнланса илме пӗлессине. Анчах ҫакна вӑл сасартӑках туянса илеймерӗ,—унӑн та малтан пуриншӗн те пӗр пулса тӑракан ҫулпа тухмаллах пулчӗ курӑнать; вӑл ҫул—ним тума пӗлмесӗр хыпса ӳкнинчен пуҫласа, кайран пысӑк ӗҫсем тӑвасси патне илсе ҫитерекен ҫул пулса тӑрать.

* * *

Хирӗҫ тӗл пулакансенчен: штаб ӑҫта чарӑннӑ, тесе ыйтса тӗпченӗ чухне, Ҫлычков ӑна хирӗҫ пурте темӗскерле васкаса, кӑмӑлсӑр, таҫта хыпаланнӑ пек пулса ответленине асӑрхарӗ. Ҫу вӑхӑтра пӗтӗм станица кутӑн-пуҫӑн ҫаврӑнса тӑчӗ, ҫынсем пурте хӗрсе кайса, вӗҫӗмсӗр тем ҫуйӑхса ҫӳрерӗҫ. Ҫазаксене станицӑран хӑваласа кӑларнӑ; вӗсене йӗрлесе пыма хушнӑ чаҫсем вӗсене халӗ те таҫта хӑваласа пыраҫҫӗ-ха. Апла пулсан, ҫапла хӗрсе кайсах ҫуйӑхса ҫӳренин сӑлтавӗ хӑрушлӑх ҫывӑххинче те мар, ҫапӑҫӑва тухса кайма хатӗрленнинче те мар. Мӗнре-ха ҫапах та?

Вӑл никама систермесӗрех штаб патне—Ҫарпов купецӑн пулнӑ пысӑк ҫурчӗ тӗлне ҫитсе тӑчӗ. Ҫунта пурте пухӑннӑ: Чапаев та, унӑн ҫыннисем те, Ежиков та[1]. Федор пуринчен ытларах Ежикова астуса юлчӗ. Вӑл Федор ӑҫта ҫапкаланса ҫӳренине ӑнланчӗ курӑнать те, ҫапкаланса ҫӳрекене ҫапла кӑшт кулкаласа:

---

[1] Бригада политотделӗн начальникӗ. **(Ред.)**

— Кайрисене хистесе ҫӳрерӗр-им... Клычков юлташ?—тесе кӗтсе илчӗ. Ылтӑн тӗслӗ куҫӗсем вара хӑйӗн кулаҫҫӗ те кулаҫҫӗ—мӑшкӑллаҫҫӗ.

— Ҫапла ҫав... Кӑшт чарӑнса тӑмалла пулчӗ,—тесе, мӑкӑртаткаласа илчӗ Федор; унтан Чапаев еннелле ҫаврӑнчӗ те:

— Ҫар штабне пӗлтертӗр-и?—тесе ыйтрӗ.

— Акӑ халь пӗлтерме хатӗрленетпӗр,—тавӑрчӗ Чапаев.—Уральскран лайӑх хыпарсем ҫитрӗҫ,—унта малалла вӑйлӑн ҫӗнтерсе пыраҫҫӗ, Лбищенск енне каймалли ҫула тасатаҫҫӗ.

— Питех те аванччӗ... Пирӗн кунта тата мӗн тумалла пулать-ха, леш Сахарная станици тӗлӗшпе ара?

Ыйтрӗ те ҫапла, именсе кайрӗ: сӑмахӗсем ӑна ытлашши павраса ҫеҫ каланӑн туйӑнса кайрӗҫ; хӑйне хӑй те вӑл халь кунта ытлашши ҫын пекех туйӑна пуҫларӗ...

«Вӗсем пурте кунта вилӗмрен хӑрамасӑр ҫапӑҫса килнӗ; эпӗ вара, кур акӑ—икӗ сехетрен тин килсе ҫитрӗм!»—тесе шухӑшласа илчӗ вӑл.

Намӑсӗ чӗрине ним канӑҫсӑр ҫурса тӑчӗ, пичӗ армути ҫӑнӑхӗ сапнӑ пек ҫунса тӑчӗ.

Штаб вырнаҫнӑ ҫурт патне хресчен хӗрарӑмӗсем пӗрин хыҫҫӑн тепри пыра пуҫларӗҫ. Аллисемпе хӑлаҫланкаласа, вӗсем, вестовойсемпе часовойсене тем ҫинчен ӳкӗтлесе, штаба кӗме тӑрӑшаҫҫӗ. Вӗсене штаба кӗртес суккине кулкаласа тӑракан красноармеецсем ҫине чӳречерен пӑхсанах пӗлме пулать. Федор тула тухса, вӗсем мӗн ӗҫпе килнине ыйтса пӗлчӗ; вӗсем хӑйсен ҫӗнӗ хӑнисем ҫине,—имӗш, вӗсен япалисене туртса илекен красноармеецсем ҫине жалоба пама килнӗ-мӗн; Федор ҫавӑнтах вӗсемпе пӗрле тухса кайрӗ те, пӑхса ҫӳрерӗ, тӗпчесе пӗлчӗ, ҫырса хучӗ; унтан ҫухалнӑ япаласене шыраса тупса, каялла тавӑрса пама пулчӗ.

Федор темиҫе хут нимӗн шухӑшсӑр, нимӗн тӗлсӗр, усӑ курас темесӗр ҫаратнӑ фактсене тӗл пулчӗ. Пырать, тейӗпӗр, красноармеец, аллине хӑй темӗн пысӑкӑш ҫыхӑ ҫавӑрса тытнӑ.

— Ку мӗн санӑн? Кӑтарт-ха,—тетӗн ӑна.

Вӑл хӑйӗн ҫыххине, сана хирӗҫ пӗр сӑмах чӗнмесӗр, лӑпкӑнах юр ҫине сарса пӑрахать те, унтан тӗрлӗ ача кӗпи, ача кипкисем, тӗрлӗрен теттесем, ҫӗтӗк-ҫатӑк турта-турта кӑларать...

— Ку мĕн тума кирлĕ сана, тусăм?—тесе ыйтатăн.

Нимĕн те шарламасть. Нимĕн тума та кирлĕ маррине хăй те лайăххах курать.

— Мĕн тума илтĕн ара, тетĕп?

— А эпир çапла, кама мĕн тĕл пулнă: илтĕмĕр те утрăмăр.

— Мĕн тума илтĕр-ха, çапах та?

— Эпĕ ăçтан пĕлем?

— А ман патăма акă хĕрарăм килсеччĕ; хăйĕн япалисене вăл макăра-макăра шырать. Ку çавăн япалисемех пулмалла...

— Тен, çавăнах та пулĕ... Ан тив илтĕр, — килĕшет каччă пĕр хĕрхенмесĕрех.

— «Илтĕр» мар, леçсе парас пулать,—тесе, юлташла, çиленмесĕр ăнлантарса парать ăна Клычков.

— Леçсе пама та пулать,—килĕшет лешĕ.—Паллах, леçсе парас пулать,—мĕн çапкалантарса çӳрес ăна, хĕрарăма? Тĕлне кăтартса пар эсĕ, эпĕ хамах леçсе парăп,— тет.

Федор вăл ку çыхха ăçтан йăтса тухнине ыйтса пĕлчĕ те унпа пĕрле утрĕ. Красноармеец çыххине хуçи патне йăтса çитерчĕ те тимĕр кровать çине хучĕ; унтан пĕр вырăнта кăшт вăтаннă пек туртăнкаласа тăчĕ-тăчĕ те, алăка хăлăпĕнчен тытса уçса, пĕр шарламасăрах тухса кайрĕ.

Федор теприне тĕл пулчĕ. Ку пуçне çатанран авса тунă ача урапи ăшне чикнĕ, — те кăмакана пăрахса çунтарма, те ахаль çеç выляса айкашма çĕклесе пырать. Ун пеккисем те пулкалатчĕç,—тĕрлĕрен выляса айкашнă.

Ун пек чухне ярса илеççĕ, сăмахран, пĕр-пĕр лапсăрkка Михрюткăна та, пĕр аршăн хулăнăш пылчăкланса ларнă темĕн пысăкăш атти-мĕнĕпех, мĕнпур паттăр кĕлеткипех, çур пăт йывăрăш кăтра çӳçĕ-мĕнĕпех çак пĕчĕкçеççĕ ача урапи ăшне кĕртсе вырттарса, сĕтĕрсе çӳреççĕ. Çухăрашать, тапкалашать вара Михрютка, хăйĕн хăрушă сассипе пĕтĕм иртен-çӳрен халăхăн сехрине хăпартать. Станицăра-и вăл, ялта-и, хулара-и—вăйă пур çĕрте те пĕрех. Темĕнле çухăрашсан та, ашкăнса илеççĕ-илеççех; пысăккисене пулăшма пур енчен те ачасем чупса пухăнаççĕ; тытса тăраççĕ те ăна, ача урапи ăшне çыхса пăрахма пулăшаççĕ. Çыхса пăрахаççĕ те вара, аллисене кантрасемпе тăлласа лартаççĕ; унтан пĕр çӳлĕрех

сăрт тупаççĕ те, ăна çав ту çинчен... пĕчĕк урапапа... кутăн-пуçăн кустарса яраççĕ!

Ха-ха-ха! Çитрĕ вара маттурсене кулма!

Кунта та ĕç çаплах вĕçленчĕ: ача урапине красноармеец Клычкова пĕр шеллемесĕрех тавăрса пачĕ, мĕншĕн тесен вăл ăна пачах та кирлĕ пулман, хăйĕн илемĕпе çеç илĕртнĕ...

Нумайăшĕнне япалисене шыраса тупса каялла тавăрса пачĕç; станица лăпланчĕ, жалобăсем пама пăрахрĕç. Чапаев çийĕнчех командирсене пухма хушрĕ; пухăнсан вара, пурин япалине те тĕплĕн ухтарса пăхма хушрĕ; камра та пулин пĕр вăрланă япала та пулин тупсан, ăна çавăнтах тытса хупма приказ пачĕ. Мĕн тупнине йăлтах пĕр çĕре пухма хушрĕ; комисси уйăрса, камăнне мĕн вăрланине тавăрса памалла турĕ; анчах... чухăнсене çеç пĕр «буржуя» та пĕр пуслăх япалине те тавăрса пама хушмарĕ. Вĕсен пурлăхĕ вара полкри кассăна каймалла пулчĕ; вăл кассăна халех, вăхăт ирттермесĕр тума хушрĕ. Япаласене хăйсемех леçсе паракансене тĕкĕнме, тытса хупма хушмарĕ... Кунсăр пуçне тата тепĕр икĕ сехетрен площаде пур красноармеецсене те пухма хушрĕ; унта «Чапаев хăй» сăмах тухса калать, тесе пĕлтерме каларĕ;—çаплах калама хушрĕ те: «Чапаев хăй тухса калать, тесе калăр!» терĕ.

Икĕ сехет иртсен, Петька Исаев Чапаева, красноармеецсем площаде пухăнса, ăна кĕтсе тăни çинчен килсе пĕлтерчĕ. Çав вăхăтрах штаба пĕр полк командирĕ пырса кĕчĕ те, пурте пĕрле площаделле тухса утрĕç. Çул çинче командир Чапаева красноармеецсен шухăш-кăмăлĕ çинчен каласа пĕлтерчĕ.

Чапаев сăмах каланине Федор пирвайхи хут итлерĕ. Кунашкал демагогла ораторсен сăмахне вăл тахçантанпах илтмен ĕнтĕ. Рабочисен пухăвĕнче Чапаев сăмахĕ пачах та юрăхсăр, вăйсăр пулнă пулĕччĕ, унăн калаçас мелĕнчен унта сахалах мар кулнă та пулĕччĕç. Анчах кунта,—кунта урăхла. Кунта унăн сăмахне чĕререн хавхаланса итлерĕç. Хăй сăмахне вăл, малтан урăх нимĕн çинчен те ăнлантарса тăмасăрах, таçтан аякран çаврăнкаласа çÿремесĕрех, тÿрех боецсене хăй мĕн сăлтавпа пуçтарни çинчен, çаратусем çинчен каланипе тапратса ячĕ. Анчах малалла вара, сăмах майĕпе, вăл темĕн чухлĕ кирлĕ мар вак-тĕвек ыйтăва та çаклатса илчĕ, пуçне

мĕн пырса кĕнине, мĕнле ыйтăва хăш енĕпе те пулин «ĕç çумне çыпăçтарма» май пуррине пĕрне те хăвармарĕ. Çавăнпа ун сăмахĕнче нимĕнле йĕрке те пулмарĕ, пĕр тĕп ыйту çинчен калаçас вырăнне вăл мĕн килчĕ, ун çинчен калаçрĕ. Çапах та, сăмахĕнче темĕн тĕрлĕ çитменлĕхсем пулчĕç пулин те, ăна калама çук тимлĕн итлесе тăчĕç.

Итлесе тăчĕç анчах мар-ха, унăн сăмахĕсем калама çук витĕмлĕ пулчĕç, итлесе тăракансен чĕрине вĕсем çивĕччĕн тăрăнса, питĕ тарăн кĕрсе вырнаçрĕç. Сăмахне вăл питĕ ĕненсе, хавасланса, темле ачалла тасалăхпа каларĕ.

Итлесе тăратăр та эсир çак çыхăнусăр, вырăнĕ-вырăнĕпе ăнсăртран тухса кайнă сăмаха, вăл пустуй павраса, вырăнсăр каппайланса каланă сăмах маррине уççăнах туятăр. Ку вăл — ырă чĕреллĕ çын хăй çинчен çулăмлăн, тӳррĕн каласа кăтартни, вăл—кӳрентерсе, тарăхтарса çитернĕ çын хăйне итлекенсене кĕрешĕве тухма йăхăрни, пĕтĕм чĕререн ĕнентерсе чĕнни, тата та тĕрĕсрех каласан, приказ пани пулчĕ: чăнлăхшăн вăл чĕнме анчах мар, хушма та пултаратчĕ, приказ пама та пĕлетчĕ!

«Эпĕ сире,—терĕ вăл,—çак çаратас йăлана пуçĕпех пĕтерме хушатăп. Киревсĕр çынсем анчах çаратаççĕ. Ăнлантăр-и?»

Çапла хушнине итлесе тăракан нумай пин çын савăнăçлăн кĕрлесе кайрĕ; чĕре тĕпĕнченех тухакан савăнăçлă сасăпа саламласа, тав туса, хăлхана çурас пек кăшкăрса тăчĕç. Пурте тем пекех хавасланса кайрĕç. Красноармеецсем хăйсен çулпуçĕ умĕнче: урăх нихçан та никама та çаратма ирĕк парас çук тесе, айăплисене хамăрах вырăнтах персе пăрахатпăр тесе тупа турĕç; хăйсем тупа туса каланине вĕсем çирĕппĕн ĕненсе тăчĕç.

Чапаевăн хăш-пĕр сăмахĕсем халĕ те асра тăраççĕ:

— Юлташсем,—тесе кĕрлесе тăчĕ унăн тимĕр пек янракан сасси площадьре.—Хальхи киревсĕрлĕхсене эпĕ текех чăтма пултараймастăп! Кам малашне вăрă ĕçĕпе çакланать, ăна эпĕ персе пăрахмалла тăватăп. Хамах, акă çак алăпах персе пăрахатăп унашкал киревсĕре!— терĕ те, вăл сылтăм аллине сывлăшра вăйлăн сулкаласа кăтартрĕ.

— Эпĕ лексессĕн — мана пер, ан хĕрхен Чапаева,— терĕ.—Эпĕ командир сирĕншĕн, анчах эпĕ стройра çеç командир. Ирĕкре эпĕ сирĕн юлташăр. Ман патăма эсĕ

çурçĕрте те, çурçĕр иртсен те пыма пултаратăн. Кирлĕ пулсан — вăрат. Эпĕ яланах санпа; санпа калаçса ларăп эпĕ, мĕн кирлине каласа парăп... Апат çиетĕп пулсан— манпа çиме лар, чей ĕçетĕп пулсан — чей ĕçме те лар. Акă епле командир эпĕ!

Вăл çапла ачалла пĕр вăтанмасăр мухтанса калаçни Федора иментерсе ячĕ. Чапаев вара, пĕр минут тăхтаса тăнă хыççăн, малалла калаçма тытăнчĕ.

— Эпĕ ку пурнăçа хăнăхса çитнĕ, юлташсем,—терĕ.— Эпĕ «академисенче» вĕренмен, вĕренсе тухман вĕсенчен, çапах та акă вунтăватă полк формировать турăм, вĕсенче пуринче те командир пулса ĕçлерĕм. Унта та пуринче те манăн çирĕп йĕрке пулнă, çаратни-таврашĕ пĕртте пулман, чиркӳрен пуп тумтирĕсене вăрлани те пулман... Мĕн эсĕ — пуп-и мĕн? Тăхăнассу пур-и мĕн ăна? Мĕн тума вăрларăн?

Чапаев, çак нумай пинлĕ масса хушшинче хăй халь каланă тăшмана палласа илес тенĕ пек, малтан пĕр еннелле, унтан тепĕр еннелле хаяррăн çаврăнса пăхрĕ, юлашкинчен хыçалалла та авăнсах пăхса илчĕ.

— Пуп, паллах, сӳеçтерет вăл,—тесе хучĕ Чапаев çирĕп шухăшне.—Пурăнасса та вăл ултавпах пурăнать, унсăрăн мĕнле пултăр-ха вăл, улталамасть пулсан?.. Аш тавраш ан çи эсĕ, типĕ тыт, тет, хăй вара çу çинче ăшаланă хура тĕшĕрет кăна, хурăн шăммисем çеç шатăртатса тăраççĕ. Çын япалине ан тĕкĕн, тет, хăй вара яланах вăрлать,—пупсем çавăнпа тарăхтарса çитерчĕç те ĕнтĕ пире... Тĕрĕс вăл, анчах çапах та ют тĕне ан тĕкĕн эсĕ, вăл кансĕрлемест сана. Тĕрĕс калатăп-и эпĕ, юлташсем?

Ку уншăн питех те меллĕ вырăн пулчĕ. Çакна Чапаев лайăх пĕлсе тăрать, çавăнпа хăйĕн чее ыйтуне вăл шăпах çак тĕлте кăларса тăратрĕ. Хресчентен тухнă красноармеецсем, Чапаев сăмахĕпе хĕрсе кайнăскерсем, нумайччен пăвăннă пек пĕр шарламасăр тăнă хыççăн, трухах вара тăвăл пек кĕрлесе кайрĕç.

Çакна кĕтсе тăчĕ те Чапаев. Итлесе тăракансен кăмăлĕсем пĕтĕмĕшпех ун енче: малалла мĕн каласан та,— сăмах ăнăçлă пуласси уççăн паллă.

— Эсĕ акă çын килĕнчен япаласем сĕтĕрсе тухатăн, анчах вăл унсăрăн та санăн вĕт... Вăрçă пĕтсен— ăçта кайтăр-ха вăл, санăн пулмасăр? Пурте санăн. Туртса илетпĕр акă буржуйран, калăпăр, çĕр ĕне — ăна çĕр хрес-

чене пĕрер ĕне валеçсе паратпăр. Туртса илетпĕр тумтир — ăна та пĕр тан валеçсе паратпăр... Тĕрĕс калатăп-и?! — тесе ыйтрĕ вăл.

— Тĕрĕс... тĕрĕс... тĕрĕс... — тенĕ сасăсем кĕрлесе кайрĕç ăна хирĕç.

Йĕри-таврах хаваслăхпа тулнă сăн-пит çиçсе тăрать, савăнăçпа хĕрнĕ пит-куç выляса çунать. Красноармеецсем пĕр-пĕринпе кĕскен калаçкаласа пуçĕсене сĕлте-сĕлте илнипе, шӳт тукаласа кулнипе, савăнăçлăн пăхкаланипе хăйсем Чапаевпа килĕшнине, унăн сăмахне ырланине палăртрĕç... Чапаев çав тери пысăк массăн ушкăнлă чĕрине хăй аллинче тытса тăрса, шăлтах хăй пек шухăшлаттарчĕ, хăйĕнпе пĕр пек хĕрӳ сисĕмпе пурăнтарчĕ.

— Ан вăрла! — кăшкăрса ячĕ вăл, сулахай аллипе хыттăн сулса. Вара кирлĕ сăмахне тупаймасăр, минутлăха чарăнса тăчĕ те: — Ан вăрла, тетĕп; ун вырăнне буржуйран мĕн илнине пĕтĕмпех пĕр çĕре пух та, хăвăн командирна пар... Командир ăна сутса, укçине полк кассине хурĕ... Сана амантас-тăвас пулсан, вара эсĕ çак кассăран пĕрер çĕр тенкĕ илĕн... Вĕлерес-тăвас пулсан сана — çавăнтах санăн пĕтĕм çемйӳне тепĕр çĕр тенкĕ! Ну епле? Тĕрĕс калатăп-и, çук-и?

Кунта вара темĕскерле, шухăшласа та илмелле мар япала пулса тăчĕ — савăнăç урса кайнă чухнехи пек хумханса çĕкленчĕ, кăшкăрашнă сасă чĕрене çурса ахăрнă чухнехи пек кĕрлесе янра пуçларĕ...

— Пĕтĕмпех каялла панă пултăр, — терĕ Чапаев, халăх хумханма чарăнарах парсан, — мĕн илнине пĕр çип хăвармиччен каялла тавăрса панă пултăр. Кайран унта вĕçне-хĕрне тупăпăр — кама мĕн памаллине, камра мĕн хăвармаллине пĕлĕпĕр, сирех пулăшу пулĕ. Ăнлантăр-и? Чапаев шӳт туса калаçма юратмасть: итлетĕр пулсан — эпĕ сире юлташ, дисциплина çук пулсан — ман çине ан кӳренĕр!

Вăл хăйĕн сăмахне каласа пĕтерсен, калама çук шавлăн алă çупса ячĕç, нумайччен пĕр чарăнмасăр «урра» кăшкăрса тăчĕç.

Чапаев çĕре ансанах, ещĕк çине пĕр красноармеец сиксе хăпарчĕ те, çав самантрах шинельне сирсе ярса, гимнастеркине çĕклерĕ, унтан шăлаварне туртса çыхнă казаксен кĕмĕл пиçиххине йăпăр-япăр салтса илчĕ.

— Акă, юлташсем!—тесе кăшкăрса ячĕ йĕкĕт, пиçиххине пуç тăрринче силлесе.—Çичĕ уйăх çыхса çӳрерĕм... Ман алла вăл çапăçура лекрĕ... хам ăна вĕлертĕм, хам ăна вилнĕ казак пилĕкĕнчен салтса илтĕм... Çапах тапаратăп. Кирлĕ мар... мĕне кирлĕ вăл мана? Ăн тив пурне те пулăшма пĕр çĕре кайтăр. Пирĕн паттăр командир Чапаев юлташ сывă пултăр!—тесе пĕтерчĕ.

Халăх пĕтĕм чун хавалĕпе хаваслăн ырласа, урăм-сурăм хумханса кайрĕ. Чапаев сăмахĕ пурин чĕрине те хумхатса тивнине Федор уççăнах курчĕ, çакăншăн вăл тем териех савăнчĕ; анчах çавăнпа пĕрлех вăл асăннă «çĕр ĕне» пирки тата «пĕр тан» валеççе памалла пулас тумтир пирки тек пăшăрханса тăчĕ; çийĕнчен тата полкра комиссисем тăвасси пирки паврани те ăна килĕшсех каймарĕ.

— Чапаев юлташ,—терĕ вăл,—манăн халех красноармеецсемпе паллашас килет; хальхи лару-тăру çинчен те вĕсене кĕскен каласа кăтартас килет. Анчах эсир вĕсене малтан хăвăр: халĕ ĕнтĕ комиссар, Клычков юлташ, сăмах калать, тесе пĕлтерĕр-ха, — терĕ.

Чапаев çавăнтах ещĕк çине сиксе улăхрĕ те Федор сăмах каласси çинчен пĕлтерчĕ; унтан вара Федор ытти фронтсенче — Колчака, Деникина тата ытти шурă генералсене те хирĕç кĕрешни çинчен калама тытăнчĕ. Вăл кĕскен пĕтĕм тĕнчери лару-тăру çинчен каласа кăтартрĕ, икĕ сăмахпа патшалăхăн экономикăллă пурнăçĕ çинчен каласа пачĕ. Тĕрлĕ тĕлте вăл, сăмах майĕпе ăнлантарса каланă пек, Чапаев асăннă примерсене илсе кăтартрĕ; вĕсене вăл, тӳрех хирĕçлемесĕр, хăй шухăшланă пек «ăнлантарса» пачĕ те, Чапаев шухăшĕнчен çăмăл шăршă çеç тăрса юлчĕ...

Чапаев шухăшĕсене çĕмĕрме Федор пит асăрханса пычĕ; ку ĕçре вăл шав çакăн пек сăмах çаврăнăшĕсемпе усă курчĕ: «Чапаев юлташăн лайăх, тĕрĕс шухăшĕсене, вăл пирĕн пурте пĕрле усă курмалли пурлăх çинчен каланă сăмахĕсене, пирĕн тăшмансем, паллах, эпир пур япалана та йăтса тухса, кама мĕн кирлĕ, кам мĕнле шухăшланă — çапла валеççе паратпăр, тесе, пăсса кăтартма пултараççĕ... Анчах Чапаев юлташпа эпир ун пек шухăшламастпăр; эсир те, паллах, ун пек шухăшламастăр», тесе калаçрĕ Федор. Çапла вара вăл ерипенех çав Чапаев сĕннĕ «пĕр тан валеçĕве» ураран ӳкерсе, пут-

лантарса пычĕ. Мĕнле пулсан та, Чапаев примерне, вăл: «Туртса илнĕ çĕр ĕнене эпир çĕр хресчене, кашнине пĕрер ĕне валеçсе парăпăр...» тенине, итлесе тăракансем çапла «пĕр тан валеçӳ» пек ăнланма пултарнă. Çавăнпа та çакнашкал шухăшсене çийĕнчех ăнлантарса памасăр хăварма юрамарĕ.

Чапаев питĕ кĕске вăхăт хушши те пулин анархистсен ушкăнĕнче пулни, вăл хресченсем хушшинчен тухни, тата унăн харсăр, чăтăмсăр, плансăр, дисциплинăсăр шухăш-кăмăлĕ,—çакă пурте ăна анархистла май шухăшлаттаратчĕç, ăна партизанла ĕçсем еннелле тĕртетчĕç.

Чăн та çав, аслă ĕç вăл — сăмах: çакăн хыççăн çаратас-тăвасси те, йĕркесĕрлĕх-мĕнĕ те, пусмăрлас таврашĕ те станицăра урăх пулмарĕ.

* * *

Ķаçхи тĕттĕм пĕтĕм таврана хура пĕлĕт пекех хупăрласа илнĕ. Иртнĕ кунхи йывăр ĕçсемпе походра ĕшеннĕ командирсем пурте çывăраççĕ. Федор та çывăрса кайрĕ. Чапаев ăна часах приказ çине алă пусма вăратрĕ. Федор вăранчĕ те, алă пуссан, каллех çывăрса кайрĕ. Ķаллех вăратрĕ ăна Чапаев. Çапла çĕр каçиччен, ирччен, пĕр çывăрмасăр ларса ирттерчĕ çак тĕлĕнмелле çын. Федор вăранса пуçне çĕклесе пăхать те, Чапаев пĕчченех ларнине курать; пĕр пĕчĕк лампа çеç çунса ларать ун умĕнче. Чапаев картă çине пĕшкĕнсе тăрăннă та, аллинче çав хăй юратнă циркульнех вылянтарса ларать: виçет-виçет те — çырса хурать, унтан каллех виçет те каллех çырса хурать. Ирхи автансем авăтиччен вăл, командирсем харлаттарса çывăрнине итлесе, картă тăрăх виçкелесе ларчĕ. Алăк патĕнче, винтовкине икĕ аллипе те пăчăртаса тытса, çамкипе хура штык хĕррисене сăха-сăха илсе, часовой тĕлĕрсе тăчĕ.

* * *

Сломихинăра тăватă кун тăчĕç. Фрунзе тӳрĕ провод тăрăх бригадăна Оренбург фронтне куçарасси çинчен пĕлтерчĕ. Лару-тăру часах çак приказа та улăштарттарчĕ: бригадăна Оренбург фронтне мар, Бузулук районне куçарчĕç. Тĕплĕн калаçса каталма Фрунзе Чапаевпа Ķлычкова Самарăна хăй патне пыма чĕнчĕ.

Çула тухса кайма тăватă минут хушшинчех пуçтарăнса çитрĕç. Ķунта урăх таврăнас çуккине вĕсем лайăх

пӗлеççӗ. Çуна çине хӑйсен çул çӳремелли чемоданӗсене кӑларса пӑрахрӗç. Çивӗч тройка пӗртте вырӑнта тӑмасть,—лашисене те çав—чи лайӑххисене суйласа илнӗ!

Аверька, çеçенхир тӑрӑх тухса вӗçтерме хатӗрленсе, ларчӑк çине хӑпарса ларнӑ та ӗнтӗ; тилхеписене çирӗп карӑнтарса тытнӑ! Крыльца çине Потапов, Чеков, Илья Теткин, Чапаевӑн пур йӗкӗчӗсем те ӑсатма тухса тӑнӑ.

— Пирӗн те кунтан часрах каясчӗ, Чапаев юлташ!— теççӗ вӗсем хӗрӗнсе.

— Вырӑна çитсенех чӗнетӗп!—терӗ Чапаев.

Тройка тапранса кайрӗ...

Çуна хыçӗнче тусан пек вӗт юр çеç çӗкленсе вӗçрӗ, хӑлхана юлашки хут кӑшкӑрса ӑсатнӑ сасӑсем çитсе илтӗнчӗç. Крыльца çинче тӑрса юлакансен куçӗсем уйрӑлса кайнӑ чухнехи хуйхӑпа тулса салхуланчӗç. Такӑшӗ çухӑрса ячӗ, такӑшӗ пушӑпа хӑмсарса илчӗ, такӑшӗ çӗлӗкне пӳрт тӑрри çӳлӗшех ывӑтрӗ... Шӑлса тӑракан юрпа тӗксӗм салхулӑх ӑшне путса, курӑнми пулса юлчӗ крыльца...

Çеçенхир те çеçенхир! Қаçхи хӗрлӗ пӗлӗтсем, мамӑк пек çемçе шурӑ сӑпкасем!

Çеçенхир тӑрӑх сивӗ çил, такам ассӑн сывланӑ пек, кассӑн-кассӑн вӗрет; вӑл шурӑ юрсем тӑрӑх, юрлӑ тӳремлӗхсем тӑрӑх çаврӑнса çӳрет-çӳрет те, март уйӑхӗнчи ирхине таçта çутӑ кӑвак инçетех кайса çухалать!

* * *

Сломихинӑран каялла Александров-Гая каякан çулпа, тин çеç тенӗ пек полксемпе пӗрле утса иртнӗ çулпа таврӑнчӗç... Пӗр шарламасӑр ларса пычӗç. Çеçенхир вӑл çунапа ларса пыракана, сӑпка пекех сиктерсе, ачашласа тутлӑ ыйха путарать.

Акӑ Қазачья Таловкӑна та çитрӗç. Ну, нумай пулать-и-ха ӗнтӗ вӗсем кунта çапӑçӑва хатӗрленни, картӑ тӑрӑх циркульпе виççе çӳрени, канашлура казаксене, мӑйӑра персе салатнӑ пекех, çапса салатасси çинчен шухӑшласа ларни? Нумай пулать-и кунта юрласа шавлани, савӑнӑçлӑн калаçни, кайран вара — красноармеецсем ывӑннипе харлаттарсах çывӑрса кайни...

Федор вӑл каçхине вут хурса çунтаракансене аса илчӗ; вут умӗнчи леш-хайхи хӗрлӗ сухаллӑ мужикпе кӑтра çӳçлӗ çӳлӗ каччӑна, вӑл кӑмрӑк çинче паранкӑ пӗ-

çерсе, ăна штыкпа тире-тире çинине те манмарĕ. Аçта-ши вĕсем халь? Чĕрĕ юлнă-ши вĕсем?

Çапла Александров-Гая çитиччченех — вăл иртни çинчен аса иле-иле, хăйне хăй мĕн-мĕн туни çинчен ответ парса шухăшласа пычĕ.

Алгайра нумай тăмарĕç: кăштах канса апат çикелерĕç те, малалла тухса кайрĕç.

Çул çинче тройкăсене улăштара-улăштара, çеçенхир урлă Самарăна çитиччченех вĕçтерсе тухрĕç.

---

## VI. ÇУЛ ÇИНЧЕ

Чапаев вăл — унпа çăмăллăнах туслашма май пур çынччĕ. Анчах пĕр-пĕринчен çавăн пекех хăвăрт сивĕнсе, уйрăлса кайма та пулатчĕ унпа. Эх, шавласа каятчĕ вара вăл хăш-пĕр чухне, çиленнипе темĕн те пĕр каласа тултаратчĕ, нимĕн те хĕрхенсе-туса тăмастчĕ, веçех арқатса тăкатчĕ, татсах пăрахатчĕ; урса кайнипе, çиллине шăнараймасăр, суккăрланса, хăй çывăхĕнчине те курми пулатчĕ. Тепĕр минутранах çилли иртсе каятчĕ те вара — пăшăрханса ÿкĕне пуçлатчĕ. Мĕн туса тăкнине йывăррăн астăва-астăва, ăнланса илме тытăнатчĕ; хăйĕн шухăшĕпе ĕçĕнче чи кирлине, пахине тĕрлĕ çÿп-çапран, тĕрлĕ пиçен-вĕлтĕрентен уйăрса илме тăрăшатчĕ... Ăнланса илсен вара — килĕшес çул çине те тăма хатĕрччĕ. Анчах яланах мар, пуринпе те мар: хăйĕн килĕшес к ă м ă л ĕ к и л с е н анчах тата хăй кама хисеплет, кама сума сăвать, çавăнпа анчах килĕшетчĕ... Унашкал самантсенче ăна хăюллăнах, çине тăрсах хăйĕн шухăшĕсене уççăн каласа партарма тăрăшмаллаччĕ. Чапаев вара часах вăлтана лекме те пултаратчĕ; тепĕр чухне вăл хăйĕн шухăшĕсене чĕри курăнмаллах уçса кăтартма хатĕрччĕ.

Вăл питех те шавлама юратакан, кăшкăракан çынччĕ, тепĕр чухне çав тери хаярччĕ: çынсем унпа калаçма та хăраса тăратчĕç. «Тĕке аркатнă пекех аркатса тăкĕ е тата хĕрсе кайнипе янлаттарса та ярĕ!» тетчĕç.

Палламан çыншăн тата хăравçăшăн — вăл чăнахах та çаплаччĕ. Эсĕ мĕн чухлĕ хăравçăрах, çавăн чухлĕ хаярланса каятчĕ Чапаевăн чĕри те: юратмастчĕ вăл хăравçă çынна. Аякран пăхсан — тискер кайăкран та тискертерех, темеллеччĕ; анчах çывăхарах пырса пăхатăн та — вăл çав тери çывăх, лайăх юлташ иккенне куратăн; чĕри унăн кашни çыншăнах уçăччĕ, чĕри кашни çыншăнах савăнăç-

лӑ сиксе тапатчӗ. Ҫывӑхарах пырса пӑхсан — ҫапла хаяррӑн ятлаҫнӑ хыҫҫӑн унӑн нимӗнле ҫилӗ те юлманнине, хӗвӗнче вӑл пӗчӗк чул катӑкӗ те чиксе ҫӳременнине ҫӑмӑлах ӑнланса илетӗн,—ҫиллине вӑл ятласа тӑкнипе пӗр харӑс пӗтӗмпех, нимӗн юлмиччenex пӗтеретчӗ. Ҫаласҫа тӑранатӑн та вара унпа,—килӗшетӗн-и эсӗ унпа, килӗшместӗн-и,—пурӗпӗр эсӗ ыйтӑва тӗпне ҫитиччен калаҫса пӗтернине уҫҫӑн пӗлетӗн. Чапаевпа калаҫнӑ хыҫҫӑн туса пӗтермен ӗҫ е татса ҫитермен ыйту нихҫан та юлмастчӗ — вӑл пур ӗҫе те вӗҫне ҫитиех туса пӗтеретчӗ.

Ҫаларӗ-тӗк — ҫитрӗ вара!

Хӑйӗн пуҫне Чапай мӑнкӑмӑллӑн ҫӳлӗ тытса ҫӳретчӗ,—ун ӗҫӗсем ҫинчен ҫеҫенхир тӑрӑх ахальтен мар пысӑк чап кӗрлесе сарӑлнӑччӗ. Ҫак пысӑк чап Чапай куҫӗсене хупласа лартнӑччӗ, ӑна вӑл хӑйне хӑй ҫӗнтерейми паттӑр пек туса кӑтартатчӗ, чаплӑ пулас шухӑш пуҫне ҫавӑратчӗ.

Ун ҫывӑхӗнчи ҫынсем унӑн чаплӑ ӗҫӗсем ҫинчен куҫ умӗнче те, куҫ хыҫӗнче те пуринчен ытла кӗрлетчӗҫ. Ҫавсем сарса тӑратчӗҫ ун ҫинчен тӗрлӗрен пулнӑ-пулман халлап-юмахсене; вӗсене ҫутӑ сӑрӑсемпе илемлетсе сӑрлатчӗҫ; ҫавсем пуринчен малтан юрлатчӗҫ Чапаева мухтакан хаваслӑ гимнсене, ӑна тутлӑ шӑршӑллӑ фимиамсемпе тӗтӗретчӗҫ, унӑн, Чапаевӑн, никам ҫӗнтерейми чаплӑ ӗҫӗсем ҫинчен кала-кала кӑтартатчӗҫ. Чапай лайӑх суйма пӗлекенсене, хӑйне куҫ умӗнчех мухтакансене — юратсах итлетчӗ, хӑйма ҫинӗ кушак пек, тутисене ҫуласа савӑнатчӗ; суеҫтерекенсене ырласа, вӑл суйни ҫумне хӑй те кӑштах хушма пултаратчӗ. Анчах пустуй павракана е хӑйне юрама тӑрӑшакана, путлӗн суйма та пӗлмен этеме — хӑй патӗнчен самантрах хӑваласа яратчӗ. Ҫийӗнчен ун пек ҫынна хӑй патне урӑх нихҫан та кӗртме хушмастчӗ.

Унӑн характерӗнче тата тепӗр тӗлӗнмелле паллӑ пурччӗ: тӗрлӗрен хыпар-хӑнара вӑл ача пекех ҫӑмӑл, час ӗненетчӗ,—пур йышши хыпара та — пысӑк япала ҫинчен каланине те, нимӗне тӑман суяна та.

Самарта акӑ, калӑпӑр, ҫын пуҫне вуншар кӗренке махорка параҫҫӗ, фронтра вара оҫмушкӑшар та ҫук тесен,—ӑна вӑл ӗненетчӗ.

Ҫалӑпӑр, фронт е арми штабӗнче пурте кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫсе йӑваланса выртаҫҫӗ, унта белогвардеец-спецсем ан-

чах лараççĕ, вĕсем пире кашни самантрах тăшмана сутса тăраççĕ тесен,—ăна вăл ĕненетчĕ.

Қалăпăр, снарядсем, тумтир таврашĕ, çăкăр таврашĕ, винтовкăсем, пополнени тата ытти кирек мĕнле япала та фронта — вĕсем çитменрен мар, çул начартан мар, сăмахран — кĕперсем ишĕлсе пĕтнĕрен мар,—уйрăм çынсем юриех сиенлесе тăнăран çитмеççĕ тесен,—ăна вăл ĕненетчĕ.

Вăл — тиф кайăксенчен ерет тенине, вĕçен кайăк мĕн чухлĕ нумай, тиф та çавăн чухлĕ ытларах сарăлать тенине ĕненетчĕ; сахăр ӳсентăран çинче пусĕ-пусĕпех ӳссе ларать тенине ĕненетчĕ; лашана хĕнемесен — вăл пăсăлать тенине ĕненетчĕ...

Мĕне-мĕне ĕненместчĕ-ши вăл хăйĕн çемçе, уçă кăмăллă чĕрине пула!

Е акă вăл хăйĕн юлташне, калăпăр, Потаповах итлет, тейĕпĕр. Потапов вăл — бригада командирĕ. Потапов—хăй те паттăр, Чапаевпа пĕрле вăл пур çапăçусенче те пулнă, атакăсене пĕр хут анчах мар çӳренĕ, темиçе хут аманнă, ăна темиçе хут контузить тунă, пĕр сăмахпа каласан — ахальтен мар ĕнтĕ вăл бригада командирĕ.

Акă, калăпăр, çапăçнă вăхăтра ăнсăртран мĕнле те пулин ĕç сиксе тухать, тейĕпĕр. Потапов обозсене вăхăтра илсе çитерме ĕлкĕреймен, е вăхăтра тепĕр бригадăна пулăшма çитеймен, е, калăпăр, кайран пĕр харăсах вунă çухрăм малалла талпăнса сикес тесе, малтан пĕр пилĕк çухрăм каялла чакнă, тейĕпĕр. Çын сăмахне çăмăл ĕненекен дивизи начальникне такăшĕ пăшăлтатса кăтартма та ĕлкĕрет:

— Потапов хăравçă вĕт вăл,—теççĕ ăна.—Авă епле тарнă... Кăлăхах пулăшман — пĕтĕмпех хăраса ӳкнĕ... Çитменне тата эрнипех ĕçнĕ вăл... Сана хирĕç, Чапаева хирĕç калаçать тени илтĕнет... Сан чапу пирки ăмсанать...

Итлет вара, йăлтах ăша илет, пĕтĕмпех ĕненсе лартать вара çын сăмахне ĕненекен Чапаев, хаяр çилĕпе çулăмланса каять.

— Ара, эпĕ ăна!.. Ара, пуçне касса тататăп! Персе пăрахатăп ĕçнĕшĕн!.. Ĕç-и вăл: манăн çынсене пĕтерет, хăй ĕçсе супать! Чапаев вара ответ тытаканни пул... Чĕнсе килĕр-ха ăна халех!—тет.

Кĕтсе ларать вара, урса кайнăскер, Потапов пĕтĕм ĕçне пăрахса, хăйне çавнашкал çиленни çинчен илтсе

килессине кĕтсе. Потапов вĕçтерсе çитет те, коридора кĕрсенех:

— Çиленнĕ-и?—тесе ыйтать.

— Тем пекех çиленнĕ!—теççĕ ăна.

— Пĕр ман çине кăна-и?

— Сан çине анчах çав...

— Такăшĕ суйса кăтартнă пуль ĕнтĕ?..

— Унсăр пулас çук...

— Ну, иртсе кайĕ-ха, турă пулăшнипе...

Вара чĕн пиçиххине йăпăр-япăр хытаркаласа, шăлаварне, револьвер йĕннине тӳрлеткелесе, çар çынни пек çирĕппĕн утса кĕрсе тăрать Потапов Чапаев патне.

— Сывă-и, Чапаев юлташ!—тет.

Лешĕ çаврăнса та пăхмасть ун çине. Хирĕç те нимĕн те чĕнмест. Йывăррăн усăнса аннă куç тĕкĕсем айĕнчи урнă куçĕсем çĕрелле пăхаççĕ. Уссине турткаласа, пĕр минут хушши ним шарламасăр ларать Чапаев. Унтан вара, бутылкăран пробка вăркăнса тухнă пек, сиксе тăрать те:

— Каллех ĕçме-им!—тесе кăшкăрса ярать.

— Ара, эпĕ ĕç...

— Молчать! Иртĕнсе кайнă эсир,—тесе пӳлет лешĕ.

— Чапаев юлташ, эпĕ...

— Молчать! Персе пăрахни сахал сана! Вăхăчĕ епле, а вĕсем иртĕнсе кайнă! Мĕн ку? Мĕн пулать-ха ку? Мĕн кăтартасшăн эсир Чапаева капла?

Потапов нимĕн те чĕнмест. Газ тухса пĕтсен, пробкăна çăмăллăнах кăларма пулассине пĕлет вăл. Чапаев хăй çиллине кăшкăрса пĕтерсен, часах лăпланассине пĕлет вăл. Лăплансан вара, ĕçсем мĕнле пулни çинчен йăлтах каласа пар ăна, элекпе суя хыпарсене пурне те сирсе яр. Малтанлăха каллех туртăнкаласа тăрать-ха вăл, кутăнлăхне пула итлемест те, анчах эсĕ — малаллах, малаллах кай та кай, ху калас тенине пĕтĕмпех каласа пĕтер.

Вăл ĕненнине çеç, ăна элеклесе кăтартнине анчах эсĕ пĕр хĕрринчен кăштах кисрентерме май туп; вăл вара çавăнтах ирĕлсе каять те, сана куçăнтан ачашшăн пăхса илсе:

— А эпĕ вĕт...—теме тытăнать айăплăн.—Ăнланатăн-и?—тет.

— Ăнланатăп, ăнланатăп...

— Çапла çав, эпĕ вара... Ну, эсĕ каялла чакнă, терĕç... Ну, каллех ĕçме тапратнă, терĕç... Ăнланатăн-и?— тет.

— Ăнланмасăр... Çапла ĕнтĕ вăл, çапла,—тет Потапов.

— Çапла вара ĕнентĕм эпĕ — мĕнле ĕненес мар-ха?

— Ман вырăнта эсĕ хăв пулсан, ĕненмĕттĕн-им-ха вара? Унсăрăн епле-ха? Ман вырăнта такам та ĕненĕ!

Вара кулма та пуçлать Чапаев. Потапова хулпуççийĕнчен ачашласа лăпкама тытăнать. Хăйпе пĕрле чей ĕçме лартать, хăйĕн айăпне мĕнле сирмеллине пĕлмест.

Икĕ кун иртет, виççĕ иртет — Потаповăн каллех ăнсăртран иртнĕ чухнехи пек ĕç пулса тăрать те, Чапаев çавăн пекех, Потапов çинчен суйса, элеклесе кăтартнине мĕн вĕçне çитиех, пĕтĕмпех ĕненет; каллех вăл пăтранса каять, кăшкăрма, юнама тытăнать, унтан вара — унтан каллех айăплăн ачашланса йăпăлтатма пуçлать.

Вăл пĕчĕк ача пекех çăмăл ĕненекен, шанакан çынччĕ. Çакна пула вăл хăй те нумай асапланатчĕ, анчах пурĕпĕр улшăнма пултараймастчĕ.

Пĕр япалана анчах вăл ĕненместчĕ: тăшманăн вăйĕ нумай, тăшмана ниепле те çĕнтерме çук, çĕнтерсе тартма çук тенине нихçан та ĕненместчĕ вăл.

— Мана хирĕç нимĕнле тăшман та чăтса тăма пултараймасть!—тетчĕ вăл мăнкăмăллăн, çирĕппĕн.—Чапаев каялла чакма пĕлмест! Чапаев нихçан та каялла чакман! Çаплах калăр пурне те: вăл каялла чакма пĕлмест, тейĕр! Ыран ирех тăшмана пĕтĕм фрончĕпе хăвалама пуçланă пултăр! Çаплах хушрĕ, тесе пĕлтерĕр! Кам хирĕç тăма хăять, ăна ман патăма штаба илсе килĕр...

Хăйĕн ĕçне Чапаев питĕ те тĕплĕ пĕлекен ăстаччĕ: вăл хăйĕн пĕтĕм дивизине — боецсене те, командирсене те—витĕрех курса тăратчĕ; анчах çынсем политика тĕлĕшпе мĕнле шухăш-кăмăллă пулнине вăл вара сахал пĕлетчĕ, пĕлесшĕнех те марччĕ. Вăл çапăçусем хĕрсе пымалли вырăнсене питĕ лайăх пĕлетчĕ,—çакна вăл е ачаранах астуса юлнă тăрăх, е çынсем каласа кăтартнă тăрăх, е хăй ыйтса пĕлнĕ тăрăх, е ун çинчен пĕлекен çынсемпе пĕрле картă тăрăх тĕпчесе вĕреннипе пĕлетчĕ. Астăвасса вара вăл — пурне те астăватчĕ, хăйĕн тăнпуçĕпе пурне те çаклатса хăваратчĕ, кирлĕ мар пуличчен

ниепле те асӗнчен вӗҫертместчӗ. Вӑл ҫынсене — пуринчен ытла хресченсене — лайӑх пӗлетчӗ; хула ҫыннисене — начартарах. Вӑл кунта мӗнле мужиксем пуӑннине, вӗсенчен мӗн кӗтме май пуррине, мӗн ҫине шанма юранине, мӗнрен асӑрханмаллине пит лайӑх пӗлетчӗ. Мӗн кирлӗ таран тырӑ ҫинчен, тумтир ҫинчен, урана тӑхӑнмалли атӑ-пушмак ҫинчен, сахӑр ҫинчен, патронсемпе снарядсем ҫинчен, махорка ҫинчен — пурин ҫинчен те пӗлетчӗ, нимӗнле ыйтӑва та пӗлмесӗр тӑнине кураймастӑнччӗ ӑна.

Ун вырӑнне вара политика ыйтӑвӗсем тӗлӗшпе, уйрӑмах, дивизие тивмен ыйтусем тӗлӗшпе вӑл нимӗн те ӑнланмастчӗ, нимӗн те пӗлесшӗн марччӗ. Ытларах та: нумайӑшне вӑл пачах та ӗненместчӗ.

Сӑмахран, рабочисен движенийӗ пӗтӗм тӗнчипе сарӑлнине вӑл пустуй шухӑшласа кӑларнӑ япала вырӑнне хуратчӗ, ӗненместчӗ вӑл ӑна; ҫавӑн пек лайӑх организациленнӗ ӗҫ пулма пултарассине шухӑшласа илме те пултараймастчӗ. Ӑна фактсем ҫине, хаҫатсенче ҫыракан хыпарсем ҫине тӗллесе кӑтартсан, вӑл чеен ҫеҫ кулкаласа:

— Ара, хаҫачӗсене — хамӑрах ҫыратпӑр вӗт,— тетчӗ.— Вӑрҫма савӑнаҫлӑрах пултӑр, тенӗ те, шухӑшласа кӑларнӑ,— тетчӗ.

— Ҫук-ҫке ӗнтӗ, ара кунта ҫынсене те, хулисене те, числисене те, цифрисене те кӑтартса панӑ-ҫке. Кунта нимӗнпе те суяна кӑларма ҫук фактсене кӑтартса панӑ! — тегӗн те ӑна, вӑл:

— Мӗн вӑл цифрӑсем? Цифрӑна ӑна эпӗ хам та шухӑшласа кӑларма пултаратӑп,— тетчӗ.

Малтанхи вӑхӑтсенче вӑл ҫакна пит хытӑ ӗненетчӗ, урӑххине илтесшӗн те марччӗ, чеен кулкаласа ҫеҫ илетчӗ.

Каярахпа, Клычковпа час-часах та темӗнчченех калаҫа-калаҫа ларнӑ хыҫҫӑн вара, вӑл хӑйӗн шухӑшне ку тӗлӗшпе те, ытти нумай ыйтусем тӗлӗшпе улӑштарнӑ пекех, улӑштарчӗ.

Малалла вӑл, сӑмахран, анархистсене хирӗҫ кӗрешессине кирлӗ мар, айван ӗҫ вырӑнне хуратчӗ.

— Анархиста ӑна ирӗк парас пулать, вӑл сана нимӗнле сиен те тумасть,— текелетчӗ Чапаев.

Коммунистсен программине вӑл, партире ҫулталӑка яхӑн тӑратчӗ пулин те, нимӗн чухлӗ те пӗлместчӗ,— вула-

манччĕ вăл ăна, вĕренменччĕ, пĕр ыйтăва та чиперрĕн ăнлантарса пама пултараймастчĕ.

Юлашкинчен, вăл «штабсем» çине мĕнле пăхни аса килет; «штаб» тесе вăл — хăйне приказсем ярса тăракан, çавнашкалах тата çынсем, патронсем, тумтирсем, мĕн кирлине пĕтĕмпех парса тăракан пур органсене те калатчĕ. Ку ыйту тĕлĕшпе ăна ниепле те вĕçне çити «ăса кĕртсе» çитерме май çукчĕ: Чапаев «штабсене» патша генаралĕсем анчах кĕрсе ларнине, вĕсем пĕтĕм ĕçе «сулахаялла та, сылтăмалла та сутса тăраççĕ» тенине, «халăх» вара, çак Чапаев йышши çулпуçсем ертсе пынипе, вĕсен ултавне парăнманнине, вăл штабри приказсене хирĕç тăнипе йăнăш тума мар, ă н ă ç л ă ĕ ç с е м т у н и н е,—çаксене пурне те вăл калама çук çирĕп ĕненетчĕ. Центра вăл пĕтĕм чĕререн шанмастчĕ, пур офицерсене те вилес пекех кураймастчĕ, унăн дивизийĕнче вара сайра-хутра çеç пĕр-ик «низший чинлă» хăрăк офицера курма пулкалатчĕ.

Анчах çук, офицерсем хушшинче, сахал пулин те, çапăçусенче хăйсене калама çук лайăх енчен кăтартнисем те пурччĕ. Вĕсене вăл астăватчĕ, хаклатчĕ, анчах... вĕсенчен те яланах сыхланатчĕ.

Интеллигенцие те вăл хисеплесех каймастчĕ. Кунта ăна пуринчен ытла ĕç çинчен ы т л а ш ш и п а в р а н и, анчах ч ĕ р ĕ ĕçĕ вĕсен, вăл хăй çав тери юратакан ĕç çукки, кăмăлне каймастчĕ. Чăнахах кирлĕ ĕ ç т у м а п у л т а р а к а н çын интеллигенци хушшинче питех те сахал, тесе шутлатчĕ вăл. Офицерсемпе интеллигенци çине çапла пăхнă пирки Чапаев пур çĕре те х ă й çыннисене лартма тăрăшатчĕ: пĕр енчен, вĕсем пустуй сăмахçăсем мар, ĕç çыннисем те шанчăклă çынсем тесе; тепĕр енчен, вĕсемпе ăна ĕçлеме çăмăл тесе; юлашкинчен вара, вăл хăй темиçе хут та калană тăрăх, çакăн пирки «хресченпе рабочие халех вĕрентме тытăнас пулать,— тетчĕ вăл;—вĕрентессе вара вĕсене ĕçленĕ чухне анчах вĕрентме пулать... Эпĕ ăна штаб начальникĕ пулма хушатăп — вăл пуласшăн мар, а хăй эпĕ уншăн хăйĕншĕнех тăрăшнине пĕлмест те. Çапах та хушса лартатăп эпĕ ăна; вăл пĕр эрне пек сунаслакаласа çӳрет те, кайран, пăхатăн, ĕçлеме те пуçлать, лайăхах ĕçлет, нимĕнле офицер та ун пек ĕçлейрес çук!» тетчĕ.

Çак пур çĕре те хăйĕн çыннисене лартас йĕрке унăн

тĕп вырăнта тăратчĕ. Çавăнпа та пĕтĕм аппарачĕ унăн çав тери çивĕч, итлекен аппаратчĕ: пур çĕрте те ĕçе парăннă хăйĕн çыннисем анчахчĕ, унтан та ытла—ăна хăйне питĕ хисеплекен командирсем ларатчĕç.

Чапаев характерĕн çак уйрăмлăхĕсене Клычков хăвăртах асăрхаса курчĕ; ăна курсан вара вăл тата лайăхрах çакна ăнланса илчĕ: чи малтан ун умĕнче хисепе тухма, авторитетлă пулма тăрăшмаллине; вара тин ăна тӳрлетме, çăварлăхлама тытăнмаллине: темĕн тĕрлĕ илемлĕ, паттăрлă, çав тери шавлă та чаплă, анчах суккăр кĕрешӳ çулĕнчен пăрса, ăстăнлă кĕрешӳ çулĕ çине илсе тухма пуçламаллине.

Хисепе мĕнле майпа тухмалла-ха ун умĕнче? Ăна, Чапаева, шухăш тĕлĕшпе тыткăна илес пулать, тесе шухăшларĕ вăл. Ун пуçĕнчи шухăшсене малалла вĕренесси патне, ăслăлăх патне туртăнмалла хускатса ярас пулать, пĕр кĕрешӳпе çеç пурăнма юраманнине кăтартса ĕнентерес пулать, терĕ.

Кунта Федор хăй Чапаевран çӳлерех тăнине лайăх пĕлсе тăчĕ: Чапаевăн çак шухăшĕсене в ă р а т м а пултарсанах — Чапаевăн анархистла, партизанла юрри пĕтсе ларассине, ăна вара вăраххăнах, анчах çине тăрса, майĕпен урăх шухăшсемпе ĕçсем енне те çавăрма пултарассине вăл лайăх пĕлчĕ. Çакна тума хăйĕн вăйĕ çитессине, хăй çакна тума пултарассине Федор çирĕп ĕненсе тăчĕ.

«Чапаев ытти çынсем пек мар,—тесе шухăшларĕ вăл,—ку тĕрĕс ĕнтĕ; ăна, çеçенхирти тискер лашана çăварлăхлама йывăр пекех, пăхăнтарса алла илме питĕ йывăр пулмалла; анчах... тискер утсене те çăварлăхлаççĕ-çке!.. Анчах кирлĕ-ши ун пек тума? — çапла ыйту тухса тăчĕ ун умне.—Çак хитре, хăйне евĕр çап-çуттăн çутăлса тăракан этеме çаплипех, пĕр тĕкĕнмесĕрех хăварсан лайăхрах пулмĕ-ши? Ан тив йăлтăртатса тăтăр, паттăрланса çӳретĕр, нумай тĕслĕ чул пек илемлĕн выляса тăтăр!»

Çакнашкал шухăш килсе кĕчĕ Клычков пуçне; анчах калама çук аслă кĕрешӳ пынă вăхăтра ку шухăш ăна темĕнле кулăшла, ачалла шухăш пек туйăнса кайрĕ.

Чапаев халĕ — куçĕсене çыхса лартнă ăмăрткайăк пек: чĕри сиксе тухас пек тапать, юнĕ вĕри, тăвас тенĕ кăмăлĕсем илемлĕ те вĕри, ирĕкĕ пĕр чарусăр, анчах...

çулĕ çук, хăй çулне уççăн пĕлмест те, ăнланмасть те, курмасть те...

Федор вара унăн çулне кăшт та пулин çутатса пама, ăна пулăшса, çутă çул çине çавăтса кăларма шухăш тытрĕ... Ĕçĕ ăнăçлă пулмасассăн та,—нимех те мар: хăтланса пăхнăшăн намăс мар, нимĕнле сиен те пулас çук...

Ĕç ăнсан вара — мĕн тери лайăх пулĕччĕ! Революцие çакнашкал çынсем çав тери кирлĕ!

* * *

Александров-Гайран иртсессĕнех, Сломихино станици те, нумаях пулмасть иртнĕ çапăçу та, юлашки кунсенчи мĕнпур ĕç те йăлтах асран тухса, хыçалти вырăна кайса тăчĕç. Ун вырăнне куç умне çĕнĕ ĕç — халь вĕсем уншăн васкасах Самарăна каякан паллах мар, анчах питех те пысăк ĕç тухса тăчĕ. Вĕсем Колчак фронтĕнчи ĕçсем калама çук йывăрланса çитни çинчен, юлашки вăхăтра Уфа патĕнче пирĕн çарсем поражени тӳсни çинчен тĕплĕнех пĕлместчĕç-ха. Анчах унсăрăн та вĕсене Самарăна нимĕнсĕрех çав тери васкавлăн чĕнес çукки уççăнах паллă пулчĕ: калама çук пысăк ĕç тума хатĕрленеççĕ курăнать; çак ĕçре пирĕн те ытла кайри вырăнтах пулмалла мар, тесе шухăшларĕç вĕсем.

— Мĕнле шутлатăр, мĕншĕн чĕнеççĕ-ши пире?—ыйтрĕ Клычков.

— Самарăна-и?

— Ара.

— Урăх çĕре куçарма... Тепĕр çĕрте кирлĕ эпир,— терĕ çирĕп пĕлнĕ пекех Чапаев.

Анчах сăлтавне иккĕшĕ те тĕп-тĕрĕсех пĕлмерĕç; мĕн пуласси çинчен те вара вĕсем пустуйран шутласа пырасшăн пулмарĕç... Çавăнпа калаçу хăй тĕллĕнех чарăнса ларчĕ. Кашниех хăй ăшĕнче шăппăн, никама пĕлтермесĕр, вĕçĕмсĕр шухăшласа пычĕ.

Çул çинчи пирвайхи яла пырса кĕчĕç. Совет умне çитсе чарăнчĕç. Хресченсем, Чапаев килнĕ тенине илтсенех, пӳрте темĕн чухлĕн чыхăнса тулчĕç; чапа тухнă паттăра курасшăн çунса, вĕсем тĕрткелешсе, малалла иртме тăрăшаççĕ. Килни çинчен часах пĕтĕм ял пĕлчĕ. Халăх урам тăрăх каллĕ-маллĕ кускала пуçларĕ; пурте ăна курса юлма васкаççĕ. Крыльца умне темĕн чухлĕ халăх пухăнса капланчĕ: ачи-пăчи унта, хĕрарăмĕ; шурă сухал-

лă типшĕм стариксем те йăраланса çитрĕç. Пурте Чапаева, тахçанхи лайăх паллана çынпа ала тытнă пек ала тытса сывлăх сунаççĕ; нумайăшĕ ăна ячĕпе чĕнеççĕ. Кунта та, Самара çывăхĕнчи пекех, унпа пĕрле 1918 çулта çапăçнă çынсем пур иккен. Пурте кăмăллăн кулса пăхаççĕ, пурин пичĕ çинче те савăнăç шевли выляса тăрать. Теприсем Чапаева тăраничченех курса юлас тенĕ пек, çак паттăр командирăн сăнне ĕмĕрлĕхех астуса юлас тенĕ пек, ним кулмасăр, тинкерсе пăхаççĕ. Хăш-пĕр хĕрарăмсем тата нимĕн ăнланман пек, нимĕн пĕлмен пек кулăшла тăн-тан пăхкаласа тăраççĕ; вĕсем, чăннипе, кунта мĕнле ĕç пулнине, мĕншĕн тата кам çине пурте çав тери тинкерсе пăхнине ăнланмаççĕ: мужиксем совет еннелле чупнă та, вĕсем хыççăн хĕрарăмсем те чупа панă. Ачасем шавламаççĕ, ытти чухнехи пек ашкăнмасăр, темĕнскере чăтăмлăн кĕтнĕ пек тăраççĕ. Чăннипе, пурте темĕнскере кĕтеççĕ;—Чапаев сăмах каланине илтсе юлас килет курăнать. Хăлхана ăнсăртран пырса кĕнĕ уйрăм сăмах халăх хушшинче çăвартан çăвара куçса çӳрет. Вĕсене пĕр-пĕрне улăштарса, пăтраштарса, суйса та калаççĕ, анчах пурĕпĕр малаллах, малаллах, малаллах каласа хăвалаççĕ.

— Каласа парсамччĕ пире мĕн çинчен те пулин, командир юлташ,—терĕ ăна совет председателĕ.—Мужиксем авă ăслă сăмах итлесе пăхасшăн.

— Мĕн калам-ши?—тесе, кăшт кулкаласа илчĕ Чапаев.

— Хамăр тавра мĕнле пурăнни çинчен каласа кăтарт... Мĕн те пулин шухăшласа кăларан ĕнтĕ...

Чапаев туртăнкаласа тăма юратмастчĕ. Мужиксем ăна чăнласах итлесшĕн пулнине вăл хăй те курать,— апла мĕншĕн каласса пăхас мар-ха вĕсемпе?

Лашасем кӳлнĕ вăхăтра вăл хресченсем умĕнче сăмах калама пуçларĕ. Ун сăмахĕнче тĕп шухăша уйăрса илме йывăртарах пулчĕ,—вăл революци çинчен, хăрушлăхсем çинчен, выçлăх çинчен—итлекенсем унччен илтнĕ сăмахсемпе каласа кăтартрĕ. Анчах пухăннă çынсене ку сăмахсем те кăмăла кайрĕç: шӳт мар вĕт, Чапаев хăй калаçать! Унăн ăнланма йывăр, пăтранчăк сăмахне вĕсем вĕçне çитиех пĕр сăмах сиктерми тинкерсе итлесе тăчĕç; каласа пĕтерсен вара, унпа килĕшсе пуçĕсене сулчĕç, тĕрлĕ çĕрте пăшăлтата пуçларĕç:

— Ну, каларӗ-тӗк каларӗ!

— Вӑл та каламасан тата!

— Ну, маттур та иккен!

— Нумай лайӑх япала ҫинчен каларӑн, тавтапуҫ, юлташ. Ҫав тери спасибо!

Миҫе ял витӗр тухмалла пулмарӗ пирӗн — пуринче те Чапаева лайӑх пӗлеҫҫӗ, пур ҫӗрте те ӑна пӗр пекех хисеплесе, савнӑҫлӑн кӗтсе илеҫҫӗ. Ӑна курма пӗтӗм ял халӑхӗ кӗпӗрленсе тухатчӗ; мужиксем унпа калаҫма тытӑнатчӗҫ, хӗрарӑмсем ахлатса пӑшӑлтатса тӑратчӗҫ, ялтан тухса кайнӑ чухне ачасем ҫуна хыҫҫӑн таҫта ҫитиех кӑшкӑрса чупса пыратчӗҫ. Хӑш-пӗр ялта вӑл «сӑмах» тухса калатчӗ. Сӑмахне пур ҫӗрте те хӗрӳ кӑмӑллӑн йышӑнса итлетчӗҫ. Ӗҫ кунта, паллах, сӑмахӗнче мар, Чапаевӑн ятӗнчеччӗ. Ҫак ятра тӗлӗнмелле, магилле хӑват пурччӗ,—ҫак ята пула унӑн «с ӑ м а х ӗ», тен, ытла пахах сӑмах мар пулин те, калама ҫук пысӑк ӗҫсене пӗлтеретчӗ.

Ку вӑл ҫын характерӗн питӗ тӗлӗнмелле енӗ, анчах пурӗпӗр яланах ҫапла пулать ӗнтӗ: паллӑ, чаплӑ ҫыннӑн хӑш-пӗр чухне ӑнсӑртран тухса кайнӑ сӑмахне халӑх шавах тепӗр паллах мар «вӑтам» ҫын каланӑ ӑслӑ сӑмахран мала хурать.

Пӗрре ҫапла ялтан яла пынӑ чухне вӗсем хӑйсен иртнӗ пурнӑҫӗ ҫинчен калаҫса кайрӗҫ: кам ӑҫта ҫуралнӑ, мӗн ӗҫлесе пурӑннӑ, камсем хушшинче ӳссе ҫитӗннӗ,— пӗр сӑмахпа каласан, вӗҫсӗр-хӗрсӗрех калаҫма май пур ыйтусем ҫинчен калаҫма тапратрӗҫ. Федор хӑй рабочисем хушшинче ҫуралса ӳснӗ хула ҫинчен, пурнӑҫ вӑл — йывӑр, хаяр кӗрешӳ иккенне хӑй малтанхи хут ӑнланса илни ҫинчен кала-кала кӑтартрӗ... Унтан — пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна куҫса ҫӳресе, революци пуличченех ҫапла тӗрлӗ ҫӗрте пурӑнни ҫинчен каласа пачӗ.

* * *

Самарӑна ҫитиччен тӑватӑ кун кайрӗҫ. Ҫул тӑршшӗнче темӗн чухлӗ ялсемпе саласем витӗр тухрӗҫ. Чапаев ятне ӑҫта илтнӗ ан пултӑр, халӑх пур ҫӗрте те хавасланса ӳкет. Чапаев пур ҫӗрте те хӑйне хӑй питӗ чаплӑн тыткалать. Пӗрре ҫакнашкал ӗҫ пулса иртрӗ: темӗнле яла вӗсем питӗ каҫа юлса пырса кӗчӗҫ, урамра никама та тӗл пулаймарӗҫ, совет ӑҫта вырнаҫнине никам-

ран та ыйтса пӗлме пулмарӗ. Кам патне те пулин кӗрсе ыйтасшӑнччӗ, анчах сивӗре ҫуна ҫинчен анасси килмерӗ; ҫавӑнпа тӳрех чиркӳ еннелле уттарчӗҫ, совет ҫавӑнта «ӑҫта та пулин площадьре» пулӗ, тесе шутларӗҫ.

Юлашкинчен, пӗр ҫынна хирӗҫ пулчӗҫ.

— Юлташ, совет ӑҫта кунта?—тесе ыйтрӗҫ.

— Ав ҫавӑнта, ҫырма леш енче,—терӗ лешӗ, аллине урӑх еннелле тӑсса кӑтартса. Лашана ҫавӑрчӗҫ те кӑтартнӑ еннелле кайрӗҫ. Сарай евӗрлӗ пит пысӑк, кивӗ, тискер ҫурт тӗлне ҫитсе чарӑнчӗҫ; ҫурчӗ ҫав тери тискер вырӑнта — ҫырма леш енче, ял вӗҫӗнче ларать; ку пӑрахӑҫ ҫурт пулни уҫҫӑнах курӑнать. Шаккарӗҫ-шаккарӗҫ те, аран-аран уҫса кӗртрӗҫ. Хирӗҫ пӗр пӗтӗмпех ваталса кайнӑ, хӑлхасӑр старик тухрӗ.

— Мӗн кирлӗ сире, ырӑ ҫынсем?—тесе ыйтрӗ вӑл.

— Дежурнӑй ӑҫта?—тесе хаяррӑн ыйтрӗ Чапаев.

— Никам та ҫук, ара... пурте килӗсене кайса пӗтрӗҫ; кунта кӑнтӑрла анчах ҫӳреҫҫӗ... Никам та ҫук,—терӗ старик.

— Халех председателе чӗнсе кил!—тесе хушрӗ Чапаев.

Кунашкал чухне Федор нихҫан та Чапаев ҫине тӑрса хыттӑн е хаяррӑн каланине хирӗҫ пулмастчӗ: ун чухнехи вӑхӑтсенче ытла та йӗркеллӗн, ачашшӑн калаҫса нимех те тума май ҫукчӗ. Тепӗр чухне ҫын ытла та йӑвашшине, мемлесе тӑракансқер пулнине курсан, ӑна пусмӑрлама, нимӗнскер памасӑрах кӑларса яма тӑрӑшатчӗҫ. Вӑхӑчӗ йывӑр пулнӑ ун чухне, ҫавӑнпа мӗнле те пулин ӗҫ тӑвас тесен, пустуй лӑркаса тӑрас вырӑнне хаяррӑн ӗҫлеме тиветчӗ.

Председателе чӗнме ячӗҫ. Лешӗ ҫул ҫинчех вестойран хӑйне «Чапаев хӑй» чӗнни ҫинчен ыйтса пӗлме ӗлкӗрнӗ: хӑракаласа ҫитсе кӗчӗ, ҫӗлӗкне хывса пуҫ тайрӗ.

— Мӗнле-ха ку капла, шӑллӑм, совет саншӑн сысна вити-им?—тесе хаяррӑн кӑшкӑрса пӑрахрӗ ун ҫине Чапаев.—Ӑҫта ҫӑва патне килсе лартнӑ эсӗ ӑна. Ял варринче ара вырӑн ҫук-и-мӗн сана валли?

— Халӑх памасть вӗт, мӗн тӑвӑн,—терӗ председатель хӑюсӑртарах.

— Мӗнле халӑх? Халӑх мар, кулаксем парасшӑн мар ӑна, халӑх кунта кӑшт та айӑплӑ мар... Авӑ епле кулаксене ҫул пама юрататӑн иккен эсӗ.

— Ара, эпĕ... Тăвасшăнччĕ те...

— Мĕн тăвасшăнччĕ!—пÿлсе татрĕ ун сăмахне Чапаев.—Тăвас пулать, тăвасшăнччĕ тесе тăмалла мар! Власть тетĕн тата хуна ху... Ыранах куçарса лартнă пултăр совета площаде, унти чи лайăх çурта йышăнăр; Чапаев хушрĕ, тесе калăр. Ăнлантăн-и?

— Ăнлантăм,—терĕ лешĕ, мемлесе.

— Эпĕ Самарăран таврăннă чух, асту, çак шăтăкрах тĕл пулсан...

Чĕмсĕр председатель, кулаксем лартнăскер, нимĕне тăманскер пулас, лашасем тупса парас пирки хыпаланма, кускалама пуçларĕ...

«Кунашкал ялта» сывăрма та шут тумарĕç, çĕр хутах малалла тухса кайрĕç.

* * *

Самарăна çитрĕç. Фрунзе патне пычĕç. Чапаевпа Федора вăл юлташла — малашне туса ирттерес операцисем çинчен тĕплĕнтерех калаçса татăлма — каçхине хăй патне хваттерне пыма чĕнчĕ. Хваттерне пычĕç. Фрунзе фронтри ĕçсем çинчен ăнлантарса пачĕ, халĕ епле нимĕне пăхмасăр, пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелли çинчен, хальхи вăхăтра мĕнле командирсем кирли çинчен каласа кăтартрĕ. Чапаев темĕнле ĕçпе пĕр пилĕк минутлăха тухса кайсан, Фрунзе Федортан:

— Ĕç — пысăк, Клычков юлташ... Чапаева эпĕ дивизи начальникĕ тума шутлатăп. Мĕн калăр эсир?—тесе ыйтрĕ.—Эпĕ ăна сахал пĕлетĕп; анчах, хăвăрах пĕлетĕр, ун çинчен нумай калаçаççĕ... Ĕçре мĕнле вăл? Эсир унпа кăштах ĕçлесе курма ĕлкĕртĕр ĕнтĕ,—терĕ.

Федор ăна хăй те мĕн шухăшланине йăлтах каласа пачĕ: Чапаева ырларĕ, политика тĕлĕшĕнчен пиçсех çитейменнине çеç палăртса кăтартрĕ.

— Эпĕ хам та çаплах шутлатăп,— терĕ юлашкинчен Фрунзе.— Вăл, паллах, вăтам çын мар... Питĕ пысăк усă кÿме пултарать, анчах партизанлăх унра халĕ те нумайха. Тăрăшăр ĕнтĕ эсир. Вăл вĕри пулни нимех те мар,— терĕ.

Федор Фрунзене кĕскен: вăл хăй шăпах çак йĕрпе ĕçлесе пыни çинчен, вăл Чапаева хăй енне çавăра пуçлани çинчен, Чапаев ăна шанма тытăнни çинчен, малашне унпа тата та çывăхрах пулма ĕмĕтленни çинчен каласа пачĕ.

Чапаев тавăнчĕ. Ķăшт калаçкаласа ларнă хыççăн Фрунзе ăна дивизи начальникĕ туса хуни çинчен пĕлтерчĕ те, халех Уральска тухса кайса, унта, пулас операцисен планĕ халлĕхе çителĕклĕ уççăн палăрса çитмен пирки, приказ пырасса кĕтмелли çинчен каларĕ. Сывпуллашрĕç. Тухса кайрĕç. Тепĕр икĕ сехетрен Самарăран тухса кайма хатĕрленсе çитрĕç. Тухса каяс умĕн Чапаев çула май хăйĕн тăван ялне—Вязовкăна кĕрсе тухма ирĕк ыйтрĕ; Фрунзе килĕшрĕ. Вара Вязовка еннелле çул тытрĕç.

— Вязовкăра кам ара сирĕн?—ыйтрĕ Федор.

— Пурте Вязовкăра... Аттепе анне унта — тăван марскерсем... Икĕ ывăл, пĕр хĕр ача—кусем пĕр тăлăх арăмпа пурăнаççĕ... Унăн хăйĕн те икĕ ывăл пур; çапла пурăнаççĕ те ĕнтĕ вĕсем пĕрле,— терĕ.

— Лайăх паллакан хĕрарăмах-и?

— Лайăх паллаканскер... Пит лайăх паллакан хĕрарăм,— терĕ те Чапаев, чеен кулса илчĕ.— Тусăм манăн вилчĕ; тусăм вара ăна манпа юлма хушса хăварчĕ.

* * *

Вязовкăра пире пит хаваслăн та чаплăн кĕтсе илчĕç. Совет председателĕ хаклă хăна килнĕ ятпа васкасах пуху пухрĕ. Пухура Чапаев хăйĕн «сăмахĕсене» каларĕ... Ķаçхине Чапаев ячĕпе уçнă халăх çуртĕнче «вырăнти вăйсемпе» спектакль лартрĕç. Вылясса калама çук начар вылярĕç; анчах артистсем, Чапаев мухтассине кĕтсе, калама çук тăрăшрĕç... Вара çĕр выртрĕç те, ирхине Уральска тухса вĕçтерчĕç!..

Федора Чапаев хăйĕн ачисемпе ытла ачашшăнах калаçман пек туйăнчĕ. Вăл çакăн çинчен унран хăйĕнчен ыйтса пĕлчĕ.

— Тĕрĕс, манăн хам ачасене курма та тивменпе пĕрех, эпĕ вĕсене ют ачасем вырăннех хума пуçларăм,— терĕ Чапаев Федор ыйтнине хирĕç.

— Мĕнле вĕрентсе ӳстерес тетĕр-ха апла вĕсене?

— Мĕн вĕрентсе ӳстересси: хамăн ман шавах вăхăт çук, кунта вара — кам пĕлет, тем тăваççĕ вĕсем, эпĕ ун çинчен ыйтмастăп та... Шалу укçинчен уйăрса яркаласа тăратăп та — çитрĕ.

— Шалу укçи сахал-çке ара...

— Сахаллине пĕлетĕп... Çитменнине тата эпĕ ноябрьпе декабрьшĕн те илмен-ха... Авă ноябрь хăçан иртнĕ... Халĕ март та çурри ытла. Тўлемеççĕ.

— Начар ĕç.

— Халĕ кашниех мĕн те пулин çухатать, Клычков юлташ, кашниех,—терĕ Чапаев çирĕппĕн.—Унсăрăн революци те пулма пултараймасть курăнать: пĕри хăйĕн пурлăхне çухатать, тепри çемйине, тепри хăй малалла вĕренес çулне пўлсе лартать, эпир вара—эпир пурнăçăмăра та, тен, пĕтĕмпех çухататпăр.

— Тĕрĕс,— тесе шухăша кайрĕ Федор,— тен, пурнăçа та... Тĕлĕнмелле чăн та: вăрçăн вĕçĕ те çук. Пур енчен те çĕнĕрен çĕнĕ тăшмансем капланса тухаççĕ... Йĕри-таврах хăрушлăх... Эпир акă сирĕнпе пĕрле нумай çўресе курайăпăр-ши? Çĕнĕ походсем те çывхарса килеççĕ вĕт ĕнтĕ...

— Эпĕ шухăшламастăп та ун çинчен,— терĕ Чапаев, аллипе сулса.— Кам пĕлет ăна, вĕçĕ хăçан пуласса... Тепĕр чухне çав тери чăкăлтăш ĕçе çакланатăн — ниепле те хăтăлса тухма çук пек туйăнать, анчах... çапах та чĕрĕ юлатăн. Малашнехи çинчен пĕреххутчен шухăшламалла та мар. Пĕррехинче эпĕ йăнăшпа чехсем тăракан яла тĕрĕлтеттерсе кĕрсеттĕм, вăл 1918 çултах пулчĕ-ха... Хамăрăн ял пулĕ, тесе шутланă, хамăрăнах тенĕ; а шофера мĕн ăна?— вăл ăçта каяс тенĕ, çавăнта илсе каять... Çитсе çеç кĕтĕмĕр — тур çырлах: чехсем! Ну, Бабаев, тетĕп (хайхи шофера), çавăрттар мĕн пултарнă таран, а хамăн алăра пулемет... Кăрăлтаттар, тетĕп, урам тăрăх, эпĕ пулеметпа перетĕп... Машинăна калле çавăрма ĕлкĕрсен, çăлăнтăмăр; унсăрăн — пуçĕпех пĕтетпĕр... Вăл машинăна çавăрать, эпĕ перетĕп, вăл çавăрать, эпĕ перетĕп... Çавăрчĕ те машинăна, ячĕ мĕнпур вăйран; пирĕн хыççăн пĕр вунпилĕк юланут сиксе тухрĕç те, тапратрĕç пире хăвалама... Эпĕ хыçалалла çаврăнса лартăм—тусан пĕлĕт пек мăкăрланать, нимĕн те курăнмасть; вĕсем юланутпа кустарнă май пăшал персе пыни çеç илтĕнет: вĕсем пире переççĕ, эпĕ шав унталла та кунталла... Икĕ лентине те персе пĕтертĕм... Е çавăнта шина шăтнă пулсан, мĕн курас пулатчĕ манăн? Чех ман пуçшăн ун чухнех награда пама пулнăччĕ: илсе кил Чапаев пуçне — ылттăн паратпăр, тетчĕç... Ман ачасем вуласа пăхатчĕç те çав хутсене, чехрен кулатчĕç анчах; пĕрре вара пирĕн

çапла çыру çырса янӑччӗ: «...Килӗр пирӗн пата, Стенька Разин полкне, эпир сире ӑна ылттӑнсӑрах тыттарса ярӑпӑр», тенӗччӗ. Çырчӗç те çапла, хутне конверт ӑшне чиксе, адрес тӑрӑх леçсе пама ялти ачана тыттарчӗç... Çавнашкал тӗрлӗрен ӗçсем, происшествисем манпа чылай пулкаланӑ.

— Çапах та акӑ чӗрӗ юлнӑ...—терӗ Федор.— Мӗнрен килнӗ чӗрӗ юласси — ӑнсӑртран пулнӑ-и вӑл, е хӑвӑн çивӗчлӗхӗнтен килнӗ-и,— кам пӗлет? Анчах чӑннипе темиçе вунӑ хут та вилӗм çывӑхӗнчех пулнӑ курӑнать.

— Çаплах çав,—терӗ Чапаев ухуталанса,—темиçе вунӑ хут та çав, апла мар — нумай вунӑ хут та çав. Эпӗ хамрӑн хам шавах çапла ыйтатӑп вара: мӗнле эпӗ çав тери вилӗмсӗр çын-ха, тетӗп, мана такӑшӗ юри сыхласа тӑнӑ пекех?.. Теприне вара, пирвайхи пуля вӗçсе кайсанах,—шап! пырса тивет те—çук çын.

— Анчах эсир хӑвӑр епле шутлатӑр-ха çапах та: ӑнсӑртран пулать-и вӑл е унта мӗн те пулин урӑххи пур-и?— тесе ыйтрӗ Федор.

— Çук ара, ӑнсӑртран ӑçтан пултӑр вӑл,— пур çӗрте те пуç кирлӗ... Эх, епле кирлӗ вӑл пуç! Тепӗр чухне пӗр минут çеç ытлашши чӑкӑлташса тӑр эсӗ — çавӑнтах пӗтетӗн; çитменнине пӗччен анчах мар — хӑвӑнпа пӗрле темиçе çӗр çын пӗтерме пултаратӑн... Пӗр ялта пире çапла чехсем çывраканскерсене пырса çавӑрса илчӗç. Эпӗ ялӑн тепӗр вӗçӗнче çывраттӑм; аялти кӗпе-йӗмпех сиксе тухрӑм та, «урра-урра!» тесе кӑшкӑра пуçларӑм... А хамӑрӑн нимӗнскер те, нимӗнле пӑшал тавраше те çук; анчах ачасем хавасланса ӳкрӗç те, пӗррех ыткӑнчӗç чехсем çине — камӑн мӗн пуррине çавӑнтах туртса илтӗмӗр. Çитменнине хамӑрӑн тыткӑна лекнӗ çынсене çӑлтӑмӑр анчах мар, вӗсене хӑйсене те тыткӑна нумай илтӗмӗр... Çивӗчлӗх кирлӗ, Клычков юлташ, ӗçе пӗр самантрах ӑнланса илме пӗлни кирлӗ, унсӑрӑн вӑрçӑра часах пӗтетӗн.

— Пӗтесех килмест-им вара?—тесе, шӳт туса илчӗ Федор.

— Ку тӗлӗшрен те яланах пӗр пек мар,—терӗ Чапаев нимӗн кулмасӑр.— Эсир кашни çынах хӑй пурнӑçне хӗрхенет тесе шутлатӑр-и? Вӑл та анчах мар, пӗр çынах та хӑйӗн пурнӑçне яланах пӗр пек юратмасть. Эпӗ, сӑмахран, рядовой пулнӑ вӑхӑтра, мӗнччӗ мана ун чухне: вӗлерӗççӗ-и, вӗлермеççӗ-и унта — пурпӗрех марччӗ-и мӗн

мана? Қама питех те кирлĕ пулнă-ха эпĕ, çавнашкал пыйтă? Ман йышшисене темĕн чухлех çуратса тултарма пултараççĕ. Хам пурнăçăма эпĕ ун чухне пĕр пуса та хуман... Окопсем хушши виççĕр утăм анчахчĕ, эпĕ çапах та сиксе тухаттăм та:—Ме-ха, тыт!—тесе кăшкăраттăм. Е окоп тĕмески çинчех ташлама та тытăнаттăм. Вилĕм çинчен шухăш та пулман. Унтан, пăхатăп та, мана асăрхаса шута иле пуçларĕç — çын шутне кĕме тытăнтăм курăнать... Халĕ астăвăр ĕнтĕ, Клычков юлташ, мĕн чухлĕ çӳле çĕкленсе пыратăп эпĕ, пурнăçăм та маншăн çавăн чухлех хаклă пулса пырать... Сирĕн умăрта чееленсе тăрам мар, тӳрех калатăп,—хам çинчен хам эпĕ çапла шухăшлатăп: акă ĕнтĕ хăнкăла мар эпĕ, чăн-чăн çынах тетĕп; çавăнпа пурăнасса та чăн-чăн пурнăçпа пурăнас килет... Хăравçăрах пулнине мар вăл, ăслăрах пулнине пĕлтерет. Халĕ окоп тĕмески çинче ташлас çук ĕнтĕ эпĕ... çук, ачам, ним усăсăр вилес килмест ĕнтĕ...

— А ĕçшĕн?— ыйтрĕ Федор.

— Ĕçшĕн-и? Акă тупа тăватăп,—терĕ Чапаев хĕрӳллĕн,— тупа тăватăп: ĕçре эпĕ нихçан та хăравçă пулас çук... Ĕçшĕн пулсан — ĕçре урăх шухăш таçта кайса çухалать... Эсир мĕнле шухăшлатăр-ха тата?

— Çук, эп урăх нимĕнле те шухăшламастăп, ахальрен çеç ыйтрăм,— терĕ Федор.

— Апла-ши? Тен, ш т а б р а ман çинчен?..

Федор вăл мĕн çинчен каланине ăнланмарĕ.

— Полковниксемпе пуль?— шухăшне малалла тăсса каларĕ Чапаев, çав вăхăтрах сассинче унăн аран-аран тытса чаракан çилĕ пурри сисĕнчĕ...—Унта, паллах...

— Çук ара, чăннипех калатăп сире,— тесе лăплантарчĕ ăна Клычков,— нимĕнле «полковниксемпе те» нимĕн те калаçман эпĕ, мĕне кирлĕ вăл мана?

— Вĕсем каласа тултарĕç унта...

— Юратмаççĕ-им апла?— ыйтрĕ Федор.

— Кураймаççĕ вĕсем мана,— терĕ Чапаев ерипен, тарăхса.— Эпĕ вĕсене çав тери мăшкăллă телеграммăсемпе çырусем яраттăм, вĕсем мана уншăн трибунала, суда парасшăнччĕ... Вăрçă çеç кансĕрлерĕ, унсăр пулсан суда та лекме пултараттăм — ыррине курăн вĕсемпе. Унта сĕтел хыçĕнче ларма—питĕ çăмăл вĕсене: а эсĕ—тапăнса кĕр, теççĕ, ăнăççăр ĕçе. Эпĕ пулсан вара,— эсĕ

хăть кирек кам пул, эпĕ нихçан та ăнăçсăр ĕçе кĕрес çук. Эккей, тупăннă командирсем!.. Патронсем кирлĕ пулсан сана — çук вĕсен, приказсем çырма вара,— авă епле ăста вĕсем! Çавăнпа вăрçаттăм та эпĕ вĕсене тĕрлĕрен май... Хулиган вăл, партизан, мĕн ыйтмалли пур унран, тетчĕç.

— Мĕнле-ха апла, Чапаев юлташ,— тесе тĕлĕнсе ыйтрĕ Федор,— пирĕн Хĕрлĕ Çара полковниксем тытса тăраççĕ, тесе шутлатăр-и мĕн эсир?

— Апла мар-и мĕн тата?

— Апла мар çав: реввоенсоветсем, комиссарсем, хĕрлĕ командирсем вара... камсем вĕсем?

— «Ревасовет» тепĕр чухне нимĕн те ăнланмасть вăл, каласа тултараççĕ те ăна — вăл ĕненет вара.

— Çук, апла мар вăл, пĕртте апла мар,— тесе килĕшмесĕр, ăна хирĕç каларĕ Федор.— Революциллĕ çар совечĕсем çинчен эсир пачах та тĕрĕс шутламастăр. Унта хамăр халăх, пурне те пĕлекен халăх ларать, эсир кăлăхах апла калаçатăр.

— Акă хăвăрах похода тухса кайсан курăр-ха,— терĕ Чапаев хуллен, анчах сассинче халĕ хăй шухăшне ĕненсе, çине тăрсах калани илтĕнмерĕ.

Федор ăна реввоенсоветсене епле организациленине, вĕсем мĕн тума кирлине, мĕнле ĕçсем туса тăнине, мĕнле йĕркепе тытăнса тăнине каласа пачĕ... Чапаев çаксене халиччен нимĕн те пĕлмен, çаксем çинчен каласа кăтартнине вăл пирвайхи хут илтрĕ... Вăл çав тери тинкерсе итлесе ларчĕ, пĕр сăмахне те илтмесĕр хăвармарĕ, пурне те астуса юлчĕ — астуса тăрас тĕлĕшĕнчен унăн ăстăнĕ калама çук çивĕч ĕçлетчĕ. Чапаев тăнĕнчен Федор яланах тĕлĕнетчĕ: вăл чи пĕчĕк вак-тĕвек ĕçе те астуса пурăнатчĕ, кирлĕ чухне вара ĕçсем çинчен туххăмах аса илетчĕ.

Федор çапла темĕнчченех вĕçĕмсĕр калаçса ларнине пит юрататчĕ. Калаçнă сăмах-шухăш вăрлăхĕ лайăх тăпра çине ӳкнине пĕлетчĕ вăл. Юлашки вăхăтсенче Чапаев ытти çынсемпе калаçнă чухне ун шухăшĕсене хăйĕн шухăшĕсем пек туса каласа кăтартма тăрăшнине те асăрхарĕ вăл. Чапаев ăна «пĕлекен» çын вырăнне хума пуçланине, çавăнпа унран вĕренме тăрăшнине асăрхарĕ... Хĕрлĕ Çар мĕнле тытăнса тăни çинчен, техника çинчен,

наука ҫинчен калаҫса пĕтернĕ хыҫҫăн — вĕсем Чапаева чи пăшăрхантаракан ыйту ҫине куҫрĕҫ. Чапаев вĕренмесĕр юлни ҫинчен калаҫса кайрĕҫ.

Юлашкинчен вара вĕсем ҫапла калаҫса татăлчĕҫ: Федор ăна вăхăт ҫитнĕ таран, тата условисем май панă таран вĕрентме тытăнасшăн пулчĕ.

Айванккай ҫынсем: вĕсем тар тĕтĕмĕ ăшĕнче алгебра вĕренме ĕмĕтленчĕҫ! Паллах, вĕсен пĕр кун та вĕренесси пулмарĕ, анчах шухăшсем, ун ҫинчен калаҫнисем кайран та темĕн чухлех пулчĕҫ; акă пыраççĕ, тейĕпĕр, вĕсем тепĕр чухне иккĕшĕ позици еннелле, калаҫнăҫем калаҫса каяççĕ те, ҫак ыйту патне те ҫитсе тухаççĕ.

— Эпир вĕренме ĕмĕтленнĕччĕ вĕт,—тесе астуса илет Федор.

— Сахал-и эпир ĕмĕтленни, анчах пур ĕмĕтленнине те пурнăҫа кĕртме ҫук,— тесе хуратчĕ вара Чапаев кулянса.

Чапаев кашни ҫĕнĕ сăмахах мĕн тери сăхланса итленине уççăнах куратчĕ Федор,— Чапаевшăн питĕ нумай япала ҫинчен калаҫнă шухăш ҫĕнĕччĕ! Вăл партие кĕни пĕр ҫул ҫитнĕччĕ ĕнтĕ, ҫавăнпа тĕн тĕлĕшпе вăл, паллах, тĕрĕс шухăшламалла пекчĕ, анчах Клычков пĕрре ăнсăртран Чапаев... сăхсăхнине курах кайрĕ.

— Мĕн эсĕ, Василий Иваныч?— терĕ вăл Чапаева.— Турă коммунисĕ, ăсу пур-и санăн?— терĕ.

(Вĕсем паллашнă хыҫҫăн икĕ эрнеренех пĕр-пĕрне «эсĕ» тесе чĕнме тытăнсатчĕҫ).

Чапаев вăтаннă пек пулчĕ, анчах харсăррăн:

— Ман шутпа — коммунист та хăй мĕнле тăвас тенĕ пек тума пултарать,—тесе хучĕ.—Эсĕ ĕненместĕн-тĕк— ан ĕнен, а эпĕ ĕненетĕп пулсан, ун пирки мĕнле сиен пулать-ха сана?— терĕ.

— Мана сиен тумасть-ха вăл, эпĕ хам ҫинчен каламастăп,— тесе, ҫине тăрса тапăнчĕ ăна Федор.— Санран хăвăнтан тĕлĕнетĕп эпĕ — епле-ха эсĕ, коммунист, турра ĕненме пултаратăн?

— Тен, эпĕ ĕненместĕп те пуль,— терĕ Чапаев.

— Ĕненместĕн пулсан, мĕншĕн сăхсăхатăн-ха ара...

— Так ахаль... сăхсăхас килет те, сăхсăхатăп...

— Ну епле юратăр-ха апла? Шӳт тăваççĕ-и вара унпа?— тесе хыттăн ӳкĕтлерĕ ăна Клычков.

Чапаев вара ăна хăйĕн ача чухнехи пурнăçĕнче пулнă пĕр «историе» каласа кăтартрĕ; çак истори ĕненекен туса янă та ĕнтĕ мана, терĕ вăл.

— Эпĕ пĕчĕк çеç ачаччĕ,— тесе пуçларĕ вăл калама;— пĕрре çапла, пĕчĕкскер, эпĕ турăш умĕнчен икĕ пус укçа вăрларăм,—пирĕн унта хăватсем тăвакан турăш тăратчĕ. Вăрларăм та çапла, ĕçĕ те пĕтрĕ. Арбуз илтĕм те тăраниччченех çирĕм. Çисе тăрансассăнах вара чирлесе ўкрĕм: шăп ултă эрне чирлĕ выртрăм... вĕрилентерсе пăрахрĕ, шăнтатчĕ, варвитти пуçланса кайрĕ, вилес патнех çитрĕм... Анне эпĕ çав икĕ пуса вăрланине пĕлнĕ те,— ну пăраха пуçларĕ турăш умне тĕрлĕрен укçа... пĕр вунă пуслăх кĕмĕлсене кăна виçĕ тенке çити пăрахса пĕтерттĕм, тетчĕ, çитменнине вĕçĕмсĕр кĕлтăвать те кĕлтăвать маншăн; турă амăшĕ мана каçартăр, тесе тархаслать ĕнтĕ... Кĕлтуса çитерчĕ-çитерчех вара — çичĕ эрне çине кайсан, сывалтăм эпĕ... Çавăнтан вара эпĕ — тĕнчере темскерле хăват пурах, тесе ĕненме тытăнтăм; унтан сыхланса пурăнас пулать, тесе шутла пуçларăм... Çавăнтан вара эпĕ вăрлама та пăрахрăм,— ют пахчаран панулми те пулин татса илместĕм, халиччченех хăраса пурăнатăп... Пульăсем айĕнче нимех те мар, а кунта акă хăрани пĕтерет... Пултараймастăп,— пĕтерчĕ Чапаев хăй сăмахне.

Ку хутĕнче Федор нумаях калаçмарĕ; анчах кайран вара тĕн çинчен, тĕн ăçтан пулса кайни çинчен, турă текен япала ăçтан тухни çинчен темиçе хут та калаçса пăхрĕ. Чапаев вара урăх нихçан та сăхсăхмастчĕ... Сăхсăхма пăрахрĕ анчах мар, пĕррехинче вăл Федора хăй çинчен çапла каларĕ: «тĕн çинчен ăнланиччен сĕм ухмах пулнă çав эпĕ; а халĕ ăнланса илтĕм те — тутлă хыççăн йўççине пĕртте çиес килмест», терĕ.

Çапла калаçкаласа ирттернĕ хыççăн Чапаев тĕн çинчен, турă çинчен, чиркў çинчен, пупсем çинчен пачах урăхла шухăшлама тытăнчĕ; пупсене вăл, чăн та, ĕлĕк те юратман, анчах çапах та вĕсенчен те кăштах хăракаланă: вĕсем, чылаях путсĕр пулин те, «турă патне çывăхрах тăраççĕ», тесе шутланă.

Мĕн пурăннăçемĕн Федор Чапаева, çак чул пекех çирĕп те хаяр çынна, çак паттăр партизана, ача пекех алла çавăрса илме май пуррине ытларан ытла ăнланса пычĕ: унран, ăвăсран тĕрлĕ япаласем чăмăртаса тума май пур пекех, çĕнĕрен çĕнĕ форма туса пыма май пур-

ччӗ; анчах ҫакна асӑрханса, пӗлсе тумаллаччӗ, вӑл мӗне «йышӑннине», хӑшне тӳрех йышӑнасшӑн маррине лайӑх пӗлмеллеччӗ... Пуринчен ытла ӑна наука енӗпе ҫӑмӑл ертсе пыма пулатчӗ: кунта вӑл чӗрӗ шухӑшсем патне хӑех юратса пыратчӗ. Анчах кунта ҫеҫ. Ытти тӗлӗшрен вӑл — ҫирӗпчӗ, парӑнмастчӗ, тепӗр чухне кутӑнлашатчӗ те. Пурнӑҫ условийӗсем ку таранччен ӑна «хура ӳтре» тытса усранӑ, анчах халӗ вӑл ҫӗнӗ ҫулсем пуррине, ҫынсем халӗ пур япалана та ҫӗнӗлле ӑнлантарса панине курса ӑнланчӗ. Ҫак ҫӗнӗлӗх ҫинчен вӑл ытларан ытла шухӑшлама тытӑнчӗ. Вӑраххӑн, хӑра-хӑрах, майӗпен утса пычӗ вӑл хӑйӗн ӗмӗртенпе ӗмӗтленнӗ, анчах уншӑн хупӑ пулнӑ алӑксем патнелле; алӑксем те ҫавнашкалах вӑраххӑн уҫӑлса пычӗҫ ун умӗнче; ҫакӑнпа пӗрлех вӗсем ӑна валли ҫӗнӗ пурнӑҫ патне каймалли ҫул уҫса пачӗҫ.

---

## VII. КОЛЧАКА ХИРЕÇ.

Чапаевăн нервисем пĕрре ытла та алхасса кайнăччĕ,— ĕç çук чухне вăл яланах çапла: пĕр-ик кун мĕн те пулин кĕтсе, тăхтаса тăмалла пулсассăнах, Чапаев палламалла марах улшăнса каятчĕ. Çакăн пек чухне вăл кирек кама та вырăнсăрах пырса çыхланатчĕ, вак-тĕвекшĕнех ятлаça пуçлатчĕ, наказани парассипе хăрататчĕ...

Унăн ăшĕнчи вăйĕ, калама çук пуян энергийĕ, хастарлăхĕ пĕрмаях тулалла тапса тухма туртăнатчĕ, çавăнпа та вăл хăйĕн хастарлăхĕпе, вăйĕпе ĕçре усă курма пултарайман чухне — вĕсем вырăнсăр ĕçе, кирлĕ мар çĕре кăлăхах кайса пĕтетчĕç.

Уральски дивизин фрончĕ вăл вăхăтра таçта Лбищенск çывăхĕнчеччĕ. Вăрçă ĕçĕсем лайăх та мар, начарах та марччĕ: пысăк поражени те тӳсместĕмĕр, анчах пысăк çĕнтерӳсем те тăваймастăмăр. Сасартăк вара — пысăк инкек килсе тухрĕ: пĕр ăнăçсăр çапăçура темле питĕ нумай халăх пĕтрĕ. Лбищенск леш енчи фронт хавшарĕ. Новоузенски полкпа Мусульмански полка аркатса тăкнăччĕ; вĕсене пулăшмаваскасах Курилово полкне янăччĕ. Çапла пысăк катастрофах пулса тăчĕ. Çитменнипе питех те кĕтмен çĕртен, уяр çанталăкра аслати çапнă пекех пулса иртрĕ. Кĕтмен те, шутламан та; ун пекех пуласси нимĕн палли те çукчĕ. Уральски дивизи начальникĕ — çапăçусенче пиçĕхсе çитнĕ çирĕп командир — малтанлăха вăл та пĕтĕмпех пăтранса кайсаччĕ, мĕн пулса тăнине çийĕнчех ăнланса илеймерĕ, мĕн тумаллине малтан пĕлсех çитеймерĕ. Чапаевпа канашласа пăхрĕ, мĕн тумаллине пĕрле шухăшласа йышăнчĕç.

Анчах фронта ĕлĕкхи вырăнтах çирĕплетсе çитерме пурпĕр май килмерĕ,— Уральска часах тăшмансем йĕри-

таврах çавăрса илчĕç,— çак ункăра вăл темиçе уйăх хушши тытăнса тăчĕ...

Инкек çинчен хыпар çитсессĕнех, ун çинчен центра пĕлтернĕ хыççăнах, Фрунзе çавăнтах ятарласа уйрăм комисси туса, çак инкекĕн сăлтавне тĕпчесе пĕлме хушрĕ; комиссие Чапаев та кĕнĕччĕ, комисси председательне Федора лартнăччĕ. Чапаев председатель пулма хăйне мар, комиссара хушнă пирки питĕ кăмăлсăрланчĕ пулас; анчах вăл кăмăлсăрланни кайран тин паллă пулчĕ. Чапаев ун чухне — кунта вăрçă ĕçĕн сăлтавĕсемсĕр пуçне, политикăллă сăлтавсем те пĕчĕк мар, пит пысăк мар, пит пысăк выранта тăма пултарни çинчен пĕртте шухăшламанччĕ те; анчах центр ĕç çине шăпах çапла пăхнă курăнать; çавăнпа пĕтĕм ĕçе ертсе пыма Клычкова хушнăччĕ.

Çийĕнчех тĕрлĕрен материалсем, документсем, тĕрлĕ приказсемпе распоряженисен, сводкăсен, телеграммăсен копийĕсене пухма тытăнчĕç... Чапаев Федортан Мергеневски ялĕ çине наступлени тăвасси çинчен калакан бригада приказне ыйтса илчĕ,— приказра çак ăнăçсăр ĕç мĕнрен килнине тĕпчесе пĕлмелли йĕр питĕ аван палăрса тăратчĕ; çавăнпа Клычков вăл приказа уйрăмах паха документ выранне хурса шутларĕ. Чапаев приказа тĕплĕн «тишкĕрсе» тухрĕ те, хăйĕн шухăшне машинисткăна каласа пырса, пичетлеттерме тытăнчĕ. Ларатчĕ вăл çапла, машинисткăна диктовать туса. Çав вăхăтра Федор пырса кĕчĕ.

— Приказа пăхса тухрăн-и, Василий Иваныч?—тесе ыйтрĕ.

— Ну, пăхса тухрăм, тейĕпĕр. Мĕн вара?

— Эпĕ те ун çинчен чылаях шухăшларăм... сӳтсе явăпăр пĕрле,— тесе сĕнчĕ Федор.

— Вуласа тухма пултаратăн, акă — пичетленĕ,— терĕ Чапаев.

Чапаев сассинчен, вăл хăйне хăй тыткаланинчен темĕнле кăмăлсăр пулни, çиелтентерех вĕçкĕнленсе калаçни уççăнах сисĕнсе тăчĕ, анчах Федор çакна ун чухнех ăнланса илеймерĕ-ха.

— Вуласа кăтарт-ха,— терĕ вăл,— калаçса пăхăпăр, тен, хăш-пĕр тĕле улăштармалла пулĕ...

— Нимĕн улăштарса аппаланмалли те çук кунта,— тесе касса татрĕ Чапаев.—Эсĕ ху çырнине улăштар, эпĕ мĕнле çырнă, çаплипех яратăп,—терĕ.

— Мĕншĕн апла тата?— тĕлĕнсе ыйтрĕ те Федор, Чапаев çапла сиввĕн калани ăна—чĕрине касса çурнă пекех туйăнчĕ.

— Çавăнпах ара... эсĕ «председатель» вĕт, çавăнпа хăвăн шухăшна хăвах пĕлтер те... Эпĕ вара — «спец»... «Спец» эпĕ, — терĕ.

Вăл, кăмăлсăр пулса, икĕ хут каларĕ çак сăмаха.

— Ну, мĕн павратăн-ха эсĕ,— тесе пăшăрханса ӳкрĕ Федор.— Мĕн пустуях павратăн? Мĕн пирки уйрăм хăтланмалла-ха? Пĕрле сӳтсе явăпăр та акă, пĕрлех ярăпăр.

— Çук, ĕнтĕ, çук,—тесе, кутăнлашма пăрахмарĕ Чапаев.

Клычковăн ку ыйту çинчен урăх калаçса тăрасси килмерĕ.

— Вула эппин,— терĕ те вăл, пукан çине кайса ларчĕ.

Чапаев хăй Уральски дивизи бригадин приказне критикăласа çырнине вуласа пачĕ. Вăл ăна чылаях тĕплĕн, вырăнлă, лайăх тишкĕрсе тухни курăнчĕ. Анчах Федор вăл çырнине кунтах сӳтсе явасшăн пулмарĕ, хăйĕн шухăшĕ çинчен уйрăм çырса яма шут тытрĕ.

— Мĕн калас тетĕн?— тесе ыйтрĕ Чапаев.

— Ман шутпа лайăх,— тесе тавăрчĕ Федор шăл витĕр.

— А мĕн, начар-им?— тесе, сассине сасартăк хытарса ыйтрĕ Чапаев...—Начарри начар та, манăн мар... çапла çав!—терĕ.—Эпир хамăр мĕн тунине пĕлетпĕр, анчах лере ав тĕрлĕрен финтифлюшкăсем...

Чапаев çак хаяр сăмахсене кам пирки каланине Федор ăнланаймарĕ.

— Çынна хĕссе, пусарса лартма хăтланаççĕ...—терĕ вăл çилĕллĕ сасăпа.— Çул памаççĕ. Анчах эпир йĕркине тупăпăр-ха, хамăра кăтартăпăр эпир!

Çапла калаçса, Чапаев «ылханлă штабсем» пирки тарăхса ятлаçрĕ-мĕн,—вĕсене вăл харампырсен, хăравçăсен, аслă вырăншăн çунакансен тата ытти тĕрлĕрен киревсĕр этемсен пуххи вырăнне хурса шутлатчĕ...

— Тăхта-ха, Чапаев, мĕн намăсланатăн çак эсĕ?— тесе, кăшт шӳт тукаласа каларĕ ăна Федор.— Нимĕн сăлтавсăр-мĕнсĕр — мĕн лапăртатса ларатăн? Тилпĕрен çисе кӳпĕнтĕн-и мĕн?

— Тахçанах кӳпĕннĕ, пăвăнса лармах пуçларăм ĕнтĕ,—терĕ те Чапаев, сăмахĕсенче тарăхса калană сасă

илтĕнчĕ.— Çапла çав... Пăвăнатăн... Анчах илмелли нимĕн те çук... Ман айăма, ачам, чакаланса кĕреймĕн, Чапаев хăйĕн ĕçĕнче хăй хуçа.

— Мĕн çинчен эсĕ? — тесе ыйтрĕ Федор.

— Çавăн çинченех, эпир академисенче вĕренменни çинченех... Çапла çав, эпир академисĕрех... Эпир мужиксем ĕçлетпĕр, апла та ĕç тухать... Генерал погонĕсемпе çӳремен эпир, апла пулин те, турра шĕкĕр, ун йышшисем те кашниех с т р а т е х мар...

— Ан мухтан, ан мухтан, Василий Иваныч, сана килĕшмест вăл... Ан тив сана ыттисем мухтаччăр... Эсĕ ху...—терĕ те Федор, пӳрнине тутисем патне тытрĕ...

Паçăр хăйне кӳрентернĕшĕн тавăрас тесе, унăн Чапаева мĕнле те пулин тĕртсе калас килчĕ... Мĕнпе тĕртесха? Чапаевăн чи ыратакан вырăнĕ — Федор çакна лайăх пĕлет — унăн пултарулăхне, унăн вăрçă ĕçĕнчи талантне, харсăрлăхне хисеплемесĕр калаçни пулатчĕ; кун çумне тата мĕн те пулин «штабсем» çинчен хушса хурсассăн, вăл вара пушшех ĕрĕхсе кайма пултаратчĕ. Ку самантра ăна ытлашши йĕкĕлтесе тăма та кирлех марччĕ, мĕншĕн тесен Чапаев унсăр та чылаях пăлханатчĕ.

— Стратеги пирки эсĕ ан шарла та луччă,— тесе персе ячĕ Федор.

— Мĕншĕн шарламалла мар тата? Ху ан шарла,— тесе тарăхса ӳкрĕ Чапаев.

Хăйне хăй алла илсе, лăпкăн курăнма тăрăшса, Клычков ăна хуллен:

— Акă мĕн, Чапай...— терĕ.— Çапăçма лайăх пултаратăн эсĕ, харсăр боец, пит лайăх партизан; анчах урăх нимĕн те çук вĕт санăн! Калаçса пăхар-ха пĕр пытармасăрах. Вăрçă ăслăлăхĕ тĕлĕшпе вăйсăр вĕт эсĕ, санăн ăна хăвăнах пĕлмелле... Ну, мĕнле стратег-ха эсĕ? Хăвах шухăшласа пăх-ха, ăçтан стратег пулас-ха санăн?

Чапаев хумханса турткалаша пуçларĕ; кашкăрăнни пек кăвак-сăрă куçĕсем вут пек хаяррăн çунма тытăнчĕç.

— Эпĕ начар стратег эппин?—тесе, кăшкăрнă пекех çухăрса пăрахрĕ вăл Федор çине.—Эпĕ начар стратег апла? Кай эппин эсĕ шуйттан патне çакăн хыççăн, к чорту!

— Эсĕ лăпкăрах тыт хăна ху,—терĕ ăна Федор савăнăçлăн, ыраттаракан вырăнĕнчен кăшт та пулин тивертсе илнĕшĕн хĕпĕртенипе.—Мĕн пăлханмалли пур-ха

кунта? Лайăх çар çынни пулас тесен, стратегин наукăллă никĕсне пĕлес тесессĕн, ăнлан эсĕ,—çаксене пурне те вĕренес пулать... Санăн вара — вĕренме вăхăту пулман; паллă мар-и мĕн ĕнтĕ?..

— Нимĕн те паллă мар мана... Нимĕн те паллă мар...—тесе, ун сăмахне пӳлчĕ Чапаев.—Ķирлĕ пулсан, хам çине эпĕ арми те илме пултаратăп, арми командующийĕ те пулма пултаратăп.

— Фронт командующийĕ те-и?—терĕ мăшкăласа Федор.

— А эсĕ мĕн тетĕн?

— Тен, главнокомандующи пулма та хирĕç мар пуль эсĕ?

— Çук тетĕн-и мĕн, пултараймастăп тесе шутлатăн-и мĕн? Ĕçпе паллашатăп, хăнăхатăп — пултаратăп та вара. Хам мĕн тăвас тенине йăлтах тума пултаратăп эпĕ, ăнланатăн-и?

— Мĕн ăнланмалла марри пур-ха унта...

Федорăн калаçма пуçланă чухнехи çилли иртсе кайрĕ, Чапаевран тăрăхласа ыйтас килни те пĕтсе ларчĕ; Чапаев хăй вăйне, хăй пултарулăхне çав тери вĕçĕмсĕр ĕненни ăна пĕтĕмпех тĕлĕнтерсе ячĕ...

— Эсĕ хăвăн вăйна ху ĕненни вăл—лайăх,—терĕ вăл Чапаева.—Çакăн пек ĕненмесĕр нимĕн те тухас çук. Анчах пуçна ытла каçăртмастăн-ши эсĕ, Василий Иваныч? Пустуй мухтанни çеç мар-ши вăл санăн? Виçине пĕлместĕн вĕт эсĕ калаçнă чухне, акă ăçта вăл инкек!

Тата пушшех ырă мар çутăпа çуталса кайрĕç Чапаевăн куçĕсем; вăл тарăхнипе нимĕн тума пĕлми пăлханса хумханчĕ, анчах çапах та Федор сăмахне пӳлмесĕр кĕтсе тăчĕ.

— Эпĕ-и!..—кăшкăрса пăрахрĕ вара вăл.—Эпĕ мухтанчăк-и?! Апла пулсан, çеçенхирсенче кам кĕрешрĕ-ха казаксемпе,—патронсăр, пушă алăсемпе; кам кĕрешрĕ тетĕн-ха эсĕ?—тесе тапăнса пычĕ вăл Федор çине.—Вĕсене мĕн? Мĕнле стратег вĕсемшĕн...

— Эпĕ те сана стратег тесе шутламастăп .Апла эпĕ те тĕрĕс мар калаçатăп эппин?—тесе тытрĕ ăна Федор.

Чапаев, нимĕн калама аптăраса, сасартăк шăпланчĕ, унăн пичĕсем хĕрелсе кайрĕç; вăл кулăшла, айван, ачалла ĕçпе лекнĕ чухнехи пек, труках нимĕн тума пĕлмен пек вăйсăрланса кайрĕ...

Федор ыйтăва юриех çак енĕпе çавăрса лартрĕ; ку пек тунипе вăл Чапаева ытла та тарăхса кайнă чухне чăтма çук нимĕн йĕркесĕр ятлаçассинчен пăрахтарма шутларĕ. Çакăн пек ятлаçни «лайăх мар» тенипе анчах мар, ку вăл Чапаева хăйне пысăк сиен кӳме пултарать тесе: ăна кураймăн çынсем илтĕç те çакна, кайран свидетельсемпех, алăри документсемпе ăна стена çумне пырса хĕстерĕç — ниçта кайса кĕреймĕ, калама çук лайăх мар ĕç пулса тухĕ, тесе шутларĕ Федор. Чапаев вара чăн та час-часах штабсене те, реввоенсоветсене те, Чекана та, особăй отделсене те, комиссарсене те—пурне те, ун тĕлĕшĕпе влаçĕ пуррине кăшт та пулин палăртма пултаракан çынсене пурне те пĕр шухăшламасăрах урăм-сурăм ятла-ятла вăрçатчĕ. Шавлатчĕ, ятлаçатчĕ, ылханатчĕ, юнатчĕ вара вăл, анчах пĕтĕмпех вырăнсăр: ăнлантарса пар эсĕ ăна — вăл йăлтах ăнланатчĕ, килĕшетчĕ, тепĕр чухне, вăраххăн пулин те, хăй тытнă шухăшĕнчен чакатчĕ. Анчах чакма, хăй пĕрре каланă сăмахне çеç те пулин каялла илме юратмастчĕ вăл. Сăмах майĕн каласан, вăл хăйĕн приказĕсене те нихçан та улăштармастчĕ; çавăнтаччĕ ĕнтĕ вĕсен уйрăмах ĕнентерекен вăйĕ.

Халĕ ĕнтĕ Чапаева, тĕрĕс мар сăмахпа тытнă хыççăн, Федор ăна ăса в ĕ р е н т м е шутланă ĕçе вĕçнех çитерме шут тытрĕ. «Ан тив кăшт иккĕленӳсемпе асапланса пăхтăр, нумайтарах вăхăта астуса юлĕ», тесе, вăл пӳлĕмрен тухса кайса, Чапаева тарăн шухăша ярса хăварма шутларĕ. Çавăнпа вăл, Чапаев çак кĕтмен-туман инкек сиксе тухнинчен кăшт тӳрленсе: «Эпĕ сан çинчен каламан вĕт... вĕсем çинчен анчах каларăм», тесе ĕнентерме пуçласассăн, Федор сывпуллашрĕ те тухса кайрĕ.

* * *

Кайран, çурçĕр тĕлĕнче килне таврăнсан, Клычков хăйĕн пӳлĕмĕнче Чапаев кĕтсе ларнине курчĕ.

Лешĕ, именкелесе, аллинче темĕнле хут татăкĕ йăвалакаласа ларатчĕ.

— Акă, вуласа пăхăр-ха,—тесе тыттарчĕ вăл Федора машинкăпа пичетлеттернĕ пĕчĕк çеç çыру татăкĕ.

Хумханнă чухне, е кӳреннĕ чухне, е кам та пулин кӳрентерессине кĕтнĕ чухне Чапаев çынна час-часах «эсир» тесе чĕнме пуçлатчĕ. Çакна Федор халь калаçнă

чухне те асăрхарĕ, çырура та çапла çырнине курса вуларĕ.

«Клычков юлташ,—тесе çырнăччĕ унта,—сире эпĕ хамăн çырăва лайăхрах вуласа пăхма ыйтатăп. Эсир çиленсе тухса кайнăшăн, эпĕ каланă сăмахсене эсир хăвăр çине илнĕшĕн, эпĕ питĕ кулянатăп; çакăн çинчен пĕлтерес терĕм сире; эсир мана ку таранччен нимĕнле сиен те кӳмен; анчах эпĕ çакăн пек тӳрĕ те кăштах вĕри çын пирки, хăш-пĕр çын çине тарăхнă пирки, эсир пурринчен именмесĕрех, хам шухăшăмсене йăлтах уççăн каласа патăм пулсан,—сирĕн уншăн çиленмелле марччĕ. Пирĕн хушăмăрта пĕр-пĕрин çине çиленмелли ан пултăр тесе, эпĕ хама вырăнтан кăларма ыйтса рапорт çырса парас тетĕп; çапла туни хамăн чи çывăх сотрудникпе килĕштермесĕр ĕçлессинчен лайăхрах пулĕ, тетĕп; çакăн çинчен пĕлтеретĕп те ĕнтĕ эпĕ сире, хамăн çывăх тусăма. Чапаев».

Акă çыру. Пĕр сăмах сиктерсе хăвармасăрах çырса илнĕ ăна кунта. Çак çыруран пысăк ĕçсем тухса кайма пултарнăччĕ: рапортне те вăл çырса хатĕрленĕччĕ ĕнтĕ, тепĕр минутран Чапаев ăна та кăларса кăтартрĕ. Федор çак ĕç çине сиввĕн пăхнă пулсан, е вăл ăна нимĕн шарламасăрах ирттерсе янă пулсан — ĕç «çӳлелле» кайнă пулĕччĕ те, кам пĕлет—темĕн пулса тăнă пулĕччĕ вара ун хыççăн? Тĕлĕнмелли кунта акă мĕнччĕ: Чапаев хăй çак дивизирех юлассине пĕртте хакламан пек туйăнчĕ; анчах çак дивизи йышне пугачевецсем те, резиновецсем те, домашкиновецсем те кĕреччĕç вĕт, вĕсем пурте Чапаевпа питĕ çывăх çыхăннă паттăр полксемччĕ. Кунта Чапаев характерĕн тĕп уйрăмлăхĕ курăнса палăрчĕ: чи пĕчĕк харкашу пиркиех, вак-тĕвекшĕнех чи хаклă ĕçе, чи хаклă япалана пĕр çаврăнса пăхмасăрах, пĕрре сулсах, пĕр самантрах парнене кӳме пултарас йăла уйрăмлăхĕ.

Çак самантра хăйне тата ытларах хĕртес пулсан вара — вăл пушшех киревсĕр «ĕçсем» тума пултаратчĕ.

Федор çырăва вуласа тухрĕ те, Чапаев еннелле çутăлса тăракан савăнăçлă сăн-пичĕпе çаврăнса:

— Çитĕ ĕнтĕ, юратнă Чапаев,—терĕ.—Ара эпĕ пачах та çиленмен вĕт; кăшт пăлханмалла пулчĕ пулсан, вăл пĕтĕмпех урăх сăлтавран килчĕ.

Сăлтавĕ пирки Федор халĕ нимĕн те шарламарĕ, ун ҫинчен тепĕр кунне тин вара каласа пачĕ ăна.

— Акă телеграмма,—кăтартрĕ Чапаев Федора.

— Ăҫтан ку?

— Штабран килнĕ приказ тăрăх пирĕн ыранах Бузулук еннелле тухса каймалла... Оренбурга каймастпăр... Пур ĕҫе те туса пĕтермелле те, халех тухса каймалла.

Шухăшласа пăхрĕҫ те, тухса каяссине ирччен хăварас мар, терĕҫ; пĕтĕм ĕҫе халех пĕтерсе, ҫĕрлех тухса кайма килĕшрĕҫ, мĕншĕн тесен Уральски дивизин ăнăҫсăр ĕҫĕсене пурĕпĕрех пĕр кун хушшинче вĕҫне ҫитиех йĕрлесе пĕтерес ҫукчĕ: вырăна кайса тĕрĕслес пулатчĕ, хăш-пĕр ҫитмен документсене шыраса тупас пулатчĕ т. ыт. те. Ҫаплах турĕҫ те. Ҫавăнтах дивизи штабне кайрĕҫ. Қам кирлине чĕнсе илчĕҫ. Қалаҫса татăлчĕҫ. Вара тепĕр сехет ҫурăран Уральскран Бузулука тухса та кайрĕҫ.

* * *

... Колчак вăл вăхăтра Уфана илсе, Атăл патнелле ҫывхарса килетчĕ. Ĕҫсем хăрушăлансах пыратчĕҫ. Самарăна кĕҫ-вĕҫ тăшман пырса тапăнас пекчĕ; унпа пĕрле Атăл тăрăхĕнчи ытти пысăк хуласем те хăрушлăхра тăратчĕҫ. Ҫакнашкал лару-тăрура—Атăл еннелле те чакмалла пулма пултаратчĕ. Анчах ку вăл Российăшăн пысăк йывăрлăх пулатчĕ. Хĕрлĕ Ҫар командованийĕ ҫавăнпа епле пулсан та чакасшăн пулмарĕ, Атăл тăрăхне сыхлас ĕҫе сарлакан тапратса ячĕ, мĕнле пулсан та тăшмана хирĕҫ тытăнса тăма шутларĕ, хальхи лару-тăрăва вăйпа улăштарса, тăшманран пуҫарулăха туртса илсе, ăна совет государствин центрĕнчен каялла хăваласа кайма шут тытрĕ. Тăшмана пуҫласа Бузулук районĕнчен хыттăн ҫапса ҫĕмĕрме тапратмалла пулчĕ, ҫавăнпа ку районта вăйлă ҫар чăмăрĕ пуҫтарса хатĕрлерĕҫ. 25-мĕш Чапаевски дивизие питĕ пысăк задача шанса панăччĕ: унăн Колчак ҫарне ҫамкинчен пырса ҫапса, ытти дивизисемпе пĕрле Атăл ҫывăхĕнчен хăваласа ямаллаччĕ, ҫывăхри вăхăтрах Уфана туртса илмеллеччĕ.

Сломихино станици енчен куҫса пыракан чаҫсемсĕр пуҫне, тата Уральск таврашĕнче ҫапăҫнă хыҫҫăн васкасах Бузулук ҫывăхне, Сорочинск районне куҫарнă талантлă ҫамрăк командирăн—Еланĕн бригадисĕр пуҫне, 25-мĕш дивизие тата темĕнле офицер командовать тăва-

кан бригадăна кĕртнĕччĕ (вăл офицер тепĕр икĕ эрнерен шуррисем енне тарса ӳкрĕ). Иваново-Вознесенскри полк та,—Самарăран аякра мар, Кротовка районĕнче тăраканскер,—çак бригадăрах шутланатчĕ.

* * *

Колчак питĕ сарлака фронтпа Пермь çине, Хусан çине, Самара çине тапăнса пыратчĕ. Çак виçĕ çулпа çĕр аллă пин çынлă шурă çар утатчĕ. Вăйсем икĕ енĕн те пĕр тан пекехчĕ — пирĕн çар унта ун чухне Колчакăннинчен кăшт çеç сахалтарахчĕ. Пермь урлă Вятка еннелле пырса, Колчак акăлчансемпе пĕрлешме ĕмĕтленетчĕ, Самара урлă — Деникинпа; çак хĕсĕк ункă ăшне хупса, йăлтах пĕтерсе пăрахма шутланăччĕ те ĕнтĕ вăл Совет Российине.

Чи пирвайхи хут ăна Самара еннелле пыракан çул çинче вăйлăн çапа-çапа тăн кĕртрĕç: çакăнта унран пуçарулăха туртса илчĕç, çакăнта унăн дивизийĕсемпе корпусĕсене чылаях арката-арката тăкрĕç, çакăнта вара унăн çарĕсем йĕркине çухатса пăсăла пуçларĕç. Çакăнта малтанхи хут çапса çĕмĕрнĕ хыççăн ăна вара нимĕн те пулăшаймарĕ — офицерсен батальонĕсем те, салтаксене çирĕп алăра тытни те, техника вăйлă пулни те,—унăн çарĕсем Уфана çитиччен те, Уфаран иртсен те пĕр чарăнмасăрах каялла, Çĕпĕрелле, мĕн пĕтсе ларичченех вăйлăн чакса тарчĕç. Белебей çывăхĕнчи çапăçусенче Каппель корпусĕнчи полксем кĕрешрĕç — вĕсем шурă çарăн чи лайăх пайĕччĕ, вĕсен шанчăклă тĕрекĕччĕ; анчах Хĕрлĕ Çар вĕсене те, ытти шурă полксене çĕмĕрнĕ пекех, хыттăн çĕмĕрсе тăкрĕ. Хĕрлĕ хум малалла пĕр чарăнмасăр куçса пычĕ; асапланса пĕтнĕ, çаратса пĕтернĕ халăх ăна хаваслăн кĕтсе илетчĕ.

Чугун çул станцийĕсемпе полустаноксем кăткă тултарнă бутылкăсем евĕрлехчĕ: пурте кĕшĕлтетеççĕ, таçта васкаççĕ, чупаççĕ, пĕр-пĕрне тĕртсе ӳкереççĕ, йăраланса тăраççĕ, каллех васкаççĕ, васкаççĕ, васкаççĕ... Поездсем килсе çитсен, вĕсем çинчен красноармеецсем ушкăнăн-ушкăнăн, ухмаха ернĕ пек сике-сике анса, сиккипе тĕрлĕ еннелле вĕçтереççĕ, пĕчĕк кирпĕч сарайĕсем умĕнче кĕпĕрленсе тăраççĕ, вĕретнĕ шыв илессе кĕтсе черете тăрса тухаççĕ, чейниксемпе шăнкăртаттараççĕ, васкаççĕ, тарăхаççĕ, ятлаçаççĕ; тепĕр пайĕ станци тăрăх, станци çумĕнчи

ял тӑрӑх чупса сапаланать, шӑрпӑк, пирус, вобла тавра-шӗ — алла мӗн лекнӗ ӑна иле-иле тултарать, майрасен сутма илсе тухнӑ сӗчӗсене ӗҫсе ярать, ҫӑкӑрӗсене илсе пӗтерет... Комендант патӗнче пӗр иксӗлмесӗр кӗпӗрленсе тӑракан ушкӑн чарӑнма пӗлмесӗр ҫуйӑхса протест тӑвать, йӗркесемпе йӗркесӗрлӗхсемшӗн мӗн вӑй ҫитнӗ таран ылханса ятлаҫать, мӗскӗнтен те мӗскӗн коменданта вӑрҫса тинкине кӑларать, тума май ҫуккине туса пама ыйтать, ҫук япалапа тупа туса шантарать, пулас ҫуккине ӗмӗтленсе кӗтет: е халех «бригада» пама, е машинист, е ҫӗнӗ паровоз тупса пама, е теплушкӑсем вырӑнне класлӑ вагонсем улӑштарса пама ыйтать... Комендант патӗнче: «ҫук, юрамасть, пулмасть», тесе каласассӑнах, хирӗҫсе ятлаҫни ҫумне хӑратса каланӑ сӑмахсем хушӑнаҫҫӗ, коменданта хӑйсем ӑссӗнех вӗрентсе хӑварассипе юнаҫҫӗ е хӑйсен хаяр командирне хӗтӗртсе яма пулаҫҫӗ.

Сасартӑк звонок пани илтӗнсе каять.

— Миҫемӗш?—тесе ыйтаҫҫӗ.

— Виҫҫӗмӗш.

Ятлаҫакансен ушкӑнӗ вара комендант патӗнчен тем пулнӑ пекех пӗрхӗнсе тухса, рельссем тӑрӑх таҫталла сиккипе чупать; тӗл пулакансене тӗрте-тӗрте ӳкерет, пӗрисене тӗлӗнтерсе хӑварать, теприсене ылхантарса ятлаҫтарать.

Виҫӗ звонок... Паровоз кӑшкӑрать... Эшелон тапранса каять,—тӑрса юлнӑ красноармеецсем вара нумайччен пӗчченшерӗн е ушкӑнӗ-ушкӑнӗпе эшелон хыҫҫӑн хӑваласа чупаҫҫӗ, вагон алӑкӗсенчен е пусма тыткӑҫисенчен тытса ҫакӑнаҫҫӗ, вагон тӑррисене улӑхса каяҫҫӗ... Е, чупа-чупа вӑйӗ пӗтнипе тарӑхса, аллисемпе сулаҫҫӗ те, ывӑннӑскерсем, рельс ҫине ларса юлаҫҫӗ, ҫапла вара ҫӗнӗ поезд киличченех станцире — тен, пӗр кун, тен, икӗ кун ҫапкаланса ҫӳреҫҫӗ — миҫе кун ҫапкаланса ҫӳрессине тӗрӗс ӑҫтан пӗлен ӑна?.. Пӗр поездӗнчен вӑл асӑрхамасӑрах тӑрса юлать, теприн ҫине лараймасть, виҫҫӗмӗшне ӗлкӗреймест...

Теплушкӑсенче тӗттӗм: ҫурта та, лампӑ та, пӗчӗк ҫеҫ хунар та пулин ҫук... Ҫара хӑмасем ҫинче, ҫӑпатасемпе, пылчӑклӑ атӑсемпе, ҫулланса пӗтнӗ котелоксемпе лапӑртаса, яшкапа чей тӑкса пӗтернӗскерсем ҫинче, сурса тултарнӑскерсем ҫинче, чикаркка тӗпӗсем пӑрахса тул-

тарнӑскерсем ҫинче, красноармеецсем выртса пыраҫҫӗ. Питех те час иртмеҫҫӗ вӑрӑм ҫӗрсем; тӗттӗмре, сивӗре ҫӗтӗк шинельпе ҫеҫ витӗнсе, пуҫ айне брезент сумка хурса выртса пыма ҫӑмӑлах мар. Станцисенче темӗнччен каллӗ-маллӗ турттарса ҫӳреҫҫӗ, пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна куҫараҫҫӗ, такампа пӗрлештереҫҫӗ, такамран уйӑрса илеҫҫӗ, пӗр чарӑнмасӑрах буферсемпе пыра-пыра ҫапӑнаҫҫӗ, чӑтма ҫук вӑйлӑн ҫапӑннипе мимесене кисрентерессӗнех туйӑнать... Тӗттӗмре аллисене пӗчӗк хунар тытнӑ темле ҫынсем кӑшкӑрашса ятлаҫаҫҫӗ... Пӗр-пӗр таҫти аякри путьсем ҫине «кӗтсе тӑма» кайса тӑратаҫҫӗ. Лере унта ҫакнашкал составсемех темӗн чухлӗ пыра-пыра чарӑнса, капланса тӑнӑ; вӗсен вагонӗсенче те чыхсах тултарнӑ красноармеецсем ларса пыраҫҫӗ,—ҫӳлти пӗчӗк чӳречесенчен пӑхса выртаҫҫӗ вӗсем, вагонсенчен сике-сике анаҫҫӗ, чупа-чупа тухаҫҫӗ, ҫӗнӗрен кӗрсе каяҫҫӗ, ҫӳлелле йӑраланса улӑхаҫҫӗ. Ҫапла «шӑнтса лартнӑ» эшелон тавра талӑкӗ-талӑкӗпех халӑх хӗвӗшсе тӑрать: пӗрисем «ӗҫпе» васкаҫҫӗ, теприсем ахаль ҫеҫ, ӑшӑнмалла чупаҫҫӗ, виҫҫӗмӗшӗсем — шпалсем, вутӑсем, ещӗксем, ытти хутмалли япаласем ӑҫта выртнине пӑхса ҫаврӑнма тухаҫҫӗ, ыттисем — «так ахальренех» ҫӗрӗ-ҫӗрӗпе станци таврашӗнче нимӗн ӗҫсӗр, мӗнле те пулин тӗлӗнмелле ӗҫ сиксе тухмӗ-ши тесе кӗтсе, ҫӑварӗсене карса ҫапкаланса ҫӳреҫҫӗ.

Нумай кун кайнӑ хыҫҫӑн, нумай вӑхӑт асапланса тертленнӗ хыҫҫӑн, станцисенче тӑрса ывӑннӑ хыҫҫӑн, ятлаҫса, тен ҫапӑҫса пӗтнӗ, перкелешсе те илнӗ хыҫҫӑн, юлашкинчен — ҫитрӗмӗр! Сарлакан уҫса янӑ теплушка алӑкӗсенчен япаласем вӑркӑна пуҫлаҫҫӗ; вӗсене темӗн ҫӳлӗш купа пӑраха-пӑраха тултараҫҫӗ те икӗ салтака штыксемпе сыхлама тӑратса хӑвараҫҫӗ, ыттисем пулӑшма... Унта хӑмасем тӑрӑх лашасене ҫавӑтса антараҫҫӗ, тӑлласа яраҫҫӗ, кӑкарса хураҫҫӗ, кӗтӗвӗпе хӑваласа пухаҫҫӗ, пур енчен те тӑрса хупӑрлаҫҫӗ, сыхласа тӑраҫҫӗ— тарса ан пӗтчӗр тесе. Вӑраххӑн тупӑсене, тӗрлӗ япала тиенӗ лавсене, автомобильсене, мӗнпур пурлӑха йӑлтах кӑларса пӗтереҫҫӗ...

— Пулчӗ! Пушанса юлнӑ поезд хӑйӗн пушӑ, халь пушшех те сивӗнсе юлнӑ теплушкисемпе тӑлӑххӑн пӑхса ларса юлать. Пурте шавлаҫҫӗ, ятлаҫкаласа илеҫҫӗ, пӑтрашаҫҫӗ, ӑнсӑртран уйрӑм команда пани киле-киле

илтӗнет, анчах ăна никам та итлемест-ха. Акă вара чăн-чăнах ҫирӗп команда янраса каять:

— Похода тапранăр!

Вара пурте чупкалама тапратаҫҫӗ — хăйсен ротисене, взводӗсене, отделенийӗсене васкаса шыраса ҫӳреҫҫӗ... Юлашкинчен, пурте строя вырнаҫса тăчӗҫ. Тапранчӗҫ. Сарлака та тикӗс ӗретсем чӳхенсе ута пуҫларӗҫ, лавсем кӗмсӗртетсе кусма тытăнчӗҫ, ӗҫлемесӗр тăрса каннă ла-шасем кӗҫенсе, тулхăрса илчӗҫ, пăшалсем, тупăсем кӗм-сӗртетни илтӗнчӗ, кунта та унта та ăнсăртран пăшал пе-ре-пере яраҫҫӗ. Пирвайхи ҫухрăмсене—тӳп-тӳрӗ ӗрет-семпе утрӗҫ, пирвайхи ҫухрăмсене — янравлă юрăсемпе хавассăн, чӗррӗн пычӗҫ; малалла вара... малалла кая юлнисене, ывăнса ҫитнисене, чирлисене лавсем ҫине лар-таҫҫӗ, ӗретсем пăтрашăнса каяҫҫӗ, юрлани те урăх ил-тӗнмест: халь ӗнтӗ пурин те — часрах канма ларасчӗ, тенӗ шухăш... Акă канма та ларчӗҫ, привал: пӗрисем ми-нутранах вилнӗ пек ҫывăрса каяҫҫӗ; теприсем, канăҫсăр-рисем, каллех юрра тытăнаҫҫӗ, купăс каланине итлеҫҫӗ, ташла пуҫлаҫҫӗ — алă ҫупса, ура хуҫса, шик! шăхăрса... ҫапла привал хыҫҫăн тепӗр привалччен, привал хыҫҫăн привалччен утса окопсене те ҫитеҫҫӗ.

Вăрҫă пурнăҫӗ тапранса каять.

Бузулук патне ҫитсе тăнă бригадăна Потапова коман-довать тума пачӗҫ; Сорочински бригадăпа Елань коман-довать тăвать, Шмарина вара, кайрантарахпа ҫав шур-рисем патне тарса кайнă чапсăр командир бригадине па-чӗҫ. Дивизи пӗр ҫӗре пухăнса тăчӗ. Ытти дивизисем те хăйсен вырăнне ҫитсе тăчӗҫ, армисем тăшмана тапăнма хатӗрленсе тăчӗҫ; пӗтӗм фронт тăшмана пуҫласа ҫӗмӗр-ме тытăнассине хытă кӗтсе тăчӗ.

«Ҫӗнтеретпӗр-и е пӗтсех лармалла пулать-и?»—акă мӗнле хаклатчӗҫ вăл вăхăтра нумайăшӗ ҫапăҫу пуҫла-мăшне.

«Тăшманран пуҫарулăха туртса илеймесен, хамăра Атăл леш енне хăваласа ярса, Колчак кăнтăрпа ҫурҫӗр енчен хăрушă унка хӗссе питӗрсе лартсассăн (ҫакă вăл питех те пулма пултарнă)—ун чухне вара Совет Российи малалла пурăнаять-и е пӗтсе лармалла пулать-и?»

Ҫапла ҫав! Ҫак мӗнпур хăрушлăх ун чухне чылайă-шӗ шутланинчен пысăкрахчӗ те, ҫывăхрахчӗ те. Вяткăна, Хусана, Самарăна, Саратова ун чухне белогвардеецсен

хумӗн малтанхи кӑпӑкӗсем пыра-пыра ҫапа пуҫланӑччӗ. Самара еннелле каякан ҫул Колчакшӑн чи кирлӗ, чи паха, чи кӑмӑллӑ ҫулччӗ: ку Россия чӗри патне ҫитмелли чи кӗске ҫул. Ахальрен мар ҫак ҫул ҫинчи вагонсем ҫине: «Уфа — Москва» тесе ҫыра-ҫыра хунӑччӗ.

Колчак ҫарӗн малти разъездчӗсем Бузулук ҫывӑхӗнчех курӑнкала пуҫларӗҫ,—юлашки кунсенче эпир Бугуруслана та ҫухатнӑччӗ. Лару-тӑру йывӑрланнӑҫемӗн йывӑрланса, хӑрушӑланнӑҫемӗн хӑрушӑланса пычӗ, тӑшман ҫывхарнӑҫемӗн ҫывхарса килчӗ.

Хӑш-пӗр тӗлӗшрен эпир хатӗрленсе ҫитеймен-ха, кирлине хӑшне-пӗрне илсе килсе ҫитереймен, хӑшӗ-пӗри пухӑнса ҫитеймен; снарядсем ҫитмеҫҫӗ, ҫурхи ҫулсем пӑсӑлса кайни кансӗрлет,—анчах кӗтсе тӑма вӑхӑт ҫук, пӗлӗтсем кунсерен ҫӑраланнӑҫемӗн ҫӑраланса пыраҫҫӗ, хаяр аслатиллӗ ҫумӑр ҫывхарнӑҫемӗн ҫывхарса килет...

Мӗнпур вӑй-хӑватне пухнӑ, пӗртен-пӗр ҫӗнтерес шухӑшпа тулнӑ Хӗрлӗ Ҫар ҫапӑҫӑва кӗрсе кайма хатӗр тӑрать. Вӑл полксен, бригадӑсен, дивизисен штыкӗсемпе шӑртланса тӗрекленнӗ. Сигнал ҫеҫ парасса кӗтет... Ҫак сигнал тӑрӑх — кӑкӑр ҫине кӑкӑр — Колчака хирӗҫ пӗтӗм фронт тапӑнса сикет, ҫак вилӗмлӗ кӗрешӳре хӑйӗн вӑй-хӑватне тӗрӗслесе пӑхать...

Апрелӗн 28-мӗшӗ... Нихҫан та манӑҫа тухман кун; ҫак кун калама ҫук пысӑк ӗҫ пуҫланса кайрӗ: Хӗрлӗ Ҫар Колчака хирӗҫ похода тухрӗ.

---

## VIII. ÇАПĂÇУСЕМ УМĔН

Бузулук халăхĕ, вăрçă çывхарса килет пулин те, урăх çĕре куçса кайма шутламарĕ те. Мĕнпур халăх çапăçăва хатĕрленсе ура çине тăчĕ. Парти комитечĕ, ĕç-тăвком, профсоюзсем пурте çакăнта тăракан дивизи тавра чăмăртанса пĕрлешрĕç, Хĕрлĕ Çара вĕсем пĕтĕм вăйне хурса пулăшрĕç. Вăрçă вăхăтĕнчи «пĕтĕмпех фронта валли» текен лозунга кунта,—ытти хупăрласа илнĕ центрсенче ку таранччен темиçе çĕр хут та пурнăçа кĕртнĕ пекех,—çине тăрсах пурнăçа кĕртсе пычĕç.

Бузулука тăшман паян-ыранах çитсе тапăнма пултарать; тăшман разъезчĕсем хуларан инçех мар, темиçе теçетке çухрăмрах курăнкала пуçларĕç. Бузулука пур енчен те, пуринчен ытла Бугуруслан енчен партипе совет работникĕсем,—хăйсен ялĕсенчи кулак-таврашĕсем шуррисене тытса пама ĕлкĕрейменнисем, Колчак разъезчĕсем те çул çинче тытма ĕлкĕрейменнисем,—пĕрерĕн-пĕрерĕн тара-тара килеççĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ çавăнтах çар ĕретне рядовой красноармеец пулса кĕретчĕç те, çĕнтерӳллĕ полксемпе пĕрле хăйсен ялĕсене çитсе, каллех хăйсен ĕçне тытăнатчĕç; теприсем вара çак полксенчех юлса, вĕсемпе пĕрле боецсем шучĕпе, рядовой красноармеец пулса, таçти инçетри пĕлмен çĕрсене çитиех пыратчĕç.

Çынсен шухăш-кăмăлĕ çапла хумханса пăтраннă вăхăтра, сывлăшра юн шăршипе тар шăрши сарăлнă чухне, çак условире пĕтĕмпех çĕнĕ самана, çĕнĕ тапхăр, аслă кун çывхарса килни сисĕнсе тăрать, çак кунсенчен пуçласа вăхăта та çĕнĕ хисеппе шутлама пуçламалла пек туйăнать. Хатĕрленме юлашки распоряженисем параççĕ, пурте пысăк ĕç тума хатĕрленсе пуçтарăнаççĕ, пĕр тĕл-

лев еннелле туртӑнаҫҫӗ. Ахаль чухне ҫав тери лӑпкӑ, ыйхӑллӑ хулара мотоциклсем ҫатӑртаттарса, шӑхӑртса ҫӳре пуҫларӗҫ, автомобильсем вӗҫтере-вӗҫтере иртме тапратрӗҫ, пур еннелле те юланутсем сиккипе тӗпӗртеттерсе ҫӳреҫҫӗ, красноармеецсен колоннисем ҫирӗппӗн те харӑссӑн пусса ирте-ирте каяҫҫӗ.

Дивизи штабӗ икӗ аслӑ урам кӗтесӗнчи ҫуртра тӑчӗ; ҫак центрта халӑх каҫпа та, кӑнтӑрла та пӗр вӗҫӗмсӗр чупкаласа хӗвӗшет,—юлашки кунсенчи тимлӗ, шавлӑ та васкавлӑ пурнӑҫ кунта фокусри пек пӗр ҫӗре пухӑнса курӑнса тӑрать.

Чапаевпа Федор, ҫак пӗр-пӗринпе ҫывӑх туссемпе уйрӑлми работниксем, хӑйсен хваттерӗнче сахал пулаҫҫӗ, пӗтӗм пурнӑҫӗ вӗсен штабра иртет. Центртан пӗр вӗҫӗмсӗр приказсем те распоряженисем килсе тӑраҫҫӗ; вырӑнсенчен те, хӑйсен чаҫӗсенчен, пӗрехмай тӗрлӗ хыпарсем пӗлтереҫҫӗ, тӗрлӗ ӗҫ ҫинчен ыйта-ыйта пӗлеҫҫӗ; телефонпа та, тӳрӗ провод тӑрӑх та вӗҫӗмсӗр калаҫаҫҫӗ. Чи вӑрӑм та чи хӗрӳ харкашса калаҫнисем, паллах, тӗрлӗ япала ҫитменни пирки тавлашни пулать. Анчах вӑл вӑхӑтра тӗрлӗ япала ҫитменни ыйтусем чухлех нумайччӗ, ҫавӑнпа чаҫсемпе (центрпа та ҫавах) калаҫнӑ чухне, яланах тенӗ пек, сасса хӑпартса калаҫма тиветчӗ: пурте е пӗрне-пӗри шантарса калаҫатчӗҫ, е пӗр-пӗринчен тархасласа ыйтатчӗҫ, е «ӗҫе пӗтӗмпех урӑх ҫулпа ярассипе» хӑратса ятлаҫатчӗҫ. Чапаева ун чухне «ҫав тӗрлӗ совнархозсемпе» пӗрре ятлаҫарах калаҫсассӑнах, мӗнпур кирлӗ япала пӗр самантрах кирлӗ чухлӗ тупӑнмалла пек туйӑнатчӗ. Курать е итлесе пӗлет акӑ вӑл ӑҫта та пулин пӗр ҫирӗм-вӑтӑр урапа пурри ҫинчен, пӗр тӑватӑ пичке урапа маҫӗ пурри ҫинчен, пӗлсе килет акӑ ӑҫта та пулин складра пӗр ҫӗр аллӑ аршӑн тӑла, е мӗн чухлӗ те пулин ҫӗлӗк, ҫӑматӑ, кӗрӗк выртнине те, тытӑнать вара аҫа-ҫиҫӗмле ҫӗмӗрӗлме, ҫаксене пурне те ҫар валли илесшӗн ҫапӑҫма. «Пӗтӗмпех фронта валли» текен лозунга вӑл ытла та тӳррӗн ӑнланатчӗ. Ҫапла тӗпренчӗкшерӗн, татӑккӗсӗкӗн пуҫтарнӑ япалапа Чапаев хамӑрӑн нумай миллионлӑ ҫара тӑрантарса, тумлантарса тӑма пулать, тесе шутлатчӗ курӑнать. Хуҫалӑх юхӑнса ҫитни ҫинчен, ҫавӑнпа кирлӗ япала ҫитменни ҫинчен вӑл час-часах калаҫатчӗ, анчах ҫак юхӑннӑ хуҫалӑх пурнӑҫра ҫӑннипе мӗнле пулнине вӑл тӗпӗ-йӗрӗпех курса, ӑнланса илме пулта-

раймастчӗ, пӗлейместчӗ куранать, ҫаванпа хӑй сӑмахӗсенчен нимӗнле вывод та тумастчӗ. Вырӑнсӑр нумай ыйтассинчен, ҫӑмӑлттайланса хӑтланассинчен ӑна ялан Клычков чаратчӗ; ҫакна тума ӑна, тӳррипех калас пулать, йывӑрах та марччӗ: Чапаева пӗр шарламасӑр килӗштерме пӗр-ик тӗплӗрех сӑлтав илсе кӑтартса пани те ҫителӗклӗ пулатчӗ.

Анчах шарламасӑр килӗшме ҫеҫ ҫав, шарламасӑр ҫеҫ! Хӑй сӑмахӗнчен чакма вара, сӑмахне каялла илме, мӗне те пулин тӗрӗс мар турӑм тесе, у н ҫ и н ч е н уҫҫӑн к а л а м а,—ӑна вара ҫук, ӑна ан та кӗтӗр Чапаевран, Чапаев ӑна нихҫан та тӑвас ҫук! Унтан та ытларах, сӑлтавӗсене те ӑна пит уҫҫӑн, ӗнентерӳллӗн анчах калаӑса пани пулӑшатчӗ,—нӑйкӑшса е мемлесе калаҫакан ҫынсене вӑл чӑтма ҫук кураймастчӗ; вӗсен сӑмахне, питӗ паха сӑмах пулсан та, пачах та хисепе илместчӗ.

Вӑл чи вӑйлӑ, татӑклӑ, ҫирӗп сӑмаха юратакан ҫынччӗ. Анчах унтан та ытларах вӑл хӑюллӑ, татӑклӑ, ҫирӗп, ӑслӑ ӗҫе юратакан ҫынччӗ!

* * *

Икӗ кунтан Еланъ бригади похода тухса кайрӗ. Унта кайса курмалла — вӑл Бузулукран пӗтӗмпе те хӗрӗх ҫухрӑмра анчах тӑратчӗ.

Пӗр тӑтӑшах ҫапӑҫусенче пулнипе асапланса пӗтнӗскер, икӗ хут аманнӑскер, лӑпкӑн шухӑшлама та, калаҫма та пултарайми пулса ҫитнӗскер, ҫирӗм иккӗрех ватӑ ҫын пек куранакан пулнӑскер,—ҫакнашкалччӗ ӗнтӗ бригада командирӗ Еланъ.

Вӑл 1917 ҫултах ялти пӗчӗк хуҫалӑхне пӑрахса Хӗрлӗ гвардие кайнӑ пулнӑ. Часах ӑна хӑй пурнӑҫӗнче Чапаевпа тӗл пулма тӳрӗ килнӗ. Чапаева Еланъ ӑслӑ сӑмахӗсемпе, ӗҫе хӑвӑрт тума пултарнипе, тепӗр чухне ӑссӑрлӑхпа юнашарах тӑракан тӗлӗнмелле пысӑк харсӑрлӑхӗпе кӑмӑлне кайнӑ пулнӑ. Чапаев ӑна малтан ҫуран ҫӳрекен разведка командирӗ тунӑччӗ. Кунта вара Еланъ хӑш-пӗр чухне виҫҫӗн-тӑваттӑнах ҫывӑракан казаксем патне, е ытларах — чехословаксем патне кайса килетчӗ. Ҫапла кӗтмен ҫӗртен тӑшман патне ҫитсе кӗретчӗ те, пӑшалсемпе кӗрслеттерме тытӑнатчӗ, ҫӗр ҫӗмӗрсе ҫӳретчӗ, хӗҫ-пӑшалсӑрлатса хӑваратчӗ, вара, пӑхаттӑн та, пӗрре кайсах вунӑ-вунпилӗк ҫын хӑваласа килетчӗ. Ҫакнаш-

кал хăюллă та каласан ĕненмелле мар харсăр ĕçсем унăн шутсăрах нумайччĕ; Чапаев хăй те унашкал ĕçсене çав тери юратса, темĕн чухлех тунă. Пĕрре Иргиз шывĕ çинче, Гусихăра, чехсене хирĕç çапăçнă чухне Еланĕн урине амантнă пулнă: ку тертленсе выртнă-выртнă та, суранĕ кăшт тӳрленсенех — каллех строя тăнă. Кăшт çӳрекелесенех, çĕнĕ çапăçура аллине амантнă. Уншăн суранĕ те хăрушă пулман, ăна операци тăвасси те, тӳрлетнĕ чухне тӳсме çук ыратни те хăратман, кусем пурте уншăн ниме те тăман, çапăçури юлташĕсенчен уйрălса кайни çеç тарăхтарнă ăна. Вара кунта та сывалса çитиччен выртман вăл — вăхăт çитиччен строя таврăннă.

Урал фронтĕнчи вĕçĕмсĕр хĕрӳ çапăçусем унăн юлашки вăй-халне пĕтерчĕç, ахаль те вăйсăр нервисене пĕтĕмпех аркатса пăсрĕç. Унăн хĕвелпе пиçсе хуралнă хыткан пичĕ унта та кунта турткаланса тăрать, сарлака сăмса шăтăкĕсем тискер кайăкăнни пек чĕтресе сывлаççĕ; мунчала тĕслĕ сарă çӳçĕсем саланса кайнă; хĕрлĕ, анчах халех пĕркеленсе ларнă çӳлĕ çамки чернилпа вараланса пĕтнĕ; хĕремесленсе кайнă чакăр куçĕсем металл тĕсĕпе типпĕн йăлтăртатса çунаççĕ; ĕçпе пиçĕхнĕ сарлака ал тупанĕсем хытса, картлашкаланса кайнă; кĕпе çухине вăл яланах, шăрăх та пăчă туйăннă пек, йӳле ярса çӳрет; сасси тикĕс мар, калаçнă чухне шавах чĕтрет, час-часах хăлхана çурса илтĕнекен çинçе сасă çине куçать. Еланъ калаçнă чухне унпа пĕрле унăн пĕтĕм типшĕм, çирĕп кĕлетки, мĕнпур шăнăрлă шăмми-шакки калаçать: калаçнăçемĕн пуçĕ унталла та кунталла турткаланать, урисем тапăртатаççĕ, чăмăрĕсем шаккаççĕ. Еланъ хăйĕн хакне лайăх пĕлет, вăл хăйне нихçан та, нихçан та никама та, хăйĕн командирне те кӳрентерме парас çук.

Çеçенхирте пысăк хисепе тухнă Чапаевăн стихийлă çĕкленсе, юмахри пек тĕлĕнмелле пулса кайнă чапĕ ăна та пырса перĕнсе, канлĕх памасăр кĕвĕçтере пуçланăччĕ. Çакнашкал чапа хапсăнни унăн пуçне çаврса янăччĕ, хĕрӳ ĕмĕчĕсемпе шухăшĕсем унăн сывлăшне пӳлĕнтерсех лартнăччĕ.

«Мĕншĕн-ха манăн та Чапаев пулас мар?»

Вăл яланах çак шухăш-ĕмĕтпе тулса çӳретчĕ, çакна пула вĕсем халĕ Чапаевпа пĕр-пĕринпе ĕлĕкхи пек ăшшăн, тӳррĕн тĕл пулса калаçма та пăрахнăччĕ; унччен хи

таса, çывăх туслăх тĕксĕмленнĕçем тĕксĕмленсе пычĕ. Чапаев Еланĕ улшăнса пынине сисетчĕ, анчах вăл ăна нихçан та хăй патĕнчен яма килĕшес çукчĕ: унăн хăйĕн чапĕ çакнашкал Еланьсене пула çуралса, ӳссе пынине вăл питĕ лайăх пĕлетчĕ. Елань те Чапаева—унăн пысăк чапĕшĕн,—чапĕн пайăркисем хăй çине те ӳкнĕ пирки,—хăйне чапа кăларнăшăн, Чапаев ăна валли калама çук сарлака çул уçса парса, ăна хăй хыççăн малалла тытса чарайми, илемлĕн илсе кайнăшăн—пăрахса уйăрлмĕччĕ унран.

Пĕр-пĕринпе кăмăллăн, туслăн тĕл пулса калаçма тытăнчĕç. Пĕр минут та сая ямасăр сĕтел хушшине, картă умне вырнаçса ларчĕç, приказсем çырма тытăнчĕç, тӳрĕ провод тăрăх та, телефонпа та калаçа пуçларĕç. Полк командирĕсене, хуçалăх начальникĕсене, врачсене, комиссарсене чĕнме ячĕç. Еçсем мĕнле тăнине пит тĕплĕн пĕлсе çитрĕç. Халь ĕнтĕ йăлтах, пурне те шута илсе хунă пек, ăнманни нимĕн те пулмалла мар пек, пĕтĕм ĕçе йăлтах, çырса хунă нотăсем тăрăх вылянă пек, туса пыма анчах пĕлес пулать. Нотăсем тăрăх лайăх выляс тесен, калама çук пысăк ăста пулас пулать! Елань ку тĕлĕшпе питех те пысăк ăстаччĕ, виçĕ кунтанах вара вăл тăшмансен пĕр дивизине пĕтĕмпех аркатса тăкни çинчен хыпар сарăлчĕ. Сĕтел хушшинче çапла ларнă хушăра картă тăрăх темиçе хут виçе-виçе пăхрĕç, сӳтсе яврĕç, пĕр-пĕринпе килĕшмесĕр нумайччен тавлашрĕç; пĕрне-пĕри сыхланма хушса ӳкĕтлерĕç; унтан вара калаçса татăлчĕç те, пуриншĕн те лайăх пек туйăнакан шухăша тупса йышăнчĕç.

— Халь ĕнтĕ полксене пухас пулать,—терĕ юлашкинчен Чапаев.—Тен, вĕсене те мĕн те пулин ăнлантарса парăпăр...

— Э... халех!

Елань сиксе тăчĕ те, пур командирсене те красноармеецсене хăвăртрах чи пысăк кинематограф çуртне илсе пыма хушрĕ.

— Чапаев юлташ доклад туса парать тесе калăр тата!—тесе кăшкăрчĕ вăл хыçран.—Ан тив итлеме хатĕрленччĕр!

Мĕн шухăшпа каларĕ-ши вăл çапла: чăнласах-ши, шӳт туса-ши, е «доклад тума» юратакан Чапаевран кулса-ши?—пĕлме çук. Ун сасси тăрăх нимĕн те уйăрса

илме çук,—сасси унăн шӳт тунă чухне те, команда панă чухне те пĕр евĕрлех.

Тепĕр çур сехетрен кинематографăн пысăк та нӳрлĕ, тĕксĕм залĕнче, сăрă шинельсем хушшинче вырăн улма ӳкмелĕх те юлмарĕ; итлеме пуçтараннисем кунтинчен те ытларах тулта тăрса юлчĕç, зала кĕрсе шăнăçаймарĕç. Сцена çинче сĕтел; сĕтел çинче, яланхи йăлапа, шыв тултарнă графинпа стакан, кĕмĕл авăрлă йăлтăркка шăнкăрав... Чапаев курăнсанах пурте пăшăлтатса пуçларĕç, васкавлăн ӳсĕркелесе илчĕç, çĕлĕкĕсене тӳрлетсе лартрĕç,—хăйсем те маттур йĕкĕт пек курăнасшăн пулчĕç. Вăл пирвайхи, çав тери вăйлă та пурте юратакан сăмаха: «юлташсем!» тесе каласа ярсанах вара — пĕтĕм сăнпитсĕр масса тачăрах пĕтĕçсе ларчĕ, юратнă сăмахсене пĕтĕм чунтан хапăлласа, ним шарламасăр кĕтсе итле пуçларĕ.

— Юлташсем! — терĕ Чапаев.—Колчака хирĕç вăрçма каятпăр. Çеçенхирте эпир сирĕнпе казаксене нумай пĕтертĕмĕр — вăрçăра çĕнтерме хăнăхман мар эпир. Колчак адмирал та пирĕнтен тарса хăтăлас çук...

Хальччен пĕр шарламасăр ларнă халăх тытса чарайми хавалăхпа, кăшкăрашнипе, хăлхана çурсах алă çупнипе — тăвăллăн çуйăхса кайрĕ. Итлекенсен чунĕ-чĕри сасартăках хĕрсе кайрĕ. Тепĕр икĕ минутран пур сăмаха та пушшех çивĕч те хĕрӳ кăмăлпа илтсе йышăна пуçларĕç: пĕр пуслăх сăмах виçĕ пус тăракан пулчĕ, виçĕ пуслăх сăмаха пĕр тенке хакла пуçларĕç. Чапаевăн запасра халăх кăмăлне каякан темиçе пуплев пурччĕ, вăл вĕсене нихçан та сăмах хушшине кĕртсе хăвармасăр иртместчĕ. Çак пуплевсем вĕсем, тӳррипе каласан, нимĕн сиенсĕрччĕ, илемлех те марччĕ вĕсем; анчах кăмăллă çын каланипе хĕрсе кайнă аудиторишĕн, ытлашши вĕренмен çынсемшĕн вĕсем тем териех паха пек туйăнатчĕç.

— Эпĕ, юлташсем, ĕлĕкхи генерал мар...—тесе, таккшине юнаса илчĕ тарăхса кайнă Чапаев.—Генерал вăл, таçта виççĕр çухрăмранах, çав-çав сăрта хăть мĕнле пулсан та илмеллех, тесе приказ парса ларать. Унта артиллерисĕр пырса кĕме те çук, унта вăтăр йĕрке таран йĕплĕ пралук каркаласа лартнă, теççĕ ăна... Вăл çапах та, йӳтесе шуралнă шуйттан, каллех приказ ярать: «Гимнастика тума вĕрентнĕ-и сире? Сикме пĕлетĕр-и эсир? Акă — сикĕр ĕнтĕ халĕ!»—тет.

Ку тӗлте итлесе ларакансем кирек хӑҫан та пӗр харӑс ахӑлтатса кулса яратчӗҫ, оратор сӑмахне темӗн пекех кӗрлесе ырласа йышӑнатчӗҫ: ҫак пуриншӗн те паллӑ, кӳрентерми сӑнлӑх итлекенсене чунтанах кӑмӑла каятчӗ, чӗрисене шавах тӗл пырса тиветчӗ.

— Эпӗ вара — генерал мар,—терӗ малалла Чапаев, тутисене чӗлхипе ҫулакаласа, пӳрнипе уссинчен чӗпӗтсе илсе,—эпӗ яланах хам сирӗнпе, хам хӑть хӑҫан та малта; хӑрушлӑх килсе тухсан, вӑл пуринчен малтан мана хама пырса тивет... Малтанхи пуля ман енне вӗҫсе килет... Анчах чун вӑл пурин те пурӑнасшӑн вӗт,—камӑн вилес килтӗр-ха?.. Ҫавӑнпа наступление кайнӑ чухне эпӗ сире — пурин те чӗрӗ юлмалли, хамӑн та усӑсӑр пӗтмелле мар вырӑн шыраса тупса ертсе пырӑп... Акӑ мӗнле ҫапӑҫатпӑр эпир, юлташсем...

Пӗтӗм сӑмахне вӑл ҫакӑн пек кӑмӑлпа калатчӗ, ҫакӑн евӗрлӗ сӑмах ҫаврӑнӑшӗсем каласа тултаратчӗ. Анчах тивӗҫлипе хакласан, пухусенче вӑл нихҫан та нумай калаҫма юратмастчӗ: калаҫма пултарайманран мар, кӗске калани витӗмлӗрех пулнине пӗлетчӗ вӑл.

Чапаев каласа пӗтернӗ хыҫҫӑн, Елане тухса калама хӗн пулчӗ вара, Федор калани те вӑйлах пулаймарӗ. Сӑмахсем тухса каланӑ хыҫҫӑн—концерт пуҫланчӗ. Вӑл ҫав тери тӗлӗнмелле импровизаци пулчӗ, ун пек концертсене ҫав кунсенче анчах, ҫитменнине тата фронтра ҫеҫ курма пулатчӗ.

Юлашки ораторӑн юлашки сӑмахӗсем илтӗнми пулсассӑнах,—ун сӑмахӗсем сывлӑшра янраса тӑнӑ пек туйӑннӑ чухнех, пурте малалла урӑх сӑмахсем каласса кӗтсе тӑнӑ пек туйӑннӑ вӑхӑтрах,—сасартӑк сывлӑша купӑс сасси янратса ячӗ. Аҫтан килсе кӗнӗ вӑл, ҫак купӑсҫӑ, хӑҫан сцена ҫине хӑпарса ларма ӗлкӗрнӗ — ӑна никам та курман; анчах вӑл такӑшӗ куранмалла мар, илтӗнмелле мар хушса тӑнӑ тӑрӑх айкашни ним иккӗленмелле мар паллӑ пулчӗ. Мӗн янраттарса ячӗ-ха вӑл! Камаринскине... Ҫитменне вӑл ҫав тери хавассӑн та ҫӑмӑллӑн выляса ячӗ,—ташлас килнипе урасем хӑйсем тӗллӗнех вылянса, тӑпӑртатса илчӗҫ. Кӗҫех Чапаев сцена варрине маттур йӗкӗт пек сикрӗ тухрӗ те — яра пачӗ ташша... Эй ячӗ, эй ячӗ!.. Малтан акӑш пек, авкаланса, сцена тавра ҫаврӑнса... Унтан ура кӗлипе шаклаттарса, чечӗтка ҫаптарса... Пин ытла халӑх шавласа, кӗрлесе,

алă çупса ярсассăн, вара,—вăл хăйĕн хитре кăна кĕмĕл хĕçне сулахай аллипе хăй çумне пăчăртаса тытрĕ те, урисене хутлатса ташла пуçларĕ,—шпорĕсем çеç чăнкăртатса кайрĕç, калпакĕ хăяккăн кайса ларчĕ. Курпун кăна сăмсаллă, слон куçĕсем пек пĕчĕк куçлă купăсçă — кутамас кăна Вятка йĕкĕчĕ,—çав тери телейлĕн кулкаласа савăнса ларчĕ. Шухăшласа пăхăр-ха хăвăрах: Чапаев хăй ташлать вĕт унăн нумай вылянипе сассине пăснă купăсĕн çеммипе!

Чапаев юлашки хут йĕкĕтле çăмăл сиксе илчĕ те,—пĕр енне пăрăнса кайса тăчĕ; кĕскинчен тĕтĕм тĕслĕ, чылаях кирĕкленнĕ тутăрне кăларса, хăйĕн тарланă, савăнăçлă пит-куçне шăлса илчĕ...

Тепĕр сехет хушши пĕр пушанмасăр кĕрлесе тăчĕ сцена çийĕ: ташлакансем халь пĕчченшерĕн мар, ушкăнĕ-ушкăнĕпех сике-сике тухаççĕ. Ташлас текенсем çав тери нумай пирки ăмăртса ташланă пекех пулчĕ. Ытлашши нумай ташлакансене сцена çинчен пĕр хĕрхенмесĕрех хăваласа яраççĕ: хăвăнне ташларăн — çитĕ, теприне вырăн пар! — тенĕ пек.

Ташланă хыççăн декламаци туса калакансем тухрĕç: каларĕç-тĕк каларĕç вара тĕрлĕрен кирлĕ-кирлĕ мара, ахлатсах тĕлĕнĕн. Ун чухне фронтра кĕнекесем те, лайăх сборниксем те, революциллĕ юрă кĕнекисем те çукчĕ,— фронта вĕсем сахал леккелетчĕç; хăйсем шухăшласа кăларнă такмаксемпе халăх хушшине сарăлнă çар юррисенчен пуçне, красноармеецсем урăххине сахал пĕлетчĕç.

Декламаторсем хыççăн юрлакансем çухăрашма тытăнчĕç: вĕсен те мĕн юрласси çинчен ытлах шухăшласа туса тăрасси пулмарĕ, пуçĕсене мĕн пырса кĕнĕ, çавна юрларĕç. Ак тамаша!.. Анчах савăнăçлă, илемлĕ, нумай тĕслĕ тамаша. Походсем хыççăн, йывăр çапăçусем хыççăн, окопри вĕçĕмсĕр кичемлĕхпе çурма-выçăллă пурнăç хыççăн,—çав тери савăнăçлăн хавасланса канаççĕ красноармеецсем! Кайран вара пур çĕрте те — пӳртсенче те, ирĕлсе пылчăкланнă урамсенче те ушкăнăн-ушкăнăн пухăнса, сĕтел хушшинче те, витере те, хĕвелçаврăнăш катса ларнă çĕрте те — сăмах кунĕпе çак савăнăçлă митинг-концерт çинчен анчах янраса тăчĕ... Çак асăнса калаçнă сăмахра Чапаев чи варринчи вырăнта тăрать: акă епле командир пирĕн, çавăн пеккисене юратаççĕ те ĕнтĕ красноармеецсем! Паян ирхине, шурăмпуçпех ан тив вăл

цепьсене, колоннăсене тĕтреллĕ сивĕ уй-хирсем урлă çапăçăва, атакăна илсе кайтăр, каçхине вара весемпе пĕрле купăс çеммипе «камарински» çаптартăр... Вăл вăхăтсенче чăнахах та шăпах с а к ă н п е к командир, çак хресчен масси çуратса кăларнă, унăн мĕнпур уйрăмлăхĕсене палăртса тăракан командир кирлĕ пулнă пулĕ çав.

Масса ӳссе çитĕнсен — ку та кирлĕ пулмĕ. Сăмахран, Иваново-Вознесенскри пир тĕртекен рабочисен полкĕ валли çакнашкал Чапаев ун чухнех те кирлĕ пулман ĕнтĕ: унта унăн çиелтен шăйăрттарса каланă сăмахĕсем никама та кирлĕ марччĕ, унта лăпкă ăстăнлăха вĕçкĕнчĕклĕ харсăрлăхран мала хуратчĕç, унта «камарински» ташлама каяссинчен калаçусемпе пухусене çӳреме ытларах юрататчĕç, унта Чапаевпа тĕлĕнсе калаçмастчĕç; ăна курсан, савăнса хĕпĕртенипе пичĕ-куçĕсене чарса пăрахмастчĕç, хăйсемпе пĕр тан çынпа калаçнă пек калаçатчĕç. Çавăнпа та Чапаев Ивановăри пир тĕртекен рабочисен—çынна питех мухтама юратман полкне пырса çӳреме кăмăлласах каймастчĕ.

Полксем тăрăх ĕçпе паллашса çӳренĕ чухне — хăй тĕллĕнех, малтан калаçса татăлмасăр-тумасăрах, ĕç çапла йĕркепе пулса пыратчĕ: Федор командирсемпе пуринпе те калаçса курма ĕлкĕрейместчĕ, Чапаевăн вара ячейка ĕçĕпе, политикăллă ĕçпе паллашма вăхăчĕ çитместчĕ. Анчах пĕри тума ĕлкĕрейменнине тепри пурĕпĕр туса ĕлкĕретчех. Малалла кайнă чухне вара, çул çинче калаçнă хыççăн, полкăн пĕтĕм пурнăçĕ ывăç тупанĕ çинчи пек лайăх курăнатчĕ. Килĕштерсе, лайăх пурăннă. Лайăх, килĕштерсе ĕçленĕ.

Колчака хирĕç пĕр харăс наступлени тума пуçланă вăхăтра юр васкасах ирĕлме тытăннăччĕ ĕнтĕ; çырмасенчи пăрсем çуркаланса пĕтсе кайма тапратрĕç; малтан тăвайккисенче, кайран лапамсенче те часах, юр ирĕлсе пĕтсе, тăпра курăна пуçларĕ; пĕчĕк çырмасемпе шырлансем çула пăсса пĕтерчĕç; юрпа çăрăнса пĕтнĕ пылчăк тăрăх е çӳхе пăр çийĕпе тупăсемпе мар, юланутпа та, хăшпĕр вырăнта çуран та иртсе çӳреме май çукчĕ. Çуркунне шавласа, кĕрлесе çитрĕ.

Çапла ĕнтĕ, иртсе çӳреме çав тери хĕн пулчĕ. Хĕрлĕ Çар малтанхи кунсенче малалла вăраххăн пыни кăштах çакăнтан килчĕ те ĕнтĕ. Анчах кăшт çеç çав,—сăлтавсем кунта урăх та пулнă. Чи малтан пыра-пыра çапнă

хыççăн — Колчакăн малти çарĕсем, тĕмле шухăша кайнă пек пулса, чарăнса тăчĕç. Çак вăхăтрах шуррисене пур енчен те çапа-çапа çĕмĕре пуçларĕç. Тарас Шевченко полкĕ хĕрлисем енне куçни ку вырăнта шуррисен картне пĕтĕмпех пăтраштарса ячĕ, çав вăхăтрах вăл кунта çапăçакан красноармеецсен хастарлăхне труках çĕклентерсе ячĕ. Тăшмана сывлăш çавăрса илме парас мар тесе, Хĕрлĕ Çар ăна хĕснĕçем хытăрах хĕсе пуçларĕ. Тăшман фрончĕ чăтаймасăр аркана пуçларĕ. Вăрçăри пуçарулăха эпир хамăр алла илтĕмĕр. Пирĕн ĕçсем çĕнтерӳ еннелле улшăнса кайнине çивĕч куçлă çынсем кăна мар, салтаксем те туйса илчĕç. Шанчăксем ӳснĕçем ӳссе пычĕç. Вăй-хал хутшăнсах тăчĕ. Сарăлса пыракан наступлени çĕнтерӳ суна пуçларĕ.

## IX. БУГУРУСЛАНА

Асран кайми паллă кун вара похода пĕтĕм фронт пĕр харăс тапранса тухрĕ; уйрăм çапăçусем, паллах, унччен те пĕрмаях пулатчĕç.

Фронтра антрактсем пулмаççĕ.

Апрелĕн çирĕммĕш кунĕсенче тăшманпа пирвайхи çапăçусем пулса иртрĕç. Вăл ун чухне Бугурусланран Бузулук еннелле çĕнтерсе пыратчĕ. Еланĕ бригади, хăй полкĕсене Боровка шывĕн сулахай хĕрри тăрăх вырнаçтарса тăнăскер, шуррисем çапла хĕссе килнине чарма тăрăшса çапăçатчĕ. Полксене кунта çурхи тарăн шывсем шарлаттарсах юхнă вăхăтра пăсăлса пĕтнĕ çулпа килсе çитме питех те кансĕр пулчĕ. Тупăсене турттарса пыма мар, пулеметсене куçарма та питех те йывăрччĕ; çавăнпа вĕсене михсем ăшне пайăн-пайăн уйăрса чиксе илсе çитернĕччĕ. Боровка шывĕ патне çитсенех, çапăçусем пуçланса кайрĕç те вара, мĕн Уфана çитиччenех вĕсем пĕрре те чарăнмарĕç.

Бугуруслан таврашĕнчи çапăçусенчен пĕринче Еланĕ хăй кĕçех шуррисен аллине лекмерĕ, ăнсăртран телейпе анчах çăлăнса тухрĕ. Пĕрре вăл Вихорьпа пĕрле, хăйсемпе пĕр çитмĕл юланутлă салтак илсе, тăшман тылне кĕрсе кайнăччĕ те, унта вĕсен батареи пĕр вар тăрăх иртсе пынине асăрханăччĕ. Вĕсем батарея патнелле чуптараççĕ, анчах çывхарса çитеспе, тупă патĕнчи артиллерист-офицерсем, вĕсем кам иккенне чухласа илеççĕ те, красноармеецсене тупăсенчен картечьпе пеме тытăнаççĕ. Тупă патĕнчи салтаксем пересшĕн пулман пирки офицерсем вĕсене хĕç тӳрчĕпе, револьвер авăрĕпе хĕнеме тытăнни те курăна пуçланăччĕ ĕнтĕ Еланьсене, анчах вĕсен пурĕпĕр нимĕн тума та май пулман. Çакна курсан, Еланьпе Вихорь, хăйсен отрячĕн пысăкрах пайне батаре-

йăна аякран çавăрса илме яраççĕ те, хăйсем кавалеристсен пĕчĕк ушкăнĕпе тепĕр вар тăрăх пытанса пырса, тупăсем тĕлнех çил пек вĕçтерсе тухаççĕ. Ăнран кайнă офицерсем аллисене маузерсем ярса тытаççĕ, анчах пурĕпĕр кая юлаççĕ:— Вихорь вĕçтерсе çитет те, пĕринне пуçне касса çурать, теприне лашипе таптатать; ыттисене хăйсен салтакĕсемех çĕр çине персе ӳкерсе йăвалантарма тапратаççĕ е аллисене çурăмĕсем хыçне туса, тытса тăраççĕ. Пĕтĕм ĕç тĕлĕнмелле хăвăрт пулса иртет; салтаксем çак хĕрлĕ юланутсем тупăсем патне вĕçтерсе çитессе кĕтсех тăнă пек туйăнать. Офицерсене тытса тăракан салтаксем хăйсене тивмесĕр хăварма тархасласа ыйтнă пек тилмĕрсе пăхрĕç, ыттисем аллисене çӳлелле çĕклерĕç. Офицерсене пĕрне те хăвармарĕç, салтаксене нихăшне те тивмерĕç. Тупписенчен шуррисен çак батарея çитсе пулăшасса кĕтнĕ полкĕ еннелле пеме пуçларĕç; полкĕн вара, нимĕн тума çуккине кура, ирĕксĕрех наступлени тăвакан хĕрлĕ чаçсене парăнмалла пулнă. Çак ĕçе туса пĕтерме Вихоре хăварса, Еланъ хăй, хăйпе пĕрле пĕр вунă юланут илсе, малалла обоз патнелле вĕçтерчĕ; салтак гимнастеркисем тата атă тавраш тиенĕ лавсем çуммипе юрттарса пынă чухне: «Çак япаласем пурте красноармеецсем валли пулаççĕ вĕт!» тесе савăннипе, вĕсен чутах пĕтĕм сывлăшĕ питĕрĕнсе лармарĕ. Обозниксем хирĕç тăмарĕç: пĕрисем çак кĕтмен япала сиксе тухнине кура пĕтĕмпех ăнран кайнăччĕ, теприсем — обоза каялла çавăракансене «хăйсенни» вырăнне хурса: «Обоза урăх çулпа яраççĕ пулĕ», тесе шутланă. Çапла вара чухăнланса çитнĕ хĕрлĕ полксен аллине пĕр труках темиçе çĕр лав пурлăх лекрĕ.

Обозсенчен инçех те мар дивизи штабĕ тăнă. Хĕрлисем тапăнни çинчен илтсен, унта пурте, ним тума аптăраса, хыпăнса ӳкнĕ: унашкал кĕтмен çĕртен тапăннă чухне тăшман вăйĕ яланах пысăккăн курăнать; çакăнтан килет те вара ун пек чухне «налёт тăвакансем» çăмăллăнах çĕнтерни, темĕн чухлĕ япала туртса илни. Халь те шăпах ытти чухнехи пекех пулса тăчĕ: вĕсенчен никам та нимĕне те, никама та организацилеме шутламан та, никам та нимĕне те тĕплĕн курса пĕлсе, ăнланса илме тăрăшман,— кашнин хăйĕн пуçне çăлασси çинчен анчах шухăшлама вăхăт пулнă. Урама пуринчен малтан дивизи начальникĕ — Золотозубов полковник сиксе тухрĕ; вăл

дивизири пуппа пĕрле штаб умĕнче тăракан хурал тарантасĕ çине сиксе ларчĕ те, тара пуçларĕ. Йĕри-таврах хĕвĕшсе чупма тытăнчĕç, çухăрашса кăшкăра пуçларĕç; пурте ятлаççĕ, юнаççĕ пĕр-пĕрне...

Вунă юланутлă красноармеец вара çак хăраса ӳкнĕ штаб çыннисем хушшинче тăвăл пек вĕçтерсе çӳрерĕç; хăйсем çуйăхни-çухăрашнипе, пăшал пенипе, кăшкăрса парăнма хушнипе — ахаль те пăтрашăнса пĕтнĕ халăха вĕсем пĕтĕмпех йĕркерен кăларчĕç. Еланъ дивизи начальникĕ хыççăн хăваласа вĕçтерчĕ; ăна вăл, хĕçĕпе касма хатĕрленсе, хăваласа çитсех пыратчĕ ĕнтĕ, анчах унпа пĕрле ларса пыракан пупĕ çак вăхăтра хыçалалла çаврăнчĕ те, персе ячĕ; пуля Еланъ лашине малти уринчен тиврĕ; вăл уксахлама тытăнса, юла пуçларĕ. Вара лешсем тарантасне чарчĕç те, полковник çĕре сиксе анса, маузерпа пере пуçларĕ. Иккĕмĕш пуля лашана пуçĕнчен пырса тиврĕ, лаша тайкаланса, çĕре персе анчĕ. Лаша ӳкнĕ чухне Еланъ çапах та хăй урине йĕнер пускăчинчен кăларса илме ĕлкĕрчĕ; çĕре сиксе ансанах, вăл çывăхри вăрман еннелле тапса сикрĕ. Вăрман хĕрринче вăл пĕр хресчен, урапине икĕ питĕ селĕм лаша кӳлнĕскер, пынине курчĕ. Еланъ тӳрех ун патне. Кун пек чухне калаçса тăма вăхăт çук,—Еланъ ăна револьверĕпе хăратрĕ те, пичеве кӳлнĕ лаши çине утланса та ларчĕ; вара пичев кантрине хĕçĕпе касса татса, лашине каялла çавăрчĕ те, хăйĕн юлташĕсем юлнă çĕрелле вĕçтерчĕ. Анчах штаб тĕлĕнче çынсем ку вăхăта кăштах лăпланма ĕлкĕрнĕ, хăйсене пăлхатса çӳрекенсен вăйĕ питех пысăк маррине чухласа илнĕ; юлташĕсенчен никам та курăнман пирки Еланъ: «те вĕсене хăваласа янă, те çапа-çапа ӳкернĕ», тесе шухăшларĕ; штаб вырнаçнă пӳрт çумĕпе вĕçтерсе иртнĕ чухне кăна Еланъ юнланса пĕтнĕ красноармееца, лаши-мĕнĕсĕрех тăрса юлнăскере, курчĕ. Ун патне вĕçтерсе çитсе, ăна хăвăртрах хăйĕн мăнтăр лашин сарлака купарчи çине сиксе ларма хушса кăшкăрчĕ. Нумай шухăшласа туса тăмасăрах, лешĕ чупса пычĕ те, Еланъран çакăнса, сиксе ларчĕ,—Елане кĕçех çĕре туртса антармарĕ.

Çапла вара иккĕн обозсем хыçĕпе, пӳртсем хыçĕпе, хăйсен красноармеец значокĕсене татса пăрахса, вĕсем инçетре курăнакан сăрт еннелле вĕçтерчĕç; вĕсен полкĕ, Еланъ шутланă тăрăх, çавăнта пымалла пулнă. Акă мал-

та, çул варринчех юланутлă çынсем тăни курăнчĕ, ниçтан пăрăнса кайма çук.

Мĕнле çынсем-ши ку?

Çывăхарах пырса çитсен, лешсем хăйсеннисем пулнине курчĕç; вĕсем обозран пăранса юлнă-мĕн; халĕ вĕсем кунта шуррисем персе тăракан уçланкă урлă хăйсен инçетрен куранса килекен полкĕ патне епле вăшлаттарса иртсе каймаллине пĕлмесĕр аптăраса тăраççĕ. Еланĕн лаши вăйлă пулин те, кунашкал ĕçе юрăхлах мар. Çакна Яшка Галах ятлă чи лайăх, харсăр красноармеецсенчен пĕри часах ăнланса илчĕ.

— Командир юлташ,— терĕ вăл,— акă ман лашана ил, эпĕ çуран та кайăп. Тытас-тăвас пулсан, эпĕ мобилизаципе килнĕ çын, тейĕп; тен, тивмĕç,— хăш-пĕр чухне тивмеççĕ ун пеккисене.

Шухăшласа тăмалли çук. Еланъ мăнтăр кĕсре çинчен сиксе анчĕ те, ун çинче хăйĕн юлташне хăварса, хăй Галахăн çивĕч лаши çине утланса ларчĕ. Вĕçе-вĕçĕн тăсăлса вĕçтере пачĕç. Яшка Галах пĕчченех тăрса юлчĕ; каялла таврăнчĕ те вăл, обоз еннелле тĕнккерĕ. Вара полка вăл виçĕ эрнерен тин таврăнчĕ; вăл: вĕсен обозĕнчех пытанса пурăнтăм, тесе калатчĕ; ялтан тин çеç мобилизаципе килнĕ салтаксем ăна тĕкĕнмен те, пĕлтермен те ун çинчен; çийĕнчех тарса таврăнма май килмен, мĕншĕн тесен вăл хĕрлисенчен инçе тарма ĕлкĕрнĕ лавсем çине лекнĕ пулнă.

Хир тăрăх сиккипе вĕçтерсе пычĕç. Пульăсем вĕсем тавра вĕлле хурчĕ пекех найлатса, шавласа, шăхăрса вĕçе-вĕçе иртрĕç; икĕ красноармееца вĕсем сарлака çаран тăрăх пынă чухне вĕлерчĕç, ыттисем тарса çитрĕç. Еланъ те полка çитрĕ. Тепĕр флангран васкасах юланутлă разведкăна чĕнсе илчĕç те, вăл полк умĕн шуррисен обозне çавăрса илме вĕçтерчĕ. Обозăн пĕр пайĕ тарса ўкме ĕлкĕрчĕ, анчах ытларах пайĕ полк аллине лекрĕ: çак пурлăхпа вара Еланĕн çара уран, çĕтĕк-çатăк тумтирпе тăрса юлнă бригадине чылаях тумлантарса пулăшма май килчĕ.

* * *

Еланъ бригадинче çакнашкал ĕç пулни çинчен илтсенех, Чапаевпа Федор, Кочнев, Петька Исаев тата пĕр вунпилĕк юланут, ун патне çитсе пĕлме тухса кайрĕç;

пĕчченшерĕн тухса çӳреме май килместчĕ кунта, тăшман разъезчĕсем ăнсăртран кирек хăш тĕлте те сиксе тухма пултаратчĕç; ялти кулаксем те красноармеецсене, уйрăмах «начальствăна», хисеплесех кĕтсе тăмастчĕç.

Кун çап-çутă, тап-таса; праçник кунĕ. Ялсенче илемлĕ сараппансем, тĕрлĕ тĕслĕ кĕпе тăхăннă çамрăксем выляса, юрласа, савăнса çӳреççĕ,— çакна вăрçă вăхăтĕнче курма питех те тĕлĕнмелле пулчĕ. Пӳрт умĕсенче вătăлнипе пĕкĕрĕлсе кĕнĕ карчăксем ахлатса лараççĕ; ăшă праçник кунĕ ячĕпе тăхăнса тухнă йывăр кĕрĕксемпе вĕсем хĕвел ăшшинче унта та кунта та хура мрамор статуйăсем пек курăнаççĕ. Совет умĕнче, пушă вăхăта ăçта хумаллине пĕлмесĕр, халăх кĕпĕрленсе тăрать, Чапаев вĕсене праçник кичемлĕхĕнчен хăтăлма тĕрĕс çул кăтартса пачĕ. Çурхи шыв ялсенче пур çулсене те тарăн шырлансем туса çура-çура кайнăччĕ; çак шырлансене мĕн чухлĕ çар урапи кĕре-кĕре лармарĕç пуль, мĕн чухлĕ тевĕш татăлчĕ, урапа кустăрмисем çĕмĕрĕлчĕç, тĕнĕлсем хуçăла-хуçăла юлчĕç пулĕ... Кашни ялтах совет председательне чĕнсе илсе, халех халăха пуçтарса, çулсене тӳрлетсе тухма хуша-хуша хăварчĕç... Пухăннă çынсем шавлама тытăнатчĕç, ĕçе тухасшăн мар пулса хирĕç калаçатчĕç; анчах каялла таврăннă çĕре çулсене чăнахах та тӳрлетсе тухнă пулатчĕ. Çапла вара ялтан яла, саларансалана пырса, вĕсем чи инçетри полксене çитиех пĕтĕм çула юсаса, тӳрлетсе тухрĕç.

* * *

Елане штабра тĕл пулчĕç. Вăл, йышăнса хăнăхнă йăла тăрăх, Чапаевпа Федор кĕрсенех, сĕтел çине тĕрлесе тата йĕрлесе пĕтернĕ картă сарса хучĕ те, ун тăрăх тăшман хăш-хăш вырăнсенче тăнине кăтартса пама пуçларĕ. Часах штаб умне вунă юланут, пылчăкланса йĕпенсе пĕтнĕскерсем, çитсе чарăнчĕç,— вĕсем лайăхах ывăнса ĕшенни уççăнах курăнать... Çак ушкăн бригада комиссарĕ Буровпа пĕрле разведкăна кайнă пулнă-мĕн, шывăн куенче вĕсем тăватă яла çитсе курнă, леш енне ишсе каçса та çӳренĕ, унтан сахал мар хаклă хыпар илсе килнĕ. Йĕпенсе пăсăласран таçта пырĕ çумнех пытарса чикнĕ хут татăкне туртса кăларса, Буров кунта ларакан çынсене шывăн леш енче ĕçсем мĕнле тăни çинчен сăмах хыççăн сăмах каласа кăтартрĕ... Тăшман Хĕрлĕ Çар нас-

туплени тума пуҫлассине кӗтсе, хӑйӗн вӑйӗсене пӗр ҫӗре пуҫтарать-мӗн, артиллерие малти позици ҫывӑхне кӳрет, чаҫӗсене пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна куҫарать, тӗрлӗ еннелле тулли обозсем васкаса ӑсатать... Ҫак пӗчӗк кӗнеке пысӑк ӗҫсем мӗнле тӑнине кӑтартса каласа пачӗ.

Мӗн илтсе пӗлни ҫинчен — малалла, дивизи штабӗ урлӑ арми штабне пӗлтерчӗҫ.

Федор комиссар ҫине мӑнкӑмӑлланса, савӑнса пӑхса тӑчӗ,— ҫак ҫӳлӗ, вӑйлӑ хура ҫынна, Питӗрти слесарь пулнӑскере, пӗлтӗрех, 1918 ҫултах, фронта доброволец пулса кайнӑскере, калама ҫук юратса пӑрахрӗ.

Аяккалла пӑрӑнчӗҫ те калаҫма тапратрӗҫ.

— Политикӑллӑ ӗҫ мӗнле пырать-ха сирӗн?— ыйтрӗ Федор.

— Мӗн унта!—аллине сулчӗ комиссар.—Тӳрех калам сире, Клычков юлташ, нимӗн те тумастӑп, тупата та нимӗн те тумастӑп. Хӑть вӑрҫӑр, хӑть ан вӑрҫӑр,— вӑхӑт ҫук. Мӗн тӑвас тейӗн? Те акӑ шыв урлӑ каҫса килмелле, те программа вӗренмелле?.. Шыв урлӑ кайни кирлӗрех пулӗ, тетӗп эпӗ.

— Тӗрӗс,— терӗ Федор.— Анчах эпӗ ун ҫинчен марха... Халӗ мӗн кирлӗрех, ҫавна тумалла — кам ӑна хирӗҫ пулӗ? Анчах вӗренме май пур вӑхӑтсем те тупӑнаҫҫӗ пулӗ вӗт?

— Нихҫан та!—тесе ҫирӗппӗн татса каларӗ Буров, пӳрнисемпе чикаркка ҫавӑрнӑ хушӑра.

— Кӑна ӗнтӗ эсир ытлашши персе ятӑр,— тесе ӗненмесӗр хирӗҫлесе каларӗ Федор,— ытлашши... Пушӑ самантсем тупӑнаҫҫех, тӗрӗс мар калатӑр, вӗсемпе вӑхӑтра усӑ курма ҫеҫ пӗлес пулать...

— Вӗренме хӑтланса пӑхӑр-ха эсир пирӗн ачасемпе,— кулса илчӗ Буров.

— Ку урӑх ыйту...

— Урӑх мар ҫав... хӑтланса пӑхӑр-ха,— тесе ҫине тӑрса ҫыпҫӑнчӗ лешӗ Клычкова.— Ҫавӑ ҫав вӑл, ачам, ҫавӑ ҫав...

Вӑл пӳрнине ҫӳлелле ҫӗклерӗ те, темле сутмалли юмах каланӑ хыҫҫӑн унӑн туппине каласа парасса кӗтнӗ пек пулса тӑчӗ.

— Йывӑр-и мӗн апла?— тесе ыйтрӗ Федор, ун хутне кӗнӗ пек пулса.

Лешӗ пӗр шарламасӑр пуҫне тайрӗ те, унтан:

— Йывӑр ҫеҫ мар, нимӗнле май та ҫук!—тесе лаплаттарчӗ.— Пачах та май ҫук! Эпир кунта ҫапӑҫма килнӗ, кӗнекесене кайран вулӑпӑр, теҫҫӗ вӗсем... Вӑрҫӑ вӑрҫса пӗтеретпӗр те акӑ, ун чухне кӗнекесем те вулама пулӗ, теҫҫӗ; ҫапла ҫав...

— Ҫакӑнтан пуҫланса каять те ӗнтӗ вара сирӗн задача,— терӗ Клычков, лешне сӑмахне каласа пӗтерме памасӑр.— Комиссарӑн — ҫапла калани тӗрӗс маррине ӑнлантарса памалла та ӗнтӗ: политикӑсӑр ниепле те ҫапӑҫма ҫуккине ӗнентерсе парас пулать... Хӑй ӑҫта, мӗншӗн ҫапӑҫма кайнине пӗлмест пулсан, мӗнле ҫар пултӑрха вӑл? Ҫакна ӑнлантарса пама вӑхӑтне те тупма пулать. Тупма май ҫук тенине ӗненместӗп. Тӑрӑшса пӑхӑр-ха акӑ. Тепӗр хутӗнче вара, вӑхӑт тупма май пуррине хӑвӑрах йышӑнӑр. Анчах эсир ку ӗҫе пурне те хускатса явӑҫтарӑр—полкри комиссарсене, ячейкӑсене... Эсӗ ху та... Ӗҫе пуҫласа ярасси сиртен нумай килет, питӗ нумай...

— Эпӗ — куратӑр-и акӑ,— тесе, Буров хӑйӗн йӗпенсе, пылчӑкланса пӗтнӗ пиншакне кӑтартрӗ.

— Кунпа ҫитмест,— тесе, аллине сулчӗ Федор шӳт тумасӑр.— Сахал ку. Сирӗн командирпа иксӗрӗн хушшӑрти уйрӑмлӑх ҫак тӗлте пуҫланать те ӗнтӗ. А халӗ: эсир ҫапӑҫма анчах лайӑх пӗлетӗр пек, урӑх нимӗн тума та пӗлместӗр пек туйӑнать вӗт...

— Вӑрҫма пӗлни вӗсене пуринчен ытла кирлӗ те,— тесе, ӗнентерме тӑрӑшса каларӗ комиссар.— Вӗсемпе пӗрле пулмасанах—ха! Мӗн тума кирлӗ вара эсӗ вӗсене? Калаҫма калаҫатӑн, анчах ӗҫне тумастӑн, теҫҫӗ вӗсем. Ху эсӗ...

— Тӑхтӑр-ха, тӑхтӑр,—тесе сӑмахне пӳлчӗ Федор.— Ҫӗнӗрен: вӑл та кирлӗ, тетӗп... А н ч а х  п ӗ р  ҫ а к  ҫ е ҫ  м а р, ҫак ҫеҫ мар кирлӗ... Ара, пирӗнсӗр кам ҫара ҫутта кӑларса пырӗ-ха вара? Эсир ҫакна ӑнланӑр; х а р с ӑ р  в о и н  п у л н и п е  с а х а л,  т а т а  ӑ с т ӑ н л ӑ  т а  п у л а с  п у л а т ь...

Вӑл вара Бурова политикӑллӑ ӗҫе чи кӑткӑс ларутӑрура та туса пыма кирлине, тума май пуррине ӑнлантарса ӗнентерме тапратрӗ.

Лешӗ урӑх хирӗҫлесе калаҫмарӗ, анчах ку ӗҫре унран пысӑках усӑ пулас ҫукки уҫҫӑнах курӑнчӗ... Командир тесен? Тӗрӗс, вӑл питӗ лайӑх командир пулмалла.

Нумаях та вăхăт иртмерĕ, çак юлташа командир туса хучĕç; комиссар вырăнне урăх çынна лартрĕç.

Каласса пĕтерсен, сĕтел патне пырса тăчĕç. Елань ĕнерхи ĕçсем çинчен каласа тăрать:

— Пыратпăр çапла пĕр вунпиллĕкĕн,—тет.—Тумланасса, кирлĕ пек тумланнă, анчах ниммĕнле паллă та çук: салтак салтаках, темелле. Командирăн анчах хĕрлĕ çăлтăр пурччĕ, ăна та вĕçерсе илсе кĕсъене чикрĕм. Яла çитсе кĕтĕмĕр те, совет патне пытăмăр: «Председатель ăçта?» тетпĕр. Мужиксем кунта пĕр аллă çын пухăнса тăнă, тем пăшăлтатса калаçаççĕ, аяккалла пăрăнса кайма пăхаççĕ, хăраççĕ...

«Эсир колчаксем-и-мĕн?»—тесе ыйтаççĕ пирĕнтен.

«Колчаксем», теççĕ пирĕн ачасем; вĕсем мĕн хăтланнине курас тесе, кăшт ултапама шут тытрăмăр.

«Кунта ара мĕн шутпа килтĕр? Вăрçас тетĕр-им?»—теççĕ.

«Вăрçатпăр çав та, хĕрлисене шыратпăр акă: ăçта-ши вĕсем кунта, кам пĕлет?»— тетпĕр.

— Тытăнтăмăр вара мужиксенчен: кунта хĕрлисен мĕнле чаçĕсем пур, вĕсем ăçта тăраççĕ, ăçталла каяççĕ, хресченсемпе мĕнле хăтланаççĕ, тесе тĕпчесе пĕлме.

— Лешсем пĕр путлĕ сăмах каламаççĕ.

«Ав Иван Парфĕныч каласа патăр, вăл пирĕн пурне те пĕлет — председательте ларать», теççĕ.

— Алăкран Иван Парфĕныч тухни курăнчĕ,—пĕр вунпĕр пăт туртакан арçын...—терĕ те Елань, Иван Парфĕныч хырăмĕ епле пысăккине кăтартасшăн пулса, аллисемпе хырăмĕ тавра çавăрса илчĕ.

Пурте кулса ячĕç.

— Чăн та çапла, чăн та,— тесе çирĕплетрĕ хăй сăмахне Елань.— Кунта советсенче ун пеккисене темĕн чухлех тĕл пулма пулать...—Мужиксем ĕçе тĕплĕн курса ăнланса çитеймен-ха, çитменнине хăраççĕ те. Çапла вара тепĕр чухне тĕрлĕрен сволоча та суйласа лартаççĕ...

— Çапла ĕнтĕ лешĕ, вунпĕр пăтлăскер, крыльца çинчен анчĕ... Куçне те мăчлаттарса илмерĕ, хăраса ўкмерĕ Иван Парфĕныч тенĕскер, «колчаксем» еннелле ытарма çук чыслăн утса пычĕ, алăк патĕнченех вĕсене пуç тайса çывхарчĕ, аллине «под козырек» тытрĕ, йăл! кулкаласа илчĕ.

«Здравия желаю»,— тет.

«Эсӗ-и председатель?»— тесе ыйтаҫҫӗ ачасем.

«Так точно,—тет те, каллех кулать,—лартрӗҫ те авӑ, ларатӑп-ха акӑ,— тет...— Сире, тӑванӑмсем, леш эрнерех кӗтнӗччӗ... Акӑ ӗнтӗ... Тавтапуҫ турра, ҫитрӗр,— пӗтӗм чуна тарӑхтарса пӗтерчӗҫ вӗт», тет.

Ачасем, хайхи, ӗненмен пек пулаҫҫӗ...

«Ара, мӗн эсӗ пире ухмаха хуратӑн, — теҫҫӗ. — Ӑҫта «сирӗннисем»? Тӗрӗссипе кала!»

«Мӗнле вӑл пирӗннисем?»— тесе куҫне чарса пӑрахрӗ председатель...

«Епле тата мӗнле: хӗрлисем ӑҫта? Хӑвӑртрах кала», теҫҫӗ.

Председатель вара ҫавӑнтах ура умне тӑсӑлса выртрӗ те, хӑй шуррисем майлӑ пулнине ӗнентерсе кӑтартма тӑрӑшрӗ, халӑх хушшинчен хӑй майлӑ виҫӗ свидетель тупса кӑтартрӗ (кашниех сакӑршар пӑтлӑскерсем); лешӗсем ун майлӑ калаҫаҫҫӗ.

«Ара ӑҫтан айӑплӑ пултӑр вӑл... Иван Парфӗныч вӑл— лайӑх ҫын, вӑл нихҫан та вӗсемпе ҫыхланман, ӑна мужиксем ирӗксӗр кӗртрӗҫ совета»,— текелеме пуҫларӗҫ.

Ачасем утсем ҫинчен анчӗҫ те совета кӗрсе кайрӗҫ; вӑл мӗн каланине йӑлтах ҫырса, ӑна алӑ пустарчӗҫ: «материала господа офицерсене кайса кӑтартас тетпӗр»,— теҫҫӗ.

— Мӗн ҫырнине пӗтӗмпех алӑ пусрӗ... Эпир вара ӑна ҫавӑнтах виҫӗ хӳтӗлекенӗпе пӗрле урапа ҫине лартрӑмӑр та, хамӑрпа илсе килтӗмӗр. Анланса илсессӗн, уласах ячӗ: «Эпӗ, туршӑн та, хам большевикра тӑратӑп»,— тет... Мужикӗсем те хӑраса ӳкрӗҫ, нимӗн калама пӗлмеҫҫӗ... Пӗтӗмпех хӑракан пулчӗ халӑх,— тесе аллипе сулчӗ Елань, сӑмахне каласа пӗтерсе.

— Халь ӑҫта вӗсем?— ыйтрӗ Федор.

— Тӑваттӑшне те трибунала ятӑмӑр... Анчах тӗрӗс: фронт ҫывӑхӗнчи халӑх пӗтӗмпех тӑнран тухса пӑтранса кайнӑ; ял ҫыннисем эрне хушшинчех шуррисене те, хӗрлисене те тӑватшар хут кӗтсе илеҫҫӗ те, ӑҫтан пӑтрашса каяс мар? Кам малтан, кам кайран килнине, кам хытӑ хӗсӗрленине, кам пачах та тӗкӗнменнине пӗтӗмпех арпаштарса пӗтернӗ... Мӗн чухлӗ лаша илсе кайнине шутласа та кӑларма ҫук; мӗн чухлӗ урапа ҫӗмӗрсе пӗтернине, сарайсене ҫунтара-ҫунтара янине, чашкӑ-тиркӗ ҫӗмӗрсе тӑкнине, мӗн чухлӗ пурлӑх ҫаратса пӗтернине — астунинчен

астуманни лайăх. Выльăх-чĕрлĕхе мĕнле хăтармаллине хресченсем çапах та часах тавçăрса илчĕç: вăрман чăтлăхне кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе хăваласа кĕртетчĕç те, кăлармастчĕç вара унтан пачах та, апатне çĕрле леçе-леçе паратчĕç. Салтаксем пырса «Лашăрсем ăçта, ĕнĕрсем ăçта?» тесе ыйтсан:

«Йăлтах илсе кайса пĕтерчĕç... нимĕн те юлмарĕ»,— тетчĕç.

«Кам илсе кайрĕ?»— тесе ыйтсассăн вара, хĕрлисем пулсан — шуррисем çине, шуррисем пулсан — хĕрлисем çине йăвантаратчĕç. Ĕçĕ те пĕтет. Анчах кунта та хăшпĕр чухне яках иртейместчĕ; мĕн хăтланнине пĕле пуçларĕç кайран, вăрмансем тăрăх разведка ярса ухтарма тапратрĕç... Шыраса тупатчĕç те кĕтĕве — хăваласа каятчĕç, ял вара улама тапрататчĕ... Анчах мĕн тăвассу пур куç-çулĕ юхтарса, юн та ним хак та тăмастчĕ пулсан?!

* * *

Боровка шывĕ хĕрринчех ларакан ялта Михайлов хăйĕн полкĕпе вырнаçса тăрать. Кунта шыв хĕррипе анчах пырса кĕме пулать; леш енчен, сăрт хыçĕнче сапаланса выртнă тăшман цепĕсем енчен, пĕрмаях персе тăраççĕ: иртсе çӳренине курсанах — пĕр вĕçĕмсĕр пеме тапратаççĕ... Яла çитме инçех те юлмарĕ ĕнтĕ... арпалăхсем те курăна пуçларĕç... çак вăхăтра тăшман пушшех вăйлă пеме тытăнчĕ... Пульăсем васкасах шăхăрма тапратрĕç, пыракансенчен пĕрин урине тивсе амантрĕç. Вара лашасене утланчĕç те — юрттара пачĕç... Пĕрин хыççăн тепри, çирĕм утăм хăварса, умлăн-хыçлăн чуптарчĕç. Федор хăй Сломихинăри çапăçура епле хăтăлса юласшăн пытанса çӳренине астуса илчĕ, унтанпа чылаях пысăк улшăну пулнине туйса асăрхарĕ: халĕ ĕнтĕ ун чухнехи пек хăраса ӳкесси пачах та çук... Ан тив лере снарядсем пулнă пултăр, кунта — пульăсем; пуля тепĕр чухне снарядран та хăрушă пулма пултарать. Пурте хăйне май хăрушă: «пуля — ӳт-тиршĕн, шрапнель — чуншăн хăрушă». Халĕ вăл утпа вĕçтерсе пырать те, пуля ăна та лекме пултарасси çинчен шухăш та çук, ĕненмест ăна. «Кӳрше—паллах... тивме пултарать... анчах мана—тивес çук...». Ăçтан килсе кĕнĕ çакнашкал шухăшсем, хăй те пĕлмест.

Юрттарса пынă чухне икĕ лашана амантрĕç, пĕр красноармеецăнне çĕлĕкне шăтарса кайрĕ... Çӳлĕ утă капанĕ-

сем хыҫне ҫитсе пытанчӗҫ, утсем ҫинчен анчӗҫ; пӗр капан хыҫӗнчен тепӗр капан хыҫнелле, пӗр арпалӑхран тепӗр арпалӑх хыҫнелле чупкаласа, яла ҫитсе кӗчӗҫ. Чапаев чи хыҫалтан пырать. Федор, кӑшт сӑнаса тӑрасха тесе, пытанчӗ те, лешӗ малтан талпӑнса чупса кайнине, анчах сасартӑк ҫаврӑнса, каллех капан хыҫне чупса ҫитсе пытаннине асӑрхарӗ. Унтан вӑл кӑшт кӗтсе тӑчӗ-тӑчӗ те, яла тӳрех кайма шутламарӗ, тавра ҫулпа каялла таврӑнса кайрӗ; штаба вара чи кайран ҫитрӗ...

Федор ыйтса пӗлесшӗн пулчӗ:

— Мӗнле-ха эсӗ, Василий Иванович, хӑраса ӳкрӗн мар-и? Арпалӑх хыҫӗнче хӑравҫӑ пекех кускаласа ҫӳрерӗн пулас?—тесе ыйтрӗ.

— Ансӑртран пырса лекекен пульӑна юратмастӑп,— тесе пӗр шӳт тумасӑр тавӑрчӗ Чапаев.— Кураймастӑп... Айван вилӗмпе вилес килмест!.. Ҫапӑҫура — урӑх ӗҫ, унта юрать... кунта вара...

Вӑл ҫилӗпе хыттӑн лачлаттарса сурса пӑрахрӗ.

Штаб патне ҫитме те ҫӑмӑлах мар: шывӑн леш енчи ҫӳлӗ сӑрт ҫинчен пӗрмаях яла персе тӑраҫҫӗ. Пӳртсем хушшипе кам та пулин иртнине курсанах, вӑл тӗле ҫунтарсах пеме пикенеҫҫӗ. Красноармеецсем те парӑнмаҫҫӗ: арпалӑхсем ҫине улӑхса кайнӑ, пӳрт тӑррисене пытанса ларнӑ, ҫатансем хыҫне хӗсӗнсе тӑнӑ, лупасай хӳмисенче шӑтӑксем туса пӗтернӗ,— шывӑн леш енче мӗн хӑтланнине ҫивӗч куҫпа тимлӗн асӑрхаса пӑхса тӑраҫҫӗ. Сӑрт хыҫӗнчен пӗр-пӗр кӗлетке е пуҫ курӑнса кайсанах вара, пеме пуҫлаҫҫӗ. Кунта ҫапӑҫу мар, чӑн-чӑн сунарти пек пӗрне-пӗри персе тытма тӑрӑшаҫҫӗ, «ӑнсӑртран сиксе тухнӑ тӗллеве» ҫеҫ переҫҫӗ. Ҫитменнине—тӗлӗнмелле вӗт—ҫак вӑхӑтрах ял урамӗсенче хитре праҫник кӗписем тӑхӑннӑ хӗрсем каллӗ-маллӗ уткаласа ҫӳреҫҫӗ, тӗллӗн-тӗллӗн юрӑсем юрлаҫҫӗ, выляса йӑпанаҫҫӗ... Каччисем те сывӑрмаҫҫӗ — вӗсем тавра явӑнса ҫӳреҫҫӗ, юрлама хутшӑнса каяҫҫӗ; пӗри вара хӗрсене купӑс янратса илӗртет.

Калас пулать, шыв кунта сарлаках мар, сӑрт хыҫӗнчен ял тӑрӑх кам пыни — красноармеец-и, хресчен-и, е пӗр-пӗр хӗр сиккелесе пырать-и — пит лайӑх курӑнать... Пересе те, красноармеецсене курсан анчах переҫҫӗ. Хресченсем урам тӑрӑх нимӗнле вӑрҫӑ та ҫук пекех—лӑпкӑн, васкамасӑр уткаласа ҫӳреҫҫӗ... Пӑшал перкелени пулмасан, вӗсене кура — ҫынсене кунта йӗри-таврах, кашни

самантрах вилӗм сыхласа тӑни ҫинчен шутлама та йывӑр пулӗччӗ: ял вӑрҫӑран таҫта аякра ларнӑ пек,— вӑл нимӗне пӗлмесӗрех хӑйӗн авалтан килнӗ мункунне уявласа ирттернӗ пек туйӑнса тӑрать...

Михайлова шывӑн леш енне разведка яма шухӑш парасшӑнччӗ; анчах лешӗ ӑна ирех кӑларса янӑ-мӗн, халӗ вӑл разведка ак-ак таврӑнасса кӗтсе ларать. Разведка чӑнах та часах таврӑнчӗ; вӗсем юлташӗсенчен иккӗшне шывӑн леш енче пытарса хӑварнӑ — вӗсене шыв урлӑ каҫма аннӑ ҫӗрте юлашки минутсенче персе ӳкернӗ-мӗн. Фронтра ӗҫе нимӗн тӳлемесӗр, сайра-хутра ҫеҫ тума пулать! Разведка пӗлтернӗ хыпара тимлӗн итлерӗҫ те, канашласа пӑхса, каҫхине налёт тума шут туса хучӗҫ. Ял тӗлӗнчи шыв урлӑ каҫмалли ӑшӑх вырӑна шуррисем хытӑ сыхланине пирӗн пӗлеҫҫӗ,—ҫавӑнпа тӗттӗм пуличчен урӑх ҫӗртен каҫмалли вырӑн шырамалла. Налёт туса ирттерес ӗҫе Михайлов хӑй ҫине илчӗ. Ӗҫ ӑнӑҫлӑ пуласси пирки шанчӑк пысӑк пирӗн; тӗп шанчӑк ак ҫакӑ: шуррисен чаҫӗсене эпир агитаци майӗпе ҫурри таран хамӑр майлӑ ҫавӑрма ӗлкӗрнӗ те ӗнтӗ. Ҫак агитаци ӗҫне пирӗн ку ялта питӗ простой та хӑйне евӗр интереслӑ меслетпе туса тӑратчӗҫ: пӗр вунӑ коммунист, хырӑмӗсем ҫине выртса, ял варринчен пӳртсем хушшипе арпалӑхсем патнелле шуса тухатчӗҫ. Пуҫӗсене пӗр ҫӗклемесӗр, ним хумханмасӑр, унталла-кунталла пӑрӑнкаламасӑр, вӑраххӑн, ялан пӗр еннелле шӑваҫҫӗ те шӑваҫҫӗ вӗсем вӗҫӗмсӗр. Арпалӑхсем хыҫӗнчи карта патне ҫитсен, ҫӗрлех хатӗрлесе хунӑ шӑтӑксем витӗр хӗсӗнкелесе тухса, шыв хӗррине шуса анаҫҫӗ. Арпалӑхсем умӗнче вӗсем, хӑйсене ытлашши палӑрмалла мар тӑвас тесе, кӗлеткисене темӗн те пӗрпе витсе пытараҫҫӗ; хӑш-пӗрисем ялтанах ҫапла «тумпа» шуса тухаҫҫӗ. Пытанасса та ытлашшипех чеен пытанса-туса тӑмаҫҫӗ: пӗрин ҫине тӗрлӗрен турат, патак таврашӗ, хыр-чӑрӑш лӑсси хурса тултараҫҫӗ; тапӗрне пур енчен те ҫӗтӗк-ҫатӑк ҫакса тултараҫҫӗ, ҫын пек курӑнмалла мар туса хураҫҫӗ. Ҫакнашкал сӑнсӑр япала вара шыв хӗрринелле шуса анать. Утӑпа, улӑмпа, е ашӑкчӑпта таврашӗпе витӗнкелени те пулать; кашни маттур мӗнле май килнӗ — ун пек хӑтланать... Ҫакнашкал тӗлӗнтермӗш сӑнсӑр япаласем, пӗр вуннӑн-вунпиллӗкӗн, ялӑн тӗрлӗ тӗлӗнчен шыв хӗррине шуса тухаҫҫӗ те, тӗмескесем ҫумне, йывӑҫсем хыҫне, шыв хӗрринчи ытти тӗрлӗ-

рен пытанма май пур япаласем çумне хĕсĕнкелесе, пĕр-пĕр тĕле шуса çитеççĕ те, пурте пĕр харăс:

— Эй, салтаксем! Шурă салтаксем! Юлташсем!— тесе кăшкăрма тытăнаççĕ.—Офицерсене çапса пăрахăр! Куçăр пирĕн енне! Улталанă вĕт сире! Хресченсене хресченсемпе вăрçтараççĕ. Офицерсем вĕсем — улпутсем. Вĕсем тăшманăрсем сирĕн, эпир сирĕн тăванăрсем. Куçса килĕр, юлташсем! Пĕтерсе тăкăр офицерсене! Куçса килĕр!— тесе кăшкăраççĕ.

Шыв кунта сарлаках мар, пĕр хĕрринчен тепĕр хĕррине пит лайăх илтĕнет, сывлăмлă ирпе каç пушшех те уççăн илтĕнет; агитаторсем, паллах, каçхине тĕттĕмленсе çитсен,—е ирпе ирех çутăличчен, вĕсем пыни питех палăрман вăхăтра — шуса тухаççĕ... Офицерсем леш енчен чи кирэвсĕр сăмахсемпе ятлаçса вăрçаççĕ,— большевикла агитаторсене мĕнле усал сăмах каласа хăратмаллине пĕлмеççĕ. Пеме те тапратаççĕ, анчах ăçта, кама тĕллесе тивертес-ха унта,—ниçта та никам та курăнмасть пулсан.

Ятлаçасса ятлаçаççĕ вĕсем, анчах пурĕпĕрех хăйсен чаçĕсене шыв хĕррине нумайлăха хăварма хăраççĕ, вĕсене пĕрмаях улăштарса тăраççĕ, пĕрмаях хăйсен çарĕнче тем пек хăрушă япала пуласран шикленсе пурăнаççĕ... Шурă салтаксем хăйсене шывăн тепĕр енчен илтĕнекен ăшă, ăнланмалла сăмахсене чĕрене хурса йышăнаççĕ; çакна кура, офицерсем, шыв урлă килекен «тăван-большевиксен» сăмахĕсене итленĕшĕн,—кайран каласа кăтартнă тăрăх,—салтаксене чылаях персе пăрахнисем те пулнă. Шуррисем патĕнче шпионла ĕç, салтаксем хушшинче те пурăна-киле вăйланнăçемĕн вăйланса пычĕ; хресченсем унта, шуррисем вĕсене вăйпах хресчен ĕçне хирĕç, хăйсен тăван ĕç çыннисене хирĕç кĕрешме хăваланă пирки, хăйсен пурнăçĕ ниçта кайса кĕме çук йывăррине ăнланса пыма тытăнчĕç. Çакă вăл пирĕн красноармеецсен полкĕсене кĕрешме чылаях çăмăллăх пачĕ. Агитаторсен ĕçĕ вара шурă чаçсене пĕтĕмпех пăсса, çапăçайми туса пычĕ. Офицерсем перкелеççĕ-перкелеççĕ те — пăрахаççĕ, — агитаторсем вара каллех каялла, паçăрхи пекех ерипен, шăппăн, пĕр хумханмасăр яла шуса таврăнаççĕ.

Çак налёт тума палăртса хунă каç умĕн агитацие уйрăмах ăнăçлăн ирттерме май килчĕ: хăш-пĕр тĕлте шурă салтаксем хăйсен пурнăçне шеллемесĕрех агитаторсемпе сăмах та хушса илкелерĕç, вĕсене тĕрлĕрен ыйту парса

пĕлчĕç, куçма йывăрри çинчĕн каларĕç, çирĕп сыхласа тăнине, уншăн питех те хытă айăпласа хĕсĕрленине пĕлтерчĕç.

Çĕрле вара Михайлов, çирĕп отряд пухса, çак ĕçе пурнăça кĕртме тухса кайрĕ.

Тепĕр кунне бригада штабне унран çакнашкал телеграмма килсе çитрĕ:

«Икçĕр çын суйласа илсе, çĕрле, Боровка шывĕ урлă ăшăх тĕлтен тата пĕренесем хурса леш хĕррине каçрăм та, çывăракан тăшмана кĕтмен çĕртен пырса атакăларăм. Çĕр аллă çын ытла тыткăна илтĕмĕр; тăватă пулемет, винтовкăсем, патронсем, кухньăсем, обозсем туртса илтĕмĕр...».

— Çĕр аллă çын тыткăна илнĕ,— тесе, илтĕнмелле шухăшласа каларĕ Чапаев;—кусене тыткăна илнĕ, лере тата мĕн чухлĕ юлнă?.. Çыр!—терĕ вăл çак ăнаçлă ĕç çинчен донесени çырса ларакан штаб çыннине: «Тыткăна çĕр аллă çын илнĕ, вырăнта икçĕр çын вакласа тăкса хăварнă».

— Итле-ха ара, мĕн тетĕн эсĕ?—тĕлĕнсе пăхрĕ Федор ун çине. — Мĕнле икçĕр?

— Унтан кая мар,—тесе, хăйне пĕртте аван мар пек туймасăр тавăрса каларĕ Чапаев.

— Ара, мĕнле икçĕр вăл? Мĕн кирлĕ мара шухăшласа кăларатăн-ха эсĕ?

— Эпĕ нимĕн те шухăшласа кăлармастăп,— тесе кăмăлсăрланчĕ Чапаев.—Вăл асне илеймен пулсан, манăн та çаплах иттерсе ямалла-и-ха вара ăна?—терĕ.

— Ара, хăть çырма тăхта-ха эсĕ... Хăть ыйтса пĕлер малтан, тепĕр хут çырса пĕлтерĕпĕр, ку—пуçран шухăшласа кăларни пулать вĕт, Василий Иваныч!

— Пулин...—тесе кулса ячĕ лешĕ çăмăлттайла.— Қаштах савăнтарас пулать.

— Қама савăнтармалла?—тесе, хирĕç тăма пăрахмарĕ Федор.—Мĕн савăнăçĕ пултăр унта. Ара, кун пек япаласем çинчен пĕлсен, ĕненме те пăрахаççĕ вĕт сана.

— Пĕлеймеççĕ,—каллех шӳт тукаласа иттерме шутларĕ Чапаев.

Анчах Федор çине тăрсах çак икçĕр «вилĕ чун» çинчен пĕлтерме чарчĕ; Чапаевăн вара ирĕксĕрех килĕшмелле пулчĕ.

* * *

Хайсем патне штаба тавраннă çĕре вĕсене: «Хăварпа пĕрле ăна, кăна, виççĕмĕшне илсе, халех тухса кайăр», тесе хушнă распоряжени кĕтсе тăнă. Çавăнтах тата ăçта, мĕн тума тухса каймаллине те кăтартса панăччĕ,—урăх армие куçмалла, тенĕччĕ. Çак çапăçусем вăхăтĕнче пĕр вырăнтан тепĕр вырăна вĕсене темиçе хут та куçарчĕç: унта та кунта та персе чикеççĕ, пăхатăн—пĕр бригадине уйăрса илеççĕ, унтан каллех пĕрлештереççĕ,—пĕр сăмахпа каласан, лару-тăру мĕнле тума хушать, çавăн пек, кирлĕ пек тăваççĕ. Чапаев çакнашкал куçарнисем пирки яланах тарăхатчĕ те хытă ятлаçатчĕ; çакна те ăнсăртран пулакан ĕç вырăнне, те мĕнле те пулин «ырă сунман çынсем» юри кӳрентерес тесе хăтланнине вырăнне хуратчĕ. Тĕлĕнмелле просто, ансат шухăшлатчĕ вăл çакнашкал чухне; тепĕр чухне вăл çапла каланă сăмаха шӳт туни вырăнне те хума пулатчĕ, анчах тĕрĕссипе вăл ăна ним кулмасăр, чăнласах калатчĕ. Куçса кайнă çĕнĕ вырăнта, чăннипе, çĕнни нимĕн те çукчĕ, куçса каясси те ытла инçех марччĕ. Армисем вăл вăхăтра пĕр-пĕринпе çывăх тăратчĕç, нимĕнле хушăсăр, пĕр тăтăш фронтпа пыратчĕç. Пĕр армири ăнăçлă е ăнăççăр ĕçсем теприн ĕçĕнче те часах палăратчĕç. Хыпарсем пит хăвăрт вĕçсе сарăлатчĕç: вăл хыпарсем е хуйха ӳкеретчĕç, е çĕнĕ шанчăксемпе çуламлантарса яратчĕç. Елань бригади ăнăçлă ĕçсем туни синчен илтсен, Чапаев уйрăмах хытă савăнчĕ.

— Молодец, вĕренни ахаль пулман,—терĕ вăл Елань пирки штабра хаваслăн, çавăнтах вара ăна телеграмма çырса ячĕ; телеграммăра ĕç çинчен каласа çырнă сăмахсем хушшине хăйĕн савăнăçне кăтартакан сăмахсене те кĕрте-кĕрте лартрĕ: çара саламлă телеграммăсем яма юрамастчĕ ун чухне.

Наступлени ăнăçлă пулса пычĕ. Пирĕннисем чылай пунктсене—пĕчĕккисене те, пысăккисене те—турта-турта илсе йышăнчĕç. Фронт тăрăх ĕрĕхнĕ пекех васкаса çӳретчĕç,—пур çĕре те çитмелле, кăтартса памалла, пулăшмалла, асăрхаттармалла, вăхăчĕ-вăхăчĕпе çапăçура та пулмалла пулчĕ. Çакнашкал çапăçусенчен пĕрин çинчен Федор хăйĕн кĕнекине «Пилюгинăри çапăçу» тесе çырса хунăччĕ. Çак очерка кунта пĕтĕмпех çырса илсе кăтартар.

## ПИЛЮГИНĂРИ ÇАПĂÇУ

### I. ТАПРАНСА ТУХНИ

Архангельск ялĕнчен эпир шуçăм килнĕ вăхăтрах, хĕвел çĕре ăшăтма ĕлкĕричченех тапранса тухрăмăр. Çарансем çинче каçхи нӳрĕ шăрши кĕретчĕ-ха, сывлăшра ирхи шăплăх чĕрене çӳçентерсе тăратчĕ. Пирĕн полксем пĕрин хыççăн тепри сарлака хирелле тухса, çывăхри ялсене хупласа тăракан çӳлĕ сăрт еннелле пĕр шарламасăр, кăшкăрмасăр, юрăсăр утрĕç. Малта пыракан отрядсене пур еннелле те сапалантарса ячĕç; юланутлă разведка малалла вĕçтерсе кайса, часах куçран çухалчĕ. Эпир—Чапаев, бригада командирĕ тата эпĕ—полксем умĕнче пыратпăр,—вестовойсене пĕрмаях е халь килнĕ çĕнĕ хыпарсене пĕлтерме е çĕнĕ хыпарсем пуçтарса килме ярса тăратпăр. Сулахай енчен, тепĕр сăрт хыçĕнчен, тупăсем ухлатса пени илтĕнет,—ку вăл Кинель хыçĕнче; унта пирĕн бригада пыма тивĕç; унăн тăшман хыçне тухса, ăна эпир Пилюгинăран хăваласа тартсан, унăн каялла тармалли çулне пӳлсе, картласа лартмаллаччĕ. Кам пени—паллă мар,—таçтан инçетрен, пĕр çирĕм-çирĕм пилĕк çухрăмран илтĕнет; ку вăл, тупă пенĕ сасă, хĕвел тухнă вăхăтра анчах çапла уççăн илтĕнет; кăнтăрла пулас пулсан, ун пек уççăн илтĕнес çук.

Хыçалтан кĕтмен çĕртен пырса çапнипе, эпир, тăшман ретĕнче паника кăларса, çак паника вăхăтĕнче вĕсен, пире разведка систерсе пĕлтернĕ артиллерине туртса илме шутланăччĕ. Шывăн леш енче тупăсем ухлатса пени, тăшман эпир мĕн тăвас тенине сиссе, тĕрĕс ăнланса илнине пĕлтерчĕ; çавăнпа пирĕн ĕç ăнăçлă пулас шанчăксем чака пуçларĕç.

Пĕр тăвайккие улăхса çитрĕмĕр. Аялта Скобелево ятлă пĕчĕк ял курăнса ларать; çакăнтан эпир Пилюгино

çине наступлени туса каймалла. Разведка юрттарса таврăнчĕ те, тăшман Скобелево ялĕнчен каçхинех тухса кайни çинчен пĕлтерчĕ. Яла çитсе кĕтĕмĕр. Хресченсем пӳрчĕсем çумĕнче хĕсĕнкелесе тăраççĕ, яла кĕрекен çарсем çине хăраса пăхаççĕ.

— Паян шуррисем, ыран хĕрлисем,—тесе ӳпкелешеççĕ вĕсем,—унтан каллех шуррисем, вара татах хĕрлисем—вĕçне-хĕрне те курмастпăр... Çăкăра та пирĕнне пĕтĕмпех çисе ячĕç, выльăхсене те илсе кайса пĕтерчĕç, тĕппипех çаратса хăварчĕç,—теççĕ.

Унтан ĕнсисене хыçса илеççĕ те, философла килĕштернĕ пек пулса:

— Вăл çапла ĕнтĕ, мĕн каласси пур, вăрçă... —тесе хушса хураççĕ;—ăнланатпăр, никам çине те ӳпкелешме çук,—теççĕ.—Анчах питĕ йывăрланса çитрĕ-çке, вăй-хал ним чухлĕ те юлмарĕ... Хăçан пĕтĕ-ши анчах вăл, ылханиллă япала? Қанасчĕ хăть пĕреххут.

— Çĕнтерсен, пĕтет,—тетпĕр эпир вĕсене тавăрса.— Унччен ниепле те пĕтес çук.

— Хăçан пулать-ха вăл?—тесе пăхса тăраççĕ вĕсем хăйсен ывăннă, нимĕнле шухăша та палăртман куçĕсемпе.

— Хамăр та пĕлместпĕр. Пулăшăр акă—часрах пулĕ... Пурте пĕр харăс тытăнсан, ăçтан чăтса тăтăр-ха вăл, Қолчак тенĕскер?

— Ăçтан чăттăр ара!..—килĕшеççĕ мужиксем.

— Апла пулсан, пулăшас пулать...

— Пулăшас та пулать,—тесе килĕшеççĕ вĕсем каллех. Вара çавăнтах:—Пыр-ха акă, пулăш унта,—тесе хураççĕ.—Эсĕ ăна пулăшса яратăн, вара çавăнтах яла эсир килсе кĕретĕр... Сире пулăшма çеç пуçлатăн, лешĕ каллех килсе кĕрет; вара сана епле икĕ енчен те çунтарма пуçлассине кĕтсе çеç тăр. Пирĕн ялăмăр темĕскере те курса пăхрĕ ĕнтĕ: сирĕннисем те нумай пулкаларĕç, пĕр хут çеç хăваламан пире кунта... Çавăнпа нӳхрепсенчеларса ирттерни ăнăçлăрах вăл,—унталла та кунталла та мар...

Эпир, хыпаланса утнă хушăра мала кайнисене хăваласа çитме тăрăшнă май, мужиксене васка-васках вĕсем мĕн тĕлĕшрен йăнăшнине, Қолчакăн офицерла, улпутла влаçĕ хресченсемшĕн мĕн тери усал япала пулнине, совет влаçĕ вĕсемшĕн мĕн тери ырă япала пулнине ăнлантара-ăнлантара патăмăр... Пирĕн сăмаха ăнланаççĕ вĕ-

сем, килĕшеççĕ вĕсемпе, анчах вĕсем калаçнинчен çак ыйтусем пирки вĕсемпе питех те сайра хут, сахал калаçни курăнать. Нимĕн çинчен те тĕплĕн пĕлмеççĕ вĕсем, пĕрмаях «лăпкă» пурнăç çинчен анчах калаçаççĕ.

Анчах ĕç пур çĕрте те кунашкал мар, çак Скобелево йышши тĕттĕм кĕтессенче анчах çапла вăл. Пысăк ялсенче вара—унта икĕ ушкăн; халăх унта пĕр-пĕринпе пачах килĕштерейми тăшманла пая уйрăлса тăрать: шуррисем килсен—пĕр пайĕ пуçне çĕклет, тăшманĕсене таврать, пусмăрласа мăшкăлать, вĕсене шуррисен аллине тыта-тыта парать; хĕрлисем килсен—тепĕр енĕ савăнать; теприсем те, паллах, хăйсен ĕмĕрхи тăшманĕсене хĕрхенсех тăмаççĕ...

Чаçсем, ял урлă иртсе, пĕрин хыççăн тепри пысăках мар кĕпер урлă каçаççĕ те, улăх тăрăх сапаланса каяççĕ, цепьсемпе карталанса тăраççĕ. Пилюгино енчен улăх тăрăх тупăсемпе пеме пуçларĕç...

Анчах малти цепьсем сылтăм еннелле таçта çитиех инçе чупса кайма ĕлкĕрчĕç; вĕсем хыççăн çинçе лента пек ыттисем тăрса тухрĕç; çынсем пĕр çĕрте купаланса тăни пĕтрĕ; çавăнпа тĕрĕс прицел илсе пеме йывăр пулчĕ, тупă пенинчен те сиенĕ сахал пулчĕ.

Чапаевпа пĕрле пĕр пӳрте кĕрсе, сĕт ыйтрăмăр. Тупăсем пенипе хăраса ӳкнĕ типшĕм, чирлĕ хуçа арăмĕ пĕр чӳлмек сĕт кĕртсе лартрĕ, пуçланă çăкăр кăларса хучĕ; кунтах кĕпĕрленсе тăракан красноармеецсене те вăл юратса, ачашшăн пăхать, вĕсене те тăрантарать, ял çине пенĕ чухне хăй епле хăрани çинчен кала-кала кăтартать... Сĕтшĕн укçа пама тăтăмăр—илмест...

— Эпĕ ахаль те пурăнăп,—тет,—а сирĕн, кам пĕлет, темĕн чухлĕ çапăçмалла пулать-ха,—тет.

Мĕн чухлĕ сĕнсен те, илмерĕ илмерех. Вара укçана эпир ачисене тыттартăмăр; вĕсем амăшĕ çумĕнче хĕсĕнкелесе тăраççĕ, унăн аркинчен яра-яра тытаççĕ; винтовка тытнă, хĕçпе револьвер, бомбăсем çакнă палламан çынсем çине çутăлса тăракан куçĕсемпе тискер кайăк чĕпписем пек шăтарас пек пăхаççĕ.

— Эсир тӳлетĕр хăть,—терĕ хуçа арăмĕ çакăн хыççăн...—Мана кирлĕ мар пулсан та, юрĕ ĕнтĕ... Утă илесççĕ-и унта, сĕлĕ илеççĕ-и,—пуриншĕн те тӳлеççĕ... Лешсем вара—пĕтĕмпех кышласа ячĕç, хăть пĕр пĕрчĕ те пулин тӳленĕ пултăрччĕ... Ванюшка ывăлăма та авă лаши-

мĕнĕпех хăваласа кайрĕç... Те таврăнать ĕнтĕ—турă анчах пĕлет.

Вăл калаçнинчен, хăйне епле тыткаланинчен вăл нимĕнле ырă ятлă пулма тăрăшни те сисĕнмерĕ; пĕтĕмпех тĕрĕс, чунтан калаçрĕ. Хăть пирĕн те хăш-пĕр чухне, хăш-пĕр çĕрте тӳлеменни пулкалать пулин те—пĕлмест вăл ăна; анчах «колчаксем» çинчен вара кашни ялтах пĕр сăмах: çаратаççĕ, тӳлемеççĕ, пĕтĕмпех йăтса тухса каяççĕ,—тени çеç илтĕнет.

Эпир пӳрт чӳречинчен улăхра, пиртен пĕр икçĕр-виççĕр чалăшра снарядсем епле вĕçсе киле-киле çурăлнине курса ларатпăр. Çĕртен кăшт çӳлерех пĕрре кунта, тепре унта, пĕрин хыççăн тепри çăра хура тĕтĕм пĕлĕчĕсем курăна-курăна каяççĕ те, çавăн хыççăн сывлăш чĕтренсе илет, çĕр кисренет, чӳречесем хăнкăрав пек тĕрлĕ сасăпа чăнкăртатса каяççĕ. Тăшман пирĕн цепьсем тăрăх перет, анчах лектерейместь,—темиçе вуншар чалăш мала ирттерсе ярать... Эпир хамăрăн артиллери çитессе кĕтетпĕр, килсе çитсенех ăна ĕçе яма хатĕрленетпĕр. Вара эпĕ пӳртрен тухрăм та, пĕр сăрт çине хăпартăм, выртрăм çавăнта. Сасартăк пĕр хĕрарăм чупса çитрĕ. Йĕри-тавра пăхкаласа илчĕ те, саппунĕ айĕнчен темскер туртса кăларса:

— Ме-ха, ме, часрах,—тесе мана тыттарчĕ.

Пăхрăм та—çăмарта; нимĕн ăнланмасăр, тĕлĕнсе кайса, ун çине куçсене чаркаласа пăрахса пăхса ларатăп.

— Мĕн чухлĕ тӳлемелле?—тетĕп.

— Ара, мĕн калаçатăн, ачам!—тесе кăмăлсăрланчĕ вăл.—Çиессӳ килет пуль... Мĕн укçи çинчен калаçмалли пур, çи-ха, çи часрах,—терĕ.

Хăйваскать вăл; васкаса калаçнинчен те, хăйне хăй тыткаланинчен те курăнать: калать-калать те, çаврăнса пăхать; ялтисем курасран хăрать; шуррисем килĕç те—каласа парĕç, вара инкекрен хăтăлаймăн, тесе шутлать.

— Мĕнле-ха капла, укçасăрах?—тесе ыйтатăп.

— Манăн тăванăм... тăван шăллăм сирĕнпе пĕрле çапăçать... Вăл та Хĕрлĕ Çарта кĕрешет... Сире шуррисем питĕ çĕмĕреççĕ, тесе калаçатчĕç. Самарăна туртса илнĕ тетчĕç; тĕрĕс-ши вăл?—ыйтрĕ.

— Çук, чунăм, тĕрĕс мар,—тетĕп.—Пачах та тĕрĕс мар. Қам-кама хĕненине халĕ хăвах куратăн вĕт.

— Куратăп çав... Ну, сывă пул-ха, савнă çыннăм,— терĕ юлашкинчен.

Вăл вара сăрт çинчен васкасах анса кайрĕ, пытанкаласа, çаврăна-çаврăна пăхкаласа, пӳртсем хушшине кĕрсе кайса çухалчĕ... Эпĕ вара тĕлĕнмелле, савăнăçлă, халиччен нихçан пулман шухăш-кăмăлпа хумханса ларса юлтăм. Çăмарта çине пăхатăп та тем пирки кулатăп; çак простой, лайăх хĕрарăм çинчен шухăшласа, унăн кăмăллă сăнне аса илетĕп. Пур çав пирĕн,—тетĕп эпĕ,—çакнашкал Скобелево пек шăтăкра та хамăрăн çынсем пур пирĕн... Вĕсем нумайăшне, тен, тĕплĕн ăнланмаççĕ те пулĕ, анчах кам ăçталла кайнине хăйсем чĕрисемпе сиссе пĕлеççĕ... Акă вăл, хĕрарăм, пăх-халĕ ăна: кĕтнĕ вăл... кĕтсе илчĕ илчех... савăнать халь... ĕнтĕ хăй савăнăçне мĕнле палăртмаллине те пĕлмест... çăмарта килсе тыттарчĕ...

## 2. ЦЕПЬРЕ

Артиллери килсе çитрĕ те, ăна çул кăтартса ятăмăр. Лашасем йывăр тупăсене вар тăрăх аран сĕтĕрсе кайрĕç. Эпир батарея цепьсем хыçне çитсе чарăннине сăнаса тăратпăр; акă малтанхи тупăран вут тухса кайрĕ: бббах... бббах... Малалла—пĕр чарăнмасăрах ухлатма пуçларĕ. Цепьсем, хамăр артиллери пенине илтсен, малалла савăнăçлăрах кайрĕç... Эпир лашасене утланса, хамăрпа ординарецсем илсе, малалла вĕçтертĕмĕр. Сăрт çине хăпарса çитрĕмĕр; Пилюгино ялĕ унтан ал тупанĕ çинчи пекех лайăх курăнать: тӳрĕ çулпа кайсан, кунта виçĕ çухрăм та пулас çук. Цепьсем патне çитсен, флангсем тăрăх икĕ еннелле уйрăлса кайрăмăр: Чапаев—сылтăмалла, эпĕ—сулахаялла.

— Юлташ,—терĕ мана вестовой,—мĕн унта, пăх-ха авă: те чакаççĕ пирĕн, чупаççĕ ав... кунталла килеççĕ, курăнать?—терĕ.

Эпĕ пăхрăм та, чăн та, халăх темле пăтраннине куртăм,—красноармеецсем вырăнтан вырăна чупса куçаççĕ; цепь пĕрре чăмăртанса кĕскелет, унтан каллех сарăлса каять... Эпир çавăнталла чуптартăмăр. Вара мĕн пулнине часах ăнланса илтĕмĕр: цепь çĕнĕлле йĕркеленсе, урăх еннелле кайма тытăннă-мĕн.

Хирте кунта хĕвелçаврăнăш акнă; эпир çӳлĕ хĕвелçаврăнăш тунисем хушшипе аран иртсе пыратпăр. Цепĕн

малтанхи ретне çитсен, лашасем çинчен антăмăр. Вестовой пирĕн хыçран пĕр вăтăр утăмра пырать; эпĕ хам цепе выртрăм. Манпа юнашар икĕ енче те икĕ ача— çилпе-хĕвелпе хуралса кайнă сăн-питлĕ çамрăксем выртаççĕ; иккĕшĕ те сарлака хулпуççиллĕ, патвар, кутамас ачасем—Сизовпа Климов. Наступлени тунă чухне цепьре питех те шăп, çын калаçнине те илтейместĕн,—хутран-ситрен команда пани çеç янраса каять е такăшĕ ӳсĕрсе илни, сурса пăрахнă сасă хăлхана килсе кĕрет. Тата сайра-хутра хăшĕ-пĕри ăнсăртран сăмах хушса хурать. Çак вăхăт çынна яланах калама çук тарăн шухăша ярать: пульăсем шăхăрса, çунтарса, янраса тăнă чухне, кашни самантрах вăл санăн пуçна, урусене, кăкăрна шăтарса каяссине çеç кĕтсе выртнă чухне—сăмах вакласси, калаçса тăрасси асра та çук. Эсĕ тем-тем çинчен те сĕмленсе, е пĕр-пĕр кăткăс япала çинчен тарăн шухăша кайса тăратăн. Тимлĕн шутла пуçлатăн, ним çинчен те шарламастăн, тарăхнă пек те пулатăн. Шухăшсем пăтранаççĕ, эсĕ пĕр труках епле те пулин хăвăртрах, епле те пулин нумай япала çинчен аса илме тăрăшатăн; санăн пĕр самантрах нимĕне те манса хăвармасăр, ниме те ирттерсе ямасăр, пурне те астуса юлас килет... Вара шăпах чи кирлине астуса илмен пек туйăнса каять; анчах хăвăн çав вăхăтрах тем пекех васкамалла, хыпаланмалла пек туйăнать.

Цепьсем тăтăшран тăтăш, хăвăртран хăвăрт перебежка тăва пуçларĕç... Тăшман патне çывхарнăçемĕн çывхарса пыраççĕ... Питех те çывăх тăрса юлать... Тепĕр минутранах—перебежка тăвасси пĕтет, юлашки перебежка хыççăн—атакăна каймалла... Çак хăрушă самантшăн, шăпах çав атакăшăн васкатăн та ĕнтĕ халь пурне те пĕр харăсах, часрах астуса илме... Унта вара—чикĕ, хуп-хура тĕпсĕрлĕх...

Эпĕ красноармеецсем хушшине кĕрсе выртрăм. Вĕсем пăрăнса мана вырăн пачĕç, ман çине ним тĕлли-паллисĕр пăхса илчĕç, нимĕн те ыйтмарĕç,—мĕнле выртнă, çаплипех шарламасăр юлчĕç... Эпĕ те ним шарламасăр выртрăм; анчах çак вилĕм пек сас-чĕвĕсĕр шăплăхра мана чăтма çук йывăр туйăнса кайрĕ,—кĕсъерен табак енчĕкĕ кăлартăм та, чикаркка çавăрса туртса ятăм...

— Туртассу килмест-и, юлташ?—тесе ыйтрăм кӳршĕрен.

Вăл пуçне çĕклерĕ те, ман сăмаха çийĕнчех ăнланайман пек, ман çине тĕлĕнсе пăхса илчĕ; анчах унтан та ытларах вăл кунта, халĕ, кĕтмен çĕртен сасартăк çын сассине илтнинчен тĕлĕнсе кайрĕ. Вăл пĕр самант çеç шухăшласа тăнă вăхăтра эпĕ ун куçĕсем çав тери çуталса, савăнса кайнине куртăм.

— Вăл та ĕç, пар эппин,—тесе тăсрĕ вăл аллине енчĕк еннелле.—Эй, Сизов,—чĕнчĕ вăл юлташне,—мĕн тăпра чăмласа выртатăн? Ме-ха акă, туртса яр пирĕнпе пĕрле,—терĕ.

Сизов та, Климов пекех, пуçне майĕпен çĕклесе, пирĕн çине тĕксĕм, хаяр куçĕпе пăхса илчĕ; унтан чикарккă çавăрса туртса ячĕ те, хăй те савăнăçлăрах пулса кайрĕ... Нимĕнле калаçу та çук; уйрăм сăмахсемпе çеç: нӳрĕ... чикет... сӳнчĕ... авă вĕçсе килет,—текелесе, перкелешсе илетпĕр.

— Перебежка!!!—тенĕ команда янраса кайрĕ.

Çав самантрах сиксе тăтăмăр. Пĕр харăс, резина пӳске пек, тапса сикрĕ пĕтĕм цепь. Анчах вăл мĕнпур пĕвĕ тăршшĕпех çĕкленсе тăмарĕ, çапла курпунланса тăнипех хытса юлчĕ.

— Бегом!!!—тени янраса кайрĕ çав самантрах.

Пурте чупма тытăнчĕç, винтовкисене хăйсен умĕнче малта тытса пыраççĕ... Эпĕ те, пĕкĕ пек авăнса, ухсахланă пек тикĕс мар чупса кайрăм. Тăшман пулеметсемпе шатăртаттарма пикенчĕ; пăшалпа васкаса, харăсхарăс пеме тапратрĕ.

— Ложись!—тесе янраса кайрĕ çавăнтах çĕнĕ команда.

Пурте çĕре ӳксе тăрăнтăмăр... Епле ӳкнĕ, пĕр самант хушши çавăн пекех пĕр хускалмасăр выртрăмăр. Унтан цепь вăраххăнах йăшăлтатма тытăнчĕ; боецсем пуçĕсене çĕклесе, ун-кун пăхкала пуçларĕç. Қам маларах пырса ӳкни халĕ, ыттисемпе танлашас шутпа, каялла упаленсе чака пуçларĕ, каярах пырса тăрăннисем хуллен малалла упаленсе шăваççĕ; пĕчченшерĕн нихăшĕ те—хыçалта та, малта та пуласшăн мар.

Қлимов, хăвăртрах чупнипе пиртен маларах кайса тăрăннăскер, халĕ рак пек каялла шуса чакать; эпĕ пăрăнман пулсан, вăл хăйĕн американла тем пысăкăш щиблечĕн тем хулăнăш тĕпĕпе мана тӳрех питрен пырса лектеретчĕ...

Пĕр шарламасăр выртатпăр, çĕнĕ команда парасса кĕтетпĕр. Урăх чĕлĕм туртса аппаланмастпăр, хăрахшар сăмахăн калаçни те çук. Климов Сизовпа юнашар выртаççĕ. Климов темиçе минут каярах калаçнă чухне хăйне çăмăлрах пек туйăннине аса илчĕ курăнать,—вăл Сизовпа калаçма тапратасшăн пулнине илтетĕп:

— Сизов,—тет.

— Мĕн сана?

— Хурт-кăпшанкă авă, куратăн-и?—пӳрнипе курăка тĕртсе кăтартать.

Сизов ăна пĕр сăмах та чĕнмест: куç харшине пĕрсе тĕксĕмленнĕ, шарламасть...

— Сизов,—тесе çыпçăнать лешĕ каллех.

— Ну, мĕн ара?—тет лешĕ кăмăлсăр, калаçасси килменнипе.

Климов хăй те нимĕн те чĕнсе тавăрмарĕ: вара ассăн сывласа илчĕ те, шухăшĕсене пуçтарнă пек пулса:—

— Любанькăна Пронино ялне качча панă вĕт,—тесе хучĕ хуллен.

Хăйсен ялĕнчи хĕре аса илчĕ курăнать; тен, вăл хăйĕн савниех пулнă,—кам пĕлет. Сизов ку хутĕнче те ăна хирĕç пĕр сăмах та шарламарĕ. Ĕç тухас çуккине кура, Климов та шăпланчĕ; манпа калаçасси килмерĕ курăнать; çĕр çумне тĕршĕнерех выртрĕ те, вăл пӳрнипе çурхи сайра курăк хушшипе йĕрлесе çӳреме тытăнчĕ; е хурт-кăпшанка пусса вĕлерет те, лешĕ унăн вараланчăк пысăк пӳрни çинче епле турткаланса вилнине сăнаса пăхать, е тăпра тĕмескине хăйпăтса илет те, пӳрнипе ватса, пĕр пĕрчĕ юлмичченех пĕрчĕн-пĕрчĕн юхтарса выртать.

— Перебежка!.. Бегом!!

Çăмăллăн сиксе тăратпăр та, ăсран кайнă пек, сăнпите тискерлетсе пăрахса, сăмса шăтăкне çулăм кăларса сывланă пек сарса пăрахса, малалла чупатпăр. Çав вăхăтрах кĕтетпĕр. Чупатпăр та кĕтетпĕр, чупатпăр та кĕтетпĕр—«Ложись!» текен кăмăллă командăна.

Вара çавăнтах—вилсе хытнă çын пек персе анатпăр, пĕтĕм ӳт-пĕве чăмăртаса, çĕр çумне тĕршĕнсе выртатпăр, тимĕр шапа пек хутланса кĕретпĕр; унтан вара вăраххăн лăпланма тытăнатпăр, ал-урасене сиктере пуçлатпăр, хăра-хăрах йĕри-тавра пăхкаласа илетпĕр.

Маруся Рябинина та кунтах, вăл—вунтăхăр çулхи

хĕр; вăл та винтовкăпа; пуçне мăнкăмăллăн тытса утать, ыттисенчен пĕртте юласшăн мар. Вăл, пирĕн хаклă тусăмăр, хăйĕнпе тепĕр виç-тăват кунтан мĕн пулассине ун чухне пĕлмен çав; вăл Заглядкино ялĕ патĕнче наступление шыв урлă каçса кайнă чухне, атакăна хальхи пекех чи малтан ыткăнсан, тăшман пульли ăна тӳрех çамкинчен пырса тивсе вĕлерессине çинчен, унăн ăшă кĕлетки вара Кинель шывĕн юнланса пĕтнĕ сивĕ хумĕсемпе юхса каясси çинчен ун чухне шухăшлама та пултарайман... Халь вăл та кулкаласа пăхса пырать; мана вăл темĕнскер кăшкăрса каларĕ, анчах эпĕ инçетрен илтсе юлаймарăм...

Эпĕ хам земляксене курманни икĕ уйăх çитет ĕнтĕ; Лопарьпе Терентий Бочкин та кунтах пулнине те пĕлме ĕлкĕреймерĕм; вĕсем урăх полксенче çапăçса çӳресе йăлăхнă хыççăн каллех кунта, Иваново-Вознесенск полкнех таврăннă-мĕн.

Терентие ку хутĕнче эпĕ такки кураймарăм вара.

Лопарь пĕчĕк шурлăхăн тепĕр вĕçĕнчен ман еннелле хăйĕн коммунарка-çĕлĕкĕпе сулласа, хăйĕн хĕрлĕ кăтра çӳçне вĕлкĕштерсе иртнине курса юлтăм...

Пурте—хамăн паллакан, хаклă сăн-питсем... Анчах кĕтсе тăма вăхăт çук—арпалăхсем патне çитме пĕр çĕр чалăш çеç юлать. Қашни самантрах—унтан калама çук вăйлăн çунтарма тытăнассине кĕтсе тăмалла. Çапла тума фронтра питех те юратаççĕ: тăшмана пăшалпа тĕллеççĕ те пĕр шарламасăр кĕтсе выртаççĕ, ăна пит çывăх пырса çитме параççĕ; унтан вара сасартăк пулеметсемпе шатăртаттарма тапратаççĕ, пăшалсемпе пĕр харăс-харăс пеме пуçлаççĕ, тăшмана пĕр хĕрхенмесĕр, пĕр чарăнмасăр çулса тăкаççĕ, çын виллине хăйсен умне ĕречĕ-ĕречĕпе, купи-купипе ӳкерсе тултараççĕ; тăшман каялла чакма пуçласан, ытарайми савăнаççĕ; вăл хытăрах тарма тапратсан, ăна хыçалтан пушшех хытă çунтараççĕ; çитменне ун çине ăçта та пулин çывăхра пытанса тăракан юланутлă çара кăларса ярса, вилес пек хăраса ӳкнĕ, йĕркерен тухса, ăсран кайсах таракан тăшмана пĕр çын юлмиччен тураса тăкаççĕ.

Эпир пурне те кĕтсе илме хатĕр. Сылтăм енчен сасартăк пăшалсемпе икĕ хут харăс кĕрслеттерсе ячĕç, çавăнтах пулемет тăрăлтаттара пуçларĕ. Вестовой мĕн пулнине пĕлме вĕçтерчĕ; тепĕр икĕ минутран вăл: пирĕн

нисем сылтӑм флангра тӑшмана ответлеттерес тесе пеме пуҫлани ҫинчен пӗлтерчӗ. Анчах нимӗнле ответ та ҫук. Тӑшман ку ялтан тухса кайнӑ тесе шутлама пулать, анчах хаяр опыт тӑрӑх вӗреннӗскерсем, пирӗн цепьсем арпалӑхсем еннелле пит асӑрханса, майӗпен шуса пыраҫҫӗ. Ҫак вӑхӑтра пулеметчиксем, вӗсемпе пӗрле хӑшпӗр красноармеецсем те, пулемета вӑр-вар тытса ҫӗклерӗҫ те, пӗр ҫывӑхри арпалӑх патне чупа пачӗҫ, унта пулемета вырнаҫтарса лартса, пеме хатӗрленсе тӑчӗҫ. Анчах—шӑпах... — Сылтӑм фланг енчен таҫта аякра «урра» кӑшкӑрни кӗрлесе кайрӗ,—ку вӑл пирӗн цепьсем атакӑна ыткӑнчӗҫ, унта яла сыхлама хӑварнӑ тӑшман чаҫӗсене ҫапӑҫмасӑрах тытса илчӗҫ. Сулахай енчен, сӑрт хыҫӗнчен, тупӑ пӗрин хыҫҫӑн тепре виҫҫӗ пенӗ сасӑ кӗрлесе илтӗнчӗ... Кӗрлесе уланӑ сасӑ пӗчӗккӗн вӑйсӑрланса пырса, чарӑнса ларчӗ; таҫта аякра снарядсем ӳксе ҫурӑлни ҫеҫ илтӗнкелет; апла пулсан ку—Пилюгино ялне пени мар; тӑшман хӑй таҫта аяккалла перет пулмалла. Кайран тӗпчесе пӗлнӗ тӑрӑх, вӑл чи сулахай хӗрринчи флангран хӑйне ҫавӑрса илме пыракан чаҫсене пени палӑрчӗ; хӑйне ҫавӑрса илесшӗн пулнине сиссе, вӑл васкасах чакма тытӑннӑ, пире хирӗҫ пӗчӗк чаҫсем анчах хӑварнӑ; ҫакна эпир кайран тин пӗлтӗмӗр, анчах халӗ нумайӑшӗ уҫӑмлӑ паллӑ мар-ха, ӗҫ мӗнле пулса тӑрассине пӗлмелле мар. Пулеметчиксем арпалӑх тӗлӗнче вырнаҫса тӑрсан, эпир батальон командирӗпе пӗрле: вӗсем анкартисенче мӗн те пулин курман-и, асӑрхаман-и тесе ыйтса пӗлме пытӑмӑр; анчах пур ҫӗрте те халиччен хи пекех шӑп, никам пурри те палӑрмасть—шуррисем те, ял ҫыннисем те курӑнмаҫҫӗ, ял вилсе вы́ртнӑ пекех туйӑнать. Йӗри-тавра асӑрханкаласа пӑхса, капансем хыҫне, арпалӑхсемпе лупасайсем хыҫне ухтаркаласа, вӑраххӑн малалла иртсе пыратпӑр; пӗр сас-чӳ те, пӗр сӑмах та, пенӗ сасӑ та илтӗнмест—ҫакнашкал шӑплӑхра пенӗ чухнехинчен темиҫе хут хӑрушӑрах. Фронтри шӑплӑх вӑл—калама ҫук хӑрушӑ, асаплӑ япала.

Пирӗн хыҫран инҫех мар иваново-вознесенецсем пыраҫҫӗ,—вӗсен хӗрлӗ ҫӑлтӑрӗсем арпалӑхсемпе утӑ капанӗсем хушшинче унта та кунта вӗлкӗшсе иртеҫҫӗ. Ҫапла ӗнтӗ эпир васкаса, мӗн пулассине пӗлмесӗр, калама ҫук пӑчӑ шӑплӑхра, кашни секундрах сасартӑк пеме пуҫлассине кӗтсе пыратпӑр...

Малта хĕрарăм кĕлетки курăнса кайрĕ: хресчен хĕрарăмĕ пулас. Часрах ыйтса пĕлес пулать унран...

Çавăнталла юрттартăмăр...

### 3. ЯЛА ПЫРСА КĔНИ.

Хресчен хĕрарăмĕ нӳхреп умĕнче ман çине пăтранчăк куçĕсемпе çав тери хăраса, тинкерсе пăхса тăрать. Ун сăн-питĕнчен пăхсан, вăл тин çеç тӳссе ирттернĕ асап-хурлăхран хăраса ӳкни палăрать; вăл каллех çĕнĕ инкек, ниепле те ирттерсе яма çук тепĕр инкек сиксе тухасса кĕтсе тăни курăнать; вăл хăйне ак-ак пырса çапас пек, çапассинчен хăтăласшăн пулнă пек, анчах ниепле те хăтăлма пултарайман пек, çавăнпа çакна ăнланмасăр тĕлĕнсе кĕтсе тăнă пек туйăнать. «Час çапĕ-ши?»—тесе ыйтнă пек туйăнать, ывăнса çитнĕ питкуçĕнчен пăхсан; çитменнине вăл, асапланса пĕтнĕскер, пĕрремĕш хут анчах мар, ман çине çеç те мар çапла: «Час-ши?», тесе ыйтса пăхса тăрать. Ун çумĕнче, пӳрт çывăхĕнче, нӳхреп виттине кăшт çĕклесе, нӳхрепрен тепĕр асапланса пĕтнĕ, шурса кайнă, çурри-вилĕ хĕрарăм сăн-пичĕ пăхса тăни курăнать: куçĕсем айĕнче унăн—кăн-кăвак кăвакарса, хăпарса тухнă; тутисем типсе кайнă, пуçĕ тавра явăласа тултарнă çĕтĕк-çатăк айĕнчи çӳçĕсем тăлпаланса пĕтнĕ. Унăн хурлăхлă куçĕнчен пăхсан та вăл тархасласа йăлăнни курăнать.

— Шуррисем кунта-и, тухса кайрĕç-и?—тесе ыйтатăп вĕсенчен.

— Кайрĕç, тарчĕç, тăванăм,—терĕ нӳхрепрен пуçне кăларса пăхса тăраканни.—Пирĕн тухма юрать-и кунтан, тăванăм? Тата перетĕр-и-ха?—тесе ыйтрĕ.

— Çук, çук, урăх пеместпĕр, тухăрах.

Вара нӳхрепрен хĕрарăмсем пĕрин хыççăн тепри туха пуçларĕç; хĕрарăмсем анчах—арçынсем çук. Вĕсемпе пĕрлех тата пĕчĕк ачасем йăшăлтатса тухрĕç; вĕсене одеялсемпе, чăпта татăкĕсемпе, михĕсемпе чăрка-чăрка пĕтернĕ,—çăнăх миххи хăйсене шрапнельтен çăлĕ, тесе шутланă курăнать... Сарлака шурă сухаллă, йĕпенсе тăракан куçлă старике типсе кайнă вăрăм аллисенчен тытса туртса кăларчĕç. Ун пилĕкне вăрăм вĕренпе çыхса янă, ăна нӳхрепе çак вĕренпе çыхса антарнă курăнать.

Нӳхрепрен пĕрин хыççăн тепри йăраланса тухса пĕтсен, вĕсем картасенчен тыткаласа, йĕри-тавра хăракала-

са пăхса, хăйсен пӳрчĕсем еннелле йăкăштаттарса утрĕç. Хăйсем хăранипе асапланса пĕтнĕскерсем, сивĕ те чĕрĕ нӳхрепре шăнса кӳтнĕскерсем вĕсем, çак тупăкри пек хурлăхлă шăплăхра халь те хăра-хăрах, çатан çумĕпе тĕссĕр ĕмĕлкесем пек шуса пыни чун-чĕрене чĕтретсе хумхантаракан картина пулса тăчĕ!

Урам кĕтесĕнче тăват-пилĕк хресчен кĕпĕрленсе тăрать: вăрçă пĕтни-пĕтменнине вĕсем те пĕлмеççĕ-ха; те кунта тăма юрать, те юрамасть, те каллех сарайсем, мунчасем, нӳхрепсем тăрăх тарса пытанмалла, тесе иккĕленсе тăраççĕ вĕсем.

— Сывă-и юлташсем!—кăшкăртăм вĕсене.

— Сывă-ха... Хусамăр сывă-и, юлташ?—терĕç вĕсем харăссăн.

— Тавтапуçах, кĕтсе илтĕмĕр,—терĕç...

Çак саламлă сăмахсене ĕненмелле-ши, çук-ши?—хам та пĕлместĕп. Тен, хăранипе вĕсем шуррисене те, ан тĕкĕнччĕр тесе, çаплах кĕтсе илнĕ пуль. Анчах сăнĕсенчен пăхрăм та, вĕсем чăн-чăнах хĕпĕртенипе, унашкал юри савăннă пек тума май çуккине, ун пек савăнăçа уйрăмах чеелĕхсĕр хресчен пичĕ çинче юри палăртма çуккине лайăхах курса ăнлантăм. Çавăнпа хама та савăнăçлăн туйăнса кайрĕ.

Эпир ял варринелле утрăмăр.

Унта тепĕр ушкăн, анчах ку вара хресченсем мар курăнать.

— Эсир, тыткăна лекнисем-и мĕн?—тесе ыйтатăп.

— Так точно, тыткăна лекнисем,—теççĕ.

— Мобилизаципе кайнисем-и?

— Так точно, мобилизаципе кайнисем çав.

— Ăçтисем?

— Акмолинск облаçĕнчен.

— Миçен эсир кунта?

— Пĕр вăтăр çынна яхăн акă, ыттисем лупасайĕсене пытанса пĕтнĕ. Авă ара, пахчасенчен чупса килеççĕ.

— Хăвăр кăмăлăрпах юлтăр пулать апла?

— Так точно, хамăр кăмăлпах.

— Хĕç-пăшалăрсем ăçта сирĕн?

— Ав çавăнта, хӳме çумне купаласа хутăмăр.

Кайса пăхатăп та, чăн та: пĕр купа винтовка. Винтовкăсем патне те, тыткăна лекнисем патне те хамăр

çынсене тăратрăмăр, дивизи штабне яриччен сыхлама хушрăмăр.

Тыткăна лекнисем питĕ начар, мĕскĕнĕн тумланнă,— хăшĕ кĕрĕк ланчашки тăхăнса янă, хăшĕ сăхман, хăшĕ çĕтĕк пальто; урисенче те нимĕн латти çук,—хăшĕ çăматă тăхăннă, теприсем çăпата сырнă; атти те, çăпати те йăлтах çĕтĕлсе пĕтнĕ, тăпăлса тухнă. Вĕсене, çапла çĕтĕк-çатăк тумланнăскерсене, пĕртте çар тесе калама çук, босяк ушкăнĕ çеç теме пулать. Ирĕксĕрех: мĕншĕн вĕсем çав тери начар тумланнă-ха, Колчак çарне ют патшалăхсем тĕрлĕрен япала ярса пулăшаççĕ-çке-ха?— тенĕ шухăш килсе кĕрет.

— Мĕн эсир,—тесе ыйтатăп:—питĕ начар тумлантарнă-çке сире Колчак? Пурте çакнашкалах-и?—тетĕп.

— Çук, пире анчах начар тумлантарнă,—теççĕ вĕсем.

— Мĕншĕн-ха апла?

— Эпир пĕрмаях вăрçасшăн мар пулса... Пирĕнтен нумайăшĕ хăшĕ килĕсене, хăшĕ Хĕрлĕ Çара тарса пĕтрĕç...

— Апла Колчак патне эсир хăвăр ирĕкĕрпе кайман иккен?

— А мĕне кирлĕ вăл пире... Хăйĕннисене вăл ылттăн та кĕмĕл, яп-яка тумлантарчĕ; пире вара, пăхăр акă...— терĕç те вĕсем, хăйсен çĕтĕк-çатăк тумтирĕсене кăтарта пуçларĕç.—Çитменнине пире пĕрмаях малти рете, вутхĕм айнех хăваласа кĕртетчĕ: сирĕн пеккисене хĕрхенме те кирлĕ мар,—тетчĕç.

— Апла сирĕн тахçанах тармалла пулнă...

— Тарма ниепле те май çук çав: пирĕн хыçа вăл хăй çыннисене тăратрĕ,—вĕсем çапăçмастчĕç, пире тарасран анчах сыхлатчĕç...

— Халĕ майне мĕнле тупрăр-ха апла?

— Ара, пурте пахчасенче, йăрансем хушшинче пытанкаласа юлтăмăр та, кĕтсе выртрăмăр... Кайран вара тухрăмăр.

— Халĕ ăçта каяс тетĕр-ха ĕнтĕ: пирĕн Хĕрлĕ Çара кĕретĕр-и?

— Так точно, Хĕрлĕ Çара кĕрес тесе юлтăмăр та ĕнтĕ эпир. Ăçта каяс-ха тата пирĕн? Çапла тăвас тетпĕр те.

Калаçу çакăнпа пĕтрĕ.

Ял тăрăх эпир тăшман чакса тарнă еннелле, ту патнелле юрттартăмăр. Пирĕн чаççем ту çинелле упаленсе хăпарма тытăннă та ĕнтĕ, хăшĕсем кĕпер урлă кĕпĕрленсе каçаççĕ, теприсем хăйăр хывса кайнă тĕлте ăшăх вырăн шыраççĕ.

— Шуррисем кунта нумайăн пулчĕç-и?—тесе ыйтатăп çул çинче.

— Пине яхăн пулнă пулĕ...—теççĕ хресченсем.

Анчах çак «пинсене» нихçан та тӳрех ĕненме юрамасть; тепĕр чухне çак «пинрен» пилĕк-ултă пин пулса тăрать, е тата икçĕр çын çеç те тăрса юлать. Кайран тин, темиçе тĕслĕ хыпара тата тыткăна лекнисем каласа панине пĕрле танлаштарса пăхсан тин, вĕсем чăннипе мĕн чухлĕ пулнине палăртса çитерме пулать. Мĕнле тесен те, обозсем тăрăх шут туса пăхсан, кунта çар нумай пулни курăнать. Тăшман кунта, Пилюгино ялĕнче, ăна сулахай флангран хыçала тухса çавăрса илессинчен хăранипе пулас, яланхи пекех çине тăрса нумай çапăçса тăмарĕ.

— Шуррисем тарни нумай пулмасть-и?—тесе ыйтатпăр.

— Нумаях пулмасть,—теççĕ хресченсем.—Халь çеç акă, сирĕн умĕн çеç тухса кайрĕç. Ту çийĕпе инçех те каяйман пулĕ-ха вĕсем.

Анчах пирĕн ывăнса çитнĕ чаççем тăшмана хăваласа каяймаççĕ; йĕрлеме кавалерие кăларса ярсан лайăх пулĕччĕ те вĕт, анчах кавалери сахал-ха пирĕн, çавăнпа ун çине те шанмалли çук.

Ыттисенчен иртсе, ту çине улăхса çитнисем тăшман обозне тытса илме ĕмĕтленме пăрахман-ха. Анчах шуррисен тĕп обозĕ тахçанах тухса, инçене кайма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ, çавăнпа кунта ун пĕчĕк пайне çеç туртса илме май килчĕ.

Пилюгино ялĕ ту айĕнче ларать. Ку ту питех те чăнкă. Кĕпер урлă каçнă хыççăн ту тăррине хăпарса çитме пит йывăр. Кунта вара, хыпаланнă хушăра, ăнсăртран пĕр хурланмалла ĕç пулса тăчĕ: малта пыракан чаççем чăнкă ту тăррине хăпарса çитсенех, тăвайккин тепĕр вĕçĕнче шуса пыракан цепьсене асăрханă та пеме пуçланă; лешсем вĕсене хирĕç пеме тапратнă. Перестрелка тытăнса кайнă. Анчах ку хамăрăн пулнă иккен, хамăрăнне палласа илеймен. Иккĕшне вĕлернĕччĕ вара, пилĕк çынна амантнăччĕ. Ку ĕç пушшех те инкеклĕ пулма пултаратчĕ

те, анчах леш, ту хыҫӗнчен, сулахай енчен хӑпаракан полк командирӗ ҫакна ҫийӗнчех асӑрхаса илни ҫӑлчӗ; вӑл пурнӑҫне хӗрхенмесӗрех хир тӑрӑх, перекенсене хирӗҫ, сывлӑшра тутӑрӗпе ҫӗлӗкне сулласа чупнӑ; перекенсем патне ҫитсен вара, ӗҫ мӗнле пулнине ӑнлантарса панӑччӗ.

Эпир ту ҫине улӑхса ҫитсен, кунта кавалеристсем пӗр утмӑл ҫын хӑйсен тарласа, кӑпӑкланса кайнӑ лашисем ҫинчен анса, пире кӗтсе тӑнине куртӑмӑр та, вӗсене икӗ пая уйӑрса: пӗр пайне сулахаялла—тӑшмана хыҫалтан ҫавӑрса илме кайнӑ хамӑр чаҫсем ӑҫтине пӗлсе килме хушса ятӑмӑр, тепӗр пайне сылтӑмалла, тӑшман обозӗсем тарнӑ еннелле кайма хушрӑмӑр. Анчах тӑшмана ҫавӑрса илме кайнӑ чаҫсемпе ниепле те ҫыхӑнасси пулмарӗ—унта темӗнле предательство пулни палӑрчӗ те, темиҫе ҫынна тытса хупмалла пулчӗ, ӗҫне трибунала памалла пулчӗ. Анчах вӑл вӑхӑтра эпир ун ҫинчен нимӗн те пӗлмен-ха; пирӗн полксем тӑшман тылне ҫитсе кӗрсессӗнех, тӑшмана ҫӗмӗрсе пыма пире ҫӑмӑл пулать, тесе шанса тӑнӑ.

Анчах пирӗн полксен тӑшман хыҫне кӗресси такки пулаймарӗ; тӑшман ҫарӗсем кунтан лӑпкӑнах, наказанисӗрех, обозӗ-мӗнӗпех чакса тарчӗҫ. Сылтӑмалла янӑ разведчиксене, пӗр виҫҫӗр чалӑш кайсанах, шуррисен каялла чакакан цепӗсем хытӑ пеме пуҫларӗҫ; вӗсен вара пӗр типӗ вара анса, малалла вӗтлӗх вӑрман витӗр каймалла пулчӗ.

Часах ту ҫине тачанкӑпа пирвайхи пулеметчик хӑпарса ҫитрӗ. Эпӗ ӑна хампа пӗрле илтӗм те, иксӗмӗр эпир малта хумханса, чӳхенсе пыракан тӑшман цепӗсем еннелле кустарса кайрӑмӑр. Вӗсем тӳрем уҫланкӑ тӑрӑх вӑрман енне васкаса чакаҫҫӗ; пирӗн кавалери ҫукпа пӗрех иккенне пӗлмесӗр, хӑйсене кавалери хӑваласа ҫитсе тапӑнассинчен хӑраҫҫӗ курӑнать. Эпир, пулеметчикпе иксӗмӗр, паллах, вӗсене нимӗнех те тума пултараймарӑмӑр; анчах тӑшман тылӗнче кӗҫ-вӗҫ пӑшал сасси илтӗнсе кайӗ тесе, эпир йӑлтах ӗмӗтленме пӑрахман-ха; ун чухне вара кунтан хамӑрӑн пӗр пулеметпах тӑшманӑн сехрине хӑпартса, паникӑна вӑйлатса, йӗркине аркатса ярса, обозне туртса илме пулӗччӗ, тесе шухӑшласа пытӑмӑр... Анчах ҫак ӗмӗтсем кӑлӑхах пулчӗҫ. Таракансем хыҫҫӑнах йӗрлесе, эпир пӗр ҫухрӑм ҫурӑ кайрӑмӑр: разведка сылтӑмран, эпир ту ҫинчен—чакса таракан

тăшмана пĕрмаях персе пытăмăр. Вĕсем те хирĕç перепере, пĕрмаях вăрман еннелле чакрĕç, вара часах вăрмана кĕрсе çухалчĕç. Çапла вара эпир нимĕнсĕрех яла таврăнтăмăр.

Ту çийĕпе Иваново-Вознесенски полк сапаланса выртнă. Пулеметчикпе пĕрле вĕсем патнерех çывхарса çитсен, эпир, темиçе çын винтовкисене чĕркуççи çине хурса, пирĕн еннелле тĕллесе тăнине асăрхарăмăр; лешсем эпир çывăхарах çитессине анчах кĕтсе тăраççĕ. Эпĕ: «Хамăрăн пыраççĕ!»—тесе хыттăн кăшкăрса, тутăра вĕлкĕштерсе сулла пуçларăм; çапла çеç çĕнĕ инкеке сирсе ятăм. Темиçе çын пире хирĕç тăрса утрĕç; мана палласа илсен вара, пуçĕсене сулласа ахлата пуçларĕç, хăйсене киревсĕр ĕç туса хума пултарнăшăн ятласа илчĕç. Эпир ту çинчен анса, яла кĕрсе кайрăмăр.

Кунта эпĕ Чапаева тĕл пултăм; вăл чаçсене пăхса çӳретчĕ. Çав арпалăх умĕнче пулнă атакăра вăл пулнăмĕн, унтан вăл яла кĕнĕ. Лашана çавăрса, эпĕ унпа пĕрле каллех ту çинелле улăхса кайрăм.

* * *

Ял чĕрĕ пурнăçпа хĕвĕше пуçларĕ. Пур пӳртсене те красноармеецсем кĕрсе вырнаçрĕç. Хĕрарăмсем пусăсем, çăлсем умĕнче кĕпĕрленсе тăма тытăнчĕç, килĕсене шыв ăсса таврăнса, васкасах сăмавар лартса яраççĕ, килнĕ юлташсене хăналаççĕ. Халь ĕнтĕ вĕсем хăрамаççĕ; çамрăксем вара харсăрлансах кайрĕç. Ялти хĕрсем красноармеецсемпе çав тери хăвăрт паллашса, туслашса кайнинчен тĕлĕнсе анчах тăратăн.

Пăх-ха акă, халĕ те çаплах.

Ту çинче пирĕн цепь вырнаçса выртнă; кунтан инçех те мар, вăрман ăшĕнче, тăшман çарĕсем чакса пыраççĕ; сывлăшра тар тĕтĕмĕ те сирĕлсе пĕтме ĕлкĕреймен-ха, ялта вара уçса пăрахнă чӳречесенчен купăс сасси кĕвĕлесе янрать те ĕнтĕ; ун сассине илтсе красноармеецсем те, хĕрсем те хаваслансах пуçтарăнаççĕ... Часах акă кунта юрă-ташă пуçланса каять—кунсăрăн ĕç пулать-и вара!..

Хĕрлĕ полксене кунта акă мĕншĕн тата савăнăçлăн кĕтсе илетчĕç: кунта вĕсем халăха çаратма е ирĕксĕрлеме мар, кăшт та пулин кӳрентерни те, харкашни те пачах та пулмастчĕ; шăпах юлташсем патне юлташ-

сем пынӑ пек килсе кӗчӗҫ вӗсем кунта,—пӗр-пӗрне хисеплесе, пӗрне-пӗри лайӑх ӑнланса.

Нумайӑшне пӳртсенче вырӑн ҫитмерӗ, ҫавӑнпа вӗсен площадьре обозсем ҫывӑхӗнче вырнаҫса тӑмалла пулчӗ.

Красноармеецсем лайӑхрах, пысӑкрах пӳрт шыраса тупрӗҫ; кунта бригада штабӗпе дивизийӗн оперативлӑ пайне вырнаҫтартӑмӑр,—юлашки кунсенче вӑл пирӗнтен уйрӑлмасӑр, пирӗнпе пӗрлех ҫӳрет. Пралуксем карса тухрӗҫ, аппарат ӗҫлеме тытӑнчӗ, телефонсем шӑнкӑртатма тапратрӗҫ. Часах сӗтел ҫине самовар килсе ларчӗ. Сӗтел хушшине командирсемпе политработниксем вырнаҫса ларчӗҫ. Кашнийӗ пӗр-пӗрне хӑй мӗн туни ҫинчен, ҫапӑҫура мӗн курни, мӗнториссе туйни ҫинчен каласа пама васкать. Пурте пӗр-пӗрин сӑмахне пӳлеҫҫӗ, пӗр ӗҫ ҫинчен каласа пӗтерейменсӗр, теприн ҫинчен калама тытӑнаҫҫӗ; шавлаҫҫӗ, пӗри теприн сассине кӑшкӑрса хуплама тӑрӑшать, хӑйне итлеттересшӗн; анчах кашниех итлеме мар, хӑй каласа кӑтартма васкать: мӗншӗн тесен пулса иртнӗ ӗҫсем хыҫҫӑн никам та лӑпланса ҫитме ӗлкӗреймен-ха. Ӗшенсе ывӑнни таҫта кайса ҫухалчӗ. Ҫапла калаҫкаласа, шавласа ларнӑ май пӗр ҫур сехет иртсе те кайрӗ.

Сасартӑк—тем хӑямат аслати пек килсе ҫапрӗ, ун хыҫҫӑн тепре, унтан тепре... Эпир пӗр-пӗрин ҫине чӑр пӑхса илтӗмӗр, тӗлӗннипе сӗтел хушшинчен сиксе тухрӑмӑр та, тӳрех алӑк еннелле вӑркӑнтӑмӑр. Тен, кам та пулин бомба ӳкерчӗ пуль? Анчах кунта умлӑ-хыҫлӑнах виҫӗ разрыв пулчӗ-ҫке-ха... Тен, артиллери мар-ши?.. Анчах вӑл ӑҫтан пулма пултартӑр-ха кунта?

Ҫак вӑхӑтра пак!—пӑшал сасси илтӗнчӗ, ун хыҫҫӑн тепре, тепре, тепре—пӗр йӗркесӗр перкелешме тапратрӗҫ. Урапасем ҫывӑхне ушкӑнӑн-ушкӑнӑн пухӑнса ларнӑ красноармеецсем сике-сике тӑрса, тӗрлӗ еннелле чупса саланаҫҫӗ. Площадь часах пушанса юлчӗ. Хамӑрӑн пуҫ тӗлӗнче эпир тӑшман аэропланне курах кайрӑмӑр; вӑл кӗмӗл акӑш евӗр вӑраххӑн, тӳлеккӗн таҫти кӑвак инҫетелле вӗҫсе каять. Бомбӑсем кӳршӗри пысӑк пахчара ӳксе ҫурӑлнӑ-мӗн, унта пӗр красноармеец та пулман...

Часах пӗтӗм тавралӑх лӑпланса ҫитрӗ, паҫӑрхи сӑнсӑпатах йышӑнчӗ... Тулта тӗттӗмлене пуҫларӗ; вара, ҫӑмӑллӑн ҫуркуннехи лӑпкӑ, ҫӑлтӑрлӑ каҫ шӑвӑнса ҫитрӗ. Ял хушшинче шӑпах. Кунта тин ҫеҫ ҫапӑҫу пулса иртни

ҫинчен, хӑрушӑ вилӗм пур ҫӗрте те яванса ҫӳресе, хӑй парнисене антӑхса тыта-тыта кайса тӑни ҫинчен нимӗн те астутарса тӑмасть. Ыран вара, кӑшт хӗвел ҫӗкленсенех—эпир каллех похода тухатпӑр. Каллех вара, вут тавра яванса вӗҫекен лӗпӗшсем пек, пурнӑҫпа вилӗм хушшинче ҫӳреме тытӑнатпӑр...

«Ну, паян мӗнле пулать-ши ӗнтӗ?—тесе ыйтатӑн хӑвӑнтан ху кашни кунах ирсерен.—Кам чӗрӗ юлӗ-ши? Кам уйрӑлса кайӗ-ши? Кампа пӗрле тухса каймалла пулать ыранхи шурӑмпуҫӗпе, кампа нихҫан та, нихҫан урӑх курнӑҫасси пулмасть... Паянхи ҫапӑҫу хыҫҫӑн? А малалла тата та вӗҫӗмсӗр походсем, кашни кунхи хаяр ҫапӑҫусем... Ҫуркунне пуҫламӑшӗ... Колчакӑн малтанхи ӗречӗсем анчах чӑтаймасӑр чакрӗҫ-ха, а пирӗн ҫӗр пинлӗ тем пысӑкӑш массӑна йӑлтах ҫӗмӗрсе тӑкмалла вӗт-ха. Мӗн тери хакла ӳкет-ха ку ӗҫ! Мӗн тери пысӑк ҫухату пулать-ха кӗркуннеччен? Халь акӑ кунта, хампа пӗрле пыракан юлташсенчен питех те нумайӑшне шутласа кӑлараймӑпӑр ун чухне!»

* * *

Ҫакӑнта тӗплӗн ҫырса кӑтартнӑ ҫапӑҫу хыҫҫӑн Бугуруслана каймалли ҫул уҫӑлчӗ. Ҫак ҫапӑҫусенче анчах мар, мӗнпур граждан вӑрҫи тӑршшинче те, ытти хуласенчен нумайӑшне ҫӗнтерсе илнӗ пекех, Бугуруслана та йӗри-тавра хупӑрласа пынипе туртса илтӗмӗр. Пысӑк хула урамӗсенче ҫапӑҫу сахал пулкалатчӗ. Чи пысӑк, «юлашки, татӑклӑ» ҫапӑҫу яланах хула умӗнче пулса иртетчӗ; ҫак ҫапӑҫу хулана сыхласа тӑракансемшӗн ӑнӑҫлӑ пулмасан вара, вӗсем хуларан ҫапӑҫусӑрах тухса кайса, хулана ҫӗнтерекенсен аллине пӑрахса хӑваратчӗҫ. Бургуруслана та ҫаплах илнӗччӗ.

## X. БЕЛЕБЕЙ ХУЛИНЕ ÇИТИЧЧЕН

Чапаев дивизийĕ малалла пит хăвăрт пычĕ; вăл çав тери хăвăрт пынипе ытти чаçсем, вырăнлă е вырăнсăр сăлтавсене пула каярах тăра-тăра юлса, хăйсен мăранлăхĕпе комбинированнăй наступленин пĕтĕмĕшле планне пăсса вататчĕç. Питĕ мала иртсе, тăшмана самăй çамкинчен пыра-пыра çапса, Чапаев дивизийĕ тăшмана вĕлерсе пĕтерессинчен е тыткăна илессинчен ытла малалла хăваласа тартатчĕ. Походсенче пиçĕхсе çирĕпленнĕ красноармеецсем хăйсен чăтăмлăхĕпе, йывăр условисене хăнăхса çитнипе, вĕсем ĕç кирек мĕнле тăнă вăхăтра та, хăйсем кирек мĕнле ывăнса çитнĕ пулин те çапăçăва кашни сехетрех кĕрсе кайма хатĕррипе—шалт тĕлĕнтерсе яратчĕç. Тепĕр чухне нумай çухрăм хушши походра пулнă хыççăн, кайса ӳкессе çитиех ĕшеннĕ вăхăтсенче сасартăках çапăçу тапранса кайни те пулкалатчĕ. Вара ывăнни таçта кайса кĕретчĕ: çавăнтах ура çине сиксе тăрса, тăшман тапăннине парăнмасăр, хăйсем наступлени пуçарса яратчĕç, атакăна ыткăнса тăшмана хăваласа каятчĕç... Анчах çак кашни кунхи çапăçусемпе походсем вĕçне çитиех ĕшентерсе, халтан ярса çитерни те пулкалатчĕ. Ун пек чухне вара пирвайхи канмалли вырăна çитсенех, вилнĕ пекех çывăрса каятчĕç; тепĕр чухне кирлĕ пек хурал та тăратма ĕлкĕрейместчĕç, командирсем те, красноармеецсем те, хурал тăракансем те пурте пĕр харăсах çывăрса каятчĕç.

Тусем тăрăх, ансăр сукмаксемпе, тĕл пулакан шывсем урлă ăшăх вырăнсем шыра-шыра тупса каçса,—кĕперсене тăшман хăй чакнă чухне çĕмĕре-çĕмĕре хăваратчĕ,—çумăрта та, пылчăкра та, ирхи сывлăмпа та, каçхи тĕтрепе те, пĕр кун тутă, икĕ кун выçă, çи-пуçа чипер витеймесĕр, урана типĕ тăхăнаймасăр, шыçса е хăпарса тухнă урасемпе, чирлĕскерсем, час-часах аманнăскерсем,

стройран çапах та тухмасăр, ялтан яла вĕсем пĕрехмай çĕнтерсе пычĕç,—тытса чарма çукчĕ вĕсене,ниепле те çĕнтерме çукчĕ, вĕсем пурне те тӳссе ирттерме пултарчĕç, тăшмана хирĕç мăнкăмăллăн, çирĕп тăчĕç, тăшман хĕснĕ чух хăюллăн, хаяррăн çапăçрĕç, тăшмана çĕнтернĕ чух çине тăрсах хăваласа пычĕç. Вĕсем паттăрсем пек çапăçрĕç, хĕрлĕ рыцарьсем пек вилчĕç, тыткăна лексен, асаплантарса хĕн кăтартнине тӳсĕмлĕн чăтса пĕтрĕç! Çакнашкал шанчăклă вăйпа çĕнтермесĕр çапăçма юрамасть—ăна тĕрĕс ертсе пыма пĕлмелле анчах! Чапаевăн çак ертсе пыма пĕлес пултарулăхĕ питĕ пысăкчĕ, çитменнине—шăпах ç а к н а ш к а л массăна, ç а к н а ш к а л вăхăтра, ç а к н а ш к а л лару-тăрура питĕ пĕлсе ертсе пыма пултаратчĕ вăл. Масса паттăрччĕ, анчах чĕрĕ; вăхăчĕ драмăлла çивĕччĕ; çавăнпа хĕрсе çапăçнă чухнехи нумай йăнăшсем асăрханмасăрах иртетчĕç, лару-тăру уйрăмах кăткăс пулнă пирки каçаратчĕç вĕсемшĕн. Ун чухнехи масса шухăш-кăмăлĕ калама çук хĕрсе çулăмланнăччĕ, вăл шухăш-кăмăл çинчен сăмахпа ниепле те каласа пама çук: ун йышши шухăш-кăмăл урăх нихçан та пулас çук, мĕншĕн тесен вăл тĕрлĕрен тĕслĕ событисенчен килсе тăнă—пысăккисенчен те, пĕчĕккисенчен те, унчченхисенчен те, граждан вăрçи вăхăтĕнчисенчен те. Атăл каялла юхма тытăнас çук, çак сăлтавсем те нихçан та каялла таврăнас çук, ç а к ă н чухнехи шухăш-кăмăл та çĕнĕрен нихçан та çуралас çук. Ç ĕ н ĕ вăхăтсем пулĕç,—питех те илемлĕ, тарăн содержаниллĕ вăхăтсем, анчах вĕсем ĕнтĕ у р ă х х и с е м пулĕç.

Чапаевсем те çав кунсенче анчах пулчĕç—урăх кунсенче чапаевсем пулмаççĕ, пулма та пултараймаççĕ; ăна ç а в масса, ç а в вăхăтра, ç а в шухăш-кăмăллă чухне çуратса кăларнăччĕ. Çавăнпа вăл «хăйĕн» дивизине çав тери лайăх ертсе пыма пултаратчĕ те ĕнтĕ. Вăл питех те тĕрĕс, анчах хăй те тивĕçлĕ ăнланмасăр, чаплă 25-мĕш дивизие—х а м ă н, Чапаев дивизийĕ тесе калатчĕ!

Чапаевра ун чухнехи çурма-партизанла çарсен тĕп паллисем—вĕçĕмсĕр харсăрлăх, ĕçе иккĕленмесĕр, татăклă тума юратни, тӳсĕмлĕх, хаярлăх,—куçкĕски çинчи пек пуçтарăнса, палăрса тăратчĕç. Красноармеецсем ăна паттăрлăха чи лайăх сăнласа тăракан çын тесе, паттăрлăхăн сăнарлăхĕ, тĕслĕхĕ вырăнсене хурса хисеплетчĕç; анчах тĕрĕссипе унăн ĕçĕсенче, эсир хăвăрах куртăр

халĕ, ку таранччен нимĕнле уйрăмах пысăк паттăрлăх та палăрмарĕ-ха: вăл мĕн тунине, ыттисем те нумайăшĕ тăватчĕç, анчах çав ыттисем тунине н и к а м т а п ĕ л-м е с т ч ĕ; Чапаев тунине вара п у р т е тĕпĕ-йĕрĕпех, юмахри пек хитрелетсе, хушса каланă тăрăх п ĕ л е т ч ĕ ç. Вăл, Чапаев, 1918 çулта пит ăста, лайăх боец пулнă; 1919 çулта вара унăн чаплă ячĕ—лайăх боец пулнипе мар, п а т т ă р о р г а н и з а т о р пулнипе кĕрлесе тăратчĕ. Анчах организатор та вăл хăйне евĕрлĕччĕ: вăл «штабсене» тӳсме çук юратмастчĕ, штабсем шутне вара вăл штыкпа çапăçман пур учрежденисене те: снабжени пайĕ-и вăл, комендатура-и, çыхăну ĕçĕпе ĕçлекен часть-и пурпĕр, çавсене пурне те кĕртетчĕ. Уншăн пулсан—вăрçăра аллинче винтовка тытса çапăçакан салтак анчах çĕнтерме пултарать. Çийĕнчен тата вăл штабсене—хăй вĕсен ĕçне начар пĕлнĕ пирки те, вĕсен ĕçне нихçан та кирлĕ пек о р г а н и з а ц и л е м е пĕлменнипе те юратмастчĕ; штаба пырса кĕрсен вăл—ĕçе мĕнле тумаллине кăтартса, ăнлантарса парса пулăшассинчен ытларах çынсене я т л а с а т ă к а т ч ĕ.

Организатор тесе те ăна пĕр çак тĕлĕшрен çеç калама май пурччĕ: дивизире ăна пурте чун хавалĕпе юратнă пирки, вăл хăйĕн пысăк авторитечĕпе хăйĕн пĕтĕм дивизине пĕр çĕре çыхăнтарса, пĕрлештерсе тăратчĕ; ăна паттăр ĕмĕтсемпе хавхалантарса, пĕтĕм чунтан малалла çĕнтерсе пыма туртăнтарса çĕклетчĕ; красноармеецсем хушшинче паттăр çынсен йăлисене ӳстерсе çирĕплететчĕ; çак йăласем вара, сăмахран, «каялла нихçан та чакмалла мар!» тени красноармеецсемшĕн чи таса, священнăй тивĕçлĕх вырăнĕнче шутланса тăратчĕç. Тĕрлĕрен разинецсем, пугачевецсем, домашкинецсем, çак паттăрла вăрçă йăлисене хăйсен чĕринче упраса, калама çук пысăк йывăрлăхсене те чăтса ирттеретчĕç; çĕнтерме çук çапăçусене кĕрсе кайса, вĕсенчен те тăшмана çĕнтерсе тухатчĕç, каялла анчах нихçан та чакмастчĕç: Стенька Разин полкĕ каялла чакни вăл вĕсемшĕн—хăйсен паттăр ятне нихçан тавăрайми çĕртнипе танах шутланатчĕ!

Епле питех те илемлĕ çак, анчах çав вăхăтрах мĕн тери тĕрĕс мар, сиенлĕ, хăрушă вăл!

Вăрçăра çапăçасси—Чапаевăн юратнă пурнăçĕччĕ. Вăрçă кăшт лăплансанах—вăл ним тума пĕлмесĕр аптăратчĕ вара, шăртланса каятчĕ, кичем çӳретчĕ, йывăр

шухăшсемпе тулса ларатчĕ. Фронт тăрăх пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне ăшаланса вĕçтерсе çӳресси вара—унăн юратнă ĕçĕччĕ. Тепĕр чухне кайма ытла кирлех те пулмастчĕ,—ун чухне вара вăл сăлтавне хăй шыраса тупатчĕ те, аллăшар, çитмĕлшер, çĕршер çухрăма тухса вĕçтеретчĕ. Çитсе кĕретчĕ пĕр бригадăна; кӳршĕрисем вăл унта пынине пĕлетчĕç те: «Халех кунта кил, пит кирлĕ ĕç пур», тесе телефонпа шăнкăртаттарса чĕнетчĕç. Вĕçтеретчĕ вара Чапаев çавăнта. «Кирлĕ ĕçĕ» унта, паллах, нимĕнли те çукчĕ,—тусĕсен—командирсен хăйсен çулпуçне курса, пĕрле калаçкаласа ларасси çеç килетчĕ. Шăпах çаксем, Чапаевăн çак юлташĕсем калама çук вăйлăн, анлăн сарса ячĕç те ĕнтĕ Чапаевăн паттăрлăхĕпе чапĕ çинчен калакан юмахсене. Вĕсемсĕр вăл—е ун выранĕнче урăх кирек кам пулсан та—нихçан та унашкал чаплă пулас çукчĕ. Чаплă ят кĕрлесе тăтăр тесен, чаплă ĕçсем туни çеç çителĕклĕ мар,—кунсăр пуçне тата яланах çакăн çинчен пĕлтерсе çӳрекенсем, сана чунтан юратса парăннă çынсем, сан ятна илтнипех суккăрланасса çити хавасланакан çынсем, сана ырласа мухтанă чухне хăйсем те пĕтĕм чун хавалĕпе савăнса тăракан çынсем пурри кирлĕ...

Эпир час-часах «паттăра» хăйĕн чăн-чăн хакĕнчен ытларах хак пама хатĕр, çав вăхăтрах чăннипех тивĕçлĕ, уйрăмах паха «рядовой çынна» час-часах тивĕçлĕ хак параймастпăр.

Вĕсем, чапаевецсем, хăйсене хăйсем Чапаевпа пĕрле кĕрешме тӳр килнĕ пиркиех телейлĕ çынсем тесе шутлатчĕç; ăна çутатса тăракан чап пайăркисем вĕсем çине те ӳкетчĕ.

Стенька Разин полкĕнче урисене çапăçусенче çухатнă икĕ паттăр пурччĕ; вĕсем йывăç урасемпе, туя çине таянса, аран-аран çӳрекелетчĕç,—çапах та пĕри те хăйсен нумай хут чапа тухнă полкне пăрахса каясшăн марччĕ; Чапаев полка пырсан, вĕсемпе пĕр-ик сăмах калаçкаласа илсен, вĕсенчен кашниех хăйсене чи телейлĕ çын вырăнне шутлатчĕç.

Полкшăн пулсан вĕсем пĕртте чăрмав марччĕ—иккĕшĕ те çапăçусенче пулеметсемпе ĕçлетчĕç.

Иртсе кайĕç акă пирĕн вăхăтри паттăр ĕçсемпе тулнă кунсем; çынсем, тен, ĕненмĕç те çакна, юмах вырăнне хурĕç; анчах вăл чăнахах та çаплаччĕ вĕт: çак икĕ пачах

та урасăр красноармеец çапăçусенче чăнахах та пулеметсемпе ĕçлетчĕç.

Паттăрăн нихçан манми чаплă ятне туянма Чапаевăн «ахаль çынăнни пек мар» уйрăмах паха енĕсем пулнăши тесе шухăшласа пăхсан, унăн пахалăхĕсем чи яланхи йышшиех, чи «ахаль çынăнни пеккисемех» пулнине усçăнах куратăн; хаклă пахалăхсенчен нумайăшĕ унăн пачах та çукчĕ, пуррисем вара тĕлĕнмелле çĕнĕ енсемпе, уйрăмах усăмлă, çивĕч пулнипе палăрса тăратчĕç. Хăйĕн паха енĕсемпе вăл калама çук лайăх усă курма пĕлетчĕ: çурма-партизанла хресчен масси çуратса кăларнăскер, вăл çак массăна вĕçне çитиех хĕртсе çулăмлантарса çитеретчĕ, ăна вăл хăй ыйтнă, хăйне кирлĕ содержанипе тултарса тăратчĕ,—чи варрине вара яланах хăйне тăрататчĕ!

Чапаевăн чапĕ ун паттăр ĕçĕсем пирки ӳссе сарăлнинчен ытларах ăна, ун чапне, ун таврашĕнчи çынсем хăйсем çуратса сарса тăчĕç. Çапла калани вăл, паллах, нимĕн чухлĕ те—Чапаев граждан вăрçинче хăй калама çук пысăк ĕçсем тунине пĕчĕклетни пулмасть, анчах çакна та пĕлес пулать: кашни паттăрăн чăн-чăн ĕçĕсем çинчен калаçиччен ытла, çынсем легендăллă юмахсем яма юратарах параççĕ. Анчах легендăсене мĕншĕн шăпах у н ç и н ч е н, Чапаев çинчен, шухăшласа кăларнă-ха, мĕншĕн шăпах унăн ячĕ кĕрлесе тăратчĕ-ха масса хушшинче çав тери сарлакан?

Мĕншĕн тесен вăл хăйĕнпе хăй çав «хăйĕн» паттăр салтакĕсен чĕрĕ массин хăйне уйрăм пахалăхĕсене п у р и н ч е н т е т у л л и палăртса тăратчĕ. Хăйĕн ĕçĕсемпе вăл вĕсен кăмăлне каятчĕ. Унăн çак масса питех те хисеплесе хакла хуракан пахалăхĕсем,—харсăрлăх, хăюлăх, пурнăçа шеллемесĕр кĕрешни, чăрсăрлăх, нимĕн умĕнче те чарăнса тăманни,—пурччĕ. Çак пахалăхсем унăн час-часах ыттисеннинчен нумайтарах мар, сахалтарахчĕ те, анчах вăл хăй ĕçĕсене çав тери çуттăн кăтартса пама пĕлнĕ пирки, унăн çывăх çыннисем ăна çакна тума çав тери лайăх пулăшса тăнă пирки—унăн ĕçĕсенчен яланах тĕлĕнмелле паттăрлăх шăрши сарălса тăратчĕ. Нумайăшĕ унран харсăртарах та, ăслăрах та, отрядсене ертсе пырас тĕлĕшрен талантлăрах та, политика тĕлĕшĕнчен ăстăнлăрах та пулнă, анчах çак «нумайăйисен» ячĕсене маннă халăх; Чапаев вара халăх сă-

махĕнче халĕ те пурăнать-ха, тата та нумай вăхăт хушши пурăнĕ, мĕншĕн тесен вăл çак массăн чăн-чăн ывăлĕ, вăл хăйĕн юлташĕсенче, ытти çынсен характерĕсенче сапаланса тăракан пахалăхсене хăйĕнче калама çук вăйлăн, тĕлĕнмелле лайăх пĕрлештерсе, пĕтĕçтерсе палăртса тăрать.

* * *

Кунта вăрçă ĕçĕсем пĕрин хыççăн тепри мĕнле пулса пыни çинчен калаçса тăма кирлех те мар; çапăçу приказĕсем çинчен, вĕсен пахалăхĕсемпе йăнăшĕсем çинчен, пирĕн çĕнтерӳсемпе хамăра çĕнтернисем çинчен тĕплĕн çырса кăтартма кирлĕ те мар: вĕсем çинчен çак вăрçă ĕçĕсем пирки ятарласах çыракансем каласа кăтартĕç. Эпир хамăр çыракан очеркра событисене пурне те туллин, пĕрин хыççăн тепри хăçан, хăш вырăнта, епле пулса иртнине, числисемпе вырăнĕсене, çын ячĕсене кăтартса çырма шутламастпăр... Эпир ун чухнехи вăхăтра çуралса, ун чухнехи вăхăтшăн уйрăмах паллă пулса тăнă пурнăç татăкĕсене анчах сăнласа кăтартса парасшăн. Халь те акă, Белебеелле çĕнтерсе пынă чухнехи вăрçă ĕçĕсем пĕрин хыççăн тепри епле пулса иртнине сăнаса тăмăпăр, ун чухнехи йăлашăн характерлă икĕ-виçĕ картинăна анчах илсе кăтартăпăр!

* * *

Бугурусланран тухнă хыççăн, Дмитров ялĕнчен Тутар Кондызĕ еннелле Елань бригади пычĕ. Кунта питĕ хаяр çапăçусем пулса иртрĕç. Бугуруслана хĕрлисене панă хыççăн тăшман çак хулана хăйĕн аллинчен вĕçертнипе пĕрле унăн пуçарулăхĕ те пĕтсе ларнине, вăл малалла ĕнтĕ текех çĕнтерсе пыма пултарас çуккине, халĕ ĕнтĕ ăна хăйне пĕр чарăнмасăрах каялла хăваласа каяссине, халĕ унăн хăйне хӳтĕлесе чакмалла пулассине малтан ниепле те ĕненесшĕн пулмарĕ. Хĕрлĕ полксем хĕснине хирĕç вăл, хăйĕн пĕтĕм вăйне пухса, хытă çапăçса хирĕç тăчĕ. Анчах вĕсем пурĕпĕрех кая юлни палăрчĕ,—шурă çарсен çĕнтерес шанчăкĕ пĕтме тытăнчĕ, вăл шанчăк красноармеецсем патне вĕçсе килчĕ, вăл вĕсене, çĕнтерессине шантарса, ывăнма пĕлмесĕр, пурнăça хĕрхенмесĕр кĕрешме çулăмлантарса тăчĕ.

Пуçарулăх пĕр енчен тепĕр енне куçнă самант яланах питĕ çуттăн, тĕлĕнмелле уççăн палăрса тăрать; ăна суккăрсем анчах курмасăр юлма пултараççĕ. Пĕр енчисем

сасартăк тĕксĕмленсе тĕсне çухатаççĕ, халсăрланса юлса, çемçелсе каяççĕ; çав вăхăтрах тепĕр енĕ вара— тĕлĕнмелле чĕрĕ вăйпа тулса, чĕввĕн тăрса çĕкленет, шăртне тăратать, çуталса, йăлтăртатса каять; хăй çапла сасартăк аслăланса кайнипе калама çук илемлĕ курăнакан хăрушă вăй пулса тăрать. Вара çак тĕксĕмленсе пыракан çар пĕтсе ларасса çитиех чирлесе халсăрланать, юнсăрланса каять. Йывăр, асаплă чир ăна вилĕм патнех илсе çитерет. Нумаях та пулмасть хăватлă, çĕнтерейми çар тесе шутланнă шурă адмирал çарĕ çак Бугуруслан таврашĕнчи çапăçусенче— çакнашкал пурпĕрех пĕтмелле, анчах çапах та хăйне чĕррĕн тытма хăтланакан чĕрĕ виле пекехчĕ. Истори ун чухнех хăйĕн шеллемен çирĕп аллипе унăн çамки çине чапсăр вилĕмĕн намăс пичетне пусса янăччĕ.

Хĕрлĕ Çар вара, çав тери чăмăртанса, вăйланса кайнăскер, фабрикăсемпе заводсенчен, профессиллĕ союзсенчен, парти ячейкисенчен килнĕ вăйсемпе палăрмаллах çĕнелсе çитнĕскер,—вăл çак кунсенче ыйăхран вăраннă çутă сăнлă паттăр пекех курăнатчĕ; вăл пĕтĕмпех çĕнтерсе илме пултаракан, пурне те çĕнтерме пултаракан вăй пек, ун умĕнче мĕнпур хура вăй çĕр тĕпнех путса анса çухалмалла пек курăнса тăратчĕ.

Чапаев дивизийĕ те вăл вăхăтра çакнашкал шухăшкăмăлпа кĕрешсе çапăçатчĕ; Елань бригади те Вырăс Кондызĕпе Тутар Кондызĕ ятлă ялсем таврашĕнчи çапăçусенче тăшмана çак шухăш-кăмăлпах çĕмĕрсе пыратчĕ.

Бригада штабне Фрунзе килсе çитрĕ; вăл ĕçсемпе хăвăрт паллашса тухрĕ те, Елань бригадин юлашки ăнăçлă çапăçăвĕсем çинчен ыйтса пĕлнĕ хыççăн çакăнтах, пўртрех, çак çапăçусемшĕн тавтуса приказ çырса кăларчĕ. Ку приказ красноармеецсен çĕнтерўллĕ хастарлăхне пушшех çĕклентерсе ячĕ; Елань вара, мухтанипе савăнса хавхаланнăскер, çĕнĕ ăнăçусем, çĕнĕ çĕнтерўсем тума тупа туса сăмах пачĕ.

— Ну, апла пулсан,—терĕ Чапаев,—тупа туни вырăнсăр ан пултăр. Куратăн-и çав тусене?—тесе ыйтрĕ те вăл, вырăнĕ ятне те, шывне те, ялĕсене те каламасăр, чўречерен таçта малалла тĕллесе кăтартрĕ.—Туртса ил çав тусене, акă вара сана манăн тўрĕ сăмахăм: хамăн кĕмĕл хĕçе парнелесе парăп сана!—терĕ.

— Юрать!—хӗпӗртенипе кулса ячӗ Елань.

Ҫапла савӑнӑҫлӑ тупа туса калаҫнӑ хыҫҫӑн тепӗр виҫӗ кунтан вара вӗсем кӗҫех пӗр-пӗрне персе пӑрахмарӗҫ. Федор Клычков ун чухне, шӑнса хытӑ чирленӗскер, вырӑнпах выртатчӗ, Чапаевпа пӗрле фронтсем тӑрӑх ҫӳреме вӑл хӑй вырӑнне хӑйӗн помощникне—Крайнюкова хушса яратчӗ. Вара виҫҫӗмӗш хутӗнче тухса кайсассӑнах, вӗсем хушшинче ҫак «истори» пулса тӑчӗ, анчах чирлӗ Клычкова ун ҫинчен ҫийӗнчех пӗр сӑмах та пӗлтермерӗҫ,—ун хӑлхине татӑк-кӗсӗк хыпар анчах ҫиткелесе кӗчӗ. Калаҫу ҫакӑн ҫинчен пуҫланса каястӑвас пулсан, Чапаев та нимӗн те шарламастчӗ; тӗксӗммӗн: ун пек пулман, текелесе ҫеҫ тӑратчӗ. Ун вырӑнне ҫак ӗҫ ҫинчен Елань вара, Федор хӑй патне штаба пырсассӑнах, ним пытармасӑр тӗпӗ-йӗрӗпех каласа кӑтартрӗ.

— Вӑл йӑнӑш ҫеҫ пулчӗ, Клычков юлташ, чӑнахах йӑнӑш анчах,—тесе калама тытӑнчӗ вӑл Федора.—Эпир иксӗмӗр те хамӑра хамӑр кӑштах асӑрхаса ҫитереймерӗмӗр... айванла хӑтлантӑмӑр... Пӗр сӑмахпа каласан, вактӗвек ӗҫ, ун ҫинчен каласа тӑма та кирлӗ марччӗ те... юрӗ ӗнтӗ, эпӗ хам та ҫавӑн йышши айван ӗҫсене аса илме юрататӑп,—терӗ.—Вӑл авӑ епле вӗт—вут пек! Мӗн тӑвӑн ӑна? Тивсе каять те вара, хӑй ҫунса каяссине те кӗтсех тӑр... Астусах тӑрас пулать, анчах эсӗ пулмарӑн ҫав вӑл вӑхӑтра... Санӑн тусу вара, заместителӳ, кулкаласа ҫеҫ тӑрать, унпа тавлашӑва хутшӑнмасть; анчах, тепӗр енчен тата вӑл, Чапаев, пурне те итлесех те каймасть вӗт... Ҫаплах пулмалла пулнӑ та пуль ӗнтӗ вӑл, пирӗн айванла харкашса илесси; анчах инкекӗ кунта, нимӗнле инкек те ҫук!.. Хальхи пек астӑватӑп—тӳсме ҫук ывӑннӑччӗ эпӗ, урасем сӑрӑлтатса ҫеҫ тӑратчӗҫ!.. Пӗр пӗрчӗ вӑй та юлмарӗ... Тавай, ҫывӑрса пӑхам-ха, тен, иртсе кайӗ, тетӗп. Тӳнсе кайнӑ та, мӗнле пулнӑ—ҫаплипех выртса ҫывӑрнӑ! Васька манӑн,—астӑватӑн-и, ман вестовой пурччӗ, кӑштах жуликласкерччӗ,—пӗр тутар пӳртне тупса хатӗрленӗччӗ: пӳрчӗ пӗчӗк ҫеҫ, таса марскер, ҫитменнине пӳртӗнче нимӗн те ҫукчӗ, стена тӑрӑх пӗр сак анчах ларатчӗ. Пырса тӗкӗннӗ ҫеҫ ҫав сак ҫине—вилнӗ пекех ҫывӑрса та кайнӑ эпӗ. Ҫывӑрас умӗн, хам Васькӑна ҫапла каласа хӑварсаттӑм: «Эсӗ асту:—ирхине чӑх яшки хатӗр пултӑр. Ӑнлантӑн-и?» терӗм.—«Ӑнлантӑм»,—тет. Темле шуйттанла тӗлӗк курса ҫывӑр-

нă тата хам... Чăх вырăнне Колчака хăйне вилкăпа тăрăнтарса турткалатăп пек. Пĕрре тирсе илетĕп пек те, вăл пĕшкĕнет пек... тепре тиретĕп пек те вăл чĕркуçленсе ларать пек; çитменнине тата, йытă, пуçне ман еннелле çавăрса лĕх-лĕх кулать пек... Вара çав тери тарăхса кайрăм пек те—вилкăпа пуçĕнчен пĕрех петĕм пек; пăхатăп—пуçĕ çурăлчĕ кайрĕ пек; вара эпĕ ăна вилкăпа мар, хĕçпе çапнă пек пулса тăчĕ. Хĕç татăкне ярса тытрăм та, ăна пуçĕнчен тирме пикентĕм пек, анчах пуçĕ вырăнне телеграф юпи пулчĕ тăчĕ пек те, телеграф аппаратĕнчен саспаллисем, чана чĕпписем пек, пĕрин хыççăн тепри сике-сике тухма тытăнчĕç пек. Ку вăл—мана Чапаев приказ пама тытăнчĕ пек туйăнса кайрĕ, приказĕпе вара эпĕ килĕшменччĕ. Тăшмана çапса çĕмĕр эсĕ, тет; хăваласса—урăх бригада хăваласа кайĕ!—тет. Кай-ха эсĕ кунтан ху ăçта пĕлетĕн, çавăнта, тесе шухăшлатăп пек: юншăн тавăрмалла-и ман е тавăрас çук-и? тетĕп пек. Ту çинче вырттарса хăварнă çĕр çыншăн кам тӳлесе парĕ вара мана?—«Кургин, приказ çыр!»—тесе кăшкăратăп... Кургинăн ун хут яланах аллинче, карандаш хăлхи хыçĕнче. Ку вĕçтерсе те çитрĕ. Эпĕ çаврăнса пăхма ĕлкĕриччен, вăл приказ ятне çырса та лартрĕ. «Приказра çакна кăтартса пар, тетĕп: тăшмана, вырăнтан тапратсанах, çĕмĕрме чарăнмасăр, тата вунпилĕк çухрăм хăваласа каймалла! Ăнланатăн-и?» тетĕп. Кăна та ăнлантăм, тет. Вĕсем мана Васькăпа сасăранах ăнланатчĕç, çитменнине пĕри теприне тăратчĕçех çав. Хам Чапаевран мунча пулассине лайăх пĕлетĕп, анчах мĕн тăвăн-ха ĕнтĕ, вăл хăй çав тери пысăк йăнăш турĕ пулсан? Эпĕ ăна провод патне те чĕнсеттĕм, йăлтах ăнлантарса парас тенĕччĕ, хăйĕн приказне улăштарттарасшăнччĕ, анчах çав киревсĕр Плешков—дивизи штабĕн начальникĕ вăлччĕ-çке-ха—Чапаева провод патне чĕнмерĕ те: приказ панă, терĕ, урăх нимĕнле калаçу та пулма пултараймасть, терĕ... Юрĕ эппин, терĕм, хам ăшăмра: пултараймасть пулсан, ан пултартăр, манăн хамăн та пуç пур, тетĕп. Кургин приказ çырса хатĕрлерĕ, эпĕ алă пусрăм та—тапранса кайрĕ вара музыка... Анчах хам ку ĕç ыррăн иртес çуккине лайăх пĕлсе тăратăп,—Чапаев хăйĕн приказĕсене улăштарнине пĕртте юратмасть. Çапла тĕрлĕрен усал-тĕсел тĕлĕк куркаласа сывăрнă çĕртенех, эпĕ сасартăк сак çине сиксе тăр-лар...

Ененетĕн-и: хĕвел те тухман-ха, тул çутăлса та çитмен... А Чапаев çитсе те тăнă ман ума—чăтайман пирки çĕрĕпех тĕпĕртеттерсе килнĕ.

«Эсĕ мĕн, сволочь?» тет.

«Эпĕ сволочь мар, Чапаев юлташ,—тетĕп,—эсир асăрханарах калаçăр», тетĕп.

Вăл револьверне ярса тытрĕ.

«Персе пăрахатăп!» тесе çухăрашать.

Анчах вăл кабурине те вĕçертме ĕлкĕреймерĕ, эпĕ вара хамăнне туртса та кăлартăм.

«Манăн пульине вырăннех çитернĕ, тавай эппин перкелешсе пăхăпăр», тетĕп.

«Тухса кай комбриг[1] ĕçĕнчен!—тесе кăшкăрать.—Эпĕ сана халех вырăнтан кăларатăп... Çыр рапорт—сан вырăна Михайлов пулать. Михайлова сан вырăна лартатăп, а эсĕ тухса кай, халех тухса кай! Командир пулать-и вара вăл! Эпĕ: чарăнса тăр, тетĕп, а вĕсем—вунпилĕк çухрăм чупма. Мĕн ĕнтĕ ку, мĕнле ку, тетĕп, э? Бригада командирĕн çапла хăтланмалла-и ара?».

Ну çунтарать, ну çунтарать, чăтса çеç тăр; револьверне хăй çапах та кăлармарĕ, эпĕ те хамăнне пуçтарса чикрĕм. Мĕн калаçасси пур ĕнтĕ...

«Кургин,—тетĕп,—çыр приказ!..»

Мĕнле кирлĕ пек çырса та хатĕрлерĕмĕр...

«Халех тăвата вестовой кăларса ярăр», тетĕп.

Тухса вĕçтерчĕç.

«Акă Михайлова валли пакетсем; тухса вĕçĕр, часрах çитерсе панă пултăр!»

Курса анчах юлтăмăр, тухса вĕçрĕç... Ларатпăр—нимĕн те шарламастпăр... Тăвăл иртсе кайрĕ, каламалли сăмахсене пурне те каласа пĕтернĕ. Эпĕ сак çинче ларатăп, Чапаева ларма вырăн та çук—стена çумĕнче тăрать... Куçĕсем кăн-кăвак, хаярланса кайрĕç, йăлтăртатса анчах тăраççĕ. Ничево, тетĕп, иртсе кайĕ-ха; лăпланатăн, ачам, тесе шухăшлатăп... Шăпах çак вăхăтра Васька алăка уçса, пуçне чикрĕ те:

«Çапла ĕнтĕ—чăх пиçрĕ, пĕтĕмпех хатĕр»,—тесе чĕвĕлтетсе илчĕ.

Ятлаçу—ятлаçассипе пултăр, анчах апат çиме чĕнесех пулать-çке-ха.

---

[1] **Комбриг** — бригада командирĕ.

«Чапаев юлташ, атьӑр пахчана чӑх яшки ҫиме», тетӗп.

Унта пӗчӗк пахча пекскер пурччӗ.

«Юрать», тет.

Сасси кӑмӑллӑнах илтӗнмест пулин те, ҫилли иртсе кайнине лайӑх сисетӗп. Кулса та ярӗччӗ-и тен, анчах намӑс...

Пахчана тухрӑмӑр та лартӑмӑр, нимӗн те шарламастпӑр.

«Елань, тавӑр каялла вестовойсене», тет.

«Тавӑрма ҫук ӗнтӗ вӗсене, Чапаев юлташ! Ӑҫтан тавӑран-ха вӗсене, вӗсем тахҫанах ҫил пек тухса вӗҫрӗҫ», тетӗп.

«Чи лайӑххисене ярса хӑвала!»—кӑшкӑрать; хӑй каллех хӗремесленсе кайрӗ.

«Вӗсенчен лайӑххисем ҫук—вӗсем чи лайӑххисемччӗ», тетӗп.

«Эсӗ тата лайӑхраххисене, чи лайӑххисене яр! Ӑнланмастӑн-и мӗн—эпӗ мӗн ҫинчен каланине?» тет.

Мӗнле ӑнланас мар-ха—пӗтӗмпех ӑнланатӑп. Анчах хама-хам ӑшӑмра: «тавай-ха кӑштах чӗпӗтем ӑна, мӗншӗн мана «сволочь» тесе ятларӗ-ха?» тетӗп.

«Мӗншӗн сволочь тесе ятлатӑн?—тетӗп.—Манӑн та ҫилӗ ҫук мар вӗт! Айӑплӑ пулсан, суда пар, трибунала пар, ан тив персе пӑрахчӑр; анчах сволочь тесе ятлаҫни ан пултӑр», тетӗп.

«Эпӗ ытлашши хӗрнипе пулчӗ вӑл,—тет,—эсӗ пурне те шута ан ил»,—тет.

Ну, вара татах ҫынсем кӑларса ятӑмӑр—халь улттӑн кайрӗҫ. Тапса сикрӗҫ-тӗк—вӗҫен кайӑк пек! Тепӗр сехетрен пурте таврӑнчӗҫ,—лешсене пӑшалпа персе чарнӑ.

Приказсене ҫавӑнтах лутӑркаса, ҫуркаласа тӑкрӑмӑр...

«Хӑвӑн приказна ан тив,—тет,—ан тив вырӑна ҫитерччӗр, приказа улӑштарма юрамасть. Мӗн кирлине эпӗ хам улӑштарӑп», тет.

Пӗтӗм ӗҫӗ те ҫак анчах пулчӗ, урӑх нимӗн те ҫук. Чӑх яшки ҫинӗ хыҫҫӑн пӗр-пӗрне урӑх пӗр усал сӑмах та каламарӑмӑр... Пирӗн, Клычков юлташ, яланах ҫапла вӗт,—тесе пӗтерчӗ Елань хӑй сӑмахне.—Шавлатпӑр-шавлатпӑр та, кайран чей ӗҫме ларса, тӗрлӗрен калаҫу пуҫласа яратпӑр...

— Ну ара, урăх нимĕн те çук-и?—кулкаласа ыйтрĕ Федор.

— А мĕн пултăр тата!—тесе шăлне йĕрчĕ Елань.— Кайран тин вара, эпĕ пĕтĕм ĕçе туса пĕтернĕ хыççăн,—тусене те туртса илсен, тыткăна та темĕн чухлĕ халăх, авă çак кунсенче дивизие янăскерсене, тытса илсен,— Чапаев каллех персе çитрĕ.

«Сывă-и, Елань?» тет.

Хăй кулать, хĕпĕртенĕ.

«Сывă-ха, Чапаев,—тетĕп.—Хăвăн сывлăху мĕнле?»

Нимĕн те шарламарĕ. Ман пата пычĕ те, ыталаса, виçĕ хут чуптуса илчĕ.

«Ме акă, тыт,—терĕ,—тăшманпа лайăх çапăçнăшăн эсĕ илме тивĕç ăна манран».

Кĕмĕл хĕçне хывса илчĕ те, мана хулпуççи урлă çакса ячĕ; хăй пĕр шарламасăр тăрать. Манăн ăна, хĕççĕрскере, шутсăр хĕрхенес килсе кайрĕ. Вара хамăн хура хĕçе илтĕм те:

«Ме сана, мана та ан ман!» тесе тыттартăм.

— Пĕрре сăмах парсан вара, вăл нихçан та сăмахĕнчен пăрăнмасть, эсĕ ăна ху та пĕлетĕн,—терĕ Елань.

Çакăнпа калаçу пĕтрĕ; Елане, полкран тем ыйтнă пирки, телефон патне чĕнсе кайрĕç. Федор хăй те вара калаçăва çĕнĕрен тапратмарĕ,—ун чухне мĕн пулни çинчен йăлтах калаçса пĕтерчĕç курăнать. Уйрăмах пысăк, кирлĕ ĕç пулманни паллă пулчĕ. Анчах хĕрсе кайнипе çавăнтах темĕн те туса тултарма пултарнă. Кунта яланах çапла, пĕр çывăрмасăр асăрхаса, сыхласа тăракан çын кирлĕччĕ: сыхлаканĕ кăшт пăрăнсассăнах—пĕлсех тăр вара, хăйсенне те пĕр-пĕринне, ыттисен урисене те çапса хуçатчĕç-хуçатчĕçех вара!

* * *

220-мĕш полк Трифоновка ялне хĕрсе çапăçса кĕчĕ те, çавăнтах канма вырнаçрĕ. Красноармеецсем ял хĕрринчи пÿрте кĕрсенех, урайне темĕн чухлĕ юн тумлатса тултарнине курах кайрĕç. Хуçинчен ыйтса тĕпчеме пуçларĕç,—лешĕ нимĕн те шарламасть, нимĕн те каласа парасшăн мар. Вара ăна—нимĕн те тумастпăр, тесе сăмах пачĕç; «мĕн те пулин пулас пулсан», красноармеецсем хăйсемех командирпа комиссартан ăна валли каçару

ыйтма пулчĕç, мĕн пулнине пĕтĕмпех тĕплĕн, ним пытармасăр каласа пама анчах сĕнчĕç. Хресчен вара, урăх пĕр сăмах чĕнмесĕр, вĕсене сарайне илсе тухрĕ те, унта тислĕк купи çинчи улăма кăшт çеç сиркелесе ывăтса, чĕп-чĕрĕ юн ăшĕнче, вараланса, çăрăнса пĕтнĕ, нимĕн уйăрса илме те çук япала çине тĕллесе: «Акă!» тесе кăтартрĕ. Красноармеецсем пĕр-пĕрин çине тĕлĕнсе пăхкаласа илчĕç; çывăхарах пырса пăхрĕç те, çак тĕлли-паллисĕр, юнпа çăрăнса пĕтнĕ япаласем—çын кĕлеткисем пулнине палласа илчĕç. Тислĕк купине çавăнтах вара штыксемпе, çĕçĕсемпе, алăсемпе салатса пăрахрĕç те, икĕ ăшă виле туртса кăларчĕç: красноармеецсем!

Вилесенчен пĕрин сасартăк алли йăшăлтатса туртăнчĕ,—тытса тăракансем шартах сикрĕç, ирĕксĕрех каялла чакрĕç, ăна каллех тислĕк çине пăрахрĕç... вара алли хыççăн ури те майĕпен хутланнине, унтан каллех тăсăлнине, вара тепĕр хут хутланса ларнине курчĕç... Кăшт тăрсан, куçхаршийĕ туртăнса илчĕ, кăн-кăвак шыçса кайнă куçĕ кăштах уçăлчĕ, анчах куçĕнчи виле çынăнни пек тăхлан тĕслĕ çути унăн нимĕнле шухăш та çуккине палăртса пĕлтерчĕ... Çак хăрушă вилесене тупни çинчен туххăмах пĕтĕм полкĕпе хыпар вĕçсе сарăлчĕ. Красноармеецсем курма чупса пухăнчĕç, анчах мĕн пулнине никам та тĕплĕн пĕлеймерĕ, кашни тĕрлĕ май шухăшласа пăтранчĕ. Хресчентен ыйтса тĕпчерĕç. Вăл, туртăнса тăмасăр, мĕн пулнине йăлтах каласа пачĕ.

Икĕ красноармеец, Интернациональнăй полкри кашеварсем, кунта темиçе сехет каярах,—шуррисен аллинче пулнă Трифоновкăна, хĕрлисем тăракан темĕнскерле урăх ял вырăнне хурса, йăнăшпа пырса кĕнĕ пулнă-мĕн. Пĕр пӳрт тĕлне çитнĕ те вĕсем, кунта хуçалăх пайне епле шыраса тупмалла тесе, ыйтса пĕлме пуçланă. Пӳртрен казаксем ахăрашса сиксе тухнă та, хăраса ӳкнĕ красноармеецсене тапăнса, лашисем çинчен туртса антарса, пӳрте хăваласа кĕртнĕ. Малтан вĕсенчен: ăçтан килетĕр, ăçта каятăр тесе, ăçта мĕнле чаççем тăраççĕ, кашни чаçре миçе çын тесе, тĕпчесе ыйтнă. Çаксем çинчен тĕрĕс каласа парсан, красноармеецсене пĕтĕмпех каçарма пулнă. Тĕрĕс-и, çук-и,—анчах кашеварсем вĕсене темĕн çинчен каласа панă çапах та. Лешсем итленĕ, çырса пынă, малалла ыйтса тĕпченĕ. Çапла пĕр вунă минут хăтланса ларнă.

— Урӑх нимӗн те пӗлместӗр-и?—тесе ыйтнӑ юлашкинчен казаксенчен пӗри.

— Нимӗн те пӗлместпӗр,—тенӗ тыткӑна лекнисем.

— А ку калпак ҫинче мӗн ара сирӗн, ҫӑлтӑр-и? Совет влаҫӗ ларать-и? Эккей, епле ҫаклатса янӑ,—тесе мӑшкӑласа кулма тытӑннӑ.

Красноармеецсем пӗр шарламасӑр тӑнӑ, лайӑх мар пуласса сиснӗ курӑнать; тӗпчесе ыйтакансен кӑмӑлӗ хӑвӑрт улшӑннӑ. Ыйтса тӗпченӗ вӑхӑтра мӑшкӑлласа шӑл йӗмен, анчах халӗ «ҫӑлтӑр» пирки тем пекех ятлаҫма та, хӑратса юнама та пуҫланӑ. Пӗрне аяккинчен пырса чышса:

— Пӑтӑ пӗҫеретӗн-и?—тесе ыйтнӑ.

— Пӗҫернӗ,—тесе тавӑрнӑ кашевар хуллен.

— Большевиксене тӑрантартӑн-и?

— Пурне те тӑрантарнӑ,—тенӗ лешӗ тата хуллентерех.

— Э, пурне те-и?!—сиксе тӑнӑ казак.—Эсир пурне те епле тӑрантарнине пӗлетпӗр эпир! Пӗтӗмпех аркатса тӑкрӑр, пур ҫӗре те вараласа пӗтертӗр, тенӗ.

Вӑл намӑс сӑмахсемпе тискеррӗн ятлаҫса илнӗ те, ҫаврӑнса, красноармееца питӗнчен ҫапса янӑ; красноармеецӑн сӑмсинчен юн капланса аннӑ... Лешсем ҫакна ҫеҫ кӗтсе тӑнӑ: питрен ҫапса яни пурин кӑмӑлне те уҫнӑ, юн тӗсӗ пурне те тискерлентерсе, уртарса, юн ӗҫес килтерекен туса янӑ. Ларнӑ вырӑнӗсенчен сиксе тӑнӑ казаксем красноармеецсене мӗнпе килнӗ унпа кӳпкеме тытӑннӑ, ҫӗре персе ӳкернӗ, таптанӑ, сурнӑ вӗсем ҫине... Юлашкинчен вара пӗр подлецӗ хӑрушӑ наказани шутласа кӑларнӑ. Мӗскӗнсене урайӗнчен тӑратса, пукансем ҫине лартнӑ та, кантрасемпе ҫыхса хунӑ; вара мӑйӗсем тӗлӗнчен юнлӑ ӳт татӑкӗсене, пайӑн-пайӑн каса-каса, сӳсе иле пуҫланӑ... Касса кӑлараҫҫӗ те—тӑвар сапаҫҫӗ, касса кӑлараҫҫӗ те—каллех сапаҫҫӗ... Тӳсме ҫук ыратнипе ӑнран кайнӑ красноармеецсем хӑрушшӑн кӑшкӑрса ҫухӑрнӑ, анчах вӗсем кӑшкӑрни урса кайнӑ тискер кайӑксене тата ытларах ҫилентерсе тискерлетнӗ. Ҫапла темиҫе минут хушши асаплантарнӑ: каснӑ та тӑвар сапнӑ... Унтан такӑшӗ пӗрне кӑкӑрӗнчен штыкпа чикнӗ, ун хыҫҫӑн тепри... Анчах вӗсене: чиксе вӗлерме пултаратӑр, сахал асапланнӑ-ха!—тесе чарнӑ... Пӗрне ҫапах та чиксе пӑрахма ӗлкӗрнӗ. Тепри кӑштах сывланӑ,—халь

çавă вилес умĕн асапланса выртать те ĕнтĕ полк умĕнче.

Темиçе сехет каярах Трифоновкăран васкаса тухса тарма тапрансан, шуррисем çак асаплантарса вĕлернĕ икĕ кашевара тула сĕтĕрсе кăларса, тислĕк ăшне пытарса хăварнă пулнă...

Пĕтĕм истори те çакă çеç.

Пĕр шарламасăр, хуйха кайса итлесе тăчĕ полк çак хăрушă хыпара. Асаплантарса вĕлернисене пурне те курăнмалла вырăна вырнаçтарса хучĕç; мĕн кирлине хатĕрлесе, юлашки хут хисеплесе пытарма пуçтарăнчĕç.

Çак минутра Федорпа Чапаев килсе çитрĕç. Вĕсем çак ĕç çинчен илтсе пĕлсессĕнех, красноармеецсене пухрĕç те, вĕсене кĕскен: çапла хаяррăн хăтланнинчен нимĕнле усă та пулас çукки çинчен ăнлантарса пачĕç, красноармеецсен тыткăна илнĕ çынсене ун пек хăрушшăн тавăрма кирлĕ марри çинчен астутарса каларĕç.

Анчах красноармеецсем калама çук хытă тарăхнăччĕ, шуррисене вĕсем вĕçĕмсĕр ылханса ятларĕç. Асаплантарса вĕлернисене шăтăка антарчĕç, виçĕ хут пăшалпа харăслатса печĕç, унтан саланчĕç. Çакăн хыççăн тепĕр ирхинехи çапăçура тыткăна лекнисене пĕрне те полк штабне илсе çитермерĕç вара... Нимĕнле сăмах та, нимĕнле ӳкĕтлесе калани те çапăçура тăшмана тавăрассине тытса чарма пултараймасть: унта юншăн юнпа анчах тӳлеççĕ!..

Çак истори Федор кăмăлĕнче те йĕр хăварчĕ: тепĕр кунне вăл шурă офицера персе пăрахмалли приговор çине пирвайхи хут алă пусрĕ. Ку ĕç çинчен каласа парсан та ытлашши пулмĕ.

Ĕç çапла пулса иртрĕ:

Вĕсем Вырăс Кондызне Елань патне пырса çитрĕç. Вăл паян ирхи çапăçура пĕр сакăрвун çын тыткăна илнĕччĕ. Тыткăна илнисене хураллакан никам та çукпа пĕрех.

— Ан кулянăр, тарас çук; халь вĕсене патакпа та хăваласа яраймăн Колчак патне! Тыткăна лекнишĕн çаз тери савăннă!

— Мĕн, Елань, каллех-им?—тесе ыйтрĕ Федор, пуçĕпе тыткăна лекнисем еннелле сулса.

— Так точно,—кулса илчĕ лешĕ.—Эпĕ вĕсене кăшт штыкпа хыпашлакаласа пăхасшăнччĕ, анчах вĕсем: вайвай-вай, тыткăна пыратпăр, христа ради ан тĕкĕн,—тесе

тархаслама тытăнчĕç; ну, ирĕксĕрех хăваласа ҫилмелле пулчĕ вара.

— Офицерсем пур-и?

— Офицерсем те пурччĕ... Анчах вĕсем тыткăна килесшĕн пулмарĕç; сирĕн унта савăнăçлах мар, теççĕ...

Елань Федор çине пысăк шухăш каласшăн пулнă пек пăхса илчĕ те, лешĕ вара урăх тĕпчесе тăмарĕ...

— Тен, татах юлнă пуль?—тесе çеç ыйтрĕ вăл.

— Пулĕ те, анчах шарламаççĕ-ха темшĕн,—терĕ Елань.

— Салтаксем кăтартса памаççĕ-и мĕн?

— Салтакĕсем вĕсен кунта тĕрлĕ чаçсенчен лекнĕ те, пăтрашса пĕтнĕ, çавăнпа вĕсем пĕр-пĕрне пĕлмеççĕ, хальтерех килнисем нумай,—тесе ăнлантарчĕ Елань.

— Атя-ха, иксĕмĕр пĕрле кайса тĕпчесе пăхар,—терĕ Федор... Анчах малтан эпĕ тыткăна лекнисемпе тĕрлĕ япала çинчен, пурин çинчен те пăртакшарăн, кăштах ахаль калаçса пăхас тетĕп,—терĕ.

Федор калама пуçласан, нумайăшĕ тинкерсе, интересленсе итлесе тăчĕç; анчах вăл çеç мар—ку сахал-ха: çитменне тата вĕсем Федор сăмахне ĕненмесĕр, тĕлĕнсе те итлерĕç; çакă вăл вĕсен сăн-питĕнчен пăхсанах курăнчĕ. Мĕншĕн тесен ку сăмахсене вĕсенчен нумайăшĕ халĕ тин, пирвайхи хут çеç илтсе пĕлчĕç; халиччен çак япаласем çинчен пĕлмен те, шутламан та, тĕлленмен те вĕсем.

— Ак халь ĕнтĕ эпĕ сире йăлтах ăнлантарса патăм,—терĕ Федор, хăй калас тенĕ сăмахне пĕтерсе пынă май.—Нимĕн ӳстермесĕр, ним пытармасăр, улталамасăр, чăнлăх çинчен уççăн каласа патăм сире; малалла ĕнтĕ хăвăр, хăвăр пĕлнĕ пек шухăшласа пăхăр, мĕн хаклă сирĕншĕн, мĕн кирлĕрех сире: эсир Колчак патĕнче мĕн курни-курманнисем-и, е акă эпĕ халь сире каласа кăтартнă япаласем-и? Анчах çакна пĕлĕр: пире хăюллă, харсăр çынсем çеç, совет влаçне чăн-чăнах пĕлсе хӳтĕлеме пултаракансем, эпир вĕсене яланах шанма пултаракан çынсем анчах кирлĕ... Шухăшласа пăхăр. Вара кам пирĕнпе пĕрле кĕрешме шут тытать, пĕлтерĕр: эпир ун пеккисене, Колчак патне сирешкелултавпа лекнисене, нихçан та хамăртан тĕртсе ямастпăр, терĕ.

Вăл каласа пĕтерчĕ те тĕрлĕрен ыйтусем пама тапратрĕç,—политика тĕлĕшпе те, вăрçă пирки те, Хĕрлĕ Çара кĕресси çинчен те... Сăмах майĕпе каласан, вĕсен-

чен ҫурри ытла Хӗрлӗ Ҫара кӗчӗҫ; ҫитменнине Еланӗн кайран ҫак ҫынсене хӑйӗн чаплӑ полкӗсене кӗртсе йышӑннӑшӑн нихҫан та ӳкӗнмелле пулмарӗ.

Икӗ йӗркене тӑратса тухрӗҫ. Клычков мӗнле тумланнине пӑхса ҫаврӑнчӗ, уйрӑм ыйтусем паркаларӗ. Хӑшпӗрисем умӗнче чарӑнса тӑмалла пулчӗ,—вӗсем рабочисем марри, ялти ҫынсем те марри—пӑхсанах курӑнчӗ; ун пеккисене аяккалла уйӑрса тӑратрӗҫ, кайран вара штабра вӗсенчен кашнинченех кам иккенне тӗплӗрех тӗпчесе пӗлчӗҫ. Пӗрин тӗлӗшпе уйрӑмах иккӗленмелле пулчӗ. Чӑрсӑррӑн пӑхса тӑчӗ вӑл, тыткӑна лекнисене ҫапла пӑхса тӗрӗслени пирки мӑшкӑллӑн кулкаласа: «Эх, эсир, тӑмсайсем, сиртен пулать-и вӑл пирӗн ҫинчен тӗпчесе пӗлесси!» тесе каласшӑн пекех туйӑнса тӑчӗ.

Тумланасса вӑл ҫурри ахаль салтак пекех тумланнӑ; анчах кун пирки те иккӗленмелле: шӑлаварӗпе атисем питӗ лайӑх, кӗпи вара начар, ҫӗтӗк-ҫатӑк, урӑх ҫынӑнне тӑхӑнса яни тӳрех курӑнать; яп-яка та самӑр кӗлетки ҫинче вӑл питӗ тӑвӑр курӑнать, ҫухави вара, сысна пӗҫҫи пек мӑнтӑр, хӗп-хӗрлӗ мӑйне пачах та хуплаймасть. Пуҫӗ ҫинче салтак картусӗ,—каллех ҫынӑнне тӑхӑнни курӑнать: пачах та килӗшмест ӑна, ҫитменне тӑхӑнма та пӗлмест. Вӑл пӗрре те ахаль салтак пек туйӑнмасть.

Федор ун тӗлӗнчен малтан чарӑнса тӑмасӑр иртсе кайрӗ, пӗр сӑмах та шарламарӗ; каялла таврӑннӑ чухне вара тӗлме тӗлех чарӑнчӗ те, кӗтмен ҫӗртен тӳрех:

— Эсир офицер вӗт, ҫапла-и?—тесе ыйтрӗ.

— Эпӗ ҫу... ҫук, рядовой эпӗ,—терӗ те лешӗ васкаса, пӑтранса кайрӗ.—Мӗншӗн апла шутлатӑр-ха эсир?

— Ахалех ара, паллатӑп эпӗ сире,—тесе, чееленсе каларӗ Клычков.

— Мана пӗлетӗр-и? Ӑҫтан?—хыпаланса ӳкрӗ лешӗ.

— Пӗлетӗп ҫав,—терӗ Федор сӑмса айӗн.—Анчах пӗр-пӗрне хӑҫан курнине аса илнисемпе аппаланса тӑма вӑхӑт ҫук пирӗн кунта. Эпӗ тепӗр хут сиртен: офицер-и эсир, ҫук-и? тесе ыйтатӑп,—терӗ.

— Тепӗр хут сире: эпӗ офицер мар, тетӗп,—тесе пуҫне ҫӳле каҫӑртса, тӳрленсе тӑчӗ лешӗ.

— Ну, юрӗ, кайран хӑвӑра хӑвӑрах ӳпкелӗр.

Федор ӑна мала уйӑрса кӑларчӗ те, тата темиҫе ҫынпа пӗрле ушкӑнӗпех строй умӗпе ертсе кайрӗ; анчах малтан вӑл Колчак салтакӗсене кӗске, хӗрӳллӗ сӑмах кала-

рĕ: ĕç çыннисем хăйсен тăшманĕсене хирĕç кĕрешес ĕçре шурă офицерсем мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен, шурă офицерсем кĕретĕнех совет влаçне хирĕç пыраççĕ пулсан, вĕсене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтермеллине ăнлантарса пачĕ.

Кун хыççăн вăл çак ушкăнри çынсене строй умĕпе салтаксене кăтартса кайрĕ; вĕсенчен кам та пулин çак çынсем офицер пулнине палласа илмест-и, тесе ыйтса тухрĕ. Сысна пек самăр улпута, пуçĕнчен картусне хывса илнĕ хыççăн темиçе çын та харăсах палласа илчĕç.

— Пĕлмесĕр ара, пĕлетпĕр, офицер вăл!—терĕç те, вăл мĕнле чаçре командир пулнине каласа пĕлтерчĕç.

— Çак икĕ кун хушшинче анчах курнă та эпир ăна, мĕнле пĕлес мар-ха... Паçăр вăл çухавине тăратнăччĕ, картусне антарса лартнăччĕ,—тӳрех палласа та илеймерĕмĕр. А халĕ мĕнле паллас мар-ха? Шăпах çавă вăл,—терĕç.

Салтаксем хаваслансах паллама тăрăшрĕç. Ку хутĕнче темиçе çынна харăсах палласа илчĕç, анчах офицерсенчен çакă çеç пулчĕ; ыттисем тĕрлĕ чиновниксем, служащисем, администраци таврашĕ пулчĕç...

— Ну, мĕнле-ха ĕнтĕ?—тесе, ун еннелле çаврăнса ыйтрĕ Федор.

Лешĕ пĕр шарламасăр, çĕрелле пăхса тăчĕ.

— Салтаксем тĕрĕс калаççĕ-и?—тесе тепĕр хут ыйтрĕ Федор.

— Çапла, тĕрĕс. Анчах мĕн-ха вара?—терĕ те офицер, ĕç шала кĕрсе кайнине кура, паçăрхи пекех хăйне хăй мăннăн тыткалама, паçăр тĕпчевнĕ чухнехи пекех улталама шутларĕ курăнать.

— Ара, эпĕ сиртен ыйтсаттăм-çке... ан суйăр тесе те асăрхаттартăм...

— А манăн калас килмерĕ,—татса каларĕ офицер.

Федор ăна чиновниксен ушкăнĕпе пĕрле халех штаба яма шутланăччĕ, анчах вĕсене обыск туманнине астуса илчĕ.

— Обыск туса пăхма хушăр-ха,—терĕ вăл çакăнтах нимĕн чĕнмесĕр тăракан Елане.

— Мĕн хушса тăмалли пур унта,—хыпаланса ӳкрĕ лешĕ;—эпĕ хамах,—терĕ те, кĕсйисене ухтарма тытăнчĕ. Тĕрлĕрен вак-тĕвек япала туртса кăларчĕ.

— Урăх нимĕн те çук-и?

— Нимĕн те çук.

— Тен, тата мĕн те пулин пулĕ?—ыйтрĕ Елань.

— Каларăм—çук тесе, çук тени пулать ĕнтĕ вăл,—тесе каллех хыттăн татса каларĕ офицер.

Вăл çапла хăйне мăнна хурса, чăрсăрланса калаçни пурне те калама çук тарăхтарчĕ. Елань темĕнскерле çыру туртса кăларчĕ те Федсра тыттарчĕ; ун тăрăх вара Федор—çак офицер вăл ĕлĕкхи семинарист, пуп ывăлĕ пулнине, совет влаçне хирĕç вăл ĕнтĕ çулталăк ытла кĕрешнине вуласа пĕлчĕ.

Çырăвне савнă хĕрĕ çырнă курăнать. Вăл халĕ çеç шуррисенчен тасатнă çывăхри хуларан çырать. «Шуррисем нумайлăха тухса каймаççĕ... чăтса пурăн... хĕрлисенчен эпир пурнăç çутине курмастпăр... Турă сыхлатăр сана, хăвна ху та большевиксене тавăрма сыхла», тет.

Федор пуçĕнче юн вĕриленсе кайрĕ.

— Çитет! Илсе кайăр!—кăшкăрчĕ вăл.

— Персе пăрахас-и?—ыйтрĕ унран Елань тӳрех, темле ытла та хăрамалла просто.

— Ара, ара, илсе кайăр...

Офицере илсе кайрĕç. Тепĕр икĕ минутран залппа пенĕ пăшал сасси илтĕнчĕ,—ăна персе пăрахрĕç.

Ытти чухне Федор урăхла тăватчĕ пуль; анчах кунта унăн пуçĕнчен çав икĕ вилĕ красноармеец, вĕсен ӳчĕсене касса кăларнă сурансем, суранĕсене тăвар сапни ниепле те асĕнчен каяймарĕ...

Унтан тата—офицер çапла мăнкăмăлланса, чăрсăрланса хăтланни; юлашкинчен, хĕрĕн çырăвĕ, офицер сăнне тĕппипех кăтартса параканскер, пуçĕнчен тухмарĕ...

Клычков кунĕпех тĕксĕмленсе, пăтрашса, лăпкă мар кăмăлпа çӳрерĕ; кулмарĕ вăл, шӳт тумарĕ, сахал калаçрĕ; пĕрмаях пĕччен пулма тăрăшрĕ... Анчах вăл пирвайхи кун çеç çакăн пек пулчĕ; тепĕр ирхинех унпа нимĕн те пулман пек пулса кайрĕ. Фронтра кун пек япаласем пирки темĕнччене пăтранса çӳрени вырăнсăр та пулĕччĕ, мĕншĕн тесен чĕтрентерсе яракан хăрушă картинăсене унта кашни кунах, кашни сехетрех куратăн; пĕр çын мар унта, вуншар, çĕршер, пиншер çын парне пулса пĕтеççĕ.

Вăрçăн юнлă йĕрĕсем,—туртса çурнă вилесем, асаплантарса вĕлернĕ çын кĕлеткисем, çунтарса янă ялсем, урама кăларса ывăтнă пирки выçса вилекен çынсем,—

кирек хăш çар та çак юнлă йĕрсемпе утса пырать, çитменнине вăл çĕнĕрен çĕнĕ хут çак йĕрсем патнех утса таврăнать,—çак юнлă йĕрсем вăрçăн темиçе пине те çитекенсен хăрушă картининчен кашни уйрăм картини пиркиех темĕнчченех асапланса пурăнма памаççĕ! Пĕр картинăна вĕсем ытти пин картинăпа хупласа хураççĕ.

Федорăн та çакăн пекех пулчĕ: вăл тепĕр ирхинех хăй ĕнер каç пирвайхи хут çынна персе пăрахма приказ панине лăпкăнах астуса илчĕ...

— Саншăн ку тĕлĕнмелле туйăнать-ха!—тесе кулчĕ унран Чапаев.—Санăн пирĕнпе пĕрле 1918 çулта пулса пăхасчĕ... Мĕнле персе пăрахмасăр май кӳнĕ пулăттăнши эсĕ унта? Сăмахран, тытса илетĕн эсĕ плена офицерсене, анчах вĕсене сыхлама санăн никам та çук, кашни çын хисепре—атакăна каймалла, хуралра тăрса аппаланмалла мар. Пĕтĕм купипех персе пăрахатăн та вара... Эй, пурпĕр мар-и,—вĕсем хĕрхенсе тăраççĕ-и-мĕн пире? Мĕн калаçмалли пур унта!

— Хăвăн пирвайхи приговорна астăватăн-и вара эсĕ, Чапаев?—тесе ыйтрĕ Федор.

— Тен, чи пирвайхинех мар пулсан та, çавах вăл, малтан питĕ йывăр пулчĕ... Кунта кирек хăçан та пуçлама йывăр, кайран вара хăнăхатăн...

— Мĕн тума? Вĕлерме-и?

— Вĕлерме çав,—просто каласа хучĕ Чапаев.—Илер акă, сăмахран, пĕр-пĕр шкул пĕтерсе килнĕ кавалериста. Хĕçпе вăл апла та, капла та касма пултарать... Чăн та ĕнтĕ, сывлăшра пит ăста касать, çав тери ăста. Анчах çынна касасси патне çитсенех, пĕтĕм вĕренни таçта кайса кĕрет: пĕрре, иккĕ—ниме юрăхсăр касать... Кайран хăнăхать те—пырать, нимех те мар вара. Пирвайхи хут вăл—кирек хăçан та аплах мар çав...

Федор çапăçура пиçĕхсе çитнĕ ытти çынсемпе те калаçса пăхрĕ. Ăна пурте пĕр сасăпа çапла каларĕç: çынна çын кирек мĕнле майпа вĕлерес пулсан та—чиксе-и унта, касса-и, персе пăрахма приказ парас пулсан та, е хăвăн персе пăрахмалла пулать-и унта—пурĕпĕр çын, кирек мĕнле нервсемпе, кирек мĕнле чĕрепе пулсан та, пирвайхи хутĕнче шикленет вăл, темĕскерле ӳкĕнĕçлĕн хăтланать; анчах кайран вара, уйрăмах вăрçăра, яланах юн юхса тăракан çĕрте, çыннăн сисĕмĕ ку тĕлĕшпе мукалса каять, вара тăшмана кирек мĕнле

меслетпе вĕлерессн те, машина ĕçĕ пек, хăнăхнă ĕç пулса тăрать.

* * *

Еланъ патĕнчен Шмарин бригадине кайрĕç. Еланъ, Чапаевăн пысăк чапне ăмсанса, хăй те унпа танлашма тăрăшатчĕ пулсан, çакна тума унăн тивĕçĕсем те нумайччĕ,—вăл хăй те чăн-чăн пысăк паттăрччĕ. Шмарин акă вара — пустуях мекеçленетчĕ. Вăл нихăçан та тĕк ларатăра пĕлместчĕ, пĕр-пĕр ĕç тунă пек вĕçĕмсĕр хĕвĕшсе çӳретчĕ, яланах мĕн пирки те пулин пăшăрханатчĕ; çывăрнă чухне те, пичĕ-куçĕнчен пăхсан, пăшăрханса вырттни палăратчĕ. Çитменне тата Шмарин хăй çинчен, тем тери паттăр ĕçсем тунă пек, тӳсме çук суйса каласа кăтартма юрататчĕ! Кашни курмассеренех çапла мухтанса калаçатчĕ. Чăн та ĕнтĕ, ĕçĕсем çинчен вăл кашнинчех кăшт улăштарарах калатчĕ,— мĕн çинчен те пулин каламасăр хăварать-и унта, е амантни çинчен, контузи туни çинчен, атакăна кайни çинчен хисепне ӳстерсе калать-и,— анчах пĕтĕмĕшпе унăн çапла, хăй лайăх суйма вĕренсе çитнĕ ултă-çичĕ паттăрла юмах пурччĕ те, çавсене вара Шмарин каçса кайсах хавасланса кала-кала кăтартатчĕ. Каланă вăхăтра вăл хăйĕн калавĕнчи ĕçсем тăвăллăн ӳссе сарăлса пынă пирки савăннипе антăхсах каятчĕ, хăй шухăшласа кăларнă ĕçсем епле тĕрлĕрен май улшăнма пултарнипе хĕпĕртетчĕ, хăй халь çеç шухăшласа кăларнă ăнсăртран пулакан ĕçсем пирки каçса кайсах савăнатчĕ. Çитменне тата каланă чухне вăл хăйĕн хура çăра çӳç кăтрисене пĕрехмай турткаласа ларатчĕ, пĕтĕм тăлпăвĕпе сĕтел çине, сăмси хăмана тĕкĕнмеллех çывăх, пĕшкĕнсе ларатчĕ; икĕ пӳрнипе вара — вăтампа шĕвĕр пӳрнипе — хăйĕн сăмахĕ çеммипе сĕтел хĕррине хыттăн, çирĕппĕн шакатчĕ; çапла вара вăл хăйне итлесе ларакансене мар, çак сĕтеле темле ĕçсем çинчен каласа кăтартнă пек, ăна теменшĕн ятланă пек, теме вĕрентнĕ пек туйăнса тăратчĕ.

Малтан Шмарин калакан юмахсене лайăхах итлетчĕç, ĕненетчĕç те вăл каланине, анчах кайран вара вăл каланă сăмахра хăй шухăшласа кăларни чăн пулнинчен тăвată хут нумайрах иккенне курса пĕлчĕç те, ăна итлеме те, ĕненме те пăрахрĕç. Анчах, çапла каланă хыççăн эсир: вăл каласа кăтартнă япала пĕтĕмпех фантази пулнă иккен, тесе ан шухăшлăр; çук, вăл чăн-чăн пулнă ĕçсем çинченех каласа кăтартатчĕ, анчах пĕтĕм инкекĕ кунта

ак çакăнтаччĕ: пĕр-пĕр çапăçура кам та пулин хăйĕн харсăрлăхне, хăйĕн пултарулăхне кăтартас-тăвас пулсассăнах вара, çак ĕçе Шмарин хăй тунă пек каласа кăтартатчĕ, ăна пĕтĕмпех хăй çине илетчĕ. Анчах кайран вара ку пĕтĕм ĕç, сăмахран, Шмарин сылтăм флангра явăçса çӳренĕ чухне сулахай флангра пулса иртни уççăнах палăрса тухатчĕ. Асĕпе пултарулăхне батальон командирĕ палăртнă пулатчĕ, Шмаринĕ вара вăл вăхăтра полкпа командовать тунă пулатчĕ,— ну, унăн çавăн йышши ытти ĕçсем те пулкалатчĕç... Пĕр сăмахпа каласан, çын урăххисен чапне хăй çумне çыпăçтарма питех те юрататчĕ. Анчах Федор кам-кам апла тунине курса асăрхамарĕха,— унашкал хăтланакан пĕр Шмарин анчах марччĕ; тепĕр çыннăн паттăр ĕçне вăрлама, вăл ĕçе хăй çумне çыпăçтарса, ăна хăй тунă пек суйса кăтартма — вĕсемшĕн чи çăмăл, чи яланхи йышши ĕç пек шутланатчĕ.

Шмарин патне пырса çит анчах — тапрататчĕ вара вăл! Павраса каятчĕ вара таçта çитиех — хăлхуна çеç тăратса лар; каçхине тытăнсан ирчченех палкаса ларатчĕ. Қалаçнă чухне ăна тăшман епле пулсан та «çавăрса илетчех» вара, унăн вара епле пулсан та ăçтан та пулин, ăçталла та пулин «çĕмĕрсе тухмалла» пулатчех; çав вăхăтрах итлесе ларакансемшĕн пуриншĕн те иртнĕ кун, калăпăр, ун участокĕнче нимĕнле çапăçу та пулманни паллă пулатчĕ. Флангĕсем унăн яланах «калама çук пысăк хăрушлăхра» пулатчĕç, кӳршĕри бригадăсем ăна нихçан та пулăшмастчĕç, ытларах та — ăна сиенлетчĕç, кирек хăçан та пĕр вăл пулăшнипе анчах «çĕнтерме пултаратчĕç», унăн бригади çĕнтернĕ чапа хăйсене йышăнатчĕç, ырă сăмах илтетчĕç, хăш-пĕр чухне наградăсем те илетчĕç; анчах ăна акă, Шмарина, чăн-чăн паттăра, пурте манса кайнă пулатчĕ, ăна асăрхамастчĕç, ăна палăртмастчĕç, ăна чи пĕчĕк çын вырăнне хуратчĕç курăнать; çав вăхăтрах вăл, Шмарин, чăннипех пысăк ĕçсем тăвакан çын пулнине, унăн ĕçĕсене ыттисем хăйсене вăрласа йышăннине пĕлместчĕç.

Пирĕн туссем халь ун патне Елань патĕнчен пырса çитсен, Елань тăшмана питĕ нумай тыткăна илсе тултарни çинчен пĕлтерчĕç. Шмарин çакăн çинчен тимлĕн итлесе ларчĕ-ларчĕ те, хăйĕн сарăхса кайнă çуман питне аллипе труках ярса тытса, тем çинчен шухăша кайнă пек:

— Çапла, çапла, тĕрĕс... Ара, ăçта кайнă пулччăр ĕнтĕ

вĕсем? Вĕсен ниçта кайса кĕме те пулас çуккине эпĕ пĕлсех тăнă,— тесе хучĕ.

— Қамăн ниçта та кайса кĕмелли пулман?—ыйтрĕ Чапаев.

— Лешсен ара, Еланьа тыткăна илнисен. Эсир пĕлетĕр-и, Чапаев юлташ, тыткăна епле лекнĕ вĕсем? Эпĕ вĕсене унчченех лайăх çĕмĕрнĕччĕ: сылтăм флангра эпир çапăçнăччĕ, астăватăр-и? Е çук-и? Çакăн хыççăн ăçта кайса кĕмелле пулнă ĕнтĕ вĕсен,—паллах, тыткăна лекесси анчах юлнă...

Шмарин тата çак енчен лайăх мар сынччĕ: вăл ыттисен чаплă ĕçĕсене пĕчĕклетсе кăтартма тăрăшатчĕ, тепĕр чухне хăйне çакăнтан нимĕнле усă та пулас çук çĕртех çын ĕçне ним вырăнне хумасăр кăтартма хăтланатчĕ.

Шмарин халĕ те хăйĕн «ĕнерхи ăнăçлă ĕçĕсем» çинчен калаçса каясшăн пулнине курсан, Чапаев ун умне чи кирлĕ, чи вырăнлă ыйту кăларса тăратрĕ, унран вăл ниепле те пăрăнса кайма пултараймарĕ:

— Бригада фронтĕнче ĕçсем мĕнле тăраççĕ-ха?—тесе ыйтрĕ.

Штаба кĕчĕç — вĕçĕмсĕр туртса тултарнипе хуратсах янă, йӳçĕхсех кайнă, шăршлансах ларнă пĕчĕк пӳлĕме; пырса кĕрсессĕн — кунта пĕрмаях чĕлĕм туртса, сĕрĕм кăларса ларнă пекех туйăнса кайрĕ. Шмарин штабĕнче лайăх çынсем ĕçлетчĕç, вĕсем ăна чунтанах пулăшса тăратчĕç. Пустуя паврама юратакан Шмарин, хăрушă фантазĕр, дивизи задачисене, çапах та, яланах лайăхах тăватчĕ. Хушнă ĕçе тума вăл лайăхах пултаратчĕ; анчах хăй пуçарса ĕçлеме пачах та пултараймастчĕ, нимĕнле пуçарулăх та çукчĕ унăн, хăй пуçарулăхĕпе нимĕн тума та пултараймастчĕ, кăтартса парассине кĕтсе тăратчĕ, кирек мĕнле лару-тăрура та чи пахине, чи тĕпре тăракан ĕçе курса илме куçĕ витĕр кураймастчĕ.

Штабри халăх çивĕч, Чапаев йăлисене лайăх пĕлет— ĕçсем мĕнле тăни çинчен вĕсем питĕ тĕплĕн каласа пачĕç, Шмаринăн хăйĕн хушса каламалли нумаях та юлмарĕ. Ĕçсем мĕнле тăнине пĕлсе çитсен, Чапаев халех бригадăри полксем тăрăх тухса кайма шут тытрĕ,—полксем вăл вăхăтра наступлени туса пыратчĕç. Шмарин, хăйĕн вырăнне заместительне хăварса, хăй те пирĕнпе пĕрле кайма тапранчĕ.

Штабра хамăрăн вăйсемпе тăшман çарĕсен хисепĕ çинчен калакан цифрăсене илтсе юлни, картă тăрăх шывсемпе çулсен йĕрĕсене, ешĕл вăрмансене, хăмăр сăртсене пăхса тухни,—çаксем пурте Чапаев пуçĕнче тĕлĕнмелле уççăн палăрса тăратчĕç. Çулпа пынă май вăл Шмарина— ав çав сăрт хыçĕнче мĕн пулма тивĕççине, çав çывăхри вăрман хыçĕнче тăшманăн мĕнле вăйĕсем пытанса тăма пултарнине, шыв урлă каçмалли вырăн хăш тĕлерех пулмаллине — йăлтах кăтарта-кăтарта пычĕ. Вăл пур япалана та питĕ лайăх пĕлсе, уççăн курса тăратчĕ. Пĕр-пĕр çул юппине çитсен, çул çакăнтан виçĕ еннелле уйрăлса каймаллине курсан,— Чапаев ытлашши шухăшласа-туса тăмасăрах, вĕсенчен пĕрне суйласа илетчĕ те, ун тăрăх, пĕр-пĕр пĕчĕк хулан паллана урамĕпе пынă пекех, пĕр иккĕленмесĕрех каятчĕ. Сайра йăнăшатчĕ, нихçан та йăнăшманпа пĕрехчĕ; хăш-пĕр чухне тавра çул çине пырса тухас пулсан е çул çук çĕре çитсе кĕрес пулсан çеç вара кăштах шухăша каятчĕ; анчах кунтан çаврăнса тухма та ăна нимĕн те марччĕ: йĕри-тавра пăхкаласа илетчĕ те, темĕскер çинчен шутласа тăратчĕ те, тĕрлĕ çул юпписене, çул çинче тĕл пулнă паллăсене астуса илетчĕ те — айда вара! Çĕрле, чăн та, йывăртарах чухлатчĕ, кăнтăрла вара нихçан та йăнăшмастчĕ. Таврари ĕçе чухласа пĕлес тĕлĕшрен унăн чăнахах та таланчĕ пысăкчĕ, ку тĕлĕшрен унпа никам та тавлашаймастчĕ те: Чапаев мĕнле калать, çапла пулатчĕ те.

Пĕрремĕш полка пырса çитрĕç. Вăл хальтерех çеç чаваласа тунă пĕчĕк окопсене вырнаçса выртнăччĕ. Окоп темелĕх те çук вĕсене; вĕсем темле, вылямалли картран тунă пÿрт пек анчах, ытла та тĕрексĕр курăнатчĕç: пĕчĕк çеç тăпра тĕмескисем купаласа хунă, кашнин тăрринех пĕрер хыр турачĕ чике-чике лартнă, çапла вара красноармеецсем пуçĕсене ăçта чиксе выртнине те уйăрса илме çук — те турат айне, те çак каюра шăтăкĕ çинчи тĕмеске евĕрлĕ лутра çеç тăпра купи хыçне. Тăшман çак туратсене — те чăнах та вĕт вăрман вырăнне хунă, те ахаль çапăçу тапратса ярасси килмест унăн,— вăл пĕртте шарламасть; хăй çак сăрт хыçĕнче çеç, инçе те мар пытанса тăрать пулин те, пĕрре те пемест.

Апат-çимĕç окопсене упалене-упалене илсе пыраççĕ. Выртать çын хырăмĕ çине, котелок е яшка чашки тытнă аллине малалла тăсать те, шуса пырать вара хурт

пек авкаланса; чавсисемпе чĕркуççийĕсем çине тĕреленсе мĕн кухньăран пуçласах йăраланса пырать. Красноармеецсем халĕ апат çиеççĕ, канаççĕ, апат çинĕ хыççăн — каллех наступлени туса каймалла. Хăшĕн-пĕрин аллинче е кĕнеке, е хаçат курма пулать; хаçачĕ çав тери кивĕ пулмалла,— пĕтĕмпех таткаланса, вараланса пĕтнĕ. Çавăнса выртнă та ўпне, пуçне турат айне пытарнă, пичĕ-куçĕ питĕ лăпкă, куласси-мĕнĕ çук, кĕнекине е хаçатне сăмси умнех тытнă, вуласа выртать; пĕр сăмахпа каласан, унăн пĕтĕм хăтланарăшĕ çав тери просто; вăл яланхи пек, таçта хăйĕн ялĕнче пĕр-пĕр уяв кун хăйĕн пахчине çуллахи шăрăхран пытанса кĕрсе выртнă пекех туйăнать.

Чапаевпа Федор Шмарин цепĕ хыçĕнчен иртсе пычĕç; вĕсене пени-туни пулмарĕ. Чапаева çакă çавăнтах шухăша ячĕ.

— А çав сăрт хыçĕнче тăшман чăнахах та пур-ши, кам пĕлет ăна? Тен, пулнă пулĕ те, халь çук пулĕ?—тесе ыйтрĕ вăл Шмаринран.— Ну-ка, тĕрĕслесе килтер!

Пур еннелле те разведка упаленсе кайрĕ. Иккĕшĕ сăрт патнех çитрĕç, тăррине упаленсе хăпарчĕç, кăшт çĕкленсе пăхрĕç; çўлерех... çўлерех... çўлерех тăрса çĕкленчĕç... пĕтĕм пĕвĕпех ура çине тăчĕç. Таврăнчĕç те, сăрт хыçĕнче пĕр чун та çукки çинчен пĕлтерчĕç; тăшман сăрт хыçĕнчи вăрман вĕтлĕхĕпе пытанса шуса кайнă курăнать, терĕç.

Малалла утрĕç, сăрт çинчи чи çўлĕ вырăна хăпарса тăчĕç, йĕри-тавра бинокльпе пăхма тапратрĕç.

— Куратăр-и авă, вăрман ăçталла кайса çухалать?— тесе тĕллесе кăтартрĕ Чапаев.—Мана вĕсем çавăнтан пирĕн хыçа çаврăнса тухма шутлаççĕ пек туйăнать.

— Çавăрса илеймеççĕ,— тесе хучĕ Шмарин.— Виçĕ кун хăвалатăп, ăçтан каялла таврăнасси çинчен шутлаччăр вĕсем. Ури тупанĕсене çиçтерсе тарма анчах турă пулăштăр.

— Тăваттăмĕш кунĕнче çиçтерееççĕ те акă вĕсем сана,— терĕ ăна хирĕç Чапаев, пĕртте кулмасăр, бинокль çумĕнчен куçне илмесĕр, тĕрлĕ еннелле çаврăнкаласа пăхса.

— Таврăнаймаççĕ,— тесе çăмăлттайла ĕнентерме чарăнмарĕ Шмарин.

— Таврăнсан вара?— терĕ Чапаев, кăмăлсăрланнипе сассине хытарса.— Командирĕ унта ухмах мар пулсас-

сăн, вăл сана хыçалтан килсе хăратнă хыççăн ăна хăйне те тарма çăмăлтарах пулассине уççăн ăнланса илсессĕн— мĕн тăвăн вара? Эсĕ пуçтарăнса çитиччен — ăçта çитме ĕлкĕрет вăл, пĕлетĕн-и çавна? Шĕлепке! Ăнлан эсĕ çавна, мимăсене хускатарах пар. Вăл сан умăнта пăрça пекех кусса пырĕ тесе шутлатăн-и мĕн эсĕ?

Шмарин нимĕн те шарламарĕ, нимĕн хирĕçлесе каламалли те пулмарĕ.

Чапаев ăна тăшман çавăрса илме пултарасран сыхланас тесен мĕн тумаллисене кăтартса пачĕ, ĕçе тĕплĕн тĕпчесе пĕличчен Шмарина кунтах юлма хушрĕ; хăй вара Федорпа пĕрле ытти икĕ полка уйрăлса кайрĕ.

Çапла вăл ăçта пырса перĕннĕ ан пултăр, пур çĕрте те яланах мĕн те пулин тӳрлетсе пама, мĕнпе те пулин пулăшса хăвармa тупатчĕ-тупатчех. Сылтăм флангра чи хĕрринче пыракан виççĕмĕш полка курса çӳренĕ чухне Шмарин патĕнчен вестовой пырса çитрĕ. Шмарин пĕлтернĕ тăрăх, тăшман чăнах та хыçалтан çавăрса илме шухăш тытнă пулнă-мĕн; анчах çапла тума хăтланнине хĕрлисем вăхăтра сиснине тăшман хăех ăнланнă та, вара каллех хăйĕн малтанхи çулĕпе чакма пуçланă. Хăйĕн çыруне Шмарин çапла савăнăçлăн çырса пĕтернĕччĕ:

«Тăшман çапла усал ĕç тума хăтланнине эпĕ çийĕнчех, пĕр салтака та çухатмасăрах, пĕтерсе лартрăм», тенĕччĕ.

Паллах, кунта «пĕтерсе лартмалли» те нимĕн те пулман курăнать; пĕлĕтсем хăйсемех сирĕлсе кайнă.

Чапаевпа Клычков çакăнтах, виççĕмĕш полкрах çĕр каçма юлчĕç. Полк штабĕ яла кĕрсе вырнаçрĕ, йĕри-таврах заставăсем кăларса тăратрĕç. Укăлча хыçĕнче каçранпах красноармеецсен цепĕ тăшман еннелле çурма ункă пек окопсем чавса выртрĕ. Штаб вырнаçнă пӳртре пĕчĕк усал лампа анчах мăкăрланса çунса ларать, çавăнпа çын пичĕсене аран-аран çеç палласа илме пулать. Ĕшеннĕ пирки калаçасах килмерĕ, кĕтессене хĕсĕнкелесе, саксем тăрăх тăсăлса выртса — çывăрма канлĕрех вырăн шырама пуçларĕç: çурма тĕттĕмре хура усал-тĕсел шуса çӳренĕ пекех туйăнчĕ.

Çак вăхăтра пĕр вунтăватă çулхи ачана допрос тума тытса килчĕç. Полк штабĕнчи çынсем унран, шпион мар-и тесе, тĕпчесе ыйтма тытăнчĕç. Малтан: кам эсĕ, ăçтан, ăçта кайма тухнă, мĕн тума? тесе ыйткаларĕç.

Ача каласа кӑтартнӑ тӑрӑх, унӑн ашшӗпе амӑшӗ ҫук, леш вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчех таҫта пӗтнӗ. Хӑй вӑл — вӑрҫӑран тарса килнӗ беженец-поляк, халӗ «доброволецсен виҫҫӗмӗш хӗрлӗ батальонӗнче» шутланать имӗш. Кунашкал батальон пуррине никам та пӗлмест, ҫавӑнпа пурте пушшех иккӗленме пуҫларӗҫ.

— Мӗн ятлӑ эсӗ?—тесе ыйтрӗҫ.

— Женя,— тет.

— Эсӗ Алеша терӗн-ҫке?— терӗ такӑшӗ, ачана пӑтраштарса яма хӑтланса.

— Ан шухӑшласа кӑларса ларӑр, тархасшӑн, — терӗ ача ҫирӗппӗн, хӑйне тивӗҫлӗн тыткаласа.—Эпӗ сире нихҫан та: мана Алеша теҫҫӗ, тесе каламан. Эсир ӑна хӑвӑр шухӑшласа кӑларнӑ,— терӗ.

— Эсӗ ытла калаҫма юрататӑн, эй ача!— терӗҫ.

— Тата мӗншӗн калаҫас мар-ха ман?

— Ан павра, ӗҫ ҫинчен каласа кӑтарт. Шуррисем патӗнчен килтӗн-и? Кала, мӗн пытарса тӑратӑн! Каласан — нимӗн те пулмасть.

— Нимӗн те каламастӑп, мӗншӗн тесен нимӗн те ҫук,— терӗ вӑл чӗтрекен сасӑпа, тӗпчевҫӗсем тапӑннине сирме тӑрӑшса.

— Ну, ну, ан суй! Санӑн нимӗнле батальону та ҫук кунта. Ху шухӑшласа кӑларнӑ ӑна... Кала луччӑ: ӑҫта, мӗн ӗҫпе тухнӑ?

Ҫапла шав ҫакӑн евӗрлӗ хыпашлакаласа пӑхма тӑрӑшрӗҫ ӑна. Пурин те ӑна кам, ӑҫта, мӗн тума янине пӗлесси килчӗ.

Тӗрлӗрен юнаса пӑхрӗҫ, хӑратрӗҫ, персе пӑрахассине те асӑнса илчӗҫ.

— Персе пӑрахӑр ара, мӗнех ытла,— терӗ Женя, куҫҫулӗ витӗр.— Анчах пустуй пулать вӑл... Сирӗнех эпӗ... йӑнӑшатӑр эсир,— терӗ.

Ку ӗҫе Федор хутшӑнма шут тытрӗ. Вӑл ку таранччен ним чӗнмесӗр, тӗпчени мӗнпе пӗтессине кӗтсе, итлесе выртрӗ. Халӗ унӑн ку ачана кам иккенне пӑхмасӑрах — хамӑрӑн-и, хамӑрӑн мар-и, пурӗпӗр — ҫӑласси килсе кайрӗ; ӑна вӑл хӑй патӗнче хӑварса, кирлӗ пулсан, ҫӗнӗлле вӗрентме шутларӗ. Вӑл тӗпчеме пӑрахма хушрӗ, савӑнса кайнӑ Женьӑна хӑйпе юнашар урайне вырттарчӗ. (Федор кайран ҫак Женьӑран чӑнахах та лайӑх, ӑстӑнлӑ ача

турĕ: вăл кайран бригадăпа полкра çыхăну тĕлĕшпе ĕçлерĕ).

Штабра каллех шăп пулса тăчĕ. Шăши куçĕ пек лампа мăкăрланса ларать; кĕтессенчен харлаттарса, шăхăрса çывăрни илтĕнет; тулта чӳрече умĕнче — яланах хатĕр пулма йĕнерлесе тăратнă лашасем кăмпăрт-кампăрт тутарса сĕлĕ çини илтĕнет. Пурте çывăрма выртас умĕн, Шмарин, пасăр юлнă çĕртен вĕçтерсе çитме ĕлкĕрнĕскер, пĕтĕм ĕç йĕркеллĕ тăни-тăманнине «пăхса çаврăнас» тесе, пӳртрен тухса кайрĕ. Мĕн чухлĕ вăхăт иртнине кайран никам та астуса илекен пулмарĕ, анчах шусăм çути килни палăратчĕ ĕнтĕ,— сасартăк Шмарин, хыпăнса ӳкнĕскер, чупса çитрĕ те, алăка яриех уçса пăрахса, хыттăн:

— Часрах, часрах, тăшман наступлени туса килет!!!— тесе кăшкăрчĕ.

Пурте харăс сиксе тăчĕç те тепĕр минутранах лашасем çине утланса ларчĕç.

— Цепьсем ту çинех хăпарса çитнĕ ĕнтĕ, кунтан пĕр икçĕр чалăш çеç,— тесе, сывлăшне аран çавăрса кăшкăрчĕ Шмарин, хыпăнса ӳкнипе урине ниепле те йĕнер пуссине лектерейменскер.

Вĕри учĕ кăлтăрмач пек çаврăнать, ниепле те утланма памасть. Шмарин ăна пĕтĕм вăйран хăмсарса, пуçĕнчен туртса çапрĕ.

Хапхаран тĕпĕртеттерсе тухрĕç. Кăшт çеç палăрса килекен шусăм çутипе çын кĕлеткисем пур еннелле те кускаласа ирте-ирте çухални курăнать. Кам ăçталла чупнине пĕлме хĕн: пĕр еннелле мар, пур еннелле те вĕлтлете-вĕлтлете иртеççĕ. Хапхаран тухсанах, пĕр сăмах шарламасăр, уйрăла-уйрăла кайрĕç; калаçса тăма вăхăт çук. Пĕрисем çул тăрăх тапса сикрĕç — тарса хăтăласшăн... Чапаев çийĕнчех ăнланса илчĕ те инçех мар запасра тăракан батальон патне вĕçтерчĕ. Шмаринпа Клычков тăшманăн хĕссе çывăхаракан цепĕсене хирĕç юрттарчĕç; вĕсем: çак цепьсем умĕнче красноармеецсен цепĕсем чакса килме тивĕç, тесе шутларĕç. Клычков халĕ Шмаринпа пĕрле, çак чакакан цепьсене чарса, хăйĕн примерĕпе вĕсене хаваслантарса çапăçтарас шутпа кунталла тухса вĕçрĕ. Çиçĕм пек çиçсе илчĕç асĕнче вăл хăй Уральскра Андреевпа цепьсем çинчен, тăшмана хирĕç тăрасси çинчен, паника вăхăтĕнче çапăçура пуласси çин-

чен калаçнисем; çавăнтах вара ăна темĕнле мăнкăмăллăн савăнăçлă туйăнса кайрĕ.

— Суя тревога... Йăнăш... Ту çинче хамăрăн цепьсем! — тесе кăшкăрчĕ такăшĕ.

— Чарăнăр! — тесе сасартăк ахăрса ячĕ Шмарин.

Çак команда кама валли пулнине ниепле те ăнланма пулмарĕ, мĕншĕн тесен кунта пур еннелле те кускаласа чупакан уйрăм красноармеецсенчен пуçне урăх никам та çукчĕ. Çийĕнчех Чапаева тата унпа пĕрле çул тăрăх кайнă çынсене каялла тавăрма ячĕç. Кăшкăра-кăшкăра, пăшал перкелесе чарчĕç вĕсене. Тата тепĕр вунă минутран пурте каллех пĕр çĕре пухăнса çитрĕç.

Çапла çуйăхса пăтрашнине, кăшкăрашса пенине полкри салтаксем те илтсе, тĕлĕнсех кайнăччĕ; вĕсем, хăйсене хыçалтан çавăрса илнĕ тесе, халех мĕн те пулин тумалла пулать, тесе шухăшлама пуçланăччĕ, красноармеецсем сыхланса, хатĕрленсе тăнăччĕ, пур еннелле те çĕнĕ разведкăсем яма пуçтарăнчĕç, вара вĕсене çак тревога пустуйранах тухса кайнине пĕлтернĕ хыççăн тин лăпланчĕç.

Каллех пўрте пуçтарăнса кĕрсен, пит ир пулин те, никам та çывăрма шутламарĕ, сĕтел тавра пухăнса, калаçма тапратрĕç. Такăшне ятларĕç, анчах кама ятланине ăнланса илме пулмарĕ. Шмарина тесен? Çук, унăн, хăрушлăх пуррине пĕлсенех, пурне те ура çине тăратмалла пулнă, тĕрĕслесе пăхма вăхăчĕ пулман. Хăйсене хăйсем тесен? Çук, хăйсене хăйсем те айăплă тесе шутламарĕç, мĕншĕн тесен юнашарах тăшман цепĕсем çĕмĕрсе килеççĕ пулсан, мĕнле ухмах пўртрех ларса юлма пултарĕ! Çапла вара пăтрашнине — çапла пулмалла пулнă та вăл, тесе шутларĕç те, çакăнпа пурте килĕшсе лăпланчĕç. Айăплине шыраса тупаймарĕç пулин те, çапах та пурте темĕнрен вăтаннă пек пулса ларчĕç: сăмаха сирĕппĕн ĕненсе калаçаймарĕç, пĕрне-пĕри куçĕнчен пăхаймарĕç; пĕр-пĕрин пуçĕ урлă, чўрече витĕр, хура тĕпсĕрлĕхелле пăха-пăха, кĕске пуплевсемпе çеç перкелешсе ларчĕç.

— Акă сана, хăраса ўксе паника тăвасси те инçех мар, — терĕ Шмарин, лампăран чикарккине тивертес тесе, сĕтел çине пĕшкĕнсе. — Шыраса туп унта кам улталанине...

— Сана хăвна кам каларĕ-ха ара? — тесе ыйтрĕ унран Чапаев.

— Полк штабĕнчен пĕри... Хирĕç пыраканскер...
— Кам ара, кам?
— Çавна астумастăп çав, палласа юлаймарăм... Малалла юрттарса кайса пăхрăм — цепь килет, вăл-ку кăштах курăнать... Апла пулсан, терĕм...

— «Апла пулсан» темелле мар çав — пĕлес пулать! — тесе, çирĕппĕн асăрхаттарса каларĕ Чапаев. — Пĕлетĕн-и пирĕн пĕрре мĕн пулса тăчĕ çавнашкал? Халĕ мар — Германипе вăрçнă чухне, лере, Карпат тăвĕсем çинче. Тусем унта — кунти тĕмескесем мар: пĕрре улăхса çитсен, анаймастăн часах... Хăпараттăмăр та хăпараттăмăр пĕрре çавнашкал; австрияк вара кашни шăтăках пытанса кĕре-кĕре ларнă, чулсем хыçне, йывăç тĕмĕсем хыçне пытанса пĕтнĕ, хăйăр ăшне чакаланса выртнă, — пĕр сăмахпа каласан, çын хăй килĕнче пурăнать, ăçта пытанмаллине вĕрентмелли çук ăна... Сапаланса каятпăр эпир пасарти пек пур еннелле те, а вăл хыçалтан шакка пуçлать те, пĕтĕм обоза тытса илсе, хăваласа каять... Артиллери пулсан — ăна та çавăрса илет. Ку хутĕнче вара эпир обозсене хамăр çар варрине вырнаçтарса тăратрăмăр та, йĕри-таврах хупăрласа илсе, пыратпăр çапла малалла. Лашасем çитмен пирки, пирĕн вăкăр та нумайччĕ, а вăл çĕрле мĕкĕрсе ярать те, нимĕскертенех сутма пултарать... Прикладпа вĕрентме ăна ан та шутла — пушшех мĕкĕрме пикенет... Çăкăр пур чухне карланкине пĕр татăк пырса чикетĕн те — шарламасть... Кайран вара ĕçсем пĕтĕмпех начарланса кайрĕç. Пĕр каçхине, çапла, ирччене каймалла пулчĕ... Разведка та лайăх хыпар пĕлтернĕччĕ: «Нимĕн те çук, кайма юрать», — тенĕччĕ. Пуçтарăнтăмăр та тапранса кайрăмăр çапла, вăкăрсемпе обоз пĕтĕмпех çар варринче... Çĕрле тусем тăрăх епле çӳрессине ăна — кам унта пулса курни лайăх пĕлет. Мĕн каламалли пур ĕнтĕ, унран начартараххи пулма та пултараймасть. Акă сана хăть хуп-хура хăрăм, хăть çĕрлехи тĕттĕм — нимĕн те курăнмасть. Пыратпăр, шавламастпăр, чул катăкĕсем çеç ту çинчен аяла çитиччене йăвалана-йăвалана анаççĕ... Çĕрле пынă чухне — мĕн-мĕн кăна курăннă пек туйăнмасть пуль унта сана! Йывăç тĕмĕсем айĕнче йĕри-таврах сана кĕтсе пытанса выртаççĕ пек, йывăç тăрринче те лараççĕ пек... Пысăк чул выртать, вăл сана тĕттĕмре çын пек курăнса каять. Эсĕ тем шуйттан пекех харсăр пулсан та, пĕрехмай шартах сике-сике

ӳкетӗн. Хӑруша ҫӗрле, таҫтан темӗн те пӗр сике-сике тухать: перес—курмастӑн, тарас—ӑҫта тармаллине пӗлместӗн, темле унка ӑшне кӗрсе ӳкнӗ пекех туйӑнать... Командовать тӑвас? Мӗнле команда парас-ха унта — нимӗнскер те курмастӑн пулсан? Ҫапла вара ӑҫта та пулин хӗсӗнсе лар та, ӗнсерен пырса тӑрӑнтариччен шӑпӑртах лар. Урӑх ӗҫ вӑл — эсӗ ху тӑшман ҫине ӑнсӑртран пырса тухрӑн пулсан. Ун чухне шӑв-шав кӑларатӑн та — каялла тапса чакатӑн...Анчах тусем ҫинче акӑ, ҫитменне нимӗн те пӗлместӗн пулсан, тытӑнса пӑх-ха унта? Пыратпӑр эпир ҫапла, пыратпӑр; вара такӑшне малта тӑшман курӑннӑ пек туйӑнса кайнӑ... Вӑл ӑна — шап тутарчӗ, лерен пӗр сасӑ та ҫук. Вӑл тепре персе ячӗ; унтан тапранса кайрӗ вара хайхи, тапранса кайрӗ, хамӑрӑнне хамӑр ҫунтаратпӑр анчах... Ҫул пирӗн питӗ тӑвӑрччӗ — вӗҫе-вӗҫӗн пыратпӑр... Малтан та переҫҫӗ, хыҫалтан та ҫунтараҫҫӗ. Унтан тапратрӗҫ вара ту ҫинчен аналла чупма; чупаҫҫӗ те чупаҫҫӗ; мӗншӗн тесен вилсе ӳкекенсем пула пуҫларӗҫ; анчах ӑҫтан пени — курӑнмасть... Аналла чупас — унта обозсем, хайхи выльӑх-чӗрлӗх, вӑкӑрсем; ҫитменне вӗсене те сехрине хӑпартнӑ та — вӗсем те сиккипех тӗрӗлтеттере пуҫларӗҫ. Пурте ту ҫинчен аялалла ыткӑнчӗҫ...Каялла ҫаврӑннисем хыҫалтисене пӗтӗмпех лутӑркаса тӑкрӗҫ... Купа ҫине купа туса хучӗҫ те вара — лашапа та, ҫуран та иртме ҫук пулса тӑчӗ. Урӑх ҫул та ҫук. Ниҫта кайса кӗме те ҫук, тусем урлах каймалла пулчӗ... Лешсем вара, аялтарахра пулнисем, ту ҫинчен такам хӗссе килет тесе, вӗсене хирӗҫ пеме, вӗсене ҫунтарма тапратрӗҫ. Чупаҫҫӗ те переҫҫӗ. Ҫаврӑнса пӑхаҫҫӗ те тӑвалла — ҫунтараҫҫӗ ҫеҫ ту ҫинчисене. Мӗн чухлӗ халӑх пӗтмерӗ пулӗ — ай-ай! А мӗн пирки пулчӗха ҫак инкек? Ҫав хӑраса ӳксе паника кӑларнине пулах ӗнтӗ вӑл... Кам сана мӗн каларӗ, ху мӗн куратӑн,—эсӗ ӑна лайӑххах курса пӗл, ҫӑварна карса ан тӑр; хурах, цепьсем хӗссе килеҫҫӗ!— тесе ан сухӑраш.

— Кӑшкӑрма мӗне кирлӗ, юрать-и ара,— терӗ ун сӑмахӗне килӗшсе Шмарин, сӑмах ун ҫинчен, хӑй ҫинчен пынине ӑнланман пек пулса.— Кӑшкӑрашса ҫуйӑхнинчен тухса каять те ӗнтӗ ҫакӑ йӑлтах.

— «Кӑшкӑращнинчен» ҫав...— терӗ Чапаев таҫта аяккалла, Шмарин ҫапла хӑтланнинчен тӗлӗнсе.

— Ман шутпа,— терӗ Федор, сӑмах хушса,— ҫав

хăраса ӳкнинчен пулакан паникăна ниепле те чарма май çук вăхăтсем те пулаççĕ пек. Хăть кам пул эсĕ, хăть мĕн ту — ниепле те чараймастăн... Акă хăть хальхинех илер...

— Тĕрĕс, кунта пĕртен-пĕр пĕтесси анчах юлнăччĕ,— тесе килĕшрĕ Чапаев.

— Пĕтесси... Çитменнине хамăра валли хамăрах туса хутăмăр эпир çав пĕтессине,— тесе, малалла тăсрĕ Клычков хăйĕн шухăшне...—Кĕрешессе паникăпа мар, паникăна х и р ĕ ç кĕрешес пулать; паника пуласса малтанах пĕлсе, ăна тухиччен пĕтерсе лартмалла. Мĕн кирлĕ-ха çапла тăвас тесен? А кам пĕлет ăна, мĕн кирлине: кашнинчех хăйне уйрăм меслет шыраса тупас пулать... Калăпăр, халь каласа кăтартнă Карпатри ĕç пулнă чухне, ман шутпа, мала чи хăюллă, уйрăмах хăйне евĕр салтаксене ямалла пулнă пек... Разведка та унта хăюллă çынсенчен пулмалла пулнă, çĕрлехи асар-писертен хăраман çынсем... Тĕрлĕрен паллă пама, сигналпа пĕлтерме калаçса татăлмалла пулнă... Перессе те вара, кам хăçан шутланă пек мар, çав сигналсем тăрăх анчах пемелле пулнă...

— Ĕç пачах та сигналсенче мар,—тесе чарчĕ ăна Чапаев.— Сигнал... Аçтан пулăшма пултартăр-ха вăл сана сигнал, хăраса ӳкнипе лашасем те, вăкăрсем те ĕрĕхсе кайнă вăхăтра? Вĕсене çар варрине кĕртсе тăратмалла пулман... Çĕрле ун пек тума юрамасть... Походне те çĕр хутах тума юраман.

— Çук, мĕншĕн ан юратăр-ха? Питех те юрамалла пулнă, кăшт йĕркеллĕрех...

— Мĕн йĕркеллĕрехĕ пулмалла унта,— кулса ячĕ Шмарин.— Пăх-ха, епле йĕркеллĕ тунă пулнă...

Çак тĕлĕнтерсе кулни, çак вырăнсăр персе янă сăмахсем — калаçăва чарса лартрĕç. Çывăрас та, ларас та килмерĕ, çитменне кунта урăх ларса тăма та кирлĕ пулмарĕ... Кăшт тул çутăла пуçларĕ. Тулта сивĕ-ха, каçхи сивĕ. Пур çĕрте те лăпкă. Вăхăтсăр шăв-шавпа кăлăхах хăратса пĕтернĕ ял лăпланса, çывăрса кайрĕ... Чапаев крыльца умĕнче лашине йĕнерлесе çавăтса пырасса кĕтсе илчĕ. Федор хăй йĕнерлерĕ. Вара тепĕр темиçе минутран вĕсем ĕнер килнĕ çулпах каялла тухса кайрĕç.

## XI. МАЛАЛЛА

Чапаев дивизийĕ Белебей хулинчен çурçĕр еннерех иртсе пычĕ; хулине хăйне унăн мар илмелле пулнă. Анчах çапла ĕнтĕ вăл хăш-пĕр командирсен йăли — мĕнле пулсан та пысăкрах пунктсене пырса перĕнсе, вĕсем те çак пунктсене туртса илес тĕлĕшпе хастарлă çапăçнине кăтартса пама тăрăшасси.

Граждан вăрçинче яланах тăшманăн чĕрĕ вăйне пĕтерес тĕллев лартман — пуринчен ытла пысăкрах территори, паллăрах хуласене туртса илме тăрăшнă. Çакна тума тăрăшни вăл, тепĕр тесен, — пĕр вăрçă ĕçĕ енчен анчах мар, политика тĕлĕшĕнчен те питĕ паха вырăнта тăнă: кашни пысăк центр, кашни пысăк хула çав вăхăтрах политикăллă центр та пулса тăнă; çавăнпа вăл шуррисен е хĕрлисен аллинче пулнинчен таврари халăх политика тĕлĕшĕнчен мĕнле пуласси те килсе тăнă. Политика вара граждан вăрçи вăхăтĕнче пур ĕçе те тума пуçлаттаракан вăй пулса тăнă пирки — кашниех çав тĕп пунктсене хăвăртрах çĕнтерсе илме тăрăшнă.

Белебей çав тери пысăках центр марччĕ ĕнтĕ, анчах вăйсене пĕрлештерсе тăрас енчен вăл та паха вырăнта тăнă. Чапаев дивизийĕн сылтăм флангĕнчи бригада хула патне шăпах хулашăн юлашки хут вăйлă çапăçнă вăхăтра пырса çитрĕ, çак çапăçура вăл хастарлăн кĕрешрĕ, вара хулана кӳршĕри дивизипе пĕрле кĕчĕ. Çак майпа хулана ч ă н н и п е кам туртса илни пирки, хулана кам чи малтан çитсе кĕни пирки, кам çивĕчрех, паттăртарах, пултарулăрах кĕрешни пирки шавлама, хирĕçме пуçларĕç, — пĕр хулана икĕ çар чаçĕ пĕр вăхăтрах пырса кĕнĕ чухне çак тавлашусен вĕçĕ-хĕрри те пулмастчĕ. Чапаев хăй çав тавлашусене хутшăнмарĕ — çак ĕçе вăл бригада командирне Потапова тума панăччĕ, лешĕ вара ку тĕлĕш-

пе хăйĕн дипломатла пултарулăхне пур вăйранах кăтартма тăрăшрĕ.

Полксем хулан çурçĕр енче юхса выртакан Узень шывĕ хĕррине çитсе вырнаçрĕç. Ĕçсем малалла мĕнле пуласси кĕтсе тăчĕç. Кунта — хĕрлисем, шывăн леш енче — шуррисем. Çапла темиçе кун иртрĕ.

Қанса, вăй пухса тăчĕç, çĕнĕрен тытăçса çапăçма хатĕрленчĕç. Чапаев пĕрмаях ятлаçрĕ; вăл çак Узень шывĕ хĕрринче тăнине пысăк айăп вырăнне хурса, питĕ кăмăлсăр пулчĕ.

— Мĕн канмалли пур унта?— тесе кăшкăрашатчĕ вăл.— Мĕнле ухмах канать фронтра?! Қама кирлĕ пулчĕши çапла канни? Тен, штабсене хăйсене кирлĕ вăл?—тесе мăшкăлласа ятлаçрĕ Чапаев, лешсем сутма пултарни çинчен систерсе, Хĕрлĕ Çар малалла хăвăрт çĕнтерсе пырассине юриех тытса чарма пултарни çинчен асăрхаттарса.

Пырасса чăн та хăвăртах пырайман çав. Чарăнкаласа, канкаласа, малалла çапăçма хатĕрленсе, вăйсене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçаркаласа пынипе — талăкра вăтамран пĕр сакăр е вунă çухрăм анчах малалла шунă; çак Чапаева çавтери тарăхтарса яракан цифрăсене шутласа кăларса аппаланакансем те тупăнатчĕç.

— Эпĕ ывăнман, ывăнман!—тесе шавлатчĕ вăл, чышкисемпе сĕтеле шаккаса.—Хам канма ыйтсан, ун чухне—давай, а халĕ малалла каяс пулать... Тăшман тарать, çавăнпа ăна хыçранах хăваласа пымалла, шыв хĕрринче канса ларни пĕртте килĕшмест,— тетчĕ.

— Ну, Василий Иваныч,— тетчĕç ăна,—эсĕ пĕр хăвăн дивизийӳ çинчен анчах калаçатăн... Тĕлĕнмелле çын эсĕ! Ара, ыттисем мĕнле? Тен, вĕсене мала иртнисемпе танлатмалла, улăштарса çĕнетмелле-и, тен,—пĕтĕм фрончĕпе кирлĕ ĕç тумалли сахал-и вара? Пĕр хăвăн дивизине анчах асра тытса тăрса, вăл мĕнпур ĕçе пĕр пĕчченех тума пултарать тесе шутлама юрамасть-çке ĕнтĕ...

— Гăваймасть-им ара?— тесе, куçĕсене йăлтăртаттарса илчĕ Чапаев.— Мĕнле пулăшу пулма пултартăр-ха мана ыттисенчен? Қам курнă мана кам та пулин ак çакăн чухлĕ те пулин пулăшнине?.. Қĕтсех тăр акă—пулăшĕç!.. Пĕр дивизипех Уфана илетĕп, ан кансĕрле çеç мана, пырса ан перĕн ман çума...

— Қам вăл — ан пырса перĕн?..

— Никам та пырса ан тӗкӗн. Эпӗ хамах тӑватӑп,— тесе тавӑрчӗ вӑл, кӑштах лӑпланса ӗнтӗ, хӑй ытлашши каласа тултарнине сиснӗ пек пулса...

Ҫакнашкал ятлаҫса хирӗҫнисем чылай пулкаласа иртрӗҫ. Мӗн Уфана ҫитиччченех, унӑн дивизийӗ ҫӗнтерӳ хыҫҫӑн ҫӗнтерӳ туса пычӗ пулин те, Чапаев вӑрҫӑ ӗҫӗпе кӑмӑллӑ пулмарӗ. Ӑна яланах хӑйне ирӗк сахал панӑ пек, унӑн пуҫарулӑхне ыттисем вӑрланӑ пек, вӑл каланине илтмен пек, шухӑшӗсене хисепе хуман пек туйӑнса тӑчӗ...

— Мӗн кураҫҫӗ вӗсем унта,— пӗр картӑ ҫеҫ вӗт?— тесе шавлатчӗ вӑл хӑй ҫыннисем хушшинче.— Ара, эпир картӑ ҫинче мар, ҫӗр ҫинче вӑрҫатпӑр-ҫке-ха... Ҫӗр ҫинче ҫапӑҫатпӑр эпир!—тесе, ытларан ытларах хӗрсе пыратчӗ Чапаев.—Эпир кунта пурне те пӗлетпӗр, пурне те хамӑрах куратпӑр... Ӗатартса тӑмалли ҫук пире, пулӑшу ҫеҫ парса тӑр!

— Ӗаллех апла мар, Василий Иваныч,—тесе, ӳкӗте кӗртетчӗ ӑна Ӗлычков.— Пур чаҫсен ӗҫӗсене те пӗрлештерсе, йӗркелесе, ҫыхӑнтарса пырас пулать.

— Пӗрлештер ара,— тесе калама памасӑр пӳлетчӗ ӑна Чапаев,—пӗрлештерме кам кансӗрлет сана? Мана ҫеҫ ан кансӗрле, тетӗп... Пӗтӗм вӑйпа чупса пымалла чухне, эпир, пӑх-ха—эккей епле праҫниксем уявласа тӑратпӑр Узень шывӗ хӗрринче...

— Мӗнле праҫниксем? Чарӑн, тархасшӑн!—тесе хирӗҫлетчӗ ӑна Федор.— Ҫитӗ, васканине пула халӗ те чылай инкек куркаларӑмӑр... Опыт вӗрентсе ҫитерчӗ, акӑ мӗн...

— Мӗн вӗрентрӗ — пӗр вырӑнта тӑма-и?— тесе, сиксех ӳкетчӗ Чапаев.— Шывсем хӗрринче канма-и? Ӗолчакӑн хӳри ҫеҫ вӗлкӗшсе пынӑ вӑхӑтра-и? Ну, апла эсир ун пек хӑвӑр ҫапӑҫӑр, ачам, эпир ун пек вӗренмен... Дивизисене улӑштарса аппаланаҫҫӗ; ара, унпа хӑтланмалли вӑхӑт-и халь?— тесе, тарӑхма чарӑнмарӗ вӑл.— Ара, салтак санран канма ыйтать-и мӗн, тархаслать-и мӗн?.. Пӑрахатӑп та акӑ пӗтӗмпех, каллех отрядпа командовать тӑва пуҫлатӑп... Унта луччӑ — мӗнле шухӑш тытатӑн, пурне те ху пӗлнӗ пек тӑватӑн, а кунта...—терӗ те вӑл, тарӑхнипе лачлаттарсах сурчӗ.

— Эсӗ улӑштарнине хирӗҫ-им,— тесе, шав ӳкӗте кӗртме тӑрӑшрӗ ӑна Ӗлычков,— тӗлӗнмелле санран! Ҫапла тума кирлӗ пулмалла ӗнтӗ, кирлӗ мар ҫӗртен туртса

каларман пуль çак улăштарас ĕçе... Тен, чăнахах та пĕтĕмпех ыванса, юрăхсăрланса çитнĕ пуль?..

— Э-э-эй...—тесе, аллипе сулчĕ Чапаев.—Никам та ыванман... Ĕнер мана пĕр красноармеец тĕл пулчĕ... Пĕчченех уксахлакаласа пырать вăрманта; пăхатăп та — хăйне йĕри-таврах бинтпа çыхса пĕтернĕ,— пĕчĕкскер, селедка пекех типшĕмскер. «Мĕн эсĕ, ăçта каятăн?»— тесе ыйтатăп.—«Ара, эпĕ хамăн чаçе каялла таврăнатăп»,—тет.—«Мĕншĕн уксахлатăн-ха тата?»—тетĕп.—«Амантрĕç»,—тет.—«Мĕншĕн врачсем патĕнче выртмастăн?»—тесе ыйтатăп.—«Вăхăт çук, юлташ, халь канмалли вăхăт мар, çапăçас пулать... Вĕлерсен акă, шăтăка кĕрсе выртăп та, унта нимĕн ĕç те пулмĕ,—сурансене юсăп вара унта», тет. Хăй кулать. Тинкерсех пăхса илтĕм эпĕ ун çине... Эккей, маттур та иккен, тесе шутлатăп. Алăран сехете вĕçертсе илтĕм те ăна паратăп. «Ме,—тетĕп,—çыхса çӳре, Чапаева асăн». Вăл тӳрех палласа илеймерĕ курăнать... Савăнса кайрĕ,—сехете çапах та илмест, шав аллипе çеç сулать... Кайран илчĕ... Эпĕ—хам еннелле уттартăм, вăл вара эпĕ курăнми пуличченех куçне илмесĕр пăхса тăрса юлчĕ... Акă епле вĕсем, ываннă тенисем... Кунашкал ываннисемпе эпĕ пур Колчаксене те пуçĕсене çапса салатăп,—терĕ.

— Тĕрĕс, ун пеккисем нумай,— тесе килĕшрĕ Федор.— Тен, нумайрахăшĕ те çавăн пеккисем, анчах çапах та вĕсем те ыванма пултараççĕ...

Анчах Чапаева ку тĕлĕшпе ӳкĕте кĕртме питех те йывăрччĕ. Кунта вăл хăй питех те хисеплекен Фрунзе юлташа асăнни те пулăшмарĕ.

— Приказсене Фрунзесĕр кăлармаççĕ-çке-ха? Пĕр генералсем анчах ала пусмаççĕ вĕт приказсем çине?

— Тен, вĕсем анчах пуль?— тесе, темле иккĕленерех, хуллентерех хирĕçлерĕ Чапаев.

— Мĕнле-ха апла?

— Çаплах... Пирĕн приказсене Колчак хамăртан малтан пĕлсе тăрать... Акă епле...

— Аçтан туртса кăларатăн эсĕ кун пек ăссăр сăмаха?—тесе тĕлĕнчĕ Федор.—Ну, пĕр-икĕ приказĕ, тен, чăнахах та Колчак аллине лекнĕ пуль; анчах ун пирки çапла вывод туса калама юрамасть-çке, Василий Иваныч,—тесе ӳкĕтлерĕ.

Анчах ӳкётлени ҫав-ҫавах усăсăр. Чапаев хăйĕннех печĕ: «штабсем» пирки ăна ниепле те урăхла шухăшлаттарма ҫук; вăл вĕсене мĕн виличченех шанмасăр пурăнчĕ...

Пĕрре ирпе ирех, чечекленсе ларакан вăрман витĕр Давлеканово енне каякан ҫулпа пычĕҫ... Тусем ҫине хăпара-хăпара анчĕҫ, тăп-тăрă шывсем урлă каҫрĕҫ, илемлĕ шăршă сарса ларакан ҫĕмĕртсем хушшипе юрттарса пычĕҫ. Ҫул ҫинче шăп, ҫап-ҫутă, сывлăшра ҫурхи ирĕн тутлă шăрши сарăлнă, вăрманта илемлĕ сасăсем илтĕнеҫҫĕ.

Ку вăрмантан тухсан—бригадăсем тăрăх, полксем тăрăх каймалла; таса мар, пыйтлă, ĕшенсе ҫитнĕ, ҫурма выҫă, ҫурма ҫарамас красноармеецсене ҫитсе курмалла... Уфа патне ҫывхарса пынăҫемĕн тăшман ҫарĕсем хытăран хытă хирĕҫ тăрса ҫапăҫаҫҫĕ. Қашни меллĕ вырăнтах, пуринчен ытла тусем ҫинче тытăнса тăма тăрăшаҫҫĕ, пысăкрах вăй пухса пире хирĕҫ контратакăпа килеҫҫĕ. Обозсене тытса илме памаҫҫĕ—вĕсене малтанах хыҫалалла ăсатаҫҫĕ, пысăк отрядсемпе сыхласа пыраҫҫĕ; хăйсен пурлăхне Хĕрлĕ Ҫара парса пулăшасшăн мар курăнать!

Малалла кайма кунран-кун йывăрланнăҫемĕн йывăрланса пырать. Шпионла ĕҫпе хăтланакансем нумайăн палăрчĕ: хамăрăн хăш-пĕр разведчиксем те, кулаксем те Қолчак майлă ĕҫлетчĕҫ, чылай чухне ҫак ĕҫпе тутарсем хăтланатчĕҫ; большевиксем ҫинчен вĕсене тĕрлĕрен суя элек кала-кала хăратнипе, сăмахран, большевиксем вĕсен аллахне туртса илсе, мечечĕсене ҫĕмĕрсе тăкма килеҫҫĕ, тесе улталанипе вĕсене хĕрлисене хирĕҫ тăратса пĕтернĕччĕ... Хăш-пĕр тутар ялĕсенче яла пырса кĕрекен хĕрлĕ полксене чӳречесенчен пени те пулкалатчĕ. Ялти тутарсемех, пĕр-пĕр пуян тавражĕ мар, чăн-чăн чухăнсемех перетчĕҫ. Тытатчĕҫ вĕсене... Мĕн тăватчĕҫ-ха вĕсемпе? Тĕрлĕрен май йышăнатчĕҫ. Хăш-пĕрисене вырăнтах пере-пере пăрахатчĕҫ, вăрçă ытла ачашланса тăнине юратмасть. Тепĕрне «калаҫса пăхма» хамăрăн тутар-красноармеецсен аллине паратчĕҫ. Лешсем вара хăйсен таван ҫыннине кĕске вăхăтрах хăйсем мĕншĕн кĕрешни ҫинчен ăнлантарса паратчĕҫ те, хăш-пĕрисем ҫапла калаҫнă хыҫҫăн хăйсен ирĕкĕпех Хĕрлĕ Ҫара доброволец пулса кĕни те пулкалатчĕ...

Шпионсене час-часах тытатчĕç.

Давлекановăра красноармеецсем Федора — полкри обозра темле хĕре, çул çинче тытнăскере, лартса пыни çинчен пĕлтерчĕç; вăл хĕр хăйне Уфа сывăхнерех илсе пыма ыйтнă пулнă, хулана Хĕрлĕ Çарпа пĕрле кĕресшĕн пулнă,—Уфара унăн амăшĕ, йăмăкĕсем, тăванĕсем пур, тесе каланă.

—Ман пата илсе килĕр-ха ăна,—тесе распоряжени пачĕ Клычков.

Хĕре илсе пычĕç. Пĕр вунтăхăр çулхискер... уксахлать хăй... Нумаях пулмасть гимназирен вĕренсе тухнă... Начар тумланнă... Уфа çинчен нумай калаçать... Унта часрах çитесшĕн çунать... Ĕненмелле марри нимех те çук пек. Анчах Клычков темĕншĕн нимĕнле сăлтавсăрах, нимĕнле фактсăрах, инстинкчĕпех лайăхах мар япала пуррине сисрĕ. Тĕпчесе пăхма шухăш тытрĕ.

«Йăнăшсан та, ытлашшиех мĕн пулĕ? Калле яратăп та—ĕçĕ те пĕтрĕ!» тесе шутларĕ вăл.

Унпа вăл чылай вăхăт хушши тĕрлĕ вак-тĕвек çинчен калаçрĕ-калаçрĕ те, кĕтмен çĕртен тӳрех:

— Эсир аманни чылай пулать-и?—тесе ыйтрĕ.

— Чылай... Эй, мĕн тетĕп ара... Çук... Эпĕ аманнине эсир ăçтан пĕлетĕр?—тесе, хыпăнса ӳкрĕ хĕр.

— Уксахлатăр-çке,—терĕ çирĕп сасăпа Федор, куçĕнчен тинкерсе пăхса.

Вăл хĕре çапла хăйне май ыйтса тĕпченине Тралин юлташ—арми политпайĕн начальникĕ—юнашар, пĕр шарламасăр, сăнаса пăхса ларчĕ.

— Çапла çав... тĕрĕс...—нимĕн калама пĕлмесĕр сăмахĕ пӳлĕнчĕ хĕрĕн.— Ура... аманнă çав... анчах тахçанах ĕнтĕ... питĕ нумай пулать,—терĕ хĕр.

Федор ыйтусене хăвăрт та пĕр тăтăшах парса пырса, хирĕç епле тавăрса каламаллине нумай шухăшласа тăма памасăр тĕпчемеллине лайăх пĕлсе çитнĕччĕ.

— Ăçта аманнă эсир, хăçан?— тесе ыйтрĕ.

— Штаба хут леçме кайсассăн...

— Çапăçу çывăхраччĕ-и?

— Çывăхраччĕ çав...

— Вĕсем патĕнче разведкăра ĕçлеттĕрччĕ-и?

— Çук, ĕçлемен, машинистка пулнă.

— Суятăр, суятăр!—сасартăк кăшкăрса пăрахрĕ вăл.— Ака мĕн, эпĕ пĕтĕмпех пĕлетĕп. Ăнлантăр-и? Пĕтĕмпех!

Эпĕ паллатăп сире, пирĕн разведчиксем мана сирĕн çинчен пĕтĕмпех каласа кăтартрĕç. Парăр-ха мана хăвăрăн удостоверенине, часрах... Ак çакăн йышши хут çине çырнăскере—пĕлетĕр вĕт?

— Мĕнле хут çине?—хăраса ыйтрĕ хĕр.

— Ара çӳп-çӳхескер çине... Пĕлетĕр вĕт, пирус хучĕ йышши çине? Ну-ну-ну, парăр часрах. Пирĕн разведчиксем ăна сире епле çырса панине пĕлеççĕ. Хăвăртрах ĕнтĕ, часрах!..

Федор хĕр çине питĕ тинкерсе пăхрĕ те, малалла мĕнле пулса тăнинчен хăй те тĕлĕнсе кайрĕ. Хĕр, хут çинчен илтсен, ним тума пĕлмесĕр, пĕтĕмпех хыпăнса ӳкрĕ... Пурте пĕлеççĕ: разведчиксене удостоверенисем пит çӳхе те пĕчĕк çеç хут татăкĕ çине çырса параççĕ; вĕсем вара çак удостоверение тумтир çĕвви хушшине, е атă кĕлинчи пĕр-пĕр çурăк ăшне, е хăлха шăтăкне — пĕр сăмахпа каласан, ăçта май килнĕ унта чиксе пытараççĕ...

Хĕр мундштук туртса кăларчĕ те, ăна виçĕ хут пăрса уçса, мундштукран хĕррине çыпăçса ларнă хут татăкĕ туртса кăларчĕ. Хут çине хĕрĕн хушаматне, ятне, ашшĕ ятне çырнă пулнă...

Ĕç калама çук ăнăçлă пулса тухрĕ...

Çакăн хыççăн ăна официальнăй йĕркепе ыйтса тĕпчерĕç: малтан дивизире, каярахпа—арми штабĕнче. Çав вăхăтра штаба Фрунзе юлташ килнĕччĕ; вăл та хĕре ыйтса тĕпчерĕ. Хĕр нумай паха япала çинчен каласа пĕлтерчĕ, ытти хыпарсемпе пĕрле вăл хĕрлĕ разведчиксенчен хăшĕ-пĕри пĕр вăхăтрах шуррисен разведкинче те ĕçлени çинчен каласа кăтартрĕ. Çапла икĕпитленсе ĕçлекенсене часах пĕтерчĕç вара. Нумай материал пачĕ вăл, ĕçшĕн питĕ усăллă пулчĕ...

* * *

Полксем Чишма еннелле пычĕç. Çакнашкал паха пункта шуррисем йӳнех парас çукки уççăнах паллă пулчĕ: кунта икĕ чугунçул юппи кĕтес туса пĕрлешеççĕ — пĕри Самарăпа Златоуст хушшинчи çул, тепри Волго-Бугульмински çул. Станцие çитесси вунă çухрăм ытла юлнăччĕ-ха, анчах çакăнтанах ĕнтĕ тарăн, тикĕс чавса хатĕрленĕ окопсем тытăнса каяççĕ; окопсене блиндажсемпе, вар еннелле вăрттăн анса çӳремелли сукмаксемпе, ту хыçне çаврăнса тухмалли çулсемпе çирĕплетсе пĕтерчĕ. Вăрмансене каса-каса тăкса, çаралса юлнă уçланкă-

сене юланутлă çарсем вырнаçтарса тăратма хатĕрлесе хăварнă; хирсене урлă-пирлĕ йĕплĕ пралукпа каркаласа пĕтернĕ... Кунашкал япаласене хĕрлĕ чаçсем Бугуруслан çывăхĕнче те, Белебей патĕнче те тĕл пулманччĕ; уйрăмах кунашкал пит тĕплĕн туса çирĕплетнĕ окопсене тахçанах курманччĕ ĕнтĕ. Тăшман пĕтĕм вăйне хурса хатĕрленнине уççăнах курăнчĕ.

Чишма çине Елань бригади—разинецсем, пугачĕвецсем, домашанецсем—наступлени туса пычĕç. Юлашки çухрăмсене вăйлăран вăйлă çапăçса пымалла пулчĕ.

Чишма патне çывхарнăçемĕн çапăçусем хĕрÿллĕрех, хăватлăрах пулса пычĕç. Хĕрлисен атакине шуррисем чара-чара лартатчĕç, тăшман хăй темиçе хут та контратака туса хÿтĕленме тăрăшрĕ.

Анчах вĕсем çапăçнинче çапах та—часах вĕсен пурпĕрех парăнмалла пуласси сисĕнсе тăчĕ; чи хаярланса атакăланисенче те вĕсен хăйсем çĕнтерессе шанни, хăйсен вăйне ĕненни, малалла наступлени туса пыма кăмăл пурри пĕртте курăнмарĕ. Тăшман хăйне тапăннинчен çеç хÿтĕласшăн пек пулчĕ, хăй çĕнтерес тесе шутламарĕ те.

Колчак ĕçĕсем йĕркеллĕ марри куçкĕретех курăнса тăчĕ. Дисциплина офицерсем хушшинче те пĕтĕмпех япăхланнă,— чылай телеграмма тăрăх приказсене пурнăça кĕртменни çинчен, итлеменни çинчен вуласа пĕлме пулатчĕ. Салтаксен чун-хавалне çĕклес шутпа аслă офицерсем усă кÿрес тĕлĕшрен иккĕлентерекен мерăсем йышăнатчĕç: Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсене хăйсен çĕнтерĕвĕ шутне кĕртсе кăтартатчĕç, приказсемпе листовкăсенче «хăйсен» тесе сахалтан та ĕнтĕ пĕр эрне хушши хĕрлĕ ялав вĕлкĕшсе тăракан пунктсемпе ялсене кăтартса паратчĕç. Çарсем, паллах, çакăн çинчен часах пĕлетчĕç те тĕрĕс хыпарсене те ĕненми пулатчĕç.

Пĕр сăмахпа каласан, Колчак çарĕ йĕркерен тухса, арканса пыни ним иккĕленмелле мар уççăн курăнса тăчĕ. Тăшман çарĕ çапла арканса пырассине хĕрлĕ çарсем вăйлăн пулăшма тăрăшрĕç. Шуррисен тылне лавĕ-лавĕпех агитациллĕ литература турттарса кĕртсе салататчĕç; вырăнти халăх урлă та, аэроплансем çинчен пăрахса та, хăйсем ятарласа янă çынсемпе те—темиçе миллионшар воззвани, чĕнсе калакан çырусем салатса тăратчĕç. Хĕрлĕ агитаторсем тăшман тăракан тĕп вырăнсене çитсе, салтаксен чи сарлака массисем хушшине кĕрсе, унта пĕр

хăрамасăрах, пĕр иккĕленмесĕрех хăйсен паттăр ĕçне тăватчĕç.

Анчах пурĕпĕр, хăть те мĕн пулсан та, çапăçусем хăш-пĕр вăхăтсенче çав тери вăйлăн, хаяррăн пулса иртетчĕç; ун пек чухне вара шурă çар саланса пырать тесе шутлани те, çакна ĕненни те тĕрĕс мар пек туйăнма пуçлатчĕ. Çак хаяр çапăçусенче шуррисен чи тĕреклĕ полкĕсем вăрçатчĕç: пĕтĕмĕшпе илсен, вĕсем йышлах марччĕ, анчах пит ăста çапăçатчĕç, техники те вĕсен калама çук вăйлăччĕ. Чишма çывăхĕнче çапăçу çав тери вăйлă пулса иртрĕ; хĕрлĕ полксенчи хăш-пĕр ротăсенче пĕтĕмпе те вăтăр-хĕрĕхшер çын анчах тăрса юлчĕ. Калама çук хастаррăн, хăрушшăн, хăйсене шеллемесĕр çапăçрĕç! Бронепоездсем çине гранатăсемпе ыткăнатчĕç, пĕтĕм чугун çул йĕрне çын вилли сапаласа тултарчĕç, хăрушă поезд хыççăн «урра» кăшкăра-кăшкăра чупатчĕç, бутылка евĕрлĕ шурă гранатăсемпе пÿскелле вылянă пек ывăтса перкелешрĕç. Броневиксем курăнсан вара, броневик «выртакана тивмест» тенĕ пек, цепьри боецсем çĕре ÿпне выртатчĕç те, пуçĕсене те çĕклеместчĕç; çавăн пек туса çеç çăлăнса юлатчĕç... Вăл вара цепьсем урлă каçса, тылра çаврăнкаласа, персе çÿретчĕ; анчах пурĕпĕр нимĕн усси те çукчĕ; тарнă чух вара ун хыççăн та бронепоезд хыççăн чупнă пекех чупатчĕç, ăна та бутылка евĕрлĕ гранатăсемпе ывăтса перетчĕç.

Паттăрлăх ăссăрлăхпа пĕрле çыхăнса пыратчĕ: броневиксемпе бронепоездсем çинчен пулеметсемпе пенипе Чишма таврашĕнче сахал мар красноармеец пĕтрĕ.

Кунта та, ытти çĕрти пекех, çапăçу пĕтнĕ хыççăн тепĕр çирĕм минутранах, уй-хирсенче тар тĕтĕмĕ сарăлса пĕтичченех, сывлăшра суранланнă тăшмансем те, юлташсем те пĕр чарăнмасăрах йынăшса кăшкăрнă сасă илтĕнсе тăнă чухнех, Чишма часах çакăн пек чухнехи яланхи пурнăçпа пурăна пуçларĕ. Подвалсемпе нÿхрепсенчен, арпалăхсемпе чăлансенчен, кăмака хыçĕнчен те, айĕнчен те, сакайсемпе мачча тăррисенчен—пур çĕртен те, пăшал пенинчен хăранипе тарса пытаннă хресченсем йăралана-йăралана тухрĕç, ĕшеннĕ красноармеецсем тавра тускаласа чăрманма тытăнчĕç.

Хĕрарăмсем витресемпе кĕмсĕртетме тапратрĕç, сăмаварсене чашкăртаттарма пикенчĕç, чашкăсемпе кашăксем шăкăртатма, чÿлмексемпе апат хатĕрлеме тытăнчĕç.

Пӳртсенче тӗрлӗрен калаҫу-пуплешӳ тапранса кайрӗ. Кама мӗнле пурӑнма тивнине, кам мӗн курнине, мӗн илтнине, камӑн мӗн тӳсмелле пулнине, мӗн кӗтнине, мӗне кӗтсе илнине аса илме пуҫларӗҫ... Кӑшт апат ҫырткаласа, чей ӗҫсен вара, тӗлӗ-тӗлӗпе выляса кулни илтӗне пуҫларӗ; кунта яш-кӗрӗм ҫапӑҫу хыҫҫӑн мар, пӗр-пӗр чаплӑ престол праҫник уявне савӑнса ирттерме пур ялсенчен те пухӑнса тулнӑ тесех шутламалла пулчӗ...

Каҫхине Стенька Разин полкӗнче хорпа юрлама пухӑнчӗҫ. Юрлакансем пӗр ҫирӗм пилӗк ҫынччӗ, нумайӑшӗн сассисем те ытарма ҫук аванччӗ; анчах инкек вӗт,—ҫапӑҫу та ҫапӑҫу, поход хыҫҫӑн поход,—пӗрле килӗштерсе юрлама вӑхӑт та ҫук! Хӑйсен вара ҫав тери юрласси килетчӗ, кашнийчех кӑшт та пулин канма чарӑнмассерен вӗсем никам чӗнмесӗрех, хӑйсем тӗллӗнех хӑйсен юратса хисепленӗ дирижӗрӗ тавра пӗр ушкӑн пухӑнатчӗҫ те... юрлама тытӑнатчӗҫ. Юрлама юратакансем тавра итлеме юратакансем те пуҫтарӑнатчӗҫ, юлашкинчен вара ҫур полк таранах пухӑнса ҫитетчӗ... Кун пек чухне вара пӗчӗк ушкӑнпа юрлама май килместчӗ, ҫавӑнпа пурте пӗлекен юрра тапратса яратчӗҫ те, пӗтӗм полк пӗр харӑс юрлама тытӑнатчӗ... Тӗрлӗрен юрӑ юрлатчӗҫ, анчах чи юратаканнисем Стенька Разинпа Ермак Тимофеевич ҫинчен калаканнисемччӗ. Савӑнӑҫлӑ юрӑсемпе ташӑ кӗввисем те пурччӗ. Мӗнле те пулин ҫинҫе сасӑ, куҫӗсене чеен хӗскелесе илсе, пит ҫӳлӗ, ҫинҫе сасӑпа тапратса яратчӗ:

Уж ты, Дунюшка-Дуня!
Уж ты, Дунюшка-Дуня...

Хор вара вӑйлӑ, хулӑн сассипе ярса илетчӗ:

Ах ты, Дуня-Дуня-Дуня,
Дуня, Дунюшка, Дуняша!..

Юрӑ ҫемми май алӑ ҫупатчӗҫ, атӑ кӗлисемпе тапса тӑпӑртататчӗҫ; анчах ку малтанлӑха «пӗр вырӑнта чупнӑ» пек ҫеҫ туйӑнатчӗ-ха. Иккӗмӗш ҫаврӑмне юрланӑ чухне вара урӑх тӳссе тӑраймастчӗҫ.

Ах ты, Дуня-Дуня-Дуня...

тесе ярсанах, ушкӑн варрине таҫтан кӗтмен ҫӗртен харӑсах икӗ ташӑ ӑсти сиксе тухаҫҫӗ те, яра параҫҫӗ...

Çиччĕмĕш тар тухиччене́х, пуçĕсем çаврăннипе кайса ӳкичченех ташлатчĕç вара... Пĕрин хыççăн тепри, пĕрин хыççăн тепри...

Юрлани çитмест—купăс сиксе тухатчĕ... Ташăпа купăс хора час-часах çĕнтеретчĕ; анчах ку пуринчен ытла юрласа ывăннинчен, автансем пекех сассăрланса ларнинчен килетчĕ...

Пуринчен те ăстарах, харсăртарах полкри «интеллигенци» ташлатчĕ — ут апачĕ хатĕрлекен фуражирсем, каптĕрсем, канцеляринче ĕçлекенсем... Анчах батальонсемпе рота командирĕсем те вĕсенчен юлсах каймастчĕç — вĕсем те вăйлă ташлатчĕç!

Час-часах ылмашса хăтланатчĕç: юрлатчĕç-юрлатчĕç те, ывăнса çитсен — ташлама пикенетчĕç. Ташласа халтан каяççĕ те, кăштах сывлăш çавăрсан, каллех юрра тытăнаççĕ,— çапла вара пырĕсемпе урисен мĕн халĕ çитнĕ таранах хăтланса савăнатчĕç.

Юлашки уйăхсенче икĕ çĕнĕ юрра хăнăхса çитрĕç; вĕсенче пуринчен ытла хушса юрламаллисем кăмăла каятчĕç,— çав юрăсене калама çук хаваслăн, чуна çĕклентерсе юрлатчĕç. Кĕввисем кивĕччĕ, сăмахĕсем çĕнĕ. Малтанхи хушса юрламаллине киввинчен çапла май çĕнетсе юрлатчĕç:

> Так громче, музыка, играй победу,
> Мы победили, и враг бежит-бежит-бежит...
> Так за Совет Народных Комиссаров
> Мы грянем громкое ура-ура-ура!

Иккĕмĕш хушса юрламалли пĕтĕм Хĕрлĕ Çар çаçĕсене çитсе çаврăнчĕ.

> Смело мы в бой пойдем за власть Советов
> И, как один, умрем в борьбе за это...

Сăмахĕсем кунта нимех те пĕлтерместчĕç,— лайăх юрă пулса тăраймарĕ, анчах хушса юрламалли... Хушса юрламаллине вара тĕлĕнмелле лайăх юрлатчĕç.

— А ну, «вечная паматъ» юрлар,— тесе сĕнчĕ юлашкинчен такăшĕ халăх хушшинчен.

Юрлакансем пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç.

— Е чăнахах юрласа пăхар-и?

— Ара, мĕн тата юрламасăр...

— Пуçласа яраканне парăр кунта, пуçласа яраканне парăр!—тесе ахăрашаççĕ.

Халăх хушшинчен пĕр курпунтарах, шатрарах питкуçлă пысăк çын хĕсĕнкелесе тухрĕ. Ушкăн варрине кĕрсе тăчĕ те вăл, ытлашши калаçса-туса тăмасăрах, тем хулăнăш баспа:

— Благоденственное и мирное житие, здравие, спасение и во всем благое поспешение, на врага победу и одоление подаждь, господи!— тесе мĕкĕрсе ячĕ.

Вара чаранчĕ те вăл: «Ну, халĕ ĕнтĕ черет сирĕнте» тенĕ пек, йĕри-тавра пăхса илчĕ; кĕпĕрленсе тăракансем вара тархасласа ыйтнă сасăпа:

— Па-ар, ту-у-ура!—тесе, вăрăммăн найкăшса тăсрĕç.

— Пĕтĕм Российăри социализмлă Хĕрлĕ Çара, унăн çулпуçне Ленин юлташа,— тесе мĕкĕрчĕ вăл малалла,— 25-мĕш стрелковăй дивизири паттăр командирсемпе мĕнпур 218-мĕш Стенька Разин полкне—мно-о-огая ле-та!— терĕ.

Хор «многая лета» янратса ячĕ...

— ...Артиллеристсене, пулеметчиксене, бомбометчиксене, минометчиксене, аэропланпа вĕçекен летчиксене, разведчиксене, пехотинецсене, ординарецсене, кашеварсене, выльăх пусакансене тата мĕнпур обоза — мно-о-гая ле-е-та!

Вара çĕнĕрен пĕр харăс, савăнăçлăн, хăватлăн «многая лета» кĕрлесе кайрĕ.

Сăн-пичĕсем пурин те савăнăçлă кулнипе сарăлса кайнă; куçĕсем хаваслă, мăнкăмăллăн: «Ăçтан та пулин йышăнса илни мар ку — хамăр полкра шухăшласа кăларнă юрă!»— тенĕ пек туйăнать.

Юрă пуçлаканĕ тата мăнăрах та чуна çӳçентерекен сасăпа малалла тăсать:

— ...Ырă вилĕм çитерсе ĕмĕрлĕх канăç парсам, эй турă: Çĕпĕрти аслă правителе, мĕнпур ĕç çыннисене тертлентерекене, его высокопревосходительство шурă адмирал Колчака, тата унăн мĕнпур турă упраса пурăнакан кĕтӳне — иезуит-митрополитсене, ултавçă архиепископсемпе епископсене, ун бандичĕсене, шпионĕсемпе агенчĕсене, чиновникĕсене, ылтăн погонлисене, унăн ытти мĕнпур тарçисене, шурă Колчак чĕпписене, ултавпа лекнĕ ачасене, вĕсем хыççăн сĕтĕрĕнсе пыракан господа чехословаксене, çавсене пурне те, пурне те пĕрле... в-е-ч-ная п-а-мять!..

Темле сăмса айĕн мĕкĕрсе, вилнĕ çынна пытарнă чухнехи пек, юри салхуллăн юрласа ячĕç. Сăмсана чăнах

виле шăрши килсе çапнă пек, пĕтĕм кăмăл пăтранса кайрĕ...

— ...Мĕнпур контрреволюционерсене,— тесе хупласа лартрĕ юрлакансен сассине юрă пуçлаканĕ,— империалистсене, капиталистсене, тĕрлĕрен шурă социалистсене, карьеристсене, монархистсене, ытти пур тĕрлĕ авантюристсене, сутăнчăксене, ултавçăсене, спекулянтсемпе саботажниксене, мародерсемпе дезертирсене, мăн хырăмлă банкирсене,— мĕнпур çавнашкал сволоче иртен пуçласа çĕрлечченех ве-е-еч-ная па-амять!

Хор, унпа пĕрле кунта тăракан красноармеецсем те пурте пĕр харăс «вечная память» тăсса ячĕç.

Юрласа пĕтерсен, пурте пĕр самантлăха, такшин килсе мухтасса кĕтнĕ пек, пĕр шарламасăр, пĕр хускалмасăр тăчĕç... Çак акафист евĕрлĕ юрăпа полкра питех те мухтанатчĕç, ăна питех те юратса итлетчĕç, хăш-пĕр чухне ăна умлă-хыçлăнах виçĕ-тăватă хут та юрлатчĕç.

Юрăсемпе, ташăсемпе сĕм-çĕрлечченех айкашса ирттерчĕç; ирхине ирех вара, кăшт тул çутăлсанах — похода тухса каймалла! Çĕрĕпех куç хупманни вăл нимĕн те мар: пĕрре хăнăхнă урасем хăвăрт та çăмăл утаççĕ.

Чишмана ăна Уфана уçса кĕмелли çăраççи вырăнне шутлатчĕç. Халĕ ĕнтĕ çул тасалса уçăлчĕ. Тăшман ĕнтĕ халь, Шурă Атăлăн[1] леш енне каçса, çавăнта çирĕпленсе тăрасси уççăнах курăнса тăчĕ.

Хĕрлĕ Çар чакса пыракан Колчак çарне тата хăвăртрах, тата çине тăрарах хăваласа кайрĕ.

— Халĕ ĕнтĕ Уфа пирĕн алăра, сылтăм енĕ ан улталатăрччĕ çеç пире!—тетчĕ Чапаев.

Çакна вăл сылтăм флангра пыракан дивизисене асра тытса калатчĕ.

— Мĕншĕн капла эсĕ пĕр иккĕленмесĕр калатăнха?— тесе ыйтатчĕç унран.

— Мĕншĕн тесен унăн, Колчакăн, урăх нимĕнрен те çакланса тăмалли çук, пĕр чăрмавсăрах кусса каять ĕнтĕ вăл Çĕпĕрелле,— тесе тавăратчĕ Чапаев.

— Ара, эпир çакланса тăма пултартăмăр-çке акă Самара патĕнче,— тесе хирĕçлетчĕç Чапаева.— Унччен çеç епле тараттăмăрччĕ, астăватăн-и?—тетчĕç.

— Çакланса тăтăмăр çав... Мĕн-ха вара?—тесе килĕшетчĕ вăл, анчах çакна мĕнле ăнланмаллине пĕлместчĕ.

---

[1] Уфа Шурă Атăл çинче, вырăсла Белая шывĕ çинче ларать. (Ред.).

Нимĕн кала пĕлмесĕр вăтанкаласа тăратчĕ, шухăшласа пĕлме тăрăшатчĕ, анчах пурĕпĕрех ăнлантарса пама пултараймастчĕ. Вара пĕррехинче вăл çапла ответлерĕ:

— Эпир çакланса юлни нимех те мар... а вăл пурĕпĕр çакланса юлаймасть... Уфана илетпĕрех,—тесе хучĕ.

Эпир çĕнтерессине çапла нумайăшĕ, пуринчен ытла рядовой красноармеецсем хытă ĕненетчĕç.

Полксенче мĕнле те пулин майпа малашнехи çапăçусемпе çывăхри ĕмĕтсем çинчен сӳтсе явнă чухне, яланах пĕр хисеппе — кунсемпе те сехетсемпе шутласа хисеплетчĕç. Чĕрĕ вăйсем çинчен, тăшманăн техники çинчен, вĕсем вăрçă ĕçне епле хатĕрленсе çитни çинчен, хирĕç мĕн тери вăйлă тăма пултарни çинчен нихçан та калаçса тăмастчĕç. Çапла çеç:

«Ытларикун ирхине ак çак ялта пулатпăр,— тесе калаçатчĕç;—каç еннелле вара çак шыв хĕррине çитетпĕр,— тетчĕç.—Кĕпере сирпĕнтерсе çĕмĕрмен пулсан, каçах шывăн леш енне те каçса ӳкетпĕр... Сирпĕнтерсе янă пулсан,— ирччен каçасси пулас çук... Юнкун каçхине ак çак станцирен иртсе каятпăр, кĕçнерникун вара...» т. ыт. те, т. ыт. те.

Вĕсем, хăйсем умĕнче тăшман пулман пекех, поход йĕркипе пынă чухнехи пек: хăçан ăçта пулмаллине кунсемпе сехет тăрăх тĕп-тĕрĕс палăртса хурса калаçатчĕç.

Çапла малтанах шутласа хунă чухне йăнăшни сахал пулкалатчĕ — яланах палăртса хунă вăхăтран маларах пырса çитетчĕç. Уфана хăйне те палăртса хунă кунран малтантарах илнĕччĕ.

Малалла пысăк хăвăртлăхпа пыни хăш-пĕр чухне тĕлĕнтерсех яратчĕ. Красноармеецсен чăтăмлăхĕнчен те питĕ тĕлĕнмеллеччĕ. Красноармеецсем нимĕнле чăрмава та пĕлместчĕç, хăйсене кам та пулин тытса чарма пултарасси çинчен шухăша та илместчĕç. Чишма таврашĕнче бронепоездсем çине бомбăсемпе тапăнса çапăçни красноармеецсене чăнах та чăрмав туса чарма йывăр пулнине уççăнах кăтартса пачĕ. Халĕ ĕнтĕ Чишмари çапăçушăн панă наградăсем килсе çитрĕç.

Вĕсене полксем тăрăх валеçсе памалла пулчĕ.

Анчах кунта тĕлĕнмелле япала пулса тăчĕ. Пĕр чи паттăр полк, Чишмана илнĕ чух питех те хастар çапăçнăскер, наградăсене йышăнмарĕ. Награда пама палăртса хунă красноармеецсемпе командирсем çапла каларĕç:

«Эпир пурте, пĕтĕм полкĕпе пĕр пек харсăр çапăçса, Совет республикине пĕр пек таса кăмăлпа хӳтĕлерĕмĕр; пирĕн хушăмăрта пĕр усал çын та, лайăххи те çук; хăравçăсем пушшех те çук, мĕншĕн тесен вĕсене эпир хамăрах пĕтерсе хунă пулăттăмăр, терĕç. Пире нимĕнле наградă та кирлĕ мар, хамăр полкра эпир пурте пĕр тан пулса юласшăн», терĕç.

Вăл вăхăтсенче çакнашкал ĕçсем час-часах пулкалатчĕç; ун чухнехи харсăрлăхран, çынсем пĕтĕм чун хавалĕпе савăнса çĕкленнинчен тĕлĕнмеллипех тĕлĕнмелле пулатчĕ!

Ĕç çине çынсем ытла та просто, тӳррĕн, нимĕне хапсăнмасăр пăхатчĕç.

«Манăн мĕншĕн чи малти пулмалла-ха? Ан тив эпĕ пуринпе те пĕр тан пулам. Манăн кӳршĕ мĕн тĕлĕшĕнчен манран начартарах, хăш енчен манран лайăхрах-ха? Вăл начартарах пулсан—атьăр ăна тӳрлетер, лайăхрах пулсан — мана тӳрлетĕр, пĕтĕм ĕçĕ те çавă çеç», тетчĕç.

Пугачев полкĕнче 1918 çултах-ха пĕр виççĕр çынна яхăн боецсем хăйне евĕрлĕ «коммуна» тунăччĕ. Вĕсен нимĕнле япала та хăйсен уйрăммăн çукчĕ: пĕтĕм пурлăхĕ — тумтирĕ-мĕнĕ, атă-пушмакĕ — пурин те пĕрле тесе шутланатчĕ; кашниех хăйне халĕ мĕн кирлĕрех, çавна тăхăнатчĕç... Шалу укçине те, килтен илекен пур япалана та пĕтĕмпех пĕр хурана паратчĕç... Çапăçусенче вара çак ушкăн уйрăмах пĕтĕçӳллĕччĕ, уйрăмах çирĕпчĕ... Халиччен ĕнтĕ, паллах, вĕсене пурне те вĕлерсе е амантса пĕтернĕ, мĕншĕн тесен вĕсен паттăрлăхĕ калама çук вĕçĕмсĕр пысăкчĕ.

Полк наградăсене йышăнманни вăл — çынсене пахалăх тĕлĕшĕнчен уйăрассине юратманнине чи уççăн кăтартакан паллă çеç пулчĕ; ку тĕлĕшрен çак ĕç — пĕтĕм дивизишĕн, вăл шутра командирсемпе политработниксемшĕн те, пысăккисемшĕн те, пĕчĕккисемшĕн те — питĕ характерлă пулчĕ.

* * *

Елань бригади Чишмана пит хăвăрт пырса çапнипе илчĕ; чăннипе ăна илме Потапов бригадине хушăччĕ. Потапов хăйĕн полкĕсемпе Лели-Куль кӳлли çумĕпе, Дĕма шывĕ тăрăх тăвалла çĕмĕрсе хăпаратчĕ; Чишмана илнĕ чухне вăл хуларан инçех те марччĕ.

Фронтра час-часах çапла пулкалать: пĕри тумалли

ĕçе тепри ăнăçлăн туни те пĕтĕм ĕçе питĕ пысăк сиен кӳме пултарать. Пĕр-пĕр командир, тăшмана сасартăк, кĕтмен çĕртен пырса çапас тесе, хăйĕн кӳршине хушса панă задачăна хăех туса хурса, ытлашши шала кĕрсе каять те, хăйĕн çĕнтерĕвĕпе пĕтĕм картăсене пăтраштарса ярать. Унашкал çĕнтерӳ пулнинчен пулманни лайăхрах! Çĕнтерӳ яланах лайăх, ăнăçлă ĕç туни пулмасть, тепĕр чухне çĕнтерӳрен начар ĕç те пулса тухма пултарать.

Қалăпăр, тăшмана икĕ енчен те çавăрса илсе, пĕтĕмпех пĕтерсе лартма шутласа хунă чухне, пĕр-пĕр харсăр пуç çав тăшмана сасартăк çамкинчен пырса çапать те, хăратса тартать; пĕтĕм ĕç планне вара вăл пăтраштарса ярать те, хăйĕн вăхăтлăх «çĕнтерĕвĕпе» пысăкрах, лайăхрах ĕçе сиен кӳрсе хурать. Халĕ те акă, Елань Чишмана çĕмĕрттерсе кĕрсе кайнă хыççăн çаплах пулма пултаратчĕ, мĕншĕн тесен ун хыçĕнче, Дёма шывĕ хĕрринче, тăшман полкĕсем тăрса юлнăччĕ. Вĕсем Елане, Потапов хăйĕн бригадипе вăхăтра килсе çитмен пулсан, чылаях çĕмĕрсе сиен тума пултаратчĕç. Пĕр-пĕрне пулăшасси Чапаев дивизийĕнче питех те паха вырăнта тăратчĕ, кашни полк тепĕрне хăвăрт та çине тăрса пулăшатчĕ.

Анчах яланах тата пур çĕрте те ун пек пулмастчĕ, урăхла ĕçсем те пулкалатчĕç. Çак вара яланах пысăк сиен кӳретчĕ.

Потапов, ĕçсем çапла тăнине чухласа пĕлсенех, çийĕнчех тăшмана хирĕç çапăçма тытăнчĕ те, тăшмана хăйенне çавăрса, пĕрехмай шыв хĕрринелле хĕснĕçем хĕссе пычĕ. Тупăсенчен çав тери вăйлă пенĕ пирки, виçĕ туппи пăчăх та çĕмĕрĕлсе кайнăччĕ. Тăшмана вара Дёма шывĕлеш енне хăваласа ячĕç. Шыв урлă каçнă чухне тăшман кĕпере те çĕмĕрсе хăварчĕ; хăй тепĕр хут таврăнасса ĕмĕтленмерĕ курăнать; пуçне çухатсах Шурă Атăл еннелле тарчĕ. Кунта нумаях чăрăнса тăнă вырăнсем пулмарĕç вара,— Чишма вăл Колчак полкĕсемшĕн Уфаччен çирĕп тытăнса тăрас тесе шухăшланă юлашки вырăн пулчĕ; малалла вара вĕсен шухăш-кăмăлĕ пĕтĕмпех пăтранса кайрĕ курăнать,— малалла вĕсем пĕрмаях чакса пычĕç, пысăк çапăçу туса ирттерме пĕрре те тăрăшмарĕç.

## XII. УФА.

Тăшман шывăн леш енне пăрахса тарчĕ; хăй хыççăн вăл мĕнпур каçăсене сирпĕнтерсе çĕмĕрсе хăварчĕ; шывăн Уфа енчи хĕрринче вара вăл тупăсемпе, пулеметсемпе тата хăйĕн дивизийĕсен, корпусĕсен штыкĕсемпе шăртланса тăчĕ. Уфа районĕнчен Колчак ниепле те тухса каясшăн пулмарĕ; Шурă Атăл шывĕн сылтăм хĕрринчен, йĕри-таврах персе тăма лайăх çӳлĕ вырăнтан, вăл Уфа çине пур енчен те наступлени туса пыракан хĕрлĕ дивизисене малалла кайма памĕ тесе те шутлама май пурччĕ.

Уфана йĕри-тавра хупăрласа илсе пырса кĕме шут тунăччĕ. Сылтăм флангри дивизисене тăшман çарĕсен хыçне, Архангельск завочĕ тĕлне тухма хушнăччĕ; анчах малалла пыма вĕсене питех те йывăр пулнă пирки, вĕсем, ытти дивизисем Шурă Атăл хĕрринех çывхарса çитнĕ вăхăта хăйсен пĕр салтакне те Шурă Атăл урлă каçарма ĕлкĕрейменччĕ.

Уфана хирĕç Чапаев дивизийĕ çитсе тăчĕ. Вăл хăйĕн сылтăм флангĕпе, Потапов бригадипе, шыв урлă тӳрех хулана каçса каймалли пит пысăк, çӳлĕ кĕпер тĕлне çитсе чарăнчĕ; сулахай фланг вара Шурă Атăл тăрăх пĕр çирĕм пилĕк çухрăм анатарахра ларакан Красный Яр ятлă пĕр пĕчĕк ял патне çитсе тухрĕ,— кунта Шмаринпа Елань бригадисем çитсе тăчĕç.

Красный Яр тĕлĕнчи чаçсем шыв урлă каçса, хула çине тапăнса пыма тытăнсан, Потапов бригадин вĕсене кĕпер урлă каçса пулăшмалла пулчĕ. Çак питех те пысăк чугун кĕпер вăл вăхăтра чиперех тăратчĕ-ха, анчах тăшман ăна пĕр тĕкĕнмесĕр хăварассине никам та ĕненместчĕ; кĕпер айне тăшман минăсем лартса тултарнă пулĕ, çавăнпа ун урлă каçма юрамасть, тесе шутлатчĕç. Çӳлĕ насыпь тăрăх пырса кĕрсе, кĕпер урлă каçса каякан чу-

тун çул рельсěсене тěллěн-тěллěн сÿтсе пăрахнăччě; кěпер варринче тěрлě çÿп-çаппа чул тиенě вагонсем тăратчěç. Шыв урлă каçмалли хатěрсем кунта пачах та çукчě-ха,— красноармеецсем кайран тин вара таçтан темиçе кимě тупкаласа килчěç, тата пěренесемпе хăмасем сěтěрсе килсе, вěсенчен пěчěк сулăсем çыхса хатěрлерěç.

Тěп вăйсемпе çапах та Красный Яр енчен пырса çапма шутласа хунăччě. Шурă Атăлăн тепěр хěррипе Вихорěн утлă çарě юрттарса кайрě. Çак вăхăтра Красный Яртан инçех мар Шурă Атăл тăрăх пěр буксир тата икě пысăках мар пароход нимěн пулман пекех лăпкăн ишсе пычěç. Пароход çинче ларса пыракан халăх тěрлěрен тěслěскерччě, пуринчен ытла, паллах, çар çыннисемччě; вěсем хушшинче пěр вăтăр çынна яхăн офицер пурччě. Çакнашкал вăхăтра пěр шикленмесěрех ишсе çÿренинчен ытла та тěлěнмеллеччě, пěртте ăнланмалла марччě ăна,— вěсем шыв хěрринчен килсе тапăнма пултарасси çинчен шухăшламан пекех е хěрлě полксем хăйсенчен çывăхрах пулнине пěлмен пекех туйăнатчě. Кавалеристсем пароход çинче погонлă «господасем» ларса пынине курсан, çăварěсене карса пăрахсах тěлěнсе кайрěç. Офицерсем те çийěнчех ăнланса илеймерěç,—хăйсен çарě тесе шутларěç курăнать.

— Стой! Чарăнăр! — тесе, кăшкăрса команда пачěç шыв хěрринчен.

— Мěн тума чарăнмалла? — тесе, кăшкăрса ыйтрěç çакна хирěç лерен.

— Чарăр пароходсене, пеме тытăнатпăр! Шыв хěрринелле çавăрăр!— тесе кăшкăрчěç кавалеристсем.

Анчах лере, ěç мěнле пулса тăнине ăнланса илчěç те, Васкарах ишсе тарма хăтланчěç, лачакасем тěлне çитсе ÿкме ěмěтленчěç; унта вара юланутлă çар çыран тăрăх пыраймě, тесе шутларěç вěсем... Кавалеристсем çакна асăрхасанах, хаяррăн:

— Чарăнăр, чарăнăр!!!— тесе кăшкăрма тытăнчěç.

Пароходсем чарăнмасăрах малалла ишрěç. Пароход палуби çинчен пирвайхи пăшал сасси кěрлесе кайрě. Юланутлă çар хирěç пеме пуçларě. Вăй тěлěшěнчен тан мар çапăçу тапранса кайрě. Пулемет турттарса пырса тăрăлтаттарма пикенчěç. Пароход çинчисем çухăрашма тытăнчěç; аялалла тарса анса, ăçта май пур унта пытанкаласа ларчěç. Пароходсем çыран хěррине çитсе чарăн-

чӗç. Офицерсем чӗррӗн парăнасшăн пулмарӗç — пурте тенӗ пекех перӗне-перӗне пӗтрӗç, нумайăшӗ шыва сикрӗç. Ку пароходсем вара хӗрлисемшӗн тем териех пысăк пуянлăх пулчӗç,—вӗсем хӗрлӗ полксене Шурă Атăл урлă каçнă чухне питех те пысăк усă кӳчӗç, хӗрлисемшӗн çак йывăр ыйтăва татса пама труках çăмăллатрӗç. Кирлӗ вăхăт çитиччен пароходсене пытарса хучӗç, хăйсен аллине çав тери хаклă япаласем лекни çинчен тăшмана пӗлтермерӗç.

Наступлени пуçланас умӗн икӗ кун малтан Фрунзе, Чапаев тата Федор автомобильпе килсе çитрӗç те, тӳрех командирсемпе комиссарсен канашлăвне пухрӗç; вӗсем хальхи вăхăтри лару-тăрури пур уйрăмлăхсене те палăртса, мӗн тума май пуррине пӗтӗмпех хисепе илме, хăйсен вăйӗсене, çӗнтермелли шанчăксене татах та тата темиçе хут шутласа тухма тытăнчӗç.

Фрунзе юлташăн пӗр уйрăмах паха енӗ пурччӗ, çак ăна чи пăтрашăнса пӗтнӗ, чи кăткăс ӗçсене те тӗплӗн сӳтсе явса, тӗпчесе тухма пулăшатчӗ: вăл интересӗсем çак ӗçпе çыхăннă юлташсене пурне те канашлăва пухатчӗ те, унта чи тӗп ыйтусене çивӗччӗн кăларса лартатчӗ, вак-тӗвек ыйтăва вăхăтлăха иккӗмӗш вырăна тăратса хăваратчӗ; пухăннă çынсене тӗрлӗ енчен хирӗçлеттерсе калаçтаратчӗ, ыйтусене тӗплӗн, тӗрӗс çултан пăрăнмасăр сӳтсе явтарттаратчӗ. Çапла калаçса пӗтернӗ хыççăн Фрунзен хăйӗн вара тӗрлӗ шухăшсене пӗр çӗре пухса хисепе илесси, кирлӗ выводсем тăвасси анчах юлатчӗ. Çак меслетпе ӗçлеме питӗ çăмăл пек, анчах хăшӗ-пӗрисем унпа усă курма пултараймаççӗ; Фрунзе хăй вара çак меслетпе питех те ăста усă курма пӗлетчӗ.

Халӗ Красный Ярта дивизи пуçлăхӗсем пухăннă чухне, çынсене хисеп енчен тата техникăна шута илнинчен пуçне,—хальхи вăхăт уйрăмах йывăррине асра тытса,— боецсен пахалăхне те тӗплӗн сăнаса пăхмалла пулчӗ. Ку ӗçе Иваново-Вознесенск рабочийӗсен полкӗ пуринчен те юрăхлăрах терӗç. Çапла вӗсене суйласа илни вăл ăнсăртран çеç пулмарӗ. Чăн та ӗнтӗ, Елань бригадинчи полксем çӗнтерӳллӗ çапăçса хăйсене ӗмӗр вилми чапа кăларнăччӗ, çапăçас тӗлӗшрен вӗсем чи малти вырăнсенчен пӗринче тăратчӗç; анчах **хальхи самантра** — питех те ăстанлăн кӗрешекен хӗрлӗ ткачсен полкне уйăрса илсе, чи хăрушă вырăна ăна ямалла пулчӗ, мӗншӗн тесен кунта пӗр

вĕçĕмсĕр харсăрлăхпа çеç çапăçни çителĕксĕр пулма пултаратчĕ.

Қанашлу пĕтрĕ. Лашасем çине утланса ларчĕç те, красноармеецсене леш енне каçарма шутласа хунă çĕре шыв хĕрринелле вĕçтерчĕç. Лашисене çур çухрăмра хăварчĕç те, хăйсем шыв хĕрринчи хăйăрсем тăрăх леш еннелле пăхкаласа, кĕç-вĕç пеме пуçлассине кĕтсе утрĕç. Анчах йĕри-таврах лăпкă. Пĕр сăрт çине хăпарса тăрса, шывăн леш хĕррине бинокльпе пăхса сăнама пуçларĕç, хăш тĕлтен каçмалли вырăна тĕплĕнрех суйласа палăртрĕç, каçас ĕçпе çыхăнса тăракан пур вак-тĕвек ыйтусене те тĕплĕн татса пачĕç те, каялла кайрĕç. Часах çак каçмалли вырăна икĕ пароход илсе пычĕç; виççĕмĕшĕ ăшăх вырăна кĕрсе ларнăччĕ. Топливо тиеме пуçларĕç, пароход çине кĕмелли вырăнсем хатĕрлеме тапратрĕç.

Вара тата тепĕр талăках тытăнса тăмалла пулчĕ. Çапăçу тапранас сехетсем çывхарсах çитсе пычĕç... Юлашкинчен çапла каласса татăлчĕç: шыв урлă Красный Яр тĕлĕнче каçас ĕçе Чапаев хăй йĕркелесе тăма пулчĕ, Федор вара Потапов бригади тăракан кĕпер патне кайма йышăнчĕ; ку ĕçе вăл хулана каçса кĕричченех ертсе пыма пулчĕ. Çапла каласса татăлчĕç те саланчĕç.

* * *

Красный Яр тĕлĕнче, шыв хĕрринче çынсем каçах питĕ хыпаланса çÿреме тапратрĕç. Анчах шăплăх та кунта ĕçне кура мар питĕ пысăк пулчĕ. Çынсем ĕмĕлкесем пек пĕр сасăсăр шуса çÿрерĕç, ушкăнлана-ушкăнлана пуçтарăнчĕç, унтан саланса кайса çухалчĕç, вара çĕнĕрен пухăнчĕç, çĕнĕрен сирĕлсе кайса пĕтрĕç, — ку вăл Иваново-Вознесенск полкĕ шыв урлă каçма хатĕрленсе ĕçлерĕ. Пароходсем çине çынсене ларма-тăма çук таранах чыха-чыха тултарчĕç. Пĕрисене каçарса яраççĕ те — теприсене илме таврăнаççĕ, çĕнĕрен каçараççĕ те — çĕнĕрен илме таврăнаççĕ. Çапла тĕттĕмре, шăплăхра пĕтĕм полка леш енне каçарса пĕтерчĕç. Çурçĕр тахçанах иртнĕ ĕнтĕ, тул çутăлса килет.

Çак вăхăтра Красный Ярта тăракан тупăсем кĕрслеттерсе пеме пуçларĕç. Вĕсем тăшманăн çывăхри окопĕсене тĕллесе печĕç. Пĕр харăсах темиçе теçетке тупă персе тăчĕ. Мĕнле прицелпа пемеллине малтанах палăртнăччĕ, çавăнпа часах тĕл тиверте пуçларĕç. Çапла вут-хĕм айĕнче

тăшман окопсенче ниепле те тытăнса тăма пултараймарĕ,— вăл часах чакма тытăнчĕ, пĕр йĕркесĕрех хыçалти окопсене туха-туха тара пуçларĕ. Разведчиксем çакăн çинчен килсе пĕлтерсенех, тупăсем лăпланма тытăнчĕç, вара окопсем патне пырса çитнĕ иваново-вознесенецсем наступление кайрĕç те — шуррисене Çĕнĕ Турбаслы ятлă ял патне çитиччченех хăваласа тартрĕç... Тăшман, çул çинче ниçта та чарăнса, çирĕпленсе тăма пултараймасăр, пĕр йĕркесĕр чакса пычĕ. Иваново-вознесенецсем таракансем хыççăнах Турбаслы ялне кĕрсе кайрĕç... Кунта кăштах чарăнса тăчĕç,— ыттисем каçса çитессине кĕтсе тăчĕç, пĕр полкпа пĕччченех ытла шала кĕме хăрушă пулчĕ. Çак ялта çирĕпленсе тăчĕç. Пугачевецсем вара çак вăхăтрах шыв хĕррипе Александровка енне наступлени туса пычĕç...

Разинецсемпе домашкинецсене шыв урлă каçарма тытăнчĕç,—вĕсен халех мала иртсе кайнă полксене пулăшма тапранса тухмалла пулчĕ. Тăвайă броневик каçарчĕç, анчах вĕсенчен виççĕшĕ каçнă-каçманах тӳнсе кайса, çул айккинчех выртса юлчĕç; кайран тин вара вĕсене кавалеристсем тăратса ĕçе кĕртрĕç.

Çак вăхăтрах, тăвалла хăваласа янă тăшман, сывлăш çаварса илсе, вăйне çĕнĕрен пухса, Иваново-Вознесенск полкне хирĕç наступлени туса киле пуçларĕ. Ку ĕç вăл ирхине, çичĕ-сакăр сехет тĕлĕнче пулса иртрĕ. Тăшмана Турбаслы ялĕнчен ял хыçнелле хăваласа янă вăхăтра, тăшман темиçе хут демонстраци тумалла атакăна килнине хирĕç персе тăнă чухне иваново-вознесенецсем хăйсен пур патронĕсене те персе пĕтернĕччĕ те, халĕ вĕсем пушă алăпа тенĕ пекех, нимĕнсĕр тăрса юлчĕç; часах турттарса килессине те ĕмĕтленме çукчĕ; çав вăхăтрах вĕсем халĕ кунта шывăн сылтăм енчи пĕтĕм ушкăнпа командовать тăвакан Елань приказне лайăх асра тытса тăчĕç:

«Чакмалла мар, резервра пĕр штык çеç тăрса юлнине астусах тăмалла!»

Çапла çав, вĕсен, ткачсен, халĕ штыкран пуçне урăх нимĕн те çук. Вара тăшман демонстрациллĕ атакăсем тăвас вырăнне халĕ ĕнтĕ чăн-чăнах пысăк наступлени туса килме тытăнсассăн,—цепьсем чăтса тăраймарĕç, красноармеецсем каялла чакма пуçларĕç. Ку полкпа халĕ эпир тахçанах пĕлекен çын Буров командовать тăвать: ăна

комиссартан çак ĕçе куçарнăччĕ. Комиссар ун патĕнче — Никита Лопарь. Вĕсем флангсем тăрăх юрттарса çӳреççĕ, каялла чакакансене чарăнма хушса кăшкăраççĕ, пурĕпĕрех ниçта та тарса ӳкме çуккине: хыçалта шыв тесе, ун урлă каçма çук тесе, савăнпа чарăнса, çирĕпленсе тăрса, хамăрăн атакăна кĕрсе каяс пулать тесе, — хăвăрт-хăвăрт ăнлантарса параççĕ. Вара чака пуçланă красноармеецсем чарăнса тăчĕç, чакма пăрахрĕç. Çак вăхăтра цепьсем патне юланутлă темиçе çын юрттарса çитсе, çĕре сиксе анчĕç. Ку — Фрунзе, унпа пĕрле арми политпайĕн начальникĕ Тралин, тата хăйсен тăват-пилĕк çывăх çынни... Фрунзе винтовкине тытса ыттисенчен мала чупса иртрĕ те: «Урра! Урра! Юлташсем! Малалла!!!» тесе кăшкăрчĕ. Ун çывăхĕнче пыракансем ăна пурте палласа илчĕç. Фрунзе килсе çитни çинчен хыпар пĕр самантрах цепьсем тăрăх вĕçсе саврăнчĕ. Красноармеецсем хавасланса кайрĕç те, урса кайнă пекех малалла ыткăнчĕç. Ку ĕмĕр манми тĕлĕнмелле вăхăт пулчĕ. Патрон сахал пирки боецсем сайра-хутран çеç перкелерĕç, наступлени туса килекен тăшман çарне хирĕç вĕсем штык вĕççĕн çеç ыткăнса пычĕç. Çапла вара красноармеецсем çав тери вăйлăн, çав тери паттăррăн хавхаланса çĕкленнине халĕ ĕнтĕ тăшман салтакĕсем чăтса тăраймарĕç, — саврăнчĕç те каялла тара пуçларĕç...

Елань хăйĕн ординарецĕсене шавах Фрунзе çывăхĕнче пулма хушса ячĕ.

— Вĕлерес-тăвас пулсассăн, хăть те мĕн пулсан та çапăçуран çĕклесе тухса, шыв урлă каçнă тĕле, пароход патне илсе пырăр! — терĕ.

Шыв хĕрринчен урапасем çине тиесе патрон турттарса çитерчĕç; цепьсем Турбаслы хыçне тухса выртсассăнах, патронсене красноармеецсем валли хырăмпа шуса илсе пыра пуçларĕç. Атакăна çĕкленсе кайсассăнах, тăшман пульли Тралин юлташа кăкăрĕнченех тивсе, персе ӳкерчĕ; красноармеецсем ăна хулĕнчен ярса тытса, вутхĕм айĕнчен çавăтса тухрĕç. Пуля тивсе суранлатнă тĕлте халĕ унăн Хĕрлĕ Ялав орденĕ çиçсе тăрать.

Çапла ĕнтĕ вăрçă ĕçне Хĕрлĕ Çара кирлĕ пек улăштарса ярса лайăхлатрĕç. Фрунзе Еланьпе пĕрле ку полкран пугачевецсен полкне тухса кайрĕ. Çул май сăртсем çине хăпара-хăпара, йĕри-тавралла çаврăнкаласа пăхрĕç; вăрçă операцине епле майпа тата ăнăçлăрах туса ярасси

çинчен канашласа калаçрĕç, картăна çĕнĕрен темиçе хут сăнаса, таврара хăйсем мĕн курнипе, кашни тĕмескепе, кашни шăтăк-путăкпа танлаштарса пăхрĕç... Пугачевецсем малтанхи пекех çырма хĕррипе пыраççĕ. Разинецсем тата Домашкински полк батальонĕсем те мала иртнисене хуса çите пуçларĕç; вĕсем пурте аслă çул хĕррине тухса речĕсене тикĕслетме тытăнчĕç. Кăнтăрла тĕлĕнче, пухăнса çитнĕ пĕтĕм вăйпа малалла наступлени туса каймалла, тесе приказ пачĕç. Пугачевецсен малалла та çырма хĕррипе, разинецсемпе домашкинецсен—варрипе, чи хĕрринчи сулахай флангра — иваново-вознесенецсен пымалла, тесе кăтартса пачĕç; вĕсем ку вăхăта Кивĕ Турбаслы ялне йышăнса, унта канма чарăннăччĕ. Шăпах çак вăхăтра тăшман полкĕсен колоннисем çывхарса килни курăнса кайрĕ: вĕсем çурçĕр енчен иваново-вознесенецсен çумĕпе, наступлени туса кайма хатĕрленсе тăнă çар ушкăнĕн чи варри тĕлне капланса килни палăрчĕ.

— Ку, тен, кĕтӳ мар-ши?— тесе шутларĕç хăш-пĕрисем.

— Мĕн кĕтĕвĕ унта, ав штыкĕсем епле йăлтăртатаççĕ!—тесе асăрхаттарчĕç вĕсене.

Штыксем йăлтăртатни курăннă-и унта, курăнман-и,— ăна калама хĕн, анчах часах тăшман полкĕсем чăнахах капланса килни, çак çапăçуран малашнехи ĕçсем мĕнле пуласси пит нумай килни пуриншĕн те нимĕн иккĕленмелле мар лайăх палăрса çитрĕ. Фрунзе çак çапăçура та хăй пуласшăн пулчĕ, анчах Елань ăна шыв хĕррине, каçă тĕлне кайса, кунта тепĕр дивизи полкĕсене хăвăртрах ямалла тума ӳкĕте кĕртрĕ. Çапла туни лайăхрах пулĕ тесе килĕшрĕç те, Фрунзе шыв урлă каçмалли вырăналла чуптарчĕ. Çакăн хыççăн часах ун айĕнчи лашине вĕлерчĕç, хăйне те çывăхрах ӳксе çурăлнă снаряд вăйлăн контузить туса хăварчĕ. Анчах контузине-мĕнне пăхмасăрах, вăл çырма хĕрринче пĕр чарăнмасăр ĕçлерĕ,— çарсене каçарма васкатрĕ, канаш парса пулăшрĕ, ку енне артиллерин пĕр пайне каçарттарса ячĕ.

Хребтов хăйĕн батарейине иваново-вознесенецсен полкĕ патне чи малтан илсе çитерчĕ. Вăл цепьсем хыçне çитсе чарăнчĕ те, тăшман çарĕ пирвайхи хут хĕсме пуçласанах, тăшмана тупă вучĕпе çунтара пуçланă. Красноармеецсем вара, хăйсен батарейи пенине илтсенех, савăнса кайса малалла ыткăнчĕç...

Анчах наступление малалла сарма май килеймерĕ,— разинецсемпе домашкинецсен батальонĕсем çине çав çурçĕр енчен капланса килекен пысăк масса мĕнпур вăйĕпе килсе тапăнчĕ. Вăйсем питех те пĕр пек мар пулса тăчĕç, питех те йывăр пулчĕ вĕсене шуррисем хĕснине тытса чарса çиеле тухма. Разинецсем чăтаймасăр чака пуçларĕç. Вĕсен пĕр батальонĕнчи çынсем пĕр самантлăха арпашăнса кайрĕç, мĕншĕн тесен вăтă боецсем унта сахалтарахчĕ, çапăçусенче пулса хăнăхман çамрăксем ытларахчĕ; çак батальон, вырăнĕнчен хăпса, шыв хĕрринелле тарма пикенчĕ; вĕсем хыççăн ытти батальонсенчи хăш-пĕр красноармеецсем те чупа пуçларĕç. Ыттисем вăраххăн чакса пычĕç, хĕссе килекен тăшманран ăнаçлăн çапăçса хӳтĕленчĕç. Иваново-вознесенецсем Турбаслы ялĕ тĕлĕнче тытăнса тăчĕç. Тăшман вăйĕн пĕр пайĕ халĕ ĕнтĕ вĕсем еннелле киле пуçларĕ. Елань Хребтов патне вĕçтерсе çитрĕ те:

— Разинецсем чакаççĕ, Хребтов! Вĕсене пулăшас пулать! Тупăсене çавăр та сылтăмалла пер, чакакансене хăвалакан шурă çарсене çĕмĕр!— тесе кăшкăрчĕ.

Хребтов вăл кăтартнă еннелле пеме тытăнчĕ. Тӳрĕ куç, мĕн тумаллине час тавçăрса илме пĕлни тата вăрçăра пиçĕхсе çитнĕ артиллеристăн ăсталăхĕ — шалт тĕлĕнтерсех ячĕç: снаряд хыççăн снаряд, снаряд хыççăн снаряд ярса тăчĕ вăл тăшман колоннисенче çынсем чи çăра капланса пыракан тĕле... Тăшман çарĕ ним тума аптăраса пăтранса кайрĕ, разинецсене хăвалама чарăнчĕç вĕсем; малтан пĕр вырăнта хĕвĕшсе тăчĕç, унтан ерипен хăйсем чакма тапратрĕç; çав вăхăтрах Хребтов батарейи ытларан ытла çунтарма тытăнчĕ; снарядсем çăраран çăрарах, тĕлрен тĕл ӳке-ӳке çурăлса, тăшман çарне çулса тăчĕç. Тăшман наступленине чарса лартрĕç. Разинецсем сывлăш çавăрса хĕпĕртерĕç...

Çак вăхăтра Чапаева çарсене шыв урлă каçарма Михайлов пулăшса тăчĕ. Шыв хĕррине красноармеецсем чупса пухăннине курсан, вăл ĕçсем лайăххах маррине сисрĕ те, Чапаев патне пĕлтерме чупрĕ; анчах лешĕ ĕç епле тăнине унччен йăлтах пĕлме ĕлкĕрнĕччĕ, мĕншĕн тесен вăл тин çеç Еланьпе телефон тăрăх калаçса илнĕччĕ.

Михайлов хăй мĕн курни çинчен каласа пĕлтерес тесе çăварне уçма çеç ĕлкĕрнĕччĕ, Чапаев ăна çапла приказ пачĕ:

— Михайлов, итле! Эпир халь çеç тата тепӗр батальон казарма хатӗрлесе çитерсеттӗмӗр... Унта вӑйсем кирлӗ... Кунпах сахал... Çав кунта тарса килекенсене каялла хӑваласа ярас пулать... Ӑнлантӑн-и? Вӗсем пӗтерме çеç пултарӗççӗ. Кай-ха, илсе кай вӗсене хӑвӑнпа каялла! Ӑнлантӑн-и?

— Так точно!— терӗ те Михайлов, шывӑн леш енне каçса кайма та ӗлкӗрчӗ. Сӑмахӗ унӑн кӗске,— çитменне вӑхӑчӗ те çук калаçса тӑма. Таракансене — хӑш-пӗрне саламатпа, хӑш-пӗрне револьверпа тытса чарчӗ те:

— Ан тарнӑ пултӑр! — тесе кӑшкӑрчӗ. — Ӑçта, ӑçта чупатӑр? Чарӑнӑр! Çӑлӑнасси вӑл—пӗр малалла кайнинче анчах! Атьӑр ман хыççӑн, пӗр сӑмах та ан чӗннӗ пултӑр! Кам тарма тӑрать — пуçӗнчен пуля лекет! Ун пеккине кӳрши те пулин вырӑнтах персе пӑрахать! Ман хыççӑн, юлташсем, малалла!!! — терӗ.

Çак ӑнланмалла, çирӗп сӑмахсем, вӑл вӑхӑтра — чи кирлисем, паникӑна пӗтерсе лартрӗç. Тарса килекенсем чарӑнчӗç, шыв хӗррипе çуйӑхса, чупкаласа çӳреме пӑрахрӗç, пӗр çӗре пуçтарӑнса тӑрса, Михайлов çине хӑраса та, шанчӑкпа та:

«Эсӗ чӑнахах та çӑлмӑн-ши пире, хаяр командир?»— тесе шутланӑ пек, тӗлӗнсе пӑхса тӑчӗç.

Тӗрӗс, вӑл чӑнах та çӑлчӗ вӗсене. Çакнашкал самантра саламатсӑр е пульӑсӑр ниепле те ӗç кӑларма çук. Вӑл вӗсене хӑй хыççӑн ертсе кайрӗ, кирлӗ пек йӗркелесе тӑратрӗ, сапаланса кайнӑ халӑхран каллех йӗркеленнӗ çар отрячӗ туса хучӗ. Вара Михайлов вӗсемпе пӗрле каялла чакса килекен разинецсемпе домашкинецсен икӗ батальонӗ патне çывхарса пыма пуçласан, лешсем савӑнса хӗпӗртенипе:

— Çӗнӗ вӑйсем килеççӗ, çӗнӗ вӑйсем!—тесе кӑшкӑрса ячӗç.

Кунашкал минутсенче çакӑн пек йӑнӑша сирсе яни питех те пысӑк айӑп туни пулать,— çавӑнпа вӗсене чӑнахах та çӗнӗ вӑй килет тесе ӗнентерчӗç. Батальонсем вара каялла çаврӑнчӗç те, хӑйсем наступлени туса кайрӗç... Анчах хӑватлӑн çӗнтересси пулмарӗ кунта. Тӑшмана каялла хӑваласа яма анчах май пулчӗ; хӑйсем патӗнчен хӑваласа ярсан вара, тӑшманӑн тӗп вӑйӗ Иваново-Вознесенск полкӗ çине пырса тӑрӑнчӗ. Анчах тӑшманӑн темиçе полкӗ

кунта вĕсене умлăн-хыçлăн тăватă хутчен тапăна-тапăна атакăларĕ пулин те, иваново-вознесенецсем, хăйсене тем пекех йывăр пулчĕ пулин те, çирĕп тытăнса тăчĕç. Вĕсем кунта калама çук пысăк паттăрлăхпа çапăçрĕç. Чăтса тытăнса тăчĕç; хамăр полксем çитсе, йывăр лару-тăрăва çăмăллатиччен каялла чакмарĕç...

Çырма хĕррипе малалла кайнă пугачевецсене, тĕп вăйран татăлса ан кайччăр тесе, каялла чакарса килмелле пулчĕ. Чакма панă приказ тăрăх вĕсем каялла чакма тапратсан,— ку таранччен вĕсене шаларах астарса каяс тенĕ шухăшпа пулас пĕр шарламасăр пынă тăшман, сасартăк атака хыççăн атака туса, çине тăрса хĕсе пуçларĕ. Пугачевецсен чылай çын пĕтерсе чакмалла пулчĕ... Вĕсем тытăça-тытăça ӳксе, хӳтĕленсе чакрĕç; анчах хирĕç атака туса малалла каяймарĕç, часрах хамăрăн ытти полксем тăнă ĕрете тухма васкарĕç.

Çапла вара пур чаççене те çĕнĕрен аслă çул патне чакарса тăратсан, кунта Чапаева пуçĕнчен тивсе амантни çинчен, дивизипе командовать тăвас ĕçе Елане шанса пани çинчен хыпар çитрĕ... Çак йывăр хыпар часах пур полксене те çитсе çаврăнчĕ, пурне те йывăр хуйха ячĕ... Акă ĕнтĕ, красноармеецсем курмарĕç ăна, Чапаева, кунта çапăçура пулнине, анчах вăл пĕрмаях хăйсемпе пĕрле пулнине, çак мĕнпур атакăсемпе наступленисем, каялла чакнисем унсăр пулманнине вĕсем шавах лайăх пĕлсе тăчĕç.

Лару-тăру тем пекех йывăр пулчĕ пулин те, вĕсем кунтан çăлăнса тухма май пуррине, Чапаевпа Елань йышши командирсем вĕсене вилсе пĕтме парас çуккине çирĕп ĕненсе тăчĕç.

Чапаева амантни çинчен илтсен, пурте темле хурланса пусăрăннă пек пулса кайрĕç... Вăл вăхăт тĕлне наступлени туса пыма чаръннăччĕ ĕнтĕ, каçхи тĕттĕм пирки перкелешме пăрахрĕç. Йĕри-тавра йăлтах шăп пулса ларчĕ. Полксем çывăхĕнче сас-хура çук. Пур енче те хуралсем тăраççĕ, пур еннелле те дозорсем янă. Полксем канаççĕ. Ирхине ирех, тул çутăлас умĕн, пĕтĕм фронтпа наступлени пуçласа яма палăртса хучĕç.

* * *

Шыв урлă каçарнă çĕрте ĕçленĕ вăхăтра Чапаев кашни вунă минутрах пĕрре е Еланьпе, е полк командирĕсем-

пе телефон тăрăх калаçса тăчĕ. Çыхăну ĕçне питĕ чаплă организациленĕччĕ; унашкал çыхăну пулман пулсан, çапăçăва ертсе пырас ĕç хальхи пек ăнăçлăн пулса пырас çукчĕ. Чапаев шывăн леш енчи ĕçсем епле пынине шавах питĕ лайăх пĕлсе тăчĕ. Лере снарядсем е патронсем çитмен пирки хумханма пуçласанах вара, Чапаев çакăн çинчен çийĕнчех пĕлсе, кирлĕ япаласене пирвайхи пароходпах ярса тăчĕ. Полксен шухăш-кăмăлĕ мĕнле пулни çинчен, тăшман хăйне мĕн тери хастар тытса хирĕç тăма пултарни çинчен, вĕсен тупă мĕн чухли çинчен, офицерĕсем нумаййи-сахалли çинчен, çарĕнче мĕнле çынсем çапăçни çинчен вăл пĕрмаях ыйта-ыйта пĕлсе тăчĕ, пуринпе те интересленчĕ, пурне те виçсе чухласа тăчĕ, пурне те хисепе илсе пычĕ. Вăл çарсем ăçта пынине кашни минутрах тĕплĕ пĕлсе тăни, телефон тăрăх вăл пурне те кĕске канашсем парса тăни, вестовойсем урлă распоряженисем пани, — çаксем пурте вăл çапăçу мĕнле пынине кашни уйрăм минутрах ытла та тĕплĕн пĕлнине кăтартса тăчĕ. Пĕр вăхăтлăха ăна тăшман аэропланĕсем вĕçни кăштах шиклентерсеччĕ, анчах кун пирки те вăл мĕн тумаллине пĕлмесĕр аптăраса ӳкмерĕ, тарăхса çеç кайрĕ ытларах: пирĕн летчиксем, бензин пулман пирки, тăшман аэропланĕсене хирĕç вĕçсе тухма пултараймарĕç. Аçа-çиçĕмле çĕмĕрĕлни кунта ĕçе пулăшма пултараймарĕ, пирĕн аэроплансен вĕçеймесĕрех лармалла пулчĕ. Шыв урлă каçарас пĕтĕм ĕçе аэроплансем çинчен пăрахакан бомбăсем çурăлса тăнă вăхăтрах, аэроплансенчен перекен пулеметсен вут-хĕмĕ айĕнчех туса ирттерме тиврĕ... Анчах нимĕн тума та пулмарĕ... Часах тупăсемпе пеме пуçласа, тăшман аэропланĕсене çӳлерех вĕçмелле турĕç, анчах вĕсем çапах та вĕçсе тармарĕç. Çак аэроплансем çинчен пени сахалах мар сиен турĕ. Вĕсем пенĕ чухне Чапаева та амантрĕç; пуля унăн пуçне тивсе шăтарчĕ те, пуç шăмминчех тытăнса юлчĕ. Пульăна кăларма тытăнчĕç, анчах кăларнă чухне пуля ултă хут вĕçерĕне-вĕçерĕне кайрĕ. Чапаев пĕр шарламасăр ларчĕ. Çак асапа вăл пĕр сасă кăлармасăр тӳссе ирттерчĕ. Вара кайран Чапаева бинтласа, Уфаран пĕр çирĕм çухрăмра ларакан Авдонь ятлă яла леçсе вырнаçтарчĕç.

Çак ĕç вăл 8-мĕш числара каçаллапа пулса тăчĕ; тепĕр кун ирхине вара наступлени туса кайма палăртса хунăччĕ.

* * *

Шыв урлӑ каçарас тӗлӗшпе çине тӑрса ӗçлени, артиллеристсем калама çук ӑста тӗллесе пени, сыхӑну пит лайӑх пулни, çарсене шыв урлӑ пароходсемпе хӑвӑрт каçарса тӑни,— çаксем пурте пӗтӗм çапӑçу ӗçне çав тери йӗркеллӗ, калама çук тимлӗн туса ирттерни çинчен пӗлтерсе тӑчӗç. Кунта уйрӑм çын лайӑх ӗçлени мар, пӗтӗм коллектив пӗртен-пӗр çӗнтерес шухӑшпа çапӑçни палӑрчӗ. Çак çӗнтерес шухӑш кашни приказа панинче, приказа епле пӗлсе, хӑвӑрт пурнӑçа кӗртсе пынинче, командирӑн, комиссарӑн, красноармеецӑн кашни уйрӑм утӑмӗпе ӗçӗнче палӑрса тӑчӗ...

Çӗрле Елань патне шуррисем енчен тарса килнӗ рабочие çавӑтса пычӗç. Вӑл ӗнентерсе каланӑ тӑрӑх, ирхине ирех хӗрлисене хирӗç икӗ офицер батальонӗпе Каппель полкӗ атакӑна килме хатӗрленни курӑнчӗ; вӗсем пугачевецсем çине килсе тапӑнса, вӗсене çӗмӗрсе тӑкса, ытти полксене татса илме шутлаççӗ, терӗ вӑл; çапла вара, хӑйсен çурçӗререх тӑракан ытти чаçӗсем пулӑшнипе, хӗрлисене çавӑрса илсе пӗтерме хатӗрленеççӗ, терӗ. Хам эпӗ Уфари заводра ӗçлетӗп, совет влаçне юрататӑп, тесе, тупа тусах ӗнентерме тӑрӑшрӗ вӑл; çавӑнпа эпӗ кунта, хӗрлисене çак пысӑк хӑрушлӑх çинчен пӗлтерес тесе, пурнӑçа хӗрхенмесӗрех тарса килтӗм, терӗ. Ку хыпарсене эпӗ ӑнсӑртран çеç, шуррисен канашлӑвӗ пулнӑ çуртра ӗçленӗ чухне илтсе пӗлтӗм, терӗ. Хам тӗрӗс каланине эпӗ кирек мӗнле те çирӗплетсе пама хатӗр, тесе тупа турӗ.

Ӗненчӗç те ӑна—ӗненмерӗç те. Çапах та мӗн пулассине кӗтсе, Елань наступлени тума пуçлассине пӗр сехет каяраха хӑварчӗ. Дозорсене вӑйлатрӗ. Тӑшмана темиçе теçетке пулеметпа кӗтсе илме хатӗрленсе тӑчӗç. Рабочие, мӗн пуласси палӑриччен, хурал аллине пачӗç; вӑл каланӑ хыпарсем суя пулсанах, шуррисем енчен нимӗнле наступлени те пулмасан,— ӑна персе пӑрахасси çинчен пӗлтерчӗç...

Калама çук вӑрӑм пек туйӑнчӗ çак каç. Командирсем, иртнӗ йывӑр кунта тем териех ывӑнса çитнӗ пулин те, пӗри те тенӗ пекех çывӑрмарӗç. Рабочи каласа кӑтартнӑ хыпара командирсене пурне те пӗлтерчӗç. Пурте тӑшмана кӗтсе илме хатӗрленсе тӑчӗç. Акӑ вара кӗтнӗ вӑхӑт та çитрӗ...

Офицер батальонĕсем Ҫаппель полкĕпе пĕрле хуп-хура колоннăсемпе, шăппăн-шăппăн, пĕр сас-чӳ кăлармасăр, хĕç-пăшалсене чанкăртаттармасăр наступлени туса килчĕç... Хир тăрăх сапаланса кайса, вĕсем пĕр харăсах темĕн пысăкăш лаптăка çавăрса илнĕччĕ. Çапла шутланă курăнать вĕсем: вăрттăн пит çывăх йăпшăнса пырса, ĕшеннипе йывăр ыйхăпа çывăрса кайнă хĕрлĕ цепьсене сасартăк хăратса ӳкерсе, паника кăларса, пурне те пĕр харăс чике-чике, персе пăрахса, пĕр çын хăварми пĕтерме шутланăччĕ курăнать...

Çак вăл калама çук хăрушă çапăçу пулчĕ... Батальонсем шуррисене çывăхах килсе çитме май парчĕç те, вара команда тăрăх сасартăк малтанах хатĕрлесе лартнă темиçе теçетке пулемет шатăртаттарма пуçларĕ... Еçлеме тапратрĕç, çулма тытăнчĕç... Ерет хыççăн ĕрет купала-купала çулса тăкрĕç тăшмана, хисепсĕр нумай пĕтерчĕç ăна. Вара красноармеецсем окопсенчен, пĕчĕк шăтăксенчен сиксе тухрĕç те малалла ыткăнчĕç. Çулса тăкнă офицер батальонĕсем ĕречĕ-ĕречĕпе выртса юлчĕç, каппелевецсем ăнран кайсах каялла тарчĕç,— çапла вара вĕсене темиçе çухрăм хăваласа пычĕç... Çак кĕтмен çĕртен килсе тухнă ăнăçлă çĕнтерӳ полксене чи илемлĕ шанчăк-ĕмĕтсемпе çунатлантарса ячĕ.

Рабочие кайран пысăк хисеппе дивизие ăсатрĕç, дивизирен арми штабне ячĕç курăнать...

Çакăн çинчен Елань кайран Федора пĕтĕмпех тĕплĕн каласа кăтартрĕ (Федор хăй ун чухне кĕпер патĕнче Потапов бригадипе пĕрле пулнăччĕ); ăнăçлă ĕç хыççăн чассем малалла пĕр чарăнмасăрах çĕнтерӳллĕ пыни çинчен те каласа пĕлтерчĕ; 9-мĕш числара каçхине вара вĕсем Уфа патнех çитсе тăчĕç.

* * *

Чапаевран уйрăлсассăн, Федор хăйĕн юлташĕсемпе Потапов бригади тăнă еннелле çул тытрĕ. Авдонь енчен Уфа тĕлĕнчи хăйăрлă ту çирĕм çухрăмранах курăнса ларатчĕ; ту хĕрринчи çуртсем хура пăнчăсем пек çеç курăнатчĕç; каланча темĕн çӳллĕш юпа пек кармашса ларатчĕ; хĕвел çинче чиркӳсен ылтăн тăррисем йăлтăртатса çунса тăратчĕç. Вĕсем хăвăрт чуптарса иртсе, сарлака уçланка çитсе тухрĕç. Кунта ĕнтĕ тăшман тупăпа персе

те çитеретчӗ; ку уçланкӑ тӑшмана алӑ тупанӗ çинчи пекех уççӑн курӑнса выртатчӗ; çавӑнпа вӗсем кунта çынсем çӳренине курсанах, тупӑсемпе пеме тапрататчӗç. Малалла, бригада штабӗ еннелле, ушкӑнпа каймарӗç; умлӑхыçлӑн, пӗр-пӗринчен пӗр çитмӗл утӑм юлса, пит хӑвӑрт вӗçтерсе иртрӗç. Чугун çул урлӑ каçрӗç; кунта çул аяккинче икӗ енӗпех темӗн чухлӗ çунтарса янӑ, çӗмӗрсе пӗтернӗ вагонсем сапаланса выртатчӗç, хӑшӗсем рельссем çинчех тӑратчӗç. Таçти ту хыçӗнчен Уфана тупӑсемпе перетчӗç, вӑрман хыçӗнче пулеметсем шӑкӑлтаттарса калаçатчӗç.

Потапов патне пырса çитрӗç. Вӑл шыв хӗрринчен иквиç çухрӑмра ларакан пӗр пӗчӗк полустанока çитсе вырнаçнӑччӗ. Ку вӑхӑтра ун патне шӑпах командирсем канашлӑва пухӑннӑччӗ — шыв урлӑ епле майпа лайӑхрах каçасчӗ тесе, тӗрлӗ меслет шыраса шухӑшласа ларатчӗç... Шыв урлӑ каçас ӗçе ытти икӗ бригада малалла мӗн тери ӑнӑçлӑн пырассипе сыхӑнтарма шутласа йышӑнчӗç; тӗплӗн тӗпчесе пӗлмесӗр кӗпер çине ниепле те пырса кӗмелле мар терӗç, мӗншӗн тесен пурте: ӑна сирпӗнтерсе яма хатӗрлесе хунӑ, тесе шутларӗç. Мӗн çине ларса каçмалли çинчен те калаçкаларӗç,— анчах каçмалли хатӗрсем нимӗнли те çукчӗ-ха. Вӑл хатӗрсене пур çӗрте те шырама тапратрӗç, вара чӑн та хӑш-пӗр хатӗре шыраса тупкаларӗç.

Шурӑ Атӑл шывӗ хӗрринчех çав тӗлте икӗ пӗчӗк пӳрт ларатчӗ; унта телеграф вырнаçтарса лартрӗç, телефон пралукӗсем карса тухрӗç. Шыв хӗррипе, кӗперӗн икӗ енӗпе те, курӑк ӑшне полксем пытанса выртрӗç. Вӗсем хыçӗнче, вӗт вӑрман хӳттинче, тупӑ батарейисем вырнаçса тӑчӗç. Çак каçах тӑшмана хыпашласа пӗлме шутларӗç; кӗпер пирки: ӑна чӑнахах минӑсем лартса сирпӗнтерсе яма хатӗрлесе хунӑ-ши, çук-ши? тесе тӗпчесе пӗлме шут тытрӗç (бригадӑна çитнӗ хыпарсем тӑрӑх, Уфари рабочисем шуррисене çак кӗпере сирпӗнтерсе яма та, ӑна сирпӗнтерме хатӗрлесе хума та ирӗк паман имӗш). Вунпӗр сехетре, пӗтӗмпех тӗттӗмленсе çитсен, кунта рабочисен отрячӗ килмелле, вӗсем вагонсем лартса тултарнӑ кӗпере тасатмалла, тата сӳтсе пӑрахнӑ çула юсамалла... Акӑ ӗнтӗ вунпӗр сехет, вуниккӗ; пӗр сехет те çитрӗ... Отряд çаплах çук! Вӑл виççӗмӗш сехетре тин, тул çутӑлса килме пуçласан анчах çитрӗ... Отряд килсе çитессине пӗл-

сенех, вĕт вăрман хыçĕнче тăракан тупăсем вĕсене ĕçлеме çул «тасатма» тытăнчĕç,— батарейăсем çыран хĕррине пĕр харăс тĕллесе пеме пикенчĕç, малтанхи окопсене вырнаçса ларнă тăшмана хăратса, хăваласа яма, çапла вара рабочисен отрядне кĕпере тӳрлетме май туса пама шутларĕç. Анчах çапла шутлани вырăнлах пулмарĕ. Тупăсем пенине хирĕç тăшман тата та хытăрах, тата хĕрӳрех вутпа тавăрса пеме тытăнчĕ те, рельссем çинче малтанхи мăлатук шакканă сасă илтĕнсе кайсанах — çырмалеш енчен йывăр тупăсем кĕрслеттерме тапратрĕç. Тăшман питĕ тĕл тивертсе печĕ,— шурă çарсем хĕрлĕ хăнасене кĕтсе чылаях хатĕрленсе тăнă курăнать. Малтанхи икĕ снарячĕ кĕпер пуçланнă çĕрти чул юпа умне пырса ӳкрĕ; вĕсем çапла виççĕмĕш снаряд валли вутлă маяксем лартса, ăçта çитсе ӳкмеллине кăтартса панă пекех туйăнчĕ. Вырăнне тĕп-тĕрĕс кăтартнă пулчĕ; виççĕмĕш снаряд шăпах кĕпер çинчи шпалсем çине килсе ӳкрĕ. Рельссем кĕмсĕртетсе татăлчĕç, пур еннелле те шпал татăкĕсем вĕçсе сирпĕнчĕç. Рабочисем хăраса каялла чакрĕç... Çапла вара вĕсем малта тĕттĕмĕн курăнса тăракан вагонсем патне çитме пултараймарĕç-пултараймарĕçех... Вĕсем каялла тарса ӳкме ĕлкĕрсенех, тăшман вăл тĕле çине-çине пĕр чарăнмасăр пеме пуçларĕ. Снарядсем пĕрмаях кĕпер çине ӳке-ӳке çурăлчĕç, вĕсем часах пĕтĕм çула çĕмĕрсе, аркатса тăкрĕç. Рабочисен отрядне будка хыçне чакарса кăларчĕç; кăшт тăрсан вĕсене каллех кĕпер çине кĕртсе ячĕç; çапла вара чарăна-чарăна та пулин вĕсем хăйсен ĕçне малаллах туса пычĕç.

Тăшман кĕпер урлă пеме тытăнсассăн, Федор, Зоя Павловна[1], икĕ санитарка тата красноармеецсем пĕр çирĕм çынна яхăн пусма картлашкисем тăрăх улăхса, кĕпер патĕнчи çӳлĕ насыпь тăрăх сапаланса выртрĕç... Сасартăк вĕсен пуçĕ тĕлĕнче сывлăшра снаряд ухлатса çурăлса кайрĕ те, вĕсем пурте аялалла кутăн-пуçăн йăваланса анчĕç... Ку хутĕнче ĕç телейлĕ иртрĕ — иккĕшне анчах амантрĕç; санитаркăсем вĕсене çавăнтах бинтпа çыхса ячĕç; анчах аманнисем кунтан ниçта та каймарĕç—çакăнтах юлчĕç. Йăваланса аннă хыççăн, пурте сике-сике

---

[1] Повеçре Зоя Павловна ячĕпе Фурманов арăмне, Анна Никитичнăна, сăнласа кăтартнă; вăл 25-мĕш дивизире культпросвет пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ. **(Ред.)**.

тăчĕç те, будка хыçне чупса кайса пытанчĕç... Пуç урлă уласа, çухăрса, мĕкĕрсе иртекен снарядсем ухлата-ухлата çурăлса тăчĕç; шрапнель çурăлса кайсан вара, ун татăкĕсем будка çине пăр пек шакăртаттарса çурĕç, е пӳрт тăррине витĕрех шăтара-шăтара анчĕç, е пӳрт тăррине шăтараймасăр сиксе кайса, çынсен ури тĕлнех çатлата-çатлата ӳкрĕç. Будка хыçĕнчисем малтан, вилнĕ пекех, пĕр шарламасăр хытса кайса тăчĕç. Хамăр снарядсем те вăрман хыçĕнчен пуç урлă вĕçе-вĕçе иртрĕç; çавăнпа снарядсем хаяррăн уласа, шăхăрса иртнине пурте антăхса кайсах итлесе тăчĕç; тăшман енчен килекен снарядсем шăхăрса иртнине пушшех тимлĕн итлерĕç.

— Кунта ӳкет-ши е иртсе каять-ши?— текен хăрушă шухăш кашнинех çӳçентерсе тăчĕ.

Çав вăхăтрах шăхăрни çывхарсах килет, вăйлансах пырса, калама çук хăрушшăн, хаяррăн ула пуçлать... Темле пит пысăк чугун хăма татăкĕсем пĕр-пĕринпе чуна хăйăрттарса сăтăрăннă пек, вĕсем хытăран хытă улаççĕ, йынăшаççĕ, шăлĕсене шатăртаттарнă пек ыраттарса илтĕнеççĕ...

«Ку пирĕн çинче çурăлать-ши е иртсе каять-ши?»

Шăхăрни сасартăк пуç тĕлĕнчех илтĕнсе каять. Акă вăл мимесене шăтарса кĕрет, хăлхасене хупласа лартать, пĕтĕм çанçурăма, юна, нервсене тăвăллăн хумхатса иртсе, пĕтĕм ӳт-пĕве чĕтрентерсе ярать. Сисмен çĕртенех пурте пуçĕсене хулпуççи ăшнерех хутлатса кĕртеççĕ, аяккалла пăрăнаççĕ, пĕшкĕнсе лараççĕ, пĕр-пĕрин çумне хĕсĕнерех тăраççĕ; çак хĕрсе килекен снарядран алă тупанĕсем çăлма пултарас пек—пичĕ-куçĕсене аллисемпе тытатыта хупласçĕ... Труках вара аслати çапнă пек кисрентерсе ярать... Пурте шарт сикеççĕ те, çапла хытса кайнипех, ним хускалмасăр, çак хаяррăн килсе çапнă хыççăн темле тата хăрушăрах ĕç пулассине кĕтсе тăнă пек, тата минут хушши ăнран кайса тăраççĕ. Пӳрт çине снаряд катăкĕсем киле-киле ӳкеççĕ; вĕсем йывăç çулçисем хушшинчен кашласа иртеççĕ, туратсене хуçа-хуçа антараççĕ, çĕр çине лачлатса ӳкеççĕ, хăйсем хыççăн самантлăха вĕт çеç çавра çил кăларса хăвараççĕ. Пĕр секундлăха пурте пĕр сывламасăр, пĕр шарламасăр тăнă хыççăн, такăшĕ кăшт хусканса илет те, хăйĕн çирĕпех тухайман сассипе:

— Ну, иртсе кайрĕ, ачсемĕр... Чĕлĕм туртса ярăр!— тесе, шӳт туса илет.

Тӗлӗнмелле ӗç вăл: çак калама çук хăрушă самантсем хыççăн калаçу яланах шӳт тунинчен пуçланса каять, урăххинчен нихçан та нимӗнрен те пуçланмасть. Унтан шăпланаççӗ те, каллех çӗнӗрен килсе çапасса кӗтсе тăраççӗ. Çапла темиçе сехет хушши, тул çутăлса киличченех çакăн пек тăрса ирттереççӗ... Кӳршӗри пӳртрен Потапов темиçе хут та чупа-чупа тухса килчӗ. Федор та ун патне час-часах кайкаласа килчӗ, кайран вăл каллех хурала васкаса каятчӗ. Çак хăюллă шухăш çаплах тухма пӗлмерӗ-ха вӗсен пуçӗнчен:. кӗпер çине минăсем лартса хăварман пулсан, кӗпер тӗрӗс-тӗкелех юлас пулсассăн,— хулана хăйсен пӗр полкӗпе те пулин ыткăнса кӗрсе, çапла сасартăк пырса кӗнипе паника кăларса, Красный Яр енчен тапăнса килекен бригадăсене пулăшас шухăш...

Тул çутăлса çитсенех пеме чарăнчӗç... Бригада штабӗ вырнаçса тăнă полустанока куçрӗç. Çӗрӗпех çывăрманнипе ӗшенсе çитнӗскерсем, выртнă-выртманах çывăрса кайрӗç. Тӗттӗм пуласпа вара — каллех кӗпер патне, каллех тӗпчесе пӗлме тытăнчӗç: тӗрӗс-тӗкелех тăрать-и кӗпер, çук-и? Разведчиксем кӗперӗн çурринех йăпшăнса çитнӗччӗ, анчах вӗсене асăрхарӗç те, пулеметпа пеме пуçларӗç... Федор та полк комиссарӗпе пӗрле кӗпер çинчи вагонсем патне кайрӗ. Пӗр икçӗр утăм кайсан, вӗсем «Интернационал» юрласа ячӗç... Çапла юрлани Колчак салтакӗсене темле тӗлӗнмелле пек туйăнса кайрӗ пулмалла— вӗсем нумайччен пемесӗр тăчӗç. Федор вара кӗпер çинчен мӗн вăйӗ çитнӗ таран:

— Юлташсем!— тесе кăшкăрса ячӗ.

Кăшкăрса ярсанах, пулеметсем шатăртаттарма тытăнчӗç. Федорсем рельссем çумне тӗршӗнсе выртса, шуса чакма пуçларӗç... Ку ӗç ăнăçлă иртрӗ. Вӗсем кӗперӗн юлашки сыпăкӗ тӗлне çитрӗç те, пусма тăрăх будка патне анчӗç. Шыв хӗррипе цепьсем вырнаçса выртнă тӗлелле утрӗç... Курăк ăшӗнче пур енче те красноармеецсем сапаланса выртнă; вӗсенчен хăшӗ-пӗри вăрмана шуса пырса кӗнӗ те, пӗчӗк ушкăнсене пухăна-пухăна, чӗлӗм турткаласа лараççӗ; теприсем хырăмпа шыв хӗррине шуса анаççӗ те, котелоксемпе шыв тултарса таврăнаççӗ, котелоксене пӗр-пӗрне алăран-алла параççӗ, çăкăра шывпа сыпа-сыпа çиеççӗ. Вӗсене çапла çӳлӗ хăях хушшипе пытанкаласа, шыв хӗррине шуса аннине час-часах курма пулать.

Кĕçĕрхи каç та ĕнерхи пекех иртрĕ. Икĕ бригада Красный Яр енчен шыван леш хĕррипе Уфа еннелле çывхарса килни çинчен хыпар çитрĕ; çавăнпа кунта та ĕнтĕ часах çĕнĕ пысăк ĕçсем пуçланмалла. Разведчиксем пĕр ушкăн хыççăн тепри шыван леш енне каçма е çула пÿлсе тăракан вагонсем патне те пулин çитме хăтланса пăхаççĕ; анчах тăшман иртсе тухма май пур шăтăксене пурне те, пур çурăксене те çивĕччĕн астуса сыхласа тăрать... Каçĕ сĕм-тĕттĕм... Лере, шыван леш енче, çутăсем кăшт çеç мĕлтлетсе çунаççĕ, — тăшман мĕн хăтланни пачах та курăнмасть. Икĕ сехет тĕлнелле тупăсем пеме чарăнчĕç... Калама çук шăп пулса тăчĕ... Кăшт çеç тул çутăлса киле пуçларĕ...

Вара сасартăк тем пекех хăрушшăн кĕрслетсе кĕпер сирпĕнсе кайрĕ, чугун улăпсем шыва ишĕлсе анчĕç, шыв хумĕ çинче çап-çутă çулăм йăлтăртатса выля пуçларĕ... Йĕри-тавра кăнтăрлахи пекех çутăлса кайрĕ...

Пÿрт патĕнче тăракансем пурте чугун çул насыпĕ çине чупса хăпарса, шыван леш еннелле тинкерсе пăха пуçларĕç,— пурин те тăшман патĕнче мĕн пулнине çав тери пĕлес килчĕ. Мĕншĕн-ха, çитменне шăпах çак сехетре пĕтермелле пулчĕ тăшманăн çак чугун улăпа? Апла пулсан, мĕн те пулин пулнах унта... Тен, тăшман хуларан тухса тарма тытăнман-ши?.. Тен, бригадăсем те Уфа патнех çитсе тăман-ши?

Пурте мĕн пулнине пĕлесшĕн çунса вĕтеленме пикенчĕç... Сехетсем иртнĕçем иртеççĕ. Вара пирĕн бригадăсем чăн та хула патне çывхарса пынине пĕлсенех, леш енне каçма команда пачĕç. Таçтан кимĕсем тупăнчĕç, курăк ăшĕнчен пĕчĕк сулăсем туртса кăларса, шыв çине антарчĕç, шыва пĕренесем пăрахса тултарчĕç; çав пĕтĕм япала çине хăпарса ларса, леш еннелле тапранса кайрĕç...

Тăшман ним йĕркесĕр пеме пикенчĕ. Вăл питех те пăшăрханса ÿкни уççăнах паллă пулчĕ; хăрасах та ÿкнĕ, тен... Артиллери вăйлăрах пеме тытăнчĕ, вăл тăшманăн шыв хĕрринчи окопĕсене çунтарма тапратрĕ... Красноармеецсем çак вут айĕн малалла пĕрерĕн, икшерĕн, пĕчĕкшер ушкăнпа ишнĕçем ишсе пычĕç; леш енне ишсе çитсе, çыран хĕррине сике-сике тухрĕç те, хăйăр ăшне чаваланса выртрĕç; пуçĕсене пĕчĕк тĕмеске хыçне пытарса, хăйсем те тăшман еннелле пеме тытăнчĕç...

Кăнтăрлахи хĕвел хытă хĕртсе пĕçертрĕ. Вилес пек шăрăх. Шыв пек тар юхать. Ĕçес килнипе ăш çунать.

Хĕрлисен цепĕсем леш енче сарăлнăçем сарăлса, ӳссе, çăраланса пыраççĕ. Вăйлăран вăйлă переççĕ вĕсем; çав вăхăтрах тăшман хирĕç тăни вăйсăрланнăçем вăйсăрланса пырать. Тăшман йăлтах йĕркерен туха пуçланă.

«Урра!» Сиксе тăрса, малалла чупма тытăнчĕç... Малтанхи окопсене тасатрĕç тăшманран,— пĕрисене хăваласа тартрĕç, теприсене тыткăна илчĕç; каллех пытанса вырт-рĕç... Тыткăна лекнисем те вĕсемпе пĕрлех выртаççĕ — хĕçпăшалсăр вĕсем, хăраса ӳкнĕ, нимĕн тума пĕлмеççĕ. Çапла ĕнтĕ перебежка хыççăн перебежка туса,— шыв хĕрринчен ытларан ытларах уйрăлса, хула варрине шалтан шала кĕрсе пычĕç.

Хĕрлĕ çарсем хула урамĕсене тĕрлĕ енчен пырса кĕме пуçларĕç... Пур çĕрте те рабочисем питĕ йышлăн пухăна-пухăна тăнă, хăйсен тăваллă савăнăçне вĕсем каçса кайса кăшкăрашса саламланипе палăртаççĕ. Кунта савăнни те, чаплă полксене чунтан саламлани те, кулса ахăрашни те, хăйсене чараймасăр тухакан куççулĕ те — пурте пур... Красноармеецсем патне чупса пырса, вĕсене,— çав тери хаклă, çывăх çынсене,— гимнастеркисенчен ярса тытаççĕ, çурăмĕсенчен ачашласа лăпкаççĕ, аллисене çирĕп тытса чăмăртаççĕ... Ниепле те çырса кăтартма вăй çитермелле мар картинăсем!..

Çулланса пĕтнипе сăранланса ларнă тумтирлĕ рабочисем урамсенче ытти халăх умĕнче вĕçĕмсĕр ретпе тăраççĕ; çак çĕнтерӳ телейĕ пуринчен ытла вĕсемшĕн паха-çке-ха!..

Анчах рабочисем хыçĕнче тротуарсем тăрăх, хӳмесем çинче, ярах уçса янă чӳречесем умĕнче, çурт тăррисем çинче, йывăçсем тăрринче, юпасем çинче — кунта тăшманран çăлăнса тухнă Уфа çыннисем пурте пухăнса тăнă, вĕсем те Хĕрлĕ Çара пысăк савăнăçпа кĕтсе илеççĕ. Кам хытă юратман, кам кĕтмен, вĕсем пурте Колчакпа пĕрле, Колчак хыççăн тухса тарнă. Хĕрлĕ Çарсем полкшарăн-полкшарăн ута-ута иртеççĕ. Штыкĕсене мăнкăмăллăн çутăлтарса, питĕ тĕреклĕн, хăйсен никам çĕнтереймн вăйне ĕненсе, урисене савăнăçлăн яра-яра пусса утаççĕ вĕсем. Вĕсен ĕшеннĕ, тусанланса ларнă пичĕсем çинчи хисеплĕ лăпкăлăха нихçан та манас çук!

Çитсессӗнех, халех, пуринчен малтан—тӗрме патне: юлнӑ-ши хӑть пӗри те пулин? Е пӗрне хӑвармиччenех пере-пере пӑрахнӑ-ши? Тӗрмен йывӑр алӑкӗсем, хӑйсен тутӑхса ларнӑ тӑпсисемпе хаяррӑн чӗриклетсе, яр уҫӑлса каяҫҫӗ... Коридорсем тӑрӑх камерӑсем патне, пӗччен пӳлӗмсем патне васкаса чупаҫҫӗ. Акӑ пӗри, тепри, виҫҫӗмӗш. Часрах, юлташсем, часрах тухӑр тӗрмерен! Çӳҫентерсе, чӗтретсе яракан сценӑсем! Тӗрмере ларакансем хӑйсене ҫӑлакансене ытала-ытала илеҫҫӗ; чи вӑйсӑррисем, асапланса пӗтнисем — чӑтайманнипе уласа макӑрса яраҫҫӗ...

Кунта та, тӗрме тулашӗнчи пекех,— кулӑ та, савӑнӑҫ куҫҫулӗ те. Тӗрмери тӗксӗм тӗс вара ҫапла курнӑҫнине уйрӑмах тарӑн, тӗлӗнмелле пысӑк вӑй кӗртсе тӑрать...

Хӗрлӗ полксенчен васкаса тухса тарнӑ пирки, шурӑ генералсем хӑйсен аллине лекнӗ ҫынсене пурне те персе пӑрахма ӗлкӗреймен... Анчах персе пӑрахма ӗлкӗрейменнисем ҫеҫ юлнӑ ҫав... Уфа хулин тӗттӗм каҫӗсемпе Колчакӑн шурӑ жандармӗсем анчах каласа кӑтартма пултараҫҫӗ пирӗн юлташсем ӑҫта выртнине, епле вӗсене кашни каҫах ушкӑнӗ-ушкӑнӗпе таҫти, нихҫан таврӑнмалла мар ҫӗре иле-иле кайса пӗтернине. Чӗрӗ юлнисем кайран тин вара хӑйсене епле чӑтма ҫук асаплӑ пулнине, ӑҫтиҫук офицер тавралӗсем епле пӗр намӑса пӗлмесӗр мӑшкӑлласа пӗтернине, кашни каҫах хӑйсен черечӗ ҫитессине хӑраса кӗтсе тӑнине кала-кала кӑтартрӗҫ...

Тӗрмере ларакансене хӑтарса ирӗке кӑларнӑ хыҫҫӑнах, пур ҫӗре те хурал тӑратса пӗтерчӗҫ...

Нимӗнле ҫарату та, нимӗнле ирӗксӗрлени те, нимӗнле йӗркесӗрлӗх те, нимӗнле харкашу-ҫапӑҫу тавралӗ те пулмарӗ,— кунта ҫирӗп дисциплинӑллӑ, революциллӗ ӑстӑнлӑ Хӗрлӗ Çар килсе кӗчӗ-ҫке-ха...

Çак пирвайхи кунах рабочисем суйласа янӑ, тӗрлӗ учрежденисенчи служащисем уйӑрса янӑ делегацисем пӗрин хыҫҫӑн тепри пухӑнса пыра пуҫларӗҫ,— пӗрисем саламлаҫҫӗ пире, теприсем хулари йӗркелӗхпе лӑпкӑлӑхшӑн тав тӑваҫҫӗ...

Еврейсен хулари общининчен уйӑрса янӑ делегаци килсе, Колчак вӑхӑтӗнче кунта еврей халӑхне мӗн тери пысӑк хурлӑх кӑтартса пӗтерни ҫинчен каласа пӗлтерчӗ. Вӗсене кунта вӗҫӗмсӗрех хӗсӗрлесе мӑшкӑланӑ пулнӑ, ним сӑлтавсӑрах тӗрмене хупа-хупа лартнӑ. Урамра тӗл пула-

кан евреe çупса ярассине е хĕнесе тăкассине ылтăн погонлă киревсĕр офицер чи лайăх, чи айăпсăр ĕç вырăнне хунă...

— Сирĕн кунтан чакмалла пулас пулсан,— терĕ çак община представителĕ,— сирĕнпе пĕрле эпир те пĕр çын юлмичченех тухса каятпăр. Кунта тамăкри пек асап курса пурăниччен — çарамас, выçă ларакан Мускавра пурăнни темиçе хут та лайăх.

Еврей çамрăкĕсем çав кунах доброволецсен отрячĕ пухма тытăнчĕç; ку отряд кайран Хĕрлĕ Çара хутшăнчĕ.

Дивизи политпайĕ хăйĕн ĕçне калама çук анлăн сарса ячĕ. Малтанхи сехетсенчех халькхи лару-тăру çинчен ăнлантарса паракан листовкăсене шутсăрах нумай пичетлесе салатрĕç. Хула урамĕсенче стена хаçачĕсем çыпăçтарса тухрĕç, тепĕр иртен пуçласа кашни кунах дивизи хаçачĕ тухса тăма пуçларĕ. Хулара пур çĕрте те пĕр тăтăшах кĕске митингсем пула-пула иртрĕç. Хула çыннисем ораторсене питĕ хаваслăн итлеççĕ, нумайăшне çавăнтах, митинграх, алăсем çинче йăтса çӳреççĕ—лайăх оратор пек хитре тухса каланăшăн мар, хăйсем савăннипе, ниçта кайса кĕрейми хавасланса кайнипе... Хула театрĕнче дивизи труппи ĕçлеме тапратрĕ; кунта пур ĕçе те ывăнма пĕлмен Зоя Павловна ертсе пырать,—вăл декорацисемпе аппаланать, хула тăрăх çӳресе костюмсем шыраса тупать, спектакльсем лартма хатĕрленет, спектакльсенче хăй те вылять. Театра курма пыракан красноармеецсем яланах туп-тулли чыхăнса тулаççĕ. Темиçе кун иртсессĕнех, аманнă Чапаев хулана çитсе театра пырсан, вăл пĕтĕм боецсен ячĕпе Зоя Павловнăна сцена çинчен хĕрӳллĕ саламласа, чечек парнелесе пачĕ; çакăн хыççăн мĕнпур пысăк зал хăйĕн юратнă работницине аслати пек кĕрлесе алă çупса çухăрашнипе саламларĕ,— çакă вара уншăн халиччченех манми чи хаклă награда пулчĕ.

Хула çавăнтах чĕрĕлсе, çĕнĕ пурнăçпа пурăнма тытăнчĕ. Шуррисем чухне, офицерсен «ирĕкĕ» вăхăтĕнче тертленсе тĕксĕммĕн пурăннă çынсем кун çинчен пуринчен ытла кала-кала кăтартатчĕç.

## XIII. УРАЛЬСКА ИРĔКЕ КĂЛАРНИ

Уральска казаксем чылайччен, хăйне ирĕке кăларакан Чапаев дивизийĕ пырса çитиччененех, йĕри-таврах хупăрласа тăчĕç. Ана хўтĕлесшĕн паттăрла çапăçни граждан вăрçи историне çутă страница пулса кĕрсе юлать. Ытти тĕнчерен пур енчен те татăлса уйрăлнă уралецсем казаксем хупăрласа тăнине тивĕçлĕн чăтса ирттерчĕç, тăшман темиçе хут та киле-киле тапăннине харсăррăн çапăçса, сирсе тăчĕç; хăйсем те хуларан туха-туха тапăнса, тăшмана пур енчен те турткаларĕç. Асапланса ывăннă гарнизон, Уральскри рабочисем çар ретне хăйсен ирĕккĕн кĕнипе чылай ўснĕскер, нихçан та ывăнни пирки, выçă пурăннă пирки ўпкелешсе тарăхмарĕ; хулана час илетпĕр тесе савăнакан тăшмана парăнасси çинчен унăн шухăш та пулмарĕ. Пурте: е пурнăç, е вилĕм, тесе çапăçрĕç. Вĕсем хăйсенчен çурри пĕтме пултарнине,— тыткăна лексен, унта тĕрлĕ майпа асаплантарса, персе пăрахни анчах пулассине — пурте лайăх пĕлсе тăчĕç...

Хулара хăйĕнче темиçе хутчен тĕрлĕ заговорсем пурри палăрчĕ. Хулари белогвардеецсем вăрттăн, казаксен чаçĕсемпе çыхăнса, унтан тĕрлĕ кăтарту илсе тăнă, хăйсем те хулари ĕçсем çинчен казаксене пĕлтернĕ...

Снарядсем, патронсем пĕтсе çитрĕç, апат-çимĕç те вĕçне тухса пычĕ; хĕрлĕ паттăрсен час акă пĕр штыксемпе çеç çапăçмалла пулатчĕ-и, тен, анчах вĕсене çакă та хăратмарĕ,— хупăрланса юлнă çынсем шанчăка çухатмасăр çирĕп тăчĕç, паттăррăн çапăçрĕç. Вĕсене çăлма Чапаев дивизийĕ пырать тенĕ хыпар вĕçсе çитсен вара, вĕсен юлашки иккĕленни-мĕнĕ те пĕтрĕ, тăшман юлашки хут киле-киле тапăннине вара вĕсем тата паттăртараххăн çапăçса сирсе пычĕç.

* * *

Уральска пынӑ чухне, уйрӑм ҫапӑҫусем кашни кунах пулкалатчӗҫ пулин те, пысӑк ҫапӑҫусемех пулмарӗҫ. Казаксем, Чапаев полкӗсене 1918 ҫулта тӗл пулкаланӑранпах пӗлекенскерсем, вӑл полксемпе пите-питӗн тӑрса ҫапӑҫасшӑнах пулмарӗҫ; ҫавӑнпа вӗсем май килнӗ чухне ӑҫта килнӗ унтан чӗпӗткелесе илсе, каялла чакса пычӗҫ. Соболево станици патнелле пынӑ чухне казаксем Иваново-Вознесенскри полк ҫине икӗ броневикпа пырса, флангсенчен кавалерипе атакӑласа тапӑнчӗҫ. Красноармеецсем броневиксен вут-хӗмне чӑтса тӑраймасӑр тарма пуҫлӗҫ те, утлӑ ҫар вара вӗсене пӗтӗмпех вакласа тӑкӗ, тесе шутланӑ вӗсем. Анчах ӗҫ пӗтӗмпех урӑхла, питӗ просто, ним эффектсӑрах темелле, пулса иртрӗ; цепьсем, вилнӗ пек, пӗр тапранмасӑр выртрӗҫ; кӑштах пӑрӑнса, вӗсем, броневиксене хӑйсен хыҫнелле кӗртсе ячӗҫ те, тӑшманӑн хӑюсӑр утлӑ ҫарне пулеметпа ҫунтарма пикенчӗҫ... Ҫав вӑхӑтрах хӗрлисен батарейи ҫав вилӗм кӳрекен броневиксене тӗллесе, снарядсене вӗсен тавра ҫывӑхран ҫывӑха ӳкерсе тӑма тапратрӗ. Хӑрушӑ машинӑсен вара нимӗн сӗрех пӑрахса таврӑнмалла пулчӗ. Кунта вилнисем те пачах та пулмарӗҫ,— ҫав тери просто пӗтерсе лартма май пулчӗ тӑшман ҫак хутӗнче тапӑнса килнине.

Анчах таҫта ҫав Соболево станици ҫывӑхӗнчех, казаксем красноармеецсен пӗр ротине, ӑнсӑртран ыттисенчен уйрӑлса кайнӑскерсене, ҫавӑрса илнӗччӗ те, пӗтӗмпех пӗтерсе тӑкнӑччӗ. Вӗсене пулӑшма ҫӗнӗ ротӑ ячӗҫ, ӑна та лӑскаса тӑкрӗҫ. Виҫҫӗмӗшне ячӗҫ,— вӗсен телейӗ те ҫавнашкалах пулчӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн тин ҫавӑн пек пӗчӗк вӑйяра-яра пулӑшма юраманнине, кун пек пулӑшни вӑл — ҫынсемпе техника вӑйӗсене кӑлӑхах пӗтерсе тӑни ҫеҫ пулнине ӑнланса илчӗҫ. Кун хыҫҫӑн пӗр полк ячӗҫ те вара, вӑл мӗн тумаллине калама ҫук хӑвӑрт туса таврӑнчӗ. Ҫакӑн ҫинчен Чапаев пӗлчӗ те, калама ҫук тарӑхса ятлаҫрӗ.

— Командир мар эсӗ — ухмах тунката!— тесе юнаса вӑрҫрӗ вӑл.— Санӑн яланах ҫакна пӗлсе тӑрас пулать: казак вӑл вӑрҫма мар, чӗпӗтме анчах пӗлет. Акӑ чӗпӗтсе пӗтерчӗ те вӑл пӗр рота хыҫҫӑн тепӗр ротӑна... Эх, тӑмана эсӗ! Памаллаччӗ сана «хӑвна мӗн тивӗҫлине»,— тесе ятларӗ.

* * *

Казаксемпе çапла кашни кунах пĕр тăтăш çапăçкаламалла пулчĕ пулин те, полксем малалла хăвăрт пычĕç: çуранах талăкра аллăшар çухрăм тăватчĕç.

Станицăсемпе ялсенче красноармеецсене хăйсене çăлакансем вырăнне хурса кĕте-кĕте илетчĕç, ял çыннисем час-часах хирĕç тухса саламлатчĕç; хăйсем пĕлнĕ пек мĕн май килнĕ таран мĕн пуррине парса пулăшатчĕç...

Чапаева хăйне уйрăмах савăнăçлăн, калама çук хĕпĕртесе кĕтсе илетчĕç; çак кунсенче вăл чăнахах чи паллă «паттăр» вырăнĕнче пулчĕ.

— Пĕр сăмах та пулин каласа кăтарт,— тесе тархаслатчĕç ăна мужиксем,— казаксем татах килĕç-ши е эсĕ вĕсене пуçĕпех хăваласа ятăн-ши?—тесе ыйтатчĕç.

Чапаев, уссине кулкаласа пĕтĕре-пĕтĕре, ырă кăмăлпа та кулкаласа, савăнăçлăн:

— Пуçтарăнса тухăр акă пирĕнпе пĕрле, ун чухне килмĕç,—тесе ответлетчĕ.

Вăл вара хресченсене Хĕрлĕ Çар мĕн пирки вăйли çинчен, вăл Совет Российине мĕн тери кирли çинчен, ун çине хресченсен ĕç халăх массисем мĕнле пăхмалли çинчен кала-кала ăнлантаратчĕ.

Чапаев пуçĕнче яланах — пĕр пайне вăл хăçан та пулин вуласа пĕлнĕ, пуринчен ытла—калаçнă чухне астуса юлнă шухăшсем çирĕп тытăнса тăратчĕç. Сăмахран, пирĕн çарăн класлă йышĕ çинчен, пирĕн çарта мĕнле класс çыннисем çапăçни çинчен, казаксен ытларах пайĕ хальхаççăн ăнсăртран мар, ирĕксĕрех пирĕн тăшмансем пулса тăни çинчен, выçăпа аптăранă центрсене тырăпа тулăхлă районсен халех пулăшма тытăнмалли çинчен т. ыт. те, т. ыт. те.

Çак ĕнентерӳллĕ, çăмăл ăнланмалла шухăшсене вăл хăйĕн таса кăмăлĕпе йышăнса, калама çук уççăн астуса тăратчĕ; вĕсене яланлăхах йышăнса, шавах пĕлсе, астуса тăнăшăн савăнатчĕ вăл; пĕр-пĕр çĕрте калаçнă чухне вара вăл çак шухăшсене кирлĕ пулсан та, пачах кирлĕ пулмасан та пурĕпĕрех сăмах хушшине кĕрте-кĕрте лартатчĕ-лартатчех.

Хăйĕн çак шухăшĕсене вăл хресченсене уйрăмах пысăк кăмăлпа кала-кала паратчĕ, хресченсем те ăна тимлĕн тăнласа итлетчĕç. Тепĕр чухне вăл тем те пĕр кирлĕ мара та каласа тултаратчĕ, анчах пĕтĕмĕшпе илсен, ун сăмахĕ

хресченсемшĕн шавах питĕ усăллă пулатчĕ. Вăл, сăмахран, шултра ушкăнлă хуçалăхсем çинчен, унта ĕçлемелли йĕркесем çинчен, членсем хушшинчи хутшăнусем мĕнле пуласси çинчен питĕ йывăр та тĕксĕммĕн çеç ăнланатчĕ; вĕсем çинчен ăнлантарса калаçнă чухне вăл час-часах «валеçў» еннелле, «хăй ăссĕн» ĕçлесси еннелле пăрăнса каятчĕ; ку тĕлĕшпе вăл нимĕнех те тĕплĕн ăнлантарса пама пултараймастчĕ, анчах çакнашкал калаçусенчен те мĕнле те пулин усă пулатчех. Вăл ĕçе юратса, тăрăшса ĕçлеме чĕнетчĕ, кашни хăйшĕн çеç тăрăшассине хирĕç, ĕмĕтсĕрлĕхе хирĕç кĕрешетчĕ, тĕттĕмлĕхе хирĕç пыратчĕ, хресчен хуçалăхĕнче çĕнĕлле, лайăхрах меслетсемпе ĕçлессишĕн тăратчĕ. Пĕр ялта вăл хулари рабочисем выçă ларни çинчен çав тери лайăх сăнласа каласа кăтартрĕ те, тутă хресченсене хăйсен хулари выçă тăванĕсене пачах та манса кайнă тесе çав тери намăслантарса ятларĕ те, çакăн хыççăн хресченсем çав пухурах хăйсем хушшинче Мускава ямашкăн тырă пухма йышăнчĕç. Çак ĕçе йĕркелесе яма çынсем те çакăнтах суйласа хучĕç; Чапаева вара: мĕн пухнине йăлтах Мускава яратпăр тесе, кайран ăна, Чапаева, çакăн çинчен позицинех çырса пĕлтеретпĕр тесе, тупа туса, сăмах пачĕç. Пухрĕç-ши вĕсем тыррине, ячĕç-ши ăна Мускава — паллă мар, анчах Чапаева пĕлтерме пултараймарĕç вĕсем: Чапаев çакăн хыççăн нумаях пурăнаймарĕ — часах унăн пĕтмелле пулчĕ...

Çапла, пур çĕрте те пысăк савăнăçпа кĕтсе илекен хĕрлĕ полксем хăйсен тĕллевĕ патне хăвăрт çывхарса пычĕç. Часах вĕсем Уральск умне çитсе тăчĕç. Юлашки çапăçу пулчĕ те — казаксем хула тавра карса илнĕ унка татса тарчĕç. Тăшмантан хăтарнă хула руководителĕсем Чапаев дивизине пĕр вунă çухрăм хула тулашне тухса кĕтсе илчĕç; вĕсемпе пĕрле пĕр эскадрон кавалери, музыка оркестрĕ килсе çитрĕç... Тĕл пулса пĕрлешнĕ çынсем «Интернационал» кĕрлесе тăнă çемĕпе, савăнăçлăн кăшкăрашнипе, куçĕсенчен савăнăç куççулĕ тапса тухнипе кĕтсе илчĕç пĕр-пĕрне, ыталашса чуптурĕç пĕр-пĕринпе; пĕр харăсах вĕсем пĕр-пĕрне питĕ нумай ĕç çинчен каласа кăтартасшăн пулчĕç; анчах калаçма пултараймарĕç, мĕншĕн тесен çав тери савăннипе, вĕçĕмсĕр хĕпĕртенипе вĕсем калаçма сăмах та тупма пĕлеймерĕç.

— Федя,— тесе кăшкăрса чĕнчĕ такăшĕн сасси автомобиль çумĕнче тăракан Федора.

Клычков çавранса пăхрĕ те, пысăк хура лаша çинче ларакан Андреева курчĕ. Вĕсем, сывăх туссем пек, пĕрпĕринпе савăнăçлăн ыталашса чуптурĕç. Андреевăн илемлĕ куçĕсем халĕ—Федор ĕлĕк ăна нихçан та асăрхаман,—темле урăхларах: уйрăмах ĕненмесĕр, сиввĕн, типпĕн тĕллесе пăхаççĕ. Вăл пĕрне-пĕри тĕл пулнăшăн хĕпĕртеменпек те туйăнма пултарчĕ; анчах унăн сасси, тин çеç юратса каланă мĕнпур ăшă сăмахĕсем,— çаксем пурте урăххи çинчен каласа пĕлтерчĕç. Çамки çинчи пĕрĕнчĕк тарăнланнă, сăмса çийĕн урлă каяканни хĕсĕк çурăк пек, яланах тӳрленмесĕр тăрать...

Калаçса кайрĕç те, Федор Андреев çинчен — вăл хупăрласа илнĕ Уральскра тĕрлĕрен заговорсене хирĕç, сутăнчăклă ĕçсене хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе питех те хастарлă ĕçлени çинчен илтсе пĕлчĕ. Çак киревсĕр этемсемпе хаяррăн, пĕр хĕрхенмесĕр, татăклăн кĕрешмелле пулнă. Çак калама çук йывăр кĕрешӳ çапла палламалла мар улăштарса янă та ĕнтĕ Андреевăн çамрăк сăн-питне... (Часах Андреевăн полка лекмелле пулчĕ; унта вăл, казаксем йĕри-таврах çавăрса илнĕ вăхăтра, хаяррăн кĕрешсе пĕтрĕ; урса кайнă тăшман ăна татăкăн-татăкăн каскаласа тăкнăччĕ).

* * *

Уральскра хăйĕнче урамсем тăрăх иртме çук, вĕсене пур çĕрте те капланса тăракан рабочисемпе красноармеецсем пӳлсе лартнă. Хула халăхĕ те урамсене тапса тухнă.

— Мухтав паттăра! Мухтав Чапаева! Сывă пулччăр Чапаев дивизийĕн полкĕсем! Сывă пултăр хĕрлисен çулпуçĕ Чапаев!

Çапла савăнăçлă сасă кĕрлесе, янраса тăчĕ тăшмантан хăтăлнă Уральск урамĕсенче; питех те йывăр пулчĕ вара Чапаевпа Федора автомобильпе урамсене пӳлсе лартнă темиçе пиншер халăх хушшипе иртсе пыма. Тĕл пулакансем пурте Чапаева каçса кайсах савăнăçлăн пăха-пăха ăсатрĕç, хыттăн кăшкăрса саламларĕç, çĕлĕкĕсене çӳлелле ывăтрĕç, савăнăçлă çĕнтерӳ юррисем юрларĕç. Хула хĕрлĕ ялавсем çакнипе илемленчĕ, пур çĕрте те трибунăсем тăва-тăва лартрĕç, митингсем пуçланса кайрĕç. Чапаев сăмах калама тăрсан вара, халăх урнă пек савăнатчĕ, тăвăл вăхăтĕнчи тинĕс пек хумханса шавлатчĕ, савăнса хĕпĕртенин вĕçĕ-хĕрри те курăнмастчĕ. Вăл малтанхи

сӑмахне каласа ярсанах, пӗтӗм халӑх шӑпланса тӑратчӗ; унӑн юлашки сӑмахӗсем вара халӑха каллех уртарсах савӑнтаратчӗҫ. Автомобиль патне ҫитсен, рабочисем Чапаева ҫавӑрса тытатчӗҫ те, ҫӳлелле ҫӗклесе ывӑтатчӗҫ; унтан, вӑл ларса кайма тапратсан вара, пурте автомобиль хыҫҫӑн чупатчӗҫ; ӑна хӑваласа ҫитсе, тата тепӗр хут, тата нумай, нумай хут тав тӑвас пек ҫулӑмланса савӑнатчӗҫ. Полксене те хисеп сахал пулмарӗ: Уральск рабочийӗсем вӗсене юратса, ачашласа пӑхса пурӑнчӗҫ, парадсенче хисеп кӑтартрӗҫ, тӗрлӗрен савӑнӑҫлӑ вӑйӑсем тӑватӑва ирттерчӗҫ, лайӑхрах тӑрантарма тӑрӑшрӗҫ, хӑйсен мӗн пуррине, мӗн пама пултарнине пӗтӗмпех пуха-пуха пачӗҫ.

Савӑнӑҫлӑ уяв — шрапнельсем ҫурӑлса тӑнӑ чухнехи савӑнӑҫ — темиҫе куна пычӗ!—Пӗр снаряд театр ҫине театрта спектакль пынӑ вӑхӑтрах пырса ӳкрӗ. Анчах ҫакнашкал япаласем те савӑнӑҫлӑ шухӑш-кӑмӑла пӗртте пусарса лартма пултараймарӗҫ.

Казаксем шывӑн леш енне каҫса тӑчӗҫ; вӗсене, хӑйсен вӑйӗсене пухма парас мар тесе, хулана хӑрушлӑхран хӑтарас тесе, ҫак астарса тӑракан магнитран — Уральскран вӗсене халех тата инҫерех хӑваласа ямалла пулчӗ. Чапаевшӑн фронтри ҫӗнӗ ӑнӑҫусем чи лайӑх награда вырӑнне шутланатчӗҫ; ҫавӑнпа малтанхи савӑнӑҫсем иртсессӗнех, вӑл пӗрмаях полкран полка вӗҫтерсе ҫӳрерӗ, шыв урлӑ каҫмалли кӗперсене мӗнле тунине тӗрӗслесе тӑчӗ.

Урал шывӗ урлӑ кӗпер хывма тытӑнчӗҫ. Икӗ хӗрлӗ полк унчченех шывӑн леш енне мӗнле май тупнӑ, ҫапла каҫма ӗлкӗрнӗччӗ те ӗнтӗ. Артиллерие хӑвӑртрах каҫарас тесе, кӗпере васкаса тумалла пулчӗ,— артиллерисӗр полксем пулӑшусӑр тӑрса юлма пултаратчӗҫ; командирсенчен ку тӗлӗшпе питӗ шиклентерекен хыпарсем килме пуҫларӗҫ. Уральска ҫитнӗ хыҫҫӑн иккӗмӗш е виҫҫӗмӗш кунӗнче Чапаев ирхине ирех—ҫак иртнӗ каҫ кӗпер хывас тӗлӗшпе мӗн ӗҫленине, мӗнпур ӗҫ мӗнле пынине тӗрӗслеме хӑй тухса кайрӗ.

Унпа пӗрле Федор та пычӗ. Симӗс улӑхра пур ҫӗрте те красноармеецсем йӑшӑлтататчӗҫ,— шыв хӗррине вӗсен темӗн пысӑкӑш пӗренесем сӗтӗрсе ҫитермелле пулнӑ... Кашни пӗренене пӗр вӑтӑр-хӗрӗх ҫын сырӑнса илеҫҫӗ те,— тӗрткелешеҫҫӗ, ҫуйӑхаҫҫӗ, пӑтранаҫҫӗ,— ӗҫӗ ҫапах та малалла кайни курӑнмасть... Йӑтса хураҫҫӗ пӗренене ура-

пан малти тěнěлě çине, ěç капла çăмăллăнах каймалла пек ěнтě, анчах купипех сырăнса кěпěрленнипе — каллех нимěн те тухмасть.

— Пуçлăхсем ăçта?— ыйтрě Чапаев.

— Ав, кěпер çинче,— тěллесе кăтартрěç.

Кěпер патне пырса çитрěç. Унта пěренесем çинче çак ěçе тума лартнă инженер канлěнех чěлěм туртса ларатчě. Чапаева курсанах вăл—халăх варринелле кěрсе пытанчě те, тăрать унта нимěн те пулман пекех пăхкаласа; ним хуйхăсăр тапак туртса вăхăта ирттерес вырăнне вăл тах-çантанпах ěç мěнле пынине пăхса тăнă пек пулчě. Кунашкал чухне Чапаев чикěсěр хаяр пулатчě. Вăл ку вăхăтра лерен, шывăн леш енчен куççулěпе тархасласа ыйтнине питě çивěччěн асěнче тытса тăратчě, унти полксем ак-ак пěтме пултарассине вăл кашни минутрах чěринче тытса кулянса çÿретчě... Кашни минут хаклăччě... Пěтěм вăя шеллемесěр васкаса ěçлемеллеччě — ахальрен мар вăл хăй кунта ěçлеме темěн чухлě красноармеец янăччě, хăйěн комендант командинчи салтакěсенчен те çуррине уйăрса панăччě. Çак кěпере тăвасшăн вăл пěтěм вăйне хурса тăрăшрě, кěпер кашни сехетрех хатěр пуласса кěтсе тăчě-тăчě те — сасартăк... сасартăк вăл кунта нимěнле йěрке те çуккине, хăш-пěрисем кунта ахалех çапкаланса çÿренине, теприсем канлěн чěлěм туртса ларнине курчě...

Вăл çавăнтах кěпер çине ěрěхсе кěрсе кайрě те, инженер патне чупса пырса, урса кайнă тискер кайăк пек, нимěн сăмах каламасăр, ăна пěтěм вăйран сулăнса питрен çапса ячě. Лешě, тайкаланса кайса, пěрене çинчен кěçех шыва персе анмарě; йăлтах шурса кайрě, хăйне халех персе пăрахма пултарассинчен хăранипе чěтресе ÿкрě... Чапаев чăнах та револьверне ярса тытрě, Федор çеç ăна, çак кěтмен çěртен сиксе тухнă япаларан тěлěнсе кайнăскер, персе пăрахасран тытса чарчě. Вěçěмсěр тарăхса çиленнě Чапаев чěтресе тăракан инженера чи хаяр сăмахсемпе ятласа пěтерчě.

— Саботажниксем! Сире ман салтаксем шел маррине лайăх пěлетěп эпě! Эсир вěсене пурне те халех пěтерсе тăкма хатěр!!! Кăнтăрлахи апат тěлне кěпер хатěр пулнă пултăр! Ăнлантăн-и?! Хатěр пулмасан, йытта персе пăрахнă пек персе пăрахăп!—терě.

Инженер ҫавӑнтах шыв хӗррипе кускаласа чупма пуҫларӗ. Пӗрене патӗнче хӗрӗхшер ҫын пулнӑ вырӑнсенче халӗ виҫшер-тӑватшар ҫын анчах тӑрса юлчӗ, ыттисене урӑх ӗҫе куҫарчӗ... Красноармеецсем васкавлӑн ӗҫлеме тапратрӗҫ... Ӗҫ кӗрлесе, вӗресе тӑма тытӑнчӗ. Мӗн пулчӗ-ха вара? Икӗ талӑк хушшинче пӗр чӗрӗкне анчах тума ӗлкӗрнӗ кӗпере—к ӑ н т ӑ р л а х и апат т ӗ л н е т у с а т а ҫ и т е р ч ӗ ҫ.

Чапаев ӗҫлеттерме пултаратчӗ; анчах кирлӗ чухне вӑл ҫынсене уйрӑмах хытӑ, хаяр тыткалатчӗ. Вӑхӑчӗ ҫавнашкалччӗ, хӑш-пӗр чухне кирек мӗнле меслетсемпе те килӗшмелле пулатчӗ; вӑл меслетсенчен чи хаярришӗн, чи тискерришӗн—«ӗнселесе илнишӗн» те каҫарма тиветчӗ. Тепӗр чухне командирӑн хӑйӗн салтакӗсенех саламатпа хӗнемелле те пулкалатчӗ, анчах ун пек туни п ӗ т ӗ м ч а ҫ е ҫ ӑ л с а х ӑ в а р а т ч ӗ.

Ҫак кӗпер ҫинче пулса иртнӗ ӗҫ чӑнахах пулмалла пулнӑччӗ-ши? Кун пирки ответ пама май ҫук... Мӗнле пулсан та, кӗпере уйрӑмах хӑвӑрт туса пӗтермеллеччӗ; Чапаев инженера хӑй патне те темиҫе хут та чӗнтеретчӗ, хӑй те кая-кая пӑхса кӗпере хӑвӑртрах туса пӗтерме хушатчӗ, ятлаҫатчӗ, юнатчӗ... Анчах ӗҫ малтанхи пек вӑраххӑн пулса пыратчӗ.

Ҫакӑ вӑл пӗле-тӑркачах саботаж туни пулчӗ-ши, е ӑнсӑртран тӗл пулакан япала пулчӗ-ши — кам пӗлет ӑна!

Анчах ҫак ирхине малалла ниепле те урӑх кӗтсе тӑма май пулмарӗ те, пурпӗрех пулмалли пулса иртрӗ; кӗпер вара... кӑнтӑрла тӗлне хатӗр пулса тӑчӗ. Акӑ ӗнтӗ вӑрҫӑн ӳкӗтлесе ӳкӗте кӗртме ҫук, хаяр, тимӗр пек ҫирӗп логикин тӗслӗхӗсенчен пӗри.

* * *

Чапаевӑн хӑш-пӗр ухмахланса хӑтланни те, пуриншӗн те паллӑ япаласенех ӑнланмасӑр, ҫӑмӑлттайла хӑтланни те пулкалатчӗ.

Ку хутӗнче Уральска пырса ҫитсен, тепӗр эрнерен-и унта, эрне ҫурӑран-и, пӗрре кӑнтӑрла Федор патне выльӑх тухтӑрӗпе комиссар чупса кӗчӗҫ. Иккӗшӗ те чӗтреҫҫӗ; тухтӑрӑн куҫӗсем куҫҫулӗпе шывланнӑ... Чӗтреҫҫӗ, васкаҫҫӗ — мӗн пиркине пӗртте ӑнланма ҫук. (Ветеринарнӑй комиссарсем ахаль те ачаш халӑх вӗт).

— Мӗн пулчӗ тата?— ыйтрӗ Федор.

— Чапаев... ятлаçать... кăшкăрать... перре пăрахма...

— Кама ятлать? Кама персе пăрахасшăн?..

— Пире... пире иксĕмĕре те... Е тĕрмене... е персе пăрахатăп,— тет.

— Мĕншĕн-ха ара?

Федор вĕсене лăплантарса сак çине лартрĕ те, лешсем питех те тĕлĕнмелле, пулма та пултарайман пек ĕç çинчен каласа пачĕç.

Чапаев патне ялтан унăн пĕр паллакан çынни, выльăх-чĕрлĕх ĕçĕпе пĕр сакăр е вунă çул аппаланса пурăннă паллă «коновал» пырса кĕнĕ пулнă. Çынни хурапа шурра курнăскер пулас, мĕнле пулсан та хăйĕн ĕçне лайăх пĕлекенскер пулнă. Паян вара акă Чапаев дивизири выльăх тухтăрĕпе комиссара чĕнсе илет те, вĕсене сĕтел хушшине кĕртсе лартать. Леш хресченĕ те çавăнтах ларать. Чапаев тухтăра хăйĕн умĕнчех çак «коновала» экзамен туса ирттерсе, ăна: вăл та, çак хресчен, «выльăх тухтăрĕ» пулма пултарать тесе, удостоверени пама хушать. Хучĕ çирĕпрех пултăр тесе — комиссар та алă пустăр, тет... Экзаменне хытă ыйтса тумалла, анчах нимĕнле саботаж та пулмалла мар, тет.

«Пĕлетпĕр эпир сире: эсир пĕр мужике те тухтăра тухма памастăр», тет.

— Эпир ăна: апла та капла, тетпĕр; экзамен тума пултараймастпăр, унашкал хут пама пирĕн право та çук, тетпĕр. Вăл вара шартах сиксе тăчĕ те, сĕтеле чышкисемпе шакка пуçларĕ: «Молчать!—тет.— Халех, ман умрах экзамен тунă пултăр, унсăрăн халех тĕрмене хуптаратăп... Персе пăрахатăп!»—тет... Çакăн хыççăн вара комиссар сире асăнса илчĕ: «Атьăр-ха,— терĕ,— экзамен мĕнле тумалли çинчен сиртен кайса ыйтса пĕлер, канашласа пăхар»,— терĕ. Сирĕн ятăра асăннине илтсессĕнех — нимĕн те шарламарĕ. Пилĕк минут срок пачĕ... кĕтет халĕ... Мĕнле пырса кĕрес-ха ĕнтĕ пирĕн ун патне? Персе пăрахать вĕт,— теççĕ.

Иккĕшĕ те вĕсем Клычков çине тем ыйтса тархасланă пек пăхса ларчĕç...

Федор вĕсене хăйĕн патĕнчех хăварчĕ, ниçта та кайма хушмарĕ; вăл Чапаев хăех кунта килессине лайăх пĕлсе тăчĕ. Чăнах та, тепĕр вунă минутран Чапаев чупса та кĕчĕ — хăй хаяр тенипе хаяр, куçĕсем çунса тăраççĕ. Тӳрех Федор умне пырса тăчĕ.

— Эсĕ мĕн?—тесе ыйтрĕ çилĕллĕ сасăпа.

— Эсĕ ху мĕн?—тесе, кулса ячĕ Клычков лешĕн хаяр сассине хирĕç.

— Эсĕ те вĕсемпе-им?—кĕрлесе кайрĕ Чапаев.

— Мĕн тĕлĕшпе?—тесе, каллех кулса илчĕ Федор.

— Интеллигентсем... Халех экзамен тунă пултăр ăна,—терĕ вăл чĕтресе тăракан ветеринарсене,—халех экзамен тума кайнă пултăр!

Федор, ку ĕç чăнахах та шала кĕрсе кайма пултарнине кура, Чапаева хăйĕн яланхи хĕç-пăшалĕпе — лăпкăлăхĕпе çĕнтерме шутларĕ.

Чапаев кăшкăрашса, Федорăн сăмси умĕнчех чышкисемпе силлесе тăрса, ăна та е персе пăрахассипе, е хĕнесе тăкассипе юнаса тăнă вăхăтрах, Клычков ăна ăнлантарса йĕркене кĕртме тăрăшрĕ; вăл çакнашкал удостоверени панипе епле юрăхсăр ĕç тăвассине ăнлантарса пама тăрăшрĕ. Анчах ку хутĕнче Чапаева тăна кĕртме питех те йывăр пулчĕ, çавăнпа Клычковăн кăшт «килĕшес» çул çине тăмалла пулчĕ.

— Акă мĕн,—терĕ вăл Чапаева,—ку ыйтăва эпир кунта татма пултараяс çук. Атя-ха Фрунзене телеграмма ярса пăхар, унран мĕнле тумаллине ыйтса пĕлер. Вăл мĕн çырса ярĕ, çапла тăвăпăр та. Юрать-и?

Фрунзе ятне асăнни Чапаева яланах хăвăрт лăплантараканччĕ. Халĕ те вăл лăпланса ятлаçма пăрахрĕ, Клычковпа пĕр сăмахсăрах килĕшрĕ.

Комиссарпа тухтăра вара тухса кайма ирĕк пачĕç; телеграмма çырса алă пусса хатĕрлерĕç, анчах Федор ăна яма вăхăтлăха тытăнса тăчĕ.

Тепĕр пилĕк минутран пĕрле чей ĕçме ларчĕç. Чей ĕçсе лăпкăн калаçса ларнă вăхăтра вара Клычковăн Чапаева çав халь çырса хатĕрленĕ телеграммăна, çынсене култарас мар тесе, никама та кăтартмасăр çунтарса яма кирлине ăнлантарса пама май пулчĕ. Лешĕ нимĕн те шарламарĕ, вăл Клычковпа килĕшни сăмахсăрах палăрчĕ. Телеграммăна ямарĕç вара...

Çавăн пек йĕркесĕр ĕçсем Чапаевăн темĕн чухлех пулкалатчĕç. Клычков хăй те ун йышши ĕçсене пĕрре кăна мар куркаларĕ, çынсенчен те илте-илте пĕлчĕ; уйрăмах Чапаевăн çынсен распоряженийĕсемпе заявленийĕсем çине хунă резолюцийĕсем çинчен анекдот йышши тĕрлĕрен

сас-хура çӳретчĕ, вĕсенчен легендăллă юмахсем те пулса кайма тытăннăччĕ ĕнтĕ.

Тĕлĕнмелле хăйне йышши çынччĕ çав вăл! Нумай япалана ăнланса çитейменччĕ-ха вăл, нумайăшне чăтма çук юратмастчĕ; анчах çапах та ырă, çутă ĕçсем еннелле вăл хăйĕн ăшĕнчи сисĕмĕпе анчах мар, ăстăнлăнах турттăнма тытăннăччĕ ĕнтĕ. Тепĕр ик-виç çултан унăн хăш-пĕр енĕ, халĕ пĕтме пуçланăскерсем, пачах та пĕтсе ларнă пулĕччĕç; ун чухне вăл хăйне халь интереслентерме пуçланă, хăйсен еннелле тытса чарайми илĕртсе тăракан япаласенчен нумайăшне çĕнтерсе илнĕ пулĕччĕ. Анчах ĕçсем пачах урăхла килсе тухрĕç...

## XIV. ЕÇÇЕН ВĔÇĔ, ФИНАЛĔ

Дивизи Лбищенск енне çул тытса пычĕ. Уральскран Лбищенска çитме çĕр çухрăм ытла. Кунта йĕри-таврах çеçенхир те çеçенхир. Казаксем кунта—хăйсен «килĕнче», çынсем кунта йĕри-таврах вĕсем майлă, вĕсен хутне кĕреççĕ, вĕсене пур çĕрте те пулăшаççĕ. Хĕрлĕ полксене тăшманла кĕтсе илеççĕ. Кăшт та пулин халăх юлнă станицăсенче пулăшасси çинчен ĕмĕтленме мар, пĕр ырă сăмах та илтме çук; пуринчен ытла — çак казак станицисем хĕрлĕ чаçсем çитес умĕн пĕтĕмпех тасалса, пуш-пушах тăрса юлаççĕ, ăçта та пулин пĕр-пĕр манса юлнă карчăка анчах тĕл пулма пулать. Каялла чакакан казаксем халăха «пуç касакан большевиксемпе» хăратса пĕтернĕ пулнă; станицăсенчи халăх çавăнпа килти мĕнпур япалине лавсем çине тие-тие тухнă, кĕлетсенче тырă анчах юлкаланă; ăна та пулин час-часах çунтарса янă е хăйăрпа хутăштарса, пылчăкпа çăрăнтарса, юрăхсăра кăларса хăварнă. Çăлсене, пусăсене пур çĕрте те тенĕ пекех наркăмăш ярса, ĕçме юрами туса хăварнă, нумайăшне çурри таран тăпра тултарса лартнă; пĕр пусă кутĕнче те витре таврашĕ хăварман. Мĕн çĕмĕрме май пуррине йăлтах çĕмĕре-çĕмĕре, юрăхсăра кăларса хăварнă. Кирлĕ çурт-йĕре çĕмĕрсе ишсе антарнă, çунтарса пĕтернĕ. Казаксем кунтан каялла урăх таврăнмалла марах тухса кайнă пек туйăнатчĕ. Кунта вĕсем, Лбищенск хыçĕнче, пĕр вĕçĕмсĕр çапăçса чакса пычĕç; пит хаяррăн çапăçатчĕç, çине тăрса, тӳсĕмлĕ, пĕлсе кĕрешетчĕç...

Чапаев дивизийĕн штабĕ Уральскра тăчĕ, малти чаçĕсем темиçе вуншар çухрăм мала кайнăччĕ. Снарядсем, патронсем, обмундировани, апат-çимĕç çитместчĕ... Выçă красноармеецсем тырă кашласа ларакан уй-хирсене тапта-тапта тухатчĕç, анчах хăйсем çăкăрсăр, апат-çимĕç-

сĕр аптăраса пурăнатчĕç. Ун чухне пурнăç кунта питĕ йывăрччĕ. Қăвакарса, çĕрсе кайнă çăкăр та фронтра тепĕр чухне эрни-эрнипех пулмастчĕ, красноармеецсем вара чăннипех выçă ларатчĕç... Эх, епле тӳсме çук йывăрччĕ çав выçă, хаяр кунсенче!

Чапаевпа Федор кашни кун тенĕ пекех автомобильпе е пĕр бригадăна е тепĕрне çите-çите курса çаврăнатчĕç. Çулсем кунта сарлака, тӳп-тӳрем, питĕ хăвăрт çӳреме пулать. Машина çĕмĕрĕлсе каяс-тăвас пулсан вара (ытла та час-часах пулкалатчĕ-çке вара вăл), лашасем çине утланса, пĕр талăк хушшинчех çĕр аллăшар çухрăм каятчĕç; тул çутăлнă чухне тухса кайса, каç пулнă çĕре Уральска таврăнатчĕç. Чапаев çеçенхирте çӳреме пит лайăх пĕлетчĕ; станицăсемпе хуторсем ăçта ларнине, мĕнле çулпа кайсан ăçта тухассине вăл тĕплĕн пĕлетчĕ. Анчах пĕрре вăл та çылăха кĕрсеччĕ — çĕтсе кайнăччĕ. Çавăн чухне çеçенхирте çĕтсе çӳрени çинчен Федор хăйĕн дневникĕнче «çĕрлехи вут çутисем» тесе çырса хăварнă. Çавăнта çырнине эпир кăштах çак кĕнекене çырса илес-шĕн; анчах ăна вуланă чухне çакна манмалла мар: çеçенхирте Чапаевпа пĕрле мĕн-мĕн çинчен шухăшласа çӳренĕ шухăш-туйăмсем Федор çырнинче вуннăмĕш пайĕ те сăнланса юлайман; çакна лайăх асра тытмалла... Çак «çĕрлехи сăнсенчен» нумайăшне вăл кирлĕ пек лайăх çырса парайман, çитменне тата вăл «сăнсене» ахаль те сăмахпа çырса пама питĕ йывăр.

## ÇĔРЛЕХИ ВУТ ÇУТИСЕМ

Елань патне çитсе килмеллеччĕ. Нумаях пуçтарăнса-туса тăмарăмăр: лашасене йĕнерлерĕмĕр те, хамăрпа пĕрле пĕр вуникĕ шанчăклă юлташ илсе, тухса кустар-тăмăр... Чаган урлă каçса кайсан, çеçенхир урлă, лаша виллисемпе шăршланса пĕтнĕ çул çуммипе тӳрех кӳлĕ патне çул тытрăмăр. Тырăсем хушшипе, çӳлĕ курăксем çийĕнчен аштарса, чечексемпе илемленсе, чăпарланса ларакан улăхсем тăрăх, лачака пек кӳлĕ патне çитсе тух-рăмăр. Тăвайккине хăпарнă хыççăн лашасем çинчен ан-тăмăр та шыв хĕррине пытăмăр. Кӳлĕри шыва утсем ĕмĕтсĕрленсех ĕçрĕç, эпир—пушшех те ĕмĕтсĕрленерех. Вăл вăхăтра пилĕк-ултă сехет те çитнĕччĕ ĕнтĕ. Малалла пĕр вăтăр çухрăм кайса та, урăх пĕр пĕчĕк хутор та тĕл пулаймарăмăр. Қашни айлăмах ана-ана шыв шырарăмăр,

анчах ниепле те тупаймарăмăр; ĕçес килнипе тӳсме çук асаплана пуçларăмăр. Таçта аякра, сăртсем тăрринче, юланутлă çынсем курăна-курăна çухалатчĕç; ку вăл— казаксен хуралçисем курăнать. Кашни минутрах кунта казаксем пĕр-пĕр вартан сасартăк сиксе тухса тапăнассине кĕтме пулать. Çапла кĕтмен çĕртен тапăнма питех те юратаççĕ вĕсем. Аçта та пулин пытанса тăраççĕ те, вара хăйсенчен темиçе утăм ирттерсе ярса, хыçалтан çил-тăвăл пек килсе тапăнаççĕ; ахăрашса, шăхăрса, çутăлакан хĕçĕсене йăлтăртаттарса, сăннисене силле-силле çитсе,—винтовкуна çурăм хыçĕнчен хывса илме те ĕлкĕрейместĕн,—вĕсем çавăнтах касса ваклама, сăннисемпе тире-тире тăкма тытăнаççĕ. Çавăнпа пур çĕрелле те çаврăнкаласа пăхса пыратпăр, кашни шăтăк-çурăка ухтарса тухатпăр, пĕрмаях хатĕр тăратпăр.

Тĕтĕм тĕслĕ çăмăл пĕлĕтсем сасартăк пăтранчăк тĕслĕ пулса, çăраланса кайрĕç; унтан вĕсем хура пĕлĕтсем пулса, аялах анчĕç. Çанталăк хăвăрт тĕттĕмленме пуçларĕ. Çил, хирсем тăрăх шавласа, уласа кайса, хăрушă хура пĕлĕтсене пĕр çĕре хăваласа пухрĕ.

Акă пирвайхи тумламсем те ӳкме тытăнчĕç—татах ӳкрĕç, татах, татах... Чăн-чăн çеçенхир çумăрĕ,—хăлхана çурсах пăрахса, çине-çине кĕрслеттерсе тăракан вăйлă аслатиллĕ çумăр—чашлаттарса çума тапратрĕ... Пурте часах йĕпенсе кайрăмăр... Эпĕ юри тенĕ пекех пĕр çӳхе кĕпепе анчахчĕ; çавăнпа пуринчен малтан лачкам шыв пулса исленсе кайрăм. Шăнтма пуçларĕ, вĕрилетсе пăрахрĕ; алăсем хамăн чĕтреççĕ, шăлсем шатăртатаççĕ. Аякра темле ишĕлсе пĕтнĕ çуртсем курăнса кайрĕç, ĕлĕкхи ял юлашки пулас. Вĕсен çывăхĕнче темĕнле çынсем йăшăлтатни палăрать...

Пырса çитрĕмĕр те, икĕ обознике тĕл пултăмăр. Мĕскĕнсем, нимĕн тума пултараймасăр, йăлтах халран кайнă. Вĕсен полкĕ таçта çитиех малалла кайнă, анчах вĕсен акă кунта инкек пулнипе тăрса юлмалла пулнă; кустăрмисем ванса кайнă, çитменне пĕр лаши кайса ӳкнĕ те тăраймасăр выртать. Япалисене вĕсем пĕтĕмпех çăл патне пăрахса хăварнă та, хăйсем—полкне хăваласа çитме тухнă, анчах çул çинче казаксен аллине çакланнă... Вĕсем патĕнче эпир четверть кĕленчи тупрăмăр та, ăна тилхепепе çыхса, вĕçне чул çыхса ярса, çăла антартăмăр... Казаксем çăлсене час-часах наркăмăш ярса пăсса

хăварнине пĕлетпĕр пулин те, çак хăрушă шухăша сирсе яма тăрăшатпăр,—ĕçес килни çак шухăша çĕнтерсе мантарать. Кĕленчен ансăр çăварĕнчен шыв кĕрсе туличчен чылай кĕтсе тăмалла пулчĕ; шыв ĕçсе тăраннă çĕре вара тĕттĕмленсех çите пуçларĕ. Курăк ăшĕнче çул йĕрĕ кăшт çеç курăнса выртать, анчах ăçталла каймаллине лайăх пĕлнĕ пирки, эпир чăрăннă вырăнтан шанчăклăнах тапранса тухрăмăр. Пĕр тăватă çухрăм кайсан, аяккалла пăрăнса, малта вĕлкĕшсе тăракан вут çути çине çеçенхир урлă тӳрех кайма шут тытрăмăр. Вăл çутă патне çитме пирĕн шутпа тата тепĕр вунпилĕк çухрăм çеç каймалла пекчĕ; тепĕр сехет çурăран унта çитетпĕр, тесе шутларăмăр. Çутă çинчен шухăшларăмăр-шухăшларăмăр та, вăл хамăр цепьсенче чĕртнĕ кăвайт çути пулĕ, тесе шутларăмăр; пирĕн мар пулсассăн та пурĕпĕрех: хамăрăн цепь урлă сиксе каçас çук, пурĕпĕр вĕсем çине пырса тăрănмалла, терĕмĕр... Пыратпăр çапла, нимĕн те шарламастпăр. Çумăр çăвас умĕн, типĕ чухне, пĕрмаях юрă юрласа, кăшкăрашса, шăхăркаласа пыраттăмăр; халĕ вара пĕтĕмпех шăпланса лартăмăр; юрласси те, хыттăн каласасси те пĕтсе ларчĕ. Çутă çинчен «хамăрăн цепь урлă пурĕпĕр сиксе каçас çук» тесе калаçкаларăмăр пулин те, çапах та кашнин пуçĕнчех:

«Е, чăнахах та, йăнăшса, тӳрех казаксен аллине пырса лексессĕн?», тенĕ шухăш та пурччĕ.

Çак шухăшсем ăша çунтараççĕ; пуçа тем те пĕр пыра-пыра кĕрет. Чапаев кăлăхах шăрпăк хыççăн шăрпăк çутса, картă тăрăх пӳрнипе йĕрлесе çӳрекелесе, сăмсипе компаса сĕртĕнсех, темскер пăхса пĕлме хăтланчĕ,—ку ĕçрен нимĕскер те тухмарĕ; малалла çаплах ăçта каймаллине пĕлмесĕр, нимĕн тĕлли-паллисĕрех пымалла пулчĕ. Малти çутă пĕрре хыпса илсе çуталса каять, тепре сӳнес пекех пĕтсе ларать; мĕлтлетсе сӳнессех çитнĕ чухне вăл таçтах инçетре пек, тĕксĕммĕн курăна пуçлать, тĕлĕнмелле хăрушшăн туйăнса каять; вут çути вырăнне вăл темле усал-тĕсел пек, пире юри пăтраштарса çӳрекен япала пек курăнма тытăнать. Эпир малтан ку çутă патне çитме пурĕ те çич-сакăр çухрăм анчах пулать тесе шутласаттăмăр; анчах вунă çухрăм ытла та кайрăмăр пулĕ, çутă малтанхи пекех пĕр улшăнмасăр мĕлтлетсе çунса тăрать, пĕрре çывăхарах килнĕ пек пулать, тепре каллех таçта инçете-инçете кайса çухалать... «Ку

чӑнахах та кӑвайт ҫути-ши?» тесе шухӑшла пуҫларӑмӑр. «Тен, таҫта аякри юпа тӑрринче мӗнле те пулин хунар ҫунса лармасть-ши? Анчах мӗншӗн вӑл пиртен пӗрмаях аяккалла кайнӑ пек, таҫта тарнӑ пек курӑнать-ха?» — терӗмӗр.

Урӑх вӑра малалла каяс мар терӗмӗр. Ҫул ҫинчен эпир тахҫанах таҫта аяккалла пӑрӑнса кайнӑ ӗнтӗ. Лашасем ҫӳлӗ ҫӑра йӗпе курӑк тӑрӑх ашса пыраҫҫӗ; курӑка вӗсем чӗрнисемпе ҫаклатаҫҫӗ те, нӑчӑртаттарса тата-тата пӑрахаҫҫӗ. Сылтӑмра тепӗр вут ҫути курӑнса кайрӗ... Вӑл та малтан сывӑхрах ҫуннӑ пек туйӑнчӗ, анчах пӗр ҫухрӑм пек кайсан, кунта та ӗҫ тем ытла ырах маррине туйса илтӗмӗр... Ав тата тепӗр ҫутӑ, иккӗмӗшӗ, виҫҫӗмӗшӗ... Хуп-хура, пушӑ, лӑпкӑ ҫеҫенхирте пыма хӑрушӑ пулса кайрӗ... Ҫумӑр пӗрре чарӑнать, унтан ҫӗнӗрен килсе чашлаттарма тытӑнать... Ы-ы-ых!.. Сивӗ-ҫке ытла та!.. Ытла та начар-ҫке вӑл сивӗ ҫумӑр шывӗ мӑй тӑрӑх ҫурӑм хыҫнелле, кӑкӑр ҫинелле, ҫӗлен шӑва-шӑва иртнӗ пек юха-юха ана пуҫласан... Эх, халӗ пӳрте кӗрсе, ӑшӑ кӑмака ҫумне тӑрса, кӑштах ӑшӑнса илесчӗ... Анчах пирӗн тата ҫӗрӗпех ҫакнашкал сивӗре, ҫакӑн пек ҫумӑр айӗнче йӗпенсе, пуҫа ниҫта чикеймесӗр сулланса ҫӳремелле вӗт-ха. Шухӑш-кӑмӑлсем хамӑра курас килми таранах пӑтранса, тӗксӗмленсе ҫитрӗҫ. Пыратпӑр та пыратпӑр — анчах ӑҫталла? Вӑхӑчӗ-вӑхӑчӗпе пире каялла кайнӑ пек, пӗрре иртнӗ вырӑнсемпех калле таврӑннӑ пек, е пӗр вырӑнтах, темле тухатса лартнӑ ҫӗртех ҫаврӑнса ҫӳренӗ пек туйӑна пуҫлать... Пӗр-пӗр енчен сас-чӳ илтӗнсенех, пуҫсене ҫав еннелле хӑвӑрт ҫавӑрса, тинкерсе пӑхатпӑр: казаксен разъезчӗ мар-ши? тетпӗр. Тен, курса пӗлчӗҫ пулӗ... йӑпшӑнса килчӗҫ пулӗ... пирӗн йӗрпе пирӗн хыҫҫӑн пыраҫҫӗ пулӗ... халех акӑ... пӗрре... иккӗ... виҫҫӗ... Шуйттан пӗлет-и, тен — мӗншӗн ҫав тери ҫыннӑн пӗтӗм вӑй-халне пусарса лартать ҫӗрлехи тӗттӗм! Вӑл чи хӑюллӑ, чи харсӑр ҫынсене те вӑйсӑрлатса пӑрахать, иккӗлентерсе шухӑшлаттарать, хӑравҫӑлантарса лартать... Ав аякра темӗнле хураскер, вӑрӑмскер, пӗр вӗҫӗмсӗрскер, кӗрнексӗрскер курӑнать пек... Икӗ ҫынна кайса пӑхма ятӑмӑр. Вӗсем унта икӗ енчен юрттарса кайрӗҫ те, таврӑнсан, — ку ҫапман тырӑ капанӗсем сарӑлса лараҫҫӗ, тесе пӗлтерчӗҫ... Ҫакӑнта чарӑнса, тул ҫутӑласса капан-

сем кутӗнче ларса, кӗтсе илме шут тытрӑмӑр... Утсем ҫинчен йӗнерсене хывмарӑмӑр, тӑлласа та ямарӑмӑр утсене. Қашни икӗ сехетре икшер ҫын улшӑнса тӑрса, ҫӗрӗпех хурал тӑмалла турӑмӑр.

Винтовкӑсене, авӑрланӑскерсене, тӑшман сасартӑк килсе тапӑнас-тӑвас пулсан хатӗр тӑма, алӑ айӗнчех тытса выртатпӑр... Қапансем ҫумне тӗршӗнсе вырнаҫрӑмӑр, пӗчӗк шӑтӑксем туса, улӑм ӑшне кӗрсе лартӑмӑр... Ҫумӑр пӗр минутлӑха та чарӑнмасть... Эпӗ лайӑхах вырнаҫса ларнӑччӗ, ҫӗр ҫине улӑмне те сахалах мар пӑрахса тултарнӑччӗ; анчах пилӗк-улт минутранах хама-хам лачакана кӗрсе ларнӑ пекех туйӑнса кайрӗ; ҫак йӗпе, сивӗ, ирсӗр ҫанталӑкра пӗтӗм шухӑш-кӑмӑл чӑтма ҫук кичеммӗн пӑтранса тӑчӗ. Чапаев юнашар, пичӗпе витӗрех йӗпеннӗ улӑм ҫине тӑрӑнса ларать; унтан вӑл кӗтмен ҫӗртен труках... юрласа ячӗ;—хуллен, лӑпкӑн, савӑнӑҫлӑн юрла пуҫларӗ вӑл хӑйӗн: «Сижу за решеткой в темнице сырой...» ятлӑ юратнӑ юррине... Ҫакӑ вӑл ытла та кӗтмен ҫӗртен, ниепле те кӗтме май ҫук чухне пуҫланса кайрӗ; ҫавӑнпа малтан эпӗ: йӑнӑш илтмерӗм-ши, мана юрланӑ пек туйӑнать кӑна мар-ши? — терӗм... Анчах Чапаев чӑнласах юрларӗ...

— Василий Иванович, мӗн эсӗ?—терӗм эпӗ.

— Мӗн вара?—тесе сасӑ пачӗ вӑл хуллен.

— Илтеҫҫӗ вӗт. Е ҫывӑхра разъезд пулсан?

— Илтмеҫҫӗ, эпӗ хуллен ҫеҫ... Юрламасан, ачам, сивӗ ытла та, шыв ҫинче ларма та тискер, — терӗ.

Вӑл ҫапла ӑшшӑн, лайӑх каланинчен мана хама та темле ҫӑмӑлрах пулнӑ пек туйӑнса кайрӗ.

— Акӑ, Федя, эпӗ ҫакна аса илсе ларатӑп, — терӗ Чапаев.—Пӗрре мана пушхирте иккӗн ҫӗтсе кайни ҫинчен каласа кӑтартнӑччӗ. Ну, халӗ акӑ эпир санпа ҫухалнӑ пек инкек пулнӑ ӗнтӗ вӗсен,—анчах вӗсем иккӗн ҫеҫ пулнӑ... Пӑрахса кайнӑ-и ӗнтӗ вӗсене, хӑйсем кая тӑрса юлнӑ-и—пӗлместӗп,—анчах ларнӑ та лараҫҫӗ вӗсем хӑйӑр ҫинче; хӑйсен ниҫта та кайма ҫук... Эпир хӑть ҫӗрле... Ку юрать-ха... Хӗвел тухсан—хамӑра кирлине шыраса тупатпӑрах эпир, а вӗсен ӑҫта каяс? Ҫӗрле те, кӑнтӑрла та—йӗри-таврах ҫара хӑйӑр: унталла та хӑйӑр, кунталла та хӑйӑр, урӑх нимӗн те ҫук... Пӗрер фляжка шыв пулнӑ вӗсен—ӗҫмеҫҫӗ. Мӗншӗн тесен, нихӑшӗн те

вилесси килмест,—пĕтĕмпех ĕçсе ярсан вара, вилĕм çитессине пĕлеççĕ хăйсем. Шывпа анчах пурăннă. Çапла виçĕ кун шавах пĕрле çӳренĕ вĕсем, çапах та нимĕн те тупма пултарайман, нимĕн вĕçĕ-хĕрри те курăнман... Тăваттăмĕш кунĕнче пĕри уринчен ӳкнĕ. Эпĕ вилетĕп, тенĕ; эсĕ те манпа юнашар вырт: пĕрле çӳрерĕмĕр, пĕрлех выртăпăр, тенĕ... Ӳкнĕ те хăйăр çине, пĕтнĕ... Лешĕ, пĕччен юлни, тусĕ умĕнче ларсан-ларсан, пăхать те— лешĕ шăлне те йĕрсе părахнине, тăхлан куçĕсене чарса părахнине курах каять. Çав тери хăрушă пулса кайнă ăна, пĕчченскере, пушхирте... Каясчĕ унăн ку вырăнтан, анчах шел пек те туйăнать. Çаврăнкаласа çӳрет-çӳрет те вăл, каллех юлташĕ енне çаврăнса пăхать, вырăнне çухатасран хăрать... Лешĕ вилнĕ пулин те, çапах та ăна иккĕн пек туйăнать... Вара акă мĕн пулнă, кур-ха эсĕ. Ун тĕлне тĕвесем килсе тухнă—караван иртсе пынă-мĕн çав тĕлтен... Çапла вара чĕрех юлнă çын... Юлташне хăйăр ăшне пытарса хăварнă... Вăт ку—пулнă-тăк пулнă ĕç! Лере унта, йĕри-таврах темиçе пин çухрăма хăйăр сарăлса выртать пулсан, ниçталла та каяйман, ачам... Ку мĕн ара?—сасартăк çаврăнса пăхрĕ те вăл хыçалалла, сиксе тăчĕ.

Федор—ун хыççăн, Петя та сиксе тăчĕ... Пурте винтовкисене ярса тытрĕç, кĕтсе хытса кайрĕç. Тепĕр темиçе секундран тĕттĕмрен тухакан хăйсен вестовойĕн кĕлеткине курăнса кайрĕ. Ун хыççăн, шăлĕсемпе кăмпăртаттарса, нăш-нăш шăршлакаласа лашасем тухса тăчĕç... Пурте лăпланса, каллех ӳте тирĕнсе ыраттаракан хытă кĕлтесем хушшине кĕрсе выртрĕç...

— Эсĕ мĕн пирки каласа патăн-ха ăна?—тесе ыйтрĕ Чапаевран Федор.

— Аса килчĕ-çке... Эпĕ хама йывăр килсе тухсан, яланах—кама манран та йывăртарах кун-çул курма тивнине аса илме юрататăп. Çынсем манран та йывăр асап-хурлăх тӳссе иртнине куратăп та вара, манăн та мĕншĕн тӳсес мар-ха? тетĕп. Е акă тата çакна та илтнĕ эпĕ: пĕрре тинĕс çинче вăйлă çил-тăвăл карапа çĕмĕрсе тăкса путарнă, тет те, пĕр матросĕ пĕренене ыталаса тытса, хумсем тăрăх икĕ талăк ишсе çӳренĕ, тет. Ирĕксĕрех вара шухăша каятăн: епле тӳснĕ-ха вăл—унăн урисем те шывра пулнă вĕт, хăй те кашни самантрах шыва чикĕнсе кайма пултарнă? Вăл çапах та чĕрĕ юлнă.

Калаçнă майĕпе пурте тачăрах пухăнса лартăмăр. Петька пит тимлĕн итлесе ларать. Ӳсĕрес килнĕ вăхăтра вăл çăварне аллипе хупласа, пуçне улăм ăшнелле чикет те, ӳсĕрес вырăнне темле путтишле хăрăлтатса илет. Унăн хура-çутă куçĕсем тĕттĕмре кушакăнни пек йăлтăртатса, çутăлса тăраççĕ... Чапаев каласа пĕтерсессĕнех, Петька ун çине хăвăрт çаврăнса пăхрĕ те, ун еннелле туртăнчĕ,—тем çинчен унăн хăйĕн вилес пекех каласа кăтартасси килни уççăнах палăрчĕ.

— Эпĕ акă... Калама юрать-и?—тесе ирĕк ыйтрĕ вăл Чапаевран.

Анчах лешĕ, ăна хирĕç чĕнмесĕр, уссине якаткаласа ларчĕ.

— Эпĕ акă,—каллех калама тытăнчĕ Петька,—Дон çинче, вунсаккăрмĕш çулта... Казаксем пире, пĕр çирĕм çынна, сарайне хупса питĕрсе лартрĕç. Сирĕн хăшĕ кунта большевик иккенне ирхине палласа илĕпĕр, терĕç... Каласшăн пулмасан, пурте большевиксен вырăнне каятăр!—терĕç. Пĕр сăмахпа каласан, апла та, капла та—вилĕм. Персе пăрахасса лайăх пĕлетпĕр... Эпир вара пĕр хăмана майĕпен: кăшăрт, кăшăрт тутаркаласа, хăйпăта пуçларăмăр та, хăма пĕчĕккĕн хăйпăнса та кайрĕ... Эпĕ вĕсен хушшинче чи пĕчĕкçиччĕ. «Эсĕ малтан тух», терĕç вĕсем мана; «анчах лекес-тăвас пулсан, пирĕн çине ан кала... хамах çĕмĕрсе тухрăм, те... Хуралçа çавăнтах чулпа е мĕнпе май килет унта, çапса ӳкер»,—терĕç. Пĕр сăмахпа каласан—шăвăнкаласа тухрăм эпĕ. Каçĕ вара, кĕçĕрхи пекех: çумăр çăвать, сĕм тĕттĕм, нимĕн те курăнмасть... Эпĕ урана ху-уллен хушăка чиксе тулалла кăлартăм—нимех те çук... Вара кăштах пĕшкĕнтĕм.. хулпуççипе тĕксе хушăка аслăлатрăм... хăрах аллăмпа пуçăма тул енне кăлартăм, унтан иккĕмĕш урана та кăларса ярса пусрăм... Пăхатăп та—çĕр çинче тăратăп, сарай хыçне тухнă, кĕтес хыçĕнче вара—шăпах хуралçă тăрать... Выртрăм та хырăм çине, шутлатăп: малтан систермесĕр шуса пырса, ăна пăхса илес пулать,—ларать-и вăл, çӳрет-и? тетĕп... Шуса кайрăм вара пылчăк тăрăх, хурт пек явкаланса; ачасем пуçĕсене çурăк витĕр кăларса пăхса тăраççĕ... Вăл каска çинче ларать, пуçне çĕрелле уснă; çывăрмасть-и, тен? тесе шутлатăп ăшăмра. Алла кирпĕч тытрăм та,—кирпĕчне сарайĕнчех панăччĕ мана,—шуса çитсе, пĕрех патăм ăна тăнлавĕнчен. Хут-

ланса анчĕ, шеремет, çĕр çине; кăшкăрма та ĕлкĕреймерĕ... Эпĕ вара тата пĕр тăвată хут çапрăм—чĕп-чĕр юн пулса пĕтрĕм... Вара ушкăнĕпех тухрăмăр эпир; сарай ял хĕрринчехчĕ... Упалене-упалене, хырăмпа шуса пырса,—эпир вара никама систермесĕрех тарса çухалтăмăр... Хамăраннисенчен хăш тĕлтерехре уйрăлса юлнине астăваттăмăрччĕ—тупрăмăр вĕсене... Э-эх, ну хăраса пĕтсеттĕмĕр те çавăн чухне!..

— Хăрани-хăрани-ха вăл, çапах та чĕрĕ юлнă акă,—тесе, шухăшне уçăмлă палăртмасăр асăрхаттарчĕ Чапаев.

— Чĕрĕ пулмасăр!—тесе çирĕплетрĕ Петька, хăйĕн сăмахне итленипе савăнса кайнăскер.—Пурте чĕрĕ юлтăмăр — çапла ушкăнĕпех упаленсе çитрĕмĕр хамăраннисем патне... Чăн та тĕрĕс!—терĕ.

— Ĕненетĕп,—тесе кулса илчĕ Чапаев.

Петька каллех çăварне аллипе хупларĕ те, улăм ăшнелле икĕ-виçĕ хут хăралтатса ӳсĕрсе илчĕ...

— Авă çывăраççĕ,—тесе кăтартрĕ вăл Чапаева, йĕритаврах выртакан çынсем енне тĕллесе...—Эпĕ акă, мĕн те пулин çакнашкал пулсан, нихçан та çывăраймастăп.

Анчах ĕшенни хăйĕнне турĕ-турех. Қалаçма чарăнса, каллех капан ăшнерех кĕрсе выртсан, пурте çăмăл ыйхăпа тĕлĕрсе кайрăмăр; кăшт сас-чӳ пулсанах вара вăрана-вăрана каяттăмăр... Çапла тул çутăличченех тĕлĕркелесе выртрăмăр; кăшт сĕмленсе çутăла пуçласанах вара,—ывăннăскерсем, йĕпенсе пĕтнĕскерсем, сивĕпе чĕтрекенскерсем, канлĕ ыйăхсăр çĕр каçа асапланса пĕтнĕскерсем,—ура çине тăтăмăр, хăвăрт юрттарса кайнипе ăшăнма шутларăмăр. Чăнах та, Чапаев картă тăрăх пăхса, хăш çулпа каймаллине суйласа илсенех, çывăхри сăрт еннелле чуптартăмăр та, часах хамăра-хамăр вăйлăрах, маттуртарах тыткала пуçларăмăр. Хĕвел тухма тытăнсан вара, пĕтĕмпех савăнса кайрăмăр. Сăрт çине хăпарса çитсен, обоз пынине асăрхаса, ун еннелле кайма шутларăмăр; анчах обозниксем, юланутлă çынсене курсан, сиккипех тарма пикенчĕç... Петька вĕсем хыççăн вĕçтерсе кайрĕ; ку камсен обозĕ — хамăрăн-и, çук-и,—çавна çех те пулин çитсе пĕлме васкарĕ. Ыттисем пĕр тикĕс юрттарса пытăмăр... Обоз хамăранни пулчĕ,—шăпах эпир халь каякан бригада обозĕ... Тепĕр çур сехетрен

Еланьхӑйӗн куҫса ҫӳрекен штабӗпе вырнаҫса тӑнӑ пӗр пӗчӗк пӳрт патне ҫитсе тӑтӑмӑр... Ялӗ ку—Усиха ятлӑччӗ.

. . . . . . . . . . . . . . .

Ултӑ сехет те ҫитменччӗ-ха, Еланьпе комиссара ҫапах та ура ҫинче тӗл пултӑмӑр. Вӗсем пӳрт тӑррине хӑпарса, бинокльпе пӗр енчен тепӗр еннелле ҫаврӑнкаласа, инҫете тинкерсе пӑхса, пӗр-пӗринпе тем ҫинчен канашлакаласа тӑратчӗҫ. Хӑйсем патне ҫывхарса килекенсене курсан, вӗсем ҫӗре анса, килнисене пӗр пӗчӗк ҫеҫ, таса мар, тӗттӗм пӳрте илсе кӗчӗҫ. Иккӗшӗн те сӑн-пичӗсем пӑхма ҫук хӑрушӑ; шурӑхса-симӗсленсе, виле тӗслӗ пулса кайнӑ питсем; куҫӗсем пиҫсе, хӗрелсе кайнӑ; хӑйсем пӑхма ҫук асапланса пӗтнӗ,—нимӗн тума пӗлмесӗр аптӑранӑ пек пӑхаҫҫӗ. Иккӗшӗ те гимнастеркӑсӑрах, аялти кӗпепех,—пӳртре шӑрӑх та пӑчӑ пирки тумтирпе ниепле те ӗҫлеме май ҫук. Ҫитменне Еланьҫара уранах. Хуралса, кирӗкленсе ларнӑ урисем тӑрӑх, вӑл мунчара темиҫе уйӑх та ҫӑвӑнманнине курса пӗлме пулать. Ҫывӑрмасӑр ирттернӗ каҫсем, яланах тарӑн шухӑшласа ҫӳрени ун аллисене чӗтрекен туса янӑ; васкаса калаҫнӑ чухне ун сасси тытӑна-тытӑна ларать, сӑмахӗсемпе вӑл пӑвӑна пуҫлать, пырӗ тӗлӗнче палӑракан пысӑк мӑкӑль пӗрре пытанать, тепре каллех сиксе тухать; типсе ларнӑ шурӑхнӑ тутисем ҫуркаланса пӗтнӗ. Еланьхаль пӗр сӑмах та лӑпкӑн калаҫма пултараймасть: вӑл ҫинҫен ҫухӑрса ҫеҫ калаҫать, калаҫнӑ май аллисемпе хӑлаҫланса сулкалать, чышкисемпе кӑкӑрӗнчен ҫапа-ҫапа илет, уҫҫӑн курӑнакан япаланах ӗнентерсе пама тӑрӑшать; сӑмахран, вӑл патронсемпе снарядсӑр ҫапӑҫма юраманни ҫинчен темӗнччненех ӗнентерсе калаҫрӗ.

Кунта йӗри-таврах тӳрем вырӑн, пӳрт тӑрринчен таҫта ҫитиех инҫе курӑнать; ҫавӑнпа Еланьбинокль витӗр казаксем ӑҫта тӑнине тахҫанах курса, сӑнаса пӗлнӗ.

— Патронсем пулаҫҫӗ-ши ҫапах та, Чапаев юлташ?—тесе ыйтрӗ вӑл хуҫӑлнӑ сассипе, Чапаева куҫӗнченех пӑхса, вӑл мӗн калассине кӗтсе тӑрса...

— Илсе ҫитереҫҫӗ акӑ... кӳме хушнӑ,—терӗ Чапаев.

— Хушнӑ пулӗ те вӗт... эпӗ урӑх капла чӑтаймастӑп!—терӗ.

— Ара, тӑхта ӗнтӗ... Ӑҫтан халех илсе парам сана... хампа илсе ҫӳреместӗп вӗт эпӗ,—ӳкӗтлет ӑна Чапаев.—Калатӑп вӗт — илсе килеҫҫӗ тесе, халех ҫитмелле ӗнтӗ...

— Пĕлетĕр-и,—тесе, пĕрин çинчен теприн çине ăсран кайнă çын пек вĕрилĕн пăхкаласа илсе калаçать Елань,— комиссарпа эпир çак çурт тăрринчен кунĕ-кунĕпех анмастпăр. Кунта урăх ниçтан та пăхма çук... Кунне тăватшар атака тăваççĕ, подлецсем... Тăватшар атака! Эпир вĕсем мĕнле хатĕрленнине те, мĕнле хум пек капланса килнине те йăлтах курса тăратпăр,—кунтан пĕтĕмпех курăнать. Хирĕç тивĕçлĕн кĕтсе илме вара — ниепле те май çук: патронсем пĕтрĕç... Ĕнер виççĕмĕш çын урлă пеме хушсаттăм ĕнтĕ... Унтан — пилĕк çын урлă... Халĕ вунă çынтан пĕрерĕн переççĕ... Вунă утăма çывăхарса çитме паратпăр. Алăри бомбăсемпе анчах çăлăнатпăр... Нимĕнле май та юлмарĕ... Вĕт тă-ва-тă хут кунне! Вырăнĕ вара... хăвăрах куратăр,—тӳп-тӳрем çĕр...

— Ырана валли приказ илтĕр-и?—тесе ыйтрĕ те Чапаев, каялла çаврăнса пăхрĕ.

— Илтĕм... Кунта пурте хамăрăн,—тесе лăплантарчĕ ăна Елань.—Анчах мĕн тăвас-ха—патронсăр эпĕ нимĕн те тума пултараймастăп... Пушă алăпа ним тума та çук...

— Пĕлетĕп ĕнтĕ, пĕлетĕп,—тесе, Чапаев та çиленме тапратрĕ,—мĕн пустуй калаçатăн? Сана çийĕнчех пулăшу пулать. Шмарин тапратать... Казаксем хăйсен вăйне ăна хирĕç яраççĕ, эсĕ вара...

— Паллах вăл,—тесе килĕшрĕ Елань.—Анчах... патрон çуккиех хуплать акă...

— Снарядсем мĕнле тата?—тесе ыйтрĕ Чапаев.

— Ара, вăл та çавнашкалах. Ну, ку тĕлĕшрен мĕнле те пулин йӳнеçкелĕпĕр хăть. Çăкăр акă... Çăкăр ним чухлĕ те çук... Сире те акă нимĕнпе те хăналама çук... пĕр татăк та çук, турăшăн та... Пĕр шыв ĕçсе анчах пурăнатпăр — авă, чейникре...

— Патронпа пĕрле грузовиксем çăкăр та илсе килеççĕ,—тесе лăплантарчĕ ăна Чапаев...—Эпир халех Шмарин патне тухса каятпăр, кĕтсе тăма — вăхăт çук... Ну, сывă пул,—терĕ.

Йывăр шухăшсемпе уйрăлса кайрăмăр эпир Елань патĕнчен. Каймалли пĕр вунпилĕк çухрăм. Лашасем выçă, хамăр та выçă; анчах Шмарин патне иртнĕ каç апатçимĕç илсе çитермелле пулнине пĕлнĕ эпир, çавăнпа ун патне çитсенех ирхи апат хатĕрлеттертĕмĕр. Шмарин дивизи приказĕ пирки асапланса ларатчĕ,—ăна хăйĕн бригадипе ыран ирхине çапăçу тапратса яраканĕ пулма

хушнă. Задача — калама çук йывăр, ĕçе мĕнле тăвассине питĕ тĕплĕн шухăшласа хумалла,—çав вăхăтрах канаш паракансем Шмаринăн питĕ сахал, пĕр-икĕ çынтан ытла мар. Штаб начальникне те чĕне-чĕне калаçкаласа пăхнă вăл, анчах вăл та уйрăмах мĕн тума пултартăр-ха? Пысăк çынах мар вăл. Шмарин бригадин штаб начальникĕ унччен писарь пулнă çынччĕ пулас; штаба никама та лартма çуккипе — ăна лартмалла пулнă. Ларать, чухлакалать кăштах; ачи айван мар пулчĕ курăнать; анчах штаб ăслăлăхсен енĕпе тупата нихçан та нимĕн те илтмен те, нимĕн те пĕлмест те.

Чей ĕçнĕ вăхăтра ун çинчен, кун çинчен калаçкаласа лартăмăр, кунти лару-тăру çинчен тĕплĕн ыйтса пĕлтĕмĕр, çывăхри ял миçе çухрăмрине, тăшманăн вăйĕсем мĕнлине, ăçта тăнине, пуçтарса пĕлнĕ хыпарсене мĕн тери ĕненме май пуррине, тăшман хăй хальхи вăхăтра мĕн те пулин тума хатĕрленни çинчен илтĕнни-илтĕнменнине тĕпĕ-йĕрĕпе тĕпчесе тухрăмăр. Çаксене эпир ахаль калаçса ларнă хушăрах тĕплĕн ыйта-ыйта пĕлтĕмĕр; халĕ вара, апат çырткаласа вăй хушнă хыççăн, картă умне çывăхах пуçтарăнса лартăмăр. Чапаев Шмарина çак ыранхи çапăçăва епле ирттермелли çинчен малтан пуçласа вĕçне çитиех тĕплĕн ăнлантарса пама тытăнчĕ. Чапаев кунта çав тери тĕплĕн, çав тери пурне те малтанах асăрхаса кăтартса панинчен тĕлĕнсех каймалла пулчĕ. Чи пĕчĕк япалана та, пĕчĕк обстоятельствăсене те хисепе илме пĕлни вăл — Чапаевăн уйрăмах паха енĕччĕ.

— Эсĕ акă çапла пуçласан, акă мĕн пулать, Еланĕн вара вăл вăхăт тĕлне акă мĕнле пулать... Потапов çав вăхăтрах шыв леш енче акă епле вырнаçса тăрать.

Çапла ăнлантарса ларнă чухне Чапаев — асапланса, хурлăх курса пĕтнĕ, çара уран тенĕ пекех тăрса юлнă чирлĕ красноармеецсем мĕн тери хăвăрт пыма пултарассине; патронсем, снарядсем, çăкăр мĕн чухлĕ кирлĕ пулассине, вĕсене мĕн тери хăвăрт илсе пыма пултарассине питĕ тĕплĕн шута илсе тухрĕ; шыв çуккине, ялсенче халăхпа тĕл пулассине е вĕсем пĕтĕмпех туха-туха кайса пĕтнĕ пулассине; разведка енĕпе мĕнле ĕçсем тумаллине, казаксем епле кĕтсе илессине, Елань бригади мĕнмĕн тума пултарассине, çулран пăрăнса кайсан, çарансем тăрăх мĕн тери хăвăрт пыма пултарассине — çаксене

пурне те вăл питĕ тĕплĕн, мĕнпур вак-тĕвексемпех питĕ ăста пĕлсе, кăтарта-кăтарта пачĕ...

Чапаев пур япалана та пĕр сиктермесĕр шута илсе, тĕрĕслесе пăхса калать; ĕç пĕр харăсах виç-тăват тĕслĕ пулма пултарассине шута илсе кăтартса парать; кашнинчех тата мĕнле пулассине тĕрлĕрен сăлтавсемпе, хальхи те, пулас фактсемпе обстоятельствăсемпе те çирĕплетсе кăтартать. Ĕç çапла тĕрлĕрен майлă пулма пултарассисенчен вăл чи пулма пултарнине суйласа илчĕ те вара, ун çинчен тĕплĕнрех вĕрентсе каларĕ; ыттисем çинчен астуса тăма, мĕнле пулас пулсан мĕн тумаллине манса, каймасăр тăма анчах асăрхаттарса хăварчĕ.

Канашлу икĕ сехет хушши пычĕ. Пĕтĕм ĕçе туса пĕтерсен, дивизи штабне каялла тухса кайма пуçтарăнса тăнăччĕ кăна, бригадăн резервра тăракан полкĕнчен, позицинчен пĕр-икĕ çухрăмра çеç вырнаçса тăнăскерĕнчен... спектакль курма пырса чĕнчĕç. Темле ытла та килĕшӳсĕр пек туйăнса кайрĕ: ыран çав тери пысăк ĕç тумалла, çитменнине тата тăшман окопĕсем юнашарах, çак вăхăтрах — спектакль!?

— Пирĕн вăл яланах çапла,—тесе, йăл кулса илчĕ Шмарин.—Килсессĕнех, ачасем кĕтсех тăраççĕ,—унта вара хăть çапăçу тапратмалла пултăр, пурĕпĕрех лартса кăтарт... Курасшăн вилсех каяççĕ...

— Ара, тăшман пит çывăхра-çке кунта...

— Вĕсене мĕн... Çапла та пулкалатчĕ пирĕн: лăпкă пулсан — боецсем окопсенчен çурри таран упаленсе килетчĕç. Пĕр пайне кураççĕ те — каллех окопа, вĕсем хыççăн теприсем килеççĕ... Çапла вара пĕри юлмиччenех пăхса тухаççĕ...

— Тăшман çывăхĕнчех лартатăр-и вара?

— Çывăхĕнчех... Зоя Павловнăпа унпа аптăрамалла вĕт,—артистсемпе яланах вăл хăй çӳрет... Красноармеецсем, вăл театрпа кунталла килет тенине илтсенех, кĕтме тапратаççĕ вара, вĕçĕмсĕрех кĕтеççĕ-кĕтеççĕ... Мĕн кирлине хăйсемех хатĕрлеме тытăнаççĕ... Тепĕр чухне вăл килсе çитнĕ çĕре сценине те тахçанах туса хума ĕлкĕреççĕ... Мĕн чухлĕ хӳме тавраш çĕмĕрсе пĕтерчĕç пуль станицăсенче!

Чапаевпа Федор Зоя Павловна çак юлашки эрнесенче куçса çӳрекен театр туни çинчен илтнĕччĕ, анчах вăл хăйĕн спектаклĕсене çапла окопсем çывăхĕнчех лартать

тесе ниепле те шухăшлама пултарайман; лешĕ те ун ҫинчен вăхăчĕ ҫитиччен пачах та шарламан: бригадăра лартатпăр, тенĕ... Тĕпчесех те ыйтса тăман. Бригадăна ҫитсен те — вăрҫă ĕҫĕсем ҫинчен анчах калаҫса татăлма ĕлкĕрнĕ. Халĕ каласа кăтартнă тăрăх, Зоя Павловна пĕрре, хăйĕн куҫса ҫӳрекен труппипе ҫеҫенхирпе пынă чухне, шăпах тăшмансем тĕлне ҫитсе тухнă пулать. Бригада вăл вăхăтра наступлени туса пынă, ҫавăнпа куҫса ҫӳрекен труппа ҫитнĕ ҫĕре спектакль лартма тесе пыракан полк хăйĕн вырăнĕнчен малалла куҫса кайнă пулнă... Актерсем, ытлашши шухăшласа-туса тăмасăр, хăйсен лавĕсем ҫинче пĕрер ҫын хăварнă та, хăйсем винтовкăсем тытса, красноармеецсемпе пĕрле ҫапăҫăва кĕрсе кайнă... Зоя Павловна яланах юланутпа ҫӳретчĕ. Вăл полк комиссарĕ патне пынă та, вунă минутранах унпа пĕрле, хăйсемпе пĕрле тата пилĕк красноармеец илсе, разведкăна тухса вĕҫтернĕ... Тĕлĕнмелле вăхăтсемччĕ ҫав! Артист, организатор, политработник, пропагандистпа агитатор, комиссар,—ҫаксем пурте пуринчен малтан боец пулнă! Дивизире красноармеецсем куҫса ҫӳрекен труппăна пуринчен ытла ҫакăншăн хытă юрататчĕҫ те ĕнтĕ: артистсенче вĕсем хăйсен йышши боецсенех, яланах хăйсемпе ҫӳрекен, кирлĕ пулсан хăйсемпе пĕрле наступленине те тухса каякан ҫынсенех куратчĕҫ...

Красноармеецсем хăйсен труппине яланах чăтаймасăр кĕтсе тăратчĕҫ, вĕсем яланах труппа хальхи вăхăтра ăҫта тăнине, мĕнле бригадăра ĕҫленине, унта хăҫанччен юлассине, кунта хăҫан килессине е урăх бригадăна тухса кайассине пит лайăх пĕлетчĕҫ. Труппа хăйсем патне килесси ҫинчен пĕлсенех — шухăш-кăмăлĕ вĕсен ҫĕкленсе каятчĕ; ку хыпара вара вĕсем, тем тери пысăк савăнăҫ ҫинчен калаҫнă пек, ҫăвартан ҫăвара ҫӳрететчĕҫ. Ҫавăнтах хатĕрленме тытăнатчĕҫ. Труппа килсе ҫитсен вара, час-часах хăйсен пур-ҫук пурлăхĕпех вĕсене тусла юратса хăналантаратчĕҫ... Сцена вырăнĕсене яланах малтан хатĕрлесе хуратчĕҫ; хăйсем урăх ҫĕре, хăма тавраш тупма ҫук ҫара ҫеҫенхирсене тухса кайнă чухне те вара,—труппа халех килессине пĕлсен,—мĕнпур хăмасене купипех хăйсемпе сĕтĕрсе ҫӳретчĕҫ...

Мĕн тери пысăк савăнăҫчĕ вара, мĕн тери хавасланатчĕҫ вара красноармеецсем сцена туса лартсассăн! Сцена лартнине курас теекенсем темĕн чухлех пулатчĕҫ:

вёсене вара: кунта тёрткеленсе ҫӳренипе декорацисем лартма, костюмсем хатёрлеме, тумланма кансёрлетёр тесе, юлташла ӳкётлесе, хăваласах ямалла пулатчё. Хăш чухне тата ҫапла та пулкалатчё: уйрăмах пур япалана та тёпчесе пёлме юрататакан пёр-пёр красноармеец, тумтирсем тултарса хунă уҫă арча умне пырса, унти тёрлё йышши фраксемпе сюртуксем ҫине пăхкаласа тёлёнсе тăрать-тăрать те, ыттисем арча патёнчен пăрăнса кайсассăнах, пёр-пёр илемлетсе пётернё хитре сăхманне туртса кăларса, хăй ҫине тăхăнса ярать; вара хăйён савăнса кайнă пит-куҫёпе пур еннелле те ҫаврăнкаласа:

— Ачасем, курăр акă короле!—тесе кăшкăрса ярать.

Ну, паллах, «короле» ҫавăнтах ярса тытаҫҫё те, ҫийёнчи король тумтирне сёвсе илеҫҫё, тепёр чухне ик-виҫ хут ёнсерен те паркаласа илеҫҫё; вăл вара — ăҫта та пулин сцена хыҫне, тата мён те пулин тăхăнса ярса ҫынсене ахăрттарса култарма пулмасть-ши тесе, кёрсе каять...

Ҫак спектакле хатёрленнё вăхăт спектаклёнчен хăйёнчен те савăнăҫлăрах вăхăт марччё-ши вара?.. Акă артистсем тумланма тапратаҫҫё... Анчах курма пынисене кётмен-ҫёртен курăннипе ытларах тёлёнтермелле пултăр тесен,—вёсенчен ăҫта кайса пытанса тумланас-ха ёнтё?.. Унта-кунта шыракаласа ҫӳреҫҫё, пытанмалли вырăн ниҫта та тупăнмасть. Унтан вара икё инкекрен пёчёкреххине суйласа илеҫҫё: е кунтах, спектакль пуҫланиччченех, пур артистсен те пурне те курăнмалла, е вёсен хушшинчен пысăках мар ушкăн суйласа илсе, вёсене ҫеҫ курăнмалла, ыттисене вара — нимён чухлё те кăтартмалла мар... Ҫапла тăваҫҫё те вара. Суйласа илеҫҫё те пёр хёрёх-аллă ҫын, вёсене вăйăри пек карталантарса тăратса, артистсем карта варрине кёрсе тăрса тумланаҫҫё, париксене виҫсе пăхаҫҫё, грим сёреҫҫё... Пёр ҫак грим вырăнне сёрме ҫеҫ мён чухлё хăрăм-кăмрăк пётернине аса илсессён те,—ахлатса ярăн! 1919 ҫулсенче ҫăкăрăн ҫунăк хыттине те тем тёрлё пуянлăх вырăнне хунă пулсан, театрсенче мёнле пуянлăхсем пулнине ҫăмăллăнах ăнланса илме пулать! Хаклă йышши гримсене ёмётленесси-и-ха унта! Ку тёлёшпе мёнле те пулин хаклăрах япала килсе ҫаклансан вара, ăна «ахаль» чухне пёртте тыткаламастчёҫ, пёр-пёр, «пысăкрах савăнăҫ» вăхăчёсенче анчах тыткаланă,—калăпăр, тăшмана вăйлăн ҫёнтерсен, обмундиро-

вани илсе килсен, паёк ӳстерсе парсан,—сахал-и вара полкра ҫакнашкал хӑйне уйрӑм, позицири савӑнӑҫсем!

Артистсем ытла чаплах вылямастчӗҫ, анчах куракансем пысӑк интереспа пӑхса ларатчӗҫ. Зоя Павловнӑна хисеплӗ ятпа асӑнасах пулать: пит сахал пьесӑсенчен вӑл, вӑхӑтне кура, чи лайӑххисене суйласа илме пӗлетчӗ. Вӑл хӑй те вылятчӗ, боец шухӑш-кӑмӑлне лайӑх ӑнланатчӗ: ӑна пуринчен ытларах ҫӑмӑл, ӑнланмалла, вӑйлӑ, хальхи пурнӑҫпа ҫыхӑнса тӑракан пьеса кирлине пӗлетчӗ. Шырасан, ун пеккисем тупӑнатчӗҫ. Ҫавӑн пек пьесӑсенчен хӑш-пӗрисене кунти дивизири писательсем хӑйсемех ҫырнӑччӗ... Хӑш-пӗрисене начарах та ҫырманччӗ. Нумайӑшӗ темле стайсӑр, илемсӗр ҫырнӑскерсемччӗ; анчах вӗсенче те хӑйне майлӑ вӑй пурри, тӗрӗс шухӑшсем, вӑйлӑ сисӗмсем пурри курӑнатчӗ; анчах ҫак шухӑшсемпе сисӗмсене тепӗр чухне пачах та илемлӗ формӑласа пама пӗлменни кансӗрлетчӗ. Пьесӑсем сахалччӗ, анчах вӑхӑтне кура чухӑнах марччӗ; ытти вырӑнсенче кунтан та начартарахчӗ, тепӗр чухне сиенлӗ пьесӑсем те ларткалатчӗҫ...

Зоя Павловна хӑйӗн ӗҫне калама ҫук юратса ӗҫленӗ пирки, анчах ҫапла «нимӗнскертенех»—ҫитменне, мӗнле вӑхӑтра тата!—боецсем ҫав тери юратакан театра туса хума май пулчӗ. Ытти, лайӑхрах условисенче театрсем ӗҫлеме тытӑнниничен нимӗн тӗлӗнмелли те ҫук; анчах кунта акӑ, алӑ айӗнче нимӗн те ҫук ҫӗртенех, ҫар пӗр вӗҫӗмсӗр пӗтӗм вӑйне хурса ҫапӑҫса тӑнӑ вӑхӑтра театр туса хуни,—ку вара чӑнахах та пысӑк, хисеплӗ ӗҫ.

Куҫса ҫӳретчӗҫ вара вӗсем ҫеҫенхирсем тӑрӑх ик-виҫ тӗве ҫине тиенсе. Хӑйсем ҫуран, пурлӑхӗсене тӗве ҫурӑмӗсем ҫине вырнаҫтарса хунӑ... Май килнӗ ҫӗрте лашасем те тупкалатчӗҫ; ун чухне вара пурте урапасем ҫине вырнаҫса ларса, полкран полка, полкран полка куҫса ҫӳретчӗҫ; а лере вара, полксенче вӗсене, ҫак питех те хаклӑ хӑнасене, тахҫанах кӗтсе тӑратчӗҫ.

Чапаева тата унпа пӗрле килнисене пурне те спектакль курма пыма чӗннӗ вӑхӑтра, лере спектакль лартма пӗтӗмпех хатӗрлесе ҫитернӗ пулнӑ; халех «чаршава ҫӗклеме» пултараҫҫӗ, тесе пӗлтерчӗ чӗнме килнӗ красноармеецсенчен пӗри... Кайса курма шутларӗҫ—мӗншӗн каяс мар-ха? Кунта пӗртте инҫе мар вӗт. Шмарин па-

тĕнче ахаль те лашасене улăштармалла пулнă пирки, пурĕпĕрех кăшт кĕтсе тăмаллаччĕ.

Курма пухăннисем патне çывхарса пынă чухне лере кам килессине илтсе пĕлнĕччĕ ĕнтĕ. Пурте çаврăна-çаврăна пăхрĕç. Çăвартан-çăвара васкавлăн: «Чапаев... Чапаев... Чапаев...» тенĕ сасă кĕрлесе кайрĕ.

Тĕлĕнмелле картина! Чи сцена умĕнчех, куракансен малти ĕречĕсем — çĕре хырăмĕсем çине выртса тухнă; вĕсем хыçĕнче тепĕр ушкăн яланхи пекех ларса тухнă; лараканнисем хыçĕнче виççĕмĕш ушкăн чĕркуççисем çине тăнă; кусем хыçĕнче — кун пеккисем вара чи нумай — ура çине тăнă... Вĕсем хыçне пĕр çирĕм урапа килсе лартнă, урапасем çинче каллех куракансем ларса тухнă. Çак тĕлĕнмелле вырнаçса тухнă çынсем хыçне юланутлă кавалеристсем, пĕтĕм хĕçпăшалĕсемпех вырнаçса тăнă... Çапла вара тип-тикĕс хирте темиçе çĕр çын пуçтарăнса вырнаçнă — çитменне пурте лайăх кураççĕ, лайăх илтеççĕ...

Чапаева, Федора, Петькăна малалла иртерсе, «иккĕмĕш яруса» — çĕр çине вырнаçтарса лартрĕç.

Темĕнле пысăках мар виçĕ пайлă пьесăна, кунта дивизирех çырнăскерне, лартса кăтартрĕç. Вăл питĕ лайăх, тĕплĕ шухăшлă пьесăччĕ, çырасса та ăна начарах мар çырнăччĕ. Унта хĕрлĕ полксем казаксен станицисем урлă епле иртнине, казачкăсем пирĕн хĕрарăм-красноармейкăсемпе епле тĕл пулнине, вĕсем малтан пирĕннисенчен епле пăрăнса тăнине, вĕсене ылханнине, кайран вара ăнланма пуçланине кăтартса панăччĕ...

. . . . . . . . . . . . . . . .

Пьесăна выляса пĕтерчĕç. Чаршав хупăнчĕ. Кăшкăрашма, алă çупма хушманччĕ. Анчах боецсем хăйсен юратакан труппи вылянине тытса чарайми хаваслăхпа алă çупса ырларĕç...

Федор Чапаева чавсипе тĕртсе илчĕ те:

— Пыр, тухса кала; казаксем хăна епле «хĕнени» çинчен каласа кăтарт! — терĕ.

Чапаев сцена çине тухрĕ те питĕ кĕске, анчах пит илемлĕ, вăйлă сăмах каларĕ, çапăçу пурнăçĕнчи уйрăм ĕçсене иле-иле кăтартрĕ... Каласа пĕтерсен, питĕ хаваслăн ăсатрĕç... Пурин те кăмăлĕсем савăнса çĕкленчĕç...

* * *

Çакă вăл Федор Чапаевпа пěрле юлашки хут тухса çÿрени пулчě. Федора темиçе кунтанах чěнсе илсе урăх ěçе, тата ответлăраххине куçарчěç; ун вырăнне комиссар пулма Батурина ячěç; Клычковпа вěсем Мускавра пурăннă чухнех паллашнăччě.

Федор кунтан ăçта кайни çинчен, лере мěн туса пурăнни çинчен каласа тăмăпăр, вăл пачах хăйне уйрăм истори. Чапаевăн куççуллě телеграммăсем ярса, командующине Федора хăй патěнчех хăварма тархасланисем кăлăхах пулчěç, нимěн те пулăшмарě,—ыйтăва малтанах татса хунă пулнă. Клычков кайсассăн, Чапаев хăйěн мěн тери çывăх тусне çухатассине питě лайăх пěлсе тăчě; мěншěн тесен Федор ăна шавах çав тери лайăх ăнланса пурăнатчě, çав тери хытă юрататчě, ăна яланах ыттисем тапăннинчен хÿтěлетчě; Чапаев тарăхса ятлаçнисем çине лăпкăн, ăстăнлăн пăхса, тÿссе пурăнатчě; Чапаев час-часах «çÿлтисем» пирки, «ылханлă штабсем» пирки, «чрезвычайка» пирки тарăхса ятлаçнине каçаратчě; комиссарсене, тěрлěрен политикăллă «начальниксене» вăрçнине чăтса пурăнатчě, çак сăмахсем çинчен революциллě совета пěлтерсе элеклеместчě; хăй те уншăн çиленместчě; çак тарăхнисем тарăхнипех иртсе каяссине лайăх ăнланатчě. Федор хăй те пěр вăхăтра Чапаева Григорьевпа, «батька Махнопа» пěр ěрете тăратма хатěр пулнăччě; анчах кайран вăл хăйěн çак йăнăшне ăнланса илчě, Чапаев çинчен çапла çиленнě вăхăтра тěрěс мар шухăшлама тытăннине пěлсе çитрě... Чапаев нихçан та совет влаçне улталаса, тăшмана сутăнма пултаракан çын пулман; анчах вăл хăш-пěр чухне тарăхса хăтланкалани, çивěч ыйтусем пирки йěплентерсе ятлаçни — çаксем Чапаева сахал пěлекен çынсене ун тěлěшпе иккěлентерсе яма пултаратчěç. Чапаевпа куçа-куçăн пěр уйрăлмасăр çур çул таран пурăннă хыççăн, Федор унран пит лайăх шухăш-кăмăлпа уйрăлса кайрě. Ăна та, Чапаев пекех, уйрăлса кайма питě йывăр пулчě. Ун чухне вăл çакăнтан уйрăлса кайни ăна вилěмрен çăлса хăварнине пěлме пултараймарě; у н в ы р ă н н е, у н в ы р ă н ě н ч е кайран, тепěр икě эрнерен ун вырăнне ěçлеме юлнă Павел Степаныч Батуринăн пěтмелле пулчě...

Акă мěн çеç Федора шухăша ярса иккěлентерме пуçларě: ăçта-ха Чапаевăн п а т т ă р л ă х ě, ăçта-ха ч а п-

лă ĕçĕсем, пур-ши вĕсем чăннипех, пулаççĕ-ши чăнахах та паттăрсем? Вĕсем пĕр-пĕринпе питĕ нумай вăхăт хушши—кунран-кун, сехетрен-сехет пĕр уйрăлмасăр çывăх пурăнса ирттерчĕç... Вăхăтсем ун чухне чи хĕрӳллĕ пулчĕç, пĕрмаях походсенче, çапăçусенче пулса иртрĕç... Федор Чапаевăн кашни утăмнех курса, пĕлсе, ăнланса пурăнчĕ, ун пуçĕнчи вăрттăн шухăшĕсене те чылайăшне витĕрех пĕлсе тăчĕ. Акă вăл халĕ хăйсем пĕрле пурăнса ирттернĕ пурнăçа кун хыççăн кун — Александров-Гайра тĕл пулнинчен пуçласа кунти, Уральскри юлашки куна çитиччене асне илсе тухрĕ. Акă Сломихинăри çапăçу... Чапаев кунта калама çук нумай та тимлĕн ĕçлерĕ, вырăнтан вырăна çил пек хăвăрт куçса çӳрерĕ, пур ĕçе те калама çук хăвăрт ăнланса, хăвăрт туса пычĕ... Унтан Уфа çулĕпе пыни... Пилюгинăри çапăçу... Уфана илнĕ чухне çапăçни... Юлашкинчен каллех кунта килни... Ăçта-ха, чăннипе, паттăрла ĕçсем тесе шутламалли конкретлă фактсем? Çав вăхăтрах Чапаев çинчен сăмах таçта çитиех сарăлнă, çитменне çак сăмаха вăл ытти кирек мĕнле çынтан та чи тивĕçлĕ. Чапаев дивизийĕ нихçан та тăшман айне пулман, кун сăлтавĕ питех те нумай Чапаевран хăйĕнчен килнĕ. Дивизие ăна пĕр ирĕкпе пĕрлештерсе тăрасси, ăна хăйне никам та çĕнтерес çуккине ĕненекен туса çитересси, ăна йывăрлăхсем çине, походри çитменлĕхсем çине тӳсĕмлĕ, чăтăмлă пăхма вĕрентесси, ăна лайăх командирсем тупса парасси, вĕсене çапăçура пиçĕхтерсе çитересси, хăйĕн ирĕкĕ тавра пĕрлештерсе тăрасси, вĕсене пĕртен-пĕр шухăшпа—çĕнтерес, çĕнтерес, çĕнтерес кăмăл-шухăшпа çулăмлантарса ярса чăмăртаса тăрасси—о, ку вăл калама та çук пысăк паттăрлăх! Анчах вăл—халăх сăмахĕ Чапаев ячĕпе çыхăнтарса тăракан йышши паттăрлăх мар. Çав халăх сăмахĕ тăрăх «Чапаев хăй» фронт тăрăх, аллинче хĕçне çӳлĕ йăлтăртаттарса тытса çӳренĕ пулса тухать; тăшмансене вăл хăй çĕмĕре-çĕмĕре тăкнă пек, чи хĕрӳллĕ çапăçусене кĕре-кĕре кайса, вĕсене çĕнтерӳллĕ туса хунă пек курăнса тăрать. Анчах чăннипе пĕртте кун пек пулман. Чапаев вăл çав вăхăтри, çав условисенчи, çавăн чухнехи масса хушшинчи пит лайăх, питĕ сисĕмлĕ организатор пулнă, çав масса ăна хăй çуратса кăларса, çав тери çӳле çĕклесе янă! Кăшт çеç урăх вăхăтра, урăх çынсем хушшинче — пĕлмен пулĕччĕç Василий Иваныч Чапаев ятлă

халăх паттăрне! Унăн чапне ӳстерсе çĕклекен сăмаха çеçенхирсем тăрăх, çеçенхирсем тулашĕнче те, çав унпа пĕрле кĕрешнĕ темиçе çĕр, темиçе пин боец çăмăл мамăка çĕклесе вĕçтернĕ пек сарса çаврăнă; ку сăмаха вĕсем хăйсем те урăххисенчен и л т н ĕ пулнă; çак илтнĕ сăмаха ĕненнĕ вĕсем, ăна пула хавасланса тĕлĕннĕ; вăл сăмаха х ă й с е н ч е н хушса кăларнипе илемлетсе, хитрелетсе малалла вĕçтерсе сарнă. Анчах ыйтса пăхăр-ха эсир, çак Чапаев çинчен чап саракан çынсенчен,—вĕсенчен нумайăшĕ унăн нимĕнле ĕçне те пĕлмеççĕ, ăна хăйне те палламаççĕ, чăн-чăн пулнă пĕр ĕçе те илсе кăтартма пултараймаççĕ...

Çапла çуралса сарăлаççĕ те ĕнтĕ паттăрсем çинчен хывнă легендăсем. Чапаев çинчен калакан легендăсем те çаплах пулса кайнă.

Унăн ячĕ граждан вăрçи историне çап-çутă çиçсе тăракан çăлтăр пек кĕрсе юлĕ — кĕме те тивĕçлĕ: ун пеккисем сахал пулнă.

* * *

Эпир хурланмалли ĕç патне çитсе тăтăмăр; çакăнпа пĕтерĕпĕр те эпир хамăрăн çырăва.

Федора Чапаев патĕнчех хăварма темиçе хут тархасласа ыйтни ĕçе нимĕн чухлĕ те улăштармарĕ. Ăна татăклăнах чĕнсе илчĕç. Федор хăй те Чапаевпа ĕçлеме юласси килни çинчен асăнсан, ăна ятласах тăкрĕç. Çак иртсе кайнă ултă уйăх тăршшĕнчи пурнăç çине каялла çаврăнса пăхсан, Клычков халĕ хăйне хăй те паллаймарĕ; ĕлĕкхипе танлаштарсан, вăл çав тери ӳссе çитĕннĕ пек туйăнчĕ ăна; шухăш тĕлĕшпе çав тери çирĕпленнĕ пек, йывăрлăхсенче çав тери пиçĕхсе çитнĕ пек, малтан, фронта кайиччен татса пама вĕçĕмсĕрех йывăр пек туйăннă тĕрлĕ ыйтусене вăл халь çав тери çăмăллăн, ним иккĕленмесĕр татса пама вĕренсе çитнĕ пек туйăнчĕ.

Халĕ тин вăл çапăçу йывăрлăхĕсем ăна çав тери пиçĕхтерсе çитернине, фронтри пурнăç уншăн çав тери паха пулнине туйса илчĕ...

Батурин килчĕ, Федор патĕнче чарăнчĕ. Мускавра ĕлĕк пĕрле пурăнни çинчен юлташла каласса кайрĕç... Унтан дивизи ĕçĕсем çине куçрĕç. Федор ăна Батуринăн малашне мĕнле условисенче ĕçлемелле пуласси çинчен каласа кăтартма тапратрĕ. Каласмасăр, тарăн шухăша кайса, тĕксĕмленсе ларакан Павел Степаныч хăй çав

тери хăйне уйрăм халăх хушшине килсе çакланни çинчен илтсе пĕлсенех, çавăнтах чĕрĕлсе, çивĕчленсе кайрĕ...

Кăнтăрла дивизири парторганизаци конференцийĕ пулса иртрĕ. Федор ăна юлашки хут ирттерет; ытти ĕç майĕпе хăйĕн выранне ĕçлеме килнĕ çĕнĕ çынна пуринпе те паллаштарчĕ. Федор Клычкова юлташĕсем пит ăшшăн, чĕререн юратса, шеллесе ăсатрĕç,—çак çур çул хушшинче вĕсем ăна хытă юратакан пулса çитнĕччĕ, ăна хаклама вĕреннĕччĕ, пуринчен ытла ăна вăл Чапаевпа чапаевщинăна,—урăхла каласан, унăн çав мĕнпур лайăх мар, хăш-пĕр чухне хăрушах та хăтланнисене, политработниксем тĕлĕшпе, чека тĕлĕшпе, штабсем тĕлĕшпе ятлаçнисене пӳлсе пыма пĕлнĕшĕн хисеплесе хаклатчĕç.

Конференци хыççăн, каçхине, Федор хăй патне мĕнпур командирсемпе комиссарсене сывпуллашса уйрăлма чĕнсе пуçтарчĕ. Кунта Павел Степаныч та пулчĕ. Анчах шухăш-кăмăлĕ унăн тĕлĕнмелле пулчĕ: пĕр кĕтессе кĕрсе ларчĕ те вăл, Федора тусĕсемпе юлташĕсем ăсатнă вăхăтра, унăн иртнĕ çапăçусенчи пурнăçне аса илсе ларнă чухне, вĕсенчен çав тери çывăх, лайăх, шанчăклă юлташĕ тухса кайнă пирки хĕрхенсе калаçнă вăхăтра, вăл темиçе сехет хушши пĕр хускалмасăр, никама та пĕр сăмах чĕнмесĕр ларса иртерчĕ.

Ирхине пĕр-пĕрне алă парса, чуптуса, тĕрлĕ еннелле уйрăлса кайрĕç: Федор — Самарăна, Чапаевпа Батурин— позицие, бригадăсемпе полксем тăрăх.

Дивизи ăнăçлă наступлени туса пычĕ. Шмарин бригадипе тепĕр бригада, урăх дивизирен хушса панăскер, Урал шывĕ тăрăх, мăн çулпа пычĕç. Потапов бригади Бухара енне каçса кайрĕ — Урал шывĕн леш енчи çĕрсене çапла калатчĕç. Елань хăйĕн полкĕсемпе Усиха ялĕ еннелле, Чапаевпа Федор ун патне «çĕрлехи вут çути» хыççăн пынă чухнехи выранălла, маневр туса пычĕ. Анчах ку маневр хăйĕнчен кĕтнĕ чухлĕ усă параймарĕ; вăя темĕн чухлĕ пĕтермелле пулчĕ пулин те, çапăçусен усси çителĕклĕ пулмарĕ. Чапаев, пур ĕçе те çав тери час пĕлсе, йăнăша хăвăрт тӳрлетме пултараканскер, хăйĕн ĕçне лару-тăру хушнă пек хăвăрт урăхлатса тума пĕлекенскер, кунта, çеçенхирте, казаксемпе кĕрешнĕ чухне Колчакăн вăйпах мобилизациленĕ çĕрĕнчи хресченсемпе кĕрешнĕ чухнехи хĕçпăшалпах кĕрешме юраманнине ча-

сах ăнланса илчĕ. Казаксене хăратса ӳкернипе çĕнтерме çукчĕ, çĕрĕсене туртса илнипе тăнран яма çукчĕ: казаксен çĕрĕсем — мĕнпур анлă, сарлака çеçенхирччĕ; çак çеçенхир тăрăх вĕсем урлă та пирлĕ вĕçтерсе çӳретчĕç, вĕсене казак ялĕсем кунта пур çĕрте те кăмăллăн кĕтсе илетчĕç, вăл сан хыçăнта кунта хăй килĕнчи пекех пурăнатчĕ, кунта ăна ниепле те хăваласа тытма çукчĕ, кунта вăл пĕрехмай чăннипех хыттăн сиенлеме пултаратчĕ. Казак çарĕсене хăваласа яни мар, вĕсем пăсăлса йĕркерен тухасса кĕтсе тăни мар, вĕсен станицисене пĕрин хыççăн теприне туртса илни мар кирлĕ пулчĕ кунта,—çак ĕçсем вĕсем питĕ паха, питĕ кирлĕ пулин те, тĕп вырăнта тăмастчĕç. Тĕп вырăнта тăракан ĕç кунта — казаксен чĕрĕ вăйне çапса хуçасси, казаксен полкĕсене пĕтерсе пырасси пулчĕ. Тыткăна илнĕ колчаковецсенчен хамăрăн йышĕ сайралса пыракан полксем валли çынсем суйласа илмемай пурччĕ пулсан, тыткăна илнĕ казаксенчен вара унашкал тума ниепле те май çукчĕ: кунта кашни казак — чи хаяр тăшманччĕ. Мĕнле пулсан та, часах пире пулăшакан тус пулма пултараймастчĕ-ха вăл! Тăшманăн чĕрĕ вăйне пĕтересси — акă епле задача лартрĕ халĕ Чапаев хăй умне. Çеçенхир ăшнелле шаларан шала, тăрăнран тарăн кĕрсе пынăçемĕн, çакна тума та йывăрланнăçемĕн йывăрланса пычĕ: çитменлĕхсем ӳссе пычĕç, ĕшенни вăй-хала пĕтеретчĕ, выçлăхпа шыв çукки те хăйсен ĕçне тăватчĕ, центртан татăлса кайни ĕçсене пушшех те кансĕрлесе йывăрлататчĕ.

Казака та, паллах, йывăр пулать, анчах красноармееца унран та йывăртарах. Çавăнпа та ĕнтĕ васкамалла пулчĕ, нимĕн те хĕрхенсе тăма юрамарĕ: вăйсене, пурлăха парнене кӳнĕ пек тумалла пулчĕ, çеçенхире шалтан шала кĕрсе кайса вăйсене ытларах çухатас мар тесен, халĕ çакăн чылай пысăк пайне пĕле-тăркачах пĕтернипе килĕшмелле пулчĕ. Чапаев вара çак тĕллев патне илсе пыракан çулсене шырама тытăнчĕ. Усиха таврашĕнче çапăçни вăл — пачах та халĕ кирли мар, халĕ шыракан çул мар. Çавăнпа çарсене пĕр çĕре пухса тăратрĕ те вăл, Урал çеçенхирĕсен иккĕмĕш столицине — Лбищенска çамкаран пырса çапса, туртса илчĕç... Çухатусем... тĕрĕс, çухату пысăк пулчĕ, анчах çапла туни ĕçе чылаях малалла ячĕ. Тата тепĕр пилĕк хут çапла пырса çапсан, казаксене пĕтĕмпех пĕтерсе лартма май пулĕччĕ!

Лбищенск хыççăн Горяченски станицине илчĕç. Мергеневски станици патĕнче чарăнса тăчĕç. Чакса пыракан казаксем хăйсен ĕçĕ япăхланса пынине лайăхах курса ăнланчĕç, анатри хăйăрлă выçă çеçенхирте хăйсене мĕн кĕтнине вĕсем лайăх пĕлсе тăчĕç. Çавăнпа та вĕсем ăçта та пулин çакăнтах хĕрлĕ çарсене хирĕç тăрса çапăçмалла тесе, унсăрăн ĕç кая юлма, пĕтĕмпех пĕтсе ларма пултарать, тесе шутларĕç. Çавăнпа та вĕсем станицăсене юлашки вăйĕ юлмичченех хӳтĕлеме тытăнчĕç. Лбищенска вĕсем çапла пит хытă тăрса хӳтĕлерĕç, нумайччен тытăнса тăчĕç, нумайччен памасăр çапăçрĕç, анчах кунта вĕсем çапла çамкаран вăйлăн пырса çапассине кĕтмен курăнать-ха. Вĕсем: Чапаев халĕ те маневр туса çапăçнипе çеç пурăнать-ха, тесе, вăл халĕ те йĕри-тавра çавăрса илнипех çĕнтерессе ĕненет, тесе шутларĕç курăнать. Йăнăшрĕç. Анчах çак йăнăш вĕсене ăса вĕрентсе хăварчĕ те; халĕ Мергеневски станицине вĕсем мĕнпур вăйĕпе пурлăхĕ çитнĕ таранах çирĕплетсе лартнăччĕ: çуркуннехи çапăçусенчен юлнă тарăн окопсемпе усă курса, унта пулеметсем пытара-пытара лартнăччĕ, темĕн чухлĕ тупă кӳрсе тултарса, вĕсене кашни кĕтесрех, кашни шăтăках ларта-ларта тултарнăччĕ. Мергеневски станицине те хĕрлĕ полксем çамкаран пырса çапнипе илме шутларĕç. Илчĕç те. Нимĕне пăхмасăр—илчĕç-илчĕçех. Казаксене сахал мар пĕтерчĕç, анчах вĕсенчен ытла красноармеецсем выртса юлчĕç. Çĕнтерӳ алла питĕ хаклă парнепе лекрĕ. Казаксем вара Чапаев тактикине ăнланса илчĕç те, унăн кашни утăмне хирĕç хăйсен уйрăм утăмĕпе ответлеме тытăнчĕç. Мергеневски çывăхĕнче çапăçнă хыççăн Чапаев малашне вăхăтлăха — çамкаран пырса çапса кĕрешме чарăнмаллине ăнланса илчĕ. Çавăнпа вара вăл Елане мăн çулпа каймa хушрĕ. Шмарина Кушум улăхĕ тăрăх Кзыл-Убински ялĕ еннелле ячĕ, кунтан Сахарная станици тĕлне тухса, Елане çак станицăна илме пулăшма хушрĕ.

Çак вăхăтра Сломихино енчен кунталла казак полкĕсем килме тухнăччĕ; çул май вĕсем Иваново-Вознесенск полкĕн обозĕ чарăнса тăнă хутора килсе тухрĕç те, пиренсене калама çук хăрушшăн асаплантарса вĕлере-вĕлере пĕтерчĕç. Виçĕ красноармеец анчах ăнсăртран çăлăнса, тарса тухнăччĕ. Вĕсем пĕлтерчĕç те вара пире çак хăрушă ĕç çинчен. Бригадăра хăраса ӳкрĕç — казаксене

ку енчен пачах та кётменччĕ. Полка каллех хутор енне, обоза çăлса килме ячĕç. Анчах ăна пĕтĕмпех çăлма май килмерĕ,—чи кирлĕ япаласене казаксем тытса илчĕç те, хутортан хăйсем çапăçупа тухса тарчĕç. Хуторта калама çук хăрушă картина: урамсенче алăсăр-урасăр красноармеецсен виллисем йăваланса выртни курăнса кайрĕ...

Çапла тискерленсе хăтланнипе казаксем, таварассинчен пуçне, красноармеецсене хăратса ӳкересшĕн пулчĕç курăнать, казаксен аллине çакланассинчен сехĕрленсе тăма тăрăшрĕç, курăнать; çеçенхирсенче пурăнма хăрушшине кăтартса, вĕсене кунтан тарса кайма тĕртесшĕн пулчĕç, курăнать. Анчах ĕçсем пĕтĕмпех тепĕр майлă пулса тăчĕç. Казаксем патне тыткăна лексе асап курса вилес мар тесе, красноармеецсем чĕррĕн алла парăнми пулчĕç, яланах тĕлĕнмелле çирĕплĕхпе, чăн-чăнах «юлашки тумлам юн юлмиччен» çапăça пуçларĕç. Çак хуторта пулнă ĕç çинчен хыпар ротăран рота тăрăх пĕтĕм полксене вĕçсе çаврăнчĕ. Красноармеецсем тискерленсе кайнă палач-казаксене ылханса вăрçма тытăнчĕç: «çĕнтеретпĕр е çапăçура вилетпĕр!»—тесе тупа туса сăмах пачĕç вĕсем.

* * *

Елань çапăça-çапăça Каршинск ялĕ патне анчĕ те, кунта Шмарин бригади ăçта пыни çинчен пĕличчен чарăнса тăчĕ; анчах лешĕ хăйĕн полкĕсемпе çеçенхирте çухалса, çĕтсе кайса, чылай кунсем хушши вĕсемпе ниепле çыхăну та тытма май тупаймарĕ. Темиçе хут та вестовойсем яра-яра пăхрĕ, анчах вĕсене йĕри-таврах сыхласа тăракан казаксем çавăнтах тыта-тыта пĕтеретчĕç; вĕсенчен тĕрлĕ хыпарсем тĕпчесе пĕлсе, çырусемпе докуменчĕсене турта-турта илсе, юлашкинчен—пуçĕсене каса-каса пăрахатчĕç. Персе пăрахма — пуля хĕрхеннĕ, çакса вĕлерме çӳлĕ йывăç çук. Миçе вестовой ямарĕç — пурне те тытса пĕтерчĕç. Лару-тăру çак вăхăтрах тӳсме çук начар пулчĕ: станицăсем çукчĕ, кунта, йĕри-таврах пуш-пушă çеçенхирччĕ, сайра-хутра ăçта та пулин хутор çеç тĕл пулкалатчĕ. Çăкăра юлашки татăк таран çисе пĕтерчĕç, выльăх-чĕрлĕхе пуса пуçларĕç; пĕр ашпа анчах пурăнма тытăнчĕç; ăна та кăвайт çинче анчах ăшалакаласа çиетчĕç. Тĕрлĕрен тĕслĕ чир вăйланса кайрĕ, сар-амак чирĕ тарăхтарса çитерчĕ; чиртен сыватакан ни-

кам та çукчĕ, эмел тавраш̆ те çукчĕ. Шыв çук. Кушум шывĕ патне чупатчĕç; анчах вăл кунта çулсерен типетипе ларать; çавăнпа шыв вырăнне унтан типсе ларнă пĕвесенчи шĕвĕ пылчăк евĕрлĕ темле симĕсленсе, пăсăлса кайнă япала анчах ăсса илетчĕç. Котелоксемпе витресене çак киревсĕр япалапа тултарса, пылчăкне сăрхăнтарса хăваратчĕç те, мĕн юхтарса илнине ĕçетчĕç вара. Кашни полка пĕрер витре илсе пыратчĕç те, лере вара, камăн малтан ĕçесси пирки çапăçма тапрататчĕç.

Пĕрре ăнсăртран темле çăл тĕлне пырса тухрĕç. Казаксен çăлĕсенче шыв питĕ сахал; кунта пĕтĕмпе те вунпилĕк витре анчах сăрхăнтарса илчĕç. Çăл ани çине пулемет лартмалла, йĕри-тавра сахалах мар хурал тăратмалла пулчĕ. Кашни полка пĕр тан валеçсе пачĕç, витресем умĕнче красноармеецсем пинĕн-пинĕн черете йĕркеленсе тăчĕç.

Кашниех сивĕ шыв çине пыра-пыра пăхатчĕç те, куçĕсем вара ырă мар çутăпа çулăмланса каятчĕç,— тӳрех сиксе ларать те акă,— витрене икĕ аллипе те ярса тытса, пуçне витре ăшне чиксе, сăхлă тутисемпе пĕр чарăнмасăр ĕçме тытăнас пекех туйăна пуçлатчĕ. Эсир хăть те мĕн тăвăр ăна: хĕнĕр, çуркаласа пăрахăр, хăвалăр, перĕр—вăл пурĕпĕр шывран уйрăлса каяс çук! Тен, кунта та хурал пулман пулсан, кунта та кружкăна икĕ çын урлă алран алла памалла туман пулсан,—çаплах пулса тăнă пулĕччĕ-и, тен. Пырса тăрать, шеремет, витре патне, чут çеç ăсса параççĕ ăна шыв тенĕскерне, вăл ĕçме тытăниччен темĕнччен пăхса тăрать вара кружка тĕпĕнче шыв кăшт çеç йăлтăртатса, чӳхенсе тăнине.

— Тата пăртакках парăрсамăр, юлташ,— тесе тархаслать вăл шыв ăсса параканне, хуйхăллă куçĕсемпе тилмĕрсе пăхса.

— Юрамасть... пурне те пĕр тан,— тет лешĕ.

— Тепĕр тумлам та пулин...

— Тумлам та юрамасть,— тесе тавăраççĕ ăна.

Пăхса илет те вара вăл кружка тĕпне юлашки хут, ĕçме хĕрхенсе, майĕпен илсе пырать кружкăна тутисем патне; нумайччен-нумайччен ĕмсе тăрать вара вăл ăна,— кружкăра шыв вырăнне çав тери çăра, сĕтеклĕ, тутлă пыл пулнă пек, ăна туллиех тултарса панă пирки вăл ниепле те ĕçсе яма пултарайман пек.

Çурри таран тăпра тултарса лартнă çăлсем те тĕл пулкалатчĕç. Чакаласа уçатчĕç вĕсене. Анчах ун пек çăлсем ăшĕнче таçта тĕпĕнче шыв вырăнне пылчăклă нӳрĕ çĕр анчах тĕл пулкалатчĕ. Икĕ хутчен тата ĕнесемпе лаша виллисем тултарса хунă çăлсем тĕл пулчĕç. Йĕритавра тӳсме çук шăршă персе тăратчĕ. Анчах çак çăлсене те чавса уçрĕç. Выльăх виллисене кăларкаласа пăрахрĕç, тĕпĕнчен сăрхăнтарса кăларнă сарă пылчăк пек шăршлă шыва вара, тĕрлĕ ирсĕр япаларан пăрса уйăрса,— каллех ĕçрĕç.

Çапла хурлăх курса çӳрерĕ Шмарин бригади, çак вăхăт тĕлне Сахарная станицине çĕнтерсе илме ĕлкĕрнĕ Еланнь полкĕсене тĕл пуличчен. Пулăшу килессе кĕтмерĕç, малалла кайма васкарĕç.

Тарăхса, хаярланса кайнă Чапаев Шмарина приказ пурнăçа кĕртменшĕн суда пачĕ; хăй ăна—персе пăрахмалла тума ыйтрĕ! Анчах çак ĕçе тĕрĕслекен комиссире председатель пулнă Елань çине тăрсах Шмарина полк командирĕ таран кĕçĕн вырăна куçарма сĕнчĕ. Вăл сĕннипе Батурин та килĕшрĕ; вара Шмарина тепĕр ирпех бригада командирĕнчен кăларса пăрахрĕç.

Полксем Калмков урлă Гурьев патнелле, Каçпий тинĕсĕ хĕрринелле кайма та хатĕрленсе тăнăччĕ ĕнтĕ. Анчах кунта вара çак нихçан манас çук хурлăхлă ĕç пулса тăчĕ.

* * *

Дивизи штабĕ Лбищенскра тăратчĕ; Чапаев Батуринпа пĕрле кунтан кашни кун тенĕ пекех автомобильпе бригадăсене кая-кая килетчĕç.

Кĕрхи сивĕсем çывхарса килеççĕ. Çап-çутă сивĕ кунсем хăвăрт тĕттĕмленеççĕ, вара пĕтĕм таврана кĕрхи сĕм-тĕттĕм каçсем хупласа илеççĕ... Чакса пыракан казаксен пурнăçĕ йывăрланнăçемĕн йывăрланса пырать: малта пĕр ял та çук, выçлăх, çеçенхир кăлканĕ, ют çĕрсем... Хирĕç тăрас пулсан, халь анчах тăма май пур, малалла—кая юлать! Казаксем вара пĕтĕм вăйне пухса юлашки хут кĕрешсе пăхма шут тытрĕç курăнать: хăйсене çĕнтерсе пыракан тăшмана улталаса, ăна тӳрех чĕринчен пырса чикме хатĕрленме тытăнчĕç. Вĕсем Сахарная станици енчен Чижински лачакисем çумĕпе, Кушум улăхĕсем тăрăх хĕрлисем хыçне пырса тухса,— çуркунне Чапаев вĕсене шăпах çакăнта ĕнтĕ Сломихинă-

ри çапăçура çĕмĕрсе тăкнăччĕ,—хĕрлĕ çарсен хыçне çак тĕлтен йăпшăнса тухса, пирĕн Лбищенскра пуçтарăнса капланнă вăйсене сасартăк пырса çапса, аркатса тăкма ĕмĕтленчĕç. Хĕрлисен ун чухне кунта халăх сахалах марччĕ, дивизи учрежденийĕсем те çакăнтах тăратчĕç, тĕрлĕрен çар пурлăхĕ те: патронсем, снарядсем, тумтирсем нумайччĕ; дивизие лайăхрах тумлантарма шутласа, вĕсене халь çеç илсе килнĕччĕ; мĕншĕн тесен боецсем вĕçĕмсĕрех пылчăкра, выçлăхра, походсенче пурăннă пирки роти-ротипе, батальонĕ-батальонĕпе тифпа асапланса выртатчĕç.

Çак Уральскпа Гурьев хушшинчи асаплă çул çинче красноармеецсем тифран çапăçусенче пĕтнинчен нумай ытла пĕтрĕç. Станицăсенчи пӳртсем, полкри обозсем, хăш-пĕр тĕлте çул хĕрринчи канавсем те чирлĕ красноармеецсемпе туп-тулли пулса ларнăччĕ. Пĕрисене канлĕрех вырăна леçсе хума ĕлкĕриччен теприсем чирлесе ӳкетчĕç, вĕсене вара нимĕнпе леçме те çукчĕ; çапла вара вĕсем пушă пӳртсенчех е курăк çинчех, е канавсенчех, е çул хĕрринчех вырта-вырта юлатчĕç...

Эмел тавраш̆ĕ те сахалччĕ; тухтăрсенчен çурри чирлесе, вилсе пĕтрĕç.

Казаксен те пирĕннинчен кăшт çеç лайăхрах пулнă; анчах вĕсем кунта ак çак енчен ытларах усă куратчĕç: станицăсене вĕсем пиртен малтан пырса кĕретчĕç, хăйсене мĕн кирлине пĕтĕмпех шăлса пуçтаратчĕç те хăйсемпе турттарса каятчĕç; илсе кайма май çуккине çунтарса, çĕмĕрсе хăваратчĕç, мур ярса пăсатчĕç—тĕрлĕрен майпа юрăхсăра кăларса пĕтеретчĕç. Хĕрлĕ полксене вара çапла çаратса хăварнă вырăнсем тăрăх пыма тиветчĕ; вĕсем çăкăрсăр, шывсăр, патронсăр, снарядсăр, лавсемсĕр, лашасемсĕр ытларан ытла аптăракан пулса пычĕç... Малалла кайнăçемĕн пурнăç тӳсме çук йывăрланса пычĕ. Казаксем, паллах, пĕлмен мар çакна; хăйсем хыçалтан килсе тапăнма шутланă чухне çакна чылай лайăх хисепе илнĕ пулнă. Вĕсем çапла шутланă: штаба аркатса тăксан, çыхăнусене татса пĕтерсен, Урал шывĕ тăрăх темиçе çĕр çухрăм аналла çапăçса кайнă полксем çара аллăнах тăрса юлаççĕ те—вĕсен, ниçта кайса кĕме çуккине кура, çапăçма вăйĕсем пĕтсе çитнине кура, ирĕксĕрех хăйсенех парăнмалла пулать, тенĕ... Çапла вара çĕмĕрейми Чапаев дивизине çĕмĕрсе тăкма пулать, ăна пĕ-

тернипе пĕрле вара мĕнпур Урал çеçенхирĕсем хĕрлĕ çарсенчен хăтăлса юлĕç,— тесе шутланă вĕсем...

Çак ĕç çине вĕсем питех те пысăк шанчăк хунă пулнă, çавăнпа çак ĕçе ертсе пыма та чи ăста çар пуçлăхĕсене лартнă пулнă...

Çапла ĕнтĕ Лбищенск çийĕнче хура пĕлĕтсем пухăнса, капланса пычĕç; анчах вăл хăй ун чухне хăйне пысăк инкек пулас кунĕ çав териех çывăххине пĕлмесĕрех юлчĕ...

Çак кун Чапаев ытти кунхисенчен те тĕксĕмрехчĕ, хаяртарахчĕ; вăл ирхине ирех автомобильпе фронта тухса вĕçтерчĕ, анчах фронтра нумаях тытăнса тăмарĕ, кăнтăрла тĕлне Лбищенска калле таврăнчĕ... Çарсене малалла кайма йывăрлансах пычĕ: тиф красноармеецсене пĕр хĕрхенмесĕр, пĕр хисепсĕр çула-çула тăкса тăчĕ; обозсем кирлĕ япаласене вăхăтра çитерсе тăма пултараймастчĕç. Чапаев никама та ниепле те «çирĕпрех тытма» май çуккине лайăхах курса ăнланатчĕ,—хăвăн урлă сиксе каçаймăн! Бригадăсем халран кайичченех ĕçлерĕç, анчах чăтма çук йывăр лару-тăру паттăрăн хăй пурнăçне хĕрхенмесĕр ĕçленине те çĕнтере пуçларĕ. Çавăнпа уйрăмах тĕксĕм пулчĕ çав кун Чапаев. Пĕр самантлăха вăл Батурин патне чупса кĕрсе, хăйĕн иккĕленчĕк шухăшсене каласа пачĕ те—каллех хăй патне таврăнчĕ. Казак пӳрчĕн пысăк пӳлĕмĕ тăрăх вĕçĕмсĕр калле-малле уткаласа çӳрерĕ. Темле лайăх план шухăшласа кăларас килчĕ унăн, анчах нимĕн те шухăшласа кăлараймасăр аптăрарĕ, мĕншĕн тесен—çукчĕ вăл, çак кĕтекен ответ. Петька хутран-ситрен алăк хыçĕнчен пăхкаласа илетчĕ те, нимĕн те шарламастчĕ,— Василий Иваныч хăйне мĕн те пулин хушмĕ-ши тесе анчах кĕтсе ларатчĕ.

Чеков килсе кĕчĕ, анчах Петька ăна коридортах чарчĕ те, кĕме хушмарĕ: «Халĕ вăхăчĕ унăн сана валли мар, тусăм», терĕ вăл Чекова; лешĕ вара çăра вăрăм уссине вĕркелесе сарса, нимĕн калаçса тăмасăрах, çаврăнса тухса кайрĕ. Илья Тĕткин кĕрсе пăхрĕ. Ку вара темĕнле «питех те паха» хыпар та пĕлтересшĕн пулчĕ, анчах вăл та, Чапаев мĕнле тĕксĕмленсе ларни çинчен пĕлсен, каялла тухса кайрĕ... Чĕрене ыраттара-ыраттарах штаб начальникне Новикова çеç Чапаев патне кĕме ирĕк памалла пулчĕ. Анчах ку «докладпа» килчĕ, çавăнпа Петька ăна чарса тăма та хăяймарĕ.

Новиков вăл—пĕр çирĕм виçĕ çулхи çамрăк çынччĕ, офицерччĕ; вăл Чапаев шанакан нумай мар офицерсенчен пĕриччĕ; Чапаев Новикова шаннинчен пуçне юрататчĕ те тата. Хĕрлĕ Çара 1918 çултах кĕрсе, вăл хăй дивизи ĕçĕшĕн парăнсах ĕçленине темиçе хут та кăтартса ĕнентерме ĕлкĕрнĕччĕ, аманнăччĕ те пулас; пур командирсене те вăл ятран пĕлетчĕ, вĕсен шухăш-кăмăлне тĕрĕс ăнланатчĕ, вĕсемпе юлташла килĕштерсе ĕçлетчĕ; вĕсем те ăна юрататчĕç, хисеплетчĕç; пĕр сăмахпа каласан—вăл «хамăр» çынччĕ. Чапаев ăна мĕн тери хисепленине çакăнтанах курма пулать: мĕн пĕрле ĕçлеме пуçланăранпа та вăл ун çине пĕрре те кăшкăрса тăкман, нихçан та ăна юнаса хăтăрман; а кунашкал телейлĕ çынсем дивизире пулманпа пĕрехчĕ вĕт.

Новиков пӳлĕме кĕчĕ те, лайăхах хупăнмасăр юлнă алăк патĕнчех, хулĕ хушшинче хут чăмакки тытса, чарăнса тăчĕ.

— Кĕр, мĕн эсĕ?— тесе, пуçне ун еннелле çавăрса пăхрĕ Чапаев.

— Итлетĕп,— терĕ те Новиков, сĕтел умне пырса тăчĕ; вара Чапаев сĕтел хушшине кĕрсе ларнине курсан, кăшт пĕшкĕнсе, ура çинченех доклад тума пуçларĕ.

Вăл, юлашки сводкăсем пĕлтернĕ тăрăх, дивизи хăш вырăнсене йышăнса тăнине картă тăрăх кăтартса каласа пачĕ. Чапаев пуринчен ытла Урал шывĕн леш енне каçса кайнă бригада ĕçĕсем çинчен тĕплĕнрех ыйта-ыйта пĕлчĕ, мĕншĕн тесен çак Бухара енне кайнă бригада, ытти вăйсенчен пĕтĕмпех татăлса уйрăлнăскер, вĕсенчен нимĕнле пулăшу та илме пултараймасăр, калама çук йывăр условисенче çапăçса тăчĕ. Анчах Новиков ăна: халĕ тин вĕсенчен—тумтирпе апат-çимĕç илни çинчен телеграмма килчĕ, тесе пĕлтерсен,— Чапаев савăнса кайрĕ, ачашрах сасăпа лăпкăрах, хуллентерех калаçма пуçларĕ.

— Эсир пĕлетĕр вĕт,—терĕ Новиков малалла,—обозниксене ĕнер каçхине кунтан инçех мар, пĕр вунпилĕк çухрăмра, казаксем тапăннă,—терĕ.

— Пĕлетĕп,— терĕ Чапаев.

— Ку ĕçе йĕрлесе, тĕпчесе пĕлтĕмĕр,—терĕ Новиков.—Вилнисем те, аманнисем те пур... Казаксен ушкăнĕ, таракан обозниксене хăваласа, станица патнех çитнĕ пулнă; анчах кайран такăш еннелле юрттарса кайса çухалнă, хăш енне кайнине пĕлеймерĕмĕр,— терĕ.

— Хăваланă-и вĕсене?— тесе ыйтрĕ Чапаев.

— Елкĕреймен çав, ăçталла тарса кайнине те курмасăрах юлнă. Çăлăнса юлнă обозниксем те пĕлмеççĕ.

— Кунта ăçта та пулин çывăхрах казаксем нумайййăн тăраççĕ пуль тесе шухăшламастăн-и эсĕ, Новиков?— тесе ыйтрĕ татах Чапаев.

— Пĕлме пултараймастăп ăна. Эсир хушнипе паян ирех пур еннелле те разведка ятăмăр, тата икĕ аэроплан вĕçсе кайрĕ...

— Никам та таврăнман-и-ха?

— Летчиксем çапла пĕлтерчĕç: нимĕн те çук, никам çӳрени те курăнмасть,— терĕç.

— Мĕн тумаллине пĕлетĕн-и?—ыйтрĕ Чапаев.— Паян хурала курсантсен шкулне кăларса тăрат.

— Итлетĕп...

Тата ик-виç ыйту паркаланă хыççăн, Чапаев Новикова кайма ирĕк пачĕ. Часах Павел Степаныч çитрĕ. Вăл: таврăннă разведчиксемпе тин çеç калаçрăм, терĕ; вĕсем ниçта та нимĕн те тĕл пулман, тесе пĕлтерчĕç.

Çав пĕтермĕш каçра дивизири курсантсен шкулне кам хуралтан илсе пăрнă-ши?—çак ĕç ку таранччченех паллă мар. Чапаев кунашкал распоряжени никама та памарĕ. Новиков çине шанмасăр тăма çук: çак каç вăл Лбищенскри çапăçура паттăрла çапăçса, пит хытă аманчĕ.

Казаксен станицăри çынсемпе çыхăну пулни пирки нимĕн иккĕленмелли те çук. Мĕнле пулсан та, хăш-пĕр пӳртсенче казаксем кĕпĕрленсе ларни çийĕнчех палăрчĕ: вĕсенчен винтовкăсемпе те, пулеметсемпе те персе тăчĕç, дивизи склачĕсемпе учрежденийĕсене пит хăвăрт шыраса тупрĕç; вĕсемпе мĕн тăвассине малтанах асăрхаса палăртса хунă пулнă.

Батурин Чапаев патĕнче ларнă вăхăтра, Петька умĕнчен, вăл чарнине пăхмасăрах, вĕсем патне пĕр темле ырă кăмăллă казачка (унăн ывăлĕ Уральскра ĕçленĕ-мĕн) вăрăнса кĕрсе кайрĕ те, хыпăнса ӳксех, хăрушлăх çывхарса килни çинчен каласа ĕнентерме тăрăшрĕ; мĕншĕн тесен «хир тăрăх çӳреççĕ», терĕ вăл; анчах çапла асăрхаттарса каланине Чапаевпа Батурин хăлхана та чикмерĕç: вĕсем, ку хĕрарăм паçăр обозниксене тапăннă разъезд çинчен калать пулĕ, тесе шухăшласа, кулса çеç илчĕç... Çак «ухмах хĕрарăм» çинчен Петька çийĕнчех иккĕмĕш хут килнĕ Тĕткина каласа кăтартрĕ; лешĕ вара, Чапаев

комиссарпа калаçса ларни çинчен пĕлсен, пĕр кӳренмесĕрех тепĕр хут каялла çаврăнса тухса кайрĕ...

Çурçĕр тахçанах иртнĕ ĕнтĕ: кăштах тул çутăлса килни те палăра пуçларĕ; анчах станица лăпкă ыйхăпах çывăрать-ха. Казаксен малти отрячĕсем хуллен станица хĕрринех çитсе, часовойсене вĕлерсе тăкрĕç... Вĕсем хыççăн ыттисем килсе, станица тавра пуçтарăнса тăчĕç те, хуш-хура хум пек капланса тапăнчĕç.

Дозорсен малтанхи тревогăллă пăшал сассисем янраса кайрĕç... Анчах хăрушлăха пит кая юлса сисрĕç, казаксем станица урамĕсем тăрăх сапаланса кайма ĕлкĕрнĕ те ĕнтĕ... Пĕр йĕркесĕр, тĕлли-паллине пĕлмесĕр пеме тапратрĕç—ăçталла, кама пемеллине никам та пĕлмерĕ... Красноармеецсем аялти кĕпе-йĕм вĕççĕнех сике-сике тухса, тĕрлĕ еннелле чупкалама пуçăнчĕç. Нимĕн чухлĕ те йĕркеленменни, пачах та хатĕр тăманни уççăнах курăнчĕ... Хăш-пĕрисем хăйсем ăссĕнех пĕр çĕрелле пухăна-пухăна,— кам винтовка илсе тухма ĕлкĕрнĕ, вĕсем,— кашни пытанса пеме лайăх кĕтессенчех чарăна-чарăна, урам тăрăх пеме тытăнчĕç; унтан сике-сике тăрса, шыв хĕрринелле чупрĕç. Чупасса, пурте Урал шывĕ хĕррине чупса çитме васкарĕç. Казаксем станица хĕрринче чупакан красноармеецсене хăваларĕç, çите-çите каса-каса пăрахрĕç, тытнисене таçта иле-иле кайрĕç,— пĕр сăмахпа каласан, кунта нимĕн чухлĕ те хирĕç тăраймарĕç. Анчах казаксем те станица варрине часах кĕме пултараймарĕç... Пĕр вырăнта темиçе теçетке çын Чапаев тавра пухăнчĕç те, часах çĕр çине цепьпе йĕркеленсе выртрĕç. Чапаев хăй те аялти кĕпи вĕççĕнех сиксе тухнăччĕ; вăл сылтăм аллине винтовка, сулахайне револьвер тытнăччĕ... Ирхи тĕттĕм часах пĕтĕмпех сирĕлсе кайрĕ, йăлтах лайăх курăнакан пулса çитрĕ... Кĕтсе икĕ-виçĕ минут иртнĕ хыççăн, Чапаев цепĕ хăйсем çине казаксен хумĕ йăтăнса килнине курчĕ... Залппа — пĕрре, иккĕ, виççĕ кĕрслеттерсе печĕç... Сĕтĕрсе килсе лартнă пулемет шатăртаттарма пикенчĕ... казаксен хумĕ калле çаврăнса тарчĕ.

Вĕсемпе кӳршĕри, политпай вырнаçнă урамра та, Батурин тавра, каллех пĕр сакăрвун çын пĕрлешсе çапăçрĕç; кунта Суворовпа пĕрле политпайĕн пур работникĕсем те пекех пухăннăччĕ, тата Батурин хăй, Новиков, Крайнюков та çакăнтахчĕ. Казаксем хĕсĕрленĕçем хĕ-

сĕрлесе килнине кура, хăйĕн пĕчĕк отрядне Батурин хăй атакăна илсе кайрĕ... Вĕсем çав тери сасартăк пырса тапăннă пирки, казаксен малта урапасем çинче ларса пыракан пулемётчикĕсем сике-сике анса тара пуçларĕç. Батурин отрячĕ аллине вара вĕсем икĕ пулемет пăрахса хăварчĕç... Пирĕннисем пулеметсене çавăнтах тăшмана хирĕç çавăрса пеме тапратрĕç... Çак вăхăтра Новикова уринчен вăйлă амантрĕç. Ăна кăшт аяккарах туртса кăларчĕç те, ниçта хума пĕлмесĕр, çавăнтах хăварчĕç. Вăл вара пӳрт тĕлне упаленсе çитсе, сакайне пытанса кĕрсе ларчĕ...

Батурин ушкăнĕ пуринчен нумай тытăнса тăчĕ; анчах унăн нихăш еннелле те çыхăну пулман пирки, вăл юлашки самантченех хăй пĕччен çеç юлнине пĕлмерĕ, тĕп вăйсем таçта юнашарах, Чапаевпа пĕрле çапăçаççĕ пулĕ, тесе ĕненсе тăчĕ... Çапла ĕненнипех пĕтрĕ вара вăл... Çыхăну пулмарĕ çав, çавăнпа пĕр ушкăн ăнăçлă çапăçни ыттисем ăнăççăр çапăçнă пирки усăсăрах пулса юлчĕ: юнашар мĕн тунине, хăйсен мĕн тумаллине никамăн та пĕлме май пулмарĕ. Тӳрех тапăнса пынипе часах çĕнтерме çуккине кура, казаксем, лашисем çинчен анса, картасемпе пахчасем урлă, çуртсем хыçĕпе çак хирĕç тăракан ушкăнсен хыçне пырса тухрĕç...

Хыçалтан пени илтĕне пуçласан, малтан та казак хумĕсем çĕнĕрен çĕнĕ хут киле-киле тапăннă пирки, Батурин ушкăнĕ урăх чăтса тăраймарĕ, чакма тапратрĕ, юлашкинчен саланса кайрĕ. Красноармеецсем пĕччен-шерĕн ăçта ĕлкĕрнĕ унта тарса пытанма тытăнчĕç. Паллах, вĕсенчен пĕри те чĕрĕ юлмарĕ... Станица çыннисем пурне те ăçта пытаннине кăтартса пĕлтерчĕç; Урал шывĕ хĕррине тарса, шыв урлă ишсе каçма пултарнисем анчах çăлăнса юлчĕç... Батурин хăй пĕр пӳрте чупса кĕрсе, кăмака айне пытанса ларнăччĕ, анчах кил хуçи арăмĕ ун çинчен çавăнтах пĕлтерчĕ; «ку вĕсен комиссарĕ пулас», тесе тĕллесе кăтартрĕ вăл, киревсĕр,—Павел Степаныча станичниксене сăмах каланă чухнехи пухуранах астуса юлнăскер. Урса кайнă казаксем, хăйсен аллине «комиссар хăй» лекнине пĕлсен, унран мĕн те пулин ыйтса тăма та шутламарĕç, нимĕн те тĕпчесе-туса тăмарĕç,—ăна çав тери часрах тискер кайăкла çурса тăкасшăн антăхса тăчĕç. Тула сĕтĕрсе кăларчĕç ăна—кашниййĕнех хăйĕн сивĕ штыкне ун кăкăрне чи малтан чиксе лартасси килчĕ...

Пуçĕ çийĕнче хĕçĕсемпе вăшлаттарса юнаса тăчĕç, хăçан çĕре персе антарассине тискерленсе кĕтрĕç... Çĕре çапса ӳкерсенех вара,—пырĕнчен, хырăмĕнчен, пит-куçĕнчен хĕçсемпе, штыксемпе чикме пикенчĕç... Қалама çук тискер ĕç пуçланса кайрĕ. Анчах ку та сахал-ха: урисенчен ярса тытса, ăна мĕнпур вăйран пуçĕпе чул çине йăтса çапрĕç; лешĕн вара пуç чашки саланса кайса пĕтĕм пуç мими тухса ӳкрĕ... Унтан ун тумтирне ним хăварми таткаласа, çуркаласа, тирсе, касса пĕтерчĕç, юнланса пĕтнĕ аш чăмаккине пыра-пыра тапрĕç; çитменне кашниех епле пулин те питĕнчен тивертсе тапма хăтланчĕ...

Çакăнтах сывăхра, тыткăна лекнĕ темиçе красноармеец хăйсен маттур комиссарне, Павел Степаныч Батурина мĕн туса хунине ăсран кайса пăхса тăчĕç. Мĕскĕнсем! Вĕсене хăйсене, пĕр çын хăварми тенĕ пекех, тепĕр ик-виç минутранах казаксен хĕçĕсем татăкан-татăкан вакласа тăкрĕç...

Чапаев тата—ăçта вăл?

Вĕсен окопсенче нумаях тытăнса тăма май килмерĕ,— казаксем вĕсем патне те шыв хĕррипе пырса çитрĕç... Çыран хĕрринелле чакмалла пулчĕ... Çыран хĕрри кунта питĕ çӳлĕ те чăнкă, çавăнпа ту çинелле кайсан—пăшалпа персе ӳкерме йăлтах уççăн курăнса тăрать. Анчах ниçта кайса кĕме те çук, икĕ енчен те казаксен пулемечĕсем çунтарса переççĕ: вĕсем шывалла персе, Урал урлă ишсе каçса хăтăлма шут тунисене хум айне пытарса тăраççĕ. Чапаевăн аллине витĕрех шăтарса кайрĕ. Вăл питне шăлса илме тăрсан, пичĕпе çамки çине юнлă йĕр туса хăварчĕ... Петька пĕрмаях ун çумĕнче пулчĕ.

— Василий Иваныч, пар пуçна çыхса ярам!— тесе кăшкăрчĕ вăл Чапаева.

— Нимех те мар... пуç сывах-ха,— терĕ Чапаев.

— Çамкунтан юн юхать,—тесе хыпăнса ӳкнĕ сассипе ĕнентерме тăрăшрĕ ăна Петька.

— Ну, юрĕ-çке ĕнтĕ—пурпĕрех...

Вĕсем чăнкă çыран хĕрринелле утăм хыççăн утăм чакса пычĕç. Нимĕнле шанчăк та юлманпа пĕрех—кĕрлесе юхакан Урал шывĕ урлă ишсе каçса çăлăнма пултаракансем сахал пулчĕç. Анчах Чапаева çăлмах шутларĕç.

— Çавăтса антарăр ăна шыв хĕррине,—тесе кăшкăрчĕ Петька.

Пурте кама «ӑна» антармаллине ӑнланса илчӗҫ. Ҫывӑхра тӑраканнисенчен тӑваттӑшӗ хуллен, юнланса пӗтнӗ аллинчен асӑрханса тытса, Чапаева хӑйӑрлӑ ҫыран тӑрӑх шыв хӗррине ҫавӑтса анма пуҫларӗҫ. Акӑ тӑваттӑшӗ те шыва сикрӗҫ, ишме тапратрӗҫ. Иккӗшне шыва кӗнӗ-кӗменех вӗлерсе пӑрахрӗҫ. Малалла иккӗнех ишсе кайрӗҫ, шывӑн леш хӗрринех ҫитсе пыратчӗҫ ӗнтӗ,—ҫак самантра тискер пуля Чапаева пуҫӗнчен килсе тиврӗ. Унпа пӗрле пыраканнисенчен пӗри, леш енчи хӑяхсем ӑшне ишсе тухсан, каялла ҫаврӑнса пӑхрӗ те, хӑй хыҫӗнче никам пынине те курмарӗ. Чапаев Урал хумӗ айне пулса вилчӗ...

Петька мӗн вӗҫне ҫитичченех шыв хӗрринче тӑчӗ; винтовка кирлӗ мар пулса тӑрсан, вӑл хӑйӗн наганӗнчи ултӑ патронне казаксем еннелле кӑларса ячӗ те, ҫиччӗмӗшӗпе— хӑйне чӗринчен печӗ. Казаксем вара ҫак — пӗвӗпе пӗчӗк ҫеҫ, анчах кӑмӑлӗпе — паплӑ та ырӑ ҫар ҫыннин вилнӗ ӳтне ҫав тери тискерленсе мӑшкӑл туса пӗтерчӗҫ. Юлташӗсем кайран ҫак хӑйӑр ӑшне таптаса, лутӑркаса кӗртсе хӑварнӑ юнлӑ ҫын кӗлеткине аран-аран палласа илчӗҫ...

Ҫапла хурлӑхлӑ вилнӗ хыҫҫӑн тепӗр икӗ уйӑхран Республикӑри революциллӗ ҫар совечӗ ҫапӑҫури чаплӑ ӗҫсемшӗн чаплӑ ҫар ҫыннине Петр Исаева Хӗрлӗ Ялав орденӗ памалла туни ҫинчен приказ кӑларчӗ.

Анчах кая юлчӗ ҫак хисеплӗ награда — вӑл хӑйӗн паттӑрӗ вилнӗ хыҫҫӑн икӗ уйӑхран тин килсе ҫитрӗ.

Ыттисемпе пӗрле Чеков та шыв хӗррине ҫитиччен Исаевпа юнашар чакса пычӗ. Ӑна хӑйӑр ҫинче персе вӗлерчӗҫ, шыв хӗррине анса ҫитме ӗлкӗреймерӗ вӑл,—пуля ун пуҫне тивсе шӑтарчӗ.

Халь ӗнтӗ хирӗҫ тӑракан никам та юлмарӗ. Казаксем чупса таракансене хыҫӗнчен хӑваласа тытса, вырӑнтах каса-каса пӑрахса пӗтерчӗҫ...

— Жидсем, комиссарсем, коммунистсем — мала тухса тӑрӑр!

Лешсем вара, красноармеецсене кӑлӑхах персе пӑрахма парас мар тесе, мала утса тухатчӗҫ,— анчах ҫапла тунипе вӗсем красноармеецсене хутран-ситрен ҫеҫ ҫӑлса хӑваратчӗҫ. Хӑйсен юлташӗсем умне вӗсем чӗтрекен тутисемпе, ҫилӗпе ҫунса тӑракан куҫӗсемпе — мӑнкӑмӑллӑн, паттӑррӑн туха-туха тӑратчӗҫ; казаксен нагайкисене ылханса, хӗҫпе касса тӑкнинчен е пӑшал пули тивнипе вилетчӗҫ... Теприсене хирелле илсе тухса, пулеметпа ша-

тăртаттарса çулса тăкрĕç... Унта станица хыçĕнче кирпĕч çунтарнă виçĕ пит пысăк шăтăк пурччĕ,— вĕсене тӳпемех персе пăрахнă вилесем пăрахса тултарнăччĕ...

Çак хăрушă хыпар бригадăсене Сахарная станици таврашĕнче тăнă чухне пырса çитрĕ: штаба, политика пайне, дивизири командирсене йăлтах пĕтерсе тăкнă, çыхăнăва аркатнă, снабжени пайне тытса илнĕ — снарядсем, патронсем, тумтир таврашĕ, урана тăхăнмалли, апат-çимĕç урăх çук, пулас та çук... Кунашкал лару-тăрăва кĕрсе ӳкни — калама çук хăрушă япала! Красноармеецсем вĕçĕмсĕр çапăçса халтан кайса çитнĕ, выçлăхпа антранă, тиф вĕсене роти-ротипе пĕтерсе тăрать... Йĕри-таврах казаксем çавăрса илнĕскерсем, ертсе пыракансемсĕр тăрса юлнăскерсем — мĕн тума пĕлĕç-ши ĕнтĕ вĕсем?

Дивизие Еланьхăй çине илчĕ,— ку ĕçе ăна никам та лартмарĕ, никам та çирĕплетмерĕ,— хăех илчĕ, кĕтсе тăма вăхăт пулмарĕ.

Малалла каяс — ăссăрла хăтланни пулать! Каялла каяс — Лбищенск çывăхĕнчи казаксем хушшинчен çара аллăнах çапăçса тухмалла пулать. Анчах çак юлашки шухăшра хăть кăшт та пулин ăнăçу пулассине ĕмĕтленерекен шанчăк пур; малтанхи пек тусан вара нимĕнле шанчăк та çук,— часах пĕтсе çеç лармалла пулать. Халех каялла чакма шут тытрĕç, халь тăракан вырăнтан сисмен вăхăтра питĕ хăвăрт тапранса тухса, тăшмана улталаса, каялла чакса кайма шут турĕç... Красноармеецсем çак хăрушă хыпара пĕр-пĕрне хурлăхлăн кала-кала кăтартрĕç, часах вара Лбищенскра мĕн пулнине пурте пĕлсе çитрĕç.

— Малалла-и, каялла-и?— тесе ыйтрĕç боецсем пĕр-пĕринчен; анчах вĕсем тăлăха юлнă дивизин çĕнĕ командирĕ хăй те çак самантра: малалла е каялла?— текен хурлăхлă ыйтăва татса паманнине пĕлмерĕç çав.

Мергеневски станицинче тăнă бригада малтан тухса кайрĕ, ун хыççăн часах Сахарная станицинче тăракан бригада та тапранса тухрĕ.

Каçхине питĕ шăппăн тапранса тухма шутларĕç — тăшмана хăйсем тухса кайнине пачах та систересшĕн пулмарĕç.

Обозсемпе артиллерие çарсем варрине вырнаçтарса тăратрĕç, станицăна сыхласа тăма утлă çар хăварчĕç;

унтан вара çĕрлехи тĕттĕмре хуллен, пĕр шарламасăр тапранса тухса шурĕç...

Станицăра кăвайт хунă вутсем çаплипех çунса юлчĕç,— антив казаксем: çак кăвайт умĕнче красноармеецсем халь те лăпкăн ăшăнса лараççĕ, тесе шухăшлаччăр, терĕç.

Çак вăхăтрах бригадăсем çеçенхир тăрăх шав малалла кайса пычĕç... Командăсене шăппăн, пăшăлтатса çеç параççĕ; çак пăшăлтатни вара куçа курăнми цепьсемпе колоннăсем тăрăх çăвартан çăвара вĕçсе çаврăнать... Урапа шатăртатса илет-и, камăн та пулин урине пусарса ыраттарать-и, вăл вара ирĕксĕрех ахлатса ярать. Такăшĕ çăварне аллисемпе хупласа ÿсĕрсе илет,— вара каллех шăп... Утас вырăнне çунатпа вĕçсе пынă пекех шăппăн пыраççĕ.

Каршински ялĕ те кая тăрса юлчĕ, Мергеневски станици те курăна пуçларĕ...

Çак вăхăтра таçта аякра аслати çапнă пек хулăн сасă кĕрслетсе кайрĕ,— ку вăл Сахарная станицинче юлнă утлă çар дивизионĕ нимĕнпе те турттарса тухма май пулман снарядсене сирпĕнтерсе ячĕ.

Снарядсене сирпĕнтерсе ярсанах, утлă çар тахçанах тухса кайнă чаçсене хăвалаласа çитме тухса вĕçтерчĕ...

Икĕ талăка яхăн пĕр канмасăр утрĕç. Кăшт выртса канаççĕ те, каллех малалла—ытлашши канса тăма вăхăт çук, кашни минут тем териех хаклă. Иккĕмĕш каçхине Лбищенск патне пырса çитрĕç. Казаксем кунтан ĕнерех, Мергеневски станицинчен тухнă пĕрремĕш бригада çитиччен, Уральск енне тăвалла тухса кайнă пулнă. Вĕсем те васканă курăнать: Уральска вĕсем сасартăк пырса тапăннипе туртса илме ĕмĕтленнĕ. Татса хăварнă чаçсене вĕсем пурĕпĕрех пĕтеççĕ, тесе шутланă; Сахарная станици тĕлĕнче вĕсене пурĕпĕрех пĕтереççĕ, тенĕ. Хăйсем вара — часрах, хăвăртрах Уральска çитме васканă. Анчах ĕç урăхла, пĕтĕмпех урăхла çаврăнса тухрĕ; «пурĕпĕрех пĕтмеллисем» чĕрĕ те сывă тăрса юлчĕç.

Акă ĕнтĕ иккĕмĕш бригада та хăрушă, юнлă Лбищенск урамĕсем витĕр иртсе тухать... Лбищенск халĕ те хăрушă, пуш-пушах, сăнсăррăн курăнса ларать. Урамĕсенче чиксе е касса пăрахнă, е персе вĕлернĕ красноармеецсен кĕлеткисем йăваланса выртаççĕ... Пĕрремĕш бригада кунта чарăнса тăмарĕ,— тÿрех Кожехаров еннелле

тухса кайрĕ. Вилнисене пухса, пытарса хăварчĕç... Хире тухса, унта казаксен пулемечĕсемпе темиçе çĕршерĕн пере-пере пăрахнисене пĕр тăван масар шăтăкĕ чавса пытарчĕç...

Нимĕнле сăмах таврашĕ те каламарĕç, пытару маршĕ те юрламарĕç — красноармеецсем çара пуçăн чĕркуççи çине кукленсе ларчĕç те, çак хаклă масар шăтăкĕ умĕнче тем пекех хурланса, йывăр, тарăн шухăша кайса, пĕр шарламасăр тăчĕç...

Лбищенскра нумай канса тăмарĕç, часах малалла тухса кайрĕç... Çакăнта вара вĕсене Сахарная енчен килекен казаксем хăваласа çитрĕç те, е пурнăç, е вилĕм тенĕ шухăшпа — вăйлă çапăçу тапранса кайрĕ. Хăйсене хирĕç тăма пултарассине ĕненмен казаксем çав тери асапланса, ĕшенсе пĕтнĕ хĕрлĕ полксене урса кайнă пекех киле-киле тапăнчĕç, алăран вĕçертнĕ ĕçе калле тавăрма васкарĕç.

Анчах хĕрлĕ полксем пĕтес вырăнне вилĕмĕн тимĕр ытамĕнчен вĕçерĕне-вĕçерĕне тухрĕç, хăйсене валли çул уçса пычĕç, казаксен атакисене сирсе тăчĕç; çак тўсме çук йывăр лару-тăрура вĕсем тепĕр хут — Чапаев дивизийĕн полкĕсем епле ытла та паттăр полксем пулнине уççăнах кăтартса ĕнентерчĕç...

* * *

Янайск хуторне çĕрле çитрĕç. Çарсем калама çук ĕшенсе халтан кайрĕç. Вырăна çитсенех, красноармеецсем, урараи ўксе, вилнĕ пекех çывăрса кайрĕç... Хуралта тăракансем те тўсме пултараймарĕç, вĕсем те ним сисми çывăрса кайрĕç. Хĕрлисем тăракан вырăн юмахри пек вилĕ çĕршыв евĕр пулса тăчĕ... Қазаксем сасартăк килсе тапăнма хатĕрленнĕ пулнă; вĕсен цепĕсем вăрттăн хутор патнех йăпшăнса çитрĕç те, сĕм тĕттĕм чухне тапăнма хăраса, тул çутăлма тытăнасса кĕтсе тăчĕç... Утлă çарĕсене флангсем тăрăх тăратса тухрĕç,— вĕсен хăраса ўкнипе тарма пуçлакан красноармеецсене хăваласа çитсе, каса-каса пĕтермелле пулнă. Пĕр сăмахпа каласан, вĕсем пĕтĕмпех хатĕрленсе çитнĕ пулнă. Хĕрлĕ полксем умне вилĕм çитсе тăчĕ!

Қазаксем малтан сăнаса пăхма шутларĕç: хăраса ўкĕç-и, çук-и?— тесе; тăрса тарĕç-и е вырăнтах юлĕç-и?— тесе. Сентябрь каçĕн сĕм-тĕттĕмлĕхĕ кăшт сирĕлме пуç-

ласанах вара, казаксен чаҫӗсем тӑрӑх «Урра!!! урра!!! урра!!!» — тесе кӑшкӑрни янраса кайрӗ. Пӗр харӑс залпсемпе пеме тапратрӗҫ... Таҫтан хыҫалтан тупӑсем пени кӗрлесе илтӗнчӗ...

Красноармеецсем епле хытӑ ҫывӑратчӗҫ пулсан та, сасартӑках сиксе тӑрса, винтовкисене ярса тытрӗҫ... Анчах йӗрке пулмарӗ, йӗркеллӗн хирӗҫ тӑраймарӗҫ, — казаксен малтанхи пулисенчен темиҫе командир харӑс пӗтрӗҫ. Пӑтранма пуҫларӗҫ. Мӗн тумаллине малтанах никам та тавҫӑрса илеймерӗ, команда пуласса кӗтрӗҫ, анчах команда паракан пулмарӗ. Уйрӑмшарӑн ҫеҫ, шанчӑксӑррӑн ҫеҫ хирӗҫ тӑрса ҫапӑҫкаларӗҫ... Йӗркесӗрлӗх ӳснӗҫемӗн ӳссе пычӗ, минутран минута пӗтӗм ӗҫе пӗтерсе пӑрахма пултаракан паника пуҫланасса кӗтме май пулчӗ...

Ҫак вӑхӑтра артиллери дивизионӗн командирӗ Николай Хребтов — леш, Красный Яр патӗнче лайӑх ӗҫленӗ командир, — тупӑсем патне чупса пычӗ; анчах унта пӗр ҫын та хӑй вырӑнӗнче хатӗр тӑнине курмарӗ: хӑшӗ лавсем патне тарнӑ, хӑшӗ ҫавӑнтах пуҫӗсене ҫӗре чиксе выртнӑ... Вӑл хаяр сасӑпа команда парса, ҫынсене тупӑсем умне тӑратрӗ те, снаряд кӑларса ячӗ; ун хыҫҫӑн тепӗрне, виҫҫӗмӗшне... вара пӗр вӗҫӗмсӗр ҫӗмӗрсе, ҫунтарма тытӑнчӗ...

Паника пулассинчен ҫӑлма ҫак ҫеҫ кирлӗ пулчӗ те: красноармеецсем, хамӑр тупӑсем пенине илтсенех, хӑюланса, хавасланса кайрӗҫ, вилсе пӗтнӗ командирсем вырӑнне ҫӗннисем тупӑнчӗҫ. Калама ҫук хаяр, юнлӑ ҫапӑҫу пуҫланса кайрӗ, — кунашкал ҫапӑҫусене Чапаев дивизийӗнчи ватӑ, вӑрҫӑ вут-хӗмӗнче пиҫӗхсе ҫитнӗ командирсем те астумарӗҫ...

Хӳтӗленнӗ хушӑрах хӑйсем те темиҫе хут та атакӑна тӑра-тӑра кайрӗҫ; пулемет тӳсме ҫук ҫунтарма тапратсан, каллех лӑпланса выртрӗҫ...

Акӑ хӗрлӗ цепьсем патне тӑшманӑн икӗ броневикӗ кӗмсӗртеттерсе, шатӑртаттарса ҫывхарса киле пуҫларӗ: пӗри — тӳрех хир тӑрӑх, уҫҫӑнах, тепри тарӑн вар тӑрӑх аякран ҫаврӑнса пырать. Анчах боецсем вӗсене те хӑнӑхса ҫитмен мар — вӗсем ҫӗр ҫумне ҫеҫ ҫыпӑҫарах выртса, пӗр тапранмасӑр кӗте пуҫларӗҫ... Пӗр тискерӗ ҫывхарса ҫитсен вара, Николай Хребтов ӑна снарядпа ҫамкинчен тӳрех тивертсе, хӑрах енне лапчӑнтарса лартрӗ. Красноармеецсем вӗҫӗмсӗр савӑнса кайрӗҫ. Ҫӗнӗрен атакӑна

кайма çĕкленчĕç. Пенĕçем персе тăчĕç... Унтан каллех çĕр ăшне чакаланса кĕрсе, тăшман хирĕç килсе тапăнасса кĕтсе выртрĕç...

Юлашкинчен вара казаксене темиçе çухрăм аяккалла хăваласа ячĕç. Çак Янайскри çапăçура сахал мар красноармеец пĕтрĕ, анчах казаксем унтан та ытларах выртса юлчĕç. Кунта вĕсене ĕречĕ-ĕречĕпе çула-çула пăрахнăччĕ...

Янайскри çапăçу пекки урăх пулмарĕ. Часах пулăшу килсе çитрĕ... Казаксене каялла, халь çеç хĕрлĕ полксем вĕсенчен васкаса чакса пынă хуторсемпе станицăсем урлă хăваласа кайрĕç. Халь ĕнтĕ хĕрлисем çĕнĕрен наступлени туса кайрĕç, казаксене вĕсем Гурьева çитичченех, Каспий тинĕсĕ хĕррине çитиччен хăваласа пычĕç...

Лбищенск урлă та иртсе тухрĕç, тăван масар тăпри умне пырса хытса тăчĕç, пытару юррисем юрларĕç, çапăçса çĕнтерме тупа турĕç, хăйсен пурнăçне канăçсăр Урал шывĕн çыранĕпе хумĕсенче паттăррăн хурса хăварнă чаплă юлташĕсене аса илчĕç.

## ҪЕНЕҪЕРЕ ПУРРИ


I. Рабочисен отрячӗ . . . . . . . . . . 5
II. Ҫеҫенхир . . . . . . . . . . 18
III. Уральск . . . . . . . . . . 32
IV. Чапаев . . . . . . . . . . 38
V. Сломихинӑри ҫапӑҫу . . . . . . . . 58
VI. Ҫул ҫинче . . . . . . . . . . 92
VII. Ҫолчака хирӗҫ . . . . . . . . . 113
VIII. Ҫапӑҫусем умӗн . . . . . . . . 126
IX. Бугуруслана . . . . . . . . . 136

Пилюгинӑри ҫапӑҫу:

1. Тапранса тухни . . . . . . . . 151
2. Цепьре . . . . . . . . . . 155
3. Яла пырса кӗни . . . . . . . . 161

X. Белебей хулине ҫитиччен . . . . . . . 169
XI. Малалла . . . . . . . . . . 201
XII. Уфа . . . . . . . . . . 217
XIII. Уральска ирӗке кӑларни . . . . . . . 238
XIV. Ҫҫсен вӗҫӗ, финалӗ . . . . . . . . 249
Ҫӗрлехи вут ҫутисем . . . . . . . . 250



Обложка художника *Г. Д. Харлампьева.*

Редактор *Н. Ф. Данилов.* Тех. редактор *Н. С. Степанов.*

НТ 00821. Подписано к печати 10/I—1951 г. Заказ № 3034.
Объем 18,0 п. л. Учетно-авторских листов 15,5.
Бумага 82×108/32. Тираж 3000 экз.

Типография № 1 Чувашполиграфиздата при Совете Министров
Чувашской АССР, г. Чебоксары, ул. Володарского, 5.

Цена 6 руб.

Дм. ФУРМАНОВ

ЧАПАЕВ

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары — 1951